953
26384-чув



ВАЛЕНТИНА ЭЛЬБИ

# ЮРАТНĂ МĂШĂРСĂР

Возвратите книгу не позже обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Зак. 3288.

Кф
С(Чув)
К
Э53

Валентина ЭЛЬБИ

# ЮРАТНĂ МĂШĂРСĂР

ПОВЕÇСЕМПЕ
КАЛАВСЕМ



ПРОВЕРЕНО
2007

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1983

ББК 84.3 Чув
Э53

26384 чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

**Эльби В. А.**
Э 53 Юратнӑ мӑшӑрсӑр.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1983.— 272 с.

1 т. 10 п.

Валентина Эльби «Юратнӑ мӑшӑрсӑр» кӗнекине ытларах хаяр вӑрҫӑ ҫулӗсене аса илтерекен паллӑрах произведенийӗсене кӗртнӗ.

**ББК 84.3 Чув**

Э $\frac{4702650000-124}{М\ 136(03)-83}$ 51—83

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1983 ҫ.

# ПОВЕҪСЕМ

## ЧУЛ ҪУННӐ КУНСЕНЧЕ

*Карели хӗрарӑмне Элина Тимонена халаллатӑп.*

### 1

Эх, мӗнешкел илемлӗ ҫав Чапаев скверӗ! Уйрӑмах ҫуллахи кунсенче ӑна пӑхса ытараймастӑн. Палӑкӗ хӑй кӑна мӗне тӑрать. Шупашкара килен-ҫӳрене, чугун ҫул станцийӗнчен тухсанах, кӑчӑк туртса илӗртет вӑл: чӗвен тӑракан ҫивӗч урхамахӗ ҫинче папахӑллӑ-буркӑллӑ Василий Иванович Чапаев йӑлтӑркка хӗҫне ҫӳлелле ҫӗкленӗ.

Палӑк тавра — чечек йӑранӗсем. Сывлӑша уҫӑлтарса, фонтансенчен чӗркӗмӗл тӗпренчӗкӗ евӗр шыв пӗрхӗнет. Аллейӑсем хӗррипе — йывӑҫ тӗмӗсем. Вӗсен ҫӑра ҫулҫӑллӑ тураттисен сулхӑнӗнче, саксем ҫинче, ҫутҫанталӑкпа киленсе, ҫынсем лараҫҫӗ. Ача-пӑчашӑн кунта чӑн-чӑн ҫӑтмах: кил тӗлне мансах яра кун выляҫҫӗ вӗсем.

Хӗрринчи шурӑ сак умне иккӗн пырса чарӑнчӗҫ. Пӗри, вӑтам ҫулсенчен иртни, ҫӳхе шурӑ тутӑрне каялла сыхнӑ. Ҫийӗнчи кофти те, тутӑрӗ пекех, чӑлт-шурӑ. Вӑрӑм кӑвак юбки ура хырӑмӗсене витсе тӑрать. Тепри, чечеклӗ кӗске кӗпе тӑхӑнни,— ҫап-ҫамрӑк хӗр. Хӗвел ҫунтарса ярасла хӗртсе пӑхни уншӑн ним те мар, вӑл ҫара пуҫӑнах. Ал туни пек парка ҫивӗтне, сарӑ хӑюпа вӗҫленӗскерне, ӗнсе хыҫӗнчен ҫавӑрса, кӑкӑр тӑрӑх усӑнтарнӑ.

— Римма, эпӗ ҫакӑнта юлам,— терӗ ватти ҫамрӑк хӗре,— кунта сывлӑш уҫӑ.

— Юрӗ, ара,— килӗшрӗ Римма. Вӑл пысӑк чӑматанне ури вӗҫне лартрӗ.— Анчах сире, Елена Михайловна, пӗччен хӑварас килмест.

— Ан пӑшӑрхан.

— Тен, музея пӗрле кӗрӗпӗр?

— Ҫук, ҫук,— пуҫне сулкаласа илчӗ Елена Михайловна, хӗр сӗнӗвӗпе килӗшмесӗр.— Йывӑр чӑматана ма йӑтса ҫӳрес. Эпӗ унта кӗрсе курнӑ.

— Ан тунсӑхлӑр эппин. Эпӗ тахҫантанпах ӗмӗтленсе пурӑнатӑп Чапаев музейне кӗрсе курма. Унта Чапаев отрядӗнче ҫапӑҫнӑ асаттсн сӑнӳкерчӗкӗ пур, теҫҫӗ.

— Ку музее пурин те курма тӑрӑшмалла.

Римма аслашшӗ Тӑван ҫӗршыва хаяр тӑшманран хӳтӗленӗ, пулас ӑру валли ырӑ ят хӑварнӑ. Мӑнукӗ мӗнле тав тумӗ ӗнтӗ ӑна! Халӗ, акӑ, вӑл чӑн-чӑн тӗлпулӑва васканӑн музея чупрӗ.

— Ах, ура шӗлтӗрех кайрӗ,— текелесе, Елена Михайловна сарлака сак ҫине вырнаҫса ларчӗ. Ӗмӗр тӑршшӗпех ялта пурӑннӑскере шавлӑ хула самаях ывӑнтарчӗ пулас.

Елена Михайловна ҫамрӑклах тӑван ялӗнчи шкулта ачасене вӗрентме тытӑннӑ та унта паян кунччченех тӑрмашать. Пенсие тухма вӑхӑт хӑйӗн, вӑл ҫаплах ӗҫлет-ха, темшӗн-ҫке уйрӑлаймасть шкултан. Тен, ӑна, ҫемьесӗрскере, пӗчченлӗх шиклентерет? Апла шутлама та май ҫук пек: ара, килӗнчен шкул ачисем татӑлма та пӗлмеҫҫӗ те. Вӗренсе тухнӑ хӗрачасем ытларах ҫӳреҫҫӗ ун патне. Хӗрупраҫпа калаҫмалли сӑмах-юмах тупӑнсах тӑрать пулӗ ялти учительницӑн. Ҫамрӑксене аслӑ тус канашӗ сывлӑш пек кирлӗ. Паян та вӑл, акӑ, Шупашкара хӑй ӗҫӗпе мар, Риммӑшӑн килчӗ.

Римма амӑшсӗр ӳснӗ. Вӑтам шкултан вӗренсе тухсанах фермӑна ӗне сума кӗчӗ. Ӗҫӗ килӗшнӗрен ниҫта та кайма шутламасть — ялхуҫалӑх институтӗнче заочно вӗренет.

Хӗрелсе-пиҫсе ҫитнӗ чие ҫырлине татса илме хапсӑнакансем тупӑнаҫҫӗ ҫав. Риммӑна кӳршӗ йӗкӗчӗ тракторист куҫ хыврӗ. Хӑтана ячӗ. Сӑмах татрӗҫ. Икӗ юратнӑ чун пӗрлешнине мӗн ҫиттӗр? Туйне юрӑ уявӗнче ирттерме килӗшрӗҫ.

Ҫураҫнӑ хӗр загса тӑхӑнса каймалли шурӑ платье, пуҫа витмелли пӗркенчӗк, пулас мӑшӑрӑн ашшӗ-амӑшӗпе тӑванӗсене парнелемелли кӗпе-тутӑр, темтепӗр— хула магазинӗсенче йӑлтах Елена Михайловна пулӑшнипе туянчӗ. Лӑк-тулли чӑматан!

Лӑпкӑн ларать Елена Михайловна. Вӑл ним ҫинчен те шухӑшласа чунне ватмасть, ытахальтен тенӗ пек ҫеҫ иртен-ҫӳренсене куҫ хӳрипе пӑхса ӑсатать.

Урам енчен туристсен ушкӑнӗ кӗшӗлтетсе килет. Ерипен утаҫҫӗ ҫыннисем. Малта пыраканни, вӑл экскурсовод ӗнтӗ, каялла ҫаврӑна-ҫаврӑна йыша час-часах чарачара тӑрататъ. Аллине сулла-сулла ӑнлантарать. Эк-

скурсовод ĕçĕ çавнашкал. Тĕп хуламăрпа çеç мар, республикамăр çитĕнĕвĕсемпе те паллаштарать.

Малалла куçать ушкăн.

Сылтăмра, ав, аллея тăршшĕпех, портретсем. Пурте вĕсем — Совет Союзĕн Геройĕсем, чăваш çĕршывĕн мухтавлă ывăлĕсем. Çак портретсене курмасăр мĕнле иртĕн. Вĕсем, нумайăшĕ çар тумне тăхăннăскерсем, ытла та илемлĕ. Сарлака кăкăрĕсене пилĕк кĕтеслĕ ылтăн çăлтăр капăрлатать. Кашнин кунçулĕ — нумай-нумай страницăллă, хулăн кĕнеке.

Каллех йăшăлл хускалчĕ туристсен йышĕ. Вĕсен умĕнче — граждан вăрçин легендарлă полководецĕн, мухтавлă янташăмăрăн палăкĕ.

Туристсем пуçĕсене çӳлелле каçăртсах палăка тишкереççĕ.

— Скульпторĕ кам?

Çак сасă çывăхри сак çинче ларакан Елена Михайловна хăлхине пырса кĕчĕ те пуç мимине йĕп пек тирĕнчĕ. Тахçан илтнĕ сасă! Вăл пуçне туристсем еннелле пăрчĕ. Сасартăк ун куçĕ хыçалта тăракан йăрăм-йăрăм костюмлă арçын куçĕпе тĕл пулчĕ. Иккĕшĕ те пĕр-пĕрин çине чăрр пăхрĕç.

«Кам ку? Палланă çын пекех. Чим-ха, чим!.. Ара, ку Антти-иç! Тупата, çавă. Куçĕсем те ĕлĕкхи пекех, çăлтăрла чакăррăн-сенкеррĕн ялтăртатаççĕ, пĕвĕ те хăйпашкарах. Çӳçĕ йĕтĕнехчĕ, халĕ вара, тăхăннă шлепкине пула, тĕсĕ курăнмасть».

Пăлханса ӳкрĕ Елена Михайловна. Хăй те сиссе юлаймарĕ, ăшне вут хыпса илчĕ.

Антти — финн.

«Эх,— хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ Елена Михайловна, ассăн сывласа илсе.— Вăл, Антти, манăн, çамрăк Элӳçĕн, пурнăçăмри пĕртен-пĕр савнă каччă... Тата вăл... сутăнчăк, тискер тăшман».

Тăшман...

Елена Михайловнăн вată чĕрине çамрăк чухне пулса иртни çил-тăвăлла пырса кĕчĕ. Вĕсем çав çу час-часах хула тулашне тухатчĕç. Карели çĕршывĕнче пусмассерен мăн чулсем выртаççĕ, йĕри-тавра кӳлĕсем. Таврари çĕр пичĕ чăп-чăпар — тĕрлĕ тĕслĕ чечексемпе пĕркеннĕрен. Утатчĕç вара икĕ юратнă чун çутçанталăк тăсса пăрахнă чăпар кавир тăрăх. Ура пуçĕнче чечексем чĕтренсе сулланса илетчĕç. Çеçкисем çинче тĕлĕрнĕ мăшăр лĕпĕш сасартăк вăранать, вара çуначĕсем самант сарă-

лаççĕ. Ах, ытла та селĕм кĕпеллĕ-çке вĕсем! Аркисене хура, кĕрен, сарă, шурă тĕссемпе эрешленĕ. Унтан, сиссе те юлаймастăн, сана йĕкĕлтенĕн, умрах вĕлтĕртетме тытăнаççĕ. Ярса тытма аллуна тăсатăн. Ăçта унта! «Хуса çитĕр» тесе кăчăк туртнăн туйăнатчĕ! Хĕрпе каччă ыткăнатчĕç мăшăр лĕпĕш хыççăн. Унччен те пулмасть, Антти Элўçе ытамне хупса хурать. «Акă ĕнтĕ вĕлтĕрти Лĕпĕшпи ман ывăçра!»—ахăлтатса кулать хăй. Хытă-хытă ыталаса чăмăртаса чуптуса илет. «Эпĕ Лĕпĕшпи мар»,—хирĕçлет Элўç. «Анлан: эсĕ те хăвăн тĕрĕллĕ кĕпўпе, чипер сăн-питўпе чечексем хушшинче, ман куç умĕнче лĕпĕш евĕр вĕлтĕртететĕн. Кăмăлсăр ан та пул. Эсĕ — Лĕпĕшпи»,—тетчĕ Антти...

— Çук, тахçан мар, тин çеç пулнă çакă самант.

Елена Михайловна яшт сиксе тăчĕ. Урине ярса пусма хускатрĕ кăна, сасартăк ăна тем амакĕ тăлласа лартрĕ. Тытамак тытса ленчешкелентернĕ пек, урисем хуçине пăхăнмарĕç. Куçа курăнман темле вăйлă алăсем ăна тĕксех сак хыçне тĕрентерчĕç. «Антти!»—кăшкăрса ячĕ Елена Михайловна, анчах сассине темшĕн хăй те илтеймерĕ.

Туристсен ушкăнĕ пĕр вырăнта тăмасть. Çынсем, палăка пур енчен те курас тесе, унталла-кунталла утаççĕ. Йăрăм-йăрăм костюмли те таçтарах халь. Вата куçсем ĕшенчĕç-ши, ума хура тĕтре карăнчĕ, тем чухлĕ тĕмсĕлсе пăхсан та, Елена Михайловна çав çынна тек тупаймарĕ.

Кассăн-кассăн вĕрекен çил унăн чунне уçăлтарса хăварчĕ.

«Ах, çырлах! Эпĕ мĕскер аташатăп, ăса çухатнă сўпĕлти карчăк?—хăйне хăй хăмсарчĕ Елена Михайловна. Антти тĕнчере чĕп-чĕрех çўрет пулсан та, чикĕлеш енче пурăнать. Эппин, ăçтан Шупашкара килтĕрха вăл? Тепĕр тесен, кунтан тĕлĕнмеллиех те çук. Халĕ ют çĕршывран турист пулса килнĕ йăх-яхсем пайтах çўреççĕ пирĕн хуласем тăрăх. Антти, вăрçă вăхăтĕнче фашистсене сутăннăскер, такамран та чее те хаяр ĕнтĕ. Анчах ку, йăрăм-йăрăм костюмли, Антти пулма пултараймасть. Вăл халĕ çамрăк мар ĕнтĕ. Пурăнатех пулсан, ман пекех ватăлчĕ-тĕр. Тен, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çултах, Совет Çарĕ Карелие ирĕке кăларнă чух, вăл хăйне тивĕç вилĕм тупнă...»

Елена Михайловнăн пурăнса irттернĕ ĕмĕрĕ кăлтăртатса сўтĕлекен пир тĕрки пек уçăлса пычĕ.

Антти — финн. Элӳҫ — чăваш хĕрĕ. Мĕнле ҫулсем ҫак хĕрпе качча пĕр ҫĕре илсе тухнă-ха?

Элӳҫ пиччĕшĕ Тарас — юрист. Вăл, институт пĕтерсен, пĕр кана ялта канса пурăнчĕ. Каҫсерен вăйăсене ҫӳретчĕ. Часах савни тупăнчĕ. Унтан вăл авланчĕ. Хăйне тепĕр ҫур уйăхран ҫара илчĕҫ. Килне арăмĕ хурланса юлчĕ. Кулине тесе чĕнетчĕҫ ăна, пĕр кашăк шывпа ҫăтса ямалла чиперскерччĕ. Яштака пӳллĕ, сап-сарă ҫӳҫлĕ. Икĕ ҫивĕт ҫивĕтлетчĕ вăл. Куҫĕ хăй — сенкер тӳпе кĕтесĕччĕ. Ун ҫумĕнче хăв та ахах евĕр ҫуталса йăлтăртататăн. Мĕн паянччenex ялйыш куҫĕ умĕнче ҫапла тăрать вăл.

Тарас кайсан, тăхăр уйăхран, ача ҫуратрĕ Кулине. Ҫутă тĕнчене вăл пĕр харăс икĕ йĕкĕт парнелерĕ. Ят хучĕҫ. Пĕрне — Авти, тепĕрне — Юмаш. Мĕнешкел пепкесем! Тап-таса, амăш пек шурă ӳтлĕ. Сайра пулаҫҫĕ ҫакнашкал маттурсем. Часах амăшне паллама, йăл кулма тытăнчĕҫ вĕсем, чĕннине пĕлекен пулчĕҫ. Ӳсеҫҫĕ сып-сывах. Кулине ҫаплах упăшки килессе кĕтрĕ. Анчах финсемпе вăрçă тухрĕ те ĕмĕт пат татăлчĕ. Тарас— фронтра. Совет ҫарĕ Карели халăхне шур финсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн ҫапăҫать.

Аманнă Тараса сиплеме Карели республикин тĕп хулинчи — Петрозаводскри — ҫар госпитальне яраҫҫĕ. Вăл ура ҫине тăриччен вăрçă чарăнать. Юсанса тухсан, Тарас тăван яла таврăнмасть, ҫак хуларах юлать ĕҫлеме. Ҫемьене куҫармалла хăй патне. Кулинене ачасемпе ҫул ҫинче йывăр. Вара вăл йăмăкне, тин ҫеҫ Канашри педтехникумран вĕренсе тухнăскерне, арăмĕпе пĕрле пыма йăлăнать.

Элӳҫ пиччĕшне те, инкĕшне те, вĕсен ачисене те чунтан юратать — итлемесĕр тăма пултараймарĕ вăл.

— Пуҫтарăн, каятпăр,— терĕ Элӳҫ инкĕшне.

Юлашки вăхăтра сĕлкĕш ҫӳрекен Кулине ҫăлтăр пек ҫуталчĕ.

— Ҫитес ҫулăр такăр пултăр,— пиллерĕ вĕсене амăшĕ килтен тухса кайнă чух.— Эсĕ, Элӳҫ хĕрĕм, нумай ан пурăн, часах киле таврăн.

— Юрĕ, ан пăшăрхан,— лăплантарчĕ хĕрĕ амăшне. Анчах та ĕҫ-пуҫ амăшĕ хушнă пек пулмарĕ. Тарас кăмăлне ытарайман пирки Элӳҫĕн каялла тухас алăкĕ хупăнчĕ.

— Пире сансăрăн пурăнма кичем пулĕ, йăмăкăм. Малашне кунта вĕрен,— ÿкĕтлерĕ пиччĕшĕ. Вара вăл унпа пĕрле университета пычĕ. Элÿçĕн, Канаш педтехникумĕн отличницин, пĕр предметпа çеç, вырăс чĕлхипе, экзамен тытмалла.

Тарас хăйĕн çемйине ăшшăн кĕтсе илчĕ. Уйрăмах вăл ывăлĕсемшĕн каçса кайса савăнчĕ. Йĕкĕрешсем ашшĕ патне çитнĕ чух вунă уйăхран иртнĕччĕ. Утаймастчĕç-ха. Эрне иртнĕ çĕрелле ютшăнма пăрахрĕç. Тăван ашшĕне хăнăхса çитрĕç. Ĕçрен таврăнсан, Тарас икĕ ывăлне икĕ аллипе йăтать те çĕклесе çÿрет. Е урайĕнче вылять вĕсемпе. Ир-каç маннă пăтти çитерет.

Чăпăл тунă чух ваннăра лараççĕ вара икĕ пĕчĕк этем супăнь кăпăкĕ ăшĕнче. Йĕме те пĕлмеççĕ. Çакна курса ачасен амăшĕ те, Кулине, савăнать кăна. Элÿç пирки те амăшне пĕлтермеваскать.

3

Абитуриентсене университетăн пĕр аудиторине чĕнчĕç. Кунта вырăс чĕлхипе сочинени çыртараççĕ. Пурте вырнаçса ларчĕç. Йыш самай пысăк. Доска çине виçĕ тема çырса панă: кирек хăшне суйла. Элÿç ирĕклĕ тема илчĕ те ĕçе пуçрĕ.

Çакнашкал хыпăнчăклă самантра, суккăр пекех, юнашарти çынна та курмастăн.

Тимлĕн çырнă çĕртех сулахай енче лараканни Элÿç тетрадьне, ăнсăртран тенĕ пек, кăшт тĕкĕнчĕ. Хĕр вĕлт! ыватрĕ куçне. Кÿрши ручкине икĕ пÿрни хушшине хĕстернĕ те аллине умĕнчи тетрачĕ çине хунă. Элÿç шартах сикрĕ. Вăл çак алла пĕрре курнăччĕ. Ун чухне, тискер лару-тăруллă самант пулин те, ку алла вăл илемлĕ тесе ытараймасăр пăхнăччĕ: пÿрнисем вăрăм, чĕрнисем мерчен тĕслĕ. Кача пÿрнинче халĕ те çав çĕрех. Тен, вăл çĕрех те мар-тăр,— вĕтĕ-вĕтĕ织 ункăллă ылтăн сăнчăр! Кирек мĕнле хĕрупраç та ăмсанмалла ун илемлĕ аллине.

Элÿç май тупса вăрттăн пăхса илчĕ. Кÿршĕ, çакна çеç кĕтнĕскер, йăлл кулса йышăнчĕ хĕр куçне. Тата, пуçне сĕлтсе, шăппăн сывлăх сунчĕ.

«Тур çырлах, савă! Уйăх çурă каялла тĕл пулнă йĕкĕт»,— тĕлĕнчĕ Элÿç.

Уйăх çурă каялла пиччĕш патне Петрозаводск хулине килсен, ахаль пурăнма кичемрен, Элÿç вăхăтлăха

вăрмантреста ĕçлеме кĕчĕ. Эрнесем иртсен, ăна управляющи хăй патне чĕнтерчĕ.

— Елена Михайловна, сана командировкăна ярасшăн. Хирĕç мар-и?

— Мĕнех,—килĕшнине пĕлтерсе пуçне сĕлтрĕ Элӳç.— Ăçта каймалла?

— Хамăр треста пăхăнакан вăрман пункчĕсене. Мур илесшĕсем, суя сведени параççĕ. Тĕрĕсле: патшалăх фондне миçе кубометр хăма хывнă?

— Ĕç ытла йывăр пек туйăнмасть,— терĕ Элӳç управляющине.— Фондра кăтартнă чухлĕ хăма çук пулсан мĕн тумалла?

Тĕплĕ ăнлантарчĕ управляющи. Унтан вăл, ырă сунса, алă тытрĕ те хĕре алăк патне çитиех ăсатрĕ.

Элӳç киле таврăнса командировкăна кайма пуçтарăнчĕ. Пĕчĕк чăматана, улăштарса тăхăнма тесе, кофта, юбка, кĕпе чикрĕ. Çимеллисем те хучĕ. Вара, килтисемпе сывпуллашса, çула тухрĕ.

Хĕвел, çынсене шăратса ирĕлтерме шутланă пекех, ниçта кайса кĕмелле мар пĕçертет. Йывăç айĕнче те сулхăн çук. Ăçта-ши вăштăр çилĕ?

Чугун çул станцийĕ нихçан та пушанмасть. Халăх, картана хупнă сурăх кĕтĕвĕ пек, шавлать, тĕркĕшет. Юрать-ха, Элӳçе пĕр çар çынни, пиччĕшĕн тусĕ, билет илсе пачĕ. Ларса кайрĕ вара. Çул ăнăçлă пуçланнăшăн савăнчĕ.

Тепĕр кун, ирхине, Элӳç вырăна çитсе ĕçе пуçăнчĕ. Управляющи калани тĕрĕсех иккен: фондри хăма планра кăтартнинчен виççĕмĕш пайĕ те çук.

— Треста пĕлтерме тархасшăн тăхтăр, Михайлова юлташ,— тилмĕрет вăрман пункчĕн начальникĕ.— Хămине ыран-паян шаршанлăпăр.

— Анчах та ман куç умĕнче шаршанлатăр.

Ĕç пĕтерсен, Элӳçе начальник лавпах ăсаттарчĕ. Разъезда çитнĕ-çитмен вăл урапа çинчен сиксе анчĕ те вокзала чупсах кĕчĕ. Касса умĕнче темиçе арçын кăна тăрать. Хĕр савăнчĕ: капла билет илме çăмăлтарах.

Петрозаводск енчен пуйăс çитесси çур сехет юлнă. Ку вăл — шăпах Элӳç ларса каймалли пуйăс. Сехет йĕппи шăвать те шăвать: çирĕм минут, вунă минут, пилĕк минут юлчĕ. Çынсем пăлханса ӳкрĕç.

— Кассир хăçан сутать билетне?— касса чӳречине пӳрнисемпе шăкăртаттарчĕ чи малта тăраканни.

Касса уçăлчĕ. Çынсем шăкăрр тăрса тухрĕç.

— Граждансем, ан та кĕтĕр, билет пулмасть!— пĕлтерчĕ кассир.

Çынсем ятлаça-ятлаça перроналла ыткăнчĕç. Элӳç те вирхĕнсе тухрĕ.

Акă пуйăс чашкăрса çитрĕ. Çынсем унталла-кунталла чупаççĕ. Вакунсен алăкĕсем уçăлмарĕç. Унччен те пулмарĕ, шăхлич шăхăртрĕç. Разъезд умĕнчи пĕчĕк чан янравлă сас пачĕ те, чарăнма та ĕлкĕреймен пуйăс малалла талпăнчĕ.

Çынсем каллех ятлаçса, чышкисемпе юнаса тăрса юлчĕç.

Элӳç пăшăрханса ӳкрĕ: «Мĕнле çитес?» Иккĕмĕш вăрман пункчĕ кунтан питĕ аякра, сахалтан та çитмĕлсакăрвунă çухрăмра. Çуран тухса утаймăн.

Кун ахалех çухалчĕ. Икĕ талăк иртрĕ. Виççĕмĕш кунне аранах пуйăс килсе чарăнчĕ. Анчах пĕр вакун алăкĕ те каллех уçăлмарĕ: шалта та çынсем çук пек, тухакан та, кĕрекен те пулмарĕ.

Пуйăс тапранчĕ. Пĕр-пĕр вакуна ларас ĕмĕтпе Элӳç та чупрĕ, ӳкрĕ, чăматанĕ сирпĕнсе кайрĕ. Ним кĕтмен çĕртен ăна тахăшĕ хулĕнчен ярса тытрĕ, вакун картлашки çине хăпартрĕ. Вара хĕр упаленсе тамбура кĕчĕ. Ун хыçĕнченех ăна пулăшакан çын та кĕчĕ, алăка хупрĕ. Çамрăк йĕкĕт иккен. Чап-чакăр куçлă, сарă çын. Хĕр, сывлăш çавăрса илнĕскер, йăпăр-япăр сиксе тăчĕ.

— Виçĕ кун хăшкăлтăм ларса каяймасăр,— терĕ Элӳç кӳреннĕ сасăпа.

Йĕкĕт йăлл кулчĕ.

— Ме,— тыттарчĕ вăл Элӳçе чăматанне.

— Ах, эпĕ чăматан пирки мансах кайнă. Мĕнле илме ĕлкĕрнĕ эсир ăна? Тавтапуçах сире...

— Нимех те мар. Анчах... Кунта тăма юрамасть, вакуна кĕрĕр. Астăвăр, хăвăр хăранине ан палăртăр,— асăрхаттарчĕ йĕкĕт.

Çак сăмахсем ытти чух питĕ тĕлĕнтермеллеччĕ, хăратмаллаччĕ ĕнтĕ. Çитмĕл çичĕ пĕтĕрĕнчĕклĕ çавраçил тустарăвĕнчен хăтăлнă Элӳçĕн йĕкĕт сăмахне хакласси асра та пулмарĕ.

Пуйăс малалла ыткăнать. Разъезда вăл паçăрах хыça хăварнă. Икĕ вакун хушшинче, тимĕрçĕ лаççи пур тейĕн, чарăна пĕлми шаккаççĕ: чанк-чанк! Шанк-шанк! Шăн-шан!

Шала кĕчĕ хĕр. Кĕчĕ те, çавăнтах чарăнса, тăп тăчĕ. Сăмсана усал шăршă çапрĕ. Тата ăна вуншар мă-

шăр куç пăраларĕ. Кунта купесем çук. Речĕпех хыçлă сак. Çавăнпа пассажирсем янках курăнаççĕ. Пурте хăйсем шакла пуçлă, тутăр çыхнисем курăнмаççĕ. Унччен те пулмарĕ, пĕр тăсланки хĕр умне сиксе те ӳкрĕ.

— Пире çӳлти папай чиперкке парнеленĕ, атьсемĕр,— хупăнма пĕлмен чармак куçĕсемпе тĕллерĕ вăл Элӳçе. Ун хыçне татах темиçен пырса тăчĕç. Тăсланки, аллисене сарса, вĕсене ирттермерĕ. Вара хулăн сассипе:

— Малтан ман пулать ку хĕр. Тĕпне юлнине эсир сыпăр,— терĕ.

Хăраса ӳкрĕ Элӳç: «Кусем ырă çынсем мар». Илтнĕччĕ вăл колони çыннисене вăрман касма Çурçĕр Карелие вакунĕ-вакунĕпе куçараççĕ тенине. Чухларĕ: çак этемсем — тĕрме çыннисем. Вара пĕр кĕтесе тĕршĕнсе тăчĕ, чăматан хăлăпне вирлĕн çатăрларĕ.

Шăши çине сиксе ӳкес кушак пек кукленчĕ тăсланки, çаннисене тавăрнă май яра-яра пусрĕ. Çывхарнăçемĕн çывхарчĕ. Элӳç хăранипе куçне хупрĕ. Акă ют алăсем ун кăкăрне тĕкĕнчĕç. Элӳç шари çухăрса ячĕ.

— Эй, йĕркеллĕ пул!— сасартăк илтĕнчĕ такамăн çирĕп сасси.

Куна Элӳçе пуйăс çине лартнă йĕкĕт каларĕ иккен. Хăй вара вакуна хăçан кĕме ĕлкĕрнĕ-ши? Вăл, хăвăрт çывхарса, аллине хĕрпе тăсланкă хушшине карлăк пек хурса, чӳрече янаххинчен тĕреленчĕ.

— Каллех ансăр каçма çинче тĕл пултăмăр-и? Асту-у!— ӳхĕрчĕ тăсланки, пĕр-ик утăм айккинелле сиксе. Вăл чышкине çӳлелле çĕклесе юнарĕ. Какай татăкĕ çине тĕмсĕлсе пăхакан арăслан евĕрлех куçĕпе тирет Элӳçе.

Йĕкĕт тăсланка курмасть те, ун сăмахне илтмест те тейĕн. Çын çăтма кĕпĕрленнĕ крокодил кĕтĕвне хăй майĕн хăмсарса илчĕ:

— Пурте вырăна кайса ларăр! Итлемесен, хăвăрах чухлатăр мĕн кĕтнине.

Хашш! хашлатса, кăпăрр чакрĕç хайхискерсем. Ушкăнăн пайланса ларчĕç те картла çапма тытăнчĕç.

Йĕкĕт тăрать-ха çаплах, ним чĕнмесĕр. Çак вăхăтра Элӳç каччăн чӳрече янаххи çумне тĕреннĕ аллине асăрхарĕ. Шап-шурă кăпăшка алă. Пӳрнисем вăрăм. Ку алă пуртă-пăчкă тытман, çĕр те чавман. Кача пӳрни вара ытла капăр. Ăна çĕрĕ тăхăнтарнă пулас. Çук-çук, çĕрĕ мар — питĕ вĕтĕ ункăллă сăнчăрпа çыхнă. Сăнчăрăн икĕ вĕçĕ ухă йĕппи евĕр. Ахăртнех, ылтăн япала çак, унсă-

рăн йăл-ял çутăлмĕччĕ. Пӳрнисене йĕкĕт, юрнех-тĕр, шăкăр-шăкăр вылятать те сăнчăр вĕçĕсене чун кĕрет: йăлт-йăлт сиккелеççĕ вĕсем.

Кам, мĕнле çын-ши çак этем? Элӳç хăйне пуйăспа ларса кайма пулăшнă тата усал этемсенчен хăтарнă йĕкĕт пирки ним те шутлама пĕлмерĕ.

Вакуна пăшаллă çын кĕчĕ.

— Антти!—чĕнчĕ вăл Элӳç çумĕнчи çынна. Лешĕ вара ним чĕнмесĕр уйрăлса кайрĕ, вакунран тухрĕ. Тек вăл Элӳç анса юличчен те куçа лекмерĕ.

Кĕп-кĕске тĕлпулу ĕнтрĕк вăхăтĕнче лĕп çил питçăмартинчен ачашшăн сĕртĕнсе иртнĕ пек çеç туйăнчĕ. Анчах хĕр чĕри — пыл ăвăсĕ, ун çине чĕрсе йĕр хăвармa питĕ çăмăл. Элӳç çав качча манаймасăр хăшкăлчĕ. Кирек хăçан та, кирек ăçта та вăл — пуçра. «Саватăп сана. Эсĕ манăн савни,— пăшăлтататчĕ хĕр хăй ăшĕнче. Мĕн чухлĕ ытларах шухăшланăçемĕн юратӯ хăпартланса хĕмленет.— Турăçăм, тĕл пултар пире тепĕр хут, ун çине пăхса çеç илем». Халĕ акă кĕтмен çĕртен, шăпа ăна ним систермесĕр, çума килсе лартнă.

Унччен те пулмарĕ, каччă хĕр умне хут татăкĕ хучĕ. Мĕн çырать-ши?

«Тинех тупăнтăмăр,— вуларĕ Элӳç каччă çырăвĕн малтанхи йĕркине.— Текех çухалас марччĕ. Калаçмалли нумай. Тетрадьсене пуçтарнă хыççăн, тархасшăн, тухса ан тар. Антти».

Элӳçĕн кăмăлĕ тӳпене çити çĕкленчĕ. «Тинех тупăнтăмăр...» Çак сăмахсем уйрăмах савăнтарчĕç ăна. «Эппин, вăл та шухăшĕпе ман патах туртăннă».

Сочинение ăнăçлă вĕçлеме хĕрĕн илемлĕ, çепĕç, хаклă сăмахсем тупăнчĕç.

Шăнкăрав янăрарĕ. Сочинение çырса пĕтернĕ-и эсĕ, çук-и, пурпĕрех тетраде сĕтел çине кайса хур. Мĕн тăвăн, экзаменăн çирĕп йĕрки çавнашкал.

Аудиторинчен Анттипе Элӳç пĕрле тухрĕç. Урамра çутă, хĕвел çӳллĕ йывăççем тăрринчен пăхать. Çапах вăл, çу каçипех ĕçлесе халсăрланнăскер, сӳрĕккĕн хĕртет.

Каччă хĕр аллине ярса илчĕ те ывăçĕнчен тек кăлармарĕ. Калăн, пĕчĕкренех пĕрле ӳснĕ, тахçанхи савнисем тейĕн. Хĕр те аллине карт! туртса илмерĕ.

Калаçу тапранчĕ вара. Утрĕç те утрĕç урам тăрăх.

— Малашне пĕрле вĕренетпĕр. Мĕн тери лайăх,— терĕ Антти.

— Телейӗмӗрсем теплерех, пӗлеймӗн,—ассӑн сывласа илчӗ Элӳҫ.

— Университета кӗреймесрен пӑшӑрханатӑр-и?

— Ку мар-ха, эсир паян ман ҫумра ларни хытӑ тӗлӗнтерет... Пуйӑс, тӗрме ҫыннисем, эсир — йӑлт пӗр кукӑрта пӑтранаҫҫӗ...

Антти ахӑлтатса кулса ячӗ.

— Эпӗ те тӗрме ҫынни пулӗ тесе шутлатӑр-и? Апла эсир йӑнӑшнӑ. Эпӗ ун чух вӗсене сыхлакан пиччепеччӗ. Тек ун пирки пуплемерӗҫ. Қалаҫу вара ҫуралса ӳснӗ тавралӑх ҫинчен пуҫланчӗ.

Антти хула ачи мар иккен. Ун тӑван ялӗ икӗ ҫӗршыв пӗрлешнӗ ҫӗрте. Чикӗ леш енче — Финлянди. Вӗсен ялне шур финсен пусмӑрӗнчен кӑларни пилӗк уйӑх ытларах ҫеҫ.

— Нумайӑшсем пирӗн ӗлӗкхиллех пурӑнасшӑн. Ҫӗнӗ йӗркене килӗштермеҫҫӗ,— хушса хучӗ Антти.

Элӳҫ ҫак сӑмахсене хӑлхана чикмерӗ. «Эсӗ ху ҫӗнӗ йӗркене килӗштеретӗн-и? «Пирӗн» текен ушкӑна мӗнле этемсем кӗреҫҫӗ?»—тесе ыйтасчӗ иҫмасса. Антти мӗнле ӑшчиклӗ ҫын иккенне пӗлме те пулатчӗ. Ҫук ҫав, Элӳҫӗн тимлӗх туйӑмӗ тарӑн ыйхӑра тӗлӗрнӗ.

— Эсӗ ӑҫтисем?— тӗпчет Антти.

Хӑйпе юнашар утакан хӗр чӑваш пулнинчен питӗ тӗлӗнчӗ. Ҫав халӑх ӑҫта пурӑннине те чухламасть вӑл.

— Мӗнле майпа Петрозаводск хулине килсе лекнӗ?— кӑсӑкланать Антти татах.

— Пиччене пула,—тет те тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парать Элӳҫ.

— Халӗ ӑҫта ӗҫлет пиччӳ?

— Ҫар чаҫӗнче.

Антти ыйтуллӑн та шухӑшлӑн пӑхса илчӗ. Чӗлхине ҫӑтса янӑ пек тек шарламарӗ.

Сисмесӗрех хула тулашне тухрӗҫ. Кунта пачах урӑх сывлӑш, чуна уҫса ярать. Қайӑксен илӗртӳллӗ юрри те таҫталла чӗнет ҫамрӑксене. Каялла таврӑнма васкамарӗҫ вӗсем. Хӗвел ҫӳлте-ха, каҫчен ҫӳреме вӑхӑт пур. Пиччӗшӗ пӑшӑрханасси Элӳҫӗн асӑнче те ҫук.

Сылтӑмалла пӑрӑнчӗҫ хӗрпе каччӑ. Ӑҫта илсе ҫитерет-ши ку сукмак? Куҫ ытамӗнче ытармалла мар ҫутҫанталӑк илемӗ: сарӑ, шурӑ, чакӑр, хӗрлӗ, кӗрен ҫеҫкеллӗ уй-хир, ешӗл йывӑҫ тӗмӗсем, чулланнӑ ҫӗр курпунӗсем, аякрах та мар симӗс вӑрман...

Сукмак юпленчӗ, юпленчӗ те пачах ҫухалчӗ. Пилӗк

таран ӳснӗ чечексем çеç умра, вӗсем çиӗн лӗпӗшсем вӗçеççӗ.

Антти пӗр лӗпешне ярса тытрӗ. Вӑл ытла хитринчен тӗлӗнчӗ. Хӗрсем хушшинче те çакӑн пек хитрисем пур-çке. «Хӗр-лӗпӗш!..»—мӑкӑртатрӗ вӑл. Вара «хӗр-лӗпӗш» сӑмаха чӑвашла мӗнле каламаллине ыйтрӗ каччӑ.

— Лӗпӗшпи!— йӑл-йӑл кулчӗ Элӳç. Унтан, юмӑç пӑхма тесе, салтак тӳми татма пӗшкӗнчӗ çеç вӑл, таçтан эреш сараппанлӑ лӗпӗш вӗлтӗртетсе тухрӗ. Ăçта илӗртет вӑл? Чупрӗ ун хыççӑн чӑваш хӗрӗ.

— Лӗпӗш-хӗр! Лӗпӗшпи!— кӑшкӑрать Антти чылай мала кайнӑ савнине.— Лӗпӗшпи, тӑхта!

Каччӑ çине хӗр тӗсесе пӑхрӗ те:

— Эпӗ Лӗпӗшпи мар: Мана Элӳç тесе чӗнеççӗ,—терӗ, кӑмӑллӑн кулса.

— Ан та тавлаш. Эсӗ маншӑн — Лӗпӗшпи!

Антти хӑйӗн Лӗпӗшпине хуса çитрӗ те ыталаса чуптурӗ.

Элӳçпе Антти каярахпа та кунта килчӗç, тӑрна куçӗ евӗр йӑлтӑртатса выртакан кӳлӗсем тавра çӳрерӗç.

4

Элӳç — студентка. Аслӑ шкул пӗтерсен, шкулта ачасене вӗрентӗ вӑл. Çак шухӑш самай çӗклентерет ун чунне.

Малтанхи кунсенче Элӳç пысӑк йышра хӑйне тӑлӑх пек туйрӗ. Никама та палламасть. Ана хӑйне те паллакан çук. Антти пур-ха ӗнтӗ, анчах пӗрмай унпа уйрӑлайми çӳреймӗн. Пӗр-пӗр хӗр-юлташ тупасшӑн вӑл. Хӑшне чӗнес? Юрать-ха, Элӳç комсомолка.

Часах комсомол пухӑвне пуçтарӑнчӗç. Биофакра çурри ытла комсомолец иккен. Хӗрсем сахал вара, мӗнпурӗ те тӑваттӑ çеç. Вӗсем пӗр-пӗринпе ячӗсене каласа паллашрӗç. Элӳç кашнин ятне асра тытса хӑварма тӑрӑшрӗ. Вӗсенчен пӗри, хури, çӳçне «челка» кастарни, карел хӗрӗ Тюне Пертту, тепри Элина Степанова, вырӑс. Виççӗмӗш хӗрӗ Элӳçе пӗртте килӗшмерӗ. Тен, вӑл ытларах сӑрлапни, шӑрçасем виçесӗр çакса тултарни хӑй çывӑхне ямасть? Ятне асра тытса юлаймарӗ. Хушамачӗ — Санделиначчӗ пулас.

Секретарь суйлама тытӑнсан, Урхо Левенен финн ятне çеç асӑнчӗç. Вӑл пурне те килӗшнӗ-мӗн. Çавна суйларӗç те. Ана пулӑшакане — Элина Степанова.

Пухху пе́тсен, Тюнепе Элина хӑйсем патне чӗнчӗҫ Элӳҫе.

— Чӑваш хӗрӗ, килӗшрӗн эсе пире,— сӑмах хушрӗ Элина.

Ашӑ куҫсем Элӳҫӗн чӗри патне ҫул хывтарчӗҫ.

Виҫҫӗшӗ пӗрле парка кӗчӗҫ. Хутларӗҫ вара каллӗ-маллӗ.

— Элина, общежитие хӑҫан куҫан-ха эсӗ?— тилмӗрнӗн каларӗ Тюне.

— Гуго Эрикович кӳренесрен хӑратӑп-ҫке.

— Ҫам-кам?— Элинӑна чарчӗ Элӳҫ.— Темле паллӑ ят-ҫке ку.

— Эсӗ, Элӳҫ, йӑнӑшмарӑн. Гуго Эрикович Ялава машинист ятне тӗнчере илтмен ҫын сахал. Вӑл, хӑйӗн пӑравусӗ ҫине лартса, Владимир Ильич Ленина Финляндие илсе кайнӑ. Октябрь умӗн ҫулпуҫӑмӑр унпа пӗрлех хамӑр ҫӗршыва таврӑннӑ.

Элӳҫ аса илчӗ: чӑнах та, техникумра Ильич биографине вӗреннӗ чух тӗл пулнӑччӗ-ҫке Ялава ятне.

— Эсӗ, Элина, Гуго Эриковича паллатӑн-и?—тӗлӗннӗн пӑхрӗ Элӳҫ.

— Вӑл маншӑн тӑван атте пекех. Арӑмӗ — анне вырӑнӗнче.

Элина амӑшӗнчен аларӑ ача юлнӑ. Амаҫури амӑшӗ, путсӗр хӗрарӑм, упӑшкин хӗрне юратман. Уснӗ вара мӗскӗн чун хӑтлӑхсӑр ҫемьере. Ҫӑшт ӳссессӗнех, ӑна хӑйне ача пӑхтарнӑ, урай ҫутарнӑ, тырӑ выртарнӑ. Сакӑр-тӑхӑр ҫула ҫитсен Элина вӗренес ӗмӗтпе килтен тухса тарать. Пуйӑс ҫине ларать. Ывӑннипе вилнӗ пек ҫывӑрса каять вакунра. Пӗрле ларса пыракансем шалт тӗлӗнеҫҫӗ. Пӗри ятлать ӑна, тепри хӗрхенет. Ҫавӑн чух Гуго Ялава машинист Элинӑна хӑйсем патне илсе каять. Усраҫҫӗ хӗрачана, шкула вӗренме яраҫҫӗ.

— Телейлӗ ӳсӗн,— йӑпатнӑ ӑна машинист.

Халӗ Элина вӗсене пӑрахса общежитие ӑҫтан куҫайтӑр?

— Ах, курасчӗ-ҫке Гуго Эриковича,— ӑмсанчӗ Элӳҫ.

— Мӗнех, атя, эппин, манпа. Вӗсем ҫынна хавас,— терӗ Элина.

— Курни ҫеҫ сахал,—хушса хучӗ Тюне.—Вӑл Ленин ҫинчен каласа панине итлесчӗ.

— Тӗрӗс!— савӑнса ӳкрӗ Элина.— Эпир Гуго Эриковича хамӑр факультета ҫамрӑксен тӗлпулӑвне чӗнӗпӗр. Паянах кун пирки сӑмах тапрататӑп.

Хӗрсем калаҫса пӗтерейместӗ. Кашнин ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпех пӗлес килет вӗсен.

Тюнě, акă, хула хере мар-мӗн. Унăн тăван ялне ҫитес тесен вăрмансем витӗр, шурлăхсем урлă каҫмалла, нумай-нумай ҫухрăм утмалла.

Элӳҫ те хăйӗн Чăваш ҫӗршывӗ пирки каласа пачӗ.

Ҫак самантра пуҫласа виҫӗ хӗр чăн-чăн туссем пулса тăчӗҫ.

5

Кӗркунне ăсанать, хӗл ларма пикенет. Тулта сивӗ, витӗр шăнтакан йӗплӗ ҫил вӗрет.

Антти темиҫе кун ӗнтӗ курăнмасть. Аҫта-ши вăл? Тарса ҫӳрет-ши? Е урăх хӗр тупнă-ши? Е ялне кайнă?

Элӳҫ никамран та ыйтса тӗпчеме хăяймарӗ. Ăна хуйхă пусрӗ.

Кулине те шухăшлăн ҫӳрет. Ку инкене мӗн пулнă-ши тата?

— Килте ухмаха тухатăп. Ӗҫлеме каяс килет. Анчах мӗнле каҫалăк умне тăма пӗлӗп?—кулянать вăл.

Пӗррехинче Тарас хыпарпа таврăнчӗ:

— Стенографипе машинопись курсӗ уҫăлать. Кулине, ҫӳре ҫавăнта. Кайран машинисткăра ӗҫлӗн.

Хыпар уйрăмах Элӳҫе шуйлантарчӗ. Ăна стенографист ăсталăхне вӗренес ӗмӗт тахҫантанпах канăҫ памастчӗ. Ун шухăшӗ тăрăх, стенографие пӗлни преподавательсен лекцийӗсене ҫырса ӗлкӗрме пулăшӗччӗ.

— Кулине, ҫав курсра эпӗ те санпа пӗрле вӗренетӗп,— пӗлтерчӗ Элӳҫ.

— Чипер хӗр, эсӗ мана пӗлӗте ҫити ҫӗклетӗн!

— Анать сан пурнăҫ, Кулине,— ырларӗ Тарас,—иксӗре хаваслăрах пулӗ. Ачасене хам пăхăп.

Кулине йăл-йăл ҫеҫ кулкаларӗ.

Инкӗшӗпе хӗрсемӗ тытăнчӗҫ стенографи курсне ҫӳреме. Иккӗшӗ пӗрле кашни каҫ пусăрăнса вӗренеҫҫӗ.

Кăнтăрла Кулине ачисемпе айкашать. Элӳҫ — университетра.

Пӗр шăматкун вăл столовăйра Анттие курах кайрӗ. Апат ҫиет каччă. Элӳҫ пăлханнипе хăмач пек хӗрелчӗ.

— Лӗпӗшпи, кинона кайма билет илтӗм!—аякранах кăшкăрчӗ вăл Элӳҫе.

— Пыраймастăп!— пат татса хучӗ хӗр.

— Мӗншӗн?— тӗлӗнчӗ каччă.— Манран сивӗнмерӗн пулӗ-ҫке?

Хĕрĕн ирĕксĕрех ăнлантарма тиврĕ.

— Ырламалла,— терĕ Антти Элӳç стенографи курсне çӳренине пĕлсен. Миçе сехетре пĕтет сирĕн урок? Эпĕ сире кĕтсе илме пырăп. Инкӳпе те паллаштарăн.

Йĕкĕт суймарĕ.

Урам тăрăх виççĕн утрĕç вара. Антти мыскараçă иккен, çул тăршшĕпех шӳтлесе Элӳçпе Кулинене култарса пычĕ.

— Ыран йĕлтĕрпе каятпăр, Лĕпĕшпи,— сăмах татрĕ йĕкĕт, алă тытса сывпуллашнă май.

Киле кĕрсен, Кулине сăнать-сăнать те хĕрсемĕ куç умĕнчех улшăннине асăрхать: хаваслă, хĕвел майлă ялкăшать, хӳхĕм. Хăватлă çав юрату тени!

— Мĕнле çын вăл?— упăшки илтесрен именсе, пăшăлтатса ыйтрĕ Кулине Элӳçрен.— Чĕлхи-çăварĕ, тур çырлах, ытла евĕк. Япшар.

— Антти-и?— Элӳçĕн тути ейĕлчĕ.— Вăл — мана шăпам парнеленĕ йĕкĕт. Асар-писер самантра пуйăс çинче тĕл пултăм унпа. Сана каланăччĕ ĕнтĕ. Акă хăçантанпа çунать ăшăм ун пирки. Кайран, ав, вăл çĕр айĕнчен шăтса тухнă пек туйăнчĕ. Халĕ пĕрле вĕренетпĕр. Факультетсем кăна расна.

Юрату тени тупăннă сукмака ялан такăрлатса тăма хистет.

Утасчĕ, çӳресчĕ пĕрле нихçан уйрăлмасăр. Пуплесчĕ, йăпанасчĕ кăмăл туличчен. Мĕншĕн хĕвел пĕр талăкра икĕ хутчен тухса, куна вăрăмлатмасть-ши? Икĕ çĕрте вĕреннипе кашни минута шутлама тивет. Юратьха, эрнере пĕр вырсарникун пур. Ир-ирех йĕлтĕрпе каять вара Элӳç çак канмалли кун савнийĕпе юнашар.

Пĕррехинче вĕсен йышĕ хутшăнчĕ. Урхопа Элина пĕрле ярăнма пычĕç.

Виç-тăват уйăх çума-çумăн ларса вĕренни кăмăлтуртăмĕсене уçса пачĕ. Урхо Элинăна юратрĕ. Хĕр те сивлемест ăна.

Урхопа Элина пĕр-пĕрне юратни пуринчен те — куçĕсенчен, хусканăвĕсенчен, калаçнинчен — курăнса тăрать.

Антти мĕнле, чăннипех юратать-ши вăл Элӳçе?

## 6

Çутçанталăкăн кĕвви-юрри хăйĕн: хĕлле çĕр пичĕ шурă юрпа, çулла чечеклĕ кавирпе витĕнет.



Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО
26384чув

Карели çĕршывне çуркунне çитрĕ. Юр ирĕлсе шыв пулчĕ, сăрханчĕ. Тăпра çăтса ĕлкĕрейменни çырма-çатра тăрăх юхса кайрĕ.

Тавралăх çуса тасалнă пике пек таса. Йывăç-курăк ешерет, акнă тырă ӳсет, кайăк-кĕшĕк юрлать, паттăр халăх ĕçлет.

Этем чĕри ырлăхпа савăнса тапса-сиксе тăнă чух, куçа йӳçĕтекен тĕтĕм пек, хăрушла хыпар сарăлать: Тăван çĕршывăмăра нимĕç фашистчĕсем тапăннă.

Вăрçă пуçлансан, тепĕр виç-тăватă кунтан, Элӳç пиччĕшĕ Тарас фронта кайма пуçтарăнчĕ.

— Йăмăкăм, тархасшăн, Кулинене ан пăрах, ăна икĕ ачапа питĕ йывăр пулĕ,— терĕ вăл.— Пĕтĕм шанчăк санра. Тен, хамăр яла кайма тивĕ. Кирек мĕнле пулсан та, ачасене упрама тăрăшăр.

Кулинепе Элӳç татăлса макăраççĕ. Ывăлĕсем çеç, куççулĕ çук пек, ни хурланма, ни кулянма пĕлмеççĕ. Çӳреççĕ чупса-выляса. Ашшĕ, ав, кунтах-иç, мĕнрен хăрамалла вĕсен? Айванккасене ыранхи пурнăç нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармасть.

— Лăпкă пул, пичче. Шан пире,— ĕнентерет Элӳç.

— Тарас, хăвна упра, пĕр пирĕншĕн упра,— ӳлет Кулине, куççуль юхтарса.

— Вăрçă часах пĕтĕ, ырă-сывă таврăнăп,— йăпатать арăмне Тарас.

Çак самант вĕсен пурнăçĕнчи юлашки курнăçу пулнине нихăшĕ те тавçăраймарĕ.

Университетра та йĕрке пачах пăсăлчĕ. Хăшпĕр факультетсем эвакуаци йĕркипе куçса кайрĕç. Лекцисем хăш чух пулаççĕ, хăш чух — çук. Студентсем пĕр-пĕр кĕтесе ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тăраççĕ те çĕршыв шăпи çинчен калаçаççĕ.

Часах студентсен йышĕ чакма тытăнчĕ, самайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе фронта кайрĕ. Преподавательсем те сайралачĕç.

Антти те пачах çухалчĕ. Вăл ăçтине никам те пĕлмест.

Вăрçă тухсан темиçе кун иртсенех университета комсомол хула комитечĕн инструкторĕ килчĕ. Комитет членĕсене вăл аудитори пуçтарттарчĕ.

— Юлташсем, пурте комсомолецсем-и кунта? Асăрхаттаратăп, пирĕн калаçу — вăрттăн калаçу.

— Пурте комсомолецсем!— терĕ комитет секретарĕ.

— Тăшман йышăнпă вырăнсенче ĕçлеме разведчик-

сем хатĕрлемелле пирĕн,— пуçларĕ вăл сăмахне. Вара тĕпĕ-йĕрĕпех ăнлантарчĕ.

Инструктор сăмахне вĕçленĕ-вĕçлемен биофакри комсомол бюровĕн секретарĕ Урхо алă çĕклерĕ. Пултарулăхĕпе ыра кăмăлне кура ăна пурте хисеплеççĕ.

— Мана çырăр,— терĕ вăл, ним иккĕленмесĕр.

— Юрĕ. Сан яту списокра пĕрремĕш пултăр эппин,— килĕшрĕ инструктор.

— Ыйтса пĕлмелли пур,— каллех çĕкленчĕ Урхо.

— Тархасшăн.

— Разведчиксен шкулне хĕрсене илеççĕ-и?

Урхо хăйĕн юратнă хĕрĕнчен, Элинăран, хăрушла сахантра та уйăласшăн мар.

— Хăюллă хĕрсемшĕн чăрмав çук,— пĕлтерчĕ инструктор.

Çакăн хыççăн, Урхо сĕннипе, комитета чăваш хĕрне Элӳçе чĕнтерчĕç. Унпа йĕркеллĕ калаçрĕç. Çак ĕç ытла та кĕтмен çĕртен сиксе тухнипе-и, Элӳç çийĕнчех çăвар уçмарĕ. «Пултарайăп-ши?» тесе иккĕленни палăрчĕ ун питĕнче.

Хĕр сĕтел хушшинчи çынсене тинкерсе пăхрĕ. Ун куçĕ Урхо куçĕпе тĕл пулчĕ. Лешĕ хаваслă. «Хăюллăрах, Элӳç! Эсĕ — паттăр хĕр. Асту, тăшмана çĕнтермеллех пирĕн»,— теççĕ Урхо куçĕсем.

Элӳçĕн пичĕ-куçĕ çуталса илчĕ.

— Манăн разведчик пулас килет,— çирĕппĕн каларĕ вăл.

— Ĕненетпĕр сана, Елена Михайловна,— пуçне сĕлтсе илчĕ инструктор.

Комитетран тухсан Элӳçе коридорта Тюнепе унăн юратнă каччи Ульяс Урхонен тĕл пулчĕç.

— Мĕнле, килĕшрĕн-и?— ыйтрĕ Тюне. Сăмах мĕн çинчен пыни пуриншĕн те паллă.

— Эсир хăвăр?

— Çырăнтăмăр. Унсăр мĕнле? Эпир комсомолецсемçке. Тăван çĕршыв йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ чух ала усса ларни тăшмана пулăшнипе пĕрех.

— Эпĕ те сирĕнпе,— Тюнене ыталарĕ Элӳç.— Чимĕрха, Элина ăçта пирĕн? Вăл мĕнле?

— Эпир—виçĕ тус, пире пĕр-пĕринчен никам та уйăраймасть.

Ку тĕрĕсех. Ун пирки Урхо лайăх пĕлет.

Вăрçăччен час-часах Урхо хăйĕн савнине, Элинăна, хĕр-тусĕсенчен ниепле те хăпăтса каяймастчĕ.

— Эй, виçрешсем, эпĕ сире пурпĕрех уйăратăп,— тарăхатчĕ каччă.

— Мĕнле майпа?— ихĕлтетеççĕ виçĕ хĕр-тус.

— Тарасаран виçĕ витре шыв ăсатăп та сирĕн çине чашш сапатăп!— хăй те хĕрсемпе пĕрле ахăлтатмасăр тӳсеймест.—Тек вара Элина сирĕнпе нихçан та çӳреймĕ.

— Çук, пирĕн туслăха никам та çĕмĕреймĕ,— тупăшаççĕ хĕрсем, пĕр-пĕрин хулне тата çирĕпрех çатăрласа.

— Ҫапла качча та каяймастăр-и?— йĕплет Урхо хĕрсене.

Унтан хĕрхеннĕн Тюне Элинăна тытать те Урхо патнелле тĕртсе яма хатĕрленет.

— Юрĕ-çке,— килĕшет Тюне.— Сарса яр, Урхо, ытамна, ярса тыт савнă пикӳне.

Урхо çуллахи каникул вăхăтĕнче авланасшăнччĕ. Элина та сăмах панăччĕ. Анчах ĕмĕт ĕмĕт халлĕнех юлнă.

Пулас разведчиксен йышĕ ӳссех пычĕ. Пурте фашистсене хăвăртрах тĕп тăвассишĕн хĕмленеççĕ.

Ульяс юлчĕ. Университетран Тюнепе Элӳç иккĕшех тухрĕç. Ҫăмăлĕсем çĕкленӳллĕ хăйсен.

— Шур финсем каллех пуçĕсене çĕкленĕ. Манчĕç пулас шюцкоровецсене иртнĕ çул мĕнле аркатнине. Совет çарĕ питĕ хытă тăн панăччĕ. Халĕ те пуçран шăлмĕç,— чышкине сулкаларĕ Тюне.

Хĕрсене кĕçех Урхо хуса çитрĕ.

— Хĕрсем, эппин, пĕрле? Маттур эсир!—мухтаса илчĕ вăл Элӳçпе Тюнене.

— Атьăр Элина патне кĕрсе тухар,— чĕнчĕ Урхо.— Хыпар пĕлтерер ăна.

Урхо Элинăран самант та уйрăласшăн мар. Разведкăра та вăл унпа пĕрле пуласшăн. Чунтан парăннă чăнчăн савни теме юрать ăна.

Элӳç çаплах ăмсанать вĕсене. Унăн савнийĕ ăçта-ши? Антти систермесĕр пач çухалчĕ. Ҫакнашкал йывăр самантра пĕрле пулнине мĕн çиттĕр?

Ҫул тăршшĕпех Элӳç, юлташĕсен калаçăвне хутшăнмасăр, шухăш тыткăнĕнче пычĕ. Урхо пĕлмест-ши юратнă йĕкĕтĕм ăçтине? Ыйтса пăхсан мĕнле-ши? Вара, хăю çитерсе, вăтаннипе мăкăнь чечекĕ пек хĕрелсе, сăмах вĕçертрĕ:

— Антти курăнмасть. Ăçта-ши вăл?

— Мĕнле савни эсĕ? Хăв хăраххупа пĕлместĕн, айяй-яй,— кулкаларĕ Урхо.— Эпĕ акă юратни ăçталла су-

лăннине сыхласах тăратăп, ун хыççăн яланах тапса сикме хатĕр.

— Ан мухтан-ха,— Тюне ăна, выляса, хăй çумĕнчен тĕртсе яранçи турĕ.

— Эпĕ юрăхсăр савни, эппин, уншăн,— пуçне усрĕ Элўç.

— Эй, мĕн итлен çавна, пакăлтине,— йăпатма тăрăшрĕ Тюне хăйĕн тус-тантăшне.

— Қаçар, Элўç, эпĕ шўтлерĕм,— сасартăк сассине улăштарчĕ Урхо.— Ытлашши хыпăнса ан ўк. Çакнашкал лару-тăрура тăван аннўне те çухатăн. Пĕри мана вăрттăн систерчĕ-ха: партизан отрячĕ йĕркелеççĕ, тет. Тўрĕ кăмăллă çынсем каяççĕ унта. Чĕрĕ-сывă йĕкĕт алă усса лармĕ. Тен, Антти унта тапса сикнĕ? Тен, килне вĕçтернĕ?

Пĕр кана, чĕлхе çухатнăн, виççĕшĕ те ним чĕнмерĕç.

Вĕсем Элина Степанова хваттерне çитрĕç. Хуçисем алăкне уçмарĕç, шалтан сас пани те илтĕнмерĕ. Эппин, килте никам та çук. Юлташĕсем хăйсен çывăх тусне курма май килменнишĕн кăмăлсăрланчĕç.

— Акă сана савни. Шаннă кайăк йăвара çук,—шўтлĕн-мĕнлĕн каласа хучĕ Урхо.— Ара, питĕ кирлĕ ĕç çинчен калаçмаллаччĕ-çке. Мĕн тăвăн?

Виçĕ тус хут татăкĕ çырса алăк çумĕнчи пĕрене çурăкне хĕстерсе хăварчĕ. Элина хăй патне юлташĕсем килнине пĕлсе тăтăр.

## 7

Элўçе инкĕш алăк уçса кĕртрĕ. Йĕкĕрешсенчен пĕри, Авти, чирлесе ўкнĕ. Қăвар пек çунса выртать вăл, пашкаса сывлать. Питçăмартисем хĕп-хĕрлĕ.

Қулине ни вилĕ, ни чĕрĕ. Қуççулĕ шăпăртатса юхать хăйĕн. Кун хыççăн йĕкĕрешсенчен тепри те — Юмашĕ йăмшакланасса кĕтсех тăр. Йĕкĕрешсен йăли çавнашкал: уйрăмшарăн чирлемеççĕ. Вĕсен пĕр чĕре, пĕр ўпке, юн тымарĕсем тăрăх та çав юнах чупать тейĕн.

Тухтăр патне кайма тиврĕ. Қулине аллинче халсăрланнă Авти; Элўç вара Юмаша çĕклерĕ.

Амбулатори килни кăлăхах пулчĕ: тухтăрĕ фронта тухса кайнă иккен.

Кĕтнĕ пекех, çĕрле Юмаша вĕрилентерсе пăрахрĕ.

Чирлĕ ачасемпе айкашса, Элўç разведчиксен шкулне те каяймарĕ. Вăл йĕкĕрешсене çĕклесе, хула тăрăх тух-

тăр шыраса çӳренĕ самантра тус-тантăшĕсем ун патне, паллах, кĕрсе тухнах ĕнтĕ.

Тухтăр тупăнмарĕ. Вăрçă çулăмĕ алхасма тытăннă тапхăрта кирек кам та хăйĕн вырăнне тăмаваскать. Элӳç ирĕксĕрех пиччĕшĕн пĕчĕк ывăлĕсене хăй пĕлнĕ-пĕлмен сиплеме тытăнчĕ.

Хуйхă-суйхă пĕччен килмест, теççĕ. Тĕрĕсех пуль. Çемьене тепĕр инкек çулăхрĕ: хĕссе-пĕссе тыткаланă укçа-пухча та, апат-çимĕç те сахалланса юлчĕ. Тарас та, кӳлле чул путнăнах, ним хыпар-хăнар памасть.

Чирлĕ ачасене сĕт илсе ĕçтермелĕх те укçа çук. Кулине енчĕкĕ пуш-пушах. Вĕренсе тухсан, вăл вăрман министерствинче машинка умне ларма кăна ĕлкĕрнĕччĕ, укçа илмелĕх ĕçлеймерĕ.

— Тарас костюмне сутмалла-тăр,— вăтаннăн каларĕ Кулине.

— Пичче мĕн тейĕ пире?— хăраса ӳкрĕ Элӳç.

— Чирлĕ ачасене выçăпа асаплантарнăшăн вăл пуш-шех ятламĕ-ши?

Тепĕр кунне Элӳç пиччĕш костюмне илсе пасара кайрĕ.

Тăшман çывхарнăçемĕн çывхарать. Çынсене эвакуацилеççĕ.

— Хĕрсем, пире Тарас яла кайма хушрĕ,—шухăшлăн каларĕ Кулине.— Çул уçă чух, тен, каятпăр?

Элӳç шухăшламан мар кун пирки. Фашистсем хулана йышăнсан коммунист çемйине ырă кăтартас çуккине чухлать вăл. Вĕсем киле таврăнасса амăшĕ те чунтан кĕтет. Чирлĕ ачасемпе çула тухма та хăрушă. Урăх сăлтав та кăштах чарса тăрать: пĕр йĕр хăвармасăр кайсан, Антти мĕнле тупĕ ăна?

— Тепĕр эрне пурăнар-ха?— куçне айккинелле тартрĕ Элӳç.

— Çавăн чухлех-и?— пăшăрханса ӳкрĕ Кулине.— Кӳршĕсем ĕнерех тухса вĕçтерчĕç. Эх, хĕрсем, кая хăварсан, каю шăтмĕ-и?

Элӳç чĕнмерĕ. Çак кун, пасара хăйĕн чи чаплă платйине сутма тухсан, вăл усал хыпар илтрĕ: хула тулашĕнчи чугун çул фашистсен аллинче, эвакуаципе тухнă халăха Онега кӳлли урлă паромпа ăсатаççĕ. Хăраса ӳкрĕ хĕр. Киле таврăнсан, мĕн илтнине инкĕшне каларĕ. Иккĕш вара ыран ирхине тухса кайма килĕшрĕç. Тытăнчĕç пуçтарăнма. Çĕрĕпе тĕпĕртетрĕç. Ана та, кăна та пăрахса хăварас килмест. Икĕ чăматан лăк тултар-

чӗҫ. Хӗллехи тумтирсем те йӑрхахрах ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Чашӑк-тирӗк, пӳрт-ҫуртри ӑпӑр-тапӑра та тӗкӗнмен.

— Вӑрҫӑ чарӑнсан пурпӗрех таврӑнатпӑр. Юлччӑрин!— текелерӗҫ икӗ хӗрарӑм.

Чӑматансемпе чирлӗ ачасене харӑс йӑтса кайма май ҫук. Ҫын лаша мар, тата хӗрарӑмсен вӑйӗ те сахалтарах. Чӑматансене маларах сыхлӑх камерине кайса лартас шутпа Элӳҫ тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлман килтен тухрӗ.

Пристаньре халӑх хӗвӗшет. Ҫынсем кунтах ҫӗр касҫнӑ пулас. Юрать-ха, сыхлӑх камери япаласене йышӑнать.

Тепӗр ик-виҫ сехетрен Элӳҫпе Кулине, чирлӗ ачасене йӑтса, кӳлӗ хӗррине анчӗҫ.

Нумаях та пулмасть таврари ҫыран тӑрӑхне пӑхса ытармалла марччӗ. Йӑранӗ-йӑранӗпе тӗрлӗ тӗслӗ чечексем ашкӑратчӗҫ. Халӗ вара ҫав илемрен ним те юлман. Талккӑшӗпех куҫӗ-пуҫӗ сапаланчӑк ҫын кӗтӗвӗ кӗшӗлтетет. Вӗсем хушшинче ытларахӑшӗ хӗрарӑмсем, ватӑсем, ача-пӑча.

Причал ҫумӗнче паром ҫук-ха. Ун патне иртмелли хушӑка картланӑ. Енчен йӗркене сыхлакан милиционерсем пулмасан, мӗн хӑтланӗ-ши халӑх?

Ҫынсем паром пама ыйтаҫҫӗ. Пӗчӗккисем сехӗрленнипе шав макӑраҫҫӗ.

Онега кӳлли питӗ пысӑк, ӑна тинӗс теме те пулать. Кӳлӗ леш енче, пурте чухлаҫҫӗ, тӑнӑҫ пурнӑҫ кӗтет.

Шывпа пӗлӗт пӗрлешнӗ ҫӗрте пысӑк капашлӑ хура япала курӑнчӗ.

— Килет!— кӑшкӑрса ячӗ пӗри, ҫавна асӑрханӑскер.

Самант хускалчӗ халӑх. Причала кӗмелли хушӑкӑн алӑкӗ умне пырса та тӑванчӗ.

— Черете тӑрса тухӑр!— тет милиционер.— Ан шикленӗр, харӑс икӗ паром килет. Пӗри те лармасӑр юлмастӑр!

Итлесе тӑраҫҫӗ-и ӑна? Кашниех паром ҫине малтан кӗресшӗн.

Причал патне чирлӗ ачасене йӑтнӑ Кулинепе Элӳҫ те васкаса пырса тӑчӗҫ. Умра та ҫын, хыҫалта та... Тӑраҫҫӗ ҫапса хӗстернӗн, йӗп те ҫӗре ӳкес ҫук. Хайсен, этем сӑнӗ юлманскерсен, пичӗ тӑрӑх тар юхать.

Паром, темле хӑвӑрт шӑвать пулин те, самолет мар ҫав. Ӑна тӳсейми кӗтекенсемшӗн вӑл аран упаленнӗ пек туйӑнать.

Кулинепе Элӳҫ аллисем тӳсейми ывӑнчӗҫ. Ачасем

кĕҫ-вĕҫ ӳкесрен чун шикленет. Йĕкĕрешсем йывăр: ҫулталăк тултарса икке пуснă-ҫке.

Юмаш тем йыншаклама тытăнчĕ.

— Кăшт тӳс, пепкем,— йăпатать ăна Элӳҫ, ҫурăмĕнчен лăпкаса.

Чарăнмасть ача, пушшех хирĕнет.

— Ах, туту типнĕ сан, шыв ĕҫесшĕн пулĕ эсĕ.

Юрать-ха, амăшĕ тавҫăруллă. Вăл тăпăл-тăпăл ҫа-кăллă икĕ хутаҫ ҫĕленĕ. Кашнинех пĕрер кĕленче пылак шыв, вĕретнĕ сĕт, пиҫнĕ ҫăмарта, ҫăкăр тата ытти ҫимĕҫ чикнĕ. Килтен тухнă чух пĕр хутаҫне Элӳҫе ҫурăм хыҫне ҫактарчĕ, теприне хăй илчĕ.

Элӳҫ ачана темĕн чухлĕ йăпатсан та лăплантараймарĕ. Унăн прĕксĕрех хутаҫран кĕленче кăларма тиврĕ. Лăнкăрт-лăнкăрт ҫăтрĕ Юмаш пылак чее.

Тăванĕ юнтарать пулсан, Автин те унран юлма юрамасть. Вăл та, пуҫне амăшĕн хулпуҫҫийĕ ҫине хунăскер, ĕсĕклеме пăхрĕ.

— Санăн та шыв ĕҫес килет-им, ывăлăм? Халех парăп, ан макăр,— чуптăва-чуптăва йăпатать ăна амăшĕ.

Ача кăмăлне килеймерĕ Кулине. Хутаҫран кĕленче кăларма пикеннĕ чух халăх сасартăк малалла талпăнчĕ: паром ҫитсе чарăнать-мĕн. Анчах, пурне те пĕр кĕлтене пăчăртаса ҫыхнăн, пĕри те ушкăнран вĕҫерĕнеймест. Тинĕс хумĕн ытамне лекнĕн тытăнчĕҫ каллĕ-маллĕ чӳхенме: пĕрре малалла тайăлаҫҫĕ, тепре каялла чакаҫҫĕ.

Ачасем ҫĕкленĕ Кулинепе Элӳҫ те хум ăҫталла ҫапать, ҫавăнталла сулăнаҫҫĕ.

Этеммисем ухмаха ернĕн кăшкăрашаҫҫĕ, ҫухăрашаҫҫĕ: такам такама чĕнет, такам такама ятлать.

Унччен те пулмарĕ, куҫа курăнман ҫыхă патăрт! татăлчĕ. Михĕрен ыраш чашăлл юхса тухнăн, халăх паром патне ыткăнчĕ.

— Элӳҫ, ан юлăр!— асăрхаттарать ик-виҫ ҫын урлă мала ӳкнĕ Кулине.

— Эпир сан хыҫăнтах!— тет Элӳҫ, чылай кайра тапаҫланаканскер.

Ҫынсен ушкăнĕ кĕмессерен паром, теме сиссе, чĕтренсе илнĕн туйăнать, унăн тĕпĕ, путасла, ланк! пусăрăнать, шыв ăна кăларса ывăтасшăн самант тĕксе ҫĕклет. Ҫапла кĕрешеҫҫĕ йывăрланнăҫемĕн йывăрланса пыракан паромпа шыв.

Тĕркĕшсен-тĕркĕшсен, Кулинесем те парома кĕчĕҫ.

Хыпаланакан Элӳç инкĕшпе ачисене вырăн тупса лартрĕ.

— Эпĕ халех чăматансене йăпăрт кайса илетĕп,— хăй шухăшне пĕлтерчĕ вăл.

— Ан ухмахлан, Элӳç. Чăматану-пуçу!.. Сур!— хыпăнса ӳкрĕ Кулине.— Пире пăрахса ан хăварах.

Элӳç Кулине тилмĕрнине итлемерĕ.

— Эпĕ тĕк пек вĕçсе килĕп,— терĕ те, хирĕç кĕрекен çынсене çапăна-çапăна паром çинчен вăркăнса тухрĕ.

Япалисене илчĕ те часах каялла чупрĕ.

— Ман ачасем паром çинче. Тархасшăн çул парăр!— ӳкĕтлет хĕр.

Çынсем ăна, шелленĕн, сирĕлкелерĕç. Милиционер та хапхаран кĕртсе ячĕ ăна. Çук телее сутăн илеймĕн çав: паром тапранма ĕлкĕрнĕ. Ĕнтĕ унпа причал хушшинчи шыв хăлаçа яхăн. Хура сăнлă шыв сиксе вĕренĕн палкаса явăнать.

Элӳç ним тума пĕлмерĕ. Вăл икĕ аллине çăварĕ патне варинккелетсе тытрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Ку-ли-не-е! Эпĕ тепĕр паромпа каçатăп! Эсир леш енче кĕтĕр мана-а!

Илтрĕ-ши ăна инкĕшĕ?

Паром çине ларайманнисем татах нумай.

— Хулара фашистсем!— ян кайрĕ пĕрин сасси.

— Мĕн пакăлтатан кирлĕ мара, çĕр çăтасшĕ!—ылханчĕ ăна тепри.

— Пĕтрĕмĕр!.. Тур хăтартăрах!..— сăхсăхса илчĕ Элӳçпе юнашар тăракан ватă хĕрарăм.

Тапранса кайнă парома пурте ăмсанса пăхаççĕ, унта, вĕсен шучĕпе, телейлисем имĕш.

Паром тиевĕ ытла йывăр-тăр аран-аран шăвать. Акă савăнăç. Причал çумне сассăр-мĕнсĕр иккĕмĕш паром пырса чарăнчĕ.

Паçăрхи пекех тĕркĕшӳ! Пĕри теприн пуçĕ урлă таптаса каçманни кăна.

Элӳç малтанхи ушкăнпах кĕчĕ.

— Шĕкĕр турра,— терĕ вăл пиччĕш çемйине хуса çитнĕн.

Халăх шав йăтăнать, чыхăнать, ниме уямасăр. Парома кĕрсе пултăр, кайран кунта хуть те вутлă çумăр çутăр.

Çынсем, ларса каяссипе айланса, хăйсен хыçне хăрушла инкек капланса тăнине асăрхаман: çыран хĕррине тăшман пырса чарăнма ĕлкĕрнĕ.

— Çитет! Тек лартмастăп, атту кӳлĕ тĕпне чăмăпăр!— кăшкăрчĕ матрос. Вара вăл, вăрăм йывăç сăлăпа хăпăл-хапăл шутарса, парома кĕмелли хушăка картларĕ; унтан кăкарнă пăявсене вĕçертрĕ. Паром ерипен причалтан хăпрĕ, айри шыв, вĕреме кĕнĕн, пал-палл палкаса айккинелле хум сарать.

Хăрушлăх иртнĕ пек лăштах пулчĕ халăх. Анчах хăрушлăх тин пуçланнине нихăшĕ те чухламасть.

Чиперех йăрлаттарать-ха шыв çийĕн питĕ нумай çын лартнă паром. Ак тамаша! Причалтан пĕри рупорпа кăшкăрать. Вăл парома каялла çавăрма хушать. Ку вăл — нимĕç çарĕн приказĕ, тет.

— Хулара фашистсем хуçаланма тытăннă эппин,— терĕ Элӳçпе юнашар тăракан арçын.— Мĕн кĕтет пире?

— Э-э, эпир хăтăлнă ĕнтĕ,— хушса хучĕ ун çумĕнчи хĕрарăм.— Тин пирĕн хӳрене тытаймаççĕ вĕсем. Кӳлĕ леш енче — хамăрăннисем.

Рупорпа кăшкăраканни хăратма тытăнчĕ.

— Паром капитанĕ, юлашки хут калатăп: çыран хĕрринелле çул тыт!

Капитан пăхăнмасть, парома шав малалла иштерет.

— Ах, итлеместĕн?! Эппин, курăр хăвăр умăрти парома!— ĕрлешет рупор.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, иккĕмĕш паром çинчи çынсем хăйсем пуçĕсем урлă умлă-хыçлă етресем шăхăрса иртсе кайнине илтрĕç. Çав етресем умри парома пырса тăрăнчĕç. Кĕçех йăмăх хĕрлĕ çулăм хыпса илчĕ, хура тĕтĕм палкаса тухрĕ.

— Фашистсем парома тупăпа печĕç!— терĕ Элӳçпе юнашар тăракан арçын.— Акă сана «эпир хăтăлтăмăр».

— Эх, мĕн хăтланаççĕ? Йĕксĕксем!— ятласа илчĕ ун çумĕнчи хĕрарăм.

Элӳç шартах сикрĕ, ара, унта Кулинепе аччсем-çке!

— Ай-ай! Пĕтрĕç! Пичче-е-е!— Тарас, илтсе, çемйине хăтарма килес пек кăшкăрса ячĕ вăл. Икĕ аллипе çӳçне тăпăлтарасла тăрмаларĕ. Ӳлесе йĕрет Элӳç. Сехĕрленнĕ çынсем татăлса макăракан хĕр енне çаврăнса та пăхмарĕç. Вĕсем пурте çунакан парома куç илмесĕр тинкереççĕ.

Пуç тăрринчен татах снарядсем вĕçе-вĕçе иртрĕç, çунакан парома пырса тăрăнчĕç. Кĕрсс! кĕрслетрĕ сасă. Татах çулăм, татах хура тĕтĕм капланса хăпарчĕ. Паром вырăнĕнче часах ним те юлмарĕ. Çав тĕлте пĕр

самант шыв вересе тăнă пек туйăнчĕ. Унтан, тăвăл çĕкленнĕ пек, çиллес хумсем тăшманăн тискер ĕçĕ çинчен тĕнчене пĕлтерме васканăн кӳлĕ тăрăх чӳхенсе, пĕр явăнса, пĕр пĕтĕрĕнсе сарăлчĕç.

— Путрĕç!.. Мĕн чухлĕ çын пурнăçĕ татăлчĕ!—ахлатрĕç çакна курса тăракансем.

— Эх, мăнтарăн. Кулинепе ачисене тек ĕмĕрне те курассăм çук ĕнтĕ!— тата хытăрах макăрма пуçларĕ Элӳç. Вăл тарăхнипе чăматанĕсене ура пуçĕпе тапа-тапа илчĕ.— Сире пула уйрăлтăм инкепе ачисенчен. Мĕн калĕ ĕнтĕ мана Тарас пичче?!

Татăлса макăрнипе Элӳç антăхсах кайрĕ. Малалла мĕн пулса иртнине те сисмерĕ вăл.

Вĕсен паромне каялла тавăрчĕç. Çынсене, пĕрерĕнпĕрерĕн кăларса, ухтарма-тĕпчеме тытăнчĕç.

Чăрсăр фашистсем хăйсен аллине лекнĕ айăпсăр çынсене ним вырăнне хумаççĕ. Пăшал кӳпчекĕпе тĕкеççĕ...

8

Элӳç допрос хыççăн килĕнче икĕ çĕр каçрĕ. Ăна тухса çӳреме хушман. Виççĕмĕш кун комендатурăна тытса кайрĕç.

— Эсĕ пирĕн патăмăрта машинистка-стенографисткăра ĕçлĕн,— сасартăк сĕнчĕç хайхискере.

Пĕртте фашистсен тарçи пулас килмест Элӳçĕн. Допросра хăй стенографипе машинопись курсĕ пĕтерни çинчен персе янишĕн халĕ хыпса çунать. Тепĕр майлă шухăш та пырса кĕчĕ пуçа: «Тен, кунта фашист çарĕн вăрттăнлăхĕсене пĕлме май пулĕ? Вара хамăрăннисене пĕлтерсе тăрăп».

Çак шухăшпа ĕçлеме тытăнчĕ хĕр. Комендатурăра паллакан çын чунĕ çук. Çунакан ăша никампа калаçса пусармалла мар. Хăйне вăл кашкăр кĕтĕвне лекнĕн туять. Кунта ĕçлекенсене, курайманнипе, пăвса пăрахма хатĕр. Уйрăмах — секретлă пайра ларакан хĕре. Вăл нимĕç, шур финн офицерĕсемпе ихĕлтетет. Таçтан тупать хитре тумне? Кăпăшка çухаллă платье е çара çурăмлă кĕпе тăхăнать. Урине — шурă туфли е атă, е çӳллĕ кĕлеллĕ пушмак. Çӳçе ун сарă та кăтра. Пуçне мĕнле кăна калпак лартмасть-ши? Тутине, пĕр пăт пулĕ, писев сĕрнĕ. Пӳрнисенче ахах-мерчен куçлă çĕрĕсем. Ахăртнех, вăл вырăс. Ячĕ те вырăсла — Фая.

Юрать-ха, Элӳҫ патне никам та ҫулӑхмасть. «Акӑ эпӗ, мана курӑр» тенӗн ихӗлтетмест ҫав вӑл.

Фая вара час-часах хӑйӗн пӳлӗмӗнчен тухса явкаланса ҫӳрет. Элӳҫе мӑшкӑлламасӑр нихҫан та иртмест:

— Эй, карчӑк, ме конфет!

Илемлӗ хутпа ҫӑкӑр ҫемҫи чӗркенӗ «конфет» хурать ун умне. Хӑй вара ахӑлтатса кулать.

Тен, чӑнах та карчӑк вырӑннех хурать чӑваш хӗрне? Кулинепе ачисем ҫунса кӳлле путни ӑна ҫапса хуҫрӗ, пысӑк хуйхӑ пӗкӗ пек авӑнтарчӗ. Элӳҫ хура тутӑрне ҫамки ҫине ӳпӗнтеререх ҫыхать те пичетлет вырӑнтан тапранмасӑр.

Ёҫӗ нумай. Машинка патне ҫӗклемӗпех йӑтаҫҫӗ тӗрлӗ хут. Тем ҫинчен те пичетлеттереҫҫӗ. Вулать-вулать те Элӳҫ ҫак пичетленӗ хутсене, вӗсем пӗри те партизансене кӑсӑклантарассӑн туйӑнмасть. Сӑмахран, акӑ, таҫти вӑрман урлӑ, прачак тӑрӑх ҫул хывма хула халӑхне те хуса каяс пирки пичетлеттерчӗҫ. Мӗн тесе усӑ патӑр партизансене ҫак хыпара пӗлни?

Асӗ ҫитмен ҫав ҫамрӑк хӗрӗн. Карелин ҫӗр айӗнче мӗн чухлӗ хаклӑ йышши мул: гранит, доломит, слюда, тимӗр тӑпри... шутласа пӗтерейӗмӗн. Ҫав пуян пурлӑха тиесе кайма та ҫул кирлӗ пулнӑ ӗнтӗ ҫӑткӑн фашистсене.

Элӳҫ ҫав пичетлеме панӑ хутсем ҫинче яланах партизансене кирлине шыранӑ, анчах та тавҫӑру ҫитменнипе ним те тупма пӗлмен. Секретлӑ пайра ӗҫлекен Фая машинисткӑна ӑмсаннӑ. Вӑл, паллах, пурне те пӗлнӗ.

Уйӑх хыҫҫӑн уйӑх иртет, хӗл те ларать.

Ёҫ хыҫҫӑн Элӳҫ партизансен куҫне лекес шутпа урамра чылайччен ҫӳреме тытӑнчӗ, анчах, патрульсемсӗр пуҫне, никама та тӗл пулмасть.

«Енчен мана пӗр-пӗр партизан тытса чарсан, мӗн калама пӗлӗп?»—шухӑш пырса ҫапрӗ Элӳҫе. Вӑл хӑҫан та пулин партизансемпе тӗл пуласса шанатех. Ҫавӑнпа та хӗр пурне те ытларах сӑнама тытӑнчӗ. Шыракан тупатех! Юнашар ларакан пай пуҫлӑхӗ, акӑ, ҫӑкӑр карточкисене ытла тирпейсӗр усрать. Шутне те пӗлмест пулӗ. «Ил те пытар»,— хӗтӗртрӗ ӑшри шухӑш. Ҫапла турӗ те хайхискер, пӗр-ик кун чӗтрекелесе пурӑнчӗ. Лешӗ карточка ҫухални ҫинчен шарламасть. Эппин, вӑл сисмен. Ҫакӑн хыҫҫӑн, май килнӗ чух, чылаях хӗстеркелерӗ Элӳҫ. «Хатӗрлесе хуни чармӗ, тен, сасартӑк кирлӗ те пулӗ»,— шухӑшларӗ вӑл.

Ёнер те, виçĕмкун та Элӳçĕн кун усăсăр пĕтрĕ. Сукмак тени ăна партизан çулĕ çине илсе тухманран хĕр шанчăка çухатрĕ. «Мана комендатурăра ĕçленĕшĕн тăшман вырăнне хумаççĕ-ши?»— сасартăк хăрушă шухăш касса кайрĕ ун чунне. Вара чĕререн хурланса йĕме тытăнчĕ. Ёçрен пăрахса тарма та хатĕр. Партизансем патне кайĕччĕ. Ăçта-ши вĕсем? Пуррине пурах-ха, хăйсен ĕçне тăваççĕ. Комендатурăра нимĕç офицерĕсемпе финн офицерĕсем, ав, епле тарăхса ятлаçаççĕ. Партизансем тапăнса чугун çул тăрăх турттаракан хĕçпăшала тытса илеççĕ е эшелонсемпе кĕперсене сирпĕтеççĕ. Çакнашкал хыпарсене илтсен, Элӳç чăтма çук хĕпĕртет.

Пĕррехинче Элӳçе финн офицерне чĕнме хваттерне ячĕç. Кунĕ сивĕ те уяр. Яштака хырсем янкăр тӳпенелле кармашнă. Вĕсем симĕс йĕплĕ ывăçĕ çинче сарă хĕвеле кантараççĕ. Умра ирне-каçне уяман юр чечекĕсем ялтăртатаççĕ. Куç уçма çук йăмăхать.

Ӳпĕнерех пачĕ те утрĕ-утрĕ урам тăрăх Элӳç. Нăрă пек пырса перĕнчĕ ăна такам. Чăл-чал пăхкаларĕ хĕр. Лешĕ те тăпах чарăнчĕ. Самант палларĕç пĕр-пĕрне.

— Салам, Урхо!

— Ырă кун пултăр, Элӳç!

Кулкаларĕç иккĕшĕ те, тĕл пулнăшăн савăнса.

— Ăçта кун кунлатăн эсĕ, Урхо? Элина, Тюне ăçта? Пĕлсех тăратăп, разведчиксен курсне пĕтертĕр пулĕ?

— Харăс çакăн чухлĕ ыйту-и?.. Ай-яй, эрне калаçсан та вĕçне çитеймĕн. Чим-ха, ху мĕнле пурăнан?—Элӳçе хулĕнчен çавăтрĕ Урхо.

— Эпĕ комендатурăра машинисткăра ĕçлетĕп. Манăн çав тери партизансене пулăшас килет. Анчах эпĕ пичетлекен хутсенчен ним пайти те çук. Унта, секретлă пайра, Фая ятлă хĕр, çав тери якăлтискер, машинисткăра ĕçлет. Эпĕ ун вырăнĕнче ларас пулсан, нимĕç çарĕн пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ, пĕтĕм вăрттăнлăхĕ ман алăра пулĕччĕ. Мĕн кирлине йăлтах партизансене пĕлтерсе тăраттăм,— хыпăна-хыпăна калаçрĕ Элӳç, тупнă япалана çухатасран хăранăн.— Ма урăх çĕре куçса каймасть-ши Фая? Пĕлсех тăратăп, мана ун вырăнне лартĕччĕç.

— Комендатурăра тек машинистка çук-и-мĕн?—темле шухăшлăн ыйтрĕ Урхо.

— Çук çав. Комендатурăра мар, хулипе шырасан та тупаймĕç,— терĕ Элӳç.— Элинăпа Тюне мĕнле унта, кала-ха?

— Чиперех.

— Салам кала вёсене манран.

— Юрĕ.

— Сирĕнпе пĕрле вĕренме пырайманшăн питĕ кулянатăп. Эпĕ те разведкăра çӳреттĕм халь. Пысăк хуйхă тӳссе irttertĕм: Кулине инкепе ачисем...

— Пĕлетĕп,—пӳлчĕ ăна Урхо салхуллă сасăпа.—Ытлашши иртĕхеççĕ фашистсем. Çитĕ вăхăт, пуриншĕн те явап тытĕç.

— Хăçан çитĕ çав вăхăт?

— Эх, Элӳç, ăна никам та шурă тутăрпа çыхса килмест. Çав вăхăта пирĕн хамăрăн карр тăрса çитермелле.

Сасартăк иккĕш те курах кайрĕç: вĕсене хирĕç нимĕç офицерĕ, хĕр çавăтнăскер, аллине урлă-пирлĕ сулкаласа, тем пакăлтатса килет.

Урхопа Элӳç ирĕксĕрех шăпăрт пулчĕç. Лешсем иртсе кайса курăнми пулсан, Урхо сулахай тăкăрлăк енне пуçне сĕлтсе çапла каларĕ:

— Ман çул çакăнталла. Кӳр аллуна, тытса хытă чăмăртам. Тепре куриччен ман чĕре ăшши санра ан сивĕнтĕр, Элӳç.

— Эпĕ шухăшпа ялан сирĕнпе пĕрле.

Уйрăлчĕç пĕрле вĕреннĕ студенткăпа студент.

Пилĕк-ултă хăлаç утсан, Урхо хăйне чĕннине илтрĕ. Çаврăнса пăхрĕ: ун хыçĕнчен Элӳç чупать-мĕн.

— Эпĕ мансах кайнă,— пашкаса хуса çитсе аллине хĕвне чикрĕ хĕр.— Эпĕ сирĕн валли çăкăр карточки хатĕрленĕччĕ.

— Мĕнле майпа? Эпир апат-çимĕç тĕлĕшпе чăнах та хĕсĕк пурăнатпăр-ха.

Элӳç темиçе карточка кăларса тыттарчĕ.

— Кирлĕ пулсан, татах тупатăп,— йăл-йăл кулкаларĕ вăл, мĕн ĕмĕтленнине пурнăçлама пултарнăшăн савăнса. Вара çак хаклă тупра ун аллине мĕнле лекнине пĕлтерчĕ.

— Тавтапуç, Элӳç. Ӳлĕм сыхлануллăрах пул,— асăрхаттарчĕ Урхо, çăкăр карточкисене кĕсйине чикнĕ май.

— Хăçан килетĕн? Аçта тупас сана? Хăш урамра пурăнатăр?— çине-çинех ыйтрĕ Элӳç.

— Шыраса ан чăрман. Хамăрах тупатпăр сана,—татах тепĕр хут алă пачĕ Урхо.— Ну, сывă пул! Тек тытăнса ан тăр!

Урхо чупсах кайрĕ малалла. Элӳç пуçне пĕксе ура-

ма тухрĕ. Кăмăл çĕкленӳллĕ ун. Пурăнас килет çĕр çул, икçĕр. Çавăнтах хыпăнса ӳкрĕ хĕр. Ара, вăл мĕнлеха Антти пирки ыйтса пĕлме маннă? Каялла чупрĕ. Хуса çитес пур-и ăна? Аякка кайма та ĕлкĕрнĕ вăл. Ним тума пĕлмен енне Элӳç сасăпах кăшкăрса ячĕ: «Анттине салам кала!» Урхо аллисене сулкаларĕ. «Антти пирĕнпе мар. Вăл ăçтине пĕлместĕп» тенине пĕлтерчĕ ку. Анчах Элӳç хăй майлă ăнланчĕ: «Санăн хĕрӳллĕ саламна çитеретĕпех».

— Антти, паллах, вĕсемпе. Студент хăй йышĕнчен ăçта уйрăлтăр? Урхо йăлтах каласа парĕ те акă, вăл ман патăма килĕ.

Ырă шухăшсем чĕрере сар çу пек ирĕлчĕç Элӳçĕн. Хăй çулĕпе вăл çăмăллăн утрĕ.

## 9

Айĕнче кăвайт шартлатса çунакан сăра хуранĕнчи шыв пек вĕресе тăкăнчĕ Элӳç пурнăçĕ. Тем те кĕтнĕ, анчах хăйне концлагере хупасси пирки нихçан асĕнче пулман. Ыррине тума лайăххăн ĕлкĕреймерĕ — чикĕсĕр пысăк ĕмĕчĕсем татăлчĕç. Акă халĕ çурăма пăшалпа тĕллесе уттарать ăна фашист. Умра та, хыçра та — шĕвĕр вĕçлĕ штык.

Тăшман концлагерĕ. Йĕри-тавра йĕплĕ пралук.

Кам сутрĕ ăна? Ниепле те тавçăраймасть Элӳç.

Урхопа курнăçнă хыççăн ĕçсем чиперех ăнса пыратчĕç. Çăкăр карточкисем татах хатĕрлерĕ. Кĕтетчĕ-ха вăл хăшĕ те пулин килсе тухасса.

Пĕр кунхине комендатурăра сăмах сарăлчĕ: секретлă пайра ĕçлекен Фая машинисткăна хăй хваттерĕнче вырăнĕ çинчех, такам вĕлерсе хăварнă имĕш. Сĕтелĕ çинче ĕçме-çиме тулли ларнă, тет. Чăнах, ĕçе пымарĕ Фая. Эппин, сăмах тĕрĕсех. Çакăн хыççăн тĕрлĕрен сăмахюмах çӳрерĕ: еркĕнĕ ăна тепĕр каччăпа тытнă те кĕвĕçнипе персе пăрахнă пулать. Хăшпĕрисем ӳрăхларах шухăшлаççĕ-мĕн: вăрăсем вĕлернĕ, мĕншĕн тесен ылтăн алкисене, çĕррисене йăлтах çаратнă. Сĕтел сунтăхĕнче çăкăр карточкисем тĕркипех выртнă. Партизансен ĕçĕ марши тесе иккĕленекенсем те тупăнчĕç.

Фая-машинисткăшăн Элӳç хыпсах çунмарĕ, çапах та ăна кăшт хĕрхенчĕ: çамрăк хĕрарăм-çке, ара.

Тепĕр ик-виç кун иртсен, каçпа кантăкран тăкăртаттарчĕç.

Элӳҫ, килте пӗчченех пурнаканскер, шартах сикрӗ.
Элина иккен. Вӑл калама ҫул капӑр тумланнӑ. Нихҫан курман вӑл ун ҫиййӗнче кунашкал хӑнтӑр тытнӑ кӗрӗк. Чӑрр пӑхрӗ Элӳҫ ӑна малалла иртме чӗниччен.
— Ҫула май йӑпӑрт кӗрсе тухас терӗм,—сӑмах хушрӗ Элина кил хуҫине ыталаса чуптунӑ май.
— Айтуру, сан ҫиййӗнти кӗрӗкӳ... мӗн-ҫке... ытла ятуллӑ. Театра каятӑн-и? Эпӗ... эсӗ мӗн... тесеччӗ,— хӑй шухӑшне уҫӑмлӑ калаймарӗ Элӳҫ.
— Ха, эсӗ, ҫӗрле ватникпе ҫӳресе, мана патрульсене тыттарасшӑн-и?— кулкаласа илчӗ Элина.
Тинех ӑнланчӗ Элӳҫ.
— Ирт, тусӑм, салтӑн. Халех чей ӗҫӗпӗр.
Вӑл тӗпел кукрине пӑрӑнма пикенчӗ. Анчах та ӑна Элина тытса чарчӗ.
— Хӑналанса ларма вӑхӑт ҫук,— терӗ вӑл.— Урам кукринче мана Урхо кӗтет.
— Мӗншӗн ӑна тула хӑвартӑн? Ҫак сивӗре шӑнса хытать ҫын. Чӗнсе кӗрт ӑна,— тилмӗрчӗ Элӳҫ.
— Юрамасть. Тем пулса тухасси пур. Кил-ха, юнашар лар манпа.
Пӳртре никам та ҫук пулин те, Элина пӑшӑлтатса калаҫрӗ.
— Сана, Элӳҫ, тен, Фая вырӑнне лартаҫҫӗ.
— Эсӗ ӑна вӗлерни ҫинчен илтнӗ-и вара?— тӗлӗнчӗ Элӳҫ.
— Пирӗн пурне те курмалла, илтмелле. Акӑ мӗн хушатпӑр сана: ху мӗн пичетленисене пурне те асра тытса юлма тӑрӑш. Фашистсем мӗн тума шутланине пирӗн йӑлтах пӗлсе тӑмалла.
— Тӑрӑшӑп,— тупа тунӑн каларӗ Элӳҫ.
— Асту, сыхланullӑ пул.
Элина алӑк хӑлӑпне тытрӗ.
— Чим-ха, ҫӑкӑр карточкисене ил,— вӑшт кухньӑна чӑмрӗ Элӳҫ. Вӗсене урай хӑми айне тӗплӗн пытарнӑччӗ вӑл.
— Ҫухалнине сисмеҫҫӗ-и?
— Ҫук-ха.
— Тавтапуҫ, тусӑм, пире апат енӗпе пулӑшнӑшӑн.
Элина карточкӑсене васкасах кӗрӗк ҫанни ӑшӗнчи саплӑка чиксе майлаштарчӗ.
— Хӑҫан килен тата?— тӗпчет Элӳҫ.
— Кӗт. Пирӗнтен кам та пулин кӗрсе тухатех. Сывӑ пул.

— Тепре куриччсн! — Элина тухса кайсан, Элӳҫ алӑкне каллех кӗле ярса питӗрчӗ.

## 10

Ҫывӑх тус-тантӑшӗпе курнӑҫнӑ хыҫҫӑн Элӳҫ ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа ҫӳрерӗ. Анчах савӑнӑҫне никама та кӑтартмарӗ, шӑпӑрт кӑна йӗпе шӑши евӗр ларчӗ, машинкине шаккаса.

Фая вырӑнне ӗҫлеме урӑххине тупаймарӗҫ-ха. Офицерсенчен тахӑшӗ айкашкалать, выляма хӑнӑхман пӳрнисем, паллах, кӗвве кӗрсе чупмаҫҫӗ саспаллисем ҫийӗн. Пичетлемелли купалансах пырать. Шӑл витӗр чӑрт! сурса, усал сӑмахсем каласа ятлаҫаҫҫӗ пуҫлӑхсем.

Тӳсӗм вӗҫне тухрӗҫ пулас — Элӳҫе ӗҫе чӗнсе сӗтел хушшине лартрӗҫ: питӗ хӑвӑрт пичетлемелли пур. Ҫырнӑ хутсем умра. Ӑна сыхлаканӗ те ҫумрах ларать.

Шакӑлтататать машинка. Элӳҫ шутсӑр пӑлханать. Ҫын енчӗкне укҫа вӑрлама кӗнӗнех алли чӗтрет: ара, мӗн пичетленине асра тытса юлмалла-ҫке ун.

Пичетлесе пӗтерсен, пӑхса тӑраканни ӑна секретлӑ пайӑн пӳлӗмӗнчен тӗрӗслесех кӑларса ячӗ. Документра мӗн ҫырнине машинистка ӑша хурасса тавҫӑраймасть. Тен, ӑна ытла айван вырӑнне хурать.

Турра шӗкӗр теҫҫӗ ун пек самантра: пӗр япала ҫеҫ пичетлеттерчӗҫ. Темиҫе хут пичетлеттернӗ пулсан, унта мӗн ҫинчен каланине те пӑлханнӑ пирки арпаштарса пӗтерӗн.

Киле таврӑнсан, Элӳҫ ҫӳлӗк ҫинчен кӗнеке илсе ларчӗ сӗтел хушшине. «Пушкин. Капитанская дочка»,— вуларӗ вӑл. Вара страницине уҫрӗ те йӗркесем хушшипе секретлӑ пайра мӗн ҫинчен пичетленине, манса каясран, стенографи меслечӗпе кӗскен ҫырса хучӗ: «Ҫӗнӗ завода хӗҫпӑшал тумалли оборудовани тиенӗ эшелон ҫитет (числосене палӑртрӗ). Разъездпа завод хушшинчи ҫула, кӗрт хӳсе кайнӑскере, юртан тасатма васкасах хула халӑхне кӑлараҫҫӗ».

Ҫырса пӗтерсен, Элӳҫ кӗнекене хупрӗ те хӑй вырӑнне хучӗ.

— Ҫак хыпар усӑ парӗ-ши тусӑмсене? — чухлаймасть ҫамрӑк хӗр.

Пурпӗрех ун кӑмӑлӗ ҫӗкленчӗ, ташласа яма хатӗр.

Юра ёнёрлесе, вăл кухньăна кĕчĕ. Вучах чĕртсе чейник çакрĕ. Килте ĕнтĕ тахçантанпах сахăр катăкĕ çук. Çулла вĕсем, инкĕшĕпе иккĕш, кӳлĕ хĕрринче матрӳшке курăкĕ татнăччĕ. Ăна сиксе вĕрекен шыва ярсан, чей пыл тути калать. Шăрши мĕне тăрать тата! Сиплĕ эмел ĕçнĕн кантарать çанçурăма, ăшчике çемçетет.

Чейпе сăйланнă хыççăн Элӳç тĕкĕр умне пычĕ—тахçанах хăй сăнне курман. Куçкĕски те чей ĕçнĕн тарланă. Вăл питне кăтартма вăтанать тейĕн, марльăпа карăннăн — шап-шурă. Ун çийĕн Элӳç шĕвĕр пӳрнине йăряр шутаркаларĕ. Хăй те сисмерĕ, çырса хучĕ: «Антти». Савнă каччине курас килнипе тунсăхласа ассăн сывларĕ. Саспалли хушшипе хăйĕн сăнĕ ула-чăлаллă курăнчĕ вара. «Тьфу! Шăп карчăк!» Çавăнтах чĕлхе кăларса хăйне хăй витлерĕ.

Тĕкĕр умĕнче ачашланкаласа тăнă самантра илтех кайрĕ: тахăшĕ кантăка тăкăртаттарать.

— Кам-ши?..

Пĕр савăннă пек, пĕр шикленнĕ пек пулчĕ Элӳç. Алкумне тухсан, вăл шăппăн сас пачĕ: «Кам унта?» Урхомĕн.

— Кĕр хăвăртрах,— чĕнчĕ ăна Элӳç,— вĕри чей ĕç, ăшăн.

— Шутсăрваскатăп. Эпир кĕçĕр хуларан тухса шăватпăр. Виçĕ эрне е уйăх иртмесĕр те килейместпĕр. Çакăн çинчен сана пĕлтерсе хăварас терĕмĕр — ан пăшăрхан.

— Мĕншĕн... васкасах?

— Вăрçă хăвалать, йăмăкăм.

— Ах тур, эпĕ мĕнле вара? Урхо, мана та илсе кайăр хăвăрпа,— тилмĕрчĕ Элӳç.

— Фашистсен йăвинче хамăр çын ĕçлени кирлĕ-çке. Ну, мĕнле, Фая вырăнне сана лартмарĕç-и-ха?

— Лартасса лартмарĕç-ха, анчах паян секретлă пайра пĕр хут пичетлеттерчĕç.

— Мĕн çинчен?— хыпаланса ыйтрĕ Урхо.

Элӳç тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ.

— Маттур эсĕ, Элӳç. Çав эшелона мĕн тумаллине пĕлĕпĕр,— терĕ Урхо.—Ну, сывă пул! Ан тунсăхла. Хăвна сыхла.

— Çӳрес сукмакăрсем такăр пулччăр! Тюнепе Элинăна салам кала,— хăна кайрĕ. Элӳç хăйне çыртса çурма хатĕр кашкăр кĕтĕвĕ варринче пĕр пĕччен тăрса юлнăн туйрĕ те йĕрсе ячĕ.

## 11

Шут шăрçине сулахай енне шăкăрт-шăкăрт шутарнăн, кунсем умлă-хыçлăн иртсе юлаççĕ.

Элӳçе каллех секретлă пая илсе кайрĕç. Ку хутĕнче цифрăсем те цифрăсем кăна пичетлеттерчĕç. Мĕн мурла япала ку? Элӳç ним те ăнланмасть. Питĕ вăрттăн ĕç çинчен калаççĕ ахăртнех çак цифрăсем. Куçпа курни хăлхапа илтнинчен ытларах асра юлаканччĕ-ха ун. Çавăнпа та вăл хăйĕн пĕтĕм ăстăнне кӳлчĕ. Цифрăсен тупсăмне ăнкарĕçех юлташĕсем.

Пичетлесе пĕтерсен, ăна секретлă пӳлĕмрен, унччен хи пекех, сумкине уçтарса, кĕсйине тавăрттарса тĕрĕслесе кăларчĕç. Унăн куллен ĕçлекен сĕтелĕ çинче хут самай купаланнă. Элӳçĕн пичетлес шухăш мар-ха, вăл асра тытнă цифрăсене манса кайиччен стенографи меслечĕпе çырса хурасшăн ăшталанать. Кунтах лешĕ, секретлă пайра ĕçлекен сынни, çӳрет каллĕ-маллĕ кумса. Тарăхать Элӳç. Çапах вăл майне тупрĕ-тупрех. Хут татăкĕ илчĕ те туалета чупрĕ. «Курса юл ман хӳрене, усал эсрел», витлесе хăварчĕ вăл курайман тăшмана хăй ăшĕнче. Никам çук çĕрте алăка питĕрчĕ те асра юлнă цифрăсене йăлтах хут татăкĕ çине çырчĕ, вара хĕвне чикрĕ.

Çак кун, ĕç пĕтерсен, курма ĕмĕтленсе пурăннă çынна коридорта сасартăк хирĕç пулчĕ Элӳç. Каракуль çухаллá хăмăр кĕрĕк тăхăннăскер, куç умне чăваш юманĕ пек тухса тăчĕ вăл.

— Антти!— чĕнмесĕр тӳсеймерĕ хĕр. Ним вăтанмасăр ыткăнса пырса ыталарĕ ăна.— Эпĕ кунта ĕçленине пĕлтерчĕç-и сана?

— Эсĕ-и ку, Лĕпĕшпи?—иккĕленнĕ евĕр ыталарĕ ăна Антти.— Сасси хаваслă хăйĕн.— Шутламанччĕ сана çакăнта курасса.

— Ара, эпĕ кунта ĕçлетĕп-иç. Сана каламарĕç-и вара ман пирки Урхопа Элина?

— Каланă, каланă.

— Чим-ха, эсĕ мĕн шăпапа кунта килтĕн? Хулана уйăх иртмесĕр те килейместпĕр, терĕ-çке Урхо. Тата кунта эсĕ фашистсем лартнă капкăна лекĕн. Тытĕç те хупĕç.

— Çав тернех усал-и вĕсем?

— Усал çеç пулин мĕн вăл? Чăн-чăн тискер кайăксем вĕсем. Кулинепе ачисем ларнă парома, кӳлĕ леш

енне каçаканскере, персе путарчĕç. Йыта çиесшĕсем! Çав тери кураймастăп вĕсене, мел пулсан халех çĕр çинчен шăлса тăкăттăм.

Чунри пĕр хĕлĕх те пулин чĕлхене çыртмаллине систеринччĕ! Çук çав, Элÿç разведчиксем хатĕрлекен шкулта вĕренеймерĕ-çке. Вăрттăн тăшмансене палласа илес чеелĕх аталанайман. Айванлăхран хăтăлма та ăна никам пулăшман. Уйрăмах хăйĕн савнипе сыхланулла пулма кирлине пачах асра тытман. Анттие вăл хăйне ĕненнĕ пек ĕненет. Çитменнине тата, юратнă каччă умĕнче хăйне паттăр пек те кăтартас килчĕ унăн. Çавăнпа та вăл хăйĕн ĕçĕ çинчен каласа пама васкарĕ.

Антти, хĕр куçĕнчен шăтарасла пăхса, çапла ыйтрĕ:

— Фашистсене курайман пулсан, мĕншĕн вĕсем патĕнче ĕçлетĕн?

— Хамăрăннисене, сире, пулăшас тесе ĕçлетĕп. Паян та пур-ха сирĕн валли хатĕрленĕ пĕчĕк парне. Атя урама, кунта тăма юрамасть.

Антти хирĕçсе тăмарĕ, хĕре итлерĕ. Урама тухсан, вĕсем пĕр кукăрта чарăнса тăчĕç.

— Парне терĕн паçăр. Мĕнле япала ара?— Анттин хăвăртрах пĕлес килнипе чунĕ тÿсейми вĕчĕрхенет.

— Сирĕн валли каллех çăкăр карточки хатĕрлерĕм. Ку — пĕрре.

— Мĕн-мĕн?— ăнланаймарĕ Антти. Элÿç çак вăхăтрах аллине хĕвне чиксе хыпашланине курчĕ.— Мĕнле карточкăсем тетĕн?

— Магазинта çăкăр-тăвар туянмалли карточка.

— Э-э,—тавçăранçи пулчĕ Антти.—Ăçтан тупан ара?

— Урхопа Элина каласа памарĕç-и вара?

— Çук.

— Пур кунта пирĕн çавнашкал им-юм. Çăкăр карточки ун ещĕк тулли. Сĕтелне питĕрме ялан манать. Кирек мĕн чухлĕ йăкăрт — сисмест.

—Тен, вăл мĕн. Совет Çарĕн...—пуçланă сăмахне каласа пĕтерейменсĕрех çăварне хупрĕ Антти.

Каччăн шухăшлă сăмах-юмахне пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласси асра та çук Элÿçĕн. Вăл хĕвĕнчен кăларнă карточкăсене тăсрĕ:

— Ме, пуçтарса чик тĕплĕн.

Лешин кĕрĕк кĕсйине чикесси çеç юлчĕ.

Антти пăрахса кайма авăрлансах тăрать. Ячĕшĕн тенĕ пек, вăл хĕре ыталаса чуптурĕ.

— Хăçан тата тĕл пулăпăр, Антти?— вăтанарах, пуç-

не чиксе ыйтрĕ Элӳç. Яванне кетсе иличчен çамкине çат! çапса илчĕ.—Ах, айван пуç! Чи кирлине пама маннă.

— Мĕн тата?— кăсăкланчĕ Антти.

— Мана каллех секретлă пая чĕнтерсе пичетлеттерчĕç. Шак цифрăсем шаккарăм. Асра юлнă цифрăсем — çакăнта,— хутлă-хутлă хуçлатнă хут татки тыттарчĕ Элӳç хăй юратнă савнине.—Тен, ку та партизансене кирлĕ пулĕ терĕм.

— Паллах. Тăрăшнăшăн тавтапуç.— Антти хут листине саркаларĕ те ăна кĕсйинчен хунар кăларса çутатрĕ. Тинкерсе пăхать, анчах цифрăсем мар, темле пукане кĕлеткисем кăна курать. Вара кӳреннĕн çапла каларĕ:— Эсĕ пиччӳ ачисем амăшĕпе пĕрле путнă терĕн-çке? Ку хута кам чăпарланă? Е эсĕ мана йăнăшпа урăххине патăн?

Ним айăпсăр пĕтнĕ пиччĕш ачисене Антти çапла çăмăлттайла асăнни Элӳçе килĕшмерĕ. Киревсĕр пек те туйăнчĕ тата. Чĕри пăчăртанчĕ, кăмăлĕ хуçăлчĕ, чĕлхи те çухалчĕ ун. Кăштахран тин сас пачĕ вăл.

— Юлташусем патне таврăнсан кăтарт, вĕсем йăлтах ăнланĕç,— терĕ Элӳç.

Антти тем аса илнĕн пуçне сĕлткелерĕ.

— Юрĕ, эсĕ каланă пек пултăр эппин,— текелерĕ. Вара хĕре алă пачĕ те, сывпуллашса, пăрахса кайрĕ.

Хаклă япала çухатнăн, ассăн-ассăн сывларĕ Элӳç. Тапранаймасăр чылайччен тăчĕ вăл пĕр вырăнта хытса. Антти пĕртте ĕлĕкхи пек мар, темле ютшăннăн туйăнать. Ăна курманни те хăçантанпа та! Хĕрое тăракан хĕвел йăмăх тĕсе шупкалантарнăн, вăхăт улăштаратех çынна. Кам пĕлет, тен, юрату та çапла арканать пулĕ. Е вăрçă тăллать пĕтĕм туйăмсене?

Апла та, капла та пăркаларĕ Элӳç шухăш киммине, анчах унăн сăнчăрне çыран хĕрринчи нихăш тункатаран та йăлмаклантараймарĕ.

## 12

Киле таврăнсан, алăка сăлăп ярса питĕрчĕ Элӳç. Пӳрте-çурта тирпейлеме кăмăл пĕртте туртмасть, ăш тӳсмелле мар вăркать. Вырăн çине выртсан та канлĕх тупаймарĕ хĕр, тек йăшталанса асапланчĕ. Куçа хупсан мĕн кăна курăнмасть-ши?! Ав, инкĕшпе ачисем ларса пыракан паром çунать... «Ах!»— ахлатса илет Элӳç. Шухăш ӳкерчĕкĕсем пĕр чарăнусăр ылмашса тăраççĕ.

Акă амăшĕ килсе тăчĕ. «Ялтах пурăнмаллаччĕ»,— тет вăл. Унтан Антти курăнчĕ, вăл ăна пуйăс çине лартать... Пасара та çитрĕ Элӳç. Пиччĕшĕн, Тарасăн, пĕртен-пĕр костюмне сутрĕ... Урхопа Элина тата Тюне разведка шкулне каяççĕ...

Пуçĕ алă арманĕ евĕр çаврăнать.

Аранах кăтăш пулчĕ Элӳç. Кăкăрĕ лăпкăн анса хăпарать.

Тĕлĕкре Элӳç йĕкĕрешсене курчĕ. «Пурнатăр-çке эсир!»— тет вăл вĕсене. Автипе Юмаш самаях ӳснĕ, вĕсем аппăшне палламаççĕ тейĕн, çӳреççĕ сырма леш енче выляса, улăх чечекне татса.

Чим-ха, Кулине, ачасен амăшĕ, ăçта вара?

— Авти! Юмаш!— чĕнет Элӳç йĕкĕрешсене. Сасси тухмасть хăйĕн. Тарăн вара анса хăпарчĕ вăл — тамаша! Ачасем çухалнă! Ăçта вĕсем?

Элӳç ӳлесех макăрать. Йĕри-тавра пăхкалать. Сасартăк курах кайрĕ: ачасене карчăк хăйĕн çырма хĕрринчи чăх ури çинче ларакан пӳрчĕ патнелле хăваласа пырать.

— Ан тив ман шăллăмсене!— юнать Элӳç.

Карчăк итлемест, хупса лартрĕ-лартрех вăл пĕчĕкскерсене. Ак тытăнчĕç ачасем алăка шаккама.

Аранах чупса çитрĕ Элӳç. Карчăк ахăлтатса кулса ячĕ те, асав шăлĕ тăсăлса тухрĕ. Асав шăл та мар иккен вăл — тимĕр сенĕк.

— Кай кунтан! Чикетĕп!— тет пек карчăк, сенĕкне кăнтарса. Сенĕк сăннисем кăкăра пырса тиреннĕ самантра Элӳç шартах сиксе вăранчĕ. Хăлхара сасă: алăка тӳнккеççĕ-мĕн.

— Мĕн мурĕ?— тăрса ларчĕ Элӳç.

Çенĕк умĕнче çынсем йăслаççĕ.

— Уç алăкна!— кĕмсĕртеттерет тахăшĕ.

«Кам килнĕ-ши? Мĕншĕн ним уямасăр шаккать? Тен, Антти?»— хыпаланса кăçатă тăхăнчĕ те Элӳç, шаль тутри пĕркенсе, алăк патне чупса пычĕ.— Халех!— терĕ вăл, сăлăпа шутарса.

Пӳрте пăшаллă фашистсем кĕчĕç. Мĕн кирлĕ вĕсене? Кама шыраççĕ? Ним те ăнланмасть кил хуçи. Павраççĕ кăна йĕксĕксем. Ак тамаша! Вĕсене Элӳç кирлĕ иккен! Çук, вĕсем мĕн пакăлтатнине чун йышăнмасть: саркайăка читлĕх кĕтет-çке. Пăхăнас марччĕ эсрелсене. Анчах Элӳç пĕр-пĕччен çав. Вăл — çамрăк, вăйсăр хĕр. Пĕччен хирĕç тăрайĕ-ши вăл тискер кайăксене? Ав,

миçен вёсем! Кашнин аллинче пăшал, сана пеме хатĕр.

Çак каç Элӳçе килĕнчен талпăнтарса илсе тухрĕç те тĕрмене кайса хупрĕç.

Сивĕ тăвăр камерăра никам та çук. Пĕртен-пĕр юлташĕ ун — кăкăрĕнче тăлт-тăлт тапакан чĕри кăна.

## 13

Тĕрме çыннисем камера алăкне уçрĕç те тăрăхла сак кĕртсе хăварчĕç.

Сак хăми çине юн тумламĕсем хытса ларнă.

Элӳç хăйне мĕн кĕтнине чухларĕ. Ӳт-пĕвĕ çӳçенсе илчĕ унăн.

Унччен те пулмарĕ, виççĕн кĕчĕç, пĕрин аллинче саламат, тепри журнал тытнă. Ӳсĕр пулас хăйсем.

— Эсĕ партизан? Совет шпионĕ?— ĕрлешет саламат тытни.— Хывăн!

— Мĕн айăпа кĕтĕм, мĕншĕн хĕнесшĕн эсир мана, чуниллисем?— вĕсен куçĕнчен тӳрех пăхма вăй çитерчĕ Элӳç.

Унпа каласса тăмарĕç. Хăпăл-хапăл çулса илсе сак çумне çыхса хучĕç. Пĕр фашисчĕ çавăнтах саламатпа хĕнеме тытăнчĕ. Хĕртнĕ тимĕр пек пырса лекнĕ саламата чăтаймасăр, Элӳç сухăрса ячĕ.

— Ку сана партизансене нимĕç çăкăрĕпе тăрантарнăшăн!— урса кайрĕ фашист.

— Ку вара секретлă пайра мĕн пичетленине партизансене хыпарланăшăн!— терĕ тепри.

Элӳç сак çумне çыхнă пăявран вĕçерĕнме хăтланчĕ. Анчах хускалаймарĕ.

Сусăрланнă çурăмĕ туйми пуличчен хĕнерĕç фашистсем Элӳçе. Часах вăл тăнне çухатрĕ? Хăйне фашистсем мĕнле пăрахса хăварнине туймарĕ.

## 14

Нимĕç çарĕ Карели çĕрĕ çине ура ярса пуссанах, Петрозаводск хулинчен чылай аякра, сĕм вăрманта, фашистсем васкасах концлагерь тунă. Шăпах çакăнта илсе килчĕç Элӳçе. Йĕри-тавра темиçе ретпе йĕплĕ пралук карнă хӳме. Лагерĕн кашни кĕтесĕнче — вышка. Çӳлте, тăрăллă тăваткал площадкăра, пăшаллă хуралçăсем тăраççĕ. Картишĕнче, шăп варринче,— йывăç казарма. Шалта — икĕ хутлă нарсем.

Малтанхи кунах Элӳç кунта хăйĕн чи çывăх юлташĕсенчен пĕринпе — Тюне Перттупа тĕл пулчĕ. Питĕ тĕлĕнчĕç хĕрсем. Ыталасах илчĕç пĕр-пĕрне! Самантлăха хăйсем концлагерьтине те манса кайрĕç.

— Çӳлти хутри нар çине хăпар, Элӳç. Манпа юнашар вырăн йышăн,— чĕнчĕ ăна шутсăр ырханланса кайнă Тюне.

Çĕрĕпе пăшăлтатрĕç икĕ тантăш. Кашниех хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ, нуши çинчен пуплерĕ.

Тюне концлагере лекнĕренпе самай вăхăт иртнĕ-мĕн. Ăна чугун çулĕ патĕнче ярса тытнă. Юрать-ха, алли пушă пулнă, унсăрăн персе пăрахатчĕç ăна. Паллах, вăл унта усăсăр çӳремен: хĕçпăшал турттарса килекен эшелона сирпĕтме меллĕ вырăн шыранă. Тупнă вăл çав вырăна. Ăна хут çине ӳкерсе палăртнă. Çак хута отряда çитерме юлташне панă. Вара, пĕччен юлса, Тюне каллех фашистсем мĕн хăтланнине сăнама тытăннă.

— Пурпĕрех кунтан çăлăнатпăр,— тет Тюне. Мĕнле майпа? Анчах кун пирки шарламасть хĕр.

Партизансен отрячĕ Карелире вăрçă тухсанах чăмăртаннă. Ăна йĕркелес ĕçе Тюне те хутшăннă. Ахальтен мар вăл институтра харсăр комсомолкăччĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ăна пысăк ĕç шанса панă.

— Мана тĕрмере питĕ хĕнерĕç,— сасси хурланса тухрĕ Элӳçĕн.

Юлташĕн çурăмне асăрханса хыпаларĕ Тюне.

— Турăçăм, Элӳç!.. Çурăму кĕсенленсех кайнă-çке сан! Ыратать-и?

— Шутсăр!.. Ӳт пĕçерсе, туртăнса тăрать.

— Шăпи тулатех вĕсен,— ассăн сывласа ылханчĕ фашистсене Тюне.

— Тусăм, итле-ха,— сăмахне именсе пуçларĕ Элӳç.— Антти сирĕн отрядраччĕ-и?

— Антти?..— аса илме пикеннĕн чарăнса тăчĕ Тюне. Вара çирĕппĕн, пат татса хучĕ:— Çук, пирĕн отрядра нихçан та пулман вăл.

— Эппин, урăх отрядра çӳрет-ши?

— Элӳç, сана кам сутнă вара?

— Пĕлместĕп.

Кăшт тăхтасан, хĕрсем Элинăна аса илчĕç.

— Çав тери юратать ăна Урхо,— ăмсаннă чухнехи пек тухрĕ Тюне сасси.— Савни темелĕх пур ăна. Ун ĕçĕпе пĕтĕм отряд мухтанатчĕ. Чăннипех маттур партизан вăл: сахал мар фашиста леш тĕнчене ăсатнă.

— Туйне туса ёлкёреймерёç,— шеллесе илчё Элӳç.
— Вăрçă пĕтсен вĕсен туйĕнче ура хуçса ташлăпăр.

## 15

Концлагерьти халăха хĕçпăшал туса кăларакан çар заводĕнче ĕçлеттереççĕ.

Ирхине илĕм-тилĕмпех хускатаççĕ концлагере. Çынсене, кашнин номерне каласа, ретрен чĕне-чĕне кăлараççĕ те грузовиксем çине тиеççĕ.

Элӳç пирвайхи кун Тюнепе пĕр машинăна лекрĕ. Шăпа парнеленĕ пысăк телеех пулчĕ ку уншăн.

Кашни грузовик çинче пăшаллă тăватшар хуралçă. Никам та сиксе юлса тараймĕ вĕсенчен.

Концлагерь алăкĕ уçăлсан, йывăр грузовиксем пĕрин хыççăн тепри кĕмсĕртетсе тухрĕç картишĕнчен.

Тулта — çуркунне, юр ирĕлсе пĕтнĕпе пĕрех. Йывăçсем çулçăсăр-ха, пурпĕр симĕссĕн курăнаççĕ. Çара туратсем хушшинче кайăксем чĕвĕлтетеççĕ пулĕ, анчах машинăсен шавĕ хупланипе ним те илтĕнмест.

Грузовиксем вăрманпа пыраççĕ. Çул лакăм-тĕкĕмлĕ, пылчăклă-юшкăнлă. Çынсем тырă сăвăракан машина аллине лекнĕ тейĕн. Вĕсене силлентерет, айккинчен айккинелле сулăнтарать, пăрçа пек сиктерет.

Шурă шупăрлă пике-хурăнсен арки çинче сенкер чечексем чĕлтĕртетеççĕ. Ахăртнех, çеçпĕл пуль: куç курать, чун савать, анчах татса илме çук.

Кайсан-кайсан, машинăсем çӳллĕ хӳме çумне пырса тăрăнчĕç.

— Тамăк хуранĕ туса кăларакан çĕре çитрĕмĕр,— терĕ Тюне.

Умри хӳме урлă куç ывăтрĕ Элӳç. Пĕлĕтелле кармашнă завод трубисене шырарĕ. Анчах ун пеккисем курăнмарĕç. «Завочĕ çĕр айĕнче-тĕр», шутларĕ вăл.

Вăрах кĕттермерĕç, тимĕр хапха кĕмсĕртетсе уçăлчĕ. Грузовиксем пĕрин хыççăн тепри кăшкăртса шалалла кĕчĕç. Аçта ан пăх, пур çĕрте те пăшаллă çынсем.

Концлагерьтен тиесе килнисене машинăсем çинчен антарчĕç те кашнинех ятран чĕнсе тĕрĕслерĕç, унтан ушкăнăн-ушкăнăн уйăрчĕç. Тюнене арçынсемпе пĕрле таçта илсе кайрĕç. Элӳç грузчиксен ушкăнне лекрĕ.

— Çĕнни!— терĕ тахăшĕ.

Грузчиксен йышĕ сахал мар. Вĕсем хушшинче арçынсем сайра.

Лутра хĕрарăм Элӳçе хăй патне чĕнсе илчĕ.
— Пĕрле ĕçлĕпĕр!— аллинчен тытрĕ вăл ăна.
Вĕсем ыттисем хыççăн утрĕç. Купаран пушă наçилкка илсе сарайне кĕчĕç, ăна кирпĕчрен ятарласа хатĕрленĕ тĕрев çине лартрĕç. Икĕ арçын наçилкка çине пысăк кӳмерккеллĕ тимĕр япала хучĕç.
— Çĕклĕр ĕнтĕ,— йăвашшăн хушрĕ çав арçынсенчен пĕри.
Лутра хĕрарăмпа Элӳç тыткăчран йăлмаклану чĕн çакăсене хулпуççи урлă хурса наçилккана аран-аран йăтса илчĕç. Элӳç айккинчен айккинелле сулăнса кайрĕ. Çурăмĕнчи çĕнĕ ӳчĕ, тăвăр кĕпе çĕвĕрен кайнă пек чăрăлтатса çурăлчĕ.
— Шнель! Шнель!— çуйхашрĕ пăхса тăракан хуралçă-нимĕç, хăйĕн атти кунчине нухайккипе шарт! шартлаттарса. Хăйĕн пит-куçĕ халь-халь юн пĕрĕхсе тухас пек хĕп-хĕрлĕ. Элӳçпе лутра хĕрарăма шăл йĕрсе пăхать путсĕр, куçĕсем çуллăн йăлтăртатаççĕ хăйĕн.
Элӳçпе хĕрарăм, картиш урлă каçса, вĕтĕ картлашка тăрăх аялалла анчĕç. Цехĕ çакăнта çĕр ăшĕнче-мĕн. Хайхискерсем наçилккине пушатрĕç те каллех сарайнелле утрĕç.
Кунĕпех çапла каллĕ-маллĕ хутлаççĕ вĕсем. Сукмакĕ пĕрре вĕсен: сарай — цех, цех — сарай. Ниçталла та пăрăнма юрамасть.
Фашист сăнасах тăрать.
— Мĕншĕн сахал тиенĕ?— кутăнлашать кашнинчех.
— Хăв пирĕн вырăна кӳлĕн-ха, ăшчикӳ лаштах йăтăнса анĕ,— хирĕç чĕнме шикленмерĕ хайхи лутра хĕрарăм.
— Тавлашма-и?.. Тутанас килет-и?..— хаярран кăшкăрчĕ те фашист саламачĕпе хĕрарăма туртса çапрĕ.— Но-но, ут хăвăртрах!
— Аллуна ытлашши ирĕке яма хушмастăп,— сăмах чĕнме хăйрĕ хĕрарăм.— Тавăру кунĕ çитсен, сана кутăн çакатпăр.
Фашист, тен, шикленет те пулас: илтмĕше хывать.
«Эпир çĕклесе цеха илсе аннă тимĕр тем тесен те пĕр-пĕр хĕçпăшал пайĕ пулĕ»,— шухăшларĕ Элӳç. Вăл хăй ĕмĕрĕнче, пăшалсăр пуçне, вăрçă хатĕрĕ курман.
— Питĕ йывăр кунта,— терĕ лутрарах хĕрарăм хăйпе хăй калаçнă пекрех.
— Кунта тахçантанпах-и?
— Чылайранпа... Ĕнер ак пĕр хĕрарăм вилчĕ: лаша

ёҫне тӳсеймерӗ. Малтан пӗрле наҫилкка йӑтаттӑмӑр. Апатне япӑх ҫитереҫҫӗ. Йывӑр япала йӑтма вӑй ҫитмест. Эсӗ, тепле пулсан та, хӑвна ҫирӗп тыт: хавшаклӑхна ан кӑтарт,— асӑрхаттарчӗ лутра хӗрарӑм.

— Мӗн ятлӑ эсир, аппа?

— Хушаматӑм — Сумманен. Ҫапла чӗн мана.

— Мӗншӗн концлагере хупнӑ сире?

— Пӗр сӑлтавсӑр. Нимӗҫ ҫар ҫыннисем ҫине ытлашши тинкерсе пӑхнӑ имӗш эпӗ. «Ырӑ шухӑшлӑ мар» тесе тытаҫҫӗ те хупса лартаҫҫӗ мана.

Сумманен концлагере чӑнах та хӑй каланӑ пекех лекнӗ. Анчах вӑл ҫамрӑк хӗре хӑйӗн чунне уҫса памарӗ. Сумманен—коммунист. Парти ӑна кунта вӑрттӑн ӗҫлеме янӑ. Парти членӗн тӗллевӗ вара кунта уйрӑмах пысӑк. Ҫав тӗллеве Совет влаҫне парӑннӑ ҫынсемсӗр, пӗччен пурнӑҫлама май ҫук.

Карел халӑхӗн мухтавлӑ хӗрӗ концлагерьте вӑрттӑн ӗҫлекен парти комитечӗ йӗркеленӗ, партизансен отрячӗпе ҫыхӑну пуҫарнӑ.

— Сумманен юлташ, эсир мана: «Хӑвна ҫирӗп тыт», терӗр. Ӳксех вилмӗп! Мӑшкӑла тӳсме вара — хӗн: ара, хамӑрӑннисене пӗтерме пире хамӑра хӗҫпӑшал тутараҫҫӗ-ҫке,— тарӑхрӗ Элӳҫ.

— Вӑхӑт ҫитӗ-ха, вӗсен заводӗнчен те ишӗлчӗк ҫеҫ тӑрса юлӗ.

## 16

Пурнӑҫӑн хӑрушӑ чӑнлӑхӗ хытӑ тӗлӗнтерчӗ Элӳҫе. Хӑй концлагере лексе хамӑрӑннисене хирӗҫ кӗрешекен фашистсем валли хӗҫпӑшал туса кӑларма пулӑшни уйрӑмах хытӑ ыраттарать унӑн чунне. Тата хӑҫанччен тӳсмелле ҫак мӑшкӑла? Мӗнле май тупмалла кунтан хӑтӑлма?

Элӳҫ хӑй шухӑшне тус-хӗрне — Тюнене каласа пачӗ.

— Малтан тӗплӗн хатӗрленмелле,—терӗ тантӑшӗ, шухӑша кайса.

Вӑл малалла мӗн каласса Элӳҫ ним чӗнмесӗр кӗтсе тӑчӗ.

— Хатӗрленетпӗр те,— каллех кӗскен кӑна каларӗ Тюне.

— Мана та хӑвӑртан ан хӑварӑр вара,— хӑйӗн кӑмӑлне пӗлтерчӗ Элӳҫ.

— Сана шанатпӑр эпир, эсӗ тунӑ паттӑр ӗҫсене пӗлетпӗр.

— Мĕнле ĕçсене?— тĕлĕнчĕ Элӳç.

— Ара, эсĕ «пулăшнипе» вĕсем çар заводне часах ĕçе яраймарĕç.

— Мĕнле эпĕ пулăшнипе? Ним те ăнланмастăп,— тет Элӳç.

— Ара, завод валли оборудовани илсе килекен эшелона эсĕ хыпарланипе кам сирпĕтнĕ тетĕн? Партизансем!

— Кун пирки тĕрмере хама хĕненĕ чух тавçăртăм. Анчах ку таранччен çăвар уçма хăяйман. Хамăрăннисене сахал пулăшма тиврĕ,— хашш! сывласа илчĕ Элӳç.— Тахăш тĕлте йăнăшрăм, такам сутрĕ.

— Юрĕ-çке, халĕ итле. Анчах асту, шăлна çырт, унсăрăн...

— Халĕ манăн та ыйхă уçăлчĕ,— текелерĕ Элӳç, тӳрре тухса.

— Акă мĕн: нимĕçсен хĕçпăшал заводĕнче ĕçлекен парти комитечĕ пур. Вăл коммунистсене çеç мар, комсомолецсене те пĕрлештерсе тăрать, партизансен отрячĕпе çыхăну тытать. Комитет пысăк ĕç тума йышăннă.

— Мĕнле ĕç-ши?

— Хĕçпăшал заводне сывлăша сирпĕтмелле. Завода çăлма фашистсем хуралти пĕтĕм салтаксене пухаççĕ. Çак вăхăтра казармăна вут тĕртетпĕр. Çав пăтăрмах вăхăтĕнче пурин те тарма ĕлкĕрмелле. Вĕсемшĕн ĕçлеме пĕр çын та ан юлтăр.

Çав калаçу хыççăн Элӳç тăшмана пысăк сиен кӳмелли ĕç хушасса кĕтрĕ. Анчах ăна хамăрăннисем — коммунистсемпе комсомолецсем — асăрхамаççĕ пек туйăнать. Чăннипе илсен, вăл Тюнесĕр пуçне никама та пĕлмест. Кашни кун курнăçакан çынсенчен хăшĕ-ши коммунист? Сумманен мар-ши? Анчах унпа ытлашши тарăна кĕрсе калаçман. Çынна витĕр курмасăр чĕлхепе ирĕке яма кирлĕ мар.

Ĕçне çаплах хушмарĕç-ха. Тĕплĕн хатĕрленмесĕр тытăнма çук пулĕ ăна.

«Фашистсене пĕрре хамăнах шар кăтартмалла марши?—шухăшларĕ Элӳç. Вара вăл кунĕн-çĕрĕн çак ĕмĕтпе хыпăнса çӳреме тытăнчĕ, ялан сăнать, ялан юрăхлă мел шырать... Пĕррехинче çавăн пек мел тупăнчĕ.

Çĕр типсе çитсен, темиçе хĕрарăма, çав шутра Элӳçе те, уя çĕрулми лартма илсе кайрĕç. Кунта та пулин сыхлакансăр кăлармаççĕ — пăшаллисем юнашарах.

Элӳç сывăхĕнчех пăшалне хыçне çакнă хаяр хурал-

çă, хăнчăр куçлăскер, каллĕ-маллĕ кумса çӳрет. «Çĕр çăтасшĕ!»— ылханать ăна хĕр.

Çĕр сухалаканни — çамрăк каччă. Илемлĕ, йăлтăр куçлăскер. Элӳç тĕлĕпе иртнĕ чух ун çине ăшшăн пăхать. Хĕр те ăна шӳтлесе куç хĕскелет.

Йĕкĕт кăкăрĕнчен салтак флягине çакнă. Шыв тултарнă пулас унта — хушăран сыпкаласа илет.

Салтак флягине асăрхасан, Элӳç пуçне ăнсăртран тĕлĕнмелле шухăш пырса кĕчĕ те икĕ кун пуçран туха пĕлмерĕ çав шухăш.

Виççĕмĕш кунне йăлтăр куçлă çамрăк хайхи Элӳç умĕнчех чарăнчĕ. Тем чăлханнă имĕш: лаша умне пырса, вăл хăмăт чӳлĕкне салтса тепĕр хут çыхкаларĕ.

— Эпĕ сана... юрататăп,— персе ячĕ çамрăк. Унăн вăтанарах тухнă сăмахĕ суха тĕренне мăлатукпа шаккакаланă сасăпа хутшăнчĕ.

— Савăнтартăн,— малтанхи шухăш Элӳç пуçĕнче самант чăрсăрланчĕ. «Мĕн пулать те мĕн килет» тенĕн каччă çапла каласа хучĕ:—Хăв юратнине ĕçпе кăтартса пама пултаратăн-и?

— Пултаратăп,— çирĕплетрĕ каччă.

— Мана пĕр фляга краççын кирлĕ. Казармăра çутă çук.

— Тархасшăн. Ыранах илсе килĕп.

— Тавтапуç ыра кăмăлушăн. Ăна эс çавăн хыçне,— тĕмеске еннелле пуçне сĕлтрĕ Элӳç,— кайса хур.

— Юрĕ. Эсĕ хушнă пек тăвăп.

Кунта ĕçлекенсене сыхлаканни, чылай аякра, çĕрулми миххи çинче лараканскер, лашине чарса тăратнă çамрăк патне пашкаса пычĕ те:

— Ма сухаламастăн?..— сурчăк сирпĕтсех ятлаçма тытăнчĕ вăл.

— Тем мурĕшĕн чăхăмлать. Туртасшăн мар,— лаша çурăмне ал лаппипе çат-çат çапкалать каччă.— Тен, шыв ĕçесшĕн. Вырăхăн чĕлхи çук, калаймасть.

Элӳç айккинелле пăрăнчĕ.

Лешсем иккĕшĕ татах тем перкелешрĕç. Хĕр вĕсен сăмаххисене илтеймерĕ.

Лаша вăрах тăмарĕ, хускалчĕ.

Татах çĕнĕ кун пуçланчĕ.

Çĕрулми пăрахакан Элӳç сухаçăн кашни хусканăвне, кашни утăмне куçпа йĕрлет. «Мĕншĕн васкамасть вăл панă сăмахне пурнăçлама. Тен, вăл тăшман хӳрешки? Шан-ха çынна».

Акӑ, лаша ана тепӗр вӗҫӗнче чарӑнчӗ. Хуҫи ӑна хӑваламасть. Сухапуҫ ҫумӗнче тем мӗшӗлтетет.

Кунӗ ытла тӗксӗм, аякран ним те уйӑраймастӑн. Чӑвашра ҫӗрулми пӑрахнӑ вӑхӑтра ӑшӑ, ҫутӑ хӗвел лӑпкать ачашшӑн. Хӗрупраҫ тени тумтирсӗр ҫиҫсе ҫӳрет. Кунта апла мар — сулхӑн: ҫире те — фуфайка.

Тепӗртакран лаша юлхавлӑн тапранчӗ. Элӳҫ умӗн те иртрӗ. Ҫамрӑк каччӑ каллех йӑл куллипе ӑшӑтрӗ.

Тулашать Элӳҫ. Хӑҫанччен кӗттерет? Васканипе чӗри йӑшкать. Ҫӑматӑ ҫӗвӗксӗр тесе, шыв ҫине пусмалла мар ӗнтӗ. Хыпаланчӑкскер, ҫакна ӑнланса илеймест. Кур, авӑ, сухаҫӑ тӗмеске ҫывӑхӗнче чӑрӑнчӗ. Тилхепине лаша ҫурӑмӗ ҫине тирпейлесе хурсан, тӗмеске патнелле уттарчӗ, часах ун хыҫне пытанчӗ. Кӑшт тӑрсан — тухрӗ.

Чӗри сиксе тухасла тапать Элӳҫӗн. Хӑнчӑр куҫ сиссен, пӗтӗм ӗҫ пӑсӑлать. Вӑрахчен тытӑнса тӑма та юрамасть, урӑхха, ним ӑнланманни, краҫҫын тултарнӑ флягӑна тупӗ те хуралҫа парӗ. Путланса ларать вара мӗн ӗмӗтленни.

— Итлӗр-ха, ман... тула тухас килет. Ирӗк парсамӑр айккине пӑрӑнма?— тилмӗрнӗн ыйтрӗ Элӳҫ хӑнчӑр куҫран.

— Хӑвӑрт кайса килнӗ пул! Унсӑрӑн...— ҫавӑнтах персе пӑрахас пек, ҫурӑмӗ хыҫӗнчи пӑшалне тытса шӑлтшалт тутарчӗ.

Элӳҫ тӗмеске хыҫнелле йӑпӑртатрӗ. Мӗн кирлине ҫитнӗ-ҫитмен курчӗ. Ав, тӗм айӗнче выртать вӑл, пӗчӗк фляга. Хӑпӑл-хапӑл илчӗ ӑна, пӑккине уҫса шӑршласа пӑхрӗ. Краҫҫын! Туллиех! Вара флягӑна хул хушшине чиксе майлаштарчӗ. Ним те паллӑ мар.

Элӳҫ каялла таврӑнса ӗҫлеме тытӑнчӗ. Хул айӗнчи япалана хӑнчӑр куҫ асӑрхаймарӗ.

Каҫпулттипе тыткӑнрисене казармӑна илсе таврӑнчӗҫ.

Тюне Элӳҫӗн ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлне асӑрхарӗ те шӳтлесе илчӗ:

— Чӑннипех юратса пӑрахмарӑн пулӗ-ҫке ҫав сухаҫа? Пирӗнсӗрех туй тума шутламастӑн-и эсӗ?

Элӳҫ ҫӗрулми ани ҫинче мӗн пулса иртнине каласа пачӗ.

— Краҫҫын сапсан, казармӑна самант вут хыпса илӗ — ниепле те сӳнтереймӗҫ.

— Маттур,— мухтарӗ Тюне.— Халӗ ку шӗвеке мӗнле усрӑпӑр?

Апла та капла та шухăшларĕç.

Пусма айне лартас. Эрешмен карти айĕнче никамах та хыпашласа çӳремĕ.

Çĕрле Элӳç краççын савăтне юбка айне пилĕкрен майласа хĕстерчĕ те Тюнепе тула кайнă пек тухрĕ. Хăйсем çара уранах.

Надзирательница хуп тургтарать. Хăйне вăл канлĕ туять. Йĕри-тавра йĕплĕ пралук карта, ун урлă мĕнле хĕрарăм каçса тарма пултартăр?

— Пар савăтна,— пăшăлтатрĕ Тюне.

Элӳç пилĕкрен çыхнă фляга кантрине йăпăр-япăр салтрĕ.

— Ме, тыт.

Тюне пусма айне упаленсе кĕчĕ. Тухсан çапла каларĕ:

— Икĕ каска пуканĕ хушшине хĕстерсе хăвартăм. Акă мĕн, Элӳç: эпĕ сана асăрхаттарма тивĕç,— терĕ Тюне,— ӳлĕм кун пеккине ху тĕллĕн ан çыхлан. Эсĕ вăрттăн ĕçлеме вĕренмен, мĕнле сыхланмаллине пĕлместĕн.

— Эсĕ вĕреннĕ-и?

— Пире вĕрентнĕ, халĕ те вĕрентеççĕ.

— Мана ма вĕрентмеççĕ?

— Вĕрентетĕп-çке.

Ассăн сывласа илчĕ Элӳç. Хăйне Тюне шансах çитереймен пек туйрĕ те тек кикенекле çыпăçма шутламарĕ.

— Эсĕ ан кӳрен-ха,— сăмах хушрĕ Тюне, юлташĕ кăмăлсăрланнине сиссе.— Юнашарти çынна витĕр кур. Ун чунне пĕл. Хамăрăн-и вăл е ют? Юлашки вăхăтра фашистсем пирĕн хушша хăйсен йыттисене кĕртрĕç. Вĕсем шăршлаççĕ, пирĕн ĕмĕтсене хĕве чиксе тухаççĕ те хуçисене сутаççĕ. Пире вара мĕн кĕтни паллă — ырă тĕллевсем йăлт ишĕлĕç, мăйкăч çеç пулĕ.

«Ҫашкăртан хăрасан вăрмана каймалла мар»,— Тюне сăмаххипе килĕшмерĕ Элӳç хăй ăшĕнче. Ытти кунсенче те краççынсăр таврăнмарĕ вăл.

## 17

Çу кунĕсем тинех çитрĕç. Çынсем кĕпе вĕççĕн çӳреме тытăнчĕç.

Сумманена цеха куçарчĕç. Элӳç çумĕнче халĕ çап-çамрăк урăх хĕр. Ячĕ ун — Халене. Ана та, хула урамĕнче

чип-чипер утса пыраканскере, пĕр айăпсăр тытнă та концлагере янă. Сăлтавĕ пĕрре — фашистсене хĕçпăшал заводĕнче ĕçлеме алă кирлĕ.

Ĕçлет завод. Ир те, каç та, каç та ир. Элӳç шухăша путрĕ: «Эпĕ цеха йăтнă пайсенчен туса кăларнă хĕçпăшалпа фашистсем фронтра усă кураççĕ. Тен, çав хĕçпăшал сирпĕнтернĕ вĕреçĕлен ман пичче чĕрине сăхнă? Апла пулсан, пичче вилнĕшĕн эпĕ те айăплă-çке...»—йĕрсе ячĕ Тараса аса илнĕ йăмăкĕ. Унтан тăпах чарăнчĕ макăрма. Куçĕсем йăл-ял çуталчĕç. Мĕн шухăш тытрĕха вăл?

Хĕвел тухман-ха. Тĕтреллĕ ир кун çутине пытарса тăрать. Çынпа çын хушшине те шăлапир карнă. Виçтăват утăмри те пачах курăнмасть.

«Çанталăк хăй хĕтĕртет, пулăшать. Уйласа хунисене пурнăçлама пикенес»,— пуплег Элӳç ăшра хăйпе хăй.

Акă вĕсем пиллĕкĕмĕш хут ĕнтĕ сарайĕнчен ача тетти пек çутă, йăлтăркка тимĕр япаласене наçилккапа йăтса тухрĕç.

— Халене, тантăшăм,— чĕнчĕ Элӳç шăппăн, хăйпе мăшăрăн йăтакан хĕре чун-чĕререн шанса.— Ку япаласене цеха илсе каймăпăр. Юрĕ-и!

— Аçталла утас вара?— ыйтрĕ лешĕ, наçилккан малти туртине кӳлĕннĕскер.

— Сулахай еннелле. Унта тарăн шăтăк пур.

Халене ăнланчĕ.

Иккĕш те ун-кун тĕсесе те тимлесе пăхкаларĕç.

— Шĕкĕр турра! Никам та çук,— хĕпĕртерĕ Элӳç.— Фашистсем тин çеç çитнĕ грузовике сыхлаççĕ. Кăшкарне брезентпа витнĕ.

— Грузовикĕ ăçта ларать?— ыйтрĕ Халене.

— Сарай тепĕр енче. Хĕçпăшал тумалли хатĕрсем çĕнĕрен тиесе килнĕ ĕнтĕ. Çавна пушаттараççĕ куçран вĕçертмесĕр.

Хĕрсен таçтан вăй тухрĕ, чупмаллипех чупрĕç. Çитрĕç те наçилккине вăшт тайăлтарчĕç. Тимĕр детальсем хăма тăрăх, кирпĕч пек, йывăррăн кăшăлл шурĕç аялалла. Лăч-лач! туни илтĕнчĕ. Шăтăк тĕпĕнче — пылчăк.

Мĕнле шăтăк ку? Кам чавнă ăна? Тата мĕншĕн кирлĕ? Тен, тараса вăл? Тепĕр тесен, хĕрсен мĕн ĕç пур унпа.

Ырă ĕç хыççăн çанçурăм та ыратмасть, урасем те çăмăллăн утаççĕ.

— Эпĕ питĕ пăшăрханса ӳкрĕм,— çамки çинчи пăрçа

пек шултра тарне кĕпе çаннипе шăлса типĕтрĕ Халене.

— Ан пăшăрхан, акамçăм,— терĕ Элӳç.— Ку вăл — сиплĕ тар. Тар пĕрчисем чирлĕ чуна сыватаççĕ.

— Эрнеччĕ те,— текелерĕ Халене.

Тĕтре сирĕличчен хĕрсем самаях ăнтарчĕç. Тӳсмелле мар йывăр naçилккана пĕрре çеç мар шăтăка пушатрĕç. Шанчăкшăн цеха та утрĕç, паллах.

Юрать-ха, икĕ хĕрĕн вăрттăн ĕçне тăшмансем сисмерĕç. Сасартăк питĕ кирлĕ деталь çухалнине пĕлчĕç. Ăна йышăннине документра палăртнă, анчах япали сарайĕнче те, цехра та çук. Вăрланă теес, кĕсъене шăнăçмасть вăл. Ăна çĕклесе завод хапхинчен те тухаймăн.

Сассисем урмăшиччени ĕрлешрĕç вара хуралта тăракансем. Кашнинех чышкăпа хăмсара-хăмсара тĕпчерĕç.

Айăплисене тупаймарĕç. Таран шăтăк патне тĕллесе çул кăтартакан никам та пулмарĕ. Кирлĕ детальсене юшкăнлă тарăн пусса чăмтарнă икĕ хĕр, патак çирĕ пулин те, ыратнине уямасăр шăпăрт тăрать.

«Паян-ыран ан тупчăрах,— кĕлтăвать Элӳç хăй ăшĕнче.— Пылчăкра вăрахчен выртсан, тимĕре тутăх çиет. Юрăхсăра тухасси — паллă. Пире çавă кирлĕ те».

## 18

Мĕншĕн хĕвел çав тери ир вăранать-ши? Вăл тухсанах, концлагерьти çынсене ĕçе хăваласа кăлараççĕ. Каç пуласса Элӳç паян пихçанхинчен те хытăрах кĕтрĕ. Шутласа хунă ĕçе кĕçĕр тумалла-çке вĕсен.

Йывăр ĕçпе сӳлтен кайнă хĕрарăмсем нарсем çине выртсанах тĕлĕре пуçларĕç.

— Эсĕ ан çывăрса кай,— терĕ Тюне, Элӳçе аяк пĕрчинчен кăлт тĕксе.— Пирĕн куç хупма юрамасть. Кĕçĕр эпир е ирĕке тухатпăр, е пуçа хуратпăр.

Элӳçĕн ыйхи-суйхи таçта кайса кĕчĕ.

— Урра!— сассăр кăшкăрчĕ хĕр.— Ирĕке тухатпăрах, Тюне!

— Питĕ аванччĕ те. Юрĕ, шыв урлă каçиччене сыранне хыпашламăпăр.

Иккĕш те лăпланчĕç.

Шухăшпа Элӳç тăван ялне çитрĕ...

...Хĕрсем яланхиллех Ваççа мучин анкарти хыçĕнчи лăстăркка хурăн айне вăййа пухăннă. Каска пуканĕ çинче ларакан вăйăçă ура тапсах купăс калать. Ун умĕнче

тухъялла чиперккепе яш каччă темшĕн юпа пек пĕр хускалмасăр тăраççĕ. Ыттисем те ташламаççĕ. Мĕншĕн? Тен, ял çамрăкĕсен алли-ури хытнă пулĕ? Çук. Вăрçă пур савăнăçа та хуйхăпа витет. Ав, амăшĕ крыльца вĕçне тухнă та ал витĕр пăхать — юратнă хĕрĕпе ывăлне, мăнукĕсемпе кинне кĕтет. Татăлсах макăрать хăй. Пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх юхса анакан куççульне Элÿç шурă тутăрпа шăлса типĕтет: «Лăплан, юратнă аннеçĕм, эпĕ, санăн пепкÿ, килте ĕнтĕ». «Хĕпĕртенипе йĕретĕп»,— тет амăшĕ. Ах, вăл Тарас çемйи пирки ним те илтмен-иç. Кулинепе ачисене фашистсем тупăпа персе шыва путарнине Элÿç хăй куçĕпе хăй курчĕ-çке...

Тарăху вĕресе хăпарчĕ Элÿçĕн.

— Мĕн мĕшĕлтетеççĕ?— терĕ вăл, вăш-ваш тăрса ларса.

— Пуçна ан çĕкле: «Капан» сисĕ,—тусне асăрхаттарчĕ Тюне.

Вĕсем надзиратель-хĕрарăма ытла мăнтăркка пулнăран мăшкăлласа «капан» тесе ят панă.

— Халăх вĕрсен, капан тÿнет, теççĕ пирĕн чăвашра.

— Взрыв сассине илтмесĕр юлас марччĕ.

Пухура вăрттăн йышăннă тăрăх, парти комитечĕ уйăрнă коммунистсем малтан хĕçпăшал заводне сывлăша сирпĕтмелле. Взрыв сасси кунти казармăрисемшĕн иккĕмĕш ĕçе тытăнмалли сигнал пулать.

Элÿç хăлхисене тăратса тимлĕн итлет: сас-хура çук та çук.

Шăп. Кĕтнĕ чух сехет йĕпписем аран шăваççĕ.

Завода сирпĕтекенсен питĕ тимлĕ пулмалла. Чăрмав кашни утăмрах сиксе тухать, сыхланма кăна ĕлкĕр. Унта арçынсем-ха. Вĕсем çирĕп ăстăнлă, вăйлă. Шутласа хунине пурнăçламасăр нимле хăрушлăх умĕнче те чарăнса тăмĕç.

Сумманен коммунисткăна урăх ĕç панă. Унăн, Тюнепе Элÿç пулăшнипе, концлагерьтен пĕтĕм хĕрарăмсене илсе тухмалла.

Çур çĕр иртсен кĕрĕсс! кĕрĕслетрĕ сывăхрах. Кантăксем тăр-тăрр! чĕтренчĕç. Барак ăшĕ çап-çутă çуталчĕ. Пурте вăранчĕç.

— Мĕн пулнă?!

— Тупăсемпе переççĕ!

— Хамăрăннисем килеççĕ!

— Юлташсем! Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!

**— Урра!**

Шăв-шав çĕкленчĕ. Хĕвеланăç енче, аякрах та мар, тӳпене йăмăх хĕрлĕ хăмач çĕкленчĕ.

— Фашистсен хĕçпăшал заводне сывлăша сирпĕтрĕç!—пурне те илтĕнмелле юриех пĕтĕм сасăпа кăшкăрчĕ Сумманен.

Надзирательница, мăн капан, алăк патне карăнса тăчĕ те казармăран никама та кăлармасть.

— Хушман!— çухăрашать вăл.— Вырăнтан ан тапранăр!

Завод çунать. Пушар сӳнтерме концлагерьти конвоирсене лартса машинăсем туха-туха кĕрлеттерчĕç.

Ĕç шăп палăртнă йĕркепе пырать-ха. Кун хыççăн Сумманен коммунистка ушкăнĕ ĕçе пуçăнмалла.

Шăв-шав вăхăтĕнче Тюнепе Элӳç надзирателе вăйпах тĕксе ячĕç те тула сиксе тухрĕç. Элӳç кирлĕ çĕре краççын сапма тытăнчĕ, ун хыççăн Тюне вут тĕртсе пычĕ. Самант хыпса илчĕ çулăм. Казарма кĕрлесе çунма тытăнчĕ.

— Пушар!

— Казарма çунать!— Тюнепе Элӳç хăйсемех хурахлатаççĕ.

Шалта, баракра, шăри-шари çухрашаççĕ. Халăх алăк патне капланчĕ.

— Тасал, капан!— кăшкăраççĕ хĕрарăмсем надзирательницăна.

— Мĕн пăхса тăратăр, вута пăрахас ăна!—терĕ Сумманен.

Унччен те пулмарĕ, чи паттăррисем кĕмсĕркке кĕлеткеллĕ надзирательницăна çулса тытрĕç те ӳпне-питне чикелентерчĕç.

Кĕпĕрленсе тухрĕç хĕрарăмсем.

Сумманенпăн пурне те хăй хыççăн ертсе каймаллаччĕ, анчах темиçе конвоир ĕрĕхсе те çитрĕç.

«Ха, йăлтах кайса пĕтмен иккен завода хăтарма, кунта та темиçен юлнă»,— шухăшларĕ Сумманен.

Хуралçăсем, анра сурăхсем евĕр, пăтрана тăчĕç. Аптраса ӳкнĕ: те концлагерь хапхине хуралламалла вĕсен, те çунакан казармăна сӳнтермелле. Йĕркесĕр пакăлтатаççĕ хăйсем. Акă витресем, пакурсем салатса пама тытăнчĕç. Эппин, вĕсем пушарах тĕп тăвасшăн.

— Юлташсем, витре, пакур алла ан тытăр. Пирĕн пĕр тĕллев — концлагерь тыткăнĕнчен хăтăласси! Кунта пĕри те ан юлтăр!— кăшкăрса ячĕ Сумманен.

— Тарар, юлташсем!— чĕнчĕ Тюне.

— Пурте казарма хыҫнелле тапар!— хушса хучӗ Элӳҫ.

Халӑх малалла кӑшӑл! шурӗ. Анчах конвоирсем ҫавӑнтах ҫула пӳлчӗҫ. Пӑшалӗсене кӑнтарса, выльӑхсене тапӑра хуса кӗртнӗ пек, хӗрарӑмсене пӗр тӗле хӗсрӗҫ: мӗн тӑвӑн, парӑнма тиврӗ-ха. Ара, конвоирсем пӑшаллӑ, пӑшалра — вӑй. Тытӗҫ те, ак, тимӗр пӑрҫа ҫутарӗҫ. Ав, епле хӑмсараҫҫӗ вӗсем. Ҫат ҫыпҫӑнса тӑмалла нмӗш пӗр-пӗрин ҫумне. Тыткӑнрисем ирӗксӗрех пӑчӑртанчӗҫ. Вӗсем ӗнтӗ тимӗр кӑшӑлта. Йӗри-тавра пӑшалӗсемпе картланӑ хуралҫӑсем.

«Нивушлӗ хӑтӑлаймастпӑр?»— Элӳҫӗн чӗри кӑкӑрӗнчен сиксе тухас пек тапать.

— Хӑвӑр хӑранине ан палӑртӑр,— шӑппӑн каларӗ Сумманен.— Тӳсӗр, пире хӑтарма партизансем килеҫҫех.

— Эпӗ кайса пӑхам-ха, йӗплӗ пралуксене татман-и?— терӗ Элӳҫ, Сумманен ҫумӗнче тӑраканскер.

Чавсисемпе тӗрткелешсе вӑл ушкӑн варринчен тухрӗ те карта еннелле васкарӗ. «Стой»— сывлӑша ҫурса ячӗ сасӑ. Хыҫра такам таплаттарса чупать. Унччен те пулмарӗ, ӑна ҫурӑмран пӑшал кӗпҫипе ҫапрӗҫ. Элӳҫ чутах чикеленсе ӳкмерӗ. Ура ҫинче тытӑнса тӑрасшӑн пӗтӗм вӑйне пухрӗ вӑл.

Ӑна хӑвалаканни ҫак самантра хуса ҫитсе ума ӳкрӗ.

— Қаялла! Қаялла!— хирӗлчӗ вӑл, пӑшалӗпе хӑмсарса.

Қазарма шатӑртатсах ҫунать. Қонцлагерь картишӗ ҫап-ҫутӑ. Хӗвел ҫутинчи пек ҫынсен пӗр-пӗрин пичӗсем курӑнаҫҫӗ.

Элӳҫӗн куҫӗ хӑйне хӑвалакан ҫын куҫӗпе тӗл пулчӗ. Сасартӑк палласа илчӗ вӑл ҫак ҫынна. Ура тупанӗнчен пуҫласа пуҫ вӗҫне ҫити тинкерчӗ. Қарттусӗ умӗнче, кӗпе ҫанни ҫинче унӑн фашист свастики.

Тӑпах чарӑнчӗ хӗр: урн тӑлланчӗ, ӳт-пӗвӗ юпа пулса хытрӗ.

— Антти! Эсӗ фашист-ҫке!..

Анттипе юлашки хут тӗл пулни аса килчӗ: ӑна секретлӑ пайра пичетленӗ шифрлӑ хутпа ҫӑкӑр карточкисем пани, хӑйне тӗрмене илсе кайса, унта вӗлересле хӗнени, концлагере хупни...

«Ав кам сутнӑ мана — хамӑн савниех, Антти!» Эх, ҫумра револьвер пулас пулсан... Вилӗме тивӗҫлӗ йӗк вӑл». Ним тӑвайманнипе эрленсе кайнӑ хӗр мӗн вӑй ҫитнӗ таран Анттие ҫупса ячӗ: «Ирсӗр сутӑнчӑк!»

Тыткăнри хĕртен çупкă çини уртарса ячĕ фашиста! Вăл пилĕкĕнчи йĕннине вăрт-варт вĕçертрĕ. Анчах револьверне туртса кăларма ĕлкĕреймерĕ, такам пăшалпа печĕ. Антти çанни витĕр хул тăрăх юн палкаса анчĕ. Сулахай аллине ярса тытрĕ те вăл хаяррăн кăшкăрса ăванса анчĕ.

Çак вăхăтра концлагерь картишне партизансем пырса кĕнĕ-мĕн.

— Ман хыççăн!—кăшкăрчĕ карттусĕ çине хĕрлĕ çăлтăр çыпăçтарнă тĕреклĕ арçын, ку партизансен командирĕ пулчĕ.

Хĕрарăмсен ушкăнĕ партизан хыççăн чупрĕ. Элĕç те Сумманенпа Тюнене хуса çитрĕ.

Партизансемпе конвоирсем хушшинче тытăçу пуçланчĕ. Пульăсем чвик-чвик! вĕçеççĕ.

Йĕплĕ пралук картине партизансем касса çул уçнă. Умра — сĕм вăрман. Кунта ушкăнпа пыма май çук.

— Юлташсем, пĕрерĕн тарма тăрăшăр!—хушать Сумманен.

Хĕрарăмсем чăл-пар саланчĕç.

## 19

Элĕç ним уямасăр чупать. Сывлăшĕ пÿлĕнет унăн. Кăшт канмалла мар-и? Ун-кун пăхкалать йĕри-тавра.

Вăл, уй варринчи юман пек, пĕччен тăрса юлнă иккен. Ăçта ыттисем? Сĕм вăрманăн чÿречи çук — нихăшĕ те курăнмасть. Юлташсăр ăçта кайма пĕлес? Элĕçĕн чунĕ кÿтсе килчĕ.

— Елена!— чĕнчĕ ăна такам.— Мĕн эсĕ пĕр вырăнта тăратăн?

Тюне иккен.

— Аташрăм тесе пітĕ хăрарăм,— ĕсĕкле-ĕсĕкле ыталарĕ ăна Элĕç.

— Сана самантлăха та куçран вĕçертмен эпĕ. Ан йĕр. Маншăн ку вăрман — тăван кил, пĕрле кайăпăр. Унсăрăн эсĕ кунта пĕтетĕн. Атя.

Вĕсем чăтлăха кĕрсе çухалчĕç. Тюне малта васкаса утать, Элĕç — ун хыççăн. Йывăç тураттисем питрен çапни хĕрсене нимĕн чухлĕ те ыраттармасть тейĕн.

Лагерь енчен пăшал пени-кĕрлени çаплах илтĕнет-ха.

Васкаса чупнипе вар-хырăм ыратать. Кăшт та пулин тăхтаса сывлăш çавăрасчĕ, анчах юрамасть: хыçра — хаяр тăшман...

Таврана кăвак çутă çапрĕ. Халĕ ĕнтĕ нкĕ хут тимлĕрех пулмалла.

Тюнепе Элÿç шывлă-шурлă, лачакаллă вырăна пырса тухрĕç. Ансăр-ши ку, сарлака-ши? Мĕн чухлĕ утсан леш енне çитме пулать-ши? Кунта малтанхи хут килнĕ çын чухлаймасть. Умри ик-виç хăлаç таран çеç курăнать. Лерелле вара сĕт пĕрĕхнĕ тейĕн — шап-шурă тĕтре.

— Тĕтре сирĕличчен пирĕн шурлăх урлă каçса ĕлкĕрмелле,— терĕ Тюне. Вăл туялăх хуçма çăра туратлă йывăç патнелле çывхарчĕ кăна — сасартăк хăйсенчен чылай аякра çын кĕлеткисем мĕкĕлтетнине асăрхарĕ, мотоцикл кĕрленине илтрĕ. Тусĕ тинкернĕ еннелле Элÿç те пăхрĕ, вăл та курчĕ. Вĕсем — фашистсем, урăх никам та пулас çук.

— Пĕтрĕмĕр,— сехĕрленсе ÿкрĕ Элÿç. Чĕри тухса ÿкес пек шаккарĕ.

Тюне хăйне лăпкăнрах тытма тăрăшрĕ:

— Концлагерьтен тарма пултарнине халĕ тăшман аллине лекес марччĕ-ха,— терĕ вăл.— Пытанар!..

Хайхискерсем шыва чăмпăлтаттармасăр шурлăх варринелле кĕчĕç. Пăр пек сивĕ шыв мăй таран. Хĕрсем пуçĕсене хăва тĕмĕ хушшине пытарчĕç. Çыран хĕррипе шурă тĕтре карăнчĕ.

Мотоцикл кĕрлени таврари шăплăха çурать. Кустăрмаллă утсем çывхарнăçемĕн çывхараççĕ. Тюнепе Элÿç пытаннă тĕлеллех чарăнчĕç мур илесшĕсем. Анчах никама та асăрхамарĕç пулас. Ĕрлешеççĕ кăна! Пĕр авăк павракăç-павракăç те мотоциклĕсене кĕрлеттерсе малалла кайрĕç. Вара çав чуна шуйлантаракан сасă аякка кайнăçемĕн çухалса шăпланчĕ.

Хĕрсем шурлăхран тухма пурпĕрех васкамарĕç-ха, теп, татах юлнă унта?

— Сумманен мĕнле-ши? Хăтăлайрĕ-ши?—пăшăлтатрĕ Элÿç пăшăрханнă сассипе. Кăвакарнă тути аран-аран уçăлать. Шăлĕсем шаккаççĕ.

— Вăл пултаруллă хĕрарăм,— терĕ çеç Тюне. Унăн пичĕ-куçĕнчен те юн тарнă, çÿç пĕрчисем пайăркан-пайăркан çыпăçса чăмаккаланнă.

Таврара сас-чÿ илтĕнмест. Эппин, пурте кайнă пăраха. Сасартăк тарăн шурлăх тĕпне вут чĕртнĕн, шыв лĕпленнĕ пек туйăнчĕ Элÿçе. Вăл чĕтреме чарăнчĕ.

— Атя, тухар,— терĕ Элÿçе Тюне.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ лешĕ.

— Малалла каяр.

— Путса вилме-и?

— Шурлăха ку тĕлтен кĕме юрамасть,— вĕрентсе каларĕ ăна тусĕ.

Вăрманта Тюне икĕ туя хуçрĕ те пĕрне Элӳçе пачĕ.

— Мĕн тумалла кунпа?

— Ку саншăн шурлăхра чăн-чăн кĕсмен.

— Кимĕсĕр çынна кĕсмен пулăшайĕ-ши?

— Мĕнлерех пулăшать те. Анчах эсĕ асту, ман йĕрпе пыр. Эпĕ ăçта пусатăп, çавăнта пус.

Тюне ун-кун пăхкаласа илчĕ те тĕм çинчен тĕм çине сикме тытăнчĕ. Тусĕ хыççăн Элӳç те халиччен нихçан çӳремен çула тухрĕ.

Чăвашра кунашкал шурлăхлă вырăнсем пачах çук. Мĕнле япала ку? Чăнах, çутçанталăкăн тĕлĕнтермĕшĕ. Шывĕ нумай — ниçталла та юхмасть: тăрать пĕр вырăнта сарăлса та кӳлленсе, пĕчĕк-пĕчĕк хăмпăсем кăларса, пăкăр-пăкăр йӳçсе. Шыв çийĕнче хăяхпа хăва тĕмисем пур: ни ишмеççĕ, ни çĕре тымар ярса тăн-тăн тăраймаççĕ — лараççĕ лĕнчĕртетсе. Вĕсем çине пуснă-пусман шыва пилĕк таран янк анатăн. Ултавлă тĕмсем те темĕн чухлех. Чухлама хăнăхман çынсене пайтах çăтаççĕ вĕсем.

Икĕ хĕре хăйĕн шурă чăланĕнче чылай хушă пытарса тăнă çăра тĕтре майĕпен шĕвелчĕ. Тюнепе Элӳç çитес çĕре çитрĕç. Авă çыран хĕрри. Урасем тинех тип çĕр çине пусрĕç.

— Кăшт канса илер,— терĕ Тюне.

Элӳçĕн питĕ калаçас килет. Антти пирки Тюне мĕн шухăшлать-ши? Анчах кирлĕ сăмах тупайманнипе кăшт шухăшласа ларчĕ. Çав хушăра халтан кайнă Тюне кăтăш пулнă та-мĕн. Вăратма хăяймарĕ вара Элӳç. Хăйне те ав анаслаттарать. Унăн та куçĕ хупăнсах ларать.

Хĕвел тӳпене хăпарчĕ. Вăл асапланса пĕтнĕ икĕ чуна, карел хĕрĕпе чăваш хĕрне, шеллесе уйрăмах хытă ăшăтма тăрăшать тейĕн. Вĕсен утас çулĕ татах вăрăм-ха.

Элӳçпе Тюне виçĕ çĕр каçрĕç вăрманта. Хăрăк турат шатăрт! хуçăлни те шиклентерет хĕрсене. Вар-хырăм чăрлатса ыратать. Çапах та кăмпа-çырла, курăкçулçăсăр пуçне нимĕн те çук.

Тăваттăмĕш кунне тепĕр шурлăх урлă каçма тиврĕ.

— Халĕ ĕнтĕ хăтăлтăмăр тесен те юрать,— савăнăçлăн каларĕ Тюне.— Тепĕр ăстрăм пашкаса утсан—эпир килте.

— **Пирĕн тĕллев — партизансене тупасси, вĕсемпе**

пĕрле тăшмана хирĕç çапăçасси,— хушса хучĕ Элӳç.

— Партизансен штабĕ халĕ шăпах пирĕн ялта. Фашистсем кунта, аякри вăрман ăшне, шурлăхсем урлă килме хăраççĕ.

Уçланка тухрĕç. Умра — ыраш пусси. Çил ачисем, кимĕпе тинĕс тăрăх ишнĕн, пучахсене авса ярăнаççĕ. Лере — вĕтлĕх.

— Юлашки хут урасене кантарар,— сĕнчĕ Тюне.

Иккĕш те тăсăлса выртрĕç те тĕлĕрсе те кайрĕç.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ, хĕрсем кĕр! кĕрленĕ сасăпа вăранчĕç.

— Мĕн амакĕ?.. Тупăсем переççĕ-и?..

— Аçта эпир?— куçĕсене уçса чăл-пар пăхкаларĕ Элӳç.

Хĕвелтухăçĕнче, асамçă пек, тем тĕпĕртетет. Пĕветнĕ кăвак сенкер çип хутăрĕсене пĕлĕт каштинчен çака-çака ярăмланă. Аслати, çав чаршава карса-тăсса пынă пек, тӳпенелле хăпарать. Çутă сăнăллă çиçĕм, хăй лампине çивĕччĕн йăр-яр сулса, аслатие çул кăтартать.

— Ай-уй, уççи-хупписĕр çумăр килет,— хыпаланса ӳкрĕ Элӳç, пуçне çӳлелле шиклĕн каçăртса.

— Кун çути çухаличчен çитес çĕре çитер,— терĕ Тюне.

Ура тупанĕ тĕлкĕшиччен чупрĕç вĕсем. Акă тинех сайра çӳллĕ йывăçсем хушшинче темиçе пӳрт курăнчĕ.

Таврара шерпет, ăшă çăкăр шăрши.

Унччен те пулмарĕ, йывăç хыçĕнчен хура мăйăхлă йĕкĕт сиксе тухрĕ. Сасартăк çын курнипе Элӳç пăлханса ӳкрĕ, урисем тăпах чарăнчĕç. Тюне вара кăшкăрса ячĕ:

— Ульяс!— аллисене сарса, йĕкĕт еннелле ыткăнчĕ вăл.

Элӳç шутсăр тĕлĕнчĕ.

«Ку Ульяс Урхонен-çке. Тути хĕррине мăклантарнă та тӳрех паллама та çук хăямата». Элӳç шутсăр тĕлĕнчĕ.

Тюнепе Ульяс ыталанса чуптурĕç. Савнисем-çке. Хăçантанпа пĕр-пĕрне курманни! Хĕр-тантăшĕпе унăн савнине ăмсанса пăхрĕ Элӳç. Çийĕнчех ăна Антти аса килчĕ. Йĕксĕке суккăрла юратса пурăннăшăн кăмăлĕ хуçăлчĕ.

Ульяспа Тюне Элӳç патне пычĕç.

— Сывлăх сунатăп!— Элӳçе алă пачĕ йĕкĕт.— Анăçлă çитнĕ ятпа саламлатăп.

— Тавтапуç!— терĕ Элӳç.

— Атьăр штаба,— чĕнчĕ хĕрсене Ульяс.— Сире васкавлă ĕçсем кĕтеççĕ.

Вăрçă пĕтичченех Элӳç партизанра çӳрерĕ. Тек Анттипе тĕл пулаймарĕ вăл.

## 20

...Чапаев скверĕнчи сак çумĕнче тăракан ял учительници Елена Михайловна (вăл çамрăк чухнехи Элӳç) туристсен ушкăнне куçран вĕçертмест.

Йыш музей патнелле утрĕ. Йăрăм-йăрăм костюмлă этем шав хыçалтан пырать.

Туристсем алăк умĕнче чарăнчĕç. Шăп та шай çак вăхăтра шалтан Римма тухрĕ. Ăна такам чĕнчĕ пулас, вăл тăпах чарăнса тăчĕ. Тĕрĕсех, ав, ун патнелле иккĕн тан çывхараççĕ. Пĕри хайхи йăрăм-йăрăм костюмли, тепри шурă свитер тăхăннă çамрăк çын. Алă тытрĕç. Тем пит пуплеççĕ. Вĕсен хушшинче хаваслă калаçу пыни таçтанах паллă.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Римма хайхискерсенчен алă парсах уйрăлчĕ. Вăл чупсах Елена Михайловна патне таврăнчĕ.

— Ах, аван та-çке! Асаттен сăнӳкерчĕкне те куртăм!

Риммăна музей килĕшни çĕкленӳллĕ сассинченех уйăрса илен.

— Чим-ха, Римма çав музей алăкĕ патĕнче алă тытсах юмахласа тăнă çын... кам вăл?

— Вăл-и? Мишша! Ăна...—учительница сăнтан ӳкнине асăрхарĕ те Римма пăшăрханса ыйтрĕ:— Мĕн пулчĕ сире?

— Эсĕ каламарăн-çке çав çын кам иккенне?

— Мишша вăл — кукка ывăлĕ. Куславккари автофургон заводĕнче ĕçлет.

— Миçе çулта вара кукку ывăлĕ?

— Манран кăшт çеç аслăрах. Авланман-ха. Хам туя пыма чĕнсе хытарсах каларăм.

«Эппин вăл вунтăхăр çулсенче»,—шухăшларĕ Елена Михайловна.

— Теприне, йăрăм-йăрăм костюмлине, пачах палламастăп. Мишшасемпе пĕр заводра ĕçлет имĕш. Сĕмсĕрскер пек туйăнчĕ вăл мана: «Эпĕ те пырам-и сирĕн туй кĕрекинче ларма?»—тет ахăрса. «Ытлашши хăюллă çынсене килĕштерместĕп эпĕ»,— терĕм.

Елена Михайловна куçĕ ялл çуталса илчĕ, çавăнтах

сӳнчӗ. Илтӗннӗ-илтӗнмен сассипе аяккалла тӗмсӗлсе мӑкӑртатрӗ: «Ай-турах, пулаççӗ-мӗн тӗнчере пӗр сӑнлӑ çынсем...»

— Кам сӑнлӑ вара вӑл?— харсӑрланчӗ Римма.

Елена Михайловна ним те шарламарӗ, пуçне çеç çулса илчӗ. Хаяр вӑрçӑ çулӗсенчи пурнӑçӑн синкерлӗ шӑпине, ӑнӑççӑр юратӑва аса илсе, мӗншӗн пӑсас çураçнӑ хӗр кӑмӑлне? Чул çуннине тек никамӑн та курмалла ан пултӑр.

Йӑл кулса илчӗ вӑл юлашкинчен. Ку ӗнтӗ Елена Михайловна хӑйӗн çамрӑклӑхне алӑ çулса ӗмӗрлӗхех ӑсатнине пӗлтерчӗ.

*1978 ç.*

# ЮРАТНӐ МӐШӐРСӐР

Улма-çырла пахчисем чечек-пӗркенчӗкпе капӑрланнӑ. Шурӑ кӗрен çеçкесем çийӗн хӗвел шевли чӳхенет. Ытла илемлӗ-çке çав май уйӑхӗ. Техӗмлӗ сывлӑш чуна уçса ярать.

Улмуççи айӗнче, тенкел çинче, тарӑн шухӑша путнӑ Полина Николаевна ларать. Пӗччен вӑл. Çийӗнче ун кӑвак тӗслӗ çӳхе пальто. Пуçӗнче — çӑмран çыхнӑ сарӑ калпак. Çамки çине калпак айӗнчен кӑвакарнӑ çӳç пайӑркисем тухнӑ. Хӑй тӑтӑшах ассӑн сывла-сывла илет.

Унччен те пулмарӗ, пахча калинкки чӗриклетрӗ. Улмуççи айӗнчи тенкел çинче ларакан ватӑ хӗрарӑм, ыйхӑран вӑраннӑн, шартах сикрӗ. Уçӑлнӑ калинкке умӗнче икӗ ача курӑнчӗç. Кусем Полина Николаевна мӑнукӗсем.

— Ав унта ларать майра асанне!— Куна пилӗк çулхи Санькка каларӗ, пӳрнипе тӗллесе.

— Асту, сана акӑ вӑл хӑйпе аякка илсе каять!— Çапла хӑтӑрчӗ йӑмӑкне пиччӗшӗ. Унӑн ячӗ — Ваççук. Саккӑрта вӑл, кӑçал пӗрремӗш класс пӗтерет.

— Мӑнукӑмсем, килӗр ман патӑма, килӗр!— тилмӗрсе чӗнчӗ ачасене Полина Николаевна.— Канфет паратӑп.

— Аюк!— килӗшмерӗ Санькка.

— Эпӗ канфет юратмастӑп!— пӗлтерчӗ Ваçук.

Вӗсем пахча калинккине туххӑмрах шакӑлт хупса хучӗç.

«Ниепле те хăнăхтарайрас çук,—шухăшларĕ Полина Николаевна. Пĕлесчĕ çак ачасен вĕсем патне асламăшĕ ырă кăмăлпа килнине.

Пенсие тухсан Полина Николаевна пĕр кун та килĕнче тытăнса тăмарĕ, чĕри унăн хăй çуратнă, анчах ютшăннă ывăлĕ патне, яла туртăнчĕ.

— Қаятăп, Савва,— терĕ вăл мăшăрне, кучченеçсемпе парнесем илсе çитерсен.

— Пĕр мăнукне те пулин çавăрма тăрăш, Полина. Илсе кил!— чун-чĕререн тилмĕрсе каларĕ упăшки—Савва Қорнилович Топрикин.— Ватăлмалăх кунра та пулин çумра мăнук пултăрччĕ.

— Тăрăшăп.

Топрикинсене тăван ывăлĕпе пурăнма пӳрмен.

— Ывăла тупсан, эпир унăн ашшĕпе амăшĕ пулнине хамăр чăвашла пĕлмен пиркиех ĕнентереймерĕмĕр ахăр,— ӳпкелешет Савва Корнилович мĕн паянччченех.

Вĕсем мăнукĕсене те пулин хăйсене илентерес шутпа учитель тытсах чăвашла вĕренчĕç, чăвашла çырнă кĕнекесем вуларĕç.

Полина Николаевна çула тухас умĕн хăйне кĕтсе илме хушса яла хыпар ямарĕ. Систермесĕр пырса кĕрсен аван туйăнать ăна. Телеграмма илĕç те хыпăнса ӳкĕç. Çынсене чăрмантарам мар, терĕ вăл.

Қанаш станцине çитнĕ çĕре шурăмпуç сути çапрĕ. Çуллахи кун самант çутăлать.

Пуйăсран анса юлсан, часах такси тупăнчĕ.

— Хăш яла?

Полина Николаевна ăнлантарчĕ.

— Туххăмра çитетпĕр!— мухтанчĕ шофер. Çынни ку хаваслăскер иккен, сăмахлама ӳркенмест, юнашар ларса пыракана тунсăхлама памасть.

Асфальтлă çул тăрăх машина вĕçтерсе кăна пырать. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, пысăк яла пырса кĕчĕç. Çак ялта пурăнаççĕ ĕнтĕ шоферпа юнашар ларса пыракан хĕрарăм чĕрин тĕпренчĕкĕсем.

Хыçалти каса каççан, Полина Николаевна машина кантăкĕ çумнерех çывхарчĕ. Тĕмсĕлсе пăхрĕ малалла. Ав вăл, мĕн курма ĕмĕтленни! Тăкăрлăкра хăй вырăнĕнчех ларать-мĕн чуна вĕчĕрхентерекен хĕрлĕ кирпĕч çурт.

Куç хăрпăкĕсем çине вете йăлтăркка шăрçасем тирĕнчĕç. Пурпĕрех мăчлаттармасăр тӳсет мăнтарăн хĕрарăмĕ. Қалăн, куçран вĕçертсен, кирпĕч çурт хуçисем-

пех: ывăлĕ, кинĕ ачи-пăчипех çĕр шăтăкне чăмать тесе.

Карр! çаврăнчĕ машина. Унăн кантăкне хăмачпа карчĕç тейĕн. Умра — хĕрлĕ кирпĕчлĕ стена.

— Ырă кăмăллă çулçÿревçĕ, çитрĕмĕр пулĕ?— пуплет шофер. Хăй çавăнтах кил хуçисене систерме машинине вăрăммăн кăшкăртрĕ. Унтан Полина Николаевнăна машинăран тухма пулăшрĕ. Чăматанĕсене çĕре кăларса лартрĕ.

Акă кĕçĕн хапха уçăлчĕ. Урама Полина Николаевнăн кинĕпе ывăлĕ тухрĕç. Вĕсен хыçĕнче ачасем, мăнукĕсем, курăнчĕç. Ывăлĕн амăшĕ Илэпи ăçта тата?

— Йышăнăр! Сирĕн пата хăна илсе килтĕм,— шÿтлесе-кулкаласа калаçрĕ шофер.

Ывăлне, Калиме кинне, мăнукĕсене курсан Полина Николаевна çав тери пăлханчĕ. Салам сăмахĕсене чăвашла калас тесе çăварне уçрĕ, анчах темшĕн сасси тухмарĕ. Малалла ярса пусма пикенчĕ — чупĕкленнĕ урисем итлемерĕç. Сулăнса-сулăнса кайрĕ вăл. Ывăлĕ пырса тытма ĕлкĕрчĕ.

— Мама! Мĕн эсир?! Киле килнĕ пек шутлăр. Чăнах та, ют çĕрте мар-çке,—çурăмĕнчен лăпкарĕ Полина Николаевнăна ывăлĕ.

— Энтри, акă çакăнта сак çине ларт ăна. Эпĕ шыв илсе тухам,— терĕ Калиме. Вăл ваштах картишне кĕрсе çухалчĕ.

Кантăк умĕнчи çаврака йăран çинче сарă, кĕрен чечексем ешереççĕ. Карта çумĕнче, хапха çывăхĕнче — сак. Çакăнта çавăтса пырса лартрĕ хăнана Энтри.

— Канăр пăртак. Сывлăшĕ уçă. Сирĕн чĕрĕр хавшанă курăнать. Пирĕн патăмăрта пурăнăр, пĕтĕм чир-чĕр каялла чакĕ,— йăпатрĕ ăна ывăлĕ.

Пуçласа ăна ывăлĕ «мама» тесе чĕнчĕ.

«Мама, анне» тесе чĕннине илтесси амăшĕшĕн мĕнле пысăк савăнăç! Тăван ачан йăваш сассипе ăшă сăмахĕ— хăй çурхи кун. Мĕн каласси пур: ывăлĕн аллисем те вăйлă, пĕвĕ-сийĕ те кĕрнеклĕ. Ун çумне таянса утма та çăмăл. Мĕншĕн малтанхи хут, яла килсен, ăна çапла хĕрхенмерĕ-ши? Çак хуйха-суйха курман пулĕччĕ Полина Николаевна.

Ун чухне ывăлĕ вунпĕр çулхи ачаччĕ. Татăлса макăракан çак хĕрарăмран шутсăр хăрарĕ вăл. Пĕччен мар, арçынпа килнĕччĕ вĕсем. «Эпир санăн аçупа аннÿ»,—тесе ăнлантарма пăхрĕç. Çапла каланине Энтри тем тусан та ĕненмерĕ. Ара, мĕн астăвассах унăн амăшĕ çумра

пуранать-çке, Илэпи тесе чĕнеççĕ ăна кӳршĕсем. Йăмăкĕ те пур — Клара ятлă. Ашшĕ вĕсен вăрçăра Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пуçне хунă. Çак майрапа вырăс мĕн ĕнентерме хăтланнине ача чĕри нимпе те йышăнмарĕ. Ирĕксĕр тытса каясран хăранипе килтен тухса тарчĕ Энтри...

Кинĕ шыв илсе тухнă ав.

— Мейĕр, ĕçĕр,— сĕнет вăл.

Лăнкăрт-лăнкăрт çăтрĕ çăл шывне Полина Николаевна.

— Тавтапуç. Вăй кĕрсех кайрĕ,— терĕ вăл, куркине кинне тыттарса.

Кăшт вăхăт иртсен ăна пӳрте кĕме чĕнчĕç. Энтри чăматансене йатрĕ. Кинĕ хулран тытрĕ ăна.

— Анне, ăçта эсĕ? Пăх-ха, пирĕн пата кам килнĕ?— пĕлтерчĕ Энтри пӳрте кĕрсен.

Тĕпел кукринчен калчаланнă çĕрулми пăтавкки йат-са Илэпи тухрĕ.

— И-и, ара, хăна килнĕ-çке. Эпĕ тĕпсакайĕнче паранкă суйласа ларнипе сисмен те,— хыпăнса ӳкрĕ Илэпи. Çавăрăна тăрать, пăтавккине ниçта хума пĕлмест, аранах пăлтăра çĕклесе кĕчĕ. Çавăнтах тухрĕ те алă тытрĕ:— Иртĕр тĕпелелле. Пĕчченех килтĕр-и е Савва Корниловичпа-и?

— Пĕчченех. Хăвăр мĕнле чуптаратăр?

Чăвашла калаçать Полина Николаевна. Ку пурне те питĕ тĕлĕнтерчĕ, анчах асăрхаман пек пулчĕç.

— Эпир мĕн, пурăнкалатпăр-ха. Хам, ав, ватăлса пыратăп.

— Унтан хăтăлаймастпăр ĕнтĕ.— Полина Николаевна кинĕ пулăшнипе хывăнма тытăнчĕ.

— Эсир майлашăр-ха. Ман бригадăна çитмелле. Трактористсемпе калаçмалли пур. Эпĕ халех...— Энтри çапла каларĕ те куçран çухалчĕ. Вăл трактор бригадин бригадирĕ. Паллах, ун бригадăна çитмеллех.

Мăнукĕсем кăмака хыçĕнчен пуçĕсене вĕлт те вĕлт кăларса пăхаççĕ, кушак çурисем пек. Илэпи вĕсене ĕç хушрĕ.

— Санькка, Ваççук! Хыр йĕкелĕсене илсе кĕрĕр-ха. Сăмавар чĕртсе ярар.

Хастарскерсем самантрах пĕр пурак йĕкел йатса кĕчĕç.

Сăмавар вĕренĕ тĕле Полина Николаевна чăматанĕнчен ĕçме-çиме темтепĕр кăларса хучĕ сĕтел çине.

Мăнукĕсене кучченеçпе сăйласшăн вăл. Премĕк-канфет курупкисем тăсрĕ. Лешсем илĕç-и йăпăр-япăр. Санькки Илэпи асламăшĕн кĕпи аркинчен ярса тытрĕ, Ваçукĕ ун çурăмĕ хыçне пытанчĕ.

— Илĕр ĕнтĕ, аван мар апла,— ÿкĕтлет мăнукĕсене Илэпи. Çук, утăм тума та шутламарĕç ачасем. —Э-э, апла пулсан... Çĕрулми нимри пĕçернĕччĕ. Антарса парам-ха, çийĕр.

Илэпи пăлтăра тухрĕ, ун хыççăн — ачасем.

Полина Николаевна кăмăлĕ хуçăлнине кăтартмарĕ, хăнăхĕç-ха, ÿлĕм кун пек пулмĕ-ха, терĕ.

Кинĕ эрех кăларса лартрĕ, тăпăрч пÿремечĕ, хуплу касса хучĕ.

— Кушак ĕнер хăна килессе систерсе питне çурĕ,— кулкаларĕ вăл,— вара çĕркаç чуста хутăм.

Акă унăн мăшăрĕ Энтри таврăнчĕ.

— Энтри ывăлăм, нÿхрепре, пĕчĕк пичкере, кăрчама пур. Анса ил-ха,— хушрĕ ăна Илэпи, сарă чĕрес тыттарса.

«Энтри» тесе чĕннине илтсенех, Полина Николаевнăн чĕри ыратса кайрĕ. Чăн-чăн ячĕ унăн — Олег.

Ĕнтĕ пурте хатĕр. Апат-çимĕç — сĕтел тулли.

— Тархасшăн, Полина Николаевна,— хулĕнчен тытса сĕтел хушшине шутарчĕ ăна Илэпи. Кинĕпе ывăлне те чĕнчĕ.— Эсир мĕн мĕшĕлтететĕр тата?

— Ал çурăм,— терĕ Энтри.

Апатланнă май кăмăллă калаçу пуçланчĕ. Энтри ытларах совхозри, бригадăри ĕçсем пирки пуплерĕ. Илэпин пĕтĕм халап-юмахĕ мăнукĕсем çинчен. Ваççук, ав, «пиллĕк» паллăпа кăна вĕренет. Полина Николаевна мĕн каласа парĕ? Чи малтан вăл упăшки Савва Корнилович пирки аса илчĕ. Отставкăна тухнă пулин те ĕçлет. Килте пĕчченлĕх чуна илет. Упăшкин ĕмĕчĕ çитет — мăнукĕсенчен пĕрне те пулин илсе пырасса кĕтни çинчен каламах тăчĕ вăл, анчах шарламарĕ. Сĕтел хушшинче ларакансене сасартăк хăратса пăрахас мар терĕ.

«Асанне!»— кăмака кĕтессинчен Илэпие кăчăк туртать Санькка.— Кил-ха кунта, асанне!

Полина Николаевна хускалса илчĕ. Хĕрача ун еннелле куç хÿрипе те пăхмасть.

Илэпи пычĕ Санькка патне. Хĕрача ун пуçне икĕ аллипе ытамласа хăлхаран тем пăшăлтатать.

— Чармастăп,— тет Илэпи.— Асту, чипер çÿре. Çул çине ан кĕр, машина айне пулăн.

Санькка пӳртрен тухса вӗҫтерчӗ.

— Выляма каясшӑн урама,— пӗлтерчӗ Илепи.

Полина Николаевна чунтан ӑмсанать Илэпие. «Телейлӗ вӑл, ҫын ачи-пӑчипе савӑнать. Ҫавӑнтах хӑйне хӑтӑрса пӑрахать.— Асапне те пайтах тӳсмен мар-ҫке Илэпи. Тепӗр тесен, манӑн ывӑл ҫӗр ҫинче пурӑннӑшӑн ҫак хӗрарӑма тав тумалла. Анчах ман, тӑван амӑшӗн, ырӑнӗ ӑҫта-ха?»

Темӗн чухлӗ тӑрӑшсан та, Полина Николаевна хӑй ывӑлӗн амӑшӗ пулаймарӗ. Мӗншӗн? Пӗтӗмпех вӑрҫӑ айӑплӑ.

Ҫакӑ виҫӗ ҫыннӑн: Илэпин, Олег-Энтрин, Полина Николаевнӑн телейлӗ пурнӑҫне йӑлтах вӑрҫӑ тӑвӑлӗ шӑлса тӑкрӗ, юсанмалла мар арпаштарса, муталаса хӑварчӗ.

## 1

Илэпи вӑтам шкул пӗтерсен медицина институтне вӗренме каясшӑнччӗ. Вӑл мӗн пӗчӗкренпех тухтӑр пулма ӗмӗтленнӗ.

— Ҫансам пӗрер ҫул. Ҫамрӑк, ӗлкӗрӗн-ха. Тухтӑр та пулӑн,— ӳкӗтлерӗ ӑна амӑшӗ. Пӑтӑр-патӑр ҫатӑртатса тухса каймарӗ хӗрӗ. Амӑшӗ юлашки вӑхӑтра йӑшса пурӑннине шута илчӗ. Ҫакӑншӑнах килти ӗҫсем кая юлса пыраҫҫӗ. Урӑх ӗҫлекен ҫынни те ҫук. Пӗртен-пӗр пиччӗшӗ ҫарта. Вӑл таврӑниччен кӗтмех тивет.

Пурнӑҫ тени ҫапла-ҫке вӑл: вӗренӳрен татӑл ҫеҫ, шухӑшланӑ ӗмӗте тытӑнма пин чӑрмав тупӑнсах тӑрать.

Вӑтам шкултан пӗрле вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем ваштах саланса пӗтрӗҫ. Хӑшпӗрисем экзамен тытрӗҫ. Института кӗрейменнисем хулари заводсене е фабрикӑсене ӗҫлеме вырнаҫрӗҫ. Илэпи яла пӗчченех юлчӗ. Тантӑшӗсемсӗр ҫапла килте мӗскӗнленсе лармалла-и ӗнтӗ малашне? Кун пек типсе хӑрӑн. Илэпи шӑп чӗр-кӗмӗл. Пӗр вырӑнта лара-тӑра пӗлмест. Яланах ташлать, такмаклать. Кӑмӑлӗ хаваслӑ. Вӑл юрӑ пуҫласан, вӗҫен хуркайӑк карти чарӑнать, теҫҫӗ кӳршисем.

Илэпи пек ҫыншӑн амӑш йӑви тӑвӑр, ӑна аслӑ тӗнче, пысӑк йыш кирлӗ.

Фермӑна ӗҫлеме пырса кӗчӗ хӗр. Ӗне сума вӗрентрӗҫ ӑна инкесем. Сӑпайлӑскер, пурин кӑмӑлне те килчӗ вӑл. Ӗҫе хӑвӑрт хӑнӑхрӗ.

— Пӗр пике пӗтӗм фермӑна ҫутатрӗ,— терӗҫ кунта ӗҫлекенсем Илэпи пирки.

Ёнесене апат парать, шăварать, сăвать, витене тасатать. Вĕрет ун аллинче ĕç. Кунпа çеç çырлахмарĕ-ха вăл, клуб ĕçне йĕркелеме тытăнчĕ. Ялта çамрăк нумай. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн унта-кунта саланнисем те таврăнкаларĕç. Çӳреççĕ кичемленсе. Çавсене кружока пухса спектакль лартма пикенчĕ Илэпи.

Хастар çынна хăвăрт асăрхаççĕ. Ялти комсомолецсем ăна комсомол организацийĕн секретарьне суйларĕç. Хăюлланчĕ хĕр, вăй хурса ĕçлет. Клуб пĕр каç та хупăнса лармасть. Секретарь пуçарнипе унта тĕрлĕрен вечерсем, калаçусем, вăйăсем иртеççĕ.

Умра — Çĕнĕ çул. Çамрăксем ăна кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кашниннех ĕç пур. Кĕçех урай варринче капăр чăрăш ларĕ. Ун тавра вăйă-кулă янăрĕ. Ăна Юрпикепе Хĕл мучи ертсе пырĕç. Юрпике Илэпи хăй пулĕ.

Çĕнĕ çул каçĕнче хитре пуласшăн Илэпи. Юрпике шурă кĕпе тăхăнĕ, вăрăм аркăллине, укасемпе эрешлениине. Пуçĕнче — тухъя. Анчах та ăна нухрат-тенкĕсемпе, çутă шăрçасемпе çĕнетмелле. Амăшĕн арчинче нимех те тупăнмарĕ, çавăнпа вăл юнашарти Çирĕклĕх ялĕнчи лавккана кайма тухрĕ.

Çырма икĕ яла уйăрса тăрать. Çуллахи вăхăтра ун тĕпĕнче шыв шăнкăртатса юхать. Халĕ вăл çӳхе пăрпа витĕннĕ. Çырми урлă темиçе кашта хунă. Каçма ĕнтĕ ку. Хĕр, шуса ӳкесрен хăраса, хăва хуллисене ярса тытрĕ, каçма çийĕн вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа малалла шурĕ. Çурма çула çитсен тăпах чарăнчĕ вăл. Каçма айĕнче ытармалла мар кĕвĕ илтĕнет. Çӳхе пăр айĕнче юханшыв юрлать иккен. Сасси ытла çепĕç, чуна тыткăнлать. Илэпи лăпчăнса ларсах каçма айнелле пăхрĕ.

— Маттур-çке эсĕ, тăванăм. Сассу вăйлă, ăна пăр виттӳ те хуплаймасть,—калаçать хĕр юханшывпа.— Сисетер-ха, уçса пар вăрттăнлăхна: мĕн çинчен юрлатăн?

Юханшывăн кĕмĕл тумĕ йăлтăртатать. Хĕвел пайăркн тĕкĕр турĕ унран. Куçкĕскинче Илэпи хăйне курчĕ. Пысăк куççем пăхаççĕ ун çине чăрлаттарса. Шел, шыв тĕкĕрĕнче вĕсен тĕсĕ палăрмасть. Хĕр çутă хăмăр куçлă. Куç хăрпăкĕсем усăнарах тăраççĕ.

Шкулта пулса иртнĕ пĕр ĕç аса килчĕ те, йăл кулчĕ Илэпи. Пĕррехинче, уроксем пĕтсен, ăна тантăшĕсем куçне хупма хушрĕç. Вăл итлерĕ вĕсене.

— Ух, мĕнле вăрăм ун куç хăрпăкĕсем!— терĕ пĕри.

— Çавăнпа чипер,—тет тепри.—Илэпи, эсĕ куç хăрпăкĕсене çӳлелле ав. Вара киноартистка пек пулăн...

Пăр тĕкĕрĕ витĕр пăхнă май Илэпи пуçĕнчи тутăрне юсакаларĕ. Тутăрне вăл шурă çăм çиппинчен хăй чĕнтĕрлесе çыхнă. Çамкине кĕске каснă çӳç пайăрки хуплать. Тăрăхла пите çапла çавракалатмалли çинчен шкулта хĕрачасем калаçатчĕç.

Сарă кĕрĕкне Илэпи пуçласа тăхăннă. Кăçал амăшĕ ятарласа тир тутарттарчĕ те ун валли кĕрĕк çĕлетрĕ. Пилĕкне пĕрмечесĕр çĕленĕшĕн кĕрĕкне амăшĕ килĕштермерĕ.

— Хальхи çамрăксем ун пек тăхăнмаççĕ,— ăнлантарчĕ Илэпи амăшне. Лешĕ пурпĕрех çĕнĕлле çĕлетнĕ кĕрĕке кăмăлламасть.

Сасартăк Илэпи пăр тĕкĕрĕнче хăйпе юнашар тепĕр сăн курчĕ. «Мĕн мыскари ку?— тĕлĕнчĕ хĕр.— Юмăç яманччĕ. Юмăç яма Çĕнĕ çул каçĕ çитмен-ха. Апла пулсан мĕне пĕлтерет ку? Тĕлĕк-и? Хĕрупраç каçма çинчех çывăрмĕ-ха. Тĕкĕрте юнашар курăнаканни йăл кулчĕ. Хăй çутă сăмсаллă карттус тăхăннă. Хăлхи те шăнмастьши унăн?

— Сывлăх сунатăп, пике!— илтрĕ Илепи.

Пуçне вăшт пăрчĕ хĕр. Унпа юнашар шинеллĕ çамрăк тăра парать.

— Ай!— кăшкăрса ячĕ Илэпи. Иртсе кайма пикенчĕ, каçмана салтак картларĕ.

— Пăрăнăр-ха,— терĕ Илэпи йĕкĕте, куçĕнчен пăхма хăяймасăр.

Лешĕ пăрăнма шутламасть, юпа пек тăрать, йăл-йăл кулкалать.

— Ман васкамалла, пăрăнăр, çул парăр! Килĕшӳллĕ мар капла. Мĕншĕн тытса тăратăр мана?

Сăмахĕсем хаяр, анчах çемçе сассинче çакă палăрать: «Ан ĕнен, йăлишĕн çеç çапла калатăп. Кам эсĕ, ман ума килсе тăнă тĕлĕнтермĕш каччă?»

— Пăрăнмастăп,— тет йĕкĕт йăвашшăн.

— Кам-ха эсир капла?— каччă çине пăхса илме хăюлăх çитерчĕ Илэпи. Пит-куçĕ хăйĕн илĕртӳллĕн çуталчĕ.

— Эпĕ — Çирĕклĕхсем, Варлам Хуронташев. Эсир кам?

— Эпĕ... Эпĕ... Илэпи.

— Питĕ аван. Ятăр хăвăр пекех илемлĕ,— кулкаларĕ Варлам. Вара хĕр ятне вăрăммăн тăсса каларĕ:— Илэ-э-пи-и!

— Ман шутпа, пур ят та илемлĕ,— терĕ Илэпи ним калама аптранă енне.

— Савăнтартăр. Эппин, ман ят та илемлĕ: Вар-лам. Мĕнле пек?

— Мухтанас марччĕ-çке.

— Юрĕ, тек асăнмăпăр ятсене.— Пилĕкĕнчи чĕн пиçиххине юсакаларĕ Варлам.— Пĕлме юрать-и, хĕр çулĕ ăçталла выртать?

— Çирĕклĕхелле.

— Эпĕ те унталла.

— Чим-ха, хăшпĕрисем Çирĕклĕх енчен килчĕç мар-и?

— Çук, çук.

Варлам, хĕре аллинчен çавăтса, каçма тăрăх утрĕ. Илэпи темшĕн хирĕçлемест.

— Мĕнле-ха халиччен курман эпĕ Сарпалăх ялĕнче çакнашкал хĕр пуррине. Хĕр мар, чăн-чăн вутăш,—шӳтлерĕ Варлам.

— Эпĕ хĕр пулни çур çул çеç çитрĕ-ха.

— Чăнах-и? Тĕлĕнмелле. Унччен кам пулнă? Пĕлме юрать-и?

— Хĕрача. Вăтам шкулта вĕреннĕ.

— Анланмалла. Хĕр ретне тăнăранпа çур çул çитнĕ.— Шухăшлăн калать Варлам. Унтан кулса ячĕ те хушса хучĕ.— Пĕлетĕн-и, эппин, шăп та шай пурак çакса тухма вăхăт.

— Пурак?— ăнланаймарĕ Илэпи.— Мĕн тума?

— Пиçнĕ çырла татма.

— Юр айĕнче çырла ӳсмест,— йăл кулчĕ Илэпи.

— Лаша кӳлсе тухатăп.

— Мĕн тума?

— Вăрлама.

— Кама?

— Илэпие.

— Ах, мĕнле калаçать,— паттăрланчĕ Илэпи.— Халĕ ĕлĕкхи мар, хĕр вăрланăшăн айăплаççĕ.

— Чăнах-и? Хăратрăн. Эппин хăв пыр. Çапла манпа çавтăнса,— Варлам хĕр аллине тата хытăрах чăмăртарĕ.— Килĕшетĕн-и?

— Тĕл пулнă хĕрсене пурне те çавăтса киле илсе кĕретĕр-и?

— Эпĕ хан тавраш мар, ун пек йăла çук. Каçару ыйтатăп, тӳрех кăмăла уçса панăшăн. Юратса пăрахрăм темшĕн.

Илэпи шалт тĕлĕнчĕ. Халиччен ăна никам та çакăн пек сăмахсем каламан-ха.

Варлам Илэпи умне тухса тăчĕ.

— Пăх-ха мана куçран.

Илепи итлемест.

— Пăх ĕнтĕ. Куçу мĕн тĕслĕ?

Илэпи хăяймасть.

Яла çитрĕç. Лавккана та Варлам хĕрпе пĕрлех кĕчĕ. Мĕн кирлине кăтартрĕ лавккаçă. Суйлать Илэпи туянмалли илемлĕ теттесене. Сиссе те юлаймарĕ — Варлам укçа кăларнă, тӳлет. Хирĕçлесе тăма вăтанчĕ хĕр.

Шăтарасла сăнать лавккаçă хĕрпе качча, йĕплесе илмесĕр те тӳсеймест хăйсен ял çамрăкне:

— Варлам, ай-яй хитре пике тупнă эсĕ. Суккăрланса ан юл.

— Куç вăйĕсем çителĕклĕ пек-ха, Ваçук тусăм.

— Асту, эпир илес хĕрсене каччă алли тивминччĕ.

— Ас панăшăн тавтапуç.

Халиччен Илэпи сăмаха кивçен илекен марччĕ, ку хутĕнче темшĕн çăвар уçаймарĕ. Пуçран çапнă пек лавккаран тухса сирпĕнчĕ. Варлам та юлмарĕ.

Каччă хĕре ăсатать.

Илэпи аллинче тутăр çыххи. Унта лавккара туяннă шăрçа ярăмĕсем, ука-хăю тăрăхĕсем... Тирпейлĕ, асăрханса тытса пырать çыхха.

— Эх, эсир, хĕрупраççем, сирĕн куçăра ялан тетте илĕртет. Капăрланас шухăш кăна,— тет Варлам.

— Аплах хурлас марччĕ-çке хĕрсене,— ирĕксĕрех Илэпин хăйсем Çĕнĕ çула кĕтсе илме хатĕрленни çинчен каласа пама тиврĕ.— Клубра уяв пулать. Ешĕл чăрăш лартатпăр. Пырăр. Хăна пулăр.

— Пыратăп!— савăнмаллипех савăнчĕ çар каччи.— Тем тусан та юлмастăп.

Калаçу вĕçленчĕ пек туйăнчĕ, иккĕшĕ те пĕр самант чĕнмесĕр утса пычĕç. Кăшт тăхтасан, сăмах Варлам пуçларĕ.

— Мĕншĕн ним те ыйтса пĕлместĕн манран?

— Мĕн ыйтас-ха?— терĕ Илэпи.

— Кам эпĕ, мĕнле каччă? Сана ним те кăсăклантармасть-и вара?

— Хăв каласса кĕтетĕп,— кулса ячĕ Илепи. Сасси хăйĕн шăнкăрав пекех уçă.

— Юрĕ. Паллаштарам. Эпĕ çар шкулĕнче вĕренетĕп. Тата çирĕм уйăхран вĕрентсе кăлараççĕ пире. Командир тăваççĕ, лейтенант званийĕ параççĕ. Халĕ мана канма янă. Ĕнер çеç килтĕм атте патне.

— Мĕншĕн аçу патне çеç?— ыйтрĕ Илэпи.

— Анне çук çав ман. Эпĕ пĕчĕккĕ чухнех çĕре кĕнĕ вăл. Тăлăх ача эпĕ,— хаш! сывласа илчĕ Варлам.—Илэпи, итле-ха, эпĕ сана пĕр сăмах каласшăн.

— Чим,— чарчĕ ăна хĕр.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнет Варлам.

— Калас сăмаха виçĕ çул шухăшлама хушнă.

— Виçĕ çул?— ахăлтатса кулса ячĕ Варлам.— Унччен çамрăк ĕмĕр иртет.

— Эппин, калас сăмах пирки виçĕмçулах шухăшлама тытăнмаллаччĕ,— хивреленет Илэпи.

— Тен, чакарар, хăварар акă виçĕ сехете. Тата манăн сăмаххи те шутсăр ырă.

— Виçĕ кун шухăшла, иçмасса!— çаплах парăнмасть Илэпи.

— Килĕшетĕп.

— Кунĕ çын,— кулкаларĕ хĕр.

Каччă пуçне пĕкрĕ.

Çапла тĕл пулчĕç те уйрăлмарĕç пĕр-пĕринчен Илэпипе Варлам. Хĕвел ансан, каç пулсан, васкаççĕ каçма патне. Икĕ çыранти хăва тĕмĕсем вĕсен юратăвне усал куççенчен упраççĕ.

— Тавтапуç каçма хунă çынна. Унсăрăн эпĕ сана тĕл пулман пулăттăм,— тӳлеккĕн пуплет Варлам.— Пĕр-ик кун пурăнсанах каясшăнччĕ. Халĕ отпуск вĕçлениччен пурăнатăп. Эпĕ тĕнчере чи телейлĕ çын.

Илэпи вăтанать каласма.

Çĕнĕ çул каçĕ çитрĕ. Ялти çамрăксем клубра капăр чăрăш тавра пухăнчĕç. Юрпике чăннипех илĕртӳллĕ. Хускалмассерен тухйин тенкисем, шӳлкемисем чăнкăртатаççĕ. Илем пурне те илĕртет. Илэпие куç хывакансем татах тупăнчĕç. Анчах вĕсем кая юлчĕç ĕнтĕ, Илэпи чун туртнине темиçе кун маларах тупрĕ, ăна чĕре алăкне уçса кĕртрĕ.

Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ хыççăн тепĕр икĕ кунран çак клубрах, çак капăр чăрăш умĕнчех, Илэпипе Варламăн туйĕ пулса иртрĕ.

## 2

Илэпи пурăнакан чăваш ялĕнчен аякра-аякра, Тăван çĕршывăн хĕвеланăç чиккинче, «Куккук пушмакки» ятлă застава пур. Шăп Илэпипе Варлам туйĕ пуçланнă самантра, çак застава начальникĕн хваттерĕнче, уяв сĕтелĕ хушшинче, шампански кĕленчине уçрĕç. Çӳллĕ черккесем кăпăкланса тулчĕç. Чăнк та чанк! тутарчĕç вĕсене

кĕрекери хăна-вĕрле. Мĕн ятпа пухăннă-ха вĕсем паян çакăнта? Тĕнчене çĕнĕ çын килнĕ ятпа. Застава начальникĕн çемйинче ывăл çуралнă. Ăна ят хунă хыççăн çамрăк мăшăр тус-тантăшĕсемпе пĕрле тулли апат-çимĕçлĕ сĕтел хушшине пухăннă.

Ача ячĕ — Олег.

Амăшĕ — Полина Николаевна Топрикина.

Ашшĕ — Савва Корнилович Топрикин.

Мĕн тери савăнăç! Вĕсен ывăл пур — Олег.

Пур енчен те саламлă сасăсем янăраççĕ:

— Амăшне пăхса тухтăр пултăр!

— Ашшĕ пек çар çынни çулĕпе уттăр, Тăван çĕршыв чиккине сыхлатăр!

— Паттăр ÿстĕр!

Кун хыççăн кун иртрĕ. Эрнерен амăшĕ ачана чăпăл тума тытăнчĕ. Кипкине салатрĕ, аллине тытса хăлаçлантарать. Çакăн чух Полина Николаевна курах кайрĕ:

— Савва, кил-ха!— чĕнчĕ вăл упăшкине.— Кур-ха, пирĕн ача турпаллиллĕ.

— Мĕнех вара? Ман хамăн та турпалли пур, хырăм çинче кăвапаран çÿлерех.

— Олегăн та çавăнта.

Турпалли хура пулаканччĕ. Ку вара кĕмĕл тĕслĕ, пĕчĕк çулçă евĕрлĕ. Полина Николаевна кĕркунне сарăхнă хурăн çулçисем хушшинче курнă çакнашкал кĕмĕл çулçă. Ачан турпалли ашшĕнни пек пулнăшăн хĕпĕртерĕ вăл.

Шыва кĕртрĕç, пиелерĕç. Пĕчĕк çын çăварне карса пуçне пăркалать, мĕн кирлине шырать: амăшĕ ăна кăкăр парать.

Ачана ят хунă сăлтавпа пухăннă хăнасем саланманха. Пурте хаваслă. Асамлă кĕвĕпе урасем тăпăртатаççĕ, шăмшак çăмăллăн авкаланать. Ташă, ташă... Пĕри вĕçленет, тепри çĕкленет.

Вальс кĕвви пуçланчĕ. Мăшăрăн-мăшăрăн ташлама тухаççĕ. Кил хуçисем те — Топрикинсем тăчĕç.

«Ытла та хаваслă-çке пурнăç, питĕ телейлĕ эпĕ. Упăшкам та пур ман, ачам та пур. Эпир çамрăк, чипер»,— шухăшлать Полина Николаевна.

Илемлĕ музыкăна çурса сасартăк сирена ÿхĕрсе ячĕ.

— Тревога!

Куç хупса иличчен хваттер пушанса юлчĕ. Кашни салтакăн хăй вырăнне çитмелле, командир приказне пурнăçламалла.

Чикĕ урлă тăшман каçман-ши? Пĕр е ик йĕксĕк чикке пăсни хăрушах мар, вĕсене часах ярса тытĕç. Тен, вĕренмелле панă тревога? Кун пирки застава начальникĕ кăна пĕлет.

3

Телейлĕ кунсем иланах шутлă. Туй хыççăн çамрăк мăшăрсен нумай та пурăнма тивмерĕ. Варламăн каяс кунĕ çитрĕ.

Халлĕхе ăна çар шкулĕнче арăмпа пурăнма ирĕк памаççĕ. Уйрăм хваттер çук ун. Упăшки вĕренсе тухиччен Илэпин килте пурăнма тивет.

— Пирĕншĕн тесен, ку питех те аван,—терĕ Варлама ăсатма килнĕ колхоз председателĕ.

— Пирĕн ĕçре çемçеккейсем тўсеймеççĕ, правур алăллисем кирлĕ. Вĕсенчен ĕç хăраса тăрать. Илэпи шăпах çавăн йышши. Пире вăл малашне те пысăк пулăшу парĕччĕ.

— Тархасшăн, чармастпăр, упăшки патне час-часах кайса килтĕр,— терĕ ферма заведующийĕ.

Ял çамрăкĕсем те ўкĕтлеççĕ Илэпие. Ара, комсомол организацийĕн секретарĕнче ĕçлеме юрăхлă çын тупăннăшăн савăннăччĕ-çке вĕсем.

Илэпи — ырă кăмăллă çын, пуринпе те пĕр чĕлхе тупса калаçма пĕлет, никампа та чĕрре кĕрсе чăркăшмасть.

— Юрĕ, килĕшетĕп. Яла юлатăп,— терĕ Илэпи упăшкине ăсатма пухăннă халăх умĕнче, хăйĕн Варламĕнчен çав тери уйрăлас килмерĕ пулин те.

— Ёнен, шан, Илэпи. Ку вăл кĕске вăхăтлăха çеç. Вĕренсе тухсан, мана службăна яракан вырăна пĕрле каятпăр. Вара тек нихăçан та уйрăлмăпăр. Асра тыт ялан, эпĕ пĕр сана çеç юрататăп, Илэпи,—Варлам арăмне ыталарĕ.

Хапха умне лавсем пырса чарăнчĕç.

— Кайма вăхăт, туссем,— пĕлтерчĕ Варлам,— пуйăсран юлăп тата.

4

Илэпи упăшкине ăсатнăранпа виçĕ уйăх çурă иртрĕ ĕнтĕ.

Май уявĕ умĕн ырă хыпар çитрĕ: çĕршывра малта пыракан «Ялав» колхоза фермăра чи лайăх ĕçлекенсенчен пĕрине экскурсие кайма районтан путевка ярса па-

нă. Сӳтсе явнă хыççăн асăннă колхоза курса çӳресе, опыт пухма Илэпие яма йышăнчĕç. Вăл хирĕçлемерĕ, мĕншĕн тесен «Ялав» колхоз Варлам вĕренекен хула çывăхĕнче.

— Малта пыракансем мĕнле ĕçленине кайса кур, Илэпи. Вара мĕн ыррипе хамăр фермăра усă курăпăр,— калаçăва тăрларĕ юлашкинчен ферма пуçлăхĕ.

Илэпи упăшкине тĕл пулма май пуррине систерсе телеграмма çаптарчĕ.

Тепĕр кунне Варламран телеграмма çаврăнса çитрĕ: «Кĕтсе илме тухатăп. Санăн Варламу».

Районта Илэпи «Ялав» колхоза каякан тата виçĕ çынпа паллашрĕ. Вăл çавсемпе пĕрле пуйăспа ларса кайрĕ. Станцăра хăнасене машина кĕтет.

«Ялав» колхоза экскурсие килнĕ йыш самай пысăк, сахалтан та аллă-утмăл çын. Хĕрарăмсем ытларах.

Ертсе çӳрерĕç вара вĕсене хуçисем. Колхоз хуçалăхне кăтартрĕç. Тĕрĕс, курмалли нумай. Ĕне витисем чаплă. Апат, шыв парассине йăлтах автомат тăвать. Сăвасса та машинăпа сăваççĕ. Пуринчен ытла Илэпие акă мĕн тĕлĕнтерчĕ: ĕнесем ула: хураллă-шурăллă. Кун пек ĕнесем сĕт ытларах пани çинчен каласа пачĕç ĕçлекенсем. Мĕн илтнине-курнине Илэпи йăлтах хут çине çырса пычĕ.

Виçĕ куна тăсăлчĕ экскурси. Хăнасем каялла кайрĕç. Илэпин çулĕ малалла пулчĕ.

Упăшки ăна кĕтсе илчĕ. Май уявне çамрăк мăшăрсем пĕрле çар шкулĕнче ирттерчĕç. Варлам хăйĕн юратнă арăмне командирсемпе, юлташĕсемпе паллаштарчĕ.

Кайран, арăмне ăсатсан, курсантсем текех тăрăхларĕç Варламран.

— Арăму сан ытла чипер. Кĕтес çук вăл сана.

— Хитре арăмсем упăшкисене улталаççĕ.

Варлам тӳрре тухать:

— Ман Илэпи ун йышши мар.

Илэпи упăшки патĕнчен пĕччен мар, иккĕн таврăнчĕ темелле. Анчах ун çинчен тухтăрпа калаçсан тин упăшкине пĕлтерчĕ.

Упăшкин ăшă çырăвĕсем Илэпие çунатлантарса пычĕç. Утса мар, вĕçсе çӳрерĕ вăл. Фермăра тата ытларах вăй хурса ĕçлеме тытăнчĕ. Ĕçре вăхăт иртни сисĕнмест. Акă çу кунĕсем хыççăн хура кĕркунне çитрĕ. Илэпин ĕнтĕ ирĕксĕрех канма каймалла, пĕчĕккине кĕтсе илмелле унăн.

Ялти çамрăксем Çĕнĕ çул çинчен калаçма тытăнчĕç. Çĕнĕ çул каçĕ — асамлă юмах, капăр чăрăш умĕнче, вăййă картинче, хĕр хăй кĕтнĕ паттăра, каччă — пикене тупать имĕш. Пулĕ те.

Илэпи ача калпакĕ çĕлет. Куç ывăнса килнĕрен урамалла пăхрĕ. Пӳрт çумĕнчи çĕнĕ юр сукмакĕпе хĕрупраç иртет. Ихĕлтетсе кулаççĕ хăйсем. Илэпин чунĕ кăшт хурланчĕ.

— Мĕн тунсăха ертĕн? Ташла, çыру паратăп,— терĕ тултан кĕрекен амăшĕ алăка уçнă-уçманах.

— Тавтапуç, аннеçĕм. Манăн ташласси çеç юлчĕ ĕнтĕ.

Çыру Варламран килнĕ. Хыпаланса уçрĕ вăл конвертне.

«Юратнă Илэпи! Сывлăх сунатăп сана! Çĕнĕ хыпар пĕлтерме васкатăп: палăртнинчен чылай малтан вĕрентсе кăларчĕç. Халь ĕнтĕ эсĕ чăн-чăн командир арăмĕ. Тивĕçлипех мухтанма пултаратăн. Сана хам илме пыраймастăп, тархасшăн, ан кӳрен. Пурне те васкасах служба вырăнне ăсатаççĕ. Çак çырăва илсенех çула тух. Тунсăхланипе вилетĕп. Çав тери, çав тери курас килет сана. Чуптăватăп...»

Упăшки Илэпие адрес, кирлĕ хутсем ярса панă.

— Вăл чикĕ хĕррине кайнă,— пĕлтерчĕ Илэпи. Çырăва тепĕр хут вуласа тухрĕ. Вара сиксе тăчĕ те çӳпçине уçрĕ. Кунта ун хĕр ĕмĕрĕнче пухнă тупри. Юнашарах хупăлчине хыçалалла тайăнтарса çатан арча лартрĕ. Вăл пушă. Çакăнта куçарма тытăнчĕ япалисене.

Амăшĕ тĕлĕнсе пăхса тăрать.

— Анне, пулăшсам,— тилмĕрет Илэпи.

— Пастай-ха,— чарасшăн пулчĕ амăшĕ хĕрне.— Капла асар-писер ан çавăрттар.

— Ыранах тухса каятăп. Япаласене паянах пуçтарса хурас.

— Япалусем тармĕç-ха. Эсĕ хăвăн пирки шухăшла. Вĕçне çитрĕн-çке. Çул çинчех çуратăн.

— Уйăх ытла та çӳретĕп-ха. Ĕлкĕретĕп,— ĕнентерессшĕн хĕрĕ амăшне.

— Инкек куçа курăнса килмест теççĕ. Çулĕ вăрăм, паян тухса ыран çитес çук.

Хăратрĕç Илэпие амăш сăмахĕсем. Ним те тăваймăн. Килĕшрĕ. Лăплансан, çапла телеграмма пачĕ упăшкине: «Тăхтатăп. Кайран пĕчĕккипе иккĕн пырăпăр. Телей сунатăп. Сана юратакан Илэпи».

## 5

Пуйăс чарăнчĕ. Станци тепĕр енче—ют çĕршыв çĕрĕ. Ытти станцăри пек, çынсем васкани сисĕнмест. Вакунра ларса пыракансем те сахалланса юлнă. Пуйăс чарăнсан, васкамасăр пурте ура çине тăчĕç, пуçтарăнкаласа алăк патнелле утрĕç.

Вĕсем хушшинче Варлам Хуронташев та пур. Аллине чăматан тытнăскер, çынсем хыççăн вакунран тухрĕ. Хĕллехи уçă сывлăш сăмса шăтăкне кăтăклантарчĕ те ачху тутарттарчĕ. Чăматанне çĕре лартсах, тутăрпа тути-çăварне шăлкаларĕ.

Пуйăсран тухнă çынсем самант саланса пĕтрĕç. Варлам пĕчченех перрон тăрăх утрĕ. Вокзала кĕрсе «Куккук пушмакки» заставăна мĕнле каймаллине ыйтса пĕлесшĕн пулчĕ. Ун çулне чикĕ хуралçисен тумне тăхăннă капмар çын пӳлчĕ. Çăра куç харшисем айĕнчи хура пысăк куççем витĕр курасла шăтарса пăхаççĕ. Пограничниксем кăна çапла пăхма пултараççĕ-тĕр. Шинель çухависем çинче кубиксем.

Варлам аллине вăшт çĕклерĕ те тăп чарăнса честь пачĕ. Лешĕ те саламларĕ.

— Чимĕр-ха, арпаштармарăм пек туйăнать, эсир Хуронташев юлташ? Çапла-и?

— Шăпах çавă.

— Эпĕ «Куккук пушмакки» заставăн начальникĕ Топрикин. Сире илме тесе ятарласа килтĕм. Машина кĕтет.

Вара вĕсем çар çыннилле мар, тахçанах пĕлекен туссем пек, пĕр-пĕрне тăванла тытса, хаваслăн кулкаласа ыталашрĕç.

— Кайрăмăр,— чĕнчĕ начальник.

Кӳми çине симĕс брезент витнĕ машина вокзал айккинче тăрать.

— Эпĕ шоферсăр çӳретĕп,— пĕлтерчĕ Топрикин, машина алăкне уçса.— Эсир ан пăшăрханăр, ларăр кĕрсе.

Варлам ăмсанса пычĕ. Ăна акă ку тарана çитсе те алла руль тытма тӳр килмен. «Вĕренесчĕ,— шухăшларĕ вăл.— Эпĕ те Илэпие машинпа хам тухса илĕттĕм».

Станцирен тухса чугун çул урлă каçрĕç. Кĕçех машина вăрман çумĕнчи çулпа юр тусанне тĕрлеттерсе вĕçтерчĕ.

Çул çинче иккĕш те юмахламарĕç. Варлам кантăкран пăхкаласа пычĕ. Халĕ шăп хĕл варри. Ку таврара юр куписем çукпа пĕрех.

— Çанталăкĕ çапларах кунта, пире хирĕçле,— терĕ Топрикин.— Юр çăвать те ирĕлтерет. Çул пăрлакланать. Юр ӳксен, эпир савăнатпăр, ун çийĕн çерçи пускаланă йĕр те курăнать.

Хуронташева начальник килĕшрĕ. «Ырă çын пулас»,—шухăшларĕ вăл. Қайран, кабинетра калаçнă хыççăн та, шухăшĕ улшăнмарĕ ун.

Начальникăн пӳлĕмĕ пысăках мар, çапах та питĕ хăтлă. Пӳрт-çурт ăшчикки хуçине пăхать теççĕ. Тĕрĕсех-тĕр. Сĕтелне симĕс сукнапа витнĕ. Қăранташ-ручка чикнĕ савăт ăна илем кӳрет.

Қабинета кĕрсенех застава начальникĕ Варлама сĕтел умĕнчи пукан çине ларма сĕнчĕ.

— Хĕрӳ самантра çитрĕр, лейтенант юлташ,— пуçларĕ сăмахне Савва Қорнилович.— Кĕçех ĕççи пуçланать пирĕн.

Варлам начальнике тӳрех ăнланаймарĕ. Çакна Савва Қорнилович туйрĕ, çавăнпа тĕплĕнрех ăнлантарса пама тытăнчĕ:

— Çуркунне пурте ыйхăран вăранаççĕ, чĕнмен «хăнасем» те ытларах килме пултараççĕ. Халĕ те вĕсем пире канăç памаççĕ, унта та кунта чикке пăсма хăтланаççĕ. Чикĕре лару-тăру питех те кăткăс.

Застава начальникĕ ĕçлеме килнĕ лейтенанта çывăх вăхăтра тумалли ĕçсемпе паллаштарчĕ.

— Мĕн калассн пур, ĕçĕн татти-сыппи çук. Кӳлĕнсен хăвăрах курăр акă.

Ĕçлĕ калаçусем пулман пекех, Топрикинăн хура пысăк куçĕсем йăл-йăл çуталса хĕсĕнсе илчĕç.

— Эсир арăмăра кĕтетĕр пулас?— ыйтрĕ вăл лăпкăн.

— Паян-ыранах килмелле вăл,— терĕ Варлам.

— Вăл тăхтасшăн.

— Қам?

—Сирĕн арăм — Илэпи.

— Илэпи?— ăнланмасăр иккĕленсе пăхрĕ Варлам начальник çине.— Мĕнле апла? Эсир ăçтан пĕлетĕр?

— Арăму янă телеграмма сирĕнтен малтан çитсе выртрĕ.

Топрикин, сĕтелне уçса, Илэпи телеграммине илчĕ те Варлама тыттарчĕ.

— Ахалех хăрать. Тен, ăнăçлах çитетчĕ,— ассăн сывласа илчĕ Варлам телеграммăна вуласа тухсан. Вăл пĕр шуралса, пĕр хĕрелсе кайрĕ.

Савва Қорнилович куç илмесĕр сăнать хăй умĕнче

тăракан çамрăк лейтенанта. Хěрхенет ăна, чунсăр марçке. Мěн каласси пур, çемьеллě пурнăç ырах.

— Ан кулянăр, лейтенант юлташ. Шутлă кунсем хăвăрт иртěç, арăмна часах пěчěккипе кěтсе илěр. Хваттер пур.

Паçăр, заставăна çитсен, начальник Варлама тӳрех пěр лайăх çурта илсе кěчě. «Çакăнта пурăнатăр»,— терě вăл.

— Тавтапуç сире, начальник юлташ, мана çавнашкал хваттере вырнаçтарнăшăн.

Иккěшě те хускалкаласа йăл-йăл кулкаларěç.

— Эпир акă пěчěккине кунтах тупрăмăр,— текелерě Топрикин, хура уссине якаткаласа.— Ывăл çуралчě пирěн. Эсир кама кěтетěр?

— Ывăлпа хěр—пěр харăс,—иккěшě те кулкаларěç.

Начальник Варлам Хуронташева заставăна килнě кун хăйěнчен самантлăха та уйăрмарě. Апата хăй патне илсе кайрě. Арăмěпе паллаштарчě. Полина Николаевна врач иккен, çывăхри ял больницинче ěçлет. Питě илемлě, кăмăллă, сăпайлă хěрарăм. Пěчěк ывăлě те чуна илěртмеллескер.

Хапха умне икě лаша пырса тăратрěç.

— Халě чикě тăрăх кайăпăр,— пěлтерчě Савва Корнилович.

Утланчěç. Лашисем ытла шухă, тăпăртатса кăна тăраççě. Ура кěллипе чараран кăлт тěкěнсенех ыткăнчěç малалла.

Заставăран аякрах та мар — çăва. Чарăнчěç. Варлам тӳрех асăрхарě: çěнě вилтăприсем пур. Чечек кăшăлěсем те тěсне çухатман. Пěрин палăкě çинче çырнине вуларě вăл: «Лăпкă çывăр, Иванов командир. Хамăрăн Совет çěршыв чиккине никама та пăсма ирěк памăпăр...» Юнашарти палăк хăми çинче темиçе ят.

Варлам начальник куçěнчен ыйтуллăн пăхса илчě.

— Вěсене аса илсен халě те куççуль тухать ман.— Топрикин кěсйинчен тутăр кăларса шывланнă куçěсене шăлкаларě.— Хура кěркуннехи пěр тěттěм каç тапăнчě бандит кěтěвě. Тиврě те вара çапăçма.

— Ăçтан килнěскерсем?

— Ниměç разведки йěркеленě банда пулнă. Хаклă юлташсене çухатрăмăр. Тăприсем çăмăл пулччăр.

Пěр хушă шăп тăчěç начальникпа лейтенант. Мěн çинчен шухăшлаççě-ха?

Топрикин куçě умне шăтăкрисем чěррěн курăнчěç.

Пурте çап-çамрăк, ытарма çук лайăх йĕкĕтсем! Пурăнмалла та пурăнмаллаччĕ.

Варламăн пуçĕнче шухăшсем хиврелеиччĕç. Тĕрĕс, Тăван çĕршыв чиккине куç пек упрасси унăн тивĕçĕ. Уншăн вăл чунне пама хатĕр. Чикĕ урлă каçма пикенекенсем ÿлĕм те пулĕç. Анчах темле тытăçуран та унăн чĕррĕн тухмалла, çĕнтерсе. Пулас ачишĕн, Илэпи юратăвĕшĕн çутă тĕнчере пурăнмалла.

Топрикин чĕлпĕре кăрт-карт турткаларĕ.

— Амăрткайăкăм, атя вĕçтерер.

Амăрткайăкĕ çулне пĕлет. Хăнăхнă пулас чикĕ хуралçисен сукмакĕпе çÿреме.

Хыçалта — Чĕкеç. Шит юлмасть тусĕнчен.

Хуралтан хурал патне пычĕç вĕсем. Чикĕ тăршшĕ вăрăм, çухрăмăн-çухрăмăн тăсăлать.

Каçалапа таврăнчĕç, хăшпĕр кĕтессене çитеймерĕç.

— Ырана хăварăпăр,— терĕ начальник.

Хуронташевăн чикĕри малтанхи кунĕ заставăри Ленин пулĕмĕнче пограничниксемпе паллашнипе вĕçленчĕ.

## 6

Чикĕ хĕрринчи «Куккук пушмакки» заставăн пурнăçне тĕппипех путрĕ Варлам. Чикĕ хуралçисен пурнăçĕ йывăр, ăна хăнăхма çăмăл мар. Çаплах кĕтмен кăлтăксем сике-сике тухаççĕ. Чухла вара тĕрĕс-тĕкел ишсе тухма. Совет Çарĕн командирĕ хăйĕншĕн кăна тăрăшмасть, вăл заставăри пур салтаксемшĕн те — çирĕп хÿме.

Хуронташевăн тата канăç паман чунилли пур. Вăл кашни çутă куна юратнă арăмĕнчен çыру илнипе вĕçлесшĕн. Çыру вичĕ эрне хушши çук ĕнтĕ. Ăшчикне çунтарать çакă. Темле те шухăшлаттарать. «Эх, эсĕ те çав. Виçĕ эрне нумай-и вара? Усăсăр кулянни никама та усă памасть. Илэпи ача çуратрĕ-тĕр. Хутпа кăранташ тытиччен юсанмала-çке ун».

Пурнăç урапи хăйĕн çулĕпе чупать. Вăхăт та çитрĕ: ашшĕ шутне кĕнĕ ятпа акă Варлама телеграмма ярса саламларĕç. Çутă тĕнче татах тепĕр пикепе пуянланчĕ. Унччен килĕшсе татăлнă пекех амăшĕ ăна Клара ят хучĕ.

Пĕлчĕ те çакна Варлам шутсăр савăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл çемье пĕр тĕле пуçтарăнасса кĕтет. Хăçан килĕç? Пĕр эрне, уйăх, татах, татах уйăх иртрĕ. Килмерĕç. Çы-

ру вара йĕркеллĕ çитсе тăрать. Пурне те пĕлет — хĕрачийĕ сывах. Ӳсет майĕпен. Пепке кулма пуçланă. «Аку-у, аку-у»,— тесе калаçать. «Клара, ăçта эсĕ?»— тесен, пуçне пăркаласах амăшне шырать. Алă чăмăркки шутсăр çирĕп вара. Амăш пӳрнине çатăрласа тытать те пуçне çĕклет. Месерле хурсан, хырăм çине çаврăнса выртать. Хĕр темерĕн, ытла сатур, ларасшăн тапаçланать.

«Варлам, Клара лăп та шай эсĕ. Вăл сан сăнлă»,— çырчĕ Илэпи пĕррехинче.

Çакăн хыççăн Варлам тĕлĕкре хăйĕн хĕрачине курчĕ. Пуçĕнче чечеклĕ калпак, пахчара çӳрет, анчах хăй вĕри куççуль юхтарса йĕрет. Аллине тăсса ашшĕне шырать пек. Варлам чупса пычĕ, карта хушăкĕнчен чĕнет. Ачи çумранах иртрĕ, палламаннипе ун патне пымарĕ, айккинелле пăрăнчĕ. Тӳсеймен енне хурланнипе макăрса ячĕ: «Эпĕ вăл санăн аçу, хĕрĕм. Кил кунта!..»— тесе кăшкăрса ячĕ пĕтĕм вăйран. Хăй сассине илтсе, Варлам ыйхăран вăранса кайрĕ. Чăнахах та питçăмарти тăрăх куççуль юхать ун.

Тахçанах çуркунне иртсе çĕр типрĕ. Тĕнче чечеклĕ ешĕл тумпа савăнтарать. Хĕвелĕ те хĕртет çырла-панулмине пиçтерсе.

«Мĕн чухлĕ кĕтмелле тата?»— мăкăртатрĕ Варлам вырăн çинчен тăрса. Унăн хăйĕн пĕчĕк хĕрне çав тери, çав тери курас килет. Пĕрре пăхса илессишĕн пурнăçне парĕччĕ. Тӳсеймесĕр, çак кун вăл Илэпи патне телеграмма çаптарчĕ. Ним тăхтаса тăмасăр килме хушрĕ. «Сирĕнсĕр тек пурăнма хал çитерейместĕп»,—тесех те çырчĕ. «Ăнланма тивĕç»,—шухăшларĕ вăл. Мĕн тейĕн? Упăшкин шухăш-кăмăлĕ арăмĕ патне çиçĕмле хăвăртлăхпа çитнĕ-тĕр. Сехет те иртмерĕ, Варлама хут татки тыттарчĕç те. Илэпи янă телеграмма пулчĕ ку. «Пыма тухрăмăр. Кĕтсе ил. Сана чунтан юратакан хĕрачупа арăму»,— вуларĕ вăл. Иккĕшĕ те почтăна пĕр вăхăтра кĕнĕ ĕнтĕ.

Хуронташев пуçне икĕ аллипе ярса илчĕ те кăшкăрса ячĕ: «Килеççĕ! Килеççĕ! Урра!» Хăйне сасартăк çунат хушăннăн туйрĕ. Савăннипе ниçта кайса кĕме пĕлмест, вĕçет. Çак самантра чун асапĕ те пуçланчĕ. Хăçан çитеççĕ? Çул çинче сахалтан та тăват-пилĕк талăк иртет.

Ахалех тимĕр шапана ятлаççĕ халăхра. Вăхăт та çавах, кĕтнĕ чух нимĕн чухлĕ те шумасть. Хĕвелĕ те тӳпе маччине пăта çапса кантрапах кăкарăнчĕ. Тăрать вăл пĕр вырăнта хĕм сапса.

Юрĕччĕ-ха, пурпĕрех кун иртетчĕ, каç пулатчĕ. Кĕтсе илетчех Варлам арăмĕпе ачине. Анчах... Мĕншĕн пур-ши çав тĕнчере «анчах» тени? Анчах тĕнче асарписер çаврăнчĕ. Кун пек тапхăрта çын çĕр çинче хăй пуррине те манать.

Тул çутипе, ыйхă пыл пек тутлă самантра, пограничниксене травога çĕклерĕ. Чикĕ урлă çын каçнă!

Хуронташев лейтенант ушкăн ертсе сылтăм еннелле чупрĕ. Шыраççĕ чикке пăсакан тăшмана. Нумаях та каймарĕç, курчĕç те ăна. Йывăç айĕнче ури тымар янăн тăрать. Мĕн амакĕ? Пытанма васкамасть. Ыттисем пек тĕмсем хыçне йăпшăнса совет пограничникĕсене пистолетпа та пемест.

— Руки вверх!— кăшкăрчĕ лейтенант ют çынна. Лешĕ икĕ аллине çĕклерĕ те пограничниксем патнелле утма тытăнчĕ.

— Хăй ирĕкĕпе тыткăна парăнать!— шавлаççĕ пограничниксем.

— Усал ĕçпе килменнине ĕнентересшĕн.

— Кам ĕненет ăна?

— Çывхарать те акă, пурсăмăра та вут хыптарать.

— Юлташсем, ан шавлăр!— чарчĕ вĕсене Хуронташев.

Чикĕ урлă каçнă хĕçпăшалсăр çынна заставăна илсе кайрĕç. Шел, начальникĕ çук. Савва Корниловича шăпах Мускава чĕннĕ. Ун вырăнне чикĕ урлă каçнă этемпе начальникăн заместителĕ калаçмалла.

Ыйтса тĕпчеме тытăнчĕç.

Чикĕ урлă каçнă çын — нимĕç. Коммунист имĕш. Вăл васкавлă хыпарпа килнĕ пулать: «Июнĕн 20-мĕшĕнче Гитлер Совет Союзне вăрçăпа тапăнать. Çарсене чикĕ çывăхне шутарнă. Хăвăртрах ун çинчен аслисене пĕлтерĕр...»

Варлам çанçурăмĕ çӳçенсе илчĕ.

— Суять,— терĕ начальник заместителĕ итлесе тăраканcене,— нимĕççемпе тин çеç пĕр-пĕрне тапăнас марри çинчен договор турăмăр.

— Çирĕммĕш ыранах. Тăхтар, курăпăр,— сĕнчĕ Хуронташев. Пурте унпа килĕшрĕç.

Çирĕммĕш çитрĕ. Вăрçă тухмарĕ. Вара чикĕ урлă каçнă çынна шалалла ăсатрĕç.

Çак каç заставăна Савва Корнилович Топрикин тав-

рӑнчӗ. Вӑл хӑйпе пӗрле хӑнана хунямӑшне илсе килнӗ.

Ҫирӗм пӗрремӗшӗнче те самана лӑпках пулчӗ. Начальник заместителӗ хӑйӗн тӗрӗслӗхне аса илтернӗн салтаксем хушшинче мӑнаҫлӑн уткаласа ҫӳрет.

— Ну, вӑрҫӑ тухрӗ-и?—ӑна та кӑна чавсипе тӗккелет, ахӑлтатать.

Ҫирӗм иккӗмӗшӗнче вара, ирхине, ахӑр самана пуҫланчӗ. Чи малтан сывлӑшра тискер кӗрлев илтӗнсе кайрӗ. Унччен те пулмарӗ, тӳпере хура хӗреслӗ самолетсем курӑнчӗҫ. Вӗсен ҫунаттисем айӗнчен хура бомбӑсем тӑкӑнаҫҫӗ. Вӗсем кӗрӗс! кӗрӗслеттерсе тирӗнеҫҫӗ те ҫӗре, тӑпра капан пек ҫӗкленсе айккинелле сирпӗнет.

Чикӗ тӑрӑхӗнчи халӑх ӑнланчӗ: вӑрҫӑ тухрӗ. Фашист пирӗн ҫине вут-хӗм ывӑтать.

«Куккук пушмакки» заставӑри пограничниксем пурте хурала тӑчӗҫ.

— Пӗр тӑшмана чикӗ урлӑ ура ярса пустармӑпӑр!— тупа турӗҫ вӗсем.

Чикке ҫирӗп хуралламалла. Тата тепӗр питӗ кирлӗ ӗҫ сиксе тухрӗ: командирсен ҫемйисене пӗр тӑхтамасӑр эвакуацилемелле. Савва Корнилович хӑй ку ӗҫе хутшӑнаймасть. Хӗрарӑмсемпе ачасене тыла ӑсатас ӗҫе вӑл хӑйӗн заместительне хушрӗ.

Топрикин арӑмӗ, Полина Николаевна, ачине тин ҫеҫ хӑнана килнӗ ватӑ амӑшӗпе Мускава ӑсатать.

— Анне, ан ятла ӗнтӗ, хӑнара пурӑнаймарӑн та.

— Ан пӑшӑрхан, ҫак пӑтӑрмах иртсе кайсан, Олегпа каллех килетпӗр,— терӗ амӑшӗ.— Ывӑлушӑн шухӑш вӗҫтерсе, кулянса ытлашши ан асаплан. Эпир ача-пӑча ҫитӗнтермен ҫынсем мар. Кукашшӗ мӑнукӗшӗн каҫсах каять.

— Сире апат-ҫимӗҫ те параймарӑм...

Тек ним те калаҫаймарӗҫ. Полина Николаевна вакунран тухнӑ чух пуйӑс ӗнтӗ самаях хӑвӑрт каятчӗ. Ун сикме тиврӗ. Тухса кайрӗ-ши пуйӑс станцӑран, пӑхса тӑма пулмарӗ, вӑл хӑйне илме янӑ ҫынна тӗл пулчӗ. Больницӑна аманнӑ пограничниксене, ял ҫыннисене илсе пынӑ имӗш. Вӗсене васкавлӑ пулӑшу кирлӗ.

Полина Николаевнӑна лартнӑ машина больницӑна тем вӑхӑтра ҫитрӗ. Чупса кӗчӗ тухтӑр хӑйӗн пӳлӗмне. Кунта темиҫе ҫын ӑна кӗтекенсем. Вӗсен суранӗсенчен юн сӑрхӑнать.

— Шприцсене вӗретме лартӑр,— хушрӗ тухтӑр сестрана, аманнисене сиплеме пуҫласа.

Застава начальнике приказ панă хыççăн Варлам Хуронташев лейтенант отрячĕ икĕ тирек хушшинчи вăрăм тăрăха вырнаçрĕ.

Умра, чикĕ леш енче, ют çĕршыв уй-хирĕ. Аякрах та мар — тарăн вар.

— Килĕшмест мана çав тарăн вар,— тет Варлам Хуронташев.

Унччен те пулмарĕ, çав тарăн вартан кĕтӳ хăпарнă евĕр тем йăшăлтатни, тусан мăкăрланни курăнчĕ.

— Мĕн япала ку?— тĕлĕнсе ыйтрĕ службăна иртнĕ çул килнĕ хура сăн-питлĕ çамрăк, çырма пуçне чун кĕнине асăрханăскер.

— Мотоциклистсен ушкăнĕ!— çийĕнчех тавçăрса илчĕ Хуронташев.— Çывхармасăр пеме ан тытăнăр! Ман командăна кĕтĕр!

Нумай та юлманччĕ ĕнтĕ мотоциклистсем чикĕ хĕррине çитесси. Варлам Хуронташев команда парас тесе аллине çĕкленĕччĕ — фашистсем тăпах чарăнчĕç. Тем пакăлтатаççĕ хăйсен чĕлхипе. Пĕри мотоциклечĕпе кăрлаттарса маларах тухрĕ те вырăсла кăшкăрчĕ. Вăл совет пограничникĕсене парăнма хушать. Вĕсем çинелле пеме юрамасть имĕш.

— Ку пулаймĕ! Йăнăшатăр!— терĕ вĕсене хирĕç Хуронташев шăппăн.

Каллех фашист сасси янăрарĕ: «Усăсăр ан перĕр. Пурпĕрех эпир çĕнтеретпĕр. Халех парăнăр!»

— Пире ухмах вырăнне хураççĕ вĕсем, командир юлташ,— тет Хуронташевпа юнашар пулемет умĕнче выртакан салтак.— Куçĕнче ун курайманлăх хĕмленет.

Тăшман ушкăнĕ çывхарать. Вĕсем çитесси вăтăр-хĕрĕх чалăш юлсан, Хуронташев команда пачĕ. Пулемет самант кĕвве кĕчĕ. Ывăтнă гранатăсем шартлатса çурăлаççĕ.

Мотоциклистсен речĕ арпашрĕ. Нумайăшĕн мотоциклĕсем месерле те хăяккăн йăванчĕç, çыннисем те мĕн тупмаллине тупрĕç ĕнтĕ, унсăрăн тĕшĕрĕлсе анман пулĕччĕç. Анчах кунталла вĕçекен пульăсем те йышлă, вĕсем совет пограничникĕсен карттусĕсене чăвăш! чăвăш! тивертсе хыçалалла ӳкереççĕ.

Мĕн вăхăт пычĕ ку çапăçу? Нумай-и, сахал-и?

Хамăрăн Тăван çĕршыв чикки тăшманран тасалнине асăрхарĕ. Варлам Хуронташев тав тăвасшăнччĕ паттăр

пограничниксене. Анчах çак вăхăтра ун куçĕ хуралса килчĕ, урисем шĕлтĕрех кайрĕç. Вăй çук. Вăл ӳкрĕ. Тăн çухалман пек-ха. Хăлхисем çеç кĕрлевпе питĕрĕнсе ларчĕç. Çапах та таврари шăв-шавра Варлам ытла та уçăмлă ача сассине илтрĕ: «Атте! Атте, ăçта эсĕ?» «Ку Клара сасси. Мана хĕрĕм шырать»,— шухăшларĕ Хуронташев. Çĕкленесшĕн пулчĕ. Çанçурăмĕ çĕр çумне çилĕм пек çыпăçнă, хускалаймарĕ те. Пĕтĕм вăйне пухса татах тăма пикенчĕ, пултараймарĕ. Куçĕсем те уçăлмарĕç. Тĕпсĕр тĕнчене ӳкрĕ. Тем вăхăтра тăн пырса кĕчĕ. Каллех ача сассине илтесшĕн вăл. Тăнлать. «Атте! Атте!» «Эпĕ аташатăп,— шухăшларĕ.— Клара ытла пĕчĕккĕ, вăл каласма та вĕренеймен».

Юлашки самантсенче Варлама арăмĕ пачах асне килменччĕ. Калăн, Илэпи çĕр çинче пурăнмасть те, унпа нихăçан та тĕл пулман та тейĕн. Çемье пирки шухăшлăн-и? Ара, куç умĕнчех вăрçăн хăрушла çулăмĕ краççын сапнăн хап! хыпса илчĕ. Ăна никамăн та мар, пограничниксен вăхăтра таптаса сӳнтермелле. Пĕр çак тĕллевпе кăна сывларĕç. Çавăнпа та пуçра урăх шухăш валли чĕптĕм вырăн юлман. Тăван çĕршыв чиккине тĕрĕс-тĕкел упрассишĕн чунне, вăй-халне пачĕ вăл. Халĕ, çĕрте юн юхтара выртнă чух, Варлам сасартăк хăйне Илэпипе юнашар туйрĕ. «Чим,— чарчĕ вăл хăйне, тем ытла та кирлине аса илме хăтланса. Юратнă арăмĕ ун патне пыма тухни çинчен пĕлтернĕччĕ-çке.— Мĕнле маннă-ха эпĕ çакна? Юрамасть кунта килме. «Тăхтăр. Килтен ан тухăр» тесе телеграмма памалла хăвăртрах».

Çĕкленме пикенчĕ Варлам, çук, тăраймарĕ. Пырĕ хăрăлтатать. Ӳслĕк пуçланчĕ, сывлăш питĕрĕнет. Çăвар вĕри шĕвекпе тулчĕ...

## 9

...Пуйăс ниме уямасăр малалла ыткăнать.

Илэпи ачипе упăшки патне каять. Кăмăлĕ çĕкленӳллĕ ун. Шав пĕчĕк хĕрĕпе чĕвĕлтетет. Юмах та каласа парать ăна, юррине те юрлать, çут тĕнчепе те паллаштарасшăн. Час-часах вакун кантăкĕ умне илсе пырать те калать:

— Кур, хĕрĕм. Тĕнче мĕн пек аслă!— тет. Пуринчен ытла хăй тĕмсĕлсе пăхать. Çывăхра телефон юписем вĕлт-вĕлт иртсе юлаççĕ. Тавралăхĕ куç ытамне те шăнăçаймасть. Вăрман тăрăхĕсем, юханшывсем, кӳлĕсем,

тырпуллă уй-хирсем, ешĕл йывăçсемпе ялсем чуна илĕртеççĕ-çке.

— Ав-иç лере, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрте, аçу пурăнать. Вăл сана питĕ-питĕ юрататъ. Эсĕ юнтармастăн пулсан, часах çитетпĕр,— пуплет Илэпи ачипе.

Клара ывăннă, макăрашать.

— Ыйхă пусрĕ сана, хĕрĕм.

Амăшĕ пĕчĕк Кларăна арки çине илет те тытăнать юрла-юрла çупăрлама:

Ачине, нянине,
Аллине, тяппине,
Тетте илер вылямa,
Пĕремĕк илер чăмлама.
Ня-ня,
Пап-па...

Куçне хупать пепке. Вăл ĕнтĕ тутлă ыйхăра. Тĕлĕкĕнче чĕчĕ ĕмет-тĕр, тутипе чăпăртаттарать. Амăшĕн сиплĕ сĕчĕ кирек хăçан та канлĕх парать.

Кунпа çĕр ылмашать. Вĕсен хăйсен шутлă вăхăт. Пуйăсĕ те, ав, пысăк хулана çитрĕ кашласа. Вăрăм çулне чупса тухрĕ ĕнтĕ вăл.

Илэпи пĕр аллине ача тытрĕ, теприне — çатан арчине. Тухрĕ вакунтан. Малалла утать. Тепĕр çулĕ урăх станцинчен пуçланать. Паллах, ачаллă хĕрарăма ун-кун йĕшкекен халăх хушшинче ытла йывăр. Мĕнех, чăрмавăн вĕçĕ пур. Канма та ĕлкĕрчĕ тепĕр вокзалта.

Илэпи тепĕр пуйăс çине кĕрсе ларчĕ. Вăл килтен тухнăранпа икĕ талăк ĕнтĕ. Тăван ялтан ытла аякра пек туйăнчĕ ăна. Анчах пулас тĕлпулу илĕртĕвĕ ытлашши кулянма памарĕ ăна.

Пуйăс пысăках мар станцие пырса чарăнчĕ. Хĕвел самаях çӳле хăпарнă. Кун пек станцăсенче пуйăс виçĕ минутран ытла тытăнса тăракан марччĕ. Халĕ вара тапранма шухăшламасть те. Анакансем паçăрах тухрĕç, кĕрекенсем курăнмаççĕ.

Уçă кантăк витĕр вакуна куçа йӳçĕтекен тĕтĕм евĕр усал хыпар кĕрсе сарăлчĕ: «Вăрçă тухнă! Нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕршыв çине вăрттăн, хурахла тапăннă».

«Вăрçă! Вăрçă!»— пăлханчĕç вакунрисем. Тур çырлах, çак сăмаха илтсенех, çынсен сăнĕсем улшăнса тĕксĕмленчĕç. Пĕр ватă хĕрарăм ӳлесе йĕме тытăнчĕ.

Илэпи ăнланманнипе ни хăрама, ни пăшăрханма пĕлмерĕ. Темшĕн чунĕ те шикленмерĕ унăн. Виçĕмкун, килтех вăрçă пуçланни çинчен илтнĕ пулсан, тен, сехĕрлен-

се ӳкнӗ пулӗччӗ. Халӗ вара хӑйне никам тивес ҫуккӑн туять, мӗншӗн тесен вӑл паян упӑшки патне ҫитет. Мӑшӑрӗ ун вӑйлӑ, кӗрнеклӗ ҫар сынни, ҫитменнине тата,— командир. Ҫавнашкал арҫын ҫумӗнче никамран та хӑрама кирлӗ мар пек.

— Хурлӑха хӑварас ҫук. Тӗрӗс-и, хӗрӗм?— Илэпи ачине кӑкӑр ҫумне пӑчӑрта-пӑчӑрта юратрӗ. Лешӗ амӑшӗн ӑшӑ куҫӗсене курса йӑл-йӑл кулкалать.

Акӑ пуйӑс тапранчӗ. Ыткӑнать кӑна вӑл хурҫӑ ҫулпа. Кустӑрмисем пӗр евӗр тӑкӑртаттараҫҫӗ. Вӗсен кичем юрри ытла тунсӑхлаттарать. Пӗчӗккисене вара сӑпкана хурсах сиктерет. Клара, ав, куҫне хупрӗ.

— Ҫывӑрса кайрӗ путенем,— чӑп-чӑп чуптурӗ ачине Илэпи. Хӑрах аллипе кипкине майлаштарса сак ҫине вырӑн сарчӗ.

Илэпин хулӗсем ывӑннӑ. Хӑлаҫланкаласа вӗсене выляткаларӗ. Унтан кантӑк умне пырса тӑчӗ. Хушӑран уҫӑ чӳречерен ҫилпе тӗтӗмлӗ сывлӑш кӗрет. Тарӑннӑн сывлакаласа кӑкӑрне уҫӑлтарчӗ.

Пуйӑс вӑрмана чашлаттарса кӗчӗ. Йывӑҫ тӑррисем касса тикӗсленӗ пек пӗр тан.

Пуйӑс чарӑнчӗ. Разъезд пулас. Пысӑк ҫуртсем курӑнмаҫҫӗ. Унччен те пулмасть, юнашарти вакунран проводница васкаса кӗчӗ те пурне те илтӗнмелле ҫапла каларӗ:

— Юлташсем, пуйӑс малалла каймасть. Пурте анӑр!

— Мӗнле апла каймасть?— тӗлӗнет Илэпи.— Эпир ҫитмен-ҫке.

— Васкӑр теҫҫӗ сире! Пушатӑр вакуна хӑвӑртрах!— чарӑнмасӑр хӑвалать ҫынсене проводница.

— Мӗншӗн анмалла, тет? Пирӗн билет пур!— тарӑхать пӗри те тепри.

— Мӗнле ӑнланман этемсем эсир? Малта — вӑрҫӑ! Вилес килет-и?

— Эпӗ упӑшка патне каятӑп. Ман ача пур. Ман упӑшка пограничник, командир. Чикӗ хӗрринче «Куккук пушмакки» заставӑра вӑл пире кӗтет. Манӑн анса юлма юрамасть. Ан хӑвалӑр, тархасшӑн!— йӗрсе янни кӑна Илэпин.

Проводницӑна пулӑшакансем хӑпарчӗҫ. Тархасланине те, хирӗҫленине те, тарӑхнине те шута илмерӗҫ вӗсем.

Вакунран тухмах тиврӗ.

Ним кӗтмен ҫӗртен ӗмӗчӗ татӑлчӗ Илэпин. Нисҫта кайса кӗме пӗлмен енне, ансӑр перрон ҫинче чарӑнса

тăчĕ хайхискер. Аллинче ун — ача. Арчине çĕре лартрĕ. Кăн-кан пăхкаласа илчĕ айккинелле. Паллана çынна курасшăн. Аçта унта! Килтен пин çухрăмра тăван пиччӳ те асăрхамасăр иртĕ. Куç тĕтĕм кĕнĕн йӳçĕтет. Чăтаймарĕ, питçăмарти тăрăх куççуль йăрăлтатса анчĕ. Çук, никам та шеллемест. Хĕрхенсе мар, ăс парса сăмах хушакан та тупăнмарĕ. Çыннисем ухмаха ернĕ тейĕн, ним уямасăр, япалисене çапăнтара-çапăнтара унталла та кунталла чупаççĕ, кăшкăрашаççĕ. Пичĕ-куçĕсем ытла та иленкĕсĕр.

Пăравус хыçĕнчен пĕр ушкăн çын тухрĕ. Сирпĕнтерсе пыраççĕ айтурах! Малта чугун çул çинче ĕçлекенскер утать. Тумĕнчен паллă. Тем тесен те, пуйăса малалла яракансем. Çапла шухăшларĕ те Илэпи, арчине йăтса, вĕсемпе ермешрĕ. Мĕнпур вăйне пухса утать.

Ушкăн пĕчĕк пӳрт умĕнче чарăнчĕ. Алăкĕ уçă. Ку вокзал иккен. Разъездри пĕчĕк вокзал çеç. Виçĕ çын кĕрсенех тулса ларать вăл. Халăх тулли, çывăха пыраймăн. Пурте кăшкăрашаççĕ. Пурне те билет кирлĕ иккен, кашниннех ларса каймалла. Билетне сутмаççĕ.

Илэпи те чарăнса тăчĕ. Билет сутма тытăнсан та илейрес çук вăл. Мĕн тумалла? Темшĕн ăна «Куккук пушмакки» застава çывăхрах тата унта упăшки кĕтсе тăнă пекех туйăнать. «Çуран каяс. Çитетĕпех Варлам патне».

Çула тухма тĕплĕн хатĕрленмелле. Лăпсăркка тирек айĕнче чарăнчĕ вăл. Ачине çĕре вырттарчĕ. Арчине уçса япалисене суйлама тытăнчĕ. Чи кирлисене кăна илмелле. Çатан арчине пăрахса хăварать вăл. Акă юбка ăшне тултарĕ те япалисене кутамкка пек çурăм çине çакĕ.

Килтен илсе тухнă çавракă çур çăкăр çаплипех. Станцăра кулач туяннăччĕ те çавна çикелесе пынăччĕ. Чăкăт йăлтах тĕпренсе кайнă. Ана çĕре силлерĕ. Икĕ çăмарта юлнă-ха ун телейне. Çнес тесе, пĕрне юнашар выртакан чул муклашки çине шаккарĕ.

Кăшт апатлансан, ачине пиелерĕ Илэпи.

Никам та ăсатмасть çула тухнă ачаллă хĕрарăма. Мĕн кĕтет ăна малта? Тирек çеç темшĕн сӳçенсе сăрлатать. Çулçисем теме систернĕн чĕтренеççĕ.

Хĕвел çӳле хăпарчĕ. Вĕри вăхăтра шпалсем тăрăх утма çук. Илэпи вăрман çумĕпе хывнă çул çине тухса чугун çултан уйрăлмасăр утрĕ. Çул час-часах юпленсе вăрман ăшнелле пăрăнать. Вĕсенчен, тен, хăшĕ-пĕри за-

ставăна çип çапнăн тӳрĕ тухать. Анчах Илэпи пĕлместçке çав сукмака. Нумай та вăхăт иртмĕ акă, мăшăрĕ чупса пырса ыталĕ ăна. Ырри çинчен ĕмĕтленни ăна кăшт çĕклентерсе вăй-хал парать. Хулпуççисене пусакан кутамкка та, алăри ача та йывăрах мар пек.

Разъезд тахçанах хыçа юлчĕ. Нумай утрĕ Илэпи. Икĕ хутчен тунката çине ларса ачине ĕмĕртрĕ вăл. Темшĕн çулĕ чакми пулчĕ. Урисем пĕр-пĕринчен иртесшĕн мар. Миçе сехет çитрĕ-ши халь? Йывăç ĕмĕлкисем вăрăмланса тăсăлсах пыраççĕ.

Вăрман тăрăхĕ пĕтрĕ. Умра — çӳллех мар сăрт. Сукмакне ту хĕррипе хывнă. Чугун çул аялта çырмари юханшыв пек курăнать. Сулахайра — пыллăх. Тырă акма çĕр хатĕрлеме тытăннă пулас. Тасатса çитереймен. Унта та кунта тункатасем тымарĕсене кăнтарса выртаççĕ. Çамрăк хунавсем ирĕкре вăй илесшĕн.

Çывраҫан Клара сасартăк вăранчĕ те кансĕрленме тапратрĕ. Илэпи утнă çĕртех ачине кăкăр кăларса хыптарчĕ.

— Ĕм-ĕм, пĕчĕк няням. Тӳттӳ тутлă,—лăпкарĕ ачине.

Пуйăс хашкани илтĕнчĕ, часах хăй те курăнчĕ. Вăл мал енчен килет-мĕн. Таçтан муртан самолетсем килсе тухрĕç тата. Хурчкасем пек явăнаççĕ. Пĕри Илэпи пуçĕ çийĕнченех вĕçсе иртрĕ. Çунат айĕнче — пысăк хура хĕрес. Тепри ерипен чугун çул тăрăх пуйăса хирĕç вĕçет. Илэпи чарăнса тăчĕ. Пуйăсĕ вăрăм. Вакунĕ темĕн чухлĕ! Шутсăр нумай çын ларнă ĕнтĕ. Ҫам ăçта каятьши?

**Пăравус** хыçĕнчи вакун Илэпипе тĕлме-тĕлех пулчĕ. Чарăнчĕ пуйăс. Вакунĕсенчен çынсем сикеççĕ.

Çак самантра тӳпере вĕçекен самолетсенчен хура юпасем ӳкме тытăнчĕç. Вĕсем вакунсем çинех анаççĕ. Унччен те пулмарĕ, кĕрр! кĕрлерĕ тĕнче. Пĕтĕм çĕр пĕлĕте йăсăрланса сирпĕнет.

Илэпие хăй сасартăк арман пĕвине татнă çурхи шыв юххине лекнĕн туйăнчĕ. Ӳкересшĕн ăна хăватлă хумсем. Урисем чĕтреççĕ. Тискер çил-тăвăл çĕкленчĕ-и? Алри ачана тăпăлтарса ывăтрĕ! Тахăшĕ çавăнтах куçа курăнман çирĕп аллипе кăкăртан пырса çапрĕ тейĕн. Шап! кайса ӳкрĕ Илэпи месерле. «Вилтĕм,— пăшăлтатрĕ вăл,— тĕпсĕр касмăка путатăп-çке...»

Темĕн чухлĕ выртнă Илэпи. Тăна пырса кĕрсен чи малтан вăл тӳпере шурă катрам пĕлĕтсене курчĕ. Хăлхи шавлать, пуçĕ ыратать.

— Ахтур, ĕçта эпĕ?— тавçăрса илесшĕн пулчĕ Илэпи. Тăрса ларчĕ, тĕм кутĕнче иккен. Умра пĕр хĕрарăм тăрать.

— Вунă çулхи хĕрача макăрса çӳренине курмарăн-и?— ыйтать хайхискер. Хăйĕн çине пăхма хăрушă. Куçĕсем тухса ӳкесле чарăлнă. Илэпи нимĕн те чĕнменнине кура вăл пăрахса кайрĕ.

Аран-аран ура çине тăчĕ Илэпи. Йĕри-тавра пăхкаларĕ. Чугун çул çинче пушар. Вакунсем рельс çинчен тухса ӳкнĕ, çунаççĕ. Çывăхрах темиçе çын ăшталанса çӳрет. Хăшпĕрисем шурă халат тăхăннă. Вĕсем чылай аякра тăракан тавар турттарса çӳрекен вакунсем çине вăрăм наçилккапа темĕскер çĕкле-çĕкле кĕреççĕ. Илэпи тавçăрса илеймест. Нумай та вăхăт иртмерĕ, пуйăсĕ тапранса та кайрĕ.

— Мĕн амакĕ?—енчен енне пăркалать пуçне Илэпи. Сасартăк тавçăрчĕ: самолетсем пуйăс çине бомбăсем пăрахнă...

— Алеша! Алеша!— кăшкăрать ватă старик.— Мăнукăма çухатрăм. Чип-чипер пуйăспа ларса пыраттăмăр. Хам хăш вăхăтра тухса чупнине те астумастăп. Тепле кайса ӳкнĕ? Выртатăп çĕрте. Пăхатăп: çумра Алеша çук та. Курмарăр-и, ырă çыннăм?

— Курман,— терĕ Илэпи. Сасси ун ытла шăппăн тухрĕ.

— Ах-х, эппин, çунса кайрĕ пуль вăл. Вакун çине илсе кĕмерĕç.

Ури кĕллине çăпан тухнă пекех аран-аран пускаласа, старик айккинелле пăрăнчĕ.

Çывăхрах ача çари-çари-и! çухăрать. Илэпи шартах сикрĕ. Тарăн ыйхăран вăранчĕ тейĕн, куçĕ-пуçĕ чалтах уçăлчĕ унăн.

— Чим, ара, ман ача пурччĕ-çке?—темшĕн вăл ура вĕçне ача кунтах выртас пек тинкерчĕ. Курăнмасть. Хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Кунта та Клара çук. Вара пĕтĕм сассипе кăшкăрса ячĕ:

— Ăçта вăл? Çухалнă! Хурах!

Кускалама пуçларĕ Илэпи. Хĕрачи илтме пĕлес пек ятĕнчен чĕнет: «Клара! Клара-а!» Такăнса ӳкрĕ тата. Атăллă ура çине пырса тăрăннă иккен. «Айăп ан ту. Эпĕ ача çухатнă»,— тесшĕнччĕ. Ури çине тăрса çăварне уçрĕ çеç — мĕн курни ăна пăр пек шăнтса лартрĕ. Çĕрте выртакан атăллă çыннăн хырăмĕнчен пыршисем йăтăнса тухнă.

Илэпи кутăн чакрĕ. Унтан, вилнĕ çын тăрса тытасран хăраса тейĕн, мĕнпур вăйне пухса тарчĕ.

Такăнать, ўкет, упаленет, тăрать, чупать Илэпи. Пĕр тĕм хăвармарĕ ухтармасăр. Хĕрачине тупаймарĕ.

## 10

Илэпи чугун çул хĕрнелле чупса анчĕ.

Çывăхрах аманнă çынсем выртаççĕ. Шурă халатлă хĕрсем вĕсен суранĕсене эмеллеççĕ.

Çухатнă ачине тупма ĕмĕтленсе, Илэпи пур тĕле те шăтарасла пăхса çаврăнчĕ.

Вилнисем те нумай. Чăптине пырса уçма шутламарĕ Илэпи. Вăл хăй ачи вилнине ĕненмест. Тата çакна пĕлчĕ вăл: аманнисене пе́р ушкăн больницăна илсе кайнă: унта пĕчĕккисем те пулнă имĕш.

— Чĕчĕ ачине асăрхамарăр-и?— ыйтрĕ Илэпи.—Ана чакăр чечеклĕ кипкепе пиеленĕччĕ.

— Чĕчĕ ачи те пурччĕ, татсах калаймастăп,— тет шурă халатлă хĕр.

«Кларăна, тем тесен те, больницăна ăсатнă»,— шухăш пырса кĕчĕ амăшĕн пуçне.

Часах аманнисене илме пуйăс килмелле. Ларса кайма чармаççĕ тет.

Пуйăс киличчен çак таврарах тепĕр хут шырасшăн Илэпи. Хăй утнă çул çине тухса, сулахаярах пăрăнса, пыллăха кĕчĕ вăл. Тĕм турачĕсене тĕплĕн сире-сире тинкерет. Çĕр тĕм кутне те пырса çаврăнчĕ пуль ĕнтĕ. Пурпер шанчăкне çухатмасть-ха, шав кĕрмешет тĕм тураттисемпе.

«Ачана тупмасан, Варлам мĕн тейĕ?»— çакна аса илет те, чĕри çурăлсах каять унăн.

Тунката лупашкинче сарлака хĕрĕллĕ шурă калпак тăхăнтарнă ача куçне йăваласа лара парать. Макăрса ывăннă ĕнтĕ вăл.

— Клара!— кăшкăрса ячĕ Илэпи, ача патне йăпăр-япăр чупса пырса. Анчах çук иккен, Клара мар.

Хăй патнелле хĕрарăм çывхарнине асăрхарĕ те вăл, аллине тăсса: «Мама! Мама!»— тесе чĕнме тытăнчĕ.

Чунне хытарса иртсе кайрĕ Илэпи. Унăн хăйĕн хĕрне тупмалла-çке.

Хыпаланать Илэпи. Хăй тăтăшах, уçă вырăн тупса, чугун çул çине пăха-пăха илет.

Путлĕн ура ярса пусма та хĕн. Вĕлтĕрен ашкăрать,

алла пырса ан чик, чӗпӗтет. Питҫӑмартисем, ав, вӗтӗ шурӑ хӑмпӑсемпе витӗнчӗҫ.

Тавар турттармалли ик-виҫӗ вакун кӑкарнӑ пуйӑс ҫывхарнине курчӗ те Илэпи кӑшкӑрса ячӗ:

— Килет! Больницӑна ларса каятӑп. Клара ҫавӑнтах.

Пуйӑс Илэпи ҫуран тухса утнӑ разъезд енчен килет. Вакунсем хӗрлӗ хӗреслӗ.

Чупрӗ чугун ҫул еннелле. Хӑлхара ҫаплах паҫӑр лупашкара курнӑ ача сасси: «Мама! Мама!» тесе чӗнни янӑрать. Урисем утасшӑн мар. Чӑтаймарӗ Илэпи, ҫаврӑнчӗ те каялла чупрӗ. «Эх, эсӗ те ҫав!— ятлать Илэпи хӑйне хӑй. Паҫӑрах илмеллеччӗ».

Ҫил пусӑраннӑ. Чарӑнса тӑрсах итлерӗ. Нихӑш енчен те сас-хура илтӗнмест. Кам та пулин илсе кайрӗ-ши? Ҫакӑнтахчӗ-ҫке. Сылтӑмалла пӑрӑнса утрӗ Илэпи, тӗмсене уҫа-уҫа пӑхрӗ... Ак хайхи... Хӑвӑн куҫна ху ӗненмӗн.

— Ав ӑҫта иккен эсӗ, шӑпӑрлан!

Пӗчӗк лупашкара ача мӑштӑртатать, унтан тухасшӑн тӑрмашать-мӗн. Макӑрмасть хӑй. Хӑлхи чее. Сасса илтсен кӗрмешме чарӑнчӗ. Аллине кӑнтарчӗ. Йӑл-йӑл кулать. Куҫ шӑрҫисем ахах пӗрчи евӗр йӑлтӑртатаҫҫӗ. Хӑйне алла илессе кӗтет апӑрша. Ача-пӑчан хуйхипе савӑнӑҫӗ пурте пӗрле.

— Аҫта санӑн аҫу-аннӳ?— ҫӗртен ҫӗклесе илчӗ Илэпи ачана.— Ах, эсӗ те ҫав, калаҫма вӗренеймен, нушу хӑвӑнтан малтан ҫуралнӑ. Кам пултӑн-ха эсӗ: ывӑл-и е хӗрача?—ачан ҫипуҫне тирпейлерӗ Илэпи, кӗсйинчен тутӑр кӑларса пит-куҫне шӑлса тасатрӗ. Кӗпине тӳменӗ чух ачан хырӑмӗ ҫинче, кӑвапаран ҫӳлерех, кӗмӗл тӗслӗ пӗчӗк ҫулҫӑ асӑрхарӗ те ӑна илсе пӑрахасшӑн пулчӗ. Ҫулҫӑ илӗнмест.

— Ара, ку турпалли-ҫке. Шӑп та шай кӗркуннехи хурӑн ҫулҫи,— тӗлӗнчӗ хӑйхискер.

— Эх, тусӑм, сана вунӑ ҫул иртсен те аҫупа-аннӳ паллӗҫ. Телей палли ку сан.

Ҫапла калама кам чӗлхерен туртнӑ-ши Илэпие? Шӑп вунӑ ҫул иртсен ҫак ачан кӗмӗл ҫулҫӑ-турпаллине кӑтартма тивесси ҫинчен унӑн пуҫне те кӗмерӗ паллах.

Ачан пуҫӗнчи калпакне юсарӗ, кӗпе тӳмисене йӑлласа, аркине йӗм ӑшне чикрӗ.

— Э-э, ара, эсӗ йӗкӗт иккен,— лӑпкарӗ ачана Илэпи.— Ятна пӗлместӗп ӗнтӗ. Юрӗ-ҫке, уншӑн кулянмӑпӑр.

Атя, Кларăна иксĕмĕр шыратпăр. Тен, сан телее тупăпăр ăна.

Каяс тесе пĕр ик-виç утăм ярса пуснăччĕ, сасартăк илтех кайрĕ Илэпи, тахăшĕ апчху турĕ. Пĕчĕк ача сасси. Шак хытарса лартрĕ çак сасă хĕрарăма. Ăçта вăл? Ниçта та никам та курăнмасть. Татах апчхилетрĕ, вара çинçе сасăпа йĕрсе ячĕ. Сасси темле тытăнчăклă тухать хăйĕн.

Çулăм хыпса илчĕ пограничник арăмĕн ăшне. Шырама пуçларĕ. Тĕпĕртетет кăна. Тупрĕ. Юнашарти тунката тымарĕсем хушшине чăлханнă-мĕн. Ачан кипки чакăр чечеклĕ. Апла хăйĕннех.

— Клара! Клара, эсĕ-çке, хĕрĕм,— сасси ун темле хăйăлтатса тухрĕ.

Лупашкара тупнă ачана çĕр çине лартрĕ те Илэпи, хăйĕнне, çепĕççĕн тыткаласа, тымарсен тыткăнĕнчен кăларчĕ.

— Пепкем,— чăтаймасăр макăрса ячĕ вăл. Хăй вăшвăш унăн кипкине салатрĕ. Çавăркаласа хыпашлакаласа пăхрĕ,— тен, эсĕ сусăрланнă.

Телее, хĕрĕ чиперех. Ӳчĕ ванни, юн сăрхăнни курăнмасть. Пуçне кăна пысăк мăкăль шăтса тухнă.

Илэпи, кĕпе умне вĕçертсе, хĕрачине кăкăр пачĕ. Çулçă турпаллилли, эсĕ те кил аркă çине.

Ларать хĕрарăм, икĕ аллине икĕ ача тытнă.

## 11

Кассăн-кассăн вĕрекен çил чикĕ юпи çывăхĕнче ӳсекен шур шупăрлă яштака хурăнăн çăра тураттисем хушшинче вăй вылять. Унăн ешĕл çулçисем шĕпĕртеттерсе алă çупаççĕ. Илемлĕ туйăмсемпе пуян çын, хурăн айне тăрсан, купăс каланипе те, юрă юрласа такмакланине те илтме пĕлетех. Унашкал этем пур. Ăна кайăксем те паллаççĕ, унтан хăраса нихăçан та пăрр! вĕçсе каймаççĕ. Кун сиктермесĕр килет вăл кунта.

— Ну, мĕнле пурăнатăн, авалхи тусăм?— аллипе çупăрласа илет вăл хурăн вуллине. Вара ун çумне тайăнать те пирус чĕртет. Ялан шухăшлă. Пуçĕнчи симĕс карттусне ĕнси хыçнелле шутарса антарать. Хĕвел шевли çавна çеç кĕтет тейĕн, тытăнать лĕпки çинчи кăвакарнă çӳç пĕрчисене йăлтăртаттарса çутатма. Погонĕсем çинче халĕ ун пысăк çăлтăрсем. Тата вăл пирус тĕпĕсене нихăçан та хурăн айне пăрахса хăвармасть, сӳн-

терет те хуçлатса шăрпăк мартине чиксе хурать ялан.

Хурăн питĕ лайăх астăвать-ха: вăрçăччен пĕр-ик çул маларах, çуркунне, çак арçын (ун чухне вăл çап-çамрăкчĕ) пăхса ытармалла мар пикепе килнĕччĕ. Мĕнле савăнăçлăччĕ вăл ун чух! Хĕвел пек çиçсе тăратчĕ. Пики мĕнлерех уçă сасăпа юрлатчĕ. Шăнкăрав пек илемлĕ сасă ку таврара тек нихăçан та янраман.

Ав вăл, ут утланнăскер, кунталла килет. Ир-ирех тухнă та çӳренне сиккипе чуптарса чикĕ тăрăх çӳренĕ, чикĕ хуралçисемпе ăшшăн калаçнă. Пĕччен мар вăл паян, иккĕн.

Юланутçăсен лашисем чикĕ юпи çывăхĕнчи хурăн тĕлĕнче тăпах чарăнчĕç, хăнăхнă вĕсем те.

— Кĕрсе канар, Николай Карташов. Кăкăр тулли туртар унăн техĕмлĕ сывлăшне. Çур сехет хушши çеç лар ун айĕнче, пуç уçăлса та каять.— Куна кашни кун килекенни каларĕ.

Учĕсене юпа çумне çыхрĕç те арçынсем хурăн патне утрĕç.

— Савва Корнилович, эсир хурăн айĕнче ларăр, эпĕ мунчара çапăнма милĕк касам,— терĕ хăйĕнпе çӳрекен пограничник Карташов.

— Милĕк?

— Ахă.

— Ыр япала,— кулкаласа илчĕ Топрикин.— Ялта пирĕн çĕр мунча пурччĕ. Килентеретчĕ хăйĕн тутлă шăршипе. Хĕлле милĕкпе çапăнаттăмăр та юр çине тухса йăваланаттăмăр. Çанçурăм татах яшланатчĕ.

Начальникăн пит-куçĕ çуталса кайнине курчĕ те тĕлĕнчĕ пограничник. Вăл çавнашкал савăнăçлă пулнине никам та нихăçан та асăрхаман. Пурте пĕлеççĕ-çке: вăл хăй шутсăр ырă çын, анчах ун хурлăхĕ пысăк.

Тĕрĕсех. Хуйхи-суйхи вĕсен мăй таран.

Тăван çĕршыв хăйĕн питĕнчен тăшман йĕрне çуса тасатсанах, чикĕри «Куккук пушмакки» застава ĕçлеме тытăнчĕ. Начальникĕ каллех Савва Корнилович Топрикин. Пилĕк çул хăвăрт, çырмари шыв пек юхса иртрĕ. Заставăри йĕрке тахçанах ĕлĕкхи виçене ларнă. Çуртйĕрсем те малтанхинчен чаплă. Чикĕ хуралçисем те çамрăк, пит патвар вĕсем. Юн тапан суранĕсем çĕнĕ ӳт илчĕç. Пĕртен-пĕр чун ыратăвĕ çеç çаплах сипленмест.

Вăрçă вăхăтĕнче Топрикинсем фронтра пулнă. Аманнă, каллех строя тăнă. Ун чух хархам хăй инкекĕ пирки таранн̆ан шухăшлайман та. Вăрçă пĕтсен, пурнăçра

чи хаклине çухатнă туйăм вĕсен ăшне ĕмĕр сӳнми вут хыптарнă.

Хашш! хашлатса сывланă май тытăнать Полина Николаевна ĕсĕклесех макăрма. Кун пек чух ун йăлтах иртни аса килет. Куçне хупсанах, ачи курăнать.

...Олег ыйхăран пуринчен малтан вăранатчĕ. Хăйĕн кровачĕн карлăкне тытса йĕри-тавра утса çӳретчĕ. Кам та пулин куç уçасса кĕтет. Ашшĕ е амăшĕ хускалнине асăрхасанах ахăлтатса кулса ярать.

— Иксĕмĕр те вăхăтсăр кăвакартăмăр. Ытлашши кулянан. Ку вăрçăра пирĕн ывăл çеç пĕтмен. Мĕн чухлĕ чи çывăх çынна çухатнисем,— лăплантарма тăрăшать Полина Николаевнăна упăшки.

— Пирĕн Олег хĕвелпе уйăха палласа çитме те вĕренейменччĕ-çке.

— Тен, пурăнать, тупăпăр та акă.

— Чĕрĕ пулсан, тахçанах хамăр умраччĕ вăл.

Топрикинсем ачапа асламăшĕ ларса кайнă пуйăса фашист самолĕчĕсем бомба пăрахса çунтарнине пĕлеççĕ. Пассажирсенчен чĕрĕ юлнисем те нумай. Хăшпĕрисем госпитальсенче сывалнă. Полина Николаевнăн амăшĕ пĕтнех ĕнтĕ. Унсăрăн ку темĕн Мускава, килне, таврăнмаллахчĕ. Ывăлĕ пирки темшĕн иккĕленӳ канăç памасть, сывă юлнăнах туйăнать.

Савва Корнилович ывăлне шыраса тaçта та çырчĕ. Пĕр ача çурчĕ юлмарĕ тĕрĕслеменни. Çырăва ывăлĕ пирки питĕ тĕплĕн çыратчĕ.

Анчах нихçан та ырă хыпар илеймерĕ вăл.

Полина Николаевна амăшĕпе ывăлне лартса янă пуйăс çулĕпе Мускава çитиччен çуран утса тухрĕ. Кăлăхах, çухалнă ывăлĕ тупăнмарĕ.

Пушă чунпа каялла таврăннă хыççăн Полина Николаевна ир пуçласа сĕм-тĕттĕмччен вăхăтне хăй ĕçлекен ял больницинче ирттерет.

Савва Корнилович та, арăмĕ пекех, пăрăнса çӳрет килĕнчен. Ахальтен мар вăл хăйпе çӳрекен Карташов пограничник хурăн хуçса милĕк çыхнине вăхăтне хĕрхенмесĕр пăхса ларчĕ.

Çула май тăванла масар çине кĕчĕç. Кунта Аслă Отечественнăй вăрçă пуçламăшĕнче Тăван çĕршыв чиккине хӳтĕлесе пуçне хунă пограничниксене пытарнă.

Топрикин вилтăпри тавра чĕлтĕрти чечексем хушшинчи çумкурăксене таткалать. Николай Карташов асăну хăми умĕнче чарăнчĕ. Унта çырса хунă ятсене сасăпах

вулама пикенчĕ. Пĕрремĕш ят — Варлам Хуронташев лейтенант.

— Паян-ыран унăн çемйи кунта килсе çитмелле, вилтăпри çинче пуласшăн.

— Савва Корнилович, эсир лейтенанта хăйне астăватăр-и?

— Аçтан манăн? Лайăх сынччĕ. Арăмĕ килессе питĕ кĕтрĕ. Лешĕ килме тухни çинчен телеграмма та ярса панăччĕ. Çапла вăл пурнăç. Миçе çул иртрĕ! Вăл тин упăшки патне çитет.— Топрикин тек сăмах чĕнмерĕ.

## 12

Хĕл ларчĕ. Кăпăшка юр ура айĕнче нăтăртатать. Сывлăш тап-таса, уçă. Йывăçсен халĕ урăх тум: тураттисем шурă çулçăллă.

Илэпи паян фермăран кăнтăр çитичченех тухрĕ. Килне васкасах утрĕ. Хирĕç пулсан кӳршĕсемпе те чарăнса тăмарĕ. Хул айне хаçатпа чĕркенĕ япала хĕстернĕ, ку вăл — Варламăн пысăклатнă сăнӳкерчĕкĕ. Тин çеç ăна фотограф парса хăварчĕ. Çав сăнӳкерчĕке унăн килте, никам чăрмантарман çĕрте, лăпкăн, чун каниччен, пăхас килет.

Ачасем шкултан таврăнман-ха. Упăшки сăнӳкерчĕкне Илэпи сĕтел çине лартрĕ.

Чĕп-чĕррĕн тухса тăчĕ Варлам арăмĕ умне. Çар тумĕ тăхăннă, пысăк куçлă, илемлĕ йĕкĕт. Пуçĕнче йăлтăркка сăмсаллă карттус. Кĕпе çухави çинче çар курсанчĕ иккенне пĕлтерекен паллăсем.

«Мĕн тери чипер, çамрăк эсĕ, Варлам,— калаçса илчĕ упăшкин сăнӳкерчĕкĕпе Илэпи.— Эпĕ, акă, карчăк пулсах лартăм. Мана курсан халь эсĕ юратас та çук». «Эпĕ сана кирек мĕнлине те юратăттăм»— тетĕн-и?

«Эх, эсĕ те çав, сывă юлаймарăн хăшпĕрисем пек. Вилнĕ хуту килсен вырта-вырта макăртăм. Ĕненмерĕм, шав кĕтрĕм. Алăк уçăлассăн, эсĕ пӳрте кĕрсе тăрассăн туйăнатчĕ». «Вăрçă пĕтни миçе çул! Эсĕ таврăнмарăн».

«Каçар мана, юратнă арăмăм, вăрçи ытла хăрушă пулчĕ-çке».

«Пурпĕрех тӳсмеллеччĕ. Хăраххăн purăнма мĕнле йывăр мана».

«Эсĕ пĕччен мар. Санăн икĕ ача...»

«Вĕсем пурришĕн савăнатăп-ха. Анчах Энтри иксĕмĕр çуратнă ача мар. Эсĕ ăна пĕлетĕн пулĕ? Тен, эпĕ

айăплă та, ахăртнех, вăл ачана хампа пĕрле илсе килнĕшĕн».

«Пурнăç çапла килсе тухнăшăн эсĕ айăплă мар. Пăрахса хăварнă пулсан, тен, ача вилетчĕ те пулĕ. Вăрçă çăварĕ — аçтаха çăварĕ, ниме те уяса тăмасть вăл. Çавăн чухне ачана илмен пулсан, эсĕ хăвна нихçан каçарас çукчĕ. Тата çакна асту-ха: Энтри сана чĕнсе макăрман пулсан, эсĕ хамăрăн хĕрĕме — Кларăна тупаяс çукчĕ».

«Эпĕ те çаплах шухăшлатăп. Чим, чим, эсĕ те ăна Энтри тесе чĕнетне? Ашшĕ-амăшĕ мĕн ят хунă-ши ăна? Паллах, унăн хăйĕн урăх ят пур. Ăна анне çапла «Энтри» ят панă. Мĕнле ăна киле илсе таврăннине пĕлместĕн-ха эсĕ, итле: ...Энтрие тунката лупашкинчен кăларсан, эпĕ сасартăках икĕ ачаллă хĕрарăм пулса тăтăм.

Иккĕшне те аркă çине лартса тăрантрăм. Вара чугун çул хĕррине антăм. Сан пата çитес шухăш ним чухлĕ те сӳрĕлмест-ха. Эсĕ çав тери çывăх пек туйăнаттăн. Чĕрĕ пулнă-ши эсĕ çав самантра? Мĕн паянччен пĕлместĕп. Сан пирки янă хутра: «...вăрçăн малтанхи кунĕнчех тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçса вилнĕ» тесе çырчĕç. Чĕнместĕн? Итле малалла. Чугун çул юсакансем çапла каларĕç: «Чикĕ кунтан аякра. Пуйăссем унталла каймаççĕ, çуран çынсемшĕн унталла çул хупă. Ачусем тĕрĕс-тĕкел чух, киле çитме тăрăшнинчен ырри ним те çук».

Разъезда аманнисене илме пынă пуйăспа кайма тиврĕ. Сасартăк ача шыраканĕ тупăнĕ тесе медсестрасене хамăн килти адреса парса хăвартăм.

Вăрçă пĕтни часах пилĕк çул çитет. Энтрие шыраса никам та сас-хура памарĕ-ха. Эпĕ ăна çав тери юрататăп, ăна кам та пулин манран уйăрса каяс пулсан чăтаймăп та...

Киле чиперех çитрĕмĕр. Çул çинче апат-çимĕç те пачĕç. Ку вăл, Варлам, пĕтĕмпех сан тивлетӳпе. Пограничник çемйисене çул çинче пит тимлĕн пулăшса пычĕç. Анне ют ачана йышăнмасран хăрарăм. Вăл нимĕн чухлĕ те кӳреимерĕ. Хавхалантарчĕ çеç мана:

— Э, ара, виçĕ чун хушшинче тепри те пурăнать. Ан пăшăрхан, ӳстерĕпĕр. Ача пăхакан выçă вилмен, теççĕ.

Ялта ун чух усал хыпар сарчĕç. Эсĕ авланнă пулать, арăму сан пата ачине пăрахса хăварнă. Вăрçă тухнипе эсĕ ывăлна мана парса янă имĕш. Тӳрре тухасшăн тавлашса, сăмах аласа çӳремерĕмĕр. «Хам ывăл ячĕпе ача-

на Энтри тесе чӗнӗпӗр»,—терӗ анне. Эсӗ, Варлам, пӗлетӗн-ҫке, ман пичче ҫартаччӗ. Ҫиле таврӑнаймасӑрах вӑрҫӑра пӗтрӗ вӑл. Тав тӑватӑп аннене. Нумай пулӑшрӗ вӑл мана. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче икӗ ачапа ҫав тери йывӑррине те туймарӑм. Фермӑран тухмасӑр ӗҫлерӗм ун чух. Анне ачасене тирпейлесе ларатчӗ. Вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн ҫӗре кӗчӗ вӑл. Тӑпри ҫӑмӑл пултӑр».

Упӑшкипе пуплесе ларнӑ вӑхӑтра Илэпин пуҫне сасартӑк ҫӗнӗ шухӑш пырса кӗчӗ.

«Варлам!—чӗнчӗ вӑл.—Пӗлетӗн-и мӗн? Ачасемпе сан пата курма пыратпӑр. Юрӗ-и? Ҫаҫар, ун чухне ҫитеймерӗм, халӗ никам та чараймӗ. Тӑпруна та пулин выртса ыталам. Ҫӗт».

Илэпи хут листи илчӗ те, хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне пӗлтерсе, «Куккук пушмакки» застава начальникӗ патне ҫыру ҫырчӗ.

«Санӑн сӑнӳкерчӗкне чикӗ хӗрринчен таврӑнсан рама ӑшне хурса стена ҫумне ҫакӑп. Кун пек тусан ачасемшӗн чаплӑрах пулассӑн туйӑнать».

Варламӑн сӑнӳкерчӗкне хаҫатпа тирпейлӗн чӗркерӗ те Илэпи арча тӗпне чиксе хучӗ.

Шӑпах ачасем шкултан килсе ҫитрӗҫ.

— Чӗппӗмсем, часах аҫу патне каятпӑр,—пӗлтерчӗ вӑл.

— Атте патне?—савӑнӑҫлӑн пӑхрӗ Энтри амӑшне.

— Вӑл тупӑннӑ-и?—йӑлт-йӑлт сиккелерӗ савӑнӑҫлӑ Клара.

— Эсир мана ӑнланмарӑр,—юсама васкарӗ амӑшӗ хӑй сӑмахне.—Аҫу службӑра тӑнӑ чикӗ хӗрринчи заставӑна каятпӑр. Пирӗн аҫун вилтӑпри ҫинче пулмалла.

Ачасен пичӗ ҫинче сӗлкӗш мӗлки шуса иртрӗ.

— Хӑҫан каятпӑр, анне?—тӗпчет Энтри.

— Хӑҫан?—лара-тӑра пӗлмест Клара та.

Вӗсене иккӗшне те чикӗ хӗрринче пуласси илӗртет.

— Хӑҫан тетӗр-и?—Илэпи татса калаймарӗ, упӑшкине аса илсе, тӗлӗрсе тӑчӗ вӑл.

— Атьӑр ыранах тухатпӑр та каятпӑр!—ҫиҫкӗнленет Клара.

— Пушӑ алӑпа-и? Айван-ҫке эсӗ, Клара,—кӳреннӗн пуплерӗ амӑшӗ. Ачасем куҫӗсене айккинелле тартрӗҫ.—Малтан хатӗрленмелле, шкулти ӗҫсене юсамалла.

— Мӗнле ӗҫсене?—тӗлӗнет Клара.—Пире халӗ нимле ӗҫ те хушмаҫҫӗ.

— Лӑйӑх веренесси шкул ӗҫӗ мар-и?

— Э-э, эпĕ ăна ĕç выраннe хумастăп. Вĕренесси вăл ĕç мар,— мăкăртатрĕ Клара сăмса айĕн.

— Тĕрĕс шухăшламастăн. Вĕренесси — сан тĕп ĕç. Тен, çавăнпа та «пиллĕк» паллăсем сахалтарах пулĕ сан?

Клара тутине тăсрĕ.

— Юрĕ-çке, ан кӳренĕр. Акă мĕн, тусăмсем,— Илэпи иккĕшне те ыталарĕ,— хăнана шкул пăрахтарсан кайăпăр.

— Ай-яй, хăçанччен кĕтмелле!— ӳпкевлĕн каларĕ хĕрĕ.

— Васкакан карта хушшине хĕсĕнет. Аçу юлташĕсем сирĕнтен дневник кăтартма ыйтĕç. Намăс курас мар тесен, мĕн тумалла сирĕн?

— Лайăх вĕренмелле.

— Дневникра «пиллĕк» паллăсем пулмалла!— терĕç ачасем.

— Тĕрĕс.

Пăчăхнă сывлăша çил вăркăштарса уçăлтарнăн, килти пурнăç çĕнелсе кайрĕ. Тăрăшаççĕ ачасем. Энтри унччени лайăх вĕренетчĕ. Халĕ вăл ытларах йăмăкне пулăшать.

Илэпи те, ача ăсĕ кĕнĕн, çиçсе çеç çӳрет. Хаваслă. Юлташĕсем ăмсанаççĕ ăна, çĕкленӳллĕ кăмăлпа ывăна пĕлмесĕр ĕçлениччен.

Часах «Куккук пушмакки» заставăран çыру та çаврăнса çитрĕ. Чĕнеççĕ вĕсем. Чунтан кĕтсе илме пулаççĕ. Вара Илэпи ятарласа Канаш хулине кайса ачасене тăхăнтартма çĕнĕ тум туянчĕ.

## 13

Май уйăхĕ вĕçленсе килчĕ. Илэпи хăнана кайма хатĕр. Ачасене каникула ячĕç, тек ун самант та тăхтас килмест.

Çула тухса каяс кун ирех хапха умне тăрантас кӳлнĕ лав пырса тăратрĕç. Кирек ăçта та хисеплеççĕ çав ĕçри хастар çынсене. Колхоз председателĕ Илэпи çемйине çапла, лашапа, Канаш станцине ăсатма хушнă.

Пӳртрен тухиччен ваттисен йăлипе виççĕшĕ те тăрăхла сак çине ларчĕç. Тăрсан, амăшĕ ачисене те, хăйне те телей сунчĕ.

Тухрĕç çула. Кунĕ — шăп сар çу. Хĕвел ăшшăн пăхать. Виçĕмкун çумăр çунăччĕ те çĕре нӳрĕклетнĕччĕ. Çавăнпа та тусан пачах мăкăрланмасть.

Чупать ҫӳренӗ пуҫне ухӑнтарса. Лавҫӑ чӑпӑрккине ҫӗклесе ҫеҫ кӑтартать, ҫурӑмне тивертмест. Тӑрантасӗ — шӑп сӑпка, сиктерет канлӗн. Ачасене ку питӗ килӗшет. Вӗсен савӑнӑҫӗ вӗҫӗ-хӗррисӗр. Энтри колхозра лашапа ҫӳремен мар, пурпӗрех хӗпӗртет.

Илэпи ачисем ҫине пӑхса кулкаласа ҫеҫ пырать.

— Чунӑрсем вӗҫсе кайманни кӑна, тупата.— Вӑл пӗрне, теприне чуптурӗ.— Пуйӑс ҫине ларсан мӗн хӑтланӑр-ши?

Энтрипе Клара пуйӑса куҫпа ҫеҫ курнӑ. Вӗсем шкул ачисемпе пӗрле Шуркӗсре разъездӗнче экскурсире пулнӑ. Ҫавӑн чух курнӑ. Анчах вӗсем пуйӑспа ларса ҫӳремен-ха ку таранччен.

Тӗрӗсех, Илэпи шухӑшланӑ пекех пулчӗ. Ачасем вакунра алхасса каллӗ-маллӗ чупкаламарӗҫ, тӑчӗҫ пӗр хускалмасӑр чӳрече умӗнче. Ҫӗршыв анлӑхӗ тӗлӗнтерчӗ ӗнтӗ икӗ пӗчӗк чуна.

— Пуйӑс мӗнле хӑвӑрт чупать!— Энтри пичӗпе кантӑк ҫумне тӑрӑннӑ та, сӑмси хуҫӑлнӑнах курӑнать.

— Йывӑҫсем, пӳртсем темшӗн пире хирӗҫ йӑртлатаҫҫӗ? Кам вӗсене каялла туртать?— ыйтать Клара,— Мӗншӗн, э?

«Мӗншӗн? Ма ун пек? Мӗншӗн?» Ҫула тухнӑранпа амӑшӗн хӑлхине миҫе пин «мӗншӗн?» кӗрсе тухмарӗ-ши? Ӑнлантара-ӑнлантара чӗлхи ывӑнчӗ.

Тӑваттӑмӗш кун, ирех, Илэпи кантӑк умне ӳпӗнчӗ. Акӑ кӗтнӗ вырӑн: пуйӑс пыллӑха пырса кӗрет. Кунта унчченхи пекех: тункатисене те тасатман, тыррине те акман. Хӗрарӑмӑн тӳсмелле мар ӑш вӑркать. Ҫакӑнта унӑн юратнӑ мӑшӑрне курас ӗмӗчӗ татӑлнӑ. Ҫакӑнта ӑна вӑрҫӑ хӑйӗн вӗри ҫулӑмӗпе ҫунтарнӑ. Татах тӗмсӗлсе пӑхрӗ Илэпи. Вӑл Энтри ларнӑ лупашкана, пӗчӗк хӗрӗ хӗсӗннӗ тунката тымарӗсене курасшӑн пулчӗ, анчах куҫсем ним те шыраса тупаймарӗҫ. Пуйӑс, ураписем тӑкӑртӑк-тӑкӑртӑк юрланӑ майӑн, шав малалла ыткӑнать, пыллӑх юлнӑҫемӗн юлать.

Пуйӑс, ав, вӑрмана чашлаттарса пырса кӗчӗ. Илэпи лак ларчӗ сак ҫине. Чӗлхине ҫӑтнӑн, чылайччен сӑмах чӗнме пӗлмерӗ. Сылтӑм аллипе чӗрине тыткаласа ассӑнассӑн сывлакалать кӑна.

— Анне, эсӗ мӗншӗн чӗнместӗн?

— Мӗншӗн сан сӑну шурчӗ?—тӗпчеҫҫӗ ачасем.

— Пурне те пӗлсен час ватӑлатӑр,—ҫапла каласа хучӗ ҫеҫ.

Кăмăлсăрланчĕç лешсем. Юрать, вăраха тăсăлмарĕ. Тăхлан пĕлĕтсем часах шуса иртрĕç, сар кайăксем каллех чĕвĕлтетме пуçларĕç.

Кăнтăрла çитрĕ. Апат çиме вăхăт. Ачасем сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Амăшĕ карçинкка арчине уçса апатçимĕç кăларчĕ. Çăкăр касрĕ. Çăмах пысăкăш шăрттан, чăкăт татăкĕ валеçрĕ.

— Кама чей кирлĕ?— илтĕнчĕ сасă.

— Пире, пире!

— Анне, чей илетпĕр-и?

Килте сĕт çеç ĕçеççĕ. Пуйăс çинче пылак шыва хăнăхрĕç. Виçĕ стакан лартса хăварчĕ проводница.

Ĕнтĕ хырăм тутă, кăмăлсем çĕкленӳллĕ.

Илэпи ура çине тăрса хĕрĕпе ывăлне тĕрткелесе выляса илчĕ:

— Ну, мĕншĕнккесем, пуçтарăнăр. Часах пуйăс чарăнать. Пирĕн тухмалла.

Ачасем хыпăнса ӳкрĕç. Тĕпĕртетеççĕ. Кашниех хăйĕн япалине пухать.

* * *

«Куккук пушмакки» заставăна вĕсем каçкӳлĕм пырса çитрĕç. Застава начальникĕ Савва Корнилович Топрикин Хуронташев çемйине çывăх тăвансене кĕтсе илнĕ пек йышăнчĕ, таса та çутă пӳлĕме вырнаçтарчĕ.

Вăрăм çул ачасене ывăнтарнă пулас. Вĕсен куçĕсем сĕлкĕш. Çавăнпа та Илэпи Энтрипе Кларăна ниçта та кăлармарĕ, çывăрма вырттарчĕ.

Тепĕр кунне вара пурте уяв тумĕ тăхăнчĕç. Энтри шурă кĕпе çийĕн пионер галстукĕ çыхрĕ. Клара — октябрĕнок. Ун кăкăрĕ çинче пĕчĕк çеç пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр. Варринче — Ильичăн ача чухнехи сăнĕ.

Пуçтарăнса çитнине пĕлнĕ пекех, алăка шаккарĕç. Савва Корнилович иккен. Саламларĕ вăл.

— Кун йĕрки сирĕн, туссем, столовăйĕнчен пуçланмалла. Атьăр,— чĕнчĕ вăл. Сĕтел хушшинче те вăлах сăйларĕ.

Çăва çине вĕсемпе пĕрле тата темиçе пограничник пычĕç.

Йĕри-тавра чечексем чĕлтĕртетеççĕ. Çамрăк йывăçсем те ӳсеççĕ кунта. Лутра-ха, пĕр-ик çул каялла çеç лартнă. Ешерме ĕлкĕрнĕ турачĕсем çинче кайăксем юрлаççĕ.

Илэпин упăшкине каламалли питĕ нумай. Анчах темшĕн чĕлхи çыхланчĕ, сасси тухмасть. Пырне çăмах капланчĕ, тем чухлĕ çăтсан та анмасть. Шалта куççуль вĕрет, халь-халь хăпарса тăкăнать акă. Ун ачисене пĕртте кăтартас килмест хăй макăрнине. Вăл часах лăпланчĕ те сăмса тутри çине тăпра тăрмакла-тăрмакла хучĕ. Питçăмарти тăрăх юхакан куççуль пăт-пăт тумлать упăшкине хупласа выртакан чикĕри тăван çĕр çине.

Застава начальникĕ Топрикин питĕ аван ăнланать Варлам Хуронташев арăмĕн хуйхине. Çавăнпа та вăл амăшĕпе ачисене çăва çинчен пăрса илсе кайма тăрăшрĕ.

— Сире чикĕ тăрăх кăтартса çӳресшĕн,— пĕлтерчĕ вăл.

Ачасен куçĕсем çавăнтах çиçсе илчĕç. Вĕсем тахçанах ĕмĕтленнĕ-çке ашшĕ хураллакă Тăван çĕршыв чиккине курма.

Машина килсе чарăнчĕ. Пурне те лартрĕç. Вара машина чикĕ тăрăх вĕçтерчĕ.

— Қам килет?— ыйтать хуралçă.

— Чикĕ хуралçисен командирĕ пулнă, вăрçă пуçламăшĕнче чикке хӳтĕлесе пуçне хунă Хуронташевăн çемйи,— евитлерĕ застава начальникĕ.

Пурте машинăран тухаççĕ.

Ачасене кунти тавралăх асамлă пек туйăнать. Умра сухаланă çĕр хура тăла тăрăхĕ евĕр тăсăлать. Ун леш енче — ют çĕр. Леререх — çырма-çатраллă вырăн. Тинкерет икĕ пĕчĕк этем. Тен, вĕсен витĕр куçĕсем тăшмана тупасшăн. Никам та мĕшĕлтетмест. Эппин, чикĕре лăпкă. Çавăрăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсен çунса тăракан куçĕсем пограничниксем çине ӳкрĕç. Тинкереççĕ, витĕр курасшăн. Вĕсем мĕн сăнанине хăйсем тата ытти тус-тантăшĕсем валли йăлтах чĕреваррине хумалла.

## 14

Заставăри Ленин пӳлĕмне пограничниксем пухăннă. Сĕтел хушшинче офицерсем тата Хуронташев çемйи. Тĕлпулăва начальник уçать. Вăл пограничниксен тивĕçĕ çинчен калаçать. Вĕсем юратнă Тăван çĕршыв чиккине куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ. Паттăр пограничниксен ячĕсене асăнать. Варлам Хуронташева та манмарĕ.

Ленин пӳлĕмне Полина Николаевна çитрĕ. Варлам

Хуронташев арăмĕ килни çинчен килте кăшт калаçнăччĕ вĕсем. Полина Николаевна Илэпие питĕ курасшăн пулчĕ. Çавăнпа кунта ятарласа килчĕ. Вăл, акă, сĕтел хушшинче пĕртен-пĕр хĕрарăм ларать. Тавçăрма йывăр мар — ку Илэпи. Иртрĕ те ăна алă парса сывлăх сунчĕ. «Эпĕ Полина Николаевна Топрикина»,—терĕ. Ачасене иккĕшне те тĕсесе пăхрĕ вăл. Анчах кусем Илэпин теесси асĕнче пулмарĕ. Кун пек чух ялти шкул ачисене хăнана чĕнекен. Çапла шухăшларĕ те вăл.

Лайăххăн сывлăш çавăрса илме те ĕлкĕреймерĕ, ăна сăмах пачĕç. Полина Николаевна калаçăвне ĕмĕр асран тухман самантран тапратрĕ:

— Паянхи пек астăватăп вăрçă пуçланнă куна. Фашистсем илĕм-тилĕм бомбăсем пăрахма тытăнчĕç. Пограничниксем хăраса ӳкмерĕç, чикке хураллама кар тăчĕç.

Манăн чугун çул станцине кайма тиврĕ. Эпĕ аннепе ывăлăма ăсатрăм.— Полина Николаевнăн тутисем чĕтренсе илчĕç. Сасси çухалчĕ. Пӳлĕмре шăп, шăна вĕçни те илтĕнмелле. Кăшт тăхтанă хыççăн каллех калаçма пикенчĕ.— Станцăран каялла таврăннă çĕре больницăна аманнисене çеç мар, вилнисене те илсе пынăччĕ. Вĕсем хушшинче эпĕ Варлам Хуронташева та куртăм, анчах та ун чухне командир чĕри тапма чарăннăччĕ ĕнтĕ.

Ытла та кăмăллă çынччĕ вăл — Хуронташев юлташ. Çемйи килессе кĕтетчĕ. Пирĕн пĕчĕк ывăлпа — Олегпа вы... выля...— пуçланă сăмахне каласа пĕтерейменрĕ Полина Николаевна, куçĕсем шывланчĕç, сасси чĕтреме тытăнчĕ. Вăл ниепле те лăпланаймарĕ. Вара ăна Савва Корнилович çавăтса илсе тухса кайрĕ.

Илэпи шутсăр пăшăрханчĕ. Çумра лараканни хăлха патне тайăлса çапла пăшăлтатрĕ:

— Амăшĕпе ывăлне лартса янă пуйăса фашистсем бомба пăрахса аркатнă. Çавăнпа йĕрсе ямасăр тӳсеймерĕ мăнтарăн хĕрарăмĕ.

— Пулăшмалла, йăпатмалла ăна,— ура çине сиксе тăчĕ Илэпи. Вăл Полина Николаевнăпа Савва Корнилович хыççăн тухса чупасшăнччĕ. Анчах ăна шăп çак самантра сăмах калама ыйтрĕç. Ун ирĕксĕрех трибуна умне тухмалла эппин.

Чи малтанах Илэпи хăйсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕшĕн чĕререн тав турĕ.

— Юлташсем, вунă çул каялла çитме пикеннĕччĕ эпĕ кунта. Çурма çултан тенĕ пек киле каялла таврăнма

тиврĕ. Упăшкапа иксĕмĕр хушăри кĕпере вăрçă вучĕ хыпса çунтарчĕ. Эпĕ çыран хĕррине ĕмĕрлĕхех пĕччен тарса юлтăм. Пирĕн чи таса ĕмĕтсене тăшман татрĕ.— Илэпин сасси ăша кайрĕ, пичĕ тăрăх куççуль юхса анчĕ. Ана стаканпа шыв лартса пачĕç. Темиçе сыпкăм еçрĕ те кăшт лăпланчĕ. Унтан сăмахне малалла сĕвемлерĕ. Вăл упăшки патне пĕчĕк хĕрĕпе килме тухсан, çул çинче мĕнле инкек тӳсни çинчен каласа пачĕ. Вăрман пыллăхĕнче Энтрие тупни çинчен шарламарĕ. Кĕске калаçăва çапла вĕçлерĕ.— Ман упăшкан — Варлам Хуронташевăн ятне чыслă тытнăшăн сирĕн умăрта пуçа таятăп. Тăван çĕршыв чиккине çирĕп хураллас йывăр еçĕрте сире çамрăклăх, хастарлăх, сывлăх сунатăп. Пурнăçăрсем телейлĕ пулччăр.

Тухса калаçакансем татах пулчĕç. Кашниех Энтрипе Кларăна асăнмалăх мĕн те пулин пама тăрăшрĕ. Кĕнеке, альбом, вăйăсем ирттермелли тĕрлĕрен хатĕрсем.

Энтрипе Кларăн та заставăна парса хăвармалли пур. Вĕсем хăйсен дневникĕсене парнелерĕç. Энтрин унта «пиллĕксем» кăна, Кларăн —«тăваттăсемпе» «пиллĕксем».

Дневникăн пĕрремĕш страницине çапла çырса алă пуснă: «Юратнă атте, эсĕ лăпкăн çывăр. Пирĕн тĕллев— сан пекех паттăр çитĕнесси. Тăван çĕршывшăн усăллă çын пулма тăрăшăпăр...»

## 15

Хăнасене ăсатнăранпа эрне иртрĕ. Савва Корнилович килне пĕррехинче савăнăçлă килсе кĕчĕ.

— Полина, пăхас теместĕн-и?— ыйтрĕ вăл диван çинче кĕнеке вуласа ларакан арăмĕнчен.

— Мĕн вара унта сан?— кăсăкланчĕ Полина Николаевна упăшки портфельтен тем кăларнине асăрхаса.

— Хуронташев çемйипе çаптарнă сăнӳкерчĕк. Пограничниксем хушшинче арăмĕ, ывăлĕ, хĕрачи лараççĕ.

Савва Корнилович арăмĕпе юнашар вырнаçрĕ.

Полина Николаевна тĕмсĕлсе пăхать.

— Кур-ха, ачисем мĕнле илемлĕ тухнă,— тет Савва Корнилович.— Ав, вĕсем пĕрремĕш ретре — Энтрипе Клара.

— Чим-ха, Илэпи ачисемпе килнĕ-и вара?— Полина чăрлаттарса пăхрĕ упăшкин куçĕнчен.— Мĕншĕн эсĕ кун пирки мана систермен? Илэпипе юнашар ларакан ача-

сене, тем пирки вара, ял пионерӗсем тесе шутланӑ эпӗ.

— Ну, мӗн...— текелерӗ упӑшки. Татӑклӑн ним те калаймарӗ.

Унччен те пулмарӗ, арӑмӗ тем аса илнӗн ҫамкине аллипе ҫатлаттарса илчӗ.

— Савва!— кӑшкӑрса ячӗ вӑл.— Ил-ха хӑвӑн пӗчӗк чухнехи сӑнӳкерчӗке.

Савва Корнилович сӗтел ещӗкӗнчен альбом кӑларчӗ те хӑй ашшӗпе амӑш хушшинче тӑрса ӳкерттернӗ сӑнӳкерчӗке тупрӗ. Ун чухне вӑл вунпӗр ҫулсенче пулнӑ. Альбома уҫнӑ страниципех арӑмне тыттарчӗ.

Полина икӗ сӑнӳкерчӗке танлаштарать. Пӗрре Энтрине, тепре — пӗчӗк Саввӑна тӗсесе пӑхать.

— Каснӑ-лартнӑ пӗр сӑн! Савва, ку тем тесен те пирӗн Олег,— кӑшкӑрса ярать Полина Николаевна.— Тупата, пирӗн ача!

— Мӗн?— ӑнланмарӗ лешӗ.— Ӑҫта Олег?

— Пӑх! Иксӗрӗн те пуҫсем тӑрӑхларах, хӑлхӑрсем те пӗр пекех.. Ҫавӑ, ҫавӑ! Пирӗн ывӑл. Вӗсем патне яла каятпӑр!— ура ҫине сиксе тӑчӗ Полина Николаевна.

— Тӳрех ан ӑшталан-ха эсӗ,— лӑплантарма пикенчӗ упӑшки.— Шухӑшла-ха, пирӗн ывӑл мӗнле майпа Хуронташев арӑмӗ патне лекнӗ пулӗ?

— Пӗлместӗп,—Полина Николаевнӑн пичӗ улшӑнчӗ. Шуранкарах сӑнӗ кӑшт хӗрелчӗ.—Пӗлместӗп. Анчах астӑватӑн-и? Варлам Хуронташев пирӗн хӗрача ҫуралчӗ тенине? Ывӑл ача пирки ҫӑвар уҫмастчӗ вӑл.

Савва Корнилович шухӑша кайрӗ. Хуронташев арӑмӗ тӗлпулура та упӑшки патне хӗрачипе ҫула тухни ҫинчен асӑнчӗ. Тата вӑл пуйӑса бомбӑсем ӳксе ҫунтарнине те курнӑ. Тен... Шухӑшлама хӑрушӑ. Ӗненме хӗн. Миҫе ҫул иртнӗ унтанпа?!

— Поля, вӑл хамӑр ача пулнине халь тин ӑҫтан пӗлӗпӗр?

— Эсӗ мантӑн-и вара, Савва? Пирӗн ачан хырӑмӗ ҫинче турпалли-кӗмӗл ҫулҫӑ пур. Ҫухалсан та тупатпӑр, теттӗмӗр. Ҫав турпалли пулсан, Энтри — пирӗн Олег.

Топрикинсем отпуск ыйтса илчӗҫ. Тепӗр темиҫе кунтан чӑваш ялне тухса та кайрӗҫ.

## 16

Хӑнаран таврӑнсанах, Илэпи арча тӗпӗнчен упӑшкин хаҫатпа чӗркенӗ пысӑклатнӑ сӑнӳкерчӗкне кӑларчӗ.

— Анне, кам ку?— амăшĕн аллинчен усăнчĕ Энтри.

— Ай-уй, мĕнле маттур салтак!— тĕлĕнет Клара. Илэпи ачисене хăйпе юнашар лартрĕ.

— Ачасем, ку — сирĕн аçăр. Варлам Хуронташев — пограничниксен командирĕ.

Куç илмесĕр пăхаççĕ ачасем.

— Питĕ чипер-çке пирĕн атте,— тет Энтри.

— Анне, эпĕ атте сăнлă, çапла-и?— çаврăнкалать Клара амăшĕ çумĕнче.

— Çук, эпĕ вăл атте сăнли,— тавлашать Энтри.— Арçын ача яланах ашшĕ сăнлă пулать.

— Эпĕ ун сăнлă,— парăнмасть Клара.

— Эпĕ, эпĕ!..

— Ан тавлашăр, айвансем. Эсир иксĕр те аçăр сăнлă. Аçу сăнлă пулмасан, кам сăнлă пулас сирĕн?— кулкалать Илэпи. Ачасем шăпланаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те ашшĕ сăнлă пулнăшăн савăнаççĕ.— Эпир ăна рама ăшне лартса стена çумне çакар. Ялан пире курса лартăр вăл.

Энтри алкумĕнчен, çӳлĕк çинчи ещĕкрен, мăлатукпа вĕтĕ пăтасем илсе кĕчĕ.

Сăнӳкерчĕке урам енчи икĕ чӳрече хушшинчи стена çумне çакрĕç. Кивелсе çитнĕ пӳрт ăшчикки çуталсах кайрĕ. Халиччен хи пек мар, хăтлă.

— Ĕнтĕ пирĕн те çемье пуçлăхĕ пур. Тек никамран та хăрамăпăр.

— Ялта путсĕр ачасем тапăнса хĕнеме пуçласан, вăл хӳтĕлет-и мана?— ыйтать Энтри.

— Хӳтĕлет, паллах. Эсĕ тӳрех кала: «Эпĕ пограничник ывăлĕ. Мана тивме ан хăй!» Лешсен вара аллисем лаштах усăнĕç.

Киле таврăннă ятпа Илэпи çăмарта хăпартрĕ. Виççĕшĕ сĕтел хушшинче шăкăлтатса ларчĕç вара. Сăмах-юмах ытларах чикĕ хĕрринче курса çӳрени пирки пулчĕ.

Çакнашкал хыпар нихăçан та килте кăна хупăнса юлмасть, пĕтĕм яла сарăлать вăл. Тăлăха юлнă хĕрарăмсем ялта сахал мар-çке. Халлĕхе пĕр Илэпи кăна упăшкин вилтăприйĕ çинче пулса килчĕ.

## 17

Кĕпер патĕнче анса юлчĕç вĕсем çула май ларса килнĕ машина çинчен. Ял еннелле такăрлатнă ансăр сукмакпа ыраш пуссине кĕчĕç. Ыраш калчи пилĕк та-

ран ӳсме ёлкĕрнĕ. Янкăр тӳпере тăри тем кĕвĕлесе юрлать. Ăна ăнланма ĕмĕтленнĕн Савва Корнилович тăпах чарăнса тăчĕ. Пуçĕнчи карттусне хывса, тарпа нӳрленнĕ сăран кăшăлне сăмса тутрипе шăлкаланă май, тавралăха пăхса çаврăнчĕ. Хăйне вăл тĕнче пек пысăк чара тĕпĕнче тăнăнах туйрĕ темшĕн. Пуç çийĕн карнă пĕркенчĕкĕ ун кăн-кăвак. Тен, çавăнпа-ши çĕрпе пĕлĕт çыпăçнă çĕрти вăрман тăрăхне чакăр сăн çапнă? Куç ытамне тем те кĕрет. Ав юханшыв. Вăл чечеклĕ кавир çине хунă сенкер хăю пек авкаланнă. Икĕ çыран айккипе ялсем ларaççĕ. Ытла йăвă кунти ялсем. Килĕ-çурчĕсем йăлтах лăстака йăмрасем хушшинче.

— Поля!— чĕнчĕ Савва Корнилович хăйĕнчен чылай мала иртсе кайнă арăмне.— Тăхта, тăр-ха кăшт. Тавралăха сăна. Чăваш çĕршывĕ мĕн тери хитре иккен! Сывлăшĕ тата! Чăн-чăн симпыл! Эх, пурăнасчĕ кунта. Анчах çĕр ĕçне пĕлменни касать. Ăна вĕренмен этемрен ялта усси çук çав.

Полина Николаевнăн чарăнса вăхăта сая ярас килмест. Çитес çĕре çитмеваскать. Çав самантра çитмесен, Илэпипе ачисене тем пулас пек хăрать.

Савва Корнилович тек калаçмарĕ, арăмĕ хыççăн пуçне чиксе утрĕ.

Ансăр хăмасем çапкаласа хайланă укăлча хапхине уçса, Топрикинсем яла кĕчĕç.

Полина Николаевна малалла ыткăнчĕ.

— Ăçта тĕпĕртеттерен?— чарма пикенчĕ упăшки мăшăрне. Хăй кам чӳречинчен шаккам-ши тенĕн ун-кун пăхкаларĕ.

Çак вăхăтра, те вĕсене чӳречерен курса, уй хĕрринчи килтен пĕр çап-çамрăк хĕр тухрĕ.

Савва Корнилович унран Илэписен тĕлне кăтартса яма ыйтрĕ.

Ял хĕрĕ çывхарчĕ те чăрр пăхрĕ вырăсла калаçакан çар тумлă, сухаллă çын куçĕнчен. Пĕр-ик утăмра — хĕрарăм. Вăл майра тумĕпе. Чунĕ теме сиссе иккĕленнĕн пăтăр-патăр чĕнмерĕ хĕр. Тен, çак çынсем Илэпи аппăшне питĕ кирлĕскерсем. Ăçтан пĕлĕн? Ертсе çитерчĕ вара аппăшĕ пурăнакан кил патне. Хăй кӳлĕ хĕрнелле уттарчĕ. Полина Николаевнăпа Савва Корнилович пĕчĕк пӳрт умĕнче тăрса юлчĕç. Никам та асăрхамасть вĕсене, хирĕç те тухса илмеççĕ.

— Килте çук. Телеграмма памаллаччĕ, тухрăмăр та килтĕмĕр,— мăкăртатать Савва Корнилович.

Арăмĕ пĕр сас-хурасăр килсе кĕресшĕн пулчĕ çав. Анланмалла мар япала шиклентерчĕ ăна.

— Атя кĕрер. Урамра тăнинчен усси çук.

Полина Николаевна вырăнтан та тапранмасть-ха. Малтан кунта килме пит васканăскер халĕ иккĕленсе тăрать мар-и? Сасартăк Илэпи ывăлĕ Олег мар пулсан? Вара вăл кунтан чĕррĕн тухса кайма вăй çитерессе шанмасть. Тепĕр шухăш пырса кĕчĕ: Илэпи начар пурăнать, тен, вăл ывăлне Энтри-Андрюшăна пире усрама парĕ?

— Нумайччен çапла хытса тăрас тетĕн-и?— сăмах хушрĕ татах Савва Корнилович.

## 18

Илэпи кăнтăр апатне таврăннăччĕ. Ачисем кĕтнĕ ăна. Вучахра кăвайт çунать. Хуранта какай яшки лăкăртатса вĕрет. Çăмахне Клара паçăрах çăрнă.

— Час пиçет-и?— кăсăкланать Энтри.

— Хырăму хыр тăрне кайрĕ-и?— тет амăшĕ яшкана çăмах янă май.

Энтри шарламарĕ — шкапран çатма туртса кăларчĕ. Унта вăл пуринчен вăрттăн ретĕн-ретĕн вĕтĕ пулă ăшалама хурса тухнă. Ача ирхине пулла кайнă пулнă. Кăшман çырми тăрăх чул айĕсене хыпаласа çӳренĕ те темиçе пулă тытнă.

— Ай-уй, ку мĕн?— ыйтрĕ Клара, çатма варринче тем асăрхаса.

— Рак.

— Кам пачĕ?

— Хам тытрăм.

Амăшĕ те савăнса пăхать.

— Анне, мана рак чутах шĕвĕр пӳрнесĕр хăваратчĕ.

— Айтурах! Мĕнле апла?

— Чул муклашкине çĕклерĕм те хыпашлама алла чиксе ятăм. Ман пӳрнене кап хыпрĕ. Нимпе те ямасть. Туртса кăлартăм. Рак!

Пӳрне вĕçĕнче рак çакăнса тăни Кларăна питĕ кулăшла пек туйăнчĕ те кулса ячĕ пĕрĕхтерсе. Ăна кура Энтрипе амăшĕ те ахăлтатмасăр чăтаймарĕç.

— Энтри, ку ракне мĕн тăвасшăн эсĕ?— ыйтать Клара.

— Ăшалатăп.

— Чим-ха, рака ăшаламаççĕ, ăна пĕçереççĕ.

Клара йĕкĕлтеме тытăнчĕ те:

— Рак какайне ҫиекенскер аля-ли! Ха-ха-ха!

Шăп ҫак вăхăтра виҫҫĕшĕ те пĕр харăс илтрĕҫ:

— Кĕме юрать-и?

— Кĕрĕр, кĕрĕр,— терĕ Илэпи.

Пӳрте Топрикинсем кĕрсе тăчĕҫ.

Илэпи шак хытса кайрĕ. Тӳрех сăмах та чĕнме пĕлмерĕ-ха. Ăна кура ачисем те шăпăрт пулчĕҫ, хăлхисем патне ҫити сарăлнă тутисем самант пĕрĕнчĕҫ. Энтри ҫатмине кăмака умне лартрĕ.

— Систермесĕр килсе кĕрсе, канлĕхĕре пăснăшăн каҫару ыйтатпăр,— терĕ Савва Корнилович.

Илэпи тăна кĕчĕ.

— Эй, ҫырлах! Мĕн тăратăп эпĕ айванла? Иртĕр, ларăр, хăна пулăр — кускалама тытăнчĕ Илэпи.— Тӳрех сĕтел хушшине сикĕр. Пирĕн вучахри хуранта ҫăмах яшки пиҫнĕ. Ларăр-ха. Чăваш апатне ҫисе пăхăр.— Кларăна ĕҫ хушрĕ.— Пăлтăртан уйран илсе кĕр.

Энтрипе Кларăн шуйланнă чунĕсем лăпланчĕҫ. Чăнах, палламан ҫынсем мар-ҫке: чикĕ хĕрринчи «Куккук пушмакки» заставăра курнă вĕсене иккĕшне те.

Килнĕ ҫынсем сывлăх сунса тăрăхла сак ҫине ларчĕҫ.

Полина Николаевна куҫĕсем ҫавăнтах Энтри ҫине ӳкрĕҫ, шăтарасла пăхать. Ача ҫакна сисрĕ те шутсăр вăтанчĕ, урама тухасшăн ыткăнчĕ алăк патнелле.

— Тăхта-ха!— персе ячĕ Полина Николаевна. Сасси илемсĕртерех тухнăран ача шартах сикрĕ, урисем тăпах чарăнчĕҫ.— Эсĕ мана кирлĕ.

Энтри ăнланаймасть инкене. Вăл Илэпи ҫумне пырса тĕршĕнчĕ.

— Тархасшăн, ача кĕпине уҫса хырăмне кăтартăрха,— ниҫта кайса кĕме пĕлмесĕр вĕтеленет килнĕ хĕрарăм.

— Полина, ун пекех ан васка-ха, йĕркеллĕ пул,— асăрхаттарать упăшки. Арăмĕ ун еннелле ал ҫеҫ сулчĕ.

«Ах, тулăксăрскер»,— тесе калама ăна ҫылăх та пулĕ. Кирек мĕнле сăпайлă хĕрарăм та ҫак самантра виҫерен тухмасăр тӳсеймĕ. Ара, ун шутсăр пĕлес килетҫке: вĕсен ывăлех-ши ку ача?

Илэпи, ырра мара сиснĕн, ачана хăй ҫумне пăчăртарĕ. Вăл Энтрине пӳртрен кăларса ярасшăн алăк патнелле тĕкрĕ. Анчах Полина Николаевна ҫулне пӳлчĕ. Тăрать тимĕр юпа пек умра. Ун ҫине пĕрре пăхсах ăнланăн: вăл тем тусан та каялла чакас ҫук.

— Ӑатартăр хырăмне,— тет тилмĕрсе.— Кĕмĕл çулçă-турпалли çук пулсан, эпир халех тухса кайма хатĕр.

Çак сынсене мĕн кирлине Энтри ниепле те ăнланаймасть. Вăл «Атте, пулăш!» тенĕн стена çумĕнчи Варлам сăнӳкерчĕкĕ çине пăха-пăха илет.

Илэпи пăлханса ӳкрĕ. Унăн чунĕ тавçăрчĕ: кусем никам та мар, ача шыраса килнĕ çынсем. Мĕн тумалла? Турпалли хĕлле палăрманпа пĕрех. Тен, Энтри вĕсен ачи мар? Çанçурăм хĕвелпе пиçсен, турпалли кĕмĕл çулçă евĕр çуталса тăнине таçтанах куран. Вĕсен ачиех пулĕ эппин. «Халь тин ачана ăçтан такама парса ярăн? Энтрисĕр пĕр кун пурăнаймăп. Вăл Варлампа çыхăннă тĕвĕ. Кĕпине уçмастăп, турпаллине кăтартмастăп»,— ăшра сăмах татрĕ хăйхискер. Анчах пуçа тата тепĕр шухăш пырса çапрĕ. Çак шухăш ăна Полина Николаевна вырăнне лартрĕ: унăн хĕрачи те çав хăрушла пăтăрмах вăхăтĕнче çухалма, ăна урăх хĕрарăм тупма пултарнă. Ача шыраса пырсан леш хĕрарăм çапла хирĕçлесен? Вĕри юн вĕресе хăпарчĕ, пит-куçа çапрĕ. «Çук-çук! Курччăр!» Вара вăл Энтрине йăвашшăн çапла каларĕ:

— Ывăлăм, атя, кĕпӳ тӳмисене вĕçертер.

Амăшĕ каларĕ пулсан, итлемеллех. Эрне ытларах çеç вĕри çанталăкра кĕпесĕр çӳренĕ, ӳт тĕттĕмленме те ĕлкĕрнĕ, турпаллине вара хĕвелĕ чĕркĕмĕлпе сăрланă.

Курчĕ çеç Полина Николаевна ачан кĕмĕл çулçă-турпаллине, урмăш сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Савва! Турпалли пур! Вăл пирĕн ача! Пирĕн Олег!—пуççапнăн чĕркуçленсе, Энтри урисене ыталаса чуптуса пĕтерчĕ. Хăй ӳлесе макăрать.— Эпир, ывăлăм, санăн аçупа аннӳ. Миçе çул шырарăмăр, тинех тупăнтăн! Ӑаяр, ывăлăм, киле. Пуçтарăн!

— Анне, мĕн тет вăл?— Энтри вырăсла лайăххăн пĕлеймест-ха. Çавăнпа та вăл Полина Николаевна мĕн каланине чухласа илеймерĕ.

— «Эпир санăн аçупа аннӳ», тет.

— Мĕн?— тĕлĕнчĕ вăл.

— Сана кунтан илсе каясшăн. «Пирĕн ывăл», тет.

— Ан ĕнен! Тĕрĕс мар, манăн анне эсĕ, эсĕ. Атте ав,— Энтри стена çумĕнчи сăнӳкерчĕке тĕллесе кăтартрĕ.— Манăн атте ав. Вăл Тăван çыршыв чиккине хӳтĕлесе пуçне хунă.

Энтри Илэпие пилĕкĕнчен çатăрласа тытрĕ. Унтан аллисем лăштăр çемçелчĕç те тĕшĕрĕлсе анчĕ урайне.

— Пĕтертĕмĕр ачана!— сехĕрленсе ӳкрĕ Илэпи. Йăпăр-япăр ярса илсе, ăна тĕпелти кутник çине çĕклесе вырттарчĕ. Пуçне ача кăкăрĕ çине хурса чĕрине итлерĕ.— Пĕчĕк чĕри тӳсеймерĕ ĕнтĕ, çурăлчĕ пулас.

— Вилчĕ!— çухăрса ячĕ Клара.— Энтри пиччем вилчĕ!

— Ан васка терĕм-çке,— ятлаçать Савва Корнилович.— Ачашласа хăнăхтармаллаччĕ.

Полина Николаевна — тухтăр. Халĕ ĕнтĕ ачана çăлса хăварасси унтан килет.

Çакнашкал самантра такам та çухалса каять çав. Сумкине уçрĕ, аллисем чĕтренипе ним те тупаймасть. Юрать-ха, Савва Корнилович пулăшрĕ.

Эмеллерĕç ачана.

Кăшт тăхтасан, Энтрие сăн кĕчĕ. Хĕрелчĕ вăл. Вара куçне уçрĕ. Умĕнче тăракан Илэпие курчĕ те:

— Анне,— чĕнчĕ вăл,— ман темшĕн вăй пĕтсе, куç хуралса килчĕ.

— Выртса кан кăштах, пулкалать вăл ун пекки,— терĕ Илэпи, ывăлне вырăн çине вырттарса.

* * *

Лăпкăн, шăкăл-шăкăл калаçса пурăнатчĕ Илэпин пысăк мар çемйи. Ачисем амăшне хисеплетчĕç, амăшĕ ачисен кăмăлне хăварас мар тесе тăрăшатчĕ. Анчах вăрçă хăй çинчен мантарасшăн мар иккен вĕсене.

Полина Николаевнăпа Савва Корнилович килсе кĕни Илэпие калама çук пысăк шухăша ячĕ.

Акă тăватă çын виле çинчи пек пĕр чĕнмесĕр пуçа чиксе лараççĕ. Энтри ерипен тăчĕ.

— Анне, сĕт пар-ха, ман питĕ хырăм выçрĕ,— терĕ Энтри, варне сăтăркаласа.

— Ача-пăчан чирлесси те, сываласси те çавăнтах иккен,— текелесе, Илэпи Энтрие пĕр стакан сĕт ярса пачĕ. Сĕт ĕçсен вăй кĕчĕ ачана. Вăл кутник çинчен анчĕ те тула тухса кайрĕ. Никам та чармарĕ ăна. Клара та унран юлмарĕ. Пĕр-пĕрин çумне çĕленĕ пек çӳреççĕ вĕсем ялан.

— Çӳреччĕрех уçă сывлăшра.

Илэпи хăнасене сĕтел хушшине шутарчĕ. Тирĕкре çăмах яшки пăсланать. Кăкшăмпа сăра та илсе тухрĕ нӳхрепрен.

Апат нихăшĕн те анмасть. Ирĕксĕр тенĕ пек çике-

леççĕ. Шăртланнă кăмăлсем майĕпен пусăрăнчĕç. Пуçланчĕ тӳлек калаçу. Чĕрере мĕн пуррине уçаççĕ. Илэпи те Энтрие мĕнле тупни, ăна ку тарана çити мĕнле пăхса ӳстерни çинчен каласа парать.

Икĕ хĕрарăм. Иккĕшĕ те аркăра ача сиктернĕ. Амăшĕ пуласси — пысăк телей. Ахальтен мар Полина Николаевна куççульне чараймасть. Савва Корнилович арăмне çурăмĕнчен лăпкать:

— Ан йĕр, Полина,— тет вăл.—Ĕнтĕ хуйхă-суйхă кая юлчĕ.— Хăй Илэпи куçĕнчен чăрлаттарса пăхать.— Ыран ывăла илсе каятпăр.

— Чимĕр-ха,— пӳлчĕ ăна Илэпи.— Тӳрех мĕнле майпа ача тыттарса ярăп-ха сире? Малтан йĕркисене пĕлĕпĕр.

— Тĕнчере хăй çуратнă ачине ашшĕ-амăшĕнчен уйăрас саккун çук,— çирĕппĕн татса хучĕ Полина Николаевна.— Сана, Илэпи, пирĕн ачана ку тарана çити пăхнăшăн ахаль тумăпăр.

— Хам туйăмсемпе суту-илӳ тумастăп,— касса татрĕ Илэпи.—Тепĕр тесен, пирĕн хамăрăн канлĕхшĕн кăна тăрăшмалла мар. Ачин туртăмĕ таçталла-ха? Çамрăк чуна хуçса пăрахас марччĕ пирĕн. Акă мĕн.

— Эх, Илэпи, эсĕ пирĕн ывăлăмăра хăвна ытлашши хăнăхтарнă. «Эпĕ çуратман, аçупа аннӳ пур, вĕсем сана илме килеççех», тесе мĕншĕн асăрхаттарса тăман-ха эсĕ ăна?— сассине çĕклентерсех калаçма тытăнчĕ Полина Николаевна.

— Тур каçартăрах. Çав усал хыпара мĕнле калам тет ачана? Чĕрĕ чун-çке вăл. Енчен эсир тупăнман пулсан унтан телейсĕрри те пулмĕччĕ çĕр çинче. «Тăлăхтурат эпĕ» тесе хурланса та мĕскĕнленсе ӳсĕччĕ. Çук, çук, каçарăр та, апла паврама хал çитереймен эпĕ, ача хаваслăхне пусарса тăрайман. Энтрипе Клара ман çумра хăйсем çурма тăлăххине те туйман. Эпĕ вĕсене чунран савса тăнă. Энтрие, тен, ытларах та юратнă пулĕ. Ăшри туйăм çапла хушса тăчĕ-тĕр, мĕншĕн тесен вăл маншăн чăннипех пач тăлăх-çке-ха.

— Пирĕн ывăл сирĕн ача маррине пĕлменех теессĕн-и эсĕ, Илэпи?— тĕпчет Полина Николаевна.— Нивушлĕ ял çыннисем систермен ăна? Ун пек чух, уйрăмах ачасем, кӳрентермесĕр тӳсеймеççĕ.

— Каларăм-çке сире паçăр: эпĕ яла икĕ ачапа таврăнсан, ывăлĕ — Варламăн малтанхи арăмĕн ачи тесе сас кăларчĕç. Эпир ним те шарламарăмăр. Элек часах

сирӗлчӗ, каярахпа пачах манчӗҫ. Ара, кашни этемӗн хӑйӗн хуйхи-суйхи мӑй таранччӗ-ҫке.

Савва Корнилович та икӗ хӗрарӑм калаҫӑвне хутшӑнса ҫапла ыйтрӗ:

— Эсӗ, Илэпи, пире парасшӑн мар-и вара ывӑлӑмӑра?

— Ним те татса калаймастӑп. Анчах Энтрие питӗ шеллетӗп. Вӑл ачи урӑхларахскер — чунӗ час ванать унӑн.

Ҫак сӑмах Топрикинсене чӑннипех пӑлхантарса ячӗ. Ҫитменнине тата, вӑхӑт нумая кайрӗ, ачасем таврӑнмаҫҫӗ.

— Пӗчӗккисем ҫухалмарӗҫ пулӗ те?— кӑн-кан пӑхапӑха илет кантӑкран Савва Корнилович.

Сӑмах ҫинех Клара килсе кӗчӗ. Хаваслӑ хӑй. Шӑрчӑк евӗр юрласа та сиккелесе ҫеҫ ҫӳрет.

Ырӑ мара сиссе, Топрикинсем ун ҫумне ҫулӑхрӗҫ:

— Олег ӑҫта?

— Кала хӑвӑртрах.

— Мӗнле Олег?— Клара куҫӗсем тӗлӗннипе алтӑр пек чарӑлчӗҫ.

— Энтри пирки ыйтаҫҫӗ вӗсем санран,— ӑнлантарчӗ амӑшӗ. Ана пӑлтӑра илсе кӗчӗ те йӑпатса ыйтрӗ:— Чӑнах, ӑҫта вара вӑл? Часах каҫ пулать. Клара, эсӗ пӗлетӗн пулас?

— Пӗлетӗп-ҫке. Вӑл пытанчӗ.

— Ах, ҫырлах! Ӑҫта пытанчӗ?

— Энтри шарлама хушмарӗ. Каласан, вӑл мана ятлать. Эсӗ, анне, пӗртте ан кулян. Эпӗ ун патне каятӑп. Иккӗн нимрен те хӑрамастпӑр.

Ҫӗр каҫрӗҫ. Тепӗр кунне те Энтри киле таврӑнмарӗ. Хыпса ҫунаҫҫӗ хӑнасем.

Юлашкинчен тавҫӑрчӗҫ: Энтри пытаннӑ. Вӗсем каймасӑр, вӑл киле таврӑнмастех.

Тӗрӗсех, Энтри пытаннӑ. Вӑл ҫырмари тӑм чавса кӑларакан пысӑк шӑтӑкра пурӑнать. Ун патне Клара вӑрттӑн апат-ҫимӗҫ йӑтать. Тумтир те илсе кайнӑ, кӗнекине те манман.

Ӗҫ тухманнине Топрикинсем чухларӗҫ. Тепӗр инкексинкек пуличчен тухса кайниччен ырри ҫук, терӗҫ.

— Илэпи, ачан кӑмӑлне пирӗн майлӑ эсӗ ҫеҫ ҫавӑрма пултаратӑн. Тархасшӑн, тавӑрса пар пире хӑмӑрӑн ывӑлӑмӑра. Сӑнӗпе те вӑл каснӑ-лартнӑ ашшӗ — Савва Корнилыч. Санӑн пӗр хӗр пур. Шелле пире,— йӗре-йӗре

тилмӗрчӗ Полина Николаевна тертлӗ ҫула тухас умӗн.

Илэпи чӗри ҫурмаран ҫурӑлмаллипех ҫурӑлать. Вӑл Топрикинсене те хӗрхенет. «Илсе кайччӑрах пуль»,—тесе кулянать. Энтрие куриччен кӑна ҫапла шухӑшларӗ вӑл.

Топрикинсем кайсанах, Клара ҫырмари шӑтӑк патне вӗҫтерчӗ.

— Кайрӗҫ!— кӑшкӑрчӗ вӑл ҫитнӗ-ҫитмен.— Атя киле, Энтри!

Чупрӗҫ ҫавтӑнса.

Киле килсе кӗрсен, Энтри Илэпие мӑйӗнчен ыталарӗ те чӗкеҫле чӗвӗлтетрӗ:

— Анне, эпӗ сана ҫав тери юрататӑп. Эсӗ, пӗр эсӗ ҫеҫ манӑн анне. Лешсене эпӗ кураймастӑп, тек пирӗн пата ан килччӗр вӗсем. Юрӗ-и?

Илэпи Энтрине ыталаса чуптурӗ. Сар ҫу пек ирӗлчӗ унӑн чунӗ. Ҫук, вӗсем пӗр-пӗринсӗр пурӑнаймаҫҫех.

## 19

Ҫу пуҫламӑшӗ. Тӗлӗнтермӗш хыпар сарӑлать: Илэпи чул ҫурт лартать. Ял пуҫланнӑранпа та урамсене чул ҫурт илемлетни пулман. Ҫынсем пӗри те тепри Илэпи тӗлне пыра-пыра чарӑнаҫҫӗ. Чӑнахах та-мӗн. Темле ҫынсем кирпӗч ҫине кирпӗч купалаҫҫӗ. Таврара шак-шак шаккани янраса тӑрать. Пуринчен ытла мучисемпе кинемейсене акӑ мӗн кӑсӑклантарать: хакла ларать-ши ҫакӑ кирпӗч ҫурт? Йывӑҫринчен йӳнӗреххине пӗлсен, ӗмӗтпе шухӑша каяҫҫӗ.

Ӗҫлекенсене апла та капла вӗрентсе тӑраканӗ — Савва Корнилович Топрикин. Вӑл Илэпие ачисемпе пурӑнма чул ҫурт лартса парать. Мӗншӗн ачисемпе? Илэпин пӗр ача — Клара ҫеҫ-ҫке? Энтри тупӑннӑ ашшӗ-амӑшӗ патне кайман-и вара? Ҫук ҫав, кайман. Илэпи паман пуль. Апла шухӑшлани йӑнӑш.

Пӗррехинче Илэпи Энтрине хӑйпе юнашар лартса ӑна ӑҫта, мӗнле майпа тупнине тӗп-тӗрӗс, йӑлтах каласа пачӗ.

— Тыттаран эсӗ, анне,— ӗненмерӗ Энтри.— Мана юратма пӑрахрӑн пулӗ те ҫав вырӑспа майрине парса ярасшӑн калан.

— Мӗн эсӗ, Энтри? Эпӗ сана чунтан юратнине ху туйса тӑран-иҫ.— Илэпин питҫӑмарти тӑрӑх куҫҫуль юхса анчӗ.— Папупа маму сана пӗрле пурӑнасшӑн ҫунаҫҫӗ-ҫке.

— Пустуя ан калаҫ,— тет Энтри.— Эсӗ ҫуратнӑ мана.. Эсӗ, эсӗ ҫеҫ ман анне. Эпӗ кунтан ниҫта та каймастӑп.

Шӑп ҫак калаҫу хыҫҫӑн вӗсем патне иккӗмӗш хут Полина Николаевна ҫитрӗ. Вӑл ачи пирки хут тутарса илсе килнӗ.

Пӗр-икӗ кун пурӑнсан, Полина Николаевна ачана ирӗксӗрлесе тенӗ пек илсе тухса кайрӗ. Кларӑпа амӑшӗ питӗ кулянчӗҫ, выртсах макӑрчӗҫ. Унсӑрӑн пӳрт ӑшчикки те хӑтсӑр иккен.

Ҫӗр иртрӗ. Ирхине алӑк уҫӑлчӗ те, Энтри кӗчӗ те тӑчӗ. Илэпи ҫӑвар уҫиччен ӑна пырса ыталарӗ вӑл.

— Анне, эпӗ таврӑнтӑм,— чуптурӗ ӑна питӗнчен.

— Маму ӑҫта?

— Пӗлместӗп. Эпӗ вӑрттӑн тартӑм унран.

— Э-эх,— терӗ амӑшӗ, тахӑшне хӗрхенсе.

— Анне, ытах сирӗн мана усрас килмесен, вӑрмана кайӑп, унта пӗччен пурӑнӑп.

— Эй, ҫырлах, кирлӗ мара ан пупле-ха. Эпӗ сана мӗнле усрамӑп, тет. Ых, ҫав эсрелсене,— ылханса илчӗ вӑл вӑрҫӑ пуҫлакансене.

Ҫак кун Энтри вырӑн ҫине тӳнчӗ те уйӑх иртмесӗр те тӑраймарӗ. Йывӑр чирлерӗ вӑл, аташсах выртрӗ.

Полина Николаевна та ҫав кунах персе ҫитрӗ. Курчӗ те чирлӗ ывӑлне йӑлтах ӑнланчӗ: ҫаврӑнмасть ача чунӗ вӗсен енне.

Ачана чиртен сыватмалла. Вӑл тухтӑр, мӗнле эмеллемеллине пӗлет. Килне тухса каясса каймарӗ, анчах Илэпи патне те юлмарӗ. Ача тӑна кӗнӗ самантра ӑна курса каллех тӑнне ҫухатасран шикленчӗ. Олег самайланиччен кӳршӗре пурӑнчӗ вӑл. Кайран ывӑлӗпе курнӑҫмасӑрах ялтан тухса кайрӗ. «Ача ҫухалчӗ — хыпса ҫунтӑмӑр; тупӑнчӗ — кӑвар купи ҫине ӳкрӗмӗр»,— тесе тӳсейми кулянать Полина Николаевна. Тем чухлӗ тӑрӑшсан та, вӗсем ача чӗринче ашшӗпе амӑшӗ вырӑнне тупаймарӗҫ. Мӗн тумалла? Асапланаҫҫӗ. «Ӑс кӗриччен пурӑнтӑр эппин Илэпи патӗнче. Пулӑшса тӑрас»,—терӗҫ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн тытӑнчӗҫ Илэпие уйӑхсерен укҫа яма. Халӗ, ав, вӗсене кирпӗч ҫурт лартса парать Савва Корнилович.

— Энтри ӑҫта вара, курӑнмасть пачах?— кӑсӑкланать Турикас хӗрарӑмӗ.

— Кларӑпа иккӗшӗ те лагерьте канаҫҫӗ,— ӑнлантарать Илэпи.

Икĕ эрнерен çĕнĕ çурта пурăнма кĕчĕç те. Ытла хăтлă пулса тухрĕ. Кил хуçи кулса кăна тăрать. Чăнах, мĕнле ан савăнтăр: кирпĕч пĕрене мар, çĕрмест. Çĕр çул ларсан та ванас çук. Ачисен ачисене те пурăнма çитĕ.

— Тавтапуç ĕнтĕ сире, Савва Корнилович. Мĕнпе татам-ши?—тет Илэпи.

— Эпир сирĕн умăрта ĕмĕр парăмра,— çапла каларĕ те Топрикин куçне айккинелле тартрĕ.

Ĕç вĕçленнĕ ятпа ачасем патне кайса килме шутларĕç.

Пионерсен лагерĕ вăрманта. Çитрĕç. Хапха умĕнче дежурнăйсем. Вĕсем пограничник тумĕ тумланнă çынна курсан питĕ тĕлĕнчĕç пулас, унсăрăн çав тери чăрлаттарса пăхас çук. Хăнасене лăстака йывăç айĕнчи сак çине ларма сĕнчĕç. Пĕри Энтрипе Кларăна чĕнме чупрĕ.

Нумай та кĕтме тивмерĕ, Энтрипе Клара сирпĕнсе те тухрĕç. Хушша ларчĕç. Тытăнчĕç вара лагерьте мĕнле пурăнни çинчен ваклама. Вĕсене кунта пурăнма питĕ килĕшет-мĕн.

— Энтри, пире сан папа чул çурт лартса пачĕ,— пĕлтерчĕ ăна Илэпи.

Энтри ним те чĕнмерĕ.

«Атте, анне» теме хăнăхнă ачана теприсене унашкал чĕнме питĕ йывăр. Илэпи, çакна шута илсе, Энтрие Полина Николаевнăна—мама, Савва Корниловича—папа тесе чĕнме хăнăхтарчĕ.

— Ну, ывăлăм, хăçан пирĕн пата, заставăна, пырса куран?

— Пĕлместĕп,— кăшт тăхтасан, вăл çапла хушса хучĕ:— Анне тахçан илсе кайĕ.

Топрикин ачашлас шутпа сылтăм аллине ача çӳçне сĕртĕнчĕ, анчах лешĕ пуçне вĕлт пăрчĕ айккинелле. «Сана маму тӳсейми кĕтет киле таврăнасса» теессĕнччĕ ăна Савва Корнилович. Ача хăйне пуçран шăлма та ирĕк паманнине курчĕ те шăлне çыртрĕ.

Ывăлĕ, ав, Илэпие мăйĕнчен ыталанă та питçăмартинчен чăп-чăп чуптăвать.

Ирĕксĕрех çапла шухăшларĕ вара çын: «Халлĕхе ăна Илэпирен хăйпăтма никам та вăй-хăват çитерейместь».

Хуйхă виçи çеç тытса чарма çук ӳсет.

Уйрăлнă чух Топрикин ывăлне алă пачĕ.

— Ну, часрах пысăклан,— терĕ вăл.— Кларăпа иксĕре те лайăх вĕренме ырă сунатăп.

Май уйăхĕ. Йăвăç-курăк чĕрĕлнĕ самант.

Илэпи килĕнче хаваслă шăв-шав тăрать. Пĕтĕм ял çамрăкĕ пухăннă ун патне.

Пӳртре пăчă пулас, кантăксене яриех уçса янă. Çавăнпа та тăпăртатса ташлани, вăйă юрри урам вĕçне çити сарăлать. Хушăран тата салтак юрри шăранать. Ку юрăра йĕкĕтсен сасси кăна. Хĕрупраçăн ытларах ихĕлтетсе пултăр. Вĕсен шăнкăрав пек савăнăçлă кулли ян та ян янăрать. Пĕтĕм ушкăнра хурланаканни пĕртенпĕр чун пур. Вăл — Илэпи. Шывланакан куçне хăй тăтăшах саппун аркипе шăлать. Аçтан йĕмесĕр тӳстĕр ĕнтĕ, вăл паян Энтри ывăлне çара ăсатать-çке.

Эх, çав вăхăт тени, савăнăç-и, хуйхă-и сан, нимĕн чухлĕ те чухламасть. Унăн хăйĕн ĕçĕ — кунпа çĕре ылмаштарса хутăрласси.

Ӳсрĕ, çитĕнчĕ Энтри — Олег. Аслă классенче вĕреннĕ чух трактор çӳретме хăнăхрĕ. Анчах ăна никам та «Олег» тесе чĕнмест. Шкулта ун ячĕ — Андрей Хуронташев пулчĕ, килте — Энтри. Аттестат илнĕ хыççăн колхоз уй-хирĕнче тракторпа ĕçлерĕ. Халь акă салтак ячĕ тухрĕ ун.

Ывăлне çара ăсатма Савва Корнилович килнĕ.

Илэпи çырăвне илсен, Топрикинсем ачи пирки тĕплĕн канашларĕç.

— Олега хăв патна илсе кил, Савва. Служби заставăра ирттĕр,—хушрĕ Полина Николаевна упăшкине.— Вара эпир ăна мĕнле юратнине пĕлĕ.

— Тăрăшăп,— шантарчĕ ăна мăшăрĕ.

— Ăна кашни кун курса тăни — пысăк телей.

Халĕ пулас салтак тухса кайман-ха, вăл килте. Савва Корнилович ывăлне службăна хăй патне, заставăна, илсе кайма та пултарать. Шухăшлать ашшĕ ывăлĕ пирки. Анчах унран чăн-чăн пограничник тăвайрасса шанмасть. Çарта чи кирли — дисциплина. «Юрĕ,— килĕшет вăл хăйпе хăй,— мĕнле чаçе яраççĕ, çавăнта кайтăр. Кирек кам ывăлĕ те çара кайма тивĕç. Ку ашшĕ-амăшĕн савăнăçĕ.Пиçĕхтĕр. Кайран, çартан таврăнсан, хамăр пата пытăрччĕ».

Сăнать Савва Корнилович, сăнать çаплах. Акă çĕнĕ пăшăрхану çуралчĕ ун: ывăлĕн савни пур иккен. Йăрăс пӳллĕ, хура куçлă илемлĕ хĕр, Калиме ятлăскер. Çак пикерен уйрăлмастех вăл.

## 21

Илэпи юратнӑ мӑшӑрсӑр иртекен ӗмӗрӗнче ырлӑхне те курчӗ, шырлӑхне те пайтах тӳсрӗ. Хуйхӑ-суйхӑ тени пурпӗрех ҫапса хуҫаймарӗ ӑна. Телейсӗр-ши вӑл пурнӑҫра? Унӑн, ав, куҫ тулли мӑнукӗсем пур.

Савва Корнилович мӗн шухӑшлани тӗле килчӗ. Энтри служба хыҫҫӑн ниҫта та мар, Илэпи патне таврӑнчӗ. Урӑхла пулма та пултарайман. Ӑна юратнӑ хӗрӗ кӗтнӗ-ҫке. Туй турӗҫ. Ҫӗр чӗтренсе тӑчӗ пӗтӗм. Килӗштерсе пурӑнать юратнӑ мӑшӑр. Икӗ ачана ҫитрӗ ӗнтӗ.

Андрей Варламович тесе чӗнет Энтрие ялйыш, трактор бригадин бригадирӗнче ӗҫлекенскере.

## 22

Полина Николаевна Топрикина ял ҫулне нимпе те манаймасть. Чӑнах ӗнтӗ, ҫухалнӑ ывӑлӗ вӗсен чун-чӗришӗн тупӑнаймарӗ. Ҫапах та вӑл тӗнчере пурӑнать, ӑна курма май пур. Акӑ мӗн чи пахи.

Ӗмӗт ҫухалман-ха Топрикинсен, ҫӗнӗрен ҫӗнелчӗ темелле. Ватӑлмалӑх кунра мӑнукӗсене те пулин хӑйсене хӑнӑхтарасшӑн. Савва Корнилович «асатте — дедушка» тесе чӗннине илтесшӗн, хӑйсен юнӗнчен аталаннӑ пепке ӑшшипе йӑпанасшӑн.

Хӑналанать-ха Полина Николаевна савӑнӑҫлӑ ҫемьере. Кӗтет ҫурхи ӑшӑ, илемлӗ кун ҫитессе. Вӑл пулатех. Ара, пӗчӗк этемсен черчен чунӗсене тискер вӑрҫӑ тӑм илтермен-ҫке. Пӗр-пӗрне хӑнӑхма вӑхӑт кирлӗ. Вара илтетех вӑл Ваҫҫукпа Санькка ҫапла каланине: «Асанне — бабушка, эпӗ сана питӗ юрататӑп. Илсе кай мана хӑвӑнпа дедушкӑна курма». Пӗчӗк алӑсем бабушкине мӑйӗнчен ыталаса юратнипе хыттӑн пӑчӑртӗҫ. Вара чуптума, ҫурӑмран лӑпкама ӗлкӗр кӑна.

Илэпи те савӑнӗ. Вӑл арча уҫса мӑнукӗсен капӑр тумӗсене кӑларӗ.

— Хӑнана чипер кайса килмелле пултӑр,— тесе ырӑ сунӗ.— Аслаҫӑра — Корнилыч дедушкӑна пирӗнтен ӑшӑ салам калӑр.

Олег — Андрей Варламович мӗнле-и? Тӑрантас кӳлӗ те ачисемпе мамине — Полина Николаевнӑна станцӑна ӑсатӗ.

*1974 ҫ.*

# КАЛАВСЕМ

## ЁМĔР АСРА

### 1. Аппасен каччисем

Çанталăк сивĕтрĕ. Анчах чăн-чăн хĕл ларнă пек туйăнмасть-ха. Çанталăк хăй туприне шеллет тейĕн, çĕр питне вăл ытла вăраххăн шуратать. Пур-çук юр пĕрчисене çил ачисем çырманалла хăвалаççĕ. Çаралса юлнă кĕр калчи ĕнтĕркесе ларать. Юр тăлăпĕпе витĕнес пулсан, çуркуннене вăл чиперех кĕтсе илĕччĕ. Вара сулмаклă пучах ӳстерĕччĕ.

Калча пусси хăйĕн тусне — çынна—кĕтет: вăл пулăшатех.

Каçкӳлĕм, чăнах та, тулли лав çитрĕ уя. Çуни çинче юр тытмалли пĕчĕк хӳмесем.

Лав хуçине, Наçтука, аслă уй-хир тахçантанпах паллать. Ара, вăл пĕчĕкренех ĕçлеме пуçланă-çке. Ӳснĕçемĕн хӳхĕмленсе пычĕ. Пĕвĕ-сийĕ çурта пек, вăрăм çӳçĕ — йĕтĕн çурăмĕ, куçĕ — йĕтĕн чечекĕ, сеп-сенкер. Пырать урампа утса, тĕл пулан çавăрăнса пăхмасăр тӳсеймест. Юлать вара çав çын савăнса: пурах-мĕн пирĕн те шурă акăшсем. Шел, хĕр ĕмĕрĕ ытла кĕске. Наçтук пиçсе çитрĕ кăна — вăрçă пуçланчĕ. Унăн пĕтĕм черченлĕхне хаяр çулсем лутăркаса тăкрĕç. Мĕн паян кунччenex вăл арçын вырăнĕнче те, хĕрарăм вырăнĕнче те хăй пĕччен ĕçлет. Ун çумĕнче нихăçан та мăшăр пулман.

Тепĕр кунне Наçтук илĕм-тилĕмпех кĕреçе йатса хире çитрĕ те çĕркаç икĕ çырма хушшинчи лаптăка хăй пушатса хăварнă пĕчĕк йывăç хӳмесене ана тăрăх сĕтĕрме тытăнчĕ. Пĕччен кансĕр. Ĕçе ачараппа пĕрле çитĕннĕ тус-тантăшĕпе, Матĕрнепе, тухма килĕшсе татăлнăччĕ, анчах лешĕ чирлесе ӳкнĕ-мĕн. Юлашки вăхăтра вăл час-часах чĕрепе аптрать.

«Наçтук аппа!»— янраса кайрĕ уй тăрăх пĕр уçă сасă. Юр тытма тухнă хĕрарăмăн чĕри шартах сикрĕ.

Кам апла хирте ятранах чӗнет? Çавӑнса пӑхрӗ. Ун патнелле пӗр çын çывхарать. Тул çутӑлса çитеймен пирки ӑна палласа илме хӗн. Правленирен чӗнме янӑ пулӗ тесе, Наçтук хирӗç утрӗ. Çывхарса пынӑçемӗн палласа та илчӗ: кӳршӗсен тӑххӑрмӗш класра вӗренекен хӗрачи иккен. Хӑй кӗрӗк пиншак тӑхӑнса лартнӑ.

— Марина, анну чирлемерӗ пулӗ те?—пӑшӑрханса ыйтрӗ Наçтук.

— Сывах-çке,— Наçтук аппа килӗшӳсӗртерех ыйтнинчен тӗлӗнчӗ хӗр.

— Ма килтӗн эппин?

— Эпӗ вӑрçӑра пуç хунӑ йӗкӗтшӗн ӗçлеме тухрӑм.

— Шкула каймастӑн-и паян?

— Паян — вырсарникун. Канатпӑр.

— Анланаймарӑм, камшӑн ӗçлеме килтӗм терӗн çав эсӗ, Марина?

— Вӑрçӑра пуç хунӑ йӗкӗтшӗн.

— Тем шухӑшласа кӑларнӑ эсӗ, ним те тӑна илместӗп.

— Кӑна эпӗ шухӑшласа кӑларман, Наçтук аппа. Çӗршыври çамрӑксем халӗ аслӑ стройкӑсенче, фабрик-заводсенче вӑрçӑра вилнӗ яшсемшӗн хӑйсен сменисенчен юлса ытларах ӗçлеççӗ. Эпӗ мӗнтен кая? Пирӗн ял йӗкӗчӗсем вӑрçӑра пуç хуман-и?!

— Мӗнле ӑслӑ эсир, тупата,—хӗпӗртет Наçтук.—Атя, эппин, иккӗн ӗç кал-кал каять.

Тытӑнчӗç. Пӗчӗк йывӑç хӳмесене кирлӗ çӗре çӗклесе пыраççӗ те ӳкмелле мар пӗр-пӗрин çине тайӑнтараççӗ. Юр пӗрчисене çакӑ кирлӗ те, вӗсемшӗн ку хӳшӗ — хӳтлӗх. Тулашакан çил, темӗн чухлӗ уласан та, юр пӗрчисене чуптарса каяймасть, вӗсем пӗр-пӗрин çумне тӗкӗннӗçемӗн кӗрт купи ӳсет, ун айӗнче калча çывӑрма выртать.

— Наçтук аппа, вӑрçӑран таврӑнайман хамӑр ял çамрӑкӗсене кама та пулин астӑватӑн-и эсӗ?— ыйтрӗ Марина, шухӑшне майлаштарса. Ӗçпе юн вӗренӗрен сивве те туймасть хӑй.

— Мӗнле астумӑн,—хашш сывласа илчӗ Наçтук,— вӗсем пурте ман тантӑшсем-çке.

— Эсӗ ун чух хӑв та çап-çамрӑк хӗрччӗ ӗнтӗ.

— Шӑпах пӗве кайнӑскерччӗ.

— Наçтук аппа, ан кӳрен те-ха, санӑн савни пулнӑ-и?

— Авӑрсӑр çырла пиçмест, савнисӗр хӗр çитӗнмест.

— Санăн каччу та вăрçа кайрĕ-и?
— Ҫаймасăр.
— Вăл вăрçăран таврăнчĕ-и?
— Эх, ачам!.. Таврăннă пулсан, çапла хăраххăн пурăнăттăм-и? Таврăнмарĕ çав Тихăн...
Ҫачча тухма ĕлкĕреймен савни ятне çамрăк хĕр умĕнче персе янăшăн шутсăр вăтанчĕ Настук, вара тутине тăп тытрĕ.
Маринăн каччăсене асăрхас тĕлĕшпе тин çеç куçĕ уçăлать-ха, вăл хăй те класри пĕр ачана чунтан юратать, анчах палăртмасть. Кун çинчен халлĕхе никам та пĕлмест.
Аппасем хăй вăхăтĕнче каччисене мĕнле юратни ăна çав тери кăсăклантарать. Ҫавăнпа та вăл чĕнмесĕр тӳсеймест.
— Настук аппа, савнийу Тихăн ятлă, терĕн-и? Манăн...— тепле вĕçерĕнеймерĕ ун чĕлхи вĕçне килнĕ сăмахĕ, аран тутине хупма ĕлкĕрчĕ çамрăк хĕр.
— Марина, тупата, ан тĕпче-ха,— тилмĕрнĕн каларĕ Настук,— ватă пуçăмпа тем пертерсе ярăн.
— Хăвна ватă тесе ан хурла эсĕ, Настук аппа,— лăплантарнăн йăпатать ăна Марина.— Вырăссен аслă поэчĕ Пушкин çын тени, хăй миçе çултине пăхмасăр, юратма пултарни çинчен çырнă. Ахă. Вăл пĕлнех ĕнтĕ. Тата эсĕ халь мар, çамрăк чухне юратнă. Ҫаласа пар, тархасшăн, Тихăн çинчен. Мĕнле çынччĕ вăл? Мĕнле пĕр-пĕрне юратнă эсир?
— Ҫай, ан анрат-ха,— çаплах килĕшмест Настук.
— Эсĕ калама тивĕç,— тарăханçи пулать Марина.— Мĕншĕн тесен паян эпĕ шăпах уншăн ĕçлетĕп!.. Санпа юнашар тăрса!
— Марина, эсĕ ытла çамрăк-çке çын юратăвĕ çинчен пĕлме.
— Мĕнле «ытла çамрăк», тет, эпĕ? Ҫынни вунçичче кайнă, эпĕ...
— Вунçичче?.. Эпĕ те ун чух сан çултаччĕ. Юрĕ, эппин, итле.— Аçтан тытăнам-ши?— кăшт шухăша кайрĕ. Вара пуçларĕ:— Ялта вăл халăха тĕлĕнтермелле ĕç тума ĕлкĕреймерĕ. Хăюлăхне, паттăрлăхне йăлтах фронтра кăтартнă.
Шкулта эпир пĕр-пĕрне асăрхаман-та. Вăл тата пĕр çул аслăрах класра вĕренетчĕ.
Ҫичĕ çул вĕренмелли шкула чиперех пĕтертĕмĕр. Ун чух çамрăксем ялтан тухса каймастчĕç. Эпир те çавах

ёнтӗ. Колхозра ӗҫлеме пуҫларӑмӑр. Кам мӗн тӑвать. Аслисем ӗҫе вӗрентеҫҫӗ. Ҫулла уй-хирте шараҫланаттӑмӑр. Тыррине ҫурлапа вырнӑ, хальхи пек комбайн пулман. Тырпула уйран хӑй вӑхӑтӗнче пухса кӗртессишӗн питӗ тӑрӑшаттӑмӑр. Эпир, ҫамрӑк хӗрсем, ҫӗр выртмаллах тырӑ вырма тухнӑ ун чух. Хӗлле — улахра; ҫулла, ӗҫҫи пуҫланиччен — вӑййсенче савӑнаттӑмӑр.

Эпӗ астӑвасса, Тихӑн Хӗрлӗ Ҫар валли лаша ҫитӗнтерет, тетчӗҫ. Утланса ҫӳренӗ чух вӑл яланах хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ шлем тӑхӑнатчӗ.

Тӗлӗнмелле ҫемьере ӳснӗ Тихӑн. Унӑн ашшӗ — Мӗкӗте пичче — граждан вӑрҫинчен киле ут утланса таврӑннӑ, тет. Шуррисене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑшӑн ӑна Буденный хӑй лаша парнеленӗ имӗш. Утне, темшӗн-ҫке, Маруся тесе йыхӑрнӑ. Мӗкӗте пичче колхоза та ҫав лашапах кӗнӗ.

Тихӑн Хӗрлӗ Ҫар валли пӑхса ӳстерекен тиха шӑпах ёнтӗ Маруҫӑн мӑнукӗ пулнӑ. Чӑнах, тихи питӗ ёлккенччӗ. Мӑйӗ акӑш мӑйӗ пек авӑнчӑк. Ҫилхи ҫӑра та кӗске. Малти урисем, панӑски чӑлха тӑхӑнтартнӑн, чӗркуҫҫи таран шап-шурӑ. Каснӑ-лартнӑ Маруся, ӑна пӑхнӑ, тетчӗҫ ялти ватӑсем. Тихӑн хӑйӗн урхамахне Амӑрткайӑк тесе ят панӑччӗ. Хӑй вӑл пиччӗшӗпе пӗрле трактор ҫӳрететчӗ. Ҫапах та вӑхӑт тупса тихине шутсӑр пӑхатчӗ. Эль шывӗнче хырчӑкпа ҫӑвать, улӑхра симӗс курӑк ҫитерет, чӑрмавсем урлӑ каҫма, сиккипе чупма вӗрентет.

— Наҫтук аппа, эсӗ леш... юратни ҫинчен кала-ха,— пӳлчӗ ӑна Марина.— Ҫав саманта астӑваятӑн-и?

— Эх, турӑ!.. Вилсен те манмӑп,— йӑл-йӑл ҫиҫкелерӗ Наҫтукӑн куҫӗсем.— Ҫу пуҫламӑшӗччӗ ун чух. Ҫанталӑкӗ хӑй — сар ҫу. Тӳперен хӗвел лӑпкать. Сывлӑшӗ— симпыл. Ҫӗмӗрт шап-шурӑ ҫеҫкере.

Хӑвах пӗлен, пирӗн кас сӑртри урамра, хальхи пек, шыв кранран юхман. Шыв кӳме Пихампар ҫырмине ҫӳреттӗмӗр. Ҫӑл хӗррине, уява кайнӑн, капӑр тумланса анаттӑмӑр. Чуна килӗшекен кӗпе пурччӗ ман: икӗ аркаллӑ, чӑпар пусмаран, пӗвӗ — куҫлӑ-куҫлӑ улачаран. Кӑкӑрлӑ саппун. Чечеклӗ шурӑ тутӑра каялла ҫыхаттӑм. Тутӑр айӗн, питҫӑмарти икӗ енӗпе те, ҫӳҫ пайӑрки кӑлараттӑм. Ҫав кӗпе халӗ те арча тӗпӗнче сӳнми юратӑва аса илтерсе выртать. Тихӑн шӑпах ҫав тумпа савнӑ мана.

Эпӗ, кӗвентепе пушӑ витресем ҫакса ҫӑл хӗрринелле

йăпăртаттаратăп. Унччен те пулмарĕ, хыçра лаша тĕпĕртеттерсе чупнине илтрĕм. Вĕлт! çавăрнса пăхрăм — Тихăн! Яланхиллех ун пуçĕнче шлем. Ним курмăш-илтмĕш пек утатăп.

— Наçтук, пăрăн! Таптатăп!— кăшкăрать Тихăн.

— Хăв пăрăн!— тетĕп, пуçа ун еннелле çавăрмасăр.

Тихăн, ĕрĕхтерсе çывхаракан лашине чарса, юрттарма пуçларĕ.

— Эсĕ, Наçтук, хăравçă мар-çке,— илтĕнчĕ унăн кăмăллă сасси.— Эпĕ, айван, паттăр хĕр шыраса тăнран тухрăм, вăл акă юнашарах пырать.

— Мĕншĕн вара сана пит паттăр хĕр кирлĕ? Йăвашши авантарах пуль.

— Эпĕ паттăррине саватăп,— тет Тихăн.

Çăлкуçĕ патне çитсен, вăл лаши çинчен сиксе анчĕ. Амăрткайăкĕ, хăлхисене вылятса, валашкаран шыв ĕçме пуçларĕ. Хуçи ши-ши! шăхăрать, куç айĕн мана сăнать. Эпĕ те вăрттăн ăна йăпăрт пăха-пăха илетĕп. Мана вăл çав тери чипер пек туйăнать. Эпĕ...

Марина сывлама шикленсе тăнлать Наçтук аппа сăмахне. Тихăн куç умне килсе тăнăнах туйăнать ăна. Ав, урампа хӳхĕм тиха урисене вылятса пырать, чупмасть вăл, вĕçет. Юланутçи еплерех тата! Утлă çарăн чăн-чăн маттур каччи. Буденновецсен шĕвĕр тăрăллă шлемне тăхăннă. Çамки çинчи хĕрлĕ çăлтăр каччăн сăн-питне çутатса мăнаçлăх кӳрет. Хура та çăра куç харшисем чĕкеç çунатти пек авăнчăк. Вĕсем кантăр çăвĕ сĕрсе якатнăн хĕвел шевлипе йăлтăртатаççĕ. Хăмăр куçĕ пысăк, унăн йăлтăр çутине вăрăм хăрпăксем те пытараймаççĕ. Шĕвĕр янахĕ пăт путăк. Кĕрнеклĕ çанçурăмне хурапа шурă çипсене ылмаштарса тĕртнĕ йăрăм-йăрăм кĕпе питĕ килĕшет. Трактор çинче ларса пынă чух унăн сăн-сăпачĕ урăхларах курăнать пек. Вăл çарапуç. Йĕпкĕн хура çӳçне каялла тураса выртарнă. Çамки тăваткалрах.

Кашни ӳсĕмĕнех пур çав хăйĕн япшар каччисем.

Наçтук аппан пичĕ-куçĕ çунса тухасла тĕлкĕшет. Халĕ унăн кӳлепи çеç Маринăпа юнашар, ĕçе хăнăхнă аллисем юр тытма пĕчĕк хӳмесене майлаштарса лартаççĕ. Чунĕпе вăл хăйĕн çамрăклăхĕн пахчинче юратнă çынпа чечек суйлать, пуç кăшăлĕ хайлать... Йăл-йăл та кулкаларĕ вăл, ассăн-ассăн та сывлакаларĕ.

— Çакăнта, çăл хĕрринче, Тихăна чунтан савса пăрахрăм. Витрем шывпа тулчĕ, чĕрем — юратупа. Куçă-

мӑрсем, иксӗмӗрӗн чунӑмӑрсене те, эпир пӗр шухӑшлине систерчӗҫ пулас.

— Ӑш ҫунтармӑш пуҫланчӗ-и вара?—хушса хучӗ Марина.

— Ҫук, ӑш ҫунтармӑш мар, чӑн-чӑн савӑнӑҫ! Каччӑ юратмасан, хӗршӗн чӑнах та хуйхӑ пулӗ. Пирӗн ун пек пулман. Эпир пӗр-пӗрне тӗлӗнмелле савнӑ, ҫур сӑмахран ӑнланнӑ.

— Наҫтук аппа, Тихӑн ҫӑл хӗрринчех «Эпӗ сана юрататӑп!» терӗ-и?

— Мӗн эсӗ? Вӑл тӑр-ухмах-им?

— Ҫӑвар та уҫмарӗ-и? Апла мӗнле ҫавӑрма шутланӑ-ха вӑл хӗре?

— Ан хиврелен-ха эсӗ, Марина. Ун чухне вӑл ӑшшӑн, питӗ ачашшӑн акӑ мӗн каларӗ: «Наҫтук, кӗҫӗр эпӗ сирӗн кас вӑййине пырасшӑн. Чармӑн-и?»

— Эсӗ чӗнтӗн-и?— тӗпчет Марина.

— «Пыр» тесе тӳрремӗн патлаттарман ӗнтӗ. Хӗр тени ҫепӗҫрех те чеерех пулмалла. Аякран ҫавӑрттарса систергӗм: «Каччӑсем вӑййа пымасан пире, хӗрсене, кичем»,— терӗм.

Кунта вӑл ухмаха тухрӗ, тупата. Эпӗ витресене ҫаклатрӑм кӑна, Тихӑн кӗвентене манран ярса илчӗ те лаши ҫурӑмӗ урлӑ хучӗ.

— Мӗн тӑван? Шывне тӑкатӑн ак!— ятланҫи тӑватӑп, кӗвенте патне кармашса.

— Тӑкмастӑп, тӑкмастӑп!— тавлашать, мана лаши патӗнчен сирсе.

— Тихӑн, апла ан аташ-ха. Ҫынсем мӗн калӗҫ?

— Эпӗ сана юратнине пурте пӗлччӗр,— хӑюлланать вӑл.

Вара утланчӗ. Учӗ ӑслӑскер иккен, черченке япалана ӳкерсе ватасран шикленнӗн ҫемҫен пускаласа, сукмак ҫине тухрӗ. Мана Тихӑн хӑйпе юнашар пыма хушать. Мӗн тейӗн, хапха умне ҫитиччен те пӗр тумлам шыв тӑкӑнмарӗ.

Каҫ пуласса тӳсейми кӗтме тытӑнтӑм. Чунӑма шӑпчӑк вырнаҫрӗ. Юрла тӑратӑп.

Аранах таврана каҫ чатӑрӗ хупларӗ. Эпир Матӗрне юлташӑмпа урама тухрӑмӑр. Хамӑр пукане пек.

— Капӑр тӑхӑнтӑр-и?— тӗпчесех тӑрать Марина.

— Ҫамрӑклӑх вӑл хӑй — мӑкӑнь чечекӗ.

Вӑйӑ вырӑнӗ пирӗн тӑкӑрлӑкраччӗ. Унта, карта ҫумӗнче, вӑрӑм пӗренесем выртатчӗҫ.

Яш-кĕрĕм пухăнман-ха. Эпир чи малтан чавтарса çитрĕмĕр. Пĕрене çине лартăмăр мăшăр кулюкка евĕр. Тăч çыпçăннă хамăр. Ялан çакнашкал çӳренĕрен пире, Матĕрнепе иксĕмĕре, «çĕлесе янисем» тесе мăшкăллатчĕç. Çав каç пирĕн хушша вăл кĕрсе ларчĕ.

— Тихăн-и?

— Тавçăртăн.

— Пĕтĕм вăхăта юнашар ларса ирттертĕр-и?

— Апла анрана тухăн. Юрланă, выляна эпир. Лайăх вăйăсем пурччĕ пирĕн: çĕр парасси, хĕр ыйтасси, кĕпер айĕн тухасси... Ку каç, астăватăп-ха, мана темле халиччен туйса курман савăнăç тыткăнларĕ. Пурте кулăшла калаçаççĕ пек, эпĕ вĕçĕ-хĕррисĕр кулатăп.

Çумра савни пулсан, хĕр ĕмĕрĕ ытла та тулли çав. Телей тени санпа вăйăра та, улахра та, ĕçре те пĕрле.

Çу иртрĕ, хĕл каçса татах çăва тухрăмăр.

Ĕççи пуçланиччен ĕмĕртен пыракан пĕр паллă вырсарникун пурччĕ. Çав кун Сăхăтпуç вăрманне таврари ял çамрăкĕсем аслă вăййа пухăнаççĕ. Матĕрнепе иксĕмĕр унта кайма нумай малтан хатĕрлентĕмĕр. Кĕрен пурçăн кĕпе çĕлерĕмĕр хамăрах. Тухйисене те çĕнетме тиврĕ, йăлтăркка шăрçасем тиртĕмĕр, пушмаксене те хур çăвĕ сĕрсе çутатрăмăр.

Майĕпен кĕтнĕ кун çитрĕ. Пăр кайнăн куçрĕ вара яш-кĕрĕм. Вăрмана чун кĕчĕ. Вăйă карти тулать, сарăлать. Миçе çĕр хĕр-ши! Пĕри тепринчен хитре, пăхса ытараймăн. Эпир те Матĕрнепе, тухъя тăхăннăскерсем, ретре тăратпăр. Каччисем тата! Шучĕ çук. Вĕсем кăшăл варринче, хĕрсем умĕн ушкăнăн-ушкăнăн курнăçланса утса çӳреççĕ. Хăшĕсем карттусĕ çумне чечек çыпăçтарнă. Пурте капăр тумпа. Купăс калакансем те пур. Пирĕн савнисем те кунтах, вĕсене куçран вĕçертместпĕр.

Мĕн чухлĕ каччă хĕрсене куç хывмарĕ-ши!

— Чăн-чăн пуканех эсĕ, Наçтук. Сана çитекенни пĕр хĕр çук кунта,— хăлхаран пăшăлтатса калать мана Тихăн. Чунăма çу тумлатнăн ирĕлетĕп.

Вăйăçсем хăйсен вырăнне ларчĕç. Пуçларĕç вĕсем ура тапса купăс калама. Таврана ташă кĕвви, алă çупни янăраса кайрĕ. Йĕкĕчĕсем, ярăмран пĕрер, икшер шăрçа юхтарнăн, вăйă картинчен ташлама хĕрсене турта-турта кăлараççĕ.

— Эсир те ташларăр-и?— кăсăкланать Марина.

— Ташлама илсе тухман пулсан кулянаттăмăр.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнет Марина.

— Ку хĕр хитрелĕхĕ çуккине пĕлтерĕччĕ. Пире, Матĕрнепе иксĕмĕре, вăйă картинчен пĕр харăс татрĕç. Юнашар утатпăр. Икĕ айккинче те каччăсем. Тушкил ялĕн çамрăкĕсем, терĕç кайран вĕсем пирки.

Çав çулхи пек чаплă вăйă эпĕ нихăçан та курман. Пирĕн вăхăтри çамрăксемшĕн юлашки вăйă пулчĕ вăл.

Ют ял йĕкĕчĕсем Матĕрнепе иксĕмĕр çине ăшшăн пăхнине сиснĕ те хыпăнса ӳкнĕ пирĕн савнисем. Вăйă саланиччен чылай малтан пире вĕсем вăрмантан илсе тухрĕç. Пыратпăр киле май утса мăшăрăн-мăшăрăн.

— Эсир Тихăнпа ĕнтĕ, Матĕрне кампа?

— Матĕрнене тĕлĕнмелле ырă кăмăллă, хӳхĕм йĕкĕт — Лекçей юрататчĕ, вăл комсомол райкомĕнче ĕçлетчĕ. Фронтран таврăнаймарĕ.

— Матĕрне аппа та çавăнпа качча каймасăр юлнă пулĕ-çке,— шухăшлăн каларĕ Марина.

— Илес текеннисем пулнă-ха та... Вăл Лекçеех асра тытрĕ.

— Çитес вырсарникун эпĕ Матĕрне аппапа ĕçе тухатăп, унпа юнашар тăрса Лекçейшĕн пилĕке авăп. Ыйтса пĕлĕп. Вара Тихăнпа Лекçей çинчен мĕн илтнине шкул музейне çырса парăп. Ĕмĕр-ĕмĕр вĕсем пирĕн ял çамрăкĕсен асĕнче пурăнччăр.

— Маттур эсĕ, Марина. Халĕ малалла итле. Çав кaç эпир Матĕрнепе иксĕмĕр те качча каймаллаччĕ, вĕсем пире вăйăран тӳрех илсе кĕресшĕнччĕ. Анчах пире арăм пулма, сурпан сырăнма пӳрмен. Яла çитичченех усал хыпар — вăрçă пуçланни çинчен пĕлтĕмĕр. Ĕмĕтсем çинçе çип пек пат татăлчĕç. Малтан Тихăнăн урхамахне çара илчĕç. Кăшт тăхтасан, Тихăнпа Лекçей иккĕшĕ те пĕр кунта фронта тухса кайрĕç.

— Тек эсĕ, Наçтук аппа, Тихăна кураймарăн-и?

— Шĕкĕр турра. Араскалăм, кăвак хуппине уçса, ăна тепĕр хут, юлашки хут кăтартрĕ.

— Яла килсе кайрĕ-и?

— Çу-ук. Хама фронтра пулма тӳр килчĕ.

— Мĕнле майпа?

— Пирĕн колхоз танк çарĕн пĕр чаçне шефа илчĕ. Çав чаçре пирĕн ял çыннисемпе пĕрле Тихăн та çапăçнă. Колхозниксем вĕсем валли парнесем хатĕрлерĕç. Эпĕ мĕнрен кая? Перекетленĕ укçана Тихăн валли танк туянма тӳлерĕм.

Фронта каякан делегаци йышне мана та кĕртрĕç.

Тихăн, паллах, эпĕ пырас пирки тĕлленмен те. Курсан питĕ тĕлĕнчĕ, савăнчĕ. Хăй ялтинчен те ытларах хитреленнĕ, çар тумĕ илемлетет пулас.

Тихăн пĕтĕм танкистсем умĕнче тухса калаçрĕ, ăшă сăмахсем калама та вăтанмарĕ: «Хамăн савнă пикем Наçтука мана çапла хакласа танк парнеленĕшĕн чунчĕререн тав тăватăп. Тăшмана ним юлмиччен тĕп тума тупа тăватăп. Киле çĕнтерӳпе таврăнăпăр!»

Асатса янă чух та Тихăн мана ним иккĕленмесĕр кĕтсе пурăнма хушрĕ.

— Эпĕ пурпĕр таврăнатăп,— терĕ.— Мĕншĕн тесен сана чунтан юрататăп.

— Хăй таврăнайман та,— шеллесе илчĕ Марина.

— Украинăри Иçĕм ятлă яла ирĕке кăларнă чух паттăрла çапăçса пуçне хунă. Танк ăшĕнче çуннă мăнтарăн.

Наçтук тек чĕнмерĕ. Марина та ăна анратмасть, хăй шухăша путрĕ. Вăл та пĕр класра вĕренекен Венюка вăрттăн юрагать. Сасартăк çĕнĕрен вăрçă тухсан? Венюка та Тихăнпа Лекçей шăпи кĕтет. Çук, çук! Вăрçă кăварне тек амаланма ирĕк памалла мар. Анчах мĕнле чармалла ăна? Лайăх вĕреннипе! Ку сахал пулĕ. Тата лайăх ĕçпе Тăван çĕршывăн хăватне ӳстерсе пымалла. Вăрçăра пуç хунă аппасен каччисемшĕн икĕ хут ытларах ĕçлемелле.

— Наçтук аппа, пĕлетĕн-и мĕн?— шухăшлăн каларĕ Марина.

— Мĕн-ха?

— Çитес канмалли кун эпир, хамăр класри комсомолецсем, фронтра пуç хунă çамрăксемшĕн ĕçлеме колхоз уй-хирне тухатпăр.

— Ырлатăп.

Қата пуçĕнчи хирте юр тытакансем яла кăнтăр апатне кĕчĕç.

Юмахла-юмахла ĕçленĕрен Маринăпа Наçтук вăхăт иртнине те сисмерĕç.

— Эпир апатсăр ĕçлĕпĕр паян, Наçтук аппа. Юрĕ-и?

— Эсĕ каларăшле пултăр. Ман кĕсъере çăкăрпа чăкăт татăкĕ пур — çырткалăпăр.

Колхоз уй-хирĕ, татах çамрăк ĕçчен хутшăннине туйса, юр айне канлĕн канма юлать.

Майĕпен юр тытмалли хӳмесем пĕтрĕç.

— И-и-их! Уй мĕнле чăпарланчĕ!—тет Наçтук, хăйсем пĕчĕк хӳмесемпе эрешлесе тухнă ана тăрăх пăх-

са.— Иккĕн иккĕнех çав, пĕччен çак ĕçĕн çуррине те тăваймастăмччĕ. Халĕ киле каяр.

Марина кулкалать кăна.

Укăлчаран кĕнĕ çĕрелле тĕттĕмленсе çитрĕ. Марина ĕшеннĕ пулин те паттăррăн утать. Ывăнсан та çылăх мар-ха, ав мĕн чухлĕ хӳме майлаштарса лартрĕç те. Кăмăлĕ çĕкленӳллĕ ун. Ырă ĕç тусан çапла вăл, çан-çурăм йăвăрланнине те туймастăн. Чунра çăмăл. Вăл вăрçăра пуç хунă йĕкĕтшĕн ĕçлерĕ-çке.

Амăшĕ ăшшăн кĕтсе илчĕ ăна. Каçхи апата сĕтел хушшине ларсан, мухтаса илмесĕр тусеймерĕ:

— Ашшĕ, куратна, пирĕн хĕрĕн питçăмартисем анис панулми пек хĕп-хĕрлĕ, пăхса ытармалла мар.

— Асăрхарăм-ха,— тет ашшĕ, куçне хĕскелесе.— Ĕç тени вăл çынна çапла чипер сăн кĕртет.

Марина шăл шурри те кăтартмарĕ. Те çавăнпа ашшĕпе амăшĕ ăна манчĕç те. Вĕсем ял хыпарĕсене шĕкĕлчеме тытăнчĕç.

— Çитăр Матĕрнине Варшавăран çыру килнĕ, ывăлĕ ăна илме килет, тет,— пуплет амăшĕ.

Ку хыпартан Марина питĕ тĕлĕнчĕ. Юр тытнă çĕрте Наçтук аппа Матĕрне пирки пачах урăхла каларĕ: «...вăл та качча каймарĕ, вăрçа кайнă тӳррине асра тытса хĕрупраççăн ватăлчĕ»,—терĕ. Матĕрнен мĕнле ывăлĕ пирки юмахлаççĕ кусем? Хĕрача хирĕçлесшĕнччĕ, анчах ашшĕпе амăшĕ хăйсен калаçăвне ачисем хутшăннине хытă сивлеççĕ. Çакна шута илсе, Марина пĕртте шарламарĕ. Матĕрне патне хăй çитсе пĕлме шухăш тытрĕ. Вара вăл васкасах ыранхи уроксене хатĕрленме ларчĕ.

## 2. Эх, мĕнешкел йĕкĕтчĕ

Марина килтен тухнă чух тул çутăлманччĕ-ха. Ял урамĕсем те пушах. Унта-кунта çеç йыт-качка вĕрни илтĕнкелет. Вĕсем, ахăртнех, пӳрт умĕн хывнă сукмакпа тимĕр сенĕк йăтнă çын утнине сисеççĕ пулас.

Хĕрача ĕне вити патне васкать. Вăл унта пĕрле вĕренекенсенчен маларах çитесшĕн. Кама мĕнле те, анчах ăна кая юлса пыни килĕшмест — вăрçăра пуç хунă йĕкĕтсемшĕн çак вырсарникун класĕпех колхозра ĕçлессине Марина хăй пуçарнă-çке. Ĕçе тухма пурте сăмах пачĕç. Венюк вара пачах тĕлĕнтерчĕ: «Эпĕ хамшăн тата фронтра вилнĕ хĕрсемшĕн те ĕçлетĕп»,—терĕ.

Тăкăрлăкран хĕрарăм тухрĕ. Марина çийĕнчех палласа илчĕ ăна.

— Матĕрне аппа, телейлĕ кун пултăр!— саламларĕ вăл.

— Эх, ача, питĕ маттур хĕр-çке эсĕ, Марина,— мухтать Матĕрне хĕрачана.— Пăх-ха эсĕ ăна, илĕм-тилĕмпех тухнă. Çывăрмаллаччĕ кăшт.

Матĕрне аппа ĕçлекен пахчаçимĕç бригади парникре, пленка карса, хăяр ӳстерет. Бригада паян йăрансем çине тислĕк тăкать. Кун пирки Марина эрне пуçламăшĕнчех пĕлнĕ.

Маринăпа Матĕрне аппа калаçкаласа вите умĕнчи тислĕк купи патне çитрĕç. Часах пушă çуна кӳлнĕ лав пырса чарăнчĕ. Лавçă — Венюк.

— Тытăнăр тиеме!— хушрĕ вăл.— Матĕрне аппа, сирĕн аллăр çăмăл. Пуçласа парăр.

— Юрĕ. Эсĕ каланă пек пултăр эппин. Ĕç ăнăçса пытăр-ха,— шӳтлĕ-мĕнлĕ кĕлтăвать Матĕрне аппа, ăшшăн-ăшшăн кулкаласа. Вăл сенĕкне тислĕк купи ăшне тирĕнтерчĕ.

Венюк лав çинчен анса тилхепене лаша çурăмĕ çине хучĕ, вара, çуни тĕпĕнчен кĕреçе илсе, хăй те унта тислĕк пăрахма пуçларĕ.

Марина савăннипе ниçта кайса кĕме пĕлмест.

— Атьăр, ăмăртса ĕçлер!— тет вăл, хăй аллинчи кĕреçипе вĕлт те вĕлт вылятать. Таçтан вăйĕ тухать ун.

— Мĕнех, йышăнатпăр чĕнĕве,— Марина куçĕнчен вĕлт! пăхса илчĕ Венюк.— Килччĕр-ха ман юлташсем. Вара эсир, хĕрачасем, эпир мĕнле маттурринчен тĕлĕнсе тăрăр.

Малтанхи лав тулнă çĕре çынсем самай пуçтарăнчĕç. Ытларахăшĕ — хĕрарăмсем. Çак самантра Маринăпа пĕр класра вĕренекенсем пурте тенĕ пекех персе çитрĕç. Йĕкĕтсенчен хăшĕ-пĕрисем Венюк пекех лаша пуçне тăчĕç.

Чăннипех ăмăрту хĕрнĕçемĕн хĕрет. Лавсем килеççĕ, каяççĕ. Тислĕк тиекенсем пуç çĕклемеççĕ.

Бригадир ĕçлекенсене, уйрăмах тăххăрмĕш класс çамрăкĕсене, мухтаса пĕтерейместь.

— Чи малтан ĕлкĕрекен хăярсене сире тутантарăп,— хавхалантарать вăл шкулта вĕренекен комсомолецсене.

Хĕвел анчĕ. Мĕншĕн ытла кĕске-ши çав хĕллехи кун?

Киле саланнă чух Марина кап! ярса тытрĕ Матĕрне аппана хулĕнчен.

— Эх, ача, эсӗ-ҫке ку.

— Темшӗн ҫурӑм шӑннӑ пек туйӑнать,— ҫӳҫенсе илчӗ хӗрача, хулпуҫҫисене хускаткаласа.

— Кунӗпе тарласа ӗҫленӗрен вӑл. Атя ман пата, Марина,— хӑнана йыхӑрчӗ хӗрарӑм.— Сӑмавар лартӑпӑр. Пурӑнатӑп пӗччен, упа пек. Ҫулталӑкра та пӗр-ик ҫын кӗрсе тухмасть, тупата.

Матӗрне аппа хӑй патне чӗннӗшӗн шутсӑр хӗпӗртерӗ ҫамрӑк хӗр.

— Чейпе сӑйлатӑн пулсан пырас,— пӗлтерчӗ вӑл.

Килӗнче Матӗрне аппа чупкаларӗ кӑна.

— Эх, ача, эсӗ килтӗн те хӗвел кӗнӗн пӳрт-ҫурт ҫуталчӗ,— пупленӗ май хӑй шав хӑна умне ӗҫме-ҫиме йӑтать. Сахӑрӗ те, пылӗ те, панулми те пур... Часах йӑлтӑркка йӗс сӑмаварне сӗтел пуҫне пырса лартрӗ. Вӑл вӗреме чарӑнман-ха, хуппи шӑтӑкӗнчен, ав, епле пӑс мӑкӑрланать.

— Паян ирхине, ӗҫе кайиччен, кукӑль пӗҫерсе кӑлартӑм. Астивсе пӑх-ха, хӗрӗм,—сӗнет кил хуҫи, ун умне татах ваклана хуплу ывӑспа хурса.— Ӑшне ҫӗрулмипе ҫуллӑ какай хутӑм. Тутлӑ пулма тивӗҫ.

Матӗрне аппа Маринӑпа хирӗҫ кӗрекене вырнаҫрӗ. Хӑна хӗрӗ чей куркине икӗ катӑк сахӑр ячӗ те ӑна ирӗлтересшӗн кӗмӗл кашӑкпа пӑтраштарчӗ. Шарламасӑр ӗҫрӗҫ. Майӗпен ӑш хыпни иртрӗ. Марина вара ӗмӗтленнине пӗлес шутпа аякран сӑмах тапратрӗ:

— Матӗрне аппа, эсир ҫамрӑк чух Наҫтук аппапа юлташлӑ пулнӑ тет-и ҫав?

— Эх, ача, чи ҫывӑх тантӑшчӗ. Пӗр ҫӑварти ҫӑкӑра та пӗрле ҫинӗ. Мӗн паян кунччenex туслӑ пурӑнатпӑр. Анчах иксӗмӗр те — телейсӗр. Савнӑ каччӑсем вӑрҫӑран таврӑнаймарӗҫ. Эпир, ав, кӗрчесе юлтӑмӑр.

— Мана Наҫтук аппа хӑйӗн Тихӑнӗ ҫинчен йӑлтах каласа пачӗ. Вӑл Лекҫей пирки те асӑнчӗ...

— Эх, мӗнешкел йӗкӗтчӗ! Тӗнчере пӗртен-пӗр ҫынччӗ, тек унашкалли ҫуралса ӳсменех.

...Вӑрман вӑййинчен Лекҫей мана сурпан сырӑнтарса хушпу тӑхӑнтартма тӳрех илсе кӗресшӗнччӗ. Анчах вӑрҫӑ тухнӑ хыпар пирӗн ӗмӗте ҫил-тӑвӑл пӳрт тӑррине сӳсе антарнӑн сирсе пӑрахрӗ. Эпир иксӗмӗр те тӑлӑхсем. Мана тата Лекҫей вӑрҫа кайиччenex пысӑк хуйхӑ пырса ҫапрӗ: хӗне кайса, икӗ ачаллӑ аппа вилчӗ. Упӑшки, путсӗрскер, чирлӗ арӑмӗпе пурӑнма килӗшмерӗ, чылай малтан тухса тарнӑччӗ. Кӳршӗсем тӑлӑхсене ача

çуртне ăсатма хушрĕç. Лекçей вара нимпе те килĕшмерĕ кунпа.

— Матĕрне, ачасене хăв ил,— ӳкĕтлерĕ вăл.— Айвансене ăçта ăсатăн? Пăх-ха мĕнле патвар йĕкĕтсем.

Аппан ачисене, каланă пек, пăхса ытармалла марччĕ. Йĕкĕрешсем. Иккĕш те ывăл, пĕр сăнлă. Куçĕсем кăвак, çӳçĕсем кăтра. Тĕсĕсем çеç уйрăм: пĕри — çырă, тепри — ыраш улăмĕ пек сап-сарă.

Лекçей пăхса тăранаймасть пĕчĕкскерсене, текех вылятать. Хăй шав мана ачасем майлă илĕртет:

— Çакнашкал тĕлĕнмелле чиперскерсене çухатни — пысăк çылăх. Йĕкĕрешсем аталаннине, ӳснине курса тăни — пысăк телей. Чăн-чăн чун килентермĕшсем, вăрман пăланĕсем. Матĕрне, усра вĕсене. Нихăçан та ӳпкелешме тивмĕ.

— Вĕсен ашшĕ пур. Вăл ӳстертĕр. Эпĕ хам та çамрăк. Аçтан пăхма вăй çитерĕп пĕччен?

— Хам пулăшăп,— тет Лекçей.

Çураçтарчех çепĕç сăмаххисемпе. Хăш вăхăтра килĕшнине сиссе те юлаймарăм. Вăл пур савăк. Аппа ачисене хăпăл-хапăл пуçтартăмăр. Мĕн тейĕн, кайрăмăр вара ман пата. Лекçей çийĕнчех укçа кăларса хучĕ. Унтан вăрçă тухрĕ. Лекçейĕн фронта каймалла. Вăл пур, ачасем пирки пăшăрханать, вĕсене чипер пăхма ӳкĕтлет.

— Тӳс епле те пулин,— тет.— Таврăнсан пĕрле пăхса ӳстерĕпĕр. Çитĕнсен, иксĕмĕре тав тăвĕç вĕсем.

— Вăл фронта кайсан мĕнле йӳнеçкелерĕр?— ыйтать Марина.

— Лекçей вăрçă тухиччен комсомол райкомĕнче инструкторта ĕçлетчĕ. Фронтра та ун пек çынсем хисепре çӳреççĕ-тĕр. Тӳрех командира лартнă ăна. Çавна май, аттестат ячĕ ман пата. Пилĕк кĕтеслĕ хĕрлĕ çăлтăрлă кĕнеке пачĕç. Çав кĕнекепе патшалăх банкĕ укçа парса тăчĕ, лавккара виçĕ çыншăн паек илеттĕм.

— Матĕрне аппа, Варшавăра пурăнаканни сирĕн мар, аппу ывăлĕ-и?— пĕлесшĕн хыпаланать Марина.

— Аппан мар.

— Эппин, вăл чăнах та хăвăр çуратнă ывăл-и?

— Мĕн эсĕ, Марина, ывăл çуратма эпĕ каччă кайман. Ку пачах урăххи — поляк ачи.

— Ним те ăнланмастăп,— куçĕсем чарăлчĕç Маринăн.

Матĕрне аппа çине-çинех ассăн сывларĕ. Асаилӳсем

ăна каллех вăрçă çулĕсене илсе çитерчĕç. Ун сăн-пичĕ улшăнчĕ. Темиçе хутчен те питçăмарти тăрăх куççуль юха-юха анчĕ.

—...Вăрçă вăхăтĕнче йĕкĕрешсем шкула кайрĕç. Лекçей вара тӳпере тепĕр хĕвел тухнăн çунатланчĕ. Вĕсемпе хăй те шкула çӳреме тытăнчĕ тейĕн. Çырура çавсем пирки кăна çыратчĕ, çĕр тĕслĕ ăс паратчĕ. Чунăма йăпатаканни мĕн пурĕ те çыру вĕçĕнче çеç икĕ сăмах: «Сана юрататăп». Çавăнпа та çырăва вулама вĕçĕнчен тытăнаттăм. Тĕлĕнмелле этем, вăрçăра çапăçать тес те çук ăна. Нихçан та пурнăç йывăр пирки нăйкăшман вăл. Ĕмĕчĕсем тĕнчене шăнăçмастчĕç. Вăрçă пĕтессе, хамăр çĕнтерессе шаннă. Таврăнсан мĕн кăна тума шухăш çукчĕ-ши: пĕрлешетпĕр, вĕренетпĕр, пӳрт тулли ачапăча çуратса ӳстеретпĕр... Ача-пăчашăн каçсах каятчĕ. Фронтра та ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă тăлăхсене пулăшни çинчен çыратчĕ. Эпĕ ăна чĕререн ĕненеттĕм.

Ĕнтĕ Тăван çĕршыва тăшманран тасатрĕç. Совет Çарĕ чикĕ тулашĕнче çапăçать. Пĕр вăхăт пачах çыру килме пăрахрĕ. Хыпса çунатăп. Вăл иккен аманнă, госпитальте выртать-мĕн. Тĕпĕпех самайланса çитме киле пыратăп тесе çырчĕ. Эпĕ кĕтетĕп кунĕн-çĕрĕн.

Хĕрĕх пиллĕкмĕш çул пуçламăшĕнче, пĕр сивĕ кун, алăка шаккарĕç. Кам-ши, тетĕп. Ялта çын патне шаккаса кĕрес йăла çук. Эпĕ чупса пытăм та алăка яриех уçрăм. Курах кайрăм: шинеллĕ хĕр тăра парать. Ун çумĕнче — пилĕк-ултă çулхи ача. Çийĕнчех ним те ăнланаймарăм-ха. Пӳрте кĕме чĕнетĕп.

— Йышăнатăр пулсан — кĕрĕпĕр,— хăй чăрр пăхрĕ куçран, мана витĕр курасла.

— Айтурах,— тетĕп.— Алăк умне çитнĕскер каялла çаврăнса каймăр ĕнтĕ. Иртĕр, хывăнăр, ăшăнăр.

Кĕрсен, хĕр салтак шинельне хывса йăрхаха çакрĕ, ачине салтăнтарчĕ. Ман йĕкĕрешсем, тур çырлах, шинеллĕ хĕрарăм ачине çавăрса илчĕç. Ун аллисене вĕрсе ăшăтаççĕ, калаçаççĕ. Ваштах мĕн ятлине ыйтса пĕлчĕç.

— Марек тесе чĕнĕр ăна,— тет хĕр салтак.

Ача чĕнмест, куçĕсем кăна хаваслăн йăлтăртатаççĕ.

— Маркки!

— Маркки!—хăйсем майлă ят тупса тĕпĕртетеççĕ йĕкĕрешсем ун тавра. Çавăнтах тахçан пуçтарса хунă теттисене пуракĕпех илсе тухрĕç. Мĕн тетти ĕнтĕ, ячĕ çеç. Шкула каййччен хăйсем лаша, ĕне, сысна кĕлеткисене йывăçран каскаласа ăсталанăччĕ. Темиçе хутчен те кă-

макана пăрахса çунтарма пикеннĕччĕ йăваланса çӳренĕрен, яхăнне те ямарĕç вĕсем. Хĕрхентĕм, вылĕçин, терĕм вара.

Хĕр салтак сăмах-юмах тапратмасть, ачасем çине кăмăллăн пăхать кăна. Ман пуçра çĕр тĕрлĕ шухăш шыв аварĕ пек пĕтĕрĕнет. Мĕн тетĕп: «Ку хĕр вăрçа кайнă чух ывăлне ача çуртне хăварнă-тăр, халĕ кĕрсе илнĕ. Килне çула май ман патăмра çĕр выртасшăн...»

Вĕсен умĕн çеç йĕкĕрешсем шкултан таврăннăччĕ те апат çитерме ĕлкĕреймерĕм. Ирхине эпĕ вĕри кăмакана чӳлмекпе яшка пĕçерме лартнă. Ќакай, шăнтнă симĕс купăста янăччĕ. Чӳлмекне ухватпа кăларса ывăсне уçрăм, пӳрте пăс сарăлчĕ.

— Мĕнле тутлă шăршă ку?— ыйтрĕ хĕр салтак, сывлăша сăмса витĕр тарăннăн туртса.

— Хырăм выçнă пулĕ-ха?

— Çитерес кăмăл пулсан, тилмĕрттермĕттĕм,— хуллен тути йăл-йăл сарăлчĕ хайхискерĕн.

Ман тĕрĕс-тĕкел турилкке юлмарĕ — ачасем ватса пĕтерчĕç. Мĕн пурĕ те икĕ йывăç тирĕк çеç, пасарта пĕрер пăт çĕрулми парса туянни. Яшкине антартăм та пĕр тирĕкне вĕсен умне шутартăм, тепринчен хамăрăн, виççĕмĕрĕн, сыпмалла ĕнтĕ.

— Ќаçарăр, çăкăр пĕтнĕ тĕл пулчĕ,— айăпа кĕнĕн каларĕ, пурин умне те çĕрулмипе урпа çăнăхĕ хутăштарса пĕçернĕ пашалу хуçа-хуçа хурса.

Килнĕ хĕрарăм тиркемерĕ. Ман йĕкĕрешсем сăрпаланма хăнăхнă, лĕрĕплеттереççĕ кăна. Маркки те маттур, чĕпĕленсе лармасть, правур сыпать.

— Ĕçе юратаканскер пулать ку сирĕн ывăл,— тетĕп.

— Мĕншĕн апла шутлатăр?

— Апата хăвăрт çиекен çын — ĕçре маттур. Халăх сăмахĕ.

Хĕр салтак йăвашшăн кулкалать.

Сĕтел хушшинчен тухсан, ачасем пĕр тĕле пухăнчĕç. Йĕкĕрешсем килнĕ ачана шав выляттараççĕ.

— Хăнăхрĕç те ку ачасем пĕр-пĕрне,— тет хĕр. Эпир кантăк умне вырнаçрăмăр. Сăмах-юмах пуçланман-ха. Пӳрте каç тĕттĕмĕ çапрĕ. Эпĕ чĕпкуçне çутса ятăм та каллех унпа юнашар пырса лартăм.

— Хырăм тутă, çанçурăм ăшăнчĕ, халĕ сăмах тапратсан та чармасть,— куçран пăхрĕ хĕр салтак. Теме сиссе, чĕрем кăрт-кăрт тапать. Ун сăмаххи чăпăркка

пулса мана хăмсарманнине шанса тăркачах, мĕншĕн чун йăшкать-ха?

— Матрена Сидоровна, тимлĕн итле,— асăрхаттарать мана çар хĕрĕ.

— Эх, ача, эсĕ тем хăрататăн,— персе ятăм.— Ĕçпуçĕ пире тивмест пулĕ-çке?

— Тивет çав.

— Тивет?!— шартах сикрĕм.

— Ытла пăшăрханса ан ўк-ха, çирĕп пул, чунна хытар,— тет хайхискер.— Эпĕ — çар госпиталĕн медсестри. Пирĕн госпиталь Польшăраччĕ. Сирĕн Алексей Урампаев çав госпитальте выртрĕ. Ăшран аманнăскере строя тăма иртерех терĕç. Лайăххăн сывалса çитме ăна киле ячĕç. Эпĕ — ăсатаканĕ ĕнтĕ.

— Тур çырлах!— хыпăнса ўкрĕм.— Лекçей килет! Ура çине сиксе тăтăм та апат хатĕрлес шухăшпа кăмака умне пытăм. Куç алăк çинчен каймасть. Хăлхасем — сыхра: алкумĕнче ура сасси илтĕнессе кĕтетĕп. Хамăн ал-ура çыхлана тăрать. Хĕр салтак мĕн калани пуçа та кĕмест. Эпĕ халех Лекçее хирĕç тухса илме хатĕр. Шаль тутрине пĕркентĕм. Çак вăхăтра çар сестри пырса тытрĕ хама.

— Тăхта, эсĕ мана вĕçне çити тăнламарăн,— унăн сасси кăмăлсăррăн тухрĕ.

— Лекçей ăçта? Кам патне те пулсан кĕчĕ-и?— тĕпчетĕп.

— Ан пўл-ха. Лар манпа юнашар. Каларăм ĕнтĕ, Алексей Урампаева киле çитиччен ăсатма мана хушрĕç. Белоруссинче, кунталла килмелли пуйăса кĕтнĕ чух, таçтан çак ачана тупнă вăл.— Маркки енне пуçне сĕлтрĕ.— Эпĕ унăн документчĕсемпе билетсем илнĕ вăхăтра вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми туслашса лартнă. Темле ўкĕтлесен те итлемерĕ, ачана хăйпе пĕрле вакуна илсе кĕчĕ-кĕчех. «Неслĕксĕрскер. Пĕтет вăл. Хĕрхенмелле ачасене. Эпир ăна пăхса ўстеретпĕр. Пирĕн килте икĕ ывăл, йĕкĕрешсем ўсеççĕ. Ку вĕсен шăллĕ пулĕ. Хаваслă пурнăç кĕтет пире...» — ĕнентерме тăрăшрĕ мана Урампаев. Вара çул тăршшĕпе мăкăлтатрĕ, вылярĕ ачапа. «Çак ача,— терĕ вăл татах,— суран ыратнине irttерет».

— Ку маншăн пĕрре те çĕнĕ япала мар,— хушса хуратăп.— Ача-пăча тесен Лекçей чунне пама хатĕр. Мехел пулсан, пĕтĕм тĕнчери ачасене хăй патне пухĕччĕ.

— Тата вăл çаплах сире мухтатчĕ: «Чиперскер. Еç-

чен хĕр. Кăмăлĕ çав тери ырă. Çитсенех çырăнатпăр...» — ĕмĕтленетчĕ вăл.

— Мĕншĕн «ĕмĕтленетчĕ»? Эсир çын вилнĕ пекех калаçатăр, тупата,— кӳренетĕп ăна.

— Вăл чăнах та...— хĕр сасси ăша кайрĕ. Хама сивчир тытнăн чĕтретрĕ.

— Мĕн «чăнах» терĕр эсир? — хыпăнса калатăп.

— Вăл Чăваш республикине çитсе кĕрес умĕн, çĕрле, вилчĕ. Разъездра, пуйăс чарăнсан, ăна илсе тухрĕç.

— Вилчĕ тетĕр-и? Пулма пултараймасть! Ма кирлĕ мара палкас!— хĕр салтака чĕрне хури тăршшĕ те ĕненместĕп...

Марина, итлесе лараканскер, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ. Матĕрне хăй те макăрать.

— Куçăм хуралса килчĕ ун чух ман,— Матĕрне сăмахне малалла тăсрĕ. Марина, кĕсйинчен шурă тутăр кăларса, Матĕрне аппăшĕн питне шăлчĕ.—Чĕпкуç, мĕлтлетет пулин те, çутă параймасть. Çар сестри çумĕнче манăн тек самант та тăрас килмерĕ. Йăрхахран кив кĕрĕк пиншака вĕçертсе илтĕм те, хулпуççи çине уртса ярса, ним чĕнмесĕр килтен тухрăм. Ăçта каяс?

Эпĕ ун чух колхоз пăрăвĕсене пăхнă. Чупрăм пăру витине. Алăка уçрăм. Тĕттĕм кунта. Çапах та пĕтĕм пăру куçран пăхнăн туйăнчĕ. Мĕ-ĕ-ĕк! ĕнĕреççĕ вĕсем. «Санăн мĕнле инкек?»—ыйтаççĕ пулĕ ахăртнех. Пĕрне хыпаласа тупса майĕнчен ыталарăм та саспах ӳлесе ятăм. Тăнран тухса выртнă вара пĕр кана.

Çапла вăл пӳрмен телей. Киле килме тухсан та çитеймен Лекçей.

Матĕрне калас сăмахне вĕçленĕн чарăнчĕ. Сахăр каткаласа чей ĕçрĕ. Марина пĕлмеваскать:

— Матĕрне аппа, хĕр салтак ачине хăйпе илсе кайрĕ-и?

— ...И-и, ĕç-пуç тин пуçланчĕ темелле. Çавăн чух витере хам та чутах шăнса хытман. Кача пӳрнене тăм та илнĕччĕ. Шуçăм çутипе киле таврăнтăм. Леш... Маркки текенни, йĕкĕрешсем хушшинче çывăрать. Сестри тăрса ларнă.

— Матрĕна Сидоровна, ман каймалла. Хăна тунăшăн тавтапуç. Алексей тупнă ачана килсе кăтартрăм,— пуплет хайхискер.—Ăна ача çуртне вырнаçтарма тивет.

— Мĕнле апла? — кăшкăрса ятăм.— Эсир ăна хăварасшăн мар-и? Мана шанмастăр-и?

— Сирĕн хăвăрăн та иккĕ-иç. Виçĕ ачапа ăçта кайса кĕрĕр?

Эпир калаçнине илтсе, «шăхличсем» те пуçне тăратрĕç.

— Матĕрне аппа, Марккине эпир ниçта та парса ямастпăр,— тет йĕкĕрешсенчен пĕри.

— Вăл пирĕнпе пурăнать! Эпир ăна хамăр пăхатпăр! — сас парать тепри те.

Хĕрхенетĕп тăлăха. Анчах çавăнтах иккĕленетĕп те. Ытла пĕчĕккĕ-çке. Ăна ăстăнлă ÿстерме вăй çитерĕпши? Тен, парсах ямалла. Шухăша тепĕр май сыпатăп та вăтаннипе пуçа усатăп. Ачана йышăнмасан Лекçей мĕн тейĕ? Путех вăл хăйне мантарасшăн мар чĕрĕ палăк парнелесшĕн тăрăшнă пулĕ. Йышăнманни ăна киле ура ярса пустарманнипе пĕр тан. Пурăнтăрин, эппин, пĕчĕк ăшă чун, тÿррине ĕмĕр аса илтерсе. Икĕ кашăк шăкăртатнă çĕрте виççĕмĕшĕ ытлах чăрмантармĕ. Çапла ăшра хампа хам калаçса таталтăм та пĕлтертĕм:

— Ачана илсе юлатăп.

— Сана виçĕ ачашăн та пенси тухĕ,— йăпатнăн калать салтак сестра.

— Пенсийĕ-мĕнĕ,— тетĕп,— ялта çерçи вилмест,— теççĕ.

...Ÿсрĕç, вĕренчĕç, пысăк çынна тухрĕç. Виççĕшĕ виçĕ çĕре саланчĕç, хам каллех — пĕччен. Иртнĕ пурнăç тĕлĕк пек кăна пулса юлчĕ.

— Лекçей пиччене ăçта пытарнине ку таранччен те пĕлместĕр-и?—кăсăкланчĕ Матĕрне аппа каласа панине тимлĕ итлесе ларакан Марина.

— Адресне парса хăварчĕ леш хĕр-салтак. Ăна чугун çул хĕрринчи Ашкар ятлă пысăк ял масарне пытарнă. Эпĕ унта, ачасем ÿссен, вĕсемпе пĕрле кайса килтĕм. Пĕлтĕр пĕчченех пулнăччĕ, ун вилтăприне юсарăм.

— Маркки чăнах та поляк-и?

— Çапла ĕнтĕ. Вăл Мускавра инженера вĕреннĕ самантра Польша республикин тĕп хулине, Варшавăна, темиçе хут та кайса килчĕ, аякри тăванĕсене пĕр-иккĕшне тупрĕ. Халĕ вăл авланнă, ачи те иккĕ. Çулла мана килсе илесшĕн.

— Каятăн-и?

— Кăмăлăм пур-ха, мана вăл шутсăр юратать.

Сăмаварти чей сивĕнмен-ха. Кил хуçи çаплах сăйлать. Марина куркари тутлă шăршă çапакан пылак чее ĕçсе ячĕ те сĕтел хушшинчен тухрĕ.

— Анне çухатрĕ пулĕ. Каям-ха ĕнтĕ. Сывă пул, Матĕрне аппа,— ала тытса уйрăлчĕ çамрăк хăна.

Çап-çамрăк хĕр утать урам тăрăх. Çулăн икĕ айккипе — çуртсем. Кашни пӳрт икшер те виçшер кучлă. Кантăкĕсене эрешлĕ чĕнтĕрсемпе, шурă е чечеклĕ пусмасемпе карнă пулин те, Ильич лампочкин шевли урама кармашать, иртен-çӳренсен сукмакне çутатать. Çак çуртсенче пурăнакансен, Çитăр Матĕрнин пекех хăйне май, хут çине çырман тĕлĕнтермĕш уйрăм кĕнеке пур.

Марина тин çех çав кĕнекесенчен пĕрне вуласа тухрĕ. Халь çавăн пирки шухăшлать вăл: Матĕрне аппан тӳрри — Лекçей вăрçă асапне мăй таран тӳснĕ. Çавăнпа вăл пулас ăрусене вăрçăсăр пурнăç кӳресшĕн ĕмĕтленнĕ. Ахальтен мар вăл, хăй вилессе сиссех, яла поляк ачине илсе килме тухнă. Тĕрлĕ халăх ачи пĕр тирĕкрен яшка сыпнă пулсан, вĕсем пĕр-пĕрин çине вăрçăпа çĕкленмĕç. Апла-тăк, туслăх мар-ши мирлĕ пурнăçа сыхлаканни? Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен пĕр-пĕрне алă тăсмаллах.

### 3. Ял пики

Пысăк перемена. Шкул коридорĕнче ача-пăча хĕвĕшет. Аслă класрисем ушкăнăн-ушкăнăн утса çӳреççĕ. Акă хĕрсен ушкăнĕ иртет. Йышра Марина та пур.

Кантăк умĕнче тăракан Венюк ăна курчĕ те кăчăк туртса чĕнсе илчĕ.

— Итле-ха, эпĕ сана тĕлĕнмелле хĕр çинчен каласа парасшăн,— терĕ Венюк.

Марина тӳрех ним те ăнланаймарĕ. Ăна темле туйăм хупларĕ, вĕчĕрхентерчĕ. Вăтаннипе питçăмартисем самант хĕрелчĕç. Куçран пăхмасăр, асăрханарах ыйтрĕ:

— Кам вăл сан чунна хускатнăскер?

— Хамăр ял пики. Вăл ун чух сан пекех çамрăк та чипер пулнă имĕш.

— Тавçăраймарăм. Мĕнле хĕр пирки сăмах ваклатăн çак эсĕ?

— Альтюк çинчен, ара. Вăл комсомолка пулнă, фронта хăй ирĕкĕпе кайнă, анчах каялла таврăнайман.

— Чăнах-и? Эпĕ мĕншĕн илтмен? — тĕлĕнчĕ Марина, хăй малтанхи кăмăлсăр туйăмне пула тӳрккесрех калаçнăшăн çав тери аванмарланса.— Кам тавращĕ вăл — Альтюк?

— Пирĕн пускилте пурăннă Кĕтерук кинемейĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ. Кинеми хăй пĕлтĕр çĕре кĕчĕ. Пĕтĕм кӳршĕ пĕрле пуçтарăнса тирпейлесе чикрĕç. Карчăкĕ питĕ ырă кăмăллăччĕ. Хĕрĕ те шутсăр сăпайлăччĕ, теççĕ. Ытла йăваш, тӳлекскер. Альтюк вăрçа хутшăнасса никам та кĕтмен. Фронта вăл хĕрĕх иккĕмĕш çулта, кĕркуннехи юрлă-çумăрлă кун, кайнă. Таврăнаймасса чунĕ сиснĕн, кашни тĕл пулаканпа алă тытсах сывпуллашрĕ, тет.

Кĕтерук кинемее юлашки çула ăсатма эпĕ те каçрăм...

— Э-эх! Мĕнле шел!— тутине çыртрĕ Марина.— Амăшĕ вилнĕ пулсан, Альтюк пирки тĕплĕн ним те пĕлейместпĕр эппин.

— Унăн фронтри пурнăçĕ çинчен самаях пĕлме май пур.

— Эсĕ, Венюк, Кĕтерук кинемейпе хĕрĕ пирки калаçнă-им?

— Çук çав,— унăн сасси хурлăхлăн тухрĕ.— Тăххăрмĕш класа çитсе те пуçри анкă-минкĕ сирĕлмен ман, шухăшлама вĕренеймен эпĕ. Эсĕ акă—маттур. Фронтра пуç хунă çамрăксемшĕн ĕçлессине йĕркелерĕн.

— Чим-ха, Венюк,— пӳлчĕ ăна Марина.— Эсĕ Альтюк комсомолка пирки тем каласшăнччĕ.

— Э-э, Кĕтерук кинемейпе юлашки хут сывпуллашма эпĕ те каçрăм, терĕм-çке.

— Вара? — сăмах чĕнмесĕр тӳсеймест Марина.

— Унта акă мĕн пулса иртрĕ: «Асăнмалăх тата мĕн парса ярăпăр?» — тесе тĕпĕртетеççĕ хĕрарăмсем. Пӳрт ăшчиккине тустараççĕ кăна. Хăйсем ахаль те тупăк ăшне, кинеми тавра, темĕн те пĕр чиксе тултарнă: сурпан, кĕпе, чăлха, хĕрачин тухйине, шăрçа ярăмĕсене...

Сасартăк пĕри сунтăхран чечеклĕ тутăрпа чĕркенĕ çыхă туртса кăларчĕ. Сĕтел çине хурса çыхăра мĕн пуррине салтса пăхрĕ. Вара вăл пурне те илтĕнмелле кăшкăрса ячĕ:

— Альтюк çыравĕсем! Çартан ярса панă хутсем! Тур çырлах! Орденĕпе медалĕ те кунта! Мĕн тăвăпăр кусемпе?

Тахăшĕ ваштах ăс пачĕ:

— Хурас тупăк ăшне. Вулатăр леш тĕнчере.

— Тĕрĕс калать. Хурас! — килĕшрĕç хĕрарăмсем.

Унччен те пулмарĕ, çыру тĕркисене унтан-кунтан тупăка чикме пуçларĕç.

Çавăн чух сĕтел пуçĕнче ларакан шурă сухаллă Трахвин мучи сиксе тăчĕ те хĕрарăмсене сире-сире ячĕ.

«Мĕн хăтланатăр эсир, айвансем? Юрамасть ун пек! — терĕ вăл хыттăнах. Хĕрарăмсем тăпах пĕр вырăнта хытса тăчĕç. Мучи малалла çапла каларĕ: — Вĕсене капла çĕр çинчен йăлтах шăлса тăкни пулĕччĕ. Вĕсем иккĕшĕ те числă çынсем пулнă. Хĕрĕ — фронтра Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пурнăçне панă. Амăшĕ — çавнашкал паттăр хĕр çуратса ӳстернĕшĕн хисепе тивĕç.

Çулсем иртнĕçемĕн эпир те çутă тĕнчепе уйрăлатпăр. Пирĕн хыççăн килекен çĕнĕ ăру вĕсен пурнăçĕпе, ĕçĕхĕлĕпе паллашасшăн пулĕ. Вăл пулатех. Анчах иртнине мĕнле пĕлĕç? Асăнмалăх ним те хăварманшăн пирех ятлĕç.

Альтюк тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçни амăшĕ патне янă çырăвĕсенче питĕ лайăх курăнать. Пĕрре мар вуласа панă мана Кĕтерук хĕрачин çырăвĕсене.

Юлташсем, мĕн чикнине пĕтĕмпех пуçтарса илĕр».

Хĕрарăмсем ватă çынна итлерĕç. Вĕсем Альтюкăн çырăвĕсемпе хаклă япалисене каялла йăлтах кăларчĕç.

Трахвин мучи шывланнă куçĕсемпе тем шыранăн кăн-кан пăхкаларĕ. Мана курчĕ те: «Акă, Венюк кунта. Кил-ха çывăхарах,— чĕнчĕ вăл. Эпĕ, çынсем хушшипе иртсе, ун умне тухрăм.— Венюк йĕркеллĕ ача. Кăçал ăна комсомола илнĕ. Парăр ăна Альтюк çырăвĕсене, сар хучĕсене, орденĕпе медальне. Тĕплĕн упратăр. Тен, кам пĕлет...»

Трахвин мучи хăй шухăшне каласа пĕтереймесĕрех чарăнчĕ. Эпĕ унтан кайран ыйтасшăнччĕ, анчах ăна часах, чирленĕскерне, пульницăна вырттарчĕç, унтан таврăнаймарĕ те вăл.

— Çырусем ăçта, пачĕç-и сана? — хыпалантарать Марина.

— Парасса пачĕç-ха...

— Çырусем халĕ санрах-и?

— Ăçта пулччăр.

— Эсĕ ху вуланă-и?

— Çын çырăвĕсене вулама мана çав териех сĕмсĕр тесе шутлатăн-и? Эпĕ вĕсене шкула илсе килтĕм. Ăçта хумаллине калаçса татăлччăр комсомолецсем.

— Паян уроксем хыççăн вулас,— сăмах татрĕ Марина.

Уроксем пĕтсен, Марина сĕннипе, комсомолецсем юлчĕç. Венюк виçĕ кĕтеслĕ çырусене сĕтел çине кăларса

хучĕ. Сапаларĕç. Конверт çинчи штемпель çыру хăçан килнине кăтартать. Ун тăрăх майласа хучĕç. Акă, Альтюкăн чи малтанхи çырăвĕ. Марина вулать:

«Юратнă аннем, сывлăх сунатăп!

Çыру кĕтсе ывăнтăн пулĕ. Халĕ ĕнтĕ вула.

Эпир Канашран пуйăспа тухса кайрăмăр. Çĕрле çеç малалла чупатчĕ пуйăс. Темиçе кунтан пĕр вăрмана çитрĕмĕр. Çĕрпӳрте вырнаçтарчĕç. Кунтах вĕрентĕмĕр. Тупа тусан пире салтакла тăхăнтартрĕç. Халĕ ĕнтĕ эпĕ— ефрейтор.

Эпĕ çул-йĕр тăвакан чаçе лекрĕм.

— Лаша кӳлме пĕлетĕн-и? — ыйтрĕç манран. Ялта ӳснĕ хĕр лаша кӳлме пĕлмĕ-и? Вара мана ултă лаша пачĕç пăхма.

Маншăн ан кулян, аннем.

Сывă пул. Çĕр хут чуптăватăп.

Санăн хĕрӳ — Альтюк. Кунта мана Аля тесе чĕнеççĕ».

Тепĕр çырăвне Венюк вулама тытăнчĕ:

«Аннем, мĕнле пурăнан? Сана питĕ курас килет. Пӳртӳ сивĕ мар-и? Шăнса ан чирле. Вутне ан шелле, ытларах хут. Хам таврăнсан татах вăрман касăпăр.

Эпĕ çаплах — çул-йĕр чаçĕнче. Тăшманпа хаяррăн çапăçнă хыççăн çул-йĕр путăк-шăтăкланса юлать, е фашистсем бомбăсем килсе пăрахаççĕ. Эпир ваннă çулсене юсатпăр е çĕнĕрен тăватпăр, кĕпер те хывма тивет. Лайăх çул тăшмана çĕнтерме пулăшать. Фронта çĕнĕрен çĕнĕ хĕçпăшал, апат-çимĕç кирлĕ. Пурне те турттармалла, машинăсен хăвăрт чупмалла. Тикĕс çул çитĕнӳ кӳрет.

Маншăн хыпса ан çун. Куратна, эпĕ сып-сывах.

Пин хут чуптуса юлатăп.

Санăн хĕрӳ Альтюк-Аля».

— Итлĕр-ха, кунта тĕлĕнмелле çыру пур,— пĕлтерчĕ Венюкпа юнашар лараканни. Ăна ыттисем хăвăртрах вулама хĕтĕртрĕç.

«Юратнă аннем, сана савăнăç пĕлтерме васкатăп. Мана тавçăруллă пулнăшăн командовани тав турĕ. Приказа пĕтĕм строй умĕнче вуласа пачĕç. Мĕншĕн тивĕç пултăм тетĕн-и? Итле.

...Çав кун тĕлĕнмелле сивĕччĕ. Лаша кӳлтерчĕç. Командирпа каймалла, тилхепе тытса. Пыратпăр вăрманпа. Çывăхрах тăшман. Урхамах çакна чухланăн вĕçнĕ пек чупать. Пульăсем пуç урлă ши те ши! шăхăрса иртеççĕ. Сасартăк пирĕн лаша, темрен хăраса-çке, ĕрĕхсе кайрĕ.

Çуна мелсĕррĕн темĕскере пырса çапăнчĕ те, турта шартах хуçăлчĕ. Кĕтмен инкек. Хăрах туртапа аякка каяс пур-и? Мĕн тумалла? Вăрмана кĕрсе йывăç кассан, пуртă сассине пула тӳреммĕнех тăшман аллине лекĕн. Темлерен эпĕ çывăхрах утă капанĕсем ларнине асăрхарăм. Ялта капансене шалчасемпе тăрлаканччĕ. Кусем те çапла пулма кирлĕ. Командиртан ирĕк ыйтрăм та капан патне хырăмпа шурăм. Часах шалча тупса таврăнтăм. Туртана шăпах юрăхлă пулчĕ вăл. Вара каллех малалла вĕçтертĕмĕр, çитес çĕре çитрĕмĕр.

Сывă пул, аннем.

Хăв мĕнлерех пурăнни çинчен ытларах çыр. Санăн хĕрӳ — Аля».

— Кунта хаçатран касса илнĕ икĕ Указ тата хăйĕн сăнӳкерчĕкĕ пур,— пĕлтерчĕ Марина, конвертпа темле хутсем çĕклесе.— Мĕнле илемлĕ пулнă вăл!

— Кăтарт-ха!

— Кăтарт!

Тăваткал питлĕ. Куçĕсем пысăк. Пуçĕнче çар пилотки. Ун айĕнчен кĕске çӳçĕ курăнать. Çийĕнче гимнастерка. Кăкăрĕ çинче — орденпа медаль.

Аларан алла куçрĕ хĕр салтак сăнӳкерчĕкĕ. Пурте ăмсанса та юратса пăхрĕç ун çине.

— Мĕнле чипер хĕр,— тет Венюк.

— Шăпланăр-ха,— чарать Марина юлташĕсене.— Çырăвне итлĕр. Малтанах вăл яланах амăшĕпе калаçать. Вулатăп. Акă çакăнтан тытăнас:

«...Анне, мана Хĕрлĕ Ялав орденĕпе «Хăюлăхшăн» медаль пачĕç. Наградăна тивĕçлĕ пулатăп тесе нихăçан та шухăшламан.

Мĕншĕн пачĕç тесе ыйтан ĕнтĕ. Сана каласа памасан кама каласа парăп.

...Хĕвел хĕртсе пăхать. Шăрăх. Пĕрмай шыв ĕçес килет. Çăвара сив шывпа чӳхетпĕр те каллех тирĕнсе ӳкесле ĕçлетпĕр. Пирĕн васкасах ишĕлчĕк кĕпере юсаса çитермелле. Машинăсем килсе капланчĕç. Васкатаççĕ пире салтаксем. Тӳсеймен енне хăйсем те пире пулăшма пикенчĕç. Хĕрсе кайсах ĕçлетпĕр хайхискер. Унччен те пулмарĕ, кĕрлев хăлхана хупларĕ. Пуçа каçăртсан куртăмăр: тӳпере фашист самолечĕ! Хурчăка пек вĕçсе, ерипен пирĕн пaталла çывхарать. Хăш енчен килсе тухнă-ши хăямат? Эпир сисмен те. Халăх ирĕксĕрех çул хĕрринчи канавсене пытанчĕ.

Кĕпер хатĕрпе пĕрехчĕ пирĕн. Нумай пулсан хăма

сармалли пĕр хӑлаҫ сарлакӑш юлнӑ-тӑр. Эпĕ, ĕҫе хӑвӑртлатас шутпа, ниме уямасӑр, кĕпер ҫине хӑмасем сĕтĕретĕп. Фашист самолечĕ аялах анчĕ. Пулеметпа пĕр черет сӑптӑрса илчĕ хайхискер. Юрать, лектереймерĕ. Вӑл айккинелле кайсан пирĕн отряд ҫыннисем пытаннӑ ҫĕртен тухрĕҫ те каллех ĕҫе кӳлĕнчĕҫ. Пĕрисем хӑмасене майлаштарса вырнаҫтараççĕ, теприсем шаккаççĕ кӑна пӑтасене.

Акӑ ĕнтĕ кĕпер хатĕр. Шоферсем хӑйсен машинисем патне чупрĕҫ.

Тапранчĕ шӑв-шав. Кашниех мала ӳкесшĕн.

— Йĕркеллĕ пулӑр! Пĕрерĕн-пĕрерĕн каҫӑр! — асӑрхаттарать шоферсене пирĕн батальон командирĕ.

Черетпе шурĕҫ вара. Машинӑсем хыççӑн кĕпер хӑмисем шӑкӑр-шӑкӑр шӑкӑртаттарса юлаççĕ.

Нумай та вӑхӑт иртмерĕ, вӑрман хыҫĕнчен каллех фашист ҫӑханĕсем ярӑнса тухрĕҫ. Эпир пытантӑмӑр. Пирĕн командир вара ҫаплах кĕпер ҫинче-ха: вӑл хӑйпӑннӑ карлӑка юсать.

Пĕр самолечĕ, пуҫа татса каясла, аялах анчĕ. Командир ӑна курмасть. Летчик персе ӳкерет-иҫ ӑна. Мĕн тумалла? Эпĕ чӑтса тӑраймарӑм, командир патне чупса ҫитнĕ-ҫитмен мĕнпур вӑйпа ӑна тĕкрĕм. Вӑл, ҫакна кĕтменскер, чикеленсе кайрĕ. Вара эпĕ ӑна хам пĕвĕмпе хупларӑм. Мана амантрĕҫ, командир сывӑ юлчĕ.

Ҫавӑн хыççӑн пĕр кана госпитальте выртма тиврĕ. Сывалсан каллех хамӑр чаҫе таврӑнтӑм.

Ĕҫлетĕп ыттисемпе пĕрле.

Пĕррехинче пухӑва пуҫтарӑнтӑмӑр. Ҫавӑнта батальон комсоргĕ ман пирки кӑларнӑ Указа вуларĕ те ман кӑкӑр ҫумне Хĕрлĕ Ялав орденĕ ҫакрĕ. Эпĕ питĕ тĕлĕнтĕм.

— Ҫак чаплӑ наградӑна сана, Аля,— терĕ вӑл,— шиксĕр пулнӑшӑн, хӑрушӑ самантра командира ҫӑлнӑшӑн панӑ. Ҫакса ҫӳре мӑнаҫлӑн.

Пурте саламларĕҫ мана ун чух. Эпĕ чиксĕр савӑнтӑм.

Ку «Хӑюлӑхшӑн» медале ҫул-йĕр юсанӑ ҫĕрте хастар ĕҫленĕшĕн пачĕҫ. Орденпа медаль ҫаксан, мана сӑн ӳкерсе илчĕҫ. Указсемпе пĕрле халь сан пата фото ярса паратӑп.

Сан хĕрӳ — Аля».

— Аля-Альтюк тек ҫыру ҫырайман,— хурланчĕ Венюк.— Кĕтерук кинемей юлашкинчен хĕрĕн юлташĕсем ҫырнӑ хурлӑхлӑ ҫырӑва илнĕ. Вĕсем Альтюкӑн орденĕ-

пе медальне те ярса панӑ. Ҫуратса ӳстернӗ пепкин кунҫулӗ ҫав самантран ӗмӗрлӗхех сӳннӗ.

«Кӗтерук аппа, ку хыпара илтме питӗ йывӑр пулӗ сире,— тесе ҫырнӑ хӗрӗн юлташӗсем.— Ӗненӗр, эпир те сирӗнпе пӗрле пӗтӗм чун-чӗререн хурланатпӑр.

Эпир вӑрман ӑшӗнчи ҫула юсаттӑмӑр. Ку ҫул пирӗн ҫаршӑн питех те кирлӗ пулнӑ. Таҫтан муртан фашистсен пӗр ушкӑнӗ килсе тухрӗ те автоматсемпе шӑтӑртаттарма тытӑнчӗ. Пирӗн ирӗксӗрех ҫапӑҫӑва кӗме тиврӗ. Фашистсен пӗтӗм ушкӑнӗ ҫӗре ӳкрӗ темелле, нумай пулсан, виҫ-тӑват ҫын тарма ӗлкӗрчӗ пулӗ. Анчах эпир те ҫак ҫапӑҫура чи хаклӑ юлташсене ҫухатрӑмӑр. Вӗсем хушшинче — сирӗн Аля хӗрӗр те... Мӗн тӑвӑн... Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн ҫарти хастар хӗр-комсомолкисене нихӑҫан та манмӗ.

Юратнӑ юлташӗсем Альӑна пытарчӗҫ. Вилтӑпри ҫинчи хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ, Аля комсомолка ятне ҫырса хунӑ йывӑҫ юпа иртен-ҫӳрене пуҫ тайма чӗннӗн мӑнаҫлӑн ларать. Таврари ешӗл йывӑҫ тураттисем ҫинче кайӑксем Альӑна лӑпкӑн ҫывӑрттарасшӑн, сӑпка юрри юрлаҫҫӗ.

Ҫулне пурпӗрех юсаса пӗтертӗмӗр. Тепӗр темиҫе вӑхӑтран Совет Ҫарӗ ӑнӑҫлӑн иртрӗ. Альӑна чысласа салют пачӗҫ: машинӑсем кӑшкӑртрӗҫ, тӳпенелле пӑшал печӗҫ.

Эпир паттӑр Альӑна нихӑҫан та манас ҫук. Тӑпри ҫӑмӑл пултӑр ун.

Вӑрҫӑ пӗтсен, тен, сирӗн пата ҫитсе те курӑпӑр.

Сывӑ пулӑр! Пысӑк тӳсӗм, сывлӑх сунатпӑр.

Аля юлташӗсем».

— Эх, мӗн тери хӗр пӗтнӗ! — ассӑн сывласа ячӗ Венюк.

— Килсе кайнӑ-ши вӗсем Кӗтерук кинемей патне?— ыйтрӗ Марина.

— Пӗлместӗп,— айӑплӑн пӑхкаласа илчӗ Венюк.— Аннерен ыйтса пӗлмелле, вӑл курнах-тӑр.

Пӗр хушӑ нихӑшӗ те шарламарӗ. Вуланӑ ҫырусем шухӑша ячӗҫ вӗсене.

Кӑшт тӑхтасан, Венюк ҫапла сӗнчӗ:

— Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пуҫ хунӑ хамӑр ял пики—хӑюллӑ комсомолка Альтюк ячӗпе атьӑр ҫитес вырсарникун колхоза ӗҫлеме тухар.

Пӗри те хирӗҫлемерӗ. Калаҫу вара ҫӗнӗрен чӗрӗлчӗ. Пархатарлӑ тавлашу ялан ыррине, чи кирлине тупать.

чи кирли çакă: Альтюкăн орденĕпе медальне, унăн çырăвĕсене, сăнӳкерчĕкне, указсене, юлташĕсем хурлăхлă хыпар пĕлтернĕ хута ĕмĕрлĕхех упрас. Шкулта Çарпа Ĕç мухтавĕн музейĕ уçăлсан, вĕсене пурне те унта парнелес. Ун пек музей шкулта уçăлатех. Мĕншĕн тесен паянхи, ӳлĕмхи çамрăксен Тăван çĕршыв çитĕнтернĕ паттăрсенчен тĕслĕх илсе ӳсмелле.

*1975 ç.*

## ИКĔ ЧĔРЕН ПĔР КĔВĔ

Чугун çул кукăрĕнче пуйăс кăшкăртни илтĕнчĕ. Хĕрлĕ çăлтăрлă тепловоз, тăвалла хăпарнă чухнехи пек, хаш-хаш! хашкать. Хыçĕнче ун вăрăм состав. Кустăрмисем пиллĕкĕн сӳс тĕвеççĕ: тăк-тăк-тăкăртик! тăк-тăк-тăкăртик! Хытă чупать пуйăс. Вакунсенче ларса пыракан çынсемпе пĕр шухăшлă тейĕн. Кантăкран йăлт та йăлт пăхса илекен Яламп и кăмăлне те чухлать пулас вăл. Каччă вара чăннипех те васкать, çак самантрах килне çитсе ӳкĕччĕ вăл. Çыннăн савăнăçĕ пысăк. Ара, унпа пĕрле тăван ялне Ленинград хулинчен икĕ хаклă хăна пырать-çке. Ав, вĕсем, асламăшĕпе мăнукĕ, сылтăм енчи сак çинче Ялампие хирĕç лараççĕ.

Асламăшĕ утмăл урлă каçнă. Пичĕ ун самаях пĕркеленнĕ, çӳçĕ те кăвакарнă. Апла пулин те палласа илĕç-ха ăна Вăрманпуç ялĕнчи çынсем. Пĕрле тӳснĕ асап пĕртте манăçăнмасть. «И-и-и! Командир арăмĕ—Вера Ивановна Матеу! Мĕнле килме пĕлтĕр?!» — тейĕç. «Килме шухăшласа хуни пĕр ĕмĕр! Эсир ялан асрах. Пĕчĕк ывăлăм вилтăпри те тахçантанпах туртать хăй патне. Халь акă Пайăркка Аннин мăнукĕ, Альтиç ывăлĕ, Ялампи илсе тухрĕ. Тав ăна»,— пуç тайĕ ватă хăна.

Халĕ Вера Ивановна Матеу нихçанхинчен ытларах пăлханать. Йывăр вăхăтра пĕртен-пĕрре килнĕ çул унăн сăн-сăпатне самаях улăштарчĕ.

Мăнукĕ — çап-çамрăк хĕр. Ытармалла мар чипер. Пĕвĕ — çурта пек яштака. Питçăмарти те анис улма евĕр хĕрлĕ. Çырă çӳçĕ шăртласа якатнă сӳс çурăмне аса илтерет. Куçĕ чакăр.

Ялампи чунтан юратать çак Ленинград хĕрне. Ана: «Реналь! Реналь!»—тесе çеç тăрать. Хĕр хирĕç мар пулсан, авланма та хатĕр вăл. Мĕнех, чăваш каччи тивĕç мар-и ăна? Йĕкĕтĕн пĕтĕм сăн-сăпачĕ, ăшă кăмăлĕ хăй

патне кăчăк туртса тăрать. Кăмăлĕ лайăх. Сапăр этем. Тата ялан хаваслă. Йăл кулнă чух тикĕс шурă шăлĕ пит-куçне çутатса ярать. Кăпăшка хура çӳçне вăл вирелле тураса якатать. Çавăншăнах пулĕ пичĕ тăваткăл курăнать, сăмси кăшт пысăкрах пек. Ку нимĕн чухлĕ те унăн илемне чакармасть. Яламппи пĕвĕпе чăн-чăн спортсмен. Кĕрнеклĕ. Ятуллăскерне тем тăхăнсан та килĕшет. Халĕ вăл шурă майкăпа. Çулла-çке, ма костюм тăхăнса пăчăхмалла, тет.

Пĕччен чух Яламппи час-часах хăй юратăвĕ пирки шухăшлать.

«Искусствăна юратман, Эрмитажа çӳремен пулсан, эпĕ ĕмĕрне те Ренальпе курнăçас çук»,— тет вăл хăйне хăй.

Хăçан уçăлчĕ-ха унăн илемлĕх алăкĕ? Шкулта вĕреннĕ чух. Нихăçан та манас çук Яламппи çав урока.

...Париж Коммуни çинчен вĕрентетчĕç. Учитель доска çине картина çакрĕ. Вара класс енне çаврăнчĕ те, камран ыйтам-ши тенĕ пек, куçне хĕскелерĕ.

— Евламппий Пайăркка, мĕн калама пултаран çак картина пирки? — ыйтрĕ вăл.

Яламппи ура çине тăчĕ, тинкерсе пăхрĕ картина çине. Çын ваннăра выртать. Пуçне алшăллипе çыхнă, куçĕсем хупă. Кăкăрĕнчен юн сăрхăнать. Вăл шыв тултарнă ваннăра выртнă чухнех çырнă пулас. Çапла. Сулахай аллинче — шурă хут листи, çырнă йĕркесем те пур. Сылтăм алли усăннă, пӳрне хушшинчи хур тĕкĕ кĕç-вĕç тухса ӳкессĕн туйăнать. Юнашарах тумбочка, ун çинче чернильница, хур тĕкĕ, хут листисем.

— Ну, мĕнле?— партăсем хушшипе утрĕ учитель.

— Курасса курнă-ха,— терĕ Яламппи, хăй çак картина çинчен нимĕн те пĕлменшĕн вăтаннипе хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе.

— Шел,— пуçне сулкаларĕ учитель,— лар, тăванăм. Тен, кам та пулин каласа парать?

Вара Яламппи хыçĕнчи парта хушшинче ларакан ача хăюсăррăн сас пачĕ:

— «Марат вилĕмĕ» ятлă ку картина,— терĕ вăл.

— Тĕрĕс. Художникĕ кам? Мĕн каласшăн пулнă вăл çак картинăпа?

Класс шăп. Учитель кĕтет. Кăлăхах, нихăшĕ те нимех те калаймарĕ. Çавăн чух учитель ачасене «Марат вилĕмĕ» картина пирки тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе килме хушрĕ.

Яламппи районти библиотекăна кайрĕ. Тупса пачĕç

ăна мĕн кирлине. Пĕр пĕчĕк кăна картина пысăк историпе паллаштарать иккен. «Марат вилĕмĕ» картина авторĕ — Франци художникĕ Жак Луи Давид. Вăл Францири вунсаккăрмĕш ĕмĕр вĕçĕнчи буржуалла революци вăхăтĕнче пурăннă художник. Хăйĕн картининче вăл революци çулпуçне ирсĕр сутăнчăк тискеррĕн вĕлернĕшĕн халăх хуйхăрнине кăтартать.

Çавăн хыççăн Ялампи тĕнчери пĕтĕм художниксем çинчен пĕлесшĕн çунать. Акă мĕншĕн çӳрет вăл Эрмитажа.

Ленинграда мĕнле лекнĕ-ха Ялампи? Ăна пурнăç хăй урапи çине лайăх лартнă темелле.

Ялти вăтам шкул хыççăн вăл Шупашкарта техучилище пĕтерчĕ. Специальноçĕ — токарь.

Ĕçлеме ăна Ленинградри Киров заводне ячĕç. Сайра хутра пулакан телей ку. Ĕçле-ха чапа тухнă рабочи йышĕнче!

* * *

Ĕç хыççăн Ялампи час-часах Эрмитажа çӳрекен пулчĕ. Пĕррехинче вăл вырăссен паллă художникĕ Шишкин çырнă пысăк картина умĕнче ватă хĕрарăмпа çап-çамрăк хĕр каласса тăнине асăрхарĕ. Хĕрĕ шăп вутăшах вара. Пике чиперлĕхĕ Ялампие тăлласах лартрĕ. Тăрать вĕсем хыçĕнче тапранаймасăр, ирĕксĕрех юплет халапланине.

— Иван Иванович Шишкин хăйĕн кратинисене чăваш çĕрĕнче те ӳкернĕ,— каласа парать ватă хĕрарăм çамрăк хĕре. Ялампи вара хăлхине тăратрĕ.— Кун пек вăрманта эпĕ хам та çӳренĕ,— тет каллех ватти.— Çумăр хыççăн кăмпа нумай шăтатчĕ унта. Кунтăкĕ-кунтăкĕпе пуçтарса таврăнаттăмăр. **Лайăхрах сăна-ха,** Реналь, юманĕсем еплерех! Чăваш çĕршывĕнче çĕршер çул ӳсекен, виç-тăват ытама кĕмен юмансем пур.

Ялампи тӳсеймерĕ, çывăхраха пычĕ те картина айне мĕн çырнине вуларĕ: «Дождь в дубовом лесу». Вара сăмах хушмасăр чăтаймарĕ каччă:

— Эсир Чăвашра пурăнмастăр пулĕ те?

Ватă хĕрарăм хыçалта тăракан каччă енне çаврăнчĕ.

— Эпĕ хам чăваш,— пĕлтерчĕ Ялампи.

— Чăваш? — тĕлĕнчĕ хĕрарăм.— Хăш ялсем пулатăн?

— Вăрманпуçсем.

— Ăнах-и? Эпĕ шăпах çав ялта пурăннă. Кам ачи пултăн? Аннӳ мĕн ятлă?

— Альтиç! Ман аннене Альтиç тесе чĕнеççĕ.

— Пайăркка Аннин Альтиçĕ-и?

— Çавă. Пайăркка Анни — ман кукамай.

— Ак тата!— пĕççине шарт! çапса илчĕ хĕрарăм.— Ай, кукаму ылтăн сынччĕ. Мана вăл Вера Ивановна Матеу тесе çеç тăратчĕ. Аннӳне те астăватăп. Альтиç вăл манăн Хосе ывăлăмран кăшт аслăрахчĕ, пĕрле питĕ вылятчĕç.

Хĕрарăм çамрăк хĕре çурăмĕнчен çупăрласа çапла каларĕ:

— Ку, акă, Хосе хĕрĕ — Реналь,—терĕ хĕрарăм, чылаях пăлханса. Унăн пичĕ çине тар тапса тухрĕ.— Юрĕ, тек çӳремĕпĕр паян Эрмитажра, тепĕр чухне килĕпĕр,— ал сулчĕ вăл.— Эсĕ, çамрăк сыннăм, мĕн ятлă-ха?

— Евлампий. Чĕнессе вара Ялампи тесе чĕнеççĕ.

— Халĕ пирĕн пата кайрăмăр, Ялампи.

Каччă хирĕçлемерĕ.

Тумтир тăханса урама тухрĕç. Ялампие Ренальпе юнашар утма тиврĕ. Каччă нимле сăмах тупаймарĕ каласма. Юрать, Реналь çăлчĕ.

— Юр епле чăмаккăн-чăмаккăн ӳкет!— терĕ вăл куçне хĕскелесе.

— Ялта халĕ çăварни эрни,— ватă сын пекрех каласма тăрăшрĕ Ялампи.— Ĕлĕк, пирĕн асатте-асаннесем пĕчĕккĕ чух, ялта каччăсемпе хĕрсем, хысла çунасем çине ларса, лаша çилхисене хăюсемпе капăрлатса, аслă урам тăрăх катаччи чупнă. Вăрăм хĕлпе çапла сывпуллашнă вĕсем.

— Халĕ катаччи чупмаççĕ-и вара?

— Хĕл мучие халĕ урăхларах ăсатаççĕ.

— Шел. Эпĕ катаччи чупăттăм. Мĕн тери хаваслă!— каллех кулкаларĕ хĕр.

— Мĕнех,— тет Ялампи Ренальпе пĕрле ахăлтатса. Çывхаракан автобуса курчĕ те тĕллесе çапла каларĕ:— Ав, лаша килет.

Реналь тăп чарăнчĕ: ун асламăшне кĕтмелле.

Автобусран тухсан нумай та утмарĕç — çитрĕç те.

Кил хуçи кухньăна васкарĕ.

Реналь чăваш каччине пӳлĕмсене кăтартса çӳреме тытăнчĕ.

— Мĕн тери пысăк хваттер сирĕн! Иксĕрех пурăнатăр-и?

— Мĕншĕн иккĕн çеç? — хĕр тути йăл сарăлчĕ, чакăр куçĕсем çăлтăр пек çиçрĕç.

Ашшĕпе амăшĕ те пур иккен Реналĕн. Вĕсем халь тĕнче тăрăх çулçÿреве тухса кайнă. Реналь хăй студентка, медицина институтĕнче пĕрремĕш курсра вĕренет.

Кантăк умĕнче чарăнчĕç хайхискерсем. Чÿречине урайне çитиех капрон чĕнтĕрпе карнă. Реналь каррине сирсе урамалла тинкерчĕ. Юнашар тăракан Ялампи хăй те сисмерĕ, аллине хĕр хулпуççи çине хучĕ те пит-куçĕ вĕри çапнипе хĕмленчĕ, чĕри хытăрах тапма тытăнчĕ. Юрать, çак вăхăтра Реналь асламăшĕ чей ĕçме чĕнчĕ...

Çак кунран пуçласа канăçĕ çухалчĕ Ялампин. Пуçра Реналь кăна. Тĕлĕкре те унпах супать, ĕçре çеç кăшт хăтăлать шухăшсенчен. Мĕн ку? Халиччен ăна çакнашкал туйăм тыткăнламанччĕ. Эрне хушшинче шурсах кайрĕ йĕкĕт.

— Эсĕ мĕн, чирлерĕн-и?

— Юратса пăрахнă вăл!

Çапла кулкалаççĕ юлташĕсем Ялампирен.

Каясчĕ унăн Ренальсем патне тепĕр хут, анчах мĕнле пырса кĕрес? Вăтанать.

Пĕр кун кĕтмен-туман çĕртен общежитие Реналь хăй пырса кĕчĕ.

Ялампи калама çук савăнчĕ.

— Иртнĕ вырсарникун Эрмитажра пултăн-и? — ыталахальтен сăмах турĕ Реналь.

— Çук.

— Пирĕн пата та пымарăн. Асанне кĕтет. Мĕн пÿлĕмре пăчăхса ларатăн? Тухар.

Нева хĕррипе çÿрерĕç вĕсем алла-аллăн тытăнса. Мĕн тери хаваслă иккен килĕштернĕ хĕрпе çÿреме! «Хам юратнине каламаллах ăна»,— шутларĕ Ялампи. Хăю çитерчĕ те сăмах вĕçертрĕ:

— Реналь, эпĕ сана юрататăп!

Реналь кăлтăр-кăлтăр кулса ячĕ.

* * *

Ялампи ĕçлекен цеха васкаса тумалли питĕ кирлĕ пысăк ĕç хушрĕç. Детальсене чĕптĕм йăнăшмасăр якатмалла. Чăваш каччи пĕтĕм пултарулăхне парса ĕçлерĕ те вара. Ренальпе курнăçма май тупăнмарĕ. Анчах унăн ăшă калаçăвĕ, илĕртÿллĕ кулли пĕрмай хăлхара янăраса, чуна вăй-хал, шанчăк парса тăчĕ.

Пысăк хакпа йышăнчĕç Ялампи тунă детальсене. Завод директорĕ ăна та ытти рабочисемпе пĕрле приказ çырсах тав турĕ.

Чарусăр вăхăт шăвать те шăвать. Хĕвеллĕ çуркуннене кĕтсе илчĕ этем. Çĕр-аннемĕр шурă тумне хыврĕ те симĕс кавирпе витĕнчĕ. Пур çĕрте те чечек чĕлтĕртетет.

Пĕр янкăр уяр кун Ялампипе Реналь тĕл пулчĕç. Таçта та кайса çӳрерĕç вĕсем. Ленинград хулинче курмалли нумай. Паркра темĕн чухлĕ фонтан. Кĕмĕл пĕрчĕсем пĕрĕхтерсе тăраççĕ вĕсем.

— Тата икĕ çултан эпĕ те института вĕренме кĕретĕп,— терĕ Ялампи хĕрпе юнашар утнă май.

— Мĕншĕн кăçал мар? — пĕлесшĕн пулчĕ Реналь.

— Кĕркунне ят тухать, çара каятăп.

— Салтакран таврăнсан мĕнле института вĕренме кĕресшĕн? — татах кăсăкланчĕ хĕр.

— Мана завод политехническине ярать. Инженер пулатăп.

— Эпĕ — тухтăр,— терĕ лăпкăн çеç Реналь.

— Инженерпа тухтăр... Мĕнлерех лайăх...—каласа пĕтермерĕ Ялампи.— Эх, эсĕ те çав, мана юратмастăн.

— Кам каларĕ? — кулкаларĕ Реналь.

— Эсĕ... Мĕн-и вара?

— «Мĕн-и» çав,— кулма чарăнмасть хĕр.

Общежитие таврăнчĕ Ялампи. Тăваттăмĕш хута çитсен кăшкăрса ямасăр тӳсеймерĕ: «Вăл мана юрататать!»

Сасă маччана пырса перĕнчĕ те каялла таврăнчĕ: «а-а-а-та-ать!»

Темиçе алăкран пĕри уçăлчĕ те, сасартăк хура çӳçлĕ хĕр курăнчĕ.

— Мĕн ĕрлешен? — ыйтрĕ вăл сиввĕн.

— Вăл мана юратать,— терĕм.

— Ну-у?! Телей сунатăп! — алăкне шалт! хупрĕ хура çӳç.

Ялампи савăнăçĕ ниçта шăнăçмасть. Пуçра шухăшсем çаврăнаççĕ. «Авланас...» Икĕ чĕрен пĕр кĕвĕ — мĕн тери ырă! Пĕр-пĕрне юратни вăл — пысăк телей, ĕмĕр иртни сисĕнмĕ.

Июль уйăхĕнче Ялампи канма тухать, тепĕр эрне çеç ĕçлемелле ун. Çак хыпарпа вăл Ренальсем патне кайрĕ. Вера Ивановнăн, тен, яла мĕн те пулин каласа ямалли пур?

— Тусăм, эпĕ те санпа пыратăп,— пĕлтерчĕ Вера Ивановна.

— Яла-и? — тĕлĕнчĕ Реналь.— Асанне, эпĕ санран юлмастăп.

— Питĕ шеп. Пĕрле хаваслăрах,— килĕшрĕ асламăшĕ. Вăл икĕ çамрăк хушшинче тем пуррине сисет-ха.

— Эппин, каятпăр! — хĕпĕртесе ӳкрĕ Ялампи, Реналь те унпа пĕрле-çке.

* * *

...Вера Ивановна Матеу Ленинград хулинче çуралса ӳснĕ. Вырăс хĕрарăмĕ. Упăшки унăн испани çынни пулнă. Çавăнпа хушамачĕ испанла. Ăçта тĕл пулнă Вера Ивановна испани çамрăкĕпе?

Испанире фашизм вăй илсен, унти коммунистсен партийĕн вăрттăн ĕçлеме тивнĕ. Коммунистсенчен нумайăшĕ Совет Союзĕнче хӳтлĕх тупнă. Вĕсем тăван халăхне пусмăртан хăтарассишĕн кунта кĕрешнĕ. Çав йышра вунтăхăр çулхи Матеу коммунист та пулнă.

Пĕррехинче Матеу Нева урлă хывнă кĕпер çинче тăракан сарă хĕре асăрхать. Мĕн-ма вăл кĕпер айĕн тухакан пĕчĕк кăна пăрахута шурă тутăрпа сулласа ăсатать? Тен, унта çывăх тусĕ ларса кайрĕ?

— Синьоритта,— чĕнчĕ Матеу, хĕр çумне пырса тăнăскер,— айăп ан тăвăр-ха, эсир манăн гид пулаймăр-ши? Ленинградпа питĕ паллашас килет.

Хĕр пуçне çĕклерĕ. Ун умĕнче хăй пекех çап-çамрăк каччă тăрать иккен. Унăн йĕпкĕн хура çӳçĕ хĕвел шевлипе йăлтăртатать. Пысăк хура куçĕсем çăлтăр пек çунаççĕ.

— Паллашар. Эпĕ синьор Матеу, испани çынни.

— Питĕ аван. Мана Вера тесе чĕнеççĕ,— алă пачĕ хĕр.

Çак самантран вара тек уйрăлман вĕсем. Часах иккĕшĕ те пĕр хушаматпа — Матеу хушаматпа çӳреме тытăннă.

Килĕштерсе, айшатăн пурăннă çамрăк мăшăр. Часах çемье хутшăннă. Умлă-хыçлă икĕ ывăл çуралнă. Матеу, хăйĕн ашшĕне асра тытса, аслине Хосе ят панă. Иккĕмĕш ывăлне те испанла — Мигель тесе чĕннĕ. Хĕрача çуралсан, вырăсла — Надежда ятлă пулать. Çапла сăмах татса хунă упăшкипе арăмĕ. Виççĕмĕш çураласса кĕтнĕ. Анчах ĕмĕтленни çитмен.

Хосе ятлă ывăлĕ ашшĕ-амăшне чунтан савăнтаратчĕ. Çирĕп сывлăхлăччĕ те патварччĕ. Вăл сăнĕпе те, кăмăлĕпе те каснă-лартнă ашшĕччĕ. Çӳçĕ йĕпкĕн хура, куçĕ

те кăмрăк тĕслĕ. Пуринчен ытла юлташсемпе хăвăрт тусланнă, вăйăсем ăста пуçарнă. Тĕрĕслĕхе çав тери юратнă. Енчен вăйăра юлташĕсенчен хăшĕ те пулин улталасан, Хосерен каçару ан та кĕттĕр. Мигель, тӳлекскер, пĕтĕм хусканăвĕпе амăшне аса илтерсе тăнă.

Ялампин кукамăшĕ, ашшĕпе амăшĕ, кӳршĕ-аршă — пурте Вера Ивановнăн ывăлĕсене—Хосепе Мигеле халĕ те астăваççĕ, час-часах аса илсе калаçаççĕ вĕсем çинчен.

Ун чух утма пуçланă, хăйĕн чĕлхипе чĕвĕлтетме тытăннă Мигель ӳпке шыççипе чирленĕ те сывалайман. Çапла чăваш ялĕнче — Вăрманпуçĕнче çĕре кĕнĕ. Пĕтĕм ялйыш пĕрле пухăнса пытарнă командирăн кĕçĕн ывăлне.

Мĕнле шăпа илсе çитернĕ-ха Вера Ивановнăпа ачисене нихăçан илтмен-курман чăваш ялне? Тискер вăрçă — акă мĕнле инкек.

Пирĕн çĕршыва нимĕç фашисчĕсем тапăнса килсен, Матеу коммунист совет çыннисемпе пĕрле фронта кайнă.

Нимĕç çарĕ Ленинград патне çывхарать, хула çине снаряд хыççăн снаряд ывăтать. Ниме те уямаççĕ фашистсем, ара, Гитлер хула халăхне пĕтерме хушнă-çке.

Ленинград çыннисене васкасах эвакуацилеме тытăннă.

Вера Ивановна татăлса макăрать. Хосе амăшĕн куçĕнчен юхакан куççульне шурă тутăрпа шăлать, пĕчĕккĕ пулин те, йăпатма пĕлет. Арçын-çке вăл.

— Ан йĕр, аннеçĕм,— ӳкĕтлет вăл,— акă, атте часах килет.

Ашшĕ хăйĕн çемйине вăрăм çула тухас умĕн ырă сунса яма килне таврăнмарĕ. Хăйсем вара ашшĕне пурте пĕрле ăсатнăччĕ. Ун чух нихăшĕ те чухлайман çав пĕр-пĕрне юлашки хут курнине, ĕмĕрлĕхе уйрăлнине.

Пĕр шăрăх кун Вера Ивановна Матеу та вырăнтан тапранчĕ. Алăра икĕ ача. Асли тăватта пуснă, кĕçĕнни çулталăк та тултарман. Хăратнă Вера Ивановнăна малашлăх. Никам палламан çĕрте мĕн кĕтнĕ ăна? Тепĕр майлă шухăшласан кăшт лăпланать вăл: ара, вĕсене вăрçă тамăкĕ вĕресе тăман çĕре, аякри тыла, ăсатаççĕ-çке. Унта бомба ӳксе чуна сехĕрлентермест. Ырă çынсем таçта та пур. Çапла хăйне хăй лăплантарса çула тухрĕ Ленинград хĕрарăмĕ.

Хула урамĕсенче те, чугун çул станцийĕнче те сехри хăпса шуйланнă халăх хĕвĕшет. Кăшкăрашаççĕ: такам

такама чӗнет. Теприсем йӗреҫҫӗ, ахлатаҫҫӗ. Тӗрлӗ сасӑ пӗрлешсе пӗтӗм тӗнче уланӑн сывлӑша ҫурать.

Вера Ивановна вакуна пысӑк асаппа кӗрсе вырнаҫрӗ. Юрать-ха, ҫар ҫыннисем ачисене ҫӗклесе кӗчӗҫ. Чунӗ лӑшах пулчӗ хӗрарӑмӑн. Ҫитмелли ҫӗре ҫитнӗнех туйӑнчӗ ӑна. Анчах вӑл йӑнӑшнӑ. Ҫул терчӗ пуҫланать ҫеҫ-ха. Миҫе хутчен пӗр пуйӑс ҫинчен теприн ҫине куҫса ларма, миҫе хутчен чугун ҫул хӗрринчех ҫӗр каҫма тивмерӗ-ши!

Килтен тухнӑранпа пайтах кунсем иртсен, пӗр ҫумӑрлӑ сивӗ ир пуйӑс татах чарӑнчӗ. Канаш станци ку. Ленинградран эвакуациленӗ ҫемьесене антарчӗҫ. Вӗсен шутӗнче Вера Ивановна Матеу та ачисемпе пулнӑ.

Ҫак вӑхӑтра Вӑрманпуҫ ҫыннисем те канлӗ пурӑнман. Вӗсем ҫӗрне-кунне уямасӑр, чикӗнсе каясла ӗҫленӗ, пӗтӗм вӑй-хала фронта пулӑшас ҫӗре янӑ. Вӑйпитти арҫынсем киле юлманпа пӗрех ӗнтӗ, пур ӗҫре те хӗрарӑмсемпе ача-пӑчасем айланнӑ. Ӗҫӗ-хӗлӗ мӑй таран: уйран тырпула тӑкаксӑр пухса кӗмелле, патшалӑха пама тырӑ турттармалла, выльӑх-чӗрлӗхе те хӗл каҫарма апат хатӗрлемелле.

Ним кӗтмен-туман ҫӗртен тата тепӗр, халиччен илтмен-курман ҫӗнӗ чӑрмав сиксе тухрӗ: Канаш станцине Ленинградран эвакуациленӗ ҫынсене антарса хӑварнӑ. Пӗр ҫемйине вӗсен те илсе килмелле,васкасах лав ямалла: район пуҫлӑхӗсем ҫапла хушнӑ.

— Кам патне вырнаҫтарӑпӑр? Пирӗн чи малтан ҫакна татса памалла,— терӗ ял Совет председателӗ ятарласа ҫак ыйтӑва сӳтсе явма хӑй патне пухнӑ ятлӑ ҫынсене.

Шавлакаларӗҫ пӗр кана.

— Эй ҫырлах, нумайлӑха килеҫҫӗ-и? — ыйтрӗ пӗри.

— Вӑрҫӑ чарӑниччен ӗнтӗ,— ҫапла пулчӗ явапӗ.

— Эпӗ хам пата илӗттӗм, анчах хӑратӑп. Эпӗ, чӑваш хӗрарӑмӗ, майрасемпе пурӑнма пӗлмӗп ҫав,— пуплерӗ пахчаҫимӗҫ туса илекен звено пуҫлӑхӗ.

— Итлӗр-ха, ман шухӑшпа килӗшмӗр-и? — сас пачӗ фермӑра ӗҫлекен Пайӑркка Анни.— Пирӗн кӳршӗсен пӳрчӗ хупӑнса ларать. Хӑвӑрах пӗлетӗр, Хӗветле аппа вӑрҫӑ пуҫланнӑ кун ҫӗре кӗчӗ. Ывӑлӗ, Петӗр, салтакран таврӑнмалласкер, фронтра ҫапӑҫать. Ленинградран эвакуациленӗ ҫемьене ҫав пушӑ ҫурта вырнаҫтарас. Петӗр уншӑн ятлас ҫук, кантӑкран хӑй ҫути курӑнни пурнӑҫ пуррине пӗлтерет.

Чăнах та, хăнасене пурăнма Хĕветле аппа пӳрчĕ — чи мелли. Кунпа килĕшмесĕр тăраймăн. Хĕр-комсомолкăсене пӳрт ăшчиккине çуса тасатма, тирпей кӳме çийĕнчех кăларса ячĕç.

— Канаша кама ярăпăр? — пурин куçĕнчен те тинкерсе илчĕ председатель.

— Пайăркка Аннине! Вăл вырăсла лайăх пĕлет,— пĕр харăс темиçен ун ятне асăнчĕç.

Анна хирĕçлемерĕ. Халăх хушнине мĕнле итлемĕн, ара. Çук, вăл тавлашма хăнăхман. Каланă пек, унăн та виçĕ ача-ха. Асли те, Альтиçĕ, ултта çеç пуснă.

Лупасайĕнче пĕртен-пĕр хăлтăр-халтăр урапа ларса юлнă, ыттисем алăра. Аннан çакна кӳлме лекет ĕнтĕ. Тĕплĕн тĕрĕслерĕ ăна. Ытлашши юсавлах теме çук, çапах та çитес çĕре çитсе килме тӳсĕ. Лашана Канашра çитерме сĕлĕ тултарнă хутаç, хăнасене лартма çемçе тӳшек — улăм хучĕ урапа çине.

Витере те пĕртен-пĕр Ăмăрткайăк çеç тăрса юлнă. Ăна ĕçе ямаççĕ, унта-кунта çӳремелли лаша вăл. Анна Ăмăрткайăка çавăтса тухса турта хушшине тăратрĕ.

Лав çине аçам тăхăнса ларнă Анна чăпăркка çĕклесе кăтартсан, Ăмăрткайăк тапранчĕ.

* * *

Хĕветле аппа пӳртне пурнăç вĕрсе кĕртме пынă комсомолкăсем чи малтан чӳречесене хупса-çапса лартнă хăма татăкĕсене хăйпăтрĕç. Кантăкĕсене темиçе çул та шыв тивмен пулас. Эрешмен тăрăшнă вара, вăл хăй эрешленĕ чĕнтĕрсене çителĕклех карса тухнă. Пӳрт ăшчикки хăтлăхсăр. Кунта сĕтелпе тăрăхла саксемсĕр пуçне урăх ним те çук.

Чăваш хĕрĕсен алли-ури çыпăçуллă, ĕçре пиçĕхсе ӳсеççĕ. Нимле ĕç умĕнче те наймăшмаççĕ вĕсем. Ку хутĕнче те парăнса ĕçлерĕç. Хĕветле аппа пӳртне самант çурĕç, тасатрĕç. Пӳрт ăшчикки, хĕвел кĕнĕн, çап-çутă çуталчĕ.

Комсомолкăсенчен пĕрне Арине тесе чĕнеççĕ. Вăл хăтлăх кӳме те ăста-мĕн. Хаçатсене тĕрлĕ майлă хуçлатса каскаларĕ те, эрешлĕ чĕнтĕр пулчĕ те тăчĕ. Чӳречесене карчĕç вĕсемпе. Сĕтел варрине кĕленчепе чăрăш турачĕ лартрĕç.

Вут хутса кăларнă кăмака ăшă сапать.

— Кунта хам та пурăнма хирĕç мар,— терĕ Арине.

— Малтан хуçи — Петĕр таврăнтăр-ха, вара куç курĕ,— ихĕлтетрĕç хĕрсем.

— Чимĕр-ха эсир, килекен çынсене çăкăр-тăварпа кĕтсе илмелле,— асăрхаттарчĕ Арине хĕрсене. Хăех вара пуçламан çавра çăкăрпа тăвар суланчи илсе каçрĕ.

* * *

Лав паçăрах Канаш станцинчен каялла килме тухнă, анчах çулĕ ўсĕнмест. Пайăркка Анни лашине сас кăларса хăвалама та именет. Ара, урапа çинче шăнса ĕнтĕркенĕ икĕ ача амăшĕн ытамĕнче сывăраççĕ, вĕсем вăранĕç те йĕме тытăнĕç.

Хура пĕлĕт катрамĕсем тĕнче хĕррине кайса çухалчĕç, тўпе тасалчĕ. Çăлтăрсем мĕлтлетеççĕ.

— Ытла сивĕтсе пăрахрĕ-çке,— çўçенсе илет Анна.

Анчах çул çинче пурпĕр пылчăк çăрăлать. Тикĕт сĕрменрен чĕриклетсе аран-аран çаврăнакан кустăрмасем çумне çыпçăннă нўрлĕ тăпра курăс хуппи пек ўке-ўке юлать хыçала.

Акă тинех лав яла пырса кĕчĕ. Лăчăртатакан урапа сассине илтсе, йыт-качка юлхавлăн вĕркелет.

Алтăр çăлтăр ўпĕннĕ çĕрелле лав Хветле аппа хапхи умне çитрĕ.

— Тпру-у!—терĕ Анна, тилхепене карăнтарса. Лаша тăп чарăнчĕ.

Хĕрсен хăлхисем çивĕч, чĕрисем сисĕмлĕ. Чупса тухрĕç вĕсем, хапха уçса лава картишне кĕртрĕç.

— Йăмăкăмсем, ачасене çĕклесе кĕрĕр,— хушрĕ хĕрсене Анна, çĕре сиксе анса.

Лешсем ачасене курасшăн унăн-кунăн пăхкаларĕç, анчах урапа çинче улăм ăшне варăннă, аçампа пĕркеннĕ хĕрарăмсăр пуçне урăх никама та асăрхамарĕç. Шак! хытса тăчĕç аптранипе.

— Мейĕр-ха, эппин, ачасене,— терĕ вара Вера Ивановна, аран хускалкаласа. Ăна Анна Канашрах çапла, ачасем шăнасран, аçампа чĕркесе лартнăччĕ.

Хĕрсем унăн ури çинчи улăма йăпăр-япăр сирчĕç. Аçам аркине уçрĕç. Акă ăçта вĕсем!

— Кил кунта! — аллине тăсрĕ ача патне вăрăм пўллĕ хĕр.

— Арине, пĕчĕккине асту, имлесе тыткала,— астутарчĕ ăна Анна.— Ан ўкерĕрех.

— Ан пăшăрхан, Анна аппа,— сатурлатать Арине.

Виççĕмĕш хĕр Вера Ивановнăна урапа çинчен анма пулăшрĕ.

— Ура çывăрнă. Утаймастăп, тупата,— тет вăл.

— Ман çине тайăнăр,— ăшшăн пуплет хĕр.

Пӳрте кĕрсен, çутă çĕрте, Вера Ивановна паллашма васкарĕ.

— Каçарăр мана, хаклă çынсем, сире çапла чăрман-тармалла килсе тухнăшăн. Хамăр ирĕкпе мар, нуша хăваласа килчĕ пире,— сасси хурлăхлăн тухрĕ ун.

— Эй, çырлах, апла ан калăр. Килти пек пулăр,— кăмăллăн каларĕ Арине.

— Мана Вера Ивановна Матеу тесе чĕнеççĕ. Эпĕ командир арăмĕ. Ман упăшка фронтра.— Вăл кашнинех алă парса ячĕсене ыйтса тухрĕ. Унтан путмар çинче выртакан, çĕклесе кĕнĕ чух та вăранман пĕчĕк çынсем çине пуçне сĕлтсе, çапла хушрĕ.— Кусем ман ачасем. Пысăкраххи Хосе, пĕчĕкки Мигель ятлă.

— Хывăн ĕнтĕ, Вера Ивановна. Пĕртте ан кулян,— йăпатрĕ ăна Пайăркка Анни.— Пурнăçа юсаса ярă-пăр-ха майĕпен.

— Тавтапуç сана, Анна. Ырă кăмăллă çын эсĕ.

Хĕрсем сасартăк тĕпĕртетме пуçларĕç. Хăнана сăйлама хатĕрленеççĕ иккен вĕсем. Пĕри чей ăшăтма вучах чĕртрĕ. Килтен тутăрпа çыхса килнĕ кучченеçĕсене салтрĕç. Сĕтел çимĕçпе тулчĕ. Ав, кăмакана пăрахса пĕçернĕ çĕрулми пĕр тирĕк, çăкăр, кукăль пур. Чӳлмекпе те сĕт, те уйран ларать.

Вера Ивановна алă çăвать, Арине куркапа ăшă шыв ярса тăрать.

Çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Ксения Петровна кĕчĕ. Хăй чĕрес йăтнă.

— Ку — пирĕн председатель,— хыпаланса пĕлтерчĕ Пайăркка Анни.

— Кантăкра çутă куртăм та кĕрсе тухма шутларăм,— терĕ Ксения Петровна.— Кам хушăнать пирĕн йыша?

— Икĕ ачапа килтĕм. Айăп ан тăвăр ĕнтĕ,— мĕскĕннĕн сăмах хушрĕ Вера Ивановна.

Колхоз пуçлăхĕпе командир арăмĕ алă тытрĕç.

— Ачăрсем пысăк-и, пĕчĕккĕ-и?— тĕпчерех ыйтрĕ председатель.— Ăçта-ха вĕсем?

— Авă, путмар çинче паппа тăваççĕ,— терĕ Арине. Сирсе пăрахнă çивиттине асăрхарĕ те вăл хăвăрт пырса витрĕ.

— И-и, кусем ҫăкăр мурĕсем ҫеҫ мĕн-ха,—кăмăлсăртараххăн калаҫрĕ Ксения Петровна.—Эпĕ, пĕлнĕ пекех, ирхи сĕт илсе килтĕм. Мейĕр.

— Чăрманмалла марччĕ,— сăпайлăн тав турĕ Вера Ивановна.

Ксения Петровна аллинчи чĕресе Арине тĕпелти урлă сак ҫине кайса лартрĕ.

— Пурнăҫа шăп вăтаҫĕртен татрĕ ку вăрҫă,—Матеу пичĕ тăрăх куҫҫуль юхать шăрҫаланса.

— Ан макăрăр, Вера Ивановна. Мăшăрăмăрсем фашистсене тĕп тăвиччен чăтăмлă пулмалла пирĕн,— терĕ Ксения Петровна хăй те кĕҫ-вĕҫ йĕрсе ярас пек. Упăшкишĕн хытă пăшăрханать иккен вăл. Килтен тухса кайсанах пĕр ҫыру янă та, унтанпа сас-хура пулман. Вĕресе тăракан вăрҫă хирĕнче кама мĕн кĕтнине ăҫтан пĕлĕн. Пырне капланнă чăмаккана ҫăта-ҫăта ҫапла каларĕ колхоз председателĕ: — Вăй ҫитнĕ таран колхоз пулăшĕ сире. Халĕ сĕтел хушшине ларăр та апатланăр, ачăрсене ăшă сĕт ĕҫтерĕр.

Вера Ивановнăн чунĕ лăштах пулчĕ.

Анчах урама тухсан Ксения Петровна кăмăлсăрланса калаҫнине илтмен вăл.

— Анна, эсĕ калаҫса татăлнине мантăн-им? Ĕҫлеме пултараканнине лартса кил терĕмĕр-ҫке сана. Ку майраран мĕн усси пулĕ,— терĕ вăл лавҫа.

— Эх, Укҫине,— хашш сывларĕ Пайăркка Анни.— Сывă, вăйпитти ҫынна пурте хапăл. Кусене куртăм та, хĕрхеннипе чунăм ҫурăлса тухатчĕ. Вокзалăн пĕр кĕтессине тĕршĕннĕ хĕрарăм аллинчи ача вилес пек ҫухăрать. Тепри пуҫне амăшĕн чĕркуҫҫийĕ ҫине хунă та куҫне хупса выртать. Хĕрарăм, хуйха ӳкнĕскер, ним те тума пĕлмест. Хăвах шухăшла, мĕнле чĕрепе иртем вĕсем умĕнчен? Пăрахса хăварнă пулсан, эпĕ хама ĕмĕрне те каҫарас ҫукчĕ. Ялан айăпа туйса пурăнаттăм. Куҫ умĕнчен каймĕччĕ икĕ ачаллă, вăрҫă нушипе хавшанă мĕскĕн хĕрарăм.

— Вăл ҫапла-ха,— килĕшрĕ Ксения Петровна.

— Пурсăмăра та пире пĕр хĕвел ăшăтнă,— татах чĕнмесĕр тӳсеймерĕ Анна.— Пирĕн кил тĕрĕс-тĕкел, унăнне вара тăшман аркатнă. Айăплă мар вăл уншăн. Хамăрăн мĕн пуррине пайлăпăр пĕр-пĕринпе, кăмăлсăрланас мар.

— Сăмах-юмах хамăр хушăра пултăр,— астутарчĕ Ксения Петровна юлташне.

Иккĕшĕ икĕ еннелле утрĕç. Пайăркка Аннин витене лаша ăсатмалла, председателе правленинче кĕтеççĕ.

* * *

Ял çыннисем Вера Ивановна Матеу патне кашни кунах кĕркелесе тухаççĕ.

Эрне иртнĕ ĕнтĕ вăл килнĕренпе.

Авăн çапнă çĕрте ун пирки хĕрарăмсем сăмах тапратрĕç. Пĕри те тепри хăй шухăшне калать:

— Мĕнле çын вăл? Пĕртте ăнланмастăп. Чирлĕ теес — вырăнпа выртмасть. Куçĕсем вара сапаланчăк.

— Кăшт тăнран тайăлнăскер пулас вăл.

— Тĕрĕс-тĕкел марах вăл.

Çапла палкани Пайăркка Аннине кӳрентерчĕ.

— Чимĕр, тиркеме ан васкăр. Çын пирки усал сăмах каличчен аллуна пысăк чĕлĕ тытма хушнă. Эпир кунта вăрçă хăрушлăхне хамăр куçпа курса сехĕрленместпĕр. Вĕсене вара вăрçă вут-кăварĕ лекнĕ. Пирĕн ăшăрах кăмăллă пулмалла вĕсемпе.

Хĕрарăмсем калаçма чарăнчĕç.

Чăнах та, Вера Ивановнăна халĕ вăрçăччен пĕрле пурăннă çын курсан паллайман пулĕччĕ: сăнран кайнă вăл, йăл-йăл кулса тăракан куçĕсем тĕксĕмленнĕ.

Вăрçă пуçлансан, виçĕ кунтан, упăшкине фронта ăсатрĕ. Кĕçех нимĕç фашисчĕсем хула çине бомба пăрахма тытăнчĕç. Ун куç умĕнчех юнашарти темиçе хутлă çурт хăрушла шатăртатса, кĕмсĕртетсе ишĕлсе анчĕ. Мĕн чухлĕ çын вилчĕ çав çуртра. Кайран ишĕлчĕк айĕнчен хĕрарăмсемпе ача-пăча виллисене чава-чава кăларчĕç.

Çав кунсенче Вера Ивановна хăй сасартăк анкăминкĕленнине сисрĕ. Темле сулмаклă тимĕр пусса тăрать пек ун пуçне. Сывлама кансĕр, шăмшак йывăр, ал-ура çыхланать, тăнпуçĕ тĕтреллĕ. Çакă халĕ те иртмен-ха Вера Ивановнăн.

— Ют çĕрте ялан пĕччен ларнипе çын ухмаха тухать,— тет Пайăркка Анни, Ленинград хĕрарăмне хĕрхенсе.— Халăх хушшине илсе тухмалла ăна.

Çак шухăшпа килсе кĕчĕ те вăл Вера Ивановна патне.

— Атя манпа пĕрле,— чĕнчĕ ăна Анна.

— Ăçта?

— Ĕçе.

— Мĕн тума пĕлĕп-ши эпĕ, тырпул ӳстерсе курман этем.

— Эпĕ сана çăмăл ĕçе илсе каятăп — уя тислĕк тăкма.

Вера Ивановна кăшт тĕлĕрсе тăчĕ. Унтан куçĕсем йăлтăр çуталчĕç. «Ĕçе кайма кăмăлĕ пур эппин»,— асăрхарĕ Анна.

— Эсĕ ан пăшăрхан, кĕреçе тытма вĕрентетпĕр. Ĕçре хуйха-суйхă чакать.

— Юрĕ, пыратăп,— килĕшрĕ Матеу,— анчах ывăлăмсене кампа хăварам-ши? Мигелĕ пĕчĕк-çке, Хосе ăна пăхаймĕ.

Пайăркка Анни нумай шухăшласа тăмарĕ, ачисене пуçтарма хушрĕ.

— Пирĕн пата илсе каçăпăр. Ман Альтиç — чăн-чăн асанне: ачасене вылятма ăста.

Хăпăл-хапăл тăхăнтартрĕç ачасене.

* * *

Çапла вара Вера Ивановна Матеу колхоз ĕçне тухрĕ. Пăхсан, çуна çине тислĕк тиесси нимех те мар пек. Сенĕкпе ывăт та ывăт. Анчах хăнăхман çыншăн ку ĕç те йывăр: ал вăйĕ çитеймест. Канасчĕ кăшт. Анчах ыттисем пуç çĕклемесĕр ĕçленĕ чух тăма аван мар-çке. Тăрмашать Вера Ивановна.

Тислĕк тиекенсем хушшинче ача-пăча та нумай. Ун пек чухне вылясси-алхасасси те аякка каймасть. Хăшпĕр чух вăйран вăкăр та тухкалать. Шăпах ĕç вĕçленсе пынă кун пĕр вун-вуник çулхи ача, Тимахви Ваççукĕ ăнсăртран урине тимĕр сенĕкпе чиксе шăтарчĕ. Пурте хыпăнса ӳкрĕç. Çухрашаççĕ, ахлатаççĕ, анчах нихăшĕ те ним тума пĕлмест. Вера Ивановна кăна çухалса каймарĕ. Вăл аялтан çыхнă шурă тутăрне салтса илчĕ те, çурмаран çурса, ача урине çыхрĕ.

— Халех больницăна илсе кайăр,— терĕ вара.

Ваççука лав çине лартса больницăна, вуникĕ çухрăмри яла, ăсатрĕç.

— Итле-ха, Матеу юлташ, эсĕ медсестра мар пулĕ те? — ыйтрĕ колхоз председателĕ, лешĕ аманнă ача урине ытла меллĕн тыткаланине асăрханăскер.

— Эпĕ медицина техникумĕ пĕтернĕ хыççăн мĕн вăрçă тухиччененех больницăра сестрара ĕçленĕ,— терĕ Вера Ивановна.

— Апла-и вара? — ылтӑн тупнӑ пекех савӑнчӗ Ксения Петровна.— Ара, пирӗн амбулатори хупӑнса тӑрать, фельдшера вӑрҫа ӑсатрӑмӑр та.

Колхоз председателӗ Ксения Петровна ӑна ҫавӑнтах амбулаторие илсе кайрӗ.

Хӑй вырӑнне тупрӗ вара Вера Ивановна Матеу. Ҫӗнӗрен ҫуралчӗ тейӗн. Ялан халӑхпа вӑл. Чӑвашла калаҫма вӗренчӗ. Пурӑна киле кӗрсе тухман кил-ҫурт, чунтан калаҫман ҫын юлмарӗ ун. Кашни ҫыннӑн хуйхи-суйхине ҫурмалла пайлама хатӗр. Юратрӗ ӑна ялйыш. Ҫынсемпе ҫывӑхланни ӑна хӑйне те йывӑр хуйха — кӗҫӗн ывӑлӗ Мигеле ӗмӗрлӗхех ҫухатнине тӳссе irttерме пулӑшрӗ.

Юрать, тепӗр ывӑлӗ, Хосе, патвар ӳсрӗ. Чӑвашла мӗнле таса калаҫма вӗренсе ҫитрӗ вӑл. Ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшӗсене хута ярать. Савӑнӑҫ унпа пуплесси.

— Ну, Хосе, сана итлекен кирек мӗнле чӑваш та ӑмсанса кӑна тӑрӗ. Маттур! — мухтать вара ӑна Пайӑркка Анни.

— Мӗн эсир, Анна аппа. Юланпа ҫуран пӗр тан марах.

Каҫса кайсах кулать Пайӑркка Анни.

— Ҫакӑнта та пулин ваттисен каларӑшӗсӗр irttерсе ямарӗ хӑямат ачи. Кам вӗрентрӗ-ши сана ҫав таранах чӑвашла?

— Туратсӑр йывӑҫ ӳсмест. Малтан — сирӗн Альтиҫ, вара — ачасем, шкул, учитель. Ылтӑн алӑсем чӗртнӗ улмуҫҫи панулми парнелетех.

— Аҫу пек, испанла та калаҫатӑн пулӗ эсӗ, Хосе? — хӑпмасть унран Пайӑркка Анни.

— Камарадос!

— Мӗн тени вара вӑл?

— Камарадос-и? «Юлташ» тенине пӗлтерет. Атте мана ялан: «Эй, камарадос!»—тетчӗ. Атте вӑрҫӑран таврӑнсан испанла калаҫма вӗрентетех. Хӑйӗн Тӑван ҫӗршывне, Испание те, илсе кайӗ. Таврӑнтӑрччӗ кӑна.

— Аҫу таврӑнатех,— тет Пайӑркка Анни.— Сирӗн адреса пӗлмен пирки ҫеҫ ҫыру ҫыраймасть. Эсӗ аҫуна кӗтме ан пӑрах, Хосе.

* * *

Пӗррехинче илӗм-тилӗмпех шаккарӗҫ Вера Ивановна патне. Вӑл чупса пырса алӑк сӑлӑпне шутарчӗ. Алӑк уҫсан Пайӑркка Анни курӑнчӗ.

— Кӗр, кӗр,— чӗнчӗ ӑна кил хуҫи.

— Алӑк уҫрӗҫ, атя ут, Амутке, пыти-пыти! — йыхӑрать Анна, аллинчи кантрине карт-карт туртать хӑй.

Кама сӗтӗрет кантра вӗҫҫӗн? Матеу ниепле те тавҫӑраймасть.

— Качча! Качча! Амутке!—Ку — Альтиҫ сасси.

Унччен те пулмарӗ, уҫӑ алӑк анинче мӑшӑр авӑнчӑк мӑйрака, шӑреке сухал курӑнчӗ. Ыйхӑран вӑраннӑ Хосе вырӑн ҫинчен анчӗ.

— Кач-кач качака! — кӑшкӑрса сиккелеме пуҫларӗ вӑл.— Ах, кач-кач сухалне мӗнле чӗтретет!

Пӳрте чӑнах та качака ҫавӑтса кӗчӗ Анна. Хыҫранах Альтиҫ кӗрсе тӑчӗ, вӑл икӗ пӗчӗк путек ытамланӑ.

— Ой-ой! Мӗне пӗлтерет ку?— пӗр кӗтесе тӗршӗнсе тӑчӗ Матеу.

— Ан тӗлӗн-ха эсӗ, Вера Ивановна. Илӗрт качакана,— тет Анна.— Амутке ятлӑ вӑл.

— Мӗншӗн качака ертсе килтӗн? — ниепле те ӑнланаймасть кил хуҫи.

— Сана парнелес терӗм. Хӑвах пӗлен, манӑн икӗ качака. Пӗри, ав, ҫӗркаҫ пӑранларӗ. Мухтава тивӗҫ, йӗкӗреш туса пачӗ. Эсӗ ан пӑшӑрхан, вӗсем апат юлашкипех пурӑнаҫҫӗ,— лӑплантарма тӑрӑшать кӳршӗ хӗрарӑмӗ.— Ваттине ҫӗрулми хуппи парӑр. Кунне пӗр чӗрес сӗт пулать.

Альтиҫ путексене урайне ячӗ. Ачасемшӗн чӗрӗ тетте пулса тӑчӗҫ вӗсем. Чӑнах, путеккисене пӑхса ытармалла мар, иккӗшӗ те шап-шурӑ кӗрӗклӗ, кӑвак пушмаклӑ, куҫӗсем чап-чакӑр, тӑрс-тӑрс сиккелеме пикенеҫҫӗ.

Вера Ивановна хӑй ӗмӗрӗнче качака таврашне усрама мар, ҫывӑхран та курман.

— Ай-яй, мӑйракисем мӗнле хӑрушӑ! — сехӗрленчӗ вӑл. Сӗтне хӑҫан юхтарать?

— Юхтарсан ытла ансатчӗ те, анчах ир-каҫ хӑвӑн сума тивет. Пӗлтӗр сӗтне питӗ лайӑх антарнӑччӗ, ҫу каҫипех ҫилли кӑкшӑм евӗр усӑнса ҫӳрерӗ. Путеккисене ӗмӗртмелле мар,—вӗрентет Анна.—Ӗмме хӑнӑхсан, вӗсене уйӑрма хӗн. Ҫулҫӑ ҫиме хӑнӑхчӑр. Альтиҫпе Хосе милӗк илсе каҫчӑр ак.

Качаки хӗрарӑмсем мӗн калаҫнине ӑнланас пек хӑлхине вылятсах итлет.

— Халӗ ӗнтӗ сума лар,— хушрӗ Анна.

— Сума? — хӑраса ӳкрӗ Вера Ивановна.— Эпӗ пӗлейместӗп-ха сума.

Пайӑркка Анни Ленинград майринчен шалт тӗлӗнет. Тӗпсакайӗнче пурӑннӑ пек туйӑнать ӑна ҫак хӗрарӑм. Вара вӑл качакана сак уринчен кӑкарчӗ те кукленсе ларчӗ, тулли ҫиллине аллисемпе йӑвалакаларӗ, чӗччисене икӗ пӳрне хушшине хӗстерсе туртрӗ. Савӑта кӗҫех шурӑ ҫип евӗр ярӑмланса сӗт чӑрлатрӗ.

— Куртӑн-и? Пӗртте йывӑр мар. Су ӗнтӗ,— терӗ татах Анна, ура ҫине тáрса.

Вера Ивановна тирӗк илсе ҫывхарма тытӑннӑччӗ, качака ҫанҫурӑмне хӑпартса хытса тӑчӗ, унтан малти урисемпе урайне тӑрс! тӑрс! тапрӗ. Выльӑх темерӗн, хӑйне кура мар, ӑсӗ пур. Ют ҫынна ҫапла хӑратать иккен.

— Илсе каятӑр пулӗ, мана пӑхӑнас ҫук вӑл,— пӑшӑрханчӗ Матеу.

— Тӳрех ан кулян-ха эсӗ, тусӑм. Малтан йӑмӑх пулсан, кайран шупкалать,— ӳкӗтлет Пайӑркка Анни.

Ним те тӑваймӑн, качакине хӑйӗнех сума тиврӗ. Сӗтне путеккисене ӗҫтерчӗҫ. Мигельпе Хосе тӑпӑртатса тӑраҫҫӗ ав. Вӗсене мӗнле тутантармасӑр хӑварӑн.

Ӗҫӗ пӗтсен выльӑхсене алкумне кӑларчӗҫ. Альтиҫ качака умне хума килӗнчен улӑм хӗстерсе каҫрӗ.

Ҫапла кун иртрӗ. Каҫ пулас умӗн качака макӑрма тытӑнчӗ. Мӗн пулнӑ, тен, ун хырӑмӗ ыратать? Чухла-ха ӑна, янавара.

Хосе кӳршӗсем патне чупрӗ. Килте тантӑшӗ Альтиҫ кӑна.

— Инкек, Амутке макӑрать! — хыпарларӗ вӑл.

Пурне те пӗлекен пӗчӗк хӗрача тӳрех ӑс пачӗ:

— Сӑвас пулать. Сутарасшӑн макӑрать вӑл.

Хосе, Альтиҫ сӑмахне итлесе, качакине пӳрте ҫавӑтса кӗчӗ. Амӑшӗ тирӗк илчӗ, сӑвас шухӑшпа. Тем хӑратать ӑна. Аннана кӗтсе чӳрече умне пырса тӑчӗ.

Ҫак вӑхӑтра качакана тем ӑс кӗрет — вӑл тапӑнма шутлать. Каялла чакать-чакать те, хирӗнсе те пуҫне чиксе, малалла тапса сикет. Унччен те пулмасть, Вера Ивановнӑна хыҫалтан пырса тӑрс! сӗкет.

Хосе, ҫакна курақанскер, ахӑлтатса ячӗ, амӑшӗ вара шартах сикрӗ. Унтан мӗн пулса иртнине вӑл та тавҫӑрчӗ. Чун каниччен кулчӗҫ вара амӑшӗпе ывӑлӗ.

— Эх, эсӗ те ҫав, мана хирӗҫ тӑран,— качакапа калаҫма пуҫларӗ Вера Ивановна. Ӑна ҫурӑмӗ тӑрӑх аллипе сӑтӑркаласа ачашларӗ.— Ҫитӗ ӗнтӗ сана кӳтсе, тытӑнар туслӑ пурӑнма. Эпӗ паҫӑр сан валли такам ҫул

çине ӳкерсе хăварнă утта илсе килтĕм. Тутанса пăх, тен, мана каçарăн.

Нумай кирлĕ-и, туслăх тупăнчĕ те. Пурăна киле Амутке, йăпăлти йытă пек, хуçи хыççăн çӳреме тытăнчĕ. Сĕтне нумай парать.

— Качака усси питĕ пысăк çав. Ачасем сĕт ĕçнĕ хыççăн, ав, куç умĕнчех йăл илчĕç,— тет Пайăркка Анни, командир çемйи майĕпен ураланнине курса. Çуркунне Матеу валли Хветле пахчине çĕрулми лартрĕç.

* * *

Ялампи, Реналь, Вера Ивановна ларса пыракан пуйăс малаллах вирхĕнет. Вăрманпуçне çитес çул нумай кĕскелчĕ. Тул çутипе пĕрле пуйăс Чăваш çĕршывне вашлатса кĕчĕ. Ĕнтĕ Çĕмĕрле, Вăрнар, Канаш станцийĕсем те хыçа юлчĕç.

Тухнă çулĕ те, калаçăвĕ те татти-сыпписĕр вăрăм пулчĕ çак виçĕ çыннăн. Ытларах ватти пуплерĕ, çамрăксем итлерĕç.

— Хамăра ялтан ăсатнине эпĕ виличчен те манас çук,— кăна çемçен, кăшт куларах каларĕ Вера Ивановна. Эппин, ун чухнĕнче усалли мар, ырри пурăнать.— Ялампи, сан кукаму, Пайăркка Анни, мана пысăк шăрттан тыттарчĕ. Эпир ăна Ленинграда таврăнсан çур çул çирĕмĕр. Унран тутлă çимĕç хам ĕмĕрте тутанман эпĕ.

— Кукамай ман халĕ те питĕ ырă кăмăллă, çынна юлашки кĕпине хывса пама хатĕр,— тет Ялампи.

...Ленинград тăшман ункинчен хăтăлсан, виçĕ уйăхран, Вера Ивановна Матеу Хосе ывăлĕпе киле кайма пуçтарăнчĕ. Ялйыш ярасшăн мар, ӳкĕтлет.

— Вăрçă пĕтиччен пурăн,— тилмĕрет уйрăмах колхоз председателĕ Ксения Петровна.— Амбулатори каллех пушанса юлать. Халăха медицина сестри кирлĕ. Çакна ăнлан-ха.

Матеуна никам та тытса чараяс çук. Халăхĕ те ăнланать: унăн сăлтавĕ пур, ара. Çар чаçĕнчен пĕр-ик çул каяллах упăшки хыпарсăр çухалнă тесе çырнă хут илнĕччĕ вăл. Вилме пултарнине тем тусан та чун йышăнмасть. Ленинградра, килте, мăшăрĕн çырăвĕсем кĕтсе выртасса шанать. Çак туйăм ăна ялта тек пĕр кун та юлма ирĕк памасть.

Каять ялтан юратнă, ырă юлташ. Никамăн та хăват çук ăна тытса чарма. Тытăнчĕç вара куччеиеç йăтма.

Мĕн кăна илсе пымарĕç-ши! Хăймапа çăрнă пашалу, сухари, кĕрпепе какайран пĕçернĕ кукăль, чăкăт.

Ватти-вĕтти пĕтĕмпех пухăннă Матеу çемйине ăсатма. Пĕрисем сăра, теприсем кĕрчеме илсе пынă. Сăйлаççĕ пĕр-пĕрне. Макăраканни макăрать, çĕр тĕрлĕ ăс параççĕ, яланлăхах пурăнма килме чĕнеççĕ.

Лав килчĕ акă. Япаласене урапа çине тиерĕç.

— Килĕр,— чĕнет Ксения Петровна Матеуна.—Вырнаçса ларăр.

— Хосе ăçта?

Вăл Альтиçрен ниепле те уйрăлаймасть. Туслăхăн пурçăн çиппи пĕчĕк çынсене те пĕр-пĕрин çумне çĕлетмĕн. Пĕчĕк этеме васкатрĕç.

— Халех! — сас парать вăл. Вара хăйĕн тусне çавăтса пырать.

Каякансемпе юлакансем пĕр-пĕрне ĕмĕр асра тытса пурăнас пирки сăмах татса сывпуллашаççĕ.

Çак вăхăтра Альтиç урапа тĕпĕнчи улăма кăпăшкалатса майлать те Хосене хушать:

— Хăпарса лар. Вырăнăр тӳшек пек çемçе.

Ленинград йĕксчĕ чăваш хĕрачине ăшшăн тав тăвать.

Амăшĕпе ывăлĕ юнашар вырнаçрĕç. Хосе урине усрĕ.

Лав тапранчĕ.

— Çыру çырăр!

— Хăнана килĕр! — кăшкăрать пĕри те тепри каякансене.

Кĕпер çине кĕрсен, ăна юханшыв хĕрринчи саман пӳртре пурăнакан Праски хуса çитрĕ. Пăрçа тултарнă пĕчĕк хутаç тыттарать каякана.

— Тав, ĕмĕр ырă кур, хĕрĕм ячĕпе калатăп! — тет вăл.

Праски хăй те питĕ чухăн пурăнать. Виçĕ ача ун. Упăшки вăрçăра Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пуçне хунă. Çитменнине тата, килте те шар курчĕç: аслă хĕрачи, пĕчĕкскер, чутах çунса вилмерĕ. Çунакан хăйă ӳкерсе кĕпине тивертнĕ вăл. Юрать-ха, урама чупса тухать. Сыватасса ăна Вера Ивановна сыватрĕ. Хырăм тирĕ, аллисем, янахĕ ĕмĕрлĕхех çĕвĕклĕ юлчĕç хĕрачан.

...Пуйăс шав малалла ыткăнать. Вăл хăйĕн кĕввипе çаплах вăрçă вăхăтĕнче чăвашра пурăннă кунçула чунчĕрене хускатса куç умне кӳрет.

— Вера Ивановна, Праскин ачисем ӳснĕ, питĕ илемлĕ чул çурт лартрĕç,— тет Ялампи.

— Пурне те куратăп ĕнтĕ. Кĕрсе тухман пĕр кил хăвармăп,— ассăн сывласа илет Вера Ивановна, çитес тĕлпулусене кĕтсе халех пăлханма тытăннăскер.

— Асанне, сана ялта халĕ никам та паллаймĕ,— асăрхаттарать Реналь.— Ĕлĕк пĕлнисем те манчĕç пулĕ. Миçе çул иртнĕ унтанпа!

Асламăшĕ ним те чĕнмерĕ, те илтмĕше хыврĕ мăнукĕн сăмахне, чӳречерен тинкерсе пăхрĕ çеç.

Ялампи те тулалла куç хыврĕ. Чугун çул айккипе ӳсекен вăрман йывăççисем хӳме тытнăн курăнаççĕ. Вăл паллан хурăнсене асăрхарĕ.

— Çитрĕмĕр, пуçтарăнăр,— васкатрĕ вăл хăнасене.— Разъездра пуйăс сахал тăрать.

Анса юлчĕç.

— Утрăмăр,— аллипе суллать Ялампи, малалла туртăнса. Реналь вырăнтан та тапранмасть. Вăл куçĕпе Шишкин ӳкернĕ юмансене шырать.

— Эпир юмах тĕнчинче! Ĕненетĕр-и, тусăмсем?

— Чăвашра пирĕн çутçанталăк илĕртӳллĕ,—мухтанчĕ каччă.

Сывлăшĕ чăнах та — пыл тути. Хĕвелĕ те ачашшăн çупăрлать.

Кукăр-макăр сукмак вĕсене вăрман витĕр илсе тухрĕ.

— Реналь, атя ту тăрне хăпарар,— чĕнчĕ Ялампи, чăматанне çĕре лартса.

— Атя!

— Вера Ивановна, эсир ларса канăр, вăй пухăр.

Хĕрпе каччă, алла-аллăн тытăннăскерсем, самант чупса улăхрĕç ту тăрне. Умра — таçтанах сарăлса выртакан уй-хир. Ывăç тупанĕ çинчи пек, таçти-таçти ялсем курăнаççĕ. Вĕсем хушшинче — Вăрманпуç.

— Ав, юханшыв кукринче, манăн тăван ялăм ларать,— пӳрнипе тĕллерĕ Ялампи.

— Пирĕн, санпа иксĕмĕрĕн, тăван ялăмăр вăл, Ялампи! — каласса каларĕ те, анчах вăтаннипе хĕрĕн питĕнче мăкăнь чечек çурчĕ.

— Пирĕн!—савăнчĕ йĕкĕт. Хăй пăлханнипе ним тума пĕлмерĕ.

Сасартăк вăл ура пуçĕнчи шурă çеçке вăштăр çилпе сулмаклăн сулланса ларнине курчĕ. Сĕткенне пыл хурчĕ ĕмет-мĕн. Чечеке асăрханса татрĕ те Ренале парнелерĕ.

— Спаççипă,— пуç тайса тав турĕ пике,— ытармалла

мар илёртӳллĕ чечекĕм.— Вара куҫран пăхрĕ.— Эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех пыл хурчĕ пулăп. Пыл хурчĕ хăйĕн йăви тĕлне манмасть. Юрĕ-и?

Ялампи килĕшнине пĕлтерсе пуҫне сĕлтсе илчĕ те савнă хĕрне хыттăн-хыттăн ыталарĕ.

Тутасем чăп! пĕрлешрĕҫ.

Кур, ҫутă тĕнче, Чăваш ҫĕршывĕ, санăн умăнта таса юрату.

*1976 ç.*

## ЧĔРЕ СЫЛТĂМРА

«Эпĕ — тĕкĕр. Савăн пăхса хăвăн кăн-кăвак сăнна, янкăр тӳпе!»—теет пулас Атăл, йăлтăртатса выртакан ҫийĕпе мăнаҫланса. Хĕвелĕ унăн тутлă шывне ĕҫсе тăранаймасть-ши, хĕртет кăна. Чечеклĕ ҫыранĕ хĕрринчен пăхсан, Атăл пичĕ ҫӳхе пăрпа витĕннĕ пек те туйăнать: унсăрăн «Метеор», тăркăч сырнăн, туран ҫав тери хăвăрт ярăнса анаймĕччĕ.

Куҫа пĕрре мăчлаттарса иличчен «Метеор» пристань ҫумне пырса та ҫыпҫăнчĕ. Халăх малалла тăвăнчĕ вара. Ҫав юхăма пĕр ҫамрăк хĕр лекрĕ. Студентка вăл. Ячĕ ун — Юнна. Ăна «Сывă пул!» тесе, алă сулса ăсатакан ҫук. Савнă каччи аякра, урăххисем кирлĕ мар ăна. Ҫавăнпа та ниҫта чарăнмасăр, тӳрех билетра кăтартнă вырăнне тупса ларчĕ.

«Метеор» кăр-кар кĕрлекелесе илчĕ те часах тапранса та кайрĕ. Самант Атăл варрине тухса малалла ҫул тытрĕ.

Юнна вырăнĕ чӳрече ҫумĕнчех. Хĕр кантăкран пăхрĕ. Шупашкар кая юлса пырать.

«Метеор» ҫинче ҫын нумай. Ҫумра та, умра та, хыҫра та пушă вырăн ҫук. «Ăҫта каяҫҫĕ-ши? — шухăшларĕ Юнна. Ăнсăртран кам та пулин хăйĕнчен: «Эсĕ мĕнле ĕҫпе ҫула тухнă?» — тесе ыйтсан, тӳрех калаймĕ те, каласан та илтекенĕ ăнланмасăр тĕлĕнсе тăрĕ. «Чир тымарне шырама каятăп»,—тесен, ăсран тайăлнă этем вырăнне хурĕҫ.

Юнна—пулас врач. Халĕ вăл студентка кăна-ха. Ҫуркуннеренпех больницăна чирлисем патне ҫӳрет. Практика ун. Практикăра тĕл пулнă амак илсе тухрĕ те ĕнтĕ ăна аякри ҫула.

Больницăна пырсан, чи малтанхи кун, практикантсене профессор хăй палатăсем тăрăх ертсе çÿрерĕ.

— Кунта чĕри хавшанисем выртаççĕ,— пуплерĕ вăл хĕрарăмсен палати алăкне уçнă май. Пулас врачсем ун хыççăн пÿлĕме ерипен кĕшĕлтетсе кĕчĕç. Вара часах чирлисене пăхасси пуçланчĕ. Ку уйрăмра ĕçлекен врач-терапевт кашни кравать умĕнче чарăнса халсăррин ятне пĕлтерет, унăн чир историйĕпе паллаштарать. Профессор ăна хăй тепĕр хут хăвăрт кăна вуласа тухать те пĕр-пĕр практиканта чирлин кăкăрне итлеме хушать.

Кун пек самантра кирек кам та хăй пирки профессор шухăшне пĕлесщĕн ăнтăлать. Акă, шуранка питлĕ хĕрарăм хăйне тĕрĕсленĕ хыççăн ыйту пачĕ те:

— Мĕнле, час сывалăп-ши? Килте ача-пăчасем кĕтеççĕ.

— Нумая каймĕ, тетĕп,— лăплантарать ăна профессор. Вăл врача ку хĕрарăма тата мĕнле эмел памаллине кăтартать. Студентсем те профессор мĕн сĕннине çырса пыраççĕ.

Кĕтесри кравать патне пырсан, врачпа чирли пĕр-пĕрне куç хĕссе илчĕç. Çакна Юнна курчĕ, анчах хушша-мĕн кĕмерĕ, ара, вĕсен çынсене пĕлтерме юраманни тем те пулĕ. Вăрттăнлăхĕ мĕн пурĕ те çак çеç: чирли хăйĕн чĕри пирки кунта выртакансене пĕлтересшĕн мар.

— Паллашăр,— терĕ врач,— Стелла Семеновна Семенова. Чирлĕ çынна сывлăх сунчĕç.

— Вăл хăйне уйрăм пÿлĕмре пăхтарасшăн,— сăмах хушрĕ врач, чирлин кăмăлне тивĕçтерме тăрăшса.

Профессор, чир историне тишкĕрме ĕлкĕрнĕскер, йăлтах ăнланчĕ.

— Юрĕ,— килĕшрĕ вăл.

Малалла утрĕç. Татах, татах сывлăхсăррисене тĕрĕслерĕç.

Ентĕ пĕтĕм палатăсене кĕрсе тухнă, пĕр чирлĕ çын та пăхмасăр юлман. Вуникĕ сехет тĕлнелле ĕç вĕçленчĕ.

Врач пÿлĕмне пухăнсан, хайхи Стелла Семеновнăна кунта чĕнсе килтерчĕç.

— Ну-с, кама малтан тĕрĕслеттерĕпĕр? — йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ профессор. Куçĕ Юнна çинче чарăнчĕ.— Ахрусева, тытăн.

Юнна фонендоскоп илчĕ те хăлхисене ансăр трубка вĕçĕсене чикрĕ. Вара тÿрех фонендоскопа чирлĕ хĕрарăмăн сулахай енчи кăкăр тĕлне тытрĕ, унталла-кунталла шутаркаларĕ, çурăм енчен те тĕрĕслерĕ. Чĕре

тăлтлатни илтĕнмест. Татах, татах тепĕр хут тимлĕ итлерĕ. Çук, чĕре çаплах тупăнмасть. Мĕн мурĕ? Вăл юн уçлама пăрахнă-и? Кун пек çын халех кăнса выртать-иç? Апла тесен, ун куçĕсем питĕ чĕрĕ. Аптранипе Юнна трубка вĕçĕсене хăлхаран кăларчĕ.

— Ну-с, мĕнле? — тĕпчет профессор.

— Чĕри пачах тапмасть,— терĕ Юнна илтĕни-илтĕнми сасăпа.— Ăна хăвăртрах укол тумалла.

— Чим-ха, ăна шыраса тупаймарăн ахăр? — ейĕлесерех калаçрĕ профессор.

Юнна ним калама аптрарĕ. Вăл студентсенчен именчĕ тата практикăшăн начар хак парасран та пăшăрханать.

— Юрĕ. Чир историйĕпе паллаш,—хушрĕ ăна профессор. Юнна ваштах вуласа тухрĕ те шалт тĕлĕнчĕ. Ку хĕрарăмăн чĕри сылтăмра иккен. Тӳсеймен енне ыйтрĕ:

— Профессор юлташ, этемĕн кун пек те пулать-и?

— Питĕ сайра хутра çеç.

Юнна çĕнĕрен тĕрĕслеме тытăнчĕ. Хальхинче вăл Стелла Семеновнăн чĕрине кăкăрăн сылтăм енче шырарĕ. Авă вăл, мĕскĕнскер, аран-аран тапать.

Тĕплĕн пăхнă хыççăн профессор пациента палатăна ăсатма хушрĕ. Кун хыççăн кăкăрăн сылтăм енне вырнаçнă чĕре пирки сăмах хускатрĕ.

— Çакнашкал çынна пирĕн, медиксен, мĕнле сыватмалла? — ыйтрĕ вăл студентсенчен.

— Операци туса! — персе ячĕ практикантсенчен пĕри.

— Сирĕн шутпа, чĕрене сулахай енне куçармалла-и? — кулкаласа илчĕ профессор.— Капла юрамĕ. Чĕри сылтăмрах юлтăр. Анчах ăна хуçин ĕмĕр тăршшĕпех юна йĕркеллĕ уçласа тăма пулăшмалла. Çавăн пек меслетсем пур.

Профессор каланине студентсем тимлĕн итлерĕç, тетрачĕсем çине çыра-çыра пычĕç.

Юнна шав лăпланаймасть. Тӳсеймерĕ чĕнмесĕр:

— Стелла Семеновнăн чĕри мĕн-ма сылтăмра?

— Шăпах çакна тĕрĕслеттересшĕн те эпĕ сана, Ахрусева,— чăрлаттарса пăхрĕ профессор хĕр çине.—Туп инкек тымарне шыраса. Ку саншăн наукăллă тĕпчев ĕçĕ пулĕ.

Çапла, пысăк ĕç хушрĕ профессор Юнна студенткăна. Çак хĕрарăм çутă тĕнчене мĕншĕн асси пулса çурал-

нă? Мĕн чăрмантарнă унăн амăшне сывă ача тĕвĕлентерме? Пĕтĕм вăйне хурĕ асăннă сăлтавсене тавçăрма. Лекцисенче илтнĕ-ха Юнна: кирек епле чирĕнне те тымарне шырамалла. Чирлекеннин ашшĕ-амăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ мĕнле чирсем чăтса ирттернĕ? Тупсăмне тупакан врач кăна чирлĕ çынна чухласа сыватать.

Профессор панă ĕçе ăçтан тытăнмаллине студентка тĕплĕн шухăшларĕ. Вара вăл пациента эмелленĕ самантсенче унпа ăшшăн калаçрĕ, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хайхин пурнăçне самаях пĕлчĕ.

Стелла Семеновна вăтăртан иртнĕ илемлĕ хĕрарăм. Вăл — архитектор. Упăшкипе пурăнать. Анчах пурнăçа савăнăç кÿрекен ача-пăча çук.

— Хăçан пĕлнĕ эсир хăвăр чĕрĕр пирки? — ыйтрĕ пĕррехинче Юнна пациентран.

— Качча кайсан. Унччен тухтăрсем шарламан, шелленĕ-тĕр. Шкулта, институтра вĕреннĕ чух физкультурăран хăтарнă.

Юнна халь Стелла Семеновна амăшĕпе курса калаçма каять.

Врач пулма нихăçан та шухăшламанччĕ Юнна. Илетер ятлă качча чунтан юратнăран кăна вăл И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне вĕренме кĕчĕ.

Шкулта вĕреннĕ чух пурте ăна пулас журналист тетчĕç. Кун пек калама йÿтĕмĕ пулнă. Вăл çырнă заметкăсăр пĕр номер стена хаçачĕ тухман. Ку çеç-и? Республикăри хаçатсенче те бригадир, доярка çинчен çырнă очерксем пичетленетчĕç. Юрату хĕрĕн пурнăç çулне урăх еннелле пăрчĕ.

Илетер хăйсен ял каччиех, тури касра пурăнать. Вăтам шкултан вăл Юннăран пĕр çул маларах вĕренсе тухрĕ. Халĕ Аслă çар шкулĕнче вĕренет.

Пĕчĕкрех чух Илетер хĕрачасене сахал мар йĕкĕлтесе тарăхтарнă. Вăл тăххăрмĕш класра вĕреннĕ çул Юнна унран вăтаннипе пăрăнса çÿретчĕ.

Юнна класĕ вăтам шкул пĕтернĕ ятпа ирттернĕ уйрăлу каçне мĕншĕн Илетерĕн пымалла пулнă-ши? Яла та вăл çав каç çеç çитнĕ-çке. Юннăн ăраскалĕ-ши ку?

Нихăçан та асран тухмĕ çав кун! Унта пухăннă хĕрупраçа кампа, мĕнпе танлаштармалла-ши? Тен, яштака хурăнпа? Шурă пурçăн кĕписем çил вĕрмесĕрех вăштăр-вăштăр вăркăшса илеççĕ. Йĕрĕлче тутисем писев сĕрнĕ пек йăмăх хĕрлĕ, пӗтçăмартисем тăп-тулли. Пăхса

ытармалла мар çамрăклăх! Пĕри тепринчен хитре-çке хĕрĕсем, кĕмĕл кашăк шывпа çăтса ярăн.

Арçын ачасем тата! Вĕсем пĕр кун хушшинче, шкулти юлашки кун, сасартăк ӳссе кайса каччă пулчĕç тейĕн. Элле, çие шурă кĕпепе хура костюм тăхăнни, мăя галстук çыхни çапла хăвăрт çитĕнтерчĕ-ши вĕсене? Хулпуççийĕсем, ав, епле сарăлнă, унччен çил вĕрнипе хумханакан хăмăш евĕр марччĕ-и-ха.

Ушкăнăн-ушкăнăн тăрать яш-кĕрĕм. Хĕрачасен хăйсен карти. Савăнăçлăн кулаççĕ вĕсем. Туфли кĕлисемпе тăпăртатса илеççĕ. Часрах ташша тухасшăн. Акă музыка янраса кайрĕ, чуна çĕклентерет. Каччăсем пĕри те тепри хăйсен хĕр-тантăшĕсене ташлама чĕнсе вĕсем умне пырса пуç таяççĕ.

Мăшăр хыççăн мăшăр тухать.

Кам чĕнĕ-ши Юннăна? Куç хывнă каччи пур-ха унăн, хăйсен класĕнчех вĕреннĕ хура лăстăркка çӳçлĕскер. Аçта-ха халь вăл? Хăяймасть-и е мĕнле те пулин шухăш иккĕлентерет ăна? Тăрать Юнна куçĕсене йăлтăртаттарса. Унччен те пулмарĕ, ун умне пĕр йĕкĕт пырса тăчĕ. Кĕтни мар ку, пачах урăххи, шухăшра нихçан пулманни. Илемлĕ хăй, юмахри чăн-чăн принц. Ытти каччăсем пек хура костюм тăхăнман вăл. Ун çийĕнче — çар курсанчĕн симĕс тумĕ. Хулпуççийĕсем çинче — погон. Пилĕкне чĕн пиçиххипе туртса çыхнă. Пĕвĕ — яштака. Кĕске сарă çӳçне çамки çинчен хыçалалла авса хунă, сенкер куçĕ ăш пиллĕн пăхать.

— Сывлăх сунатăп, Юнна! — терĕ «принц».

Хĕрĕн пит-куçĕ йăлкăшса çуталчĕ.

— Хăвăра та.

— Аттестат илнĕ ятпа саламлатăп!

— Тавтапуç.

— Юнна, ташша чĕнме ирĕк парсамăр?

Çывăхра тăракан юлташсем те кăмăллăн кулса илчĕç: «Турткалашса ан тăр, эсĕ телейлĕ, ав епле «принц» умăнта»,—терĕç вĕсем хăйсен куçĕпе.

Каччăпа хĕр ташă картинче. Вĕлт-вĕлт çаврăнаççĕ вĕсем вальс кĕвви майăн. Юнна хăй ури çĕре тивнине сисмест. Ăна куçа курăнман çунатсем вĕçтереççĕ тейĕн.

— Юнна, эсĕ мана палларăн-и? — пăшăлтатрĕ «принц» хăлха анинче.

— Çук,— пуçне сулларĕ хĕр, каллех йăл кулса.

— Йăлтах маннă-и?

— Маннă,— куçне чеен вылятрĕ Юнна.— Тарăхтар-

нине çеç манман,— тутине пăркаласа, чăпăртаттарса илчĕ Юнна.

— Эпĕ сана нихçан та тарăхтарман.

— Ха, киле каяс хурсене кӳлле хăвала-хăвала кĕртнисем тарăхтарни мар-и? Хăв вара йăмра хыçне пытанса шăл йĕрсе тăраттăн.

Илетер кулса ячĕ.

— Қаçар. Ку йăлтах сана юратнăран. Çав юратăва тавăрса парăн-ши тесе, паян çакăнта килтĕм.

— Тьхик! — кулса илчĕ Юнна.— Юратăва тавăрса пама пулать-и вара?

— Пулать!

Музыка шăпланчĕ. Қаччăсем хĕр-тантăшĕсене ăсата-ăсата ячĕç. Юннăн «принцĕ» вара унран хăпмарĕ. «Атя таратпăр!» — сĕнчĕ вăл хĕре, черетлĕ ташă пуçлансан.

Вĕсем урама тухрĕç. Тӳпене тахăшĕ çутă шăрça сапнă.

— Мĕн куртăн? — ыйтрĕ Илетер, Юнна тӳпенелле пăхнăран.

— Алтăр çăлтăра шыратăп.

— Ма кирлĕ вăл сана?

— Телей ыйтасшăн.

— Вăл телей пайлать-и?

— Ав, ав вăл! Çичĕ хут ятне асăнсан, телей пулать, тет.

Вара иккĕш те «Алтăр çăлтăр çич çăлтăр!» тесе сасăпах кăшкăрчĕç. Çавăтăнса утакан мăшăр кӳлĕ хĕррине çитрĕ. Шыв çийĕпе уйăх мĕлки ярăнать. Çыранри икĕ йăмра хушшинче сарлака тунката пур. Хăйĕн ĕмĕрĕнче вăл пайтах савнисен халап-юмахне тăнланă. Қамăн-камăн вăрттăнлăхне пĕлмен-ши? Сахал мар мăшăра пĕрлештерсе пехил панă. Қĕçĕр ун арки çине каллех икĕ çамрăк килсе ларчĕç те çĕрĕпе юрату çинчен калаçрĕç. Çапла пуль вăл çамрăклăх. Қалаçас килет, ĕмĕтленес килет.

— Пурнăçăмра манпа юнашар утма килĕшекен çын — хĕр-врач пултăрччĕ,— терĕ кĕтмен çĕртен Илетер.

Çав сăмахсене ун чух Юнна хăлхана чикменччĕ.

Уйрăлу каçĕ иртнĕ хыççăн, тепĕр эрнерен, вăййа тухсан, Юнна акамĕсене Шупашкара кайма чĕнчĕ.

— Заявленисене университета хамăр çитсе парар,— терĕ вăл. Хĕрсем килĕшрĕç. Малтанах курса-пăхса çӳрени пăсмасть.

Пĕр уяр кун хĕр-тантăшсем хулана тухса кайрĕç. Университета пырса кĕчĕç. Çӳреççĕ коридор тăрăх мĕн кирлине шыраса.

Сасартăк Юнна тăп! чарăнчĕ. «Медицина факультечĕн приемнăй комиссийĕ»— вуларĕ вăл сасăпах. Çак самантра Илетер каланă сăмахсем аса килчĕç ăна: «Пурнăçра манпа юнашар утма килĕшекен çын врач пултăрччĕ».

— Ку сана кирлĕ кабинет мар, Юнна, мĕн эсĕ?.. Атя,— ӳкĕтлерĕç ăна юлташĕсем.

— Чимĕр, хĕрсем. Ман шухăш улшăнчĕ. Документсене журналистсен факультетне мар, кунта паратăп,— терĕ Юнна хĕр-тантăшĕсем умĕнче темĕнле айăпа кĕнĕ пек.

Никам сăмах хушма ĕлкĕриччен Юнна пӳлĕм алăкне уçса кĕрсе те кайрĕ. Хĕрачасем хулпуççийĕсене хускаткаласа çеç юлчĕç.

Экзаменсене тытма Юнна тĕплĕн хатĕрленчĕ. Тăрăшни сая каймарĕ, экзамента кăтартнă пĕлĕвĕсене йăлтах «пиллĕкпе» хакларĕç.

Çул хыççăн çул иртет. Юнна кĕçех врач пулать ĕнтĕ.

«Метеор» виççĕмĕш хут чарăнчĕ. Юнна çакăнта тухать. Унăн çĕклемелли йывăр япала çук. Аллинче кăранташпа блокнот чикнĕ пĕчĕк сумка кăна. Кайран, çул çинче, тен, çийĕнчи плащне хывса хулпуççи урлă уртса ярĕ.

Юнна çитмелли ял аякра мар.

Утать пулас врач такăр çулпа. Пуçĕнче пĕртен-пĕр шухăш: «Часах Стелла Семеновна амăшĕпе калаçăп. Вара ун хĕрĕн чĕри мĕншĕн сылтăмра пулнине кăшт пĕлĕп...» Ку тĕлĕшпе пуçа килекен шухăшсене профессора çырса парĕ. Тен, кайран, врача тухсан, наукăллă ĕç çырма тивĕ. Сывă ăру ӳстерес тесен, мăшăрсен те нумай пĕлмелле-çке. Анчах Стелла Семеновнăн чĕрине медицина сулахай енне куçараймасть, ăна ĕçлеме кăшт çăмăллатма çеç пултарать.

Яла çитрĕ. Униче хапхинчен кĕрсен, Юнна блокнотне уçса пăхрĕ те Стелла Семеновна амăшĕн ятне асне илчĕ: «Анна Ивановна». Никама та ыйтса чăрмантармалла мар, вăл клуб çумĕнче, урамалла виçĕ чӳрече кăларнă çуртра пурăнать.

Калинкке умне çитсен, йытă-мĕн çук-ши тесе, шăтăкран картишнелле пăхрĕ. Алкум вĕçĕнче карчăк тăрать. Вăл картишĕнчи чăхсене тырă сапа-сапа парать.

Юнна калинккене уҫрӗ.

— Кӗме юрать-и? — сас пачӗ.

— Кам унта? — ыйтрӗ карчӑк хытӑрах сасӑпа.

— Анна Ивановна эсир пулатӑр-и?

— Эпӗ.

Кинемей карлӑк ҫумне тӑратса хунӑ патака илчӗ те туяласа хапха патнелле таплаттарчӗ. Авӑннӑ ҫурӑмне тӳрӗ тытма хӑтланса, каҫӑрӑлма пикенет хӑй. Тӑн-тӑн пусса утасшӑн тӑрӑшни сисӗнет. Тутӑрне, ҫамкине хуплама, каялла ҫыхнӑ. Мӑртӑкланнӑ питҫӑмартисем усӑннӑ. Ытла ватӑ ку хӗрарӑм. Миҫе ҫулта чух ҫуратнӑ-ши вӑл Стеллӑна?

Утти, хусканӑвӗ, сасси карчӑкра темле чӑрсӑрлӑх пуррине систереҫҫӗ.

— Сире, хӗрӗртен, Стелла Семеновнӑран салам илсе килтӗм.

— Тавтапуҫ. Эсӗ, мӗн, алай, унпа пӗрле ӗҫлекенскер пулӗ-ха? Кӗр-ха, кӗр.

Картишӗнче Юнна хӑйпе паллаштарчӗ.

— Араҫ вӑл каллех пульницӑра-и? Ун патне каясси асра-пилте те ҫук, шав хӑйне кӗтетӗп,— пӑшӑрханса ӳкрӗ карчӑк.— Мӗнле, час юсанас пек-и?

— Ытлашши ан пӑшӑрханӑр, майӗпен чирӗ иртет,— лӑплантарма тӑрӑшрӗ Юнна ӑна.

Кил хуҫи пӳрте кӗме йыхӑрать. Юннӑн турткаланса тӑма юрамасть, вӑл ӗҫпе ҫӳрекен ҫын.

— Ватӑлса ҫитрӗм. Эх, мӑнтарӑн ӗмӗрӗ, иртет, тӗкӗ персе те тытса чараймастӑн,— айлаткаласа хӑпарать ватӑскер крыльца пусми тӑрӑх.

Пӳрте кӗрсен, карчӑк хӑнана тӳрех сӗтел хушшине ларма хистерӗ.

— Ан чӑрманӑр, Анна Ивановна,— сӑпайлӑн турткалашрӗ Юнна.

— И-и, ара, хӑна-вӗрле куллен килсе тӑмасть, ахалех кӑларса ярӑп-и? — пуплет кил хуҫи.— Чаплӑ апатпах сӑйлаймӑп. Нимех те ҫук. Уяра пуҫларӑм мар-и, ара.

Ҫапла калаҫкаласа вӑл тӗпел кукрине кӗрсе кайрӗ. Кӑшт тӑхтасан ҫимӗҫ йӑтма пуҫларӗ. Чӗреспе тем илсе тухса сӗтел ҫине лартрӗ.

Карчӑк татах хистерӗ, Юнна вара сӗтел хушшине сикрӗ. Апатран аслӑ пулма хушман.

Чӗресре сӑра иккен. Аскӑчпа сӑвӑркаласа илчӗ Анна Ивановна. Вара икӗ стакан тултарчӗ. Пӗрне Юнна умне шутарчӗ, теприне аллине тытрӗ.

— Ĕç-ха, ĕç,— сĕнет кил хуçи хĕре. Хăй тути хĕррипе чăпăртаттарса сыпать сăрине. Пуçне суллакаласа илчĕ те каларĕ: — Эх, шельма, йăвашрах. Аça чулĕ тупса ярсан сăра хаяр пулать, теççĕ те... Иртнĕ эрнере вăйлă аслатиллĕ çумăр çурĕ, пахча вĕçĕнчех аça çапрĕ терĕм. Қайран чулне кайса шырарăм. Қуç тĕсмĕртмест, тупаймарăм.

Юнна çăмарта хăпартнине активсе пăхрĕ. Сăрине те тутанчĕ. Утса килнипе ăш хыпнăччĕ-ха унăн, тĕппипех ĕçрĕ вара. Халĕ ĕнтĕ сăмах тапратма та юрать. Ватти, ав, ăна пӳлме те ĕлкĕрчĕ:

— Мĕн-и, алай... Ман пата çул май кĕтĕн-и? Стелла инкеке кĕрсе ӳкмен-и таçта? Апла-тăк тӳрех кала мана, ним те ан пытар.

— Чирлĕ вăл,— ассăн сывласа илчĕ Юнна.— Ăна тĕпĕпех сыватас тесен, ман сире темиçе ыйту пама тивет. Қалăр-ха, Анна Ивановна, Стеллăпа йывăр çын чух сирĕн пурнăç мĕнлеччĕ?

— Эх, çырлах. Стеллăна питĕ юрататăп.— Турăш кĕтессинелле пăхса хăй çине урлă-пирлĕ хĕрес хурса илчĕ карчăк, турă умĕнче пехил ыйтса тилмĕрнĕн.— Мĕн пĕчĕкренпех савса лăпкарăм. Çыран çинчи сар чечек пек хитре хĕр ӳссе çитĕнчĕ. Вĕрентрĕм. Архитектора тухрĕ. Қачча патăм. Мана вара çав тери хисеплет. Анчах тĕрĕссипе калатăп: вăл ман варта аталанман.

— Мĕнле апла? — тĕлĕнчĕ Юнна.— Ара, Стелла Семеновна: «Манăн анне, Анна Ивановна, çавăнта, çавăнта пурăнать»,— тесе хăй тĕллесе ячĕ-çке.

— Ĕненетĕп, хĕрĕм, ĕненетĕп,— терĕ карчăк, пуçне пĕксе.— Ăна урăххи çуратнă.

— Урăххи?—йĕркеллĕ сыпăнса пынă ĕç-пуç пат татăлнăн туйăнчĕ Юннăна. Ун çамки çине тар тапса тухрĕ. Ăша кайнă сассипе ыйтрĕ: — Эсир çав хĕрарăма паллатăр-и? Кам вăл?

— Мĕнле палламăп, тет. Вăл манăн тăван аппа хĕрĕ — Валентина. Аппи вунă çул каялла çĕре кĕчĕ. Алай. Тăпри çăмăл пултăр.

Юннăн пăлханни кăшт иртрĕ.

— Вăл ку ялтах пурăнать-и?

— Қам? — ăнланаймарĕ пулас карчăк.

— Валентина.

— Э-э, ара, вăл юнашарти Қивкас çыннине качча кайнă.

— Қаçарăр та, манăн унпа курса калаçмаллах,—

ура çине тăчĕ Юнна.— Ашшĕ ячĕпе мĕнле чĕнмелле ăна! Хушаматне те пĕлместĕп-ха.

— Валентина Епифановна Пурсина. Вăл шăп кăлăк чăххи,— ăна тӳрре кăларса мухтанăн йăл кулса илчĕ.— Стеллăсăр пуçне, татах вунă ача çуратрĕ вăл. Пит ăнтарчĕ вара ку тĕлĕшпе.

— Апла вăл ача амăшĕ-героиня?

— Алай. Мĕнле калас, ĕçпе паттăра тухниех мар та-ха вăл.

Ватă хĕрарăм хăйĕн тăван аппăш хĕрĕ пирки тӳнтерлерех пупленĕ пек туйăнчĕ Юннăна. Виçсе хак параймарĕ. Васкасах тухса каяс килчĕ ун кунтан.

— Тепре куриччен, Анна Ивановна,— сывпуллашрĕ хĕр.

— Айăп-чĕрĕп ан ту ĕнтĕ, пăхаймарăм,— текелесе юлчĕ карчăк.

Малалла çул уй урлă выртрĕ. Сылтăм енче таçта çитиех ыраш пусси сарăлса выртать. Аякра-аякра, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрте, ăрша вылять. Шăрăхра сывлăш та вĕреме кĕрет, ахăртнех, ав, епле çӳлелле хăпарать вăл вĕлтĕртетсе. Ыраш шăркара. Сулахай еннелле пăхсан Атăл курăнать. Вăл шăп пике çивĕт вĕçне яма якатса тăсса хунă чакăр лента пек. Ку тăрăхра шыв çыранран тухса каясран сăрт-ту та, вăрман та хуралламасть. Унăн çыранĕ — çухрăма яхăн тăсăлакан çеремлĕ улăх. Çĕр питне пăхса, сенкер тӳпере хĕвел киленет.

Халĕ ĕнтĕ çул сăрталла. Хăпарса çитсен куç умне ял тухса тăчĕ. Юннăна кирлĕ ял — Кивкас.

Яла кĕрсен васкамасăр утрĕ хĕр. Урамĕ вăрăм. Çулăн икĕ айккипе пĕр тикĕс çуртсем ларса тухнă. Хăшпĕрисем çав тери капăр, вĕсене шурă кирпĕчрен купаланă. Кантăкĕсем умĕнче тĕрлĕрен çырла тĕмĕсем ӳсеççĕ. Йывăç çуртсем те чылай, çĕнни ытларах. Чăнах, пуян пурăнаççĕ халĕ колхозниксем.

Кивкас хăйĕн тасалăхĕпе те — çеремлĕ урамĕпе, илемĕпе — Юннăн кăмăлне çĕклентерчĕ.

Тĕл пулакан çынсем сывлăх сунса иртеççĕ пăлламан хĕре... Юнна вĕсенчен пĕрне те чарса ыйтмарĕ, кирлĕ хĕрарăм ума хăех тухса тăрас пек малалла утрĕ.

Часах ача-пăча шавĕ илтĕнчĕ. Вĕсем икĕ кил хушшинчи тăкăрлăкра-мĕн. Ватă йăмра тураттинчен чуччу çакнă та савăнса ярăнаççĕ. Çав ачасем патне пырса тăчĕ те ĕнтĕ Юнна.

Ачасем тăпах чарăнчĕç. Тĕлĕнсе пăхрĕç ют çынна.
— Аппа, сана кам кирлĕ? — ыйтрĕ хĕрача. Ку пуринчен хăюлли эппин.
— Эсĕ,— терĕ Юнна.— Лар, сана ярăнтарам.
Хĕрача хирĕçсе тăмарĕ. Чуччу ларкăчĕ çине вырнаçрĕ. Юнна ăна çурăмĕнчен кăлт-кăлт тĕксе тапратрĕ. Çӳлтен çӳле вĕçет хĕрача, хăй ахăлтатать.
— Çитĕ,— чарчĕ ăна Юнна пĕр кана ярăнтарсан,— халĕ ĕнтĕ кала, санăн аннӳне мĕнле чĕнеççĕ-ха?
— Ахти, мĕнлеччĕ-ха? Анне!— персе ячĕ хĕрача.
— Тятюк инке!— юсать ăна тепри.
— Хăйĕн амăшĕн ятне те пĕлмест! — ахăлтатрĕç ачасем.
— Мана ярăнтарăр-ха.
— Эпĕ ярăнатăп! — тупăшнă май сырса илчĕç Юннăна.
— Чимĕр-ха, кам хăйĕн амăшĕн ятне пĕлет?
Қашни ача амăшĕн ятне калать.
Юннăна кирлĕ ят та тухрĕ. Ăна кăтра пуçлă арçын ача асăнчĕ.
— Хушамату мĕнле-ха сан? — ыйтрĕ Юнна.
— Пурсин Толя.
— Анланмалла,— çирĕплетрĕ Юнна, пуçне сĕлтсе.— Эппин, эсĕ Валентина Епифановна ывăлĕ? Илсе кай-ха мана хăвăр пата, Толя.
Ача ним шарламасăр тӳрех утрĕ. Юнна—ун хыççăн. Ыттисем те юлмарĕç, пĕрле кĕшĕлтетсе пычĕç.
— Ма кирлĕ сана Толя амăшĕ?
— Эсĕ хăш ялсем?
— Эсĕ артистка-и?
Çĕр ыйту пама ĕлкĕрчĕç ачасем Юннăна.
Чие йывăççисем хушшипе хӳхĕм çĕнĕ пӳрт курăнчĕ. Ун умĕнче мăн пĕренесем выртаççĕ. Вĕсем çинче мăшăр кăвакарчăн манерлĕ икĕ хĕрача калаçса ларать. Вĕсем пĕрешкел тумпа, сăнĕсене те уйăрма çук. Иккĕшĕ те вара вăрăм çивĕтлĕ.
— Ай, пирĕн пата такама ертсе килеççĕ,— терĕ хĕрачасенчен пĕри.
— Толя, кама илсе килтĕн эсĕ? — чупса пычĕç хĕрачасем. Вăл калаçса тăмарĕ. Пурте картишне кĕчĕç. Толя Юннăна пӳрте ертсе кĕчĕ, пĕрене çинче ларнă икĕ пĕр пек хĕрача та вĕсенчен юлмарĕ. «Йĕкрешсем пулас»,—шухăшларĕ Юнна кусем пирки. Вĕсем Тольăран кăшт пысăкрах, аслăраххисем ĕнтĕ.

Алăка уçсанах сăмсана вĕри çăкăр шăрши çапрĕ. Питех те тутлă-çке çав шăршă!

— Анне!

— Анне!

— Анне!

Виççĕн тан чĕнеççĕ амăшне.

Малти пӳртрен кĕрнеклĕ хĕрарăм тухрĕ. Çарапуçăн хăй. Çӳçĕ кăтра, тĕллĕн-тĕллĕн шурă пайăркасем курăнаççĕ. Çийĕнче кăвак пурçăн платье.

— Сывлăх сунатăп, Валентина Епифановна,—саламларĕ Юнна.— Эсир таçта кайма хатĕрленнĕччĕ пулас?

— Лавккана çитсе килесшĕнччĕ те.

— Ман сирĕнпе калаçмалли пур.

— Тархасшăн, иртĕр,— яриех уçрĕ вăл малти пӳрт алăкне. Урата урлă каçнă-каçман, тапах тăчĕ Юнна. Хăйне вăл картина галерейине кĕнĕнех туйрĕ. Стена çумĕнче—речĕпех пысăклатнă, тĕрлĕ сăрăсемпе илемлетнĕ сăнӳкерчĕксем: çитĕннĕ хĕрсемпе йĕкĕтсем, ачараххисем те пур.

— Ман ачасем,— мухтаннăн каларĕ Валентина Епифановна.

Юнна вăрттăн шутларĕ. Вуннă. Анчах паллană сăн çук.

— Ав, эпĕ! Куртăн-и? — тĕллерĕ пӳрнипе Толя чи юлашки сăнӳкерчĕк çине.

— Пире тупрăр-и? — ыйтрĕ хĕрачасенчен пĕри.

— Эпир, ав, ара, Тольăран маларах ларатпăр,—ăнлантарать тепри.

— Куртăм-ха,— терĕ лăпкăн Юнна.

— Кусем ман иккĕмĕш йĕкĕрешсем,— хĕрачасене ачашласа илчĕ амăшĕ. Унтан Валентина Епифановна кашни ачи пирки, вăл мĕне вĕренсе тухни, ăçта пурăнни çинчен каласа пачĕ. Агроном, инженер, учитель, летчик та пур иккен.

Ачисем пĕри тепринчен чипер. Ашшĕ-амăшĕн пысăк савăнăçĕ.

Уçнă çăвара ал тупанĕпе хупма ĕлкĕрчĕ Юнна. Тĕлли-паллисĕр сăмах вĕçертменни аван-ха, унсăрăн ним мар кил хуçи хĕрарăмне кӳрентерĕн. Вăл каллех тепĕр хут сăнӳкерчĕксене ыйтуллăн тĕсесе пăхрĕ.

— Эсир çак сăнӳкерчĕксем хушшинче такама курасшăн пуль-и, тинкеретĕр, çаплах тинкеретĕр.

Валентина Епифановнăн сисĕмлĕхĕнчен Юнна шалт тĕлĕнчĕ.

— Ман шухăша тавçăртăр эсир,— çирĕплетрĕ Юнна.— Эпĕ Стелла Семеновнăн сăнӳкерчĕкне шыратăп.

— Эсир ăна паллатăр-им? — ыратнине тӳсеймен евĕр питне пĕркелентерсе мелсĕррĕн сывлăш çатрĕ хĕрарăм.— Тĕрĕс, вăл çук кунта. Хăйĕн сăнӳкерчĕкне памасть мана.

— Мĕншĕн? — йăвашшăн ыйтрĕ Юнна, ку ĕç ырă маррине Анна Ивановна калаçнинченех сиснĕрен.

Ассăн сывласа илчĕ Валентина Епифановна. Вара çапла каласа хучĕ:

— Пурнăçăмри нихăçан юсанми чун суранĕ.

Хĕрарăм пĕр авăк чĕнмесĕр тăчĕ. Унтан вăл пуçне чĕтрентерсе илчĕ те çăварне уçрĕ:

— Кам каларĕ эпĕ Стелла амăшĕ иккенне?

— Анна Ивановна.

— Ых, ятне илтмĕттĕм!— Валентина Епифановна такама хăмсарнăн аллине чăмăрларĕ.— Чимĕр-ха, хăвăр кам? Мĕншĕн пирĕн инкекпе кăсăкланатăр?

Юнна хăйпе паллаштарчĕ.

Çав тери кăткăс ĕç çинчен ача-пăча умĕнче сăмах ваклаймăн. Çавăнпа та кил хуçи хĕрарăмĕ хăнана пахчана тухма сĕнчĕ.

— Юнна, эсир Анна Ивановна патĕнче пултăр эппин?—сăмах тапратрĕ Валентина Епифановна, çĕмĕрт айĕнчи сак çине вырнаçсан.

— Кĕрсе тухрăм.

— Мĕншĕн тӳрех ман пата килмерĕр?

— Стелла Семеновна «ман анне — Анна Ивановна, вăл çавăнта, çавăнта пурăнать» терĕ.

Юнна сăмахĕ Валентина Епифановна кăмăлне вирлĕн хуçрĕ пулас, унсăрăн пичĕ-куçĕ туртăнкаласа илмĕччĕ.

— Çапла, Стелла хĕрĕме хам пăхса ӳстерейменрĕм,— терĕ вăл, именнĕн куçне айккинелле тартса.

— Мĕнле сăлтава пула?

— Ах, тепле ăнланăр ĕнтĕ мана. Çынна тиркесси аякра мар,— йӳçĕ тĕтĕм кĕнĕн хĕрарăмăн куçĕ мăч-мăч мăчлатрĕ. Вара пăр кайнăн куçрĕ калаçу. Куççуль те пĕр хут çеç мар питçăмарти тăрăх юхса анчĕ. Вĕри сывлăш тухнипе тути хăпаланса тухрĕ ун.

«...Киле эпĕ шăп Çĕнĕ çулта çитрĕм,—пуçларĕ Валентина Епифановна хăйĕн асаилĕвне.—Тепĕр тăвата уйăхран вăрçă чарăнчĕ. Çĕнтерӳ кунне хамăн фронтри юлташсемпе пĕрле кĕтсе илеймерĕм эпĕ. Çапăçу хирĕнче чĕрем чикни мана ураран ӳкерчĕ. Госпитале вырт-

тарчӗҫ. Тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн эмеллерӗҫ-ха, анчах пайти пулмарӗ. Медицина комиссийӗ инвалида куҫарчӗ. Киле пурпӗр таврӑнма тиветчӗ, анчах кӑшт каярах. Ҫие юлнӑччӗ манӑн, акӑ мӗн. Анне, пӗччен тӑрса юлнӑскер, хӗпӗртесе кӗтсе илчӗ мана. Ара, эпӗ фронтран чи малтан таврӑнатӑп-ҫке. Вӑрҫа эпир килтен виҫҫӗн: атте, пичче, эпӗ кайнӑ. Пичче, шӗкӗр турра, ҫыру ҫырать, атте вара вӑрҫӑ тухнӑ ҫулах пуҫне хунӑ.

— Мӗнле майпа ячӗҫ, аманмарӑн пулӗ те?—тӗпчет анне.

— Чиперех,— тетӗп.— Часах вӑрҫӑ пӗтет, халӗ арҫынсем пирӗнсӗрех, хӗрупраҫсӑрах, вӗҫне ҫитерӗҫ.

Эпӗ килнӗ ятпа анне тӑван-пӗтене пуҫтарчӗ. Сӗтел хушшинче эпӗ́те ларатӑп, анне мана та хӑнасемпе танах сайлать.

Умри пысӑк тирӗкре патока. Пӑхсан пыл темелле ӑна. Йӑпӑр-япӑр кашӑкпа ӑсрӑм та ҫӑвара хыпрӑм. Ҫӑтнӑ-ҫӑтман кӑмӑл пӑтранса килчӗ. Пӗтӗм ӑшчик хӑпарать. Йӗклентерет тӳсме ҫук. Ҫӑвара хупларӑм та, хӑпӑл-хапӑл тӑрса, сӗтел хушшинчен тухрӑм. Чӑланти лаххан патне васкарӑм. Ашра ним юлмиччен хӑстарчӗ. Сӑнӑм юлмарӗ ӗнтӗ. Пӳлӗме кӗрсен пӗри те тепри «мӗн пулчӗ те, мӗн пулчӗ» тесе ыйтаҫҫӗ. Хӑйсем тем шанмасӑр пӑхаҫҫӗ.

Кунсем пӗрин хыҫҫӑн тепри иртеҫҫӗ. Апат тиркетӗп, тӑварлӑ пулӑ пӗрмай аса килет. Хырӑм та палӑрма тытӑнчӗ.

— Эсӗ, Валя, йывӑр ҫын мар пулӗ те? — терӗ мана анне сиввӗн пӑхса. Сасси хаяр. Эпӗ чӗнместӗп. Вӑл татах кӑрӑланать.— Качча кайни ҫинчен ҫырмарӑн-ҫке? Элле, фронтра кӗрт йытти пек ертсе ҫӳрерӗн?

Ун сӑмахӗсем ман чуна йӗп пек пырса тирӗнчӗҫ. Хурланнипе макӑрса ятӑм.

— Намӑса куҫҫулӗпе ҫуса тасатаймӑн. Ырӑ ятӑмӑра ҫӗртетӗн. Пите кӗҫҫе ҫӗлесси ҫеҫ юлчӗ,— ҫаплах вӑрҫать анне.

Хӑртса калаҫнӑ-ши пирӗн ҫинчен ялйыш? Усал хыпар ут утланса ҫӳрет, теҫҫӗ. Урама тухсан хамран куҫ кӗретӗнех никам та кулман. Анчах пӗррехинче анне кумӑшӗ — Матӗрне инке пырса ларчӗ. Унӑн хӗрне те ҫара илнӗ. Фронтран янӑ ҫырусемпе амӑшӗ нумаях савӑнайман, часах хӗрӗн вилнӗ хучӗ килнӗ.

— Эх, кума, мӗн тери телейлӗ эсӗ, сан Валя тӗрӗстӗкел ҫавӑрӑнса ҫитрӗ. Ман, ав, ҫапӑҫу хирӗнче выртса

юлчĕ,— йĕрсе ячĕ Матĕрне инке.— Ĕненес килмест.

— Арăк вĕçне илсе килнĕ пулсан, урăхларах вулаттăн-ха,— пат татса хучĕ анне.

— Илтрĕм-ха эсĕ хĕрне тылланине. Тĕрĕс мар хăтланан, кума. Енчен ман хĕр йĕкĕреш ача çĕклесе килессĕн пулсан, алăка яри уçса, урине ыталаса чуптуса кĕртĕттĕм. Мăнукăмсене пĕтĕм тĕнчене çĕклесе кăтартăттăм. Эсĕ пур, тăсса панă пиле йышăнмастăн. Айван, телейлĕ шăпуна сивĕтетĕн.

Кумăшне итленĕ май анне тутине мăрт-март пăркаласа ларчĕ.

Çакăн хыççăн анне кăмăлне улăштарасса шаннăччĕ. Кăлăхах. Мана ал çеммине тупнă та чистиех пусмăрласа çитерчĕ. Аçта кайса кĕрес? Пурăнтăм ăшаланса.

Вăхăт çитрĕ, эпĕ иккĕлентĕм. Хĕрача çуралчĕ. Ытла пĕчĕккĕ. Ахăртнех, вăл чирлĕ, унсăрăн йынăшмĕччĕ. Мĕскĕн, чĕчĕ те лайăххăн ĕмеймест. Шараçланса уйăх ирттертĕмĕр. Пепкем кирлĕ пек папкаланаймасть. Тен, эмел ĕçтермелле ăна. Анчах мĕнлине? Пачах чухлаймастăп. Ун чух районта кăнтăрла çурта çутса шырасан та ача-пăчана сыватакан пĕр тухтăр тупăнмĕ.

Сывă-и сан ачу, чирлĕ-и, нумайччен килте йăпанса лараймăн. Ĕçлеме тытăнмалла, хырăм çиме ыйтатехçке, ватă аннене шанса пурăнаймăн. Лавккана кĕтĕм сутăçа. Ĕçĕм-хĕлĕм ăнăçлă пуçланчĕ, куншăн савăнатăп.

Çав кун ирхи кӳлĕм пĕр кана ĕçлерĕм те лавккана хупрăм. Ял Советне каясшăн. Ача çуралнăранпа самаях вăхăт иртрĕ, çаплах кайса çыртараймастăп. Эпĕ ăна Стелла ят хурасшăн-ха.

Хуйхă çине хуйхă тенешкел, кăкăрăм типрĕ. Ĕне сĕчĕпе усратăп ачама. Çамрăк пулин те, аякрине курма чухланă хам: госпитальтен тухсан, хула магазинĕнче ĕмкĕч туянма пĕлтĕм. Халĕ питĕ юрарĕ.

Васкатăп. Çул тăршшĕпех чупрăм. Ара, ачана сĕт ăшăтса ĕçтерме вăхăт çитет-çке. Пашкаса пырса кĕтĕм киле. Сăхмана хăпăл-хапăл хывса путмар çине ывăтрăм та «Стелла хĕрĕм!» текелесе сăпка патне пытăм. Вăл пуш-пушах. Куçăм ачана шыраса унталла-кунталла ывтăнчĕ. Ача ниçта та курăнмасть. Мĕн мурĕ? Чунăм пăлханса кайрĕ.

— Ан-не!— кăшкăртăм.

— Мĕн ĕрлен?! — чăлантан тухрĕ анне, аллине саппун аркипе шăлкаласа.

— Стелла ăçта вара?..

Валентина Епифановна, чиперех калаçса ларакансkер, «а-ах-х!» терĕ те мĕкĕлтĕ йăванса кайрĕ.

— Шыв, шыв!— хыпаланса ӳкет Юнна.

Çапла пулĕ çав: чунра амаланнă шĕл-кăвар нумай çул иртсен те тĕпĕпех сӳнеймест ахăр. Тĕкĕн çеç ăна, çулăм хыпса та илет ялкăшса.

Шырав çипĕ патĕ татăлчĕ. Мĕнле сыпмалла тет ăна халĕ? Тен, алă сулса тухса вăркăнмалла? Анчах профессор умне епле пырса тăрĕ пушă алăпа? Шухăша ерчĕ Юнна. «Çук, пуçланă ĕçе вĕçне çитеретĕпех»,— сăмах пачĕ вăл хăйне хăй. Вара пулас врач хваттер тупсах пурăнчĕ пĕр кана ялта. Нумай çӳрерĕ вăл икĕ хĕрарăм патне çул хывса. Анна Ивановна çĕр выртма та хăварчĕ ăна. Пахчари çĕмĕрт те хăйĕн ластака турачĕсем айĕнчи пукан çинче Юнна Валентина Епифановнăпа ларнине курса тăчĕ.

Пулас врач эрнипех чир тымарне кăклать. Унăн кашни хуçламĕнче — çын пурнăçĕ.

...Çамрăк Валя, лавккине хупса киле чупса таврăнсан, сăпкара хăй пепкине тупаймарĕ.

— Стелла ăçта вара? — ыйтнă вăл амăшĕнчен. Лешĕ куç айĕн йăпăштин кулса илет те мăнаçлăн калать:

— Анук йăмăкăма парса ятăм. Вĕсен ача-пăча çук, усраччăр.

— Усрава? — ăнланаймасть Валя.— Мĕн кирлĕ мара палкан эсĕ, анне?

— Мĕн-мĕн,— виртлесе илчĕ амăшĕ.— Вĕсем ĕнеллĕ, юр-вартан татăлса тăмаççĕ. Пирĕн, ав, качака та çук. Ача тутлăхра ӳсни такамшăн та ăнланмалла пулĕ вăл. Хăвăн кăкăр сĕчĕ те типрĕ. Кам пăхать ачуна? Хăв ĕçре, эпĕ те килте лармастăп.

— Мĕншĕн мана систермесĕрех хăтлантăн?

— Килте халлĕхе эпĕ хуçа-ха,—хĕрĕ йĕнине сивлесе татах мăкăртатрĕ: — Ан нӳшке, айван! Уйла кăшт: ачаллă хĕре кам качча илĕ? Кĕрчесе ларăн. Халĕ çӳре тепĕр хут хĕр пулса.

— Ачаран хăтăлнипе пăслантарса сивĕтнĕ шыв пек тасаласшăн-и—ĕсĕклесех йĕме тытăнчĕ Валя.

— Мĕн .пит хыпса çунан? Тупнă улама сăлтав.— Хĕрĕ каçăхса кайнине сисрĕ те лăплантарма пикенчĕ:— Ачу ют çын патĕнче мар. Кирек хăçан та кайса илме пултаран.

Шуйланни ахаллӗн иртмест ҫав. Вальӑн фронтра халсӑрланнӑ чӗри хыттӑн тапма пуҫларӗ. Вӑл тӑнне ҫухатрӗ. Ҫайран темиҫе кун вырӑнпах выртрӗ.

Амӑшӗн пуҫӗнче тӳнтерле шухӑш амаланнине Валя пачах сисмен — вӑл хӑй тытнӑ тӗллеве пурнӑҫлас шутпа йӑмӑкне васкавлӑн чӗнтернӗ иккен.

Анук ялтан темиҫе ҫухрӑмри вӑрман пӳртӗнче пурӑнать. Унӑн упӑшки, Уксах Ҫемен,—стрылка. Лешӗ, аппӑшне пӗр хирӗҫлемесӗр пӑхӑнма хӑнӑхнӑскер, персе те ҫитрӗ.

— Валя килте ҫук-и-мӗн? — кӑсӑкланчӗ вӑл килсе кӗнӗ-кӗмен.

— Лавккана ӗҫлеме кӗчӗ,— терӗ хайхискер.— Вӑл килте ҫук чух пӗр улах ӗҫ тӑвар-ха санпа.

— Ай, турах,— тӗлӗнчӗ Анук.

— Сана Валя ачине усрама парса яратӑп.

— Мӗн-мӗн? — шартах сикрӗ йӑмӑкӗ.

— Пӗлен-ҫке-ха: Валя манӑн час-часах йӑшса тӑрать. Тата иксӗмӗр те ӗҫлетпӗр. Эсӗ колхоз ӗҫне хутшӑнмастӑн. Ахаллӗн лариччен сиктер те сиктер ача. Аса ил-ха: хамӑр тӑлӑха юлсан, сана хам пӑхса ӳстертӗм. Халь парӑма тавӑрса парас самант ҫитрӗ. Пулӑш пире.

Анук, аппӑшне хирӗҫлеме хӑнӑхманскер, сас кӑлармa хӑяймарӗ, чунтан хӑраса ӳкрӗ вӑл. Илсе кайсан пӗчӗккӗскерне пӑхма пӗлессе шанмасть хӑйне. Ара, халиччен ача тыткаласа курман-ҫке-ха, упӑшкипе нумай ҫул пурӑнса та ҫуратман вӑл. Ҫитменнине тата, Валя ачи сывах та мар. Вилсе-мӗн кайсан ӗмӗр ылханӗҫ.

Урай варринче иккӗленсе тӑраканскере аппӑшӗ кипкепе чӗркенӗ ачана кап! тыттарчӗ.

— Ме телей сана! — терӗ вӑл.

Анук шартах сикрӗ. Ачана ни сӑпкана хураймасть, ни «аюк!» тесе калама хӑяймасть. Ним тума пӗлмен енне, вӑл кипкине уҫса ача питне пӑхрӗ. Ытла эреветлӗ-теветлӗ-ҫке! Сӑмси пӗчӗккӗ-пӗчӗккӗ, тути ҫӳхе-ҫӳхе. Куҫӗсем хупӑ. Пуҫӗнче—калпак. Паппа тӑвать ача мӑш-мӑш сывласа.

— Ах, чӗрӗ чун,— Анук пепкене шеллесе кӑкӑр ҫумне пӑчӑртарӗ, чӑп-чӑп! чуптуса илчӗ ӑна. Ҫак самантра хӗрарӑма халиччен тӳссе курман туйӑм хыпкӑчласа тытрӗ. Аллинчи пепкене калама ҫук хытӑ юратать-мӗн. Ҫак пӗчӗк этемсӗр вӑл тӗнчере текех пурӑнма та пултараймӗ. Хӑй чухлаймасть Анук. Унӑн чунӗнче амӑшлӑх

вăранчĕ. Ара, çутçанталăк кашни хĕрарăма амăш пулма пӳрнĕ.

Ачана усрава парас тĕлĕшпе аппăшĕ хăй хĕрне систермен пирки шухăшлама асра та пулман Анукăн. Вăл ĕнтĕ ачаллă! Мĕн тери пысăк савăнăç.

— Мăнукăмăн ячĕ — Стелла. Çапла çыртарăр та,— асăрхаттарчĕ аппăшĕ Анука тухса каяс умĕн.

Ачаллă ĕнтĕ Анук. Упăшки ăна ятлама мар, шутсăр савать. «Мĕнех, хĕрле ача тунисем хăйсен пепкисене ĕлĕк те усрава панă. Ку ют çын ачи мар, тăванăн. Тăрăшсах ӳстерĕпĕр. Кайран, çитĕнсен, вăл хамăра пăхĕ. Ватлăхра шыв паракан пурри мĕн тери ырă» — çак шухăшсемпе хăпартланса çӳреме тытăнчĕ Çемен.

Эрне иртсен ачана ят хучĕç вĕсем. Анук хăйне Стелла амăшĕ, упăшкине, Çемене, ашшĕ тесе çыртарчĕ.

Кун хыççăн кун иртет. Анук ачана тӳсме çук юратать, сăпка умĕнчен хăпма пĕлмест.

— Манăн ăслă, чипер нянюкăм,— утьăкка сиктерет вăл ăшă сăмахсем каласа. Тен, ача ăнланать çакна? Пачах юншăхламасть, çывăрать канлĕн. Ачашласа йăпатни кирек кама та сар çу пек ирĕлтерет пулĕ çав.

Валентина майĕпен сывалчĕ. Ура çине тăрсан, малтанхи кунах, лавккине уçрĕ. Тавар туянма пынă çынсем ăна ĕçе тухнă ятпа саламлаççĕ. Пĕри те тепри шӳтлесе култарма хавас. Анчах нихăшĕ те чухлаймасть: сутăç шухăшĕпе вĕсенчен аякра-аякра.

Кăнтăрла иртсен Валя хул хушшине çӳхе утиял хĕстерсе тухса чупрĕ Анук аппăшĕ патне. Çанталăк сулхăнланнă пулин те, вăл тарларĕ.

— Стеллăна илме килтĕм,— терĕ вăл хаваслă сассипе алăк урати урлă каçнă-каçман. Вара йăпăр-япăр урлă сак тăрăх утиялне сарса пăрахрĕ те сăпкаран ачине илчĕ. Вăл самай аталаннă, тыткаламалăх пур. Чуптуман вырăн хăвармарĕ ăна амăшĕ.

— Асту, ӳкерен! — ачана ярса тытасла аллисене сарса тăсрĕ кил хуçи арăмĕ, мĕн курса илтнипе пăлханнăскер.— Илсе каятăп терĕн-и çав?

— Эсир тĕрĕс ăнланнă. Хам ачана ма çын патĕнче усрас!

— Мĕнле апла? — ăнланаймарĕ Анук.— Аннӳ хушрĕ-и?

— Пире кукамай юратмасть. Çапла-и, Стелла? — Хĕрĕпе пупленçи пулса, амăшĕпе ун хушшинчи туслăх

тахçанах çухалнине систерет. Ĕнтĕ вăл ачине чĕркерĕ, çĕклемелле те тухса каймалла.

— Ак тамаша! — ик пĕççине шарт! çапрĕ Анук.— Ара, аннӳ Стеллăна усрава парса ячĕ-çке. Санпа калаçса татăлман-и вара?

Анук ăшне вут хыпрĕ. Çак ачасăр çутă тĕнчере тек пурăнаймассăн туйăнать ăна. Пуссан та парса ямалла мар çак пĕчĕк пĕрче. Вара вăл Валя кăмăлне хăй майлă çавăрма пĕтĕм вăйне пухрĕ.

— Чим-ха, ан васка у териех. Алай. Сĕтел хушшине лартмасăр кăларса ямастăпах. Тата Стеллăна та çитерме вăхăт. Утиялне салатăр-ха, унсăрăн пăчăхĕ вăл.— Çапла юмахласа ачана хăй аллине илме пултарчĕ Анук, кипке вĕççĕн юлнăскере сăпкана вырттарчĕ, кĕленчери сĕте ĕçтерме васкасах ăна ĕмкĕч хыптарчĕ. Хăй шав илĕртрĕ аппăш хĕрне.— Мĕн-ха, сана ачапа ах! йывăр пулать. Хăв — лавккара, аннӳ — фермăра, ачу — килте пĕччен. Ах, хăрамалла-çке: те хăй какришпе чыхăнса вилес пур. Алай.

Шартах сикрĕ Валя.

— Пĕр-пĕр карчăк тара тытăп,— терĕ вăл.

— Унпа тăкакланмалла-и? Кай. Хăвар ман патах. Хĕрхенсем пĕчĕке,— тилмĕрсе каларĕ Анук.— Эпĕ ют çын мар сирĕншĕн. Шан, тархасшăн, мана ачуна пăхма. Пирĕн ĕне сĕчĕ пур. Вăхăтра çитеретĕп, ĕçтеретĕп. Ăшă пӳртре. Кунтан ытла мĕн кирлĕ? Ӳстĕр рехетленсе. Аякра пурăнмастпăр. Ачу патне хăçан килес тенĕ, çавăн чух чупса кил. Хаваспах кĕтсе илĕпĕр.

Çемçелчĕ Валентина кăмăлĕ. Анук аппăшне ĕненчĕ, ачасăрах тухса утрĕ.

Тăрать Валя сутă сĕтелĕ умĕнче. Кун каçа такам та кĕре-кĕре тухать, çывăхри ялсенчен те çӳреççĕ иккен. Юлашки вăхăтра салтак тумĕ тăхăннă çамрăксем курăнма тытăнчĕç. Вăрçăра сывă юлнисем килĕсене таврăнчĕç мар-и, ара. Шăрпăк е табак кирлĕ вĕсене. Калаçтараççĕ сутуçа, ăшă куçпа пăхаççĕ ăна. Арăм тума уйлакансем те тупăнчĕç. Валя Кивкас каччине, Елиме, салтакран таврăннăскере, юратрĕ. Хĕре вăл эрнерен хăйне качча тухма ыйтрĕ. Паллах, ку хĕр пирки йĕтсе панисене илтнех. Вăл çын элек-челекне йӳплесе хĕре тиркемерĕ.

— Э-э, ара, çын сехметсĕр пурăнмасть. Ан кулян, ачуна пĕрле пăхса ӳстерĕпĕр. Эпĕ унăн чăн-чăн ашшĕ

пулатăп,— тупа турĕ Елим. Каччăн ырă кăмăлне чунпа туйрĕ Валя, ĕненчĕ. Чăнах та, йăнăшман вăл: мăшăрĕпе мĕн паян кунчченех телейлĕ.

Туй иртсен ачана илсе килме шутларĕç. Тухса вĕçтерчĕ вара Валя. Чунра çăмăл. Ура айĕнче кĕрхи пылчăк çăрăнни те нимĕн чухлĕ те кăмăла пăсмасть. Утмасть, çунатсăр вĕçет тейĕн ăна.

Пысăк хаваспа пырса кĕчĕ хайхискер Анук аппăшĕ патне.

— Ача илме килтĕм! — пĕлтерчĕ вăл савăнăçлăн. Хăвăртрах сăпка умне ыткăнчĕ. Хĕрача палăрмаллах ӳснĕ. «А-а-ку! А-а-ку!» калаçса выртать. Аллинче — тетте.— Хĕрĕм, няньукăм, кил ман патăма, аннӳ патне,— кăчăк туртрĕ ăна.

Ача чăр-р пăхать те хăранипе макăрса ярать.

— Эх, эсĕ те çав, манма та ĕлкĕртĕн-и мана? — кăмăлсăрланать Валя.

Анук аппăшĕ те юнашарах тăрать. Вăл ним те шарламасть, куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăлкалать. Çав вăхăтра Стелла аллисене ун еннелле тăсрĕ, ăна хăйне тыттарасшăн.

— Халех, хĕрĕм, халех,— мăкăлтатать ачапа Анук, ача кăмăлне ăнланса.— Выртса йăлăхрăн-и? Халех тытатăп, манăн сăлăтайăм.

Анук Стеллăна алла илчĕ. Лешĕ ăна мăйĕнчен ыталарĕ, хăйĕн чăн-чăн амăшĕ çине шиклĕн пăхкалать.

Çакна кура тăркач Вальăн чунĕ ыратса кайрĕ.

— Стеллăна илсе кайма кăшт тăхта,— йăвашшăн каларĕ Анук.— Хăвăрăн халĕ чăп-чăп уйăхĕ. Ача сире чăрмантарать çеç, тата упăшку кăмăлне те кайĕ-ха.

— Мĕн кирлĕ мара пуплетĕр? Вăл хăй мана ача патне ячĕ. Эпир унпа ачана хамăр ӳстерес пирки çырăниччен калаçса татăлнă.

— Каччăсем вĕсем авланиччен сĕт кӳллинче шыва кĕртме пулаççĕ, кайран тапса сиктереççĕ.

Валя аппăшĕн халапне ăса хывасшăн мар, ачине хăпăл-хапăл ярса тытрĕ. Лешĕ çариех çухăрса йĕрсе ячĕ.

— Ан тулăксăрлан-ха, тупата,— чарчĕ ăна Анук, ачана хăй аллине илсе.— Пĕр хăнăхнăскер хамăр патăртах пурăнин. Кăмăлне хуçса пăсар мар ачана. Ниçта та çухалмасть вăл. Пăхатăп. Эпĕ — тахçанах каланă сана — ют çын мар.

Укĕте кĕртрĕ-кĕртрех Анук çамрăк амăшне.

Уйăх хыççăн уйăх иртрĕ. Вальăпа Елимĕн тепĕр хĕр çуралчĕ.

— Илсе кил ĕнтĕ Стеллăна,— хушать мăшăрĕ арăмне.— Хĕрĕмĕрсем пĕр-пĕринпе хăнăхса ӳсчĕр.

Анна Ивановна каллех сăлтав тупать.

— Сана, Валя, икĕ ачапа шутсăр йывăр пулĕ.

— Пăянам пур, вăл пăхать.

— Хуняму ют ачана пăхасса шанатăн-и? — пĕççине çапса тĕлĕненçи турĕ Анук.— Çемьере хирĕçӳ пуçланасса кĕтсех тăр вара. Эпĕ ют çын мар. Стелла — хам тăван, ăна кӳрентерес çук.

Қаллех пушă алăпа тухрĕ Валентина.

Тепрехинче вĕсем ятлаçса кайрĕç.

— Стелла вăл ман ача. Ăна илсе каясшăн ан çӳре!— Урипе урайне тăрс! тапрĕ Анна Ивановна.

— Ирĕклĕн памасан, халех суда паратăп,— вĕриленчĕ Валя та.

— Саккун сан майлă мар.

— Ачана амăшне тавăрса пама чаракан саккун çук!

— Метрика çине пăх-ха: ашшĕпе амăшĕ кам тесе çырнă? Амăшĕ — эпĕ, ашшĕ — Çемен, ман упăшка ĕнтĕ.

Çиеле тухаймарĕ Валя.

— Суда памарăм,— хаш-ш сывларĕ Валентина Епифановна Юннăпа калаçнă самантра.—Мĕншĕн? Халĕ те çавăншăн хама каçармастăп. Эпĕ шăпама шантăм: ӳсоен, ăс кĕроен, хăех чупса килĕ-ха тăван амăшĕ патне, терĕм. Чăнах та, каярахпа темиçе хут та пирĕнпе пурăнма пикенчĕ. Ун чухне ĕнтĕ ман пӳрт тулли ачаччĕ. Çук, илентереймерĕм. Хама юратманнине куçкĕретех кăтартатчĕ. Хама питлеме те именместчĕ: «Вунă ачуна ĕмĕртрĕн, маншăн сан тумлам кăкăр сĕчĕ тупăнман. Вунă ача аллунта утьăкка сиктертĕн, ыталаса ăшшăн чуптурăн, мана пăрпа шăнтрăн...»

Мĕн каласа ĕнентерĕп ĕнтĕ ăна? Хуйхăм пысăк. Çине тăма пултарайман амăшĕ эпĕ. Анук аппа манăн тăшман пулса тăчĕ. Юрать, упăшкам ырă чунлă çын. Ялан лăплантарать. Çемье туслă пирĕн. Ачасене, ӳснине пĕрне, вĕрентсе пыратпăр. Стелла хĕрĕмпе ку яхăнта тĕл пулман.

Юнна виçĕ хĕрарăм пурнăçĕ çинчен чылай пĕлчĕ. Вăрçă хуçнă çамрăк хĕре шеллерĕ. Анчах Стелла Семе-

новнӑн чӗри сылтӑма вырнаҫнин сӑлтавӗ вӑл тӑван амӑшӗ ҫумӗнче ӳсменнинче мар. Тем тесен те ача амӑшӗ варӗнче тӗвеленнӗ чухнех аманнӑ.

— Сирӗн аслӑ хӗрӗн чӗри сылтӑмра, ҫав инкекпе асапланать вӑл. Эсир ун пирки пӗлетӗр пулӗ? — хӑюллӑн пӑхрӗ Юнна хирӗҫ ларакан хӗрарӑм куҫӗнчен, унпа юлашки хут тӗл пулсан.

— Ай, турах! — хыпӑнса ӳкрӗ Валентина Епифановна.— Пачах илтмен. Юсанайӗ-ши ӗнтӗ?

— Тухтӑрсен пулӑшӑвӗ хӑҫанччен ҫитӗ, калама йывӑр.

Амӑшӗн куҫӗсем шывланчӗҫ.

— Мӗнле лару-тӑруччӗ ҫие юлнӑ чух?— ыйтрӗ унтан Юнна, вӑл кӑшт лӑплансан.

— Ах, ан та ыйт. Асӑнсан халь ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑрать,— ассӑн-ассӑн сывласа илчӗ Валентина Епифановна.

Ҫак вӑхӑтра пахчари йывӑҫсем хушшипе утса сывхаракан ҫӳллӗ арҫын курӑнчӗ. Вӑл ҫамрӑках мар, питӗнче йӗрсем чылай.

— Кунта ларатӑр иккен,— йӑл кулкаласа сывлӑх сунчӗ вӑл.

— Манӑн упӑшка,— паллаштарчӗ унпа Валентина Епифановна. Вараваскасах Юнна Шупашкартан килнине, вӑл больницӑра практикӑра ӗҫленине, чирлесе ӳкнӗ Стелла вӗсем патӗнче выртни ҫинчен пӗлтерчӗ.

— Ыранах каяр Стелла патне.— Ӑна хыпар тарӑннӑн пӑлхантарни пӗрре пӑхсах палӑрчӗ.— Эппин, эпӗ колхоз председателӗ патне машина пирки кайса килӗшем. Эсӗ кучченеҫсем хатӗрле.

Упӑшки кайсан, Валентина Епифановна Юнна панӑ ыйтӑва аса илчӗ:

— Стелла ҫие юлнӑ самант вӑл — вӑрҫӑ.

Каллех иртни хутӑрланать.

...Вӑтам шкул пӗтернӗ ҫул вӑрҫӑ тухрӗ. Тепӗр ҫул мана ҫара илчӗҫ. Эпӗ пӑлатна хӗрччӗ. Вӑй енчен пӗр ҫамрӑкран та юлман. Йӗтемре ним мар тӑватӑ пӑтлӑ михӗсем йӑтаттӑм. Ҫавна пулах-тӑр фронтра санитар турӗҫ мана.

Эпӗ стрелковӑй полка лекрӗм. Мӗн кӑна курмарӑм-ши ҫапӑҫу хирӗнче?! Чун сехӗрленнипе чӗре мӗнле тухса ӳкмерӗ-ши?! Снарядсем, бомбӑсем ӳхӗрсе ӳкеҫҫӗ, ҫурӑлаҫҫӗ, ҫӗр питне ҫӑлса тӳпенелле ӳпӗнтереҫҫӗ. Пульӑсем пуҫ тӑрринчен, хулпуҫҫисем ҫумӗпе, урасем

хушшипе ши! те ши! шăхăрса иртеççĕ. Эпир, санитарсем, ниме пăхмасăр, çак тĕнче ахăрнă самантра çапăçу хирĕнчен аманнисене йăтса тухаттăмăр. Вĕсен е пуçĕнчен, е кăкăрĕнчен, е уринчен юн сăрхăнать. Ахлатаççĕ, шăлĕсене шăтăртаттараççĕ ыратнипе, йынăшаççĕ. Теприне пулăшу парса та ĕлкĕрейместĕн, алăрах вилсе каять те хытнă куçĕпе сан çине шăтарасла пăхать. Тата миçе виле урлă каçса утман-ши? Тепри хăй ĕмĕрĕнче ун чухлĕ пĕрене урлă та каçман-тăр.

Астăватăп-ха, тин çеç фашистсенчен тасатнă Украина çĕрĕ çинче пыратпăр. Пирĕн полк тепĕр вырăна куçать. Тарăн вар урлă каçатпăр. Тахăшĕ кăшкăрса ячĕ:

— Пăхăр-ха!

Курах кайрăмăр: çырма тĕпĕнче вун-вунпилĕк салтак кăнт хытса выртнă. Хăйсем пĕр-пĕринпе ыталаннă. Мĕн пулнă вĕсене? Мĕнле вилнĕ? Никам та пĕлмест, тĕпчесе тăма вăхăт та çук. Тарăху çĕкленет, ылханатпăр тăшмана, часрах тĕп тăвас килет ăна.

Тепрехинче тата... Аса илме хăрушă.

Пĕр вырăнтан фашист эшкерне тапса сиктернĕ хыççăн пирĕн полк малалла кайрĕ. Яла пырса кĕтĕмĕр. Пĕр çурт умĕнче çынсем кĕшĕлтетеççĕ.

— Мĕн пулнă?

Эпĕ хамăр салтакпа пӳрте кĕтĕм. Урайĕнче совет салтакĕсем речĕпех выртаççĕ.

— Нимĕçсем наркăмăшлă имçам сапса хăварнă апатçимĕçе çинĕ вĕсем,— ăнлантарать пĕри.— Ĕнертенпех выртаççĕ çапла асапланса. Имçамĕ чуна ытла ерипен кăлараканни пулнă.

Салтаксем хушшинче сержант та пур. Вăл эпир кĕнĕ чух чĕрĕччĕ. Куçĕ уçă, анчах чĕлхи çĕтнĕ. Вăл сасартăк асапланса авкаланма тытăнчĕ. Ай, авкаланать. Унччен те пулмарĕ, çав тери тискер сасăпа çухăрса ячĕ те, юлашки сывлăшĕ тухрĕ. Эпĕ шартах сикрĕм, чĕре тухса тарасла тăпăлтатать, аллăмпа кăкăра ярса тытрăм. Вырăнтан тапранаймастăп. Юрать, мана хампа кĕнĕ салтак пӳртрен çавăтса тухрĕ.

Стелла ашшĕн вилĕмĕ вара мана стройран пачах кăларчĕ.

Ваня ятлăччĕ вăл. Вырăс каччи, полк музыканчĕ. Духовой оркестрта трубапа калатчĕ. Çав тери саваттăмăр пĕр-пĕрне. Хăйĕн хĕр çураласса пĕлмесĕрех пĕтрĕ. Ун чух эпĕ те кун пирки ним те тĕсмĕртмен-ха.

Оркестра салтаксем питĕ юрататчĕç. Чуна хăюлăх

вёрсе кёртет, вăй-хал парать, ура вăйне ӳстерет, тетчĕç.

Куçнă чух оркестр ялан пĕрле. Музыка салтаксене çапăçăва çĕклентерсе ăсататчĕ.

Çапăçу... Тĕрлĕрен килсе тухать: чарăнусăр малалла ыткăнатчĕç, тепĕр чух каялла чакма та тивет.

Пирĕн, санитарсен, аманнисене çапăçу хирĕнчен йăтса тухмалла, пирвайхи пулăшу памалла.

Çав кун, Ваньăпа иксĕмĕре уйăракан ноябрь кунĕ, çанталăк илемсĕрччĕ: кассăн-кассăн сивĕ çумăр килсе çăватчĕ. Апла пулин те, пирĕн полк фашистсене хытă çунтарчĕ, малалла шурĕ. Çынсем питĕ нумай пĕтрĕç.

Командир музыкантсене çапăçу хирĕнче ӳксе юлнă салтаксен документĕсене, пăшалĕсене пухма хушрĕ. Тухрĕç вара лешсем. Çав шутра Ваня та. Вăл пĕрин патĕнчен теприн патне чупать. Ăна куçран çухатмастăп. Вăл манран нумай пулсан виççĕр-виççĕр аллă метрта çӳрет. Унччен те пулмарĕ, таçтан муртан фашист самолечĕ вĕçсе тухрĕ. Пирĕн паталлах килет. Эпĕ хӳтлĕхе чăмрăм. Фашист летчикĕ, йытă, бомбăсем тăкать. Кĕр кĕрлерĕ тавралăх. Хăйне те персе ӳкерчĕç-ха.

Кайран пуçа çĕклерĕм, Ваньăна курмастăп. Ăçта вăл?

— Ваня! — кăшкăратăп.

Унăн юлташĕсем те пăшăрханса ӳкрĕç. Кускала тăратăп. Шыратăп ăна вăл çӳренĕ вырăнта. Тупаймастпăр. Чылай аякра сулахай алă выртать. Унăн. Сехетĕнчен палларăм. Ваня алли. Мĕн юлнă-ши тата? Авă, пуç выртать... Хыпăнса ӳкрĕм. Чĕрене çĕçĕпе чикнĕ пек туйрăм, çав тери ыратса касăлчĕ вăл. Куç хуралса килчĕ.

Тек ним те астумастăп. Тăна пырса кĕтĕм. Эпĕ госпитальте выртатăп иккен. Эмеллерĕç. Анчах сыватсах çитереймерĕç.

Валентина Епифановна чарăнчĕ. Куçĕсем хурлăхлă унăн.

Юнна шухăша кайрĕ: тискер вăрçă ăшра чун кĕмен тĕвве асат хуçнă ахăр.

— Тӳснĕ те вара эсир,— терĕ Юнна.

— Çапăçу хирĕнче мĕн-мĕн туссе irттернине пурне каласа та пĕтерес çук,— хаш! сывлать Валентина Епифановна.— Пирĕн ӳсĕм мĕн курнине ачамăрсен курмалла ан пултăрччĕ.

— Валентина Епифановна, эсир çакăн çинчен хăвăр хĕрĕре, Стеллăна, каласа паман-и?

— Май килмен.

— Анланман вăл сире,— сăмах хушрĕ Юнна.— Пырăр-ха больницăна. Пĕлсех тăратăп. Стелла Семеновна хăйĕн йăнăшне чухласа илĕ, эсир тусланăр акă.

Шупашкара таврăнчĕ Юнна. Общежитинче ăна çыру кĕтет. Илетертен. Часрах конвертне уçса çырăвне вуларĕ. Каччă Хура тинĕс хĕрринчи кану çуртне кайма икĕ путевка илнĕ. Путевка августăн пĕрремĕшĕнчен пуçланать. Ырă хыпар питĕ хĕпĕртеттерчĕ хĕре. Унтан вăл тӳрех сĕтел хушшине ларчĕ те тантăшĕсем чăрмантарнине пăхмасăр çырчĕ, çырчĕ: Стелла Семеновнăн чĕри мĕншĕн сылтăмра аталанма пултарнине сăлтавларĕ.

Тепĕр кунне, ирхине ирех, Юнна больницăна васкаса утрĕ. Кантăк умĕнчи пахчара кайăксем юрлаççĕ. Палатăра шăп. Врач Стелла Семеновна койки патĕнче тăрать.

— Сывлăхĕ мĕнле? — шăппăн ыйтрĕ Юнна.

Врач чĕнмерĕ, куçĕпе çеç чăрлаттарса пăхрĕ. Каярахпа Юнна пациентăн чĕри япăхланнине пĕлчĕ.

— Укол туни те пулăшмасть-и?— хурланчĕ хĕр.

Врач каллех нимĕн те чĕнмерĕ.

Кăнтăрла иртнĕ çĕрелле больницăна Валентина Епифановна пырса çитрĕ. Юнна ăна халат тăхăнтартса палатăна илсе кĕчĕ.

— Анне! — терĕ Стелла. Унăн куçĕсем лампа çутнăн йăлтăртатрĕç.

«Каçарчĕ»,— савăнăçлăн шухăшларĕ Юнна.

— Хĕрĕм,—йăвашшăн чĕнчĕ Валентина Епифановна.

Хĕрĕ амăшне мăйĕнчен уртăнма аллисене тăсса çĕкленчĕ... анчах ыталаймарĕ.

Валентина Епифановна ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

— Ав кама кĕтнĕ вăл,— терĕ палатăра выртакансенчен пĕри.

Вĕçленчĕ çамрăк хĕрарăмăн ĕмĕрĕ, мĕн чухлĕ пурăнмаллаччĕ-ха унăн çутă тĕнчере.

Профессор Юннăн тĕпчев ĕçĕпе паллашрĕ.

— Тата хăçанччен çынсен пурнăçне татĕ ку тискер вăрçă?

Те хăйĕнчен, те Юннăран, те студент-практикантсенчен ыйтрĕ вăл. Сас паракан тупăнмарĕ.

*1977 ç.*

# КАЧЧĂЛЛĂ ХĔР

*Дмитрий Филиппова халаллатăп.*

1

Йывăҫсем хушшипе васкамасăр утрĕ Ҫеҫеппи. Текех мĕншĕн хыпаланмалла, тет? Виҫĕ ҫул канăҫсăр тĕпĕртетнĕ, ҫитет. Ĕнтĕ профтехучилищĕре вĕренни хыҫа юлчĕ. Апла пулсан, пусăрăнма та вăхăт. Часах ĕҫе кӳлĕнмелле. Ун аллинче халь — общежитие вырнаҫмалли хут. Вăл шăп та шай ҫавăнта кайма тухнă.

Пилеш айĕнчи хыҫлă сак тĕлне ҫитрĕ Ҫеҫеппи. Пĕркун, ашшĕ килсен, кунта чарăннăччĕ.

— Таҫтан-таҫтан усăнса ҫӳрерĕм паян хула тăрăх. Урасем сăрăлтатаççĕ. Атя-ха, канар ҫакăнта, хĕрĕм,— сĕнчĕ ашшĕ. Ларчĕҫ вара юмахласа темĕнччен. Ашшĕ нихăҫанхи пек мар евĕклĕ пуплерĕ. Ҫавăнтан хĕрĕ шутсăрах тĕлĕнчĕ.

— Хăҫан вĕрентсе кăлараççĕ-ха? — кăсăкланчĕ ашшĕ.— Аннӳ киле пырасса тӳсейми кĕтет сана.

— Хам та тунсăхларăм. Экзамен хыççăн пĕр кун та тытăнса тăмастăп.

Ҫавăн чух вĕсен умне темĕнле пĕр ҫамрăк йĕкĕт тĕмсем хушшинчен яшт! сиксе тухнăччĕ.

— Эсир кунта-ҫке. Аран шыраса тупрăм сире, Мерти пиччe,— терĕ вăл Ҫеҫеппи ашшĕне.

Ытла путишле пек туйăнчĕ ку этем Ҫеҫеппие. Кулса ямасăр аран чăтрĕ. Ара, тĕссĕр ҫӳҫĕ унăн сурăх путеккин евĕр пĕтрек. Куҫ харшипе хăрпăкĕсене тем тума ĕнтнĕ. Хăрăм ҫурхахĕсем сăмса, питҫăмартисем тăрăх лап-лап ҫыпăҫнă.

— Паллаш, хĕрĕм. Ку — Керӳш. Хамăр ял лавккинчи сутăҫă.

Часах Ҫеҫеппи патне ҫак ҫынран ҫыру килчĕ. Анчах хĕр ун патне ҫыру ҫырма хутпа ручка тытмарĕ.

Иртсе кайрĕ Ҫеҫеппи сак ҫумĕпе. Ашшĕпе кăтра ҫӳҫлĕ йĕкĕт аса килчĕҫ те чылайччен пуҫран тухмарĕҫ.

Общежити ҫуртне шыраса тупрĕ Ҫеҫеппи. Ҫӳллĕскер вăл.

Аялти хутĕнче хĕрсем пурăнаççĕ. Хăйсем тĕрлĕ ҫĕрте ĕҫлеççĕ. Пĕри тепринчен хитре.

Йĕркеллех вырнаҫрĕ Ҫеҫеппи общежитие. Хĕрсем ăна кăмăллă йышăнчĕҫ.

Юнашар кравать ҫинче Тайра ятлă хĕр выртса тă-рать. Ытлашши хитрех мар та, кăмăлласкер, куҫĕ чакăр. Пĕвĕ яштака. Ҫӳҫĕ сарă та вăрăм.

— Тайра, эсĕ ăҫта ĕҫлен? — кăсăкланчĕ Ҫеҫеппи.

— Пир-авăр комбинатĕнче.

— Ҫип арлатăн-и е пир тĕртетĕн?

— Эпĕ художник.

— Художник?! Ай-вай, мĕнле чаплă ҫын эсĕ!

— Чап профессирен мар, пултарнинчен килет,— та-вăрчĕ Тайра, тĕкĕр умне пырса ҫӳҫне тураса якатнă май.

Кантăкĕсем кăнтăралла пăхакан пӳлĕмре икĕ хĕр пурăнать. Паша ятлă мăнтăркка хĕрпе Элисса, асат хуҫнипе ҫителĕклех ӳсменскер. Кунта ытти пӳлĕмсенче пурăнакансем те час-часах кĕреҫҫĕ-мĕн. «Элисса, ме чă-кăт, тутанса пăх-ха. Элисса, ҫых ман чечеклĕ тутăра. Элисса, эпĕ магазина каятăп, сан валли мĕн туянса ки-лес?» Ҫапла вĕҫĕмех тимлесе тăраҫҫĕ сывлăхсăртарах юлташне хĕрсем.

Ку пӳлĕмре татах тепĕр япала тĕлĕнтерчĕ Ҫеҫеппие. Пашăн вырăнĕ ытла лӳчĕркенчĕк.

— Ун патне тепле этем ҫӳрет,— пăшăлтатрĕ Тайра.— Вăл килсен тӳрех Паша койки ҫинче тăсăлса выртать. Ыхх, ытла сĕмсĕр вăл.

— Хĕре намăса ярать-иҫ вăл апла. Паша мĕншĕн тапса кăларса ямасть ăна.

— Асту. Юнашар кĕрсе выртса хăрлаттарса ҫывă-рать.

— Айванскер вăл эппин. Пĕр ят пăсăлсан, сĕтпе шыва кĕрсен те тасалаймĕ.

Хĕвел анман-ха, вăл йывăҫ тураттисем хушшинче ҫынсемпе пытанмалла вылять. Хĕрсем трикотаж костюм-сем тăхăнчĕҫ. Пӳскелле выляма тухаҫҫĕ имĕш.

— Ҫĕнĕ хĕр, атя пирĕнпе,—чĕнчĕҫ вĕсем Ҫеҫеппие.

— Тарам пултăр, тепĕр чух тухăп,— терĕ вăл.— Анăҫу сунатăп.

Кăмăлĕ пур-ха ун. Анчах общежитие вырнаҫнă-вырнаҫман мечĕк хыҫҫăн сиккелесе, хăлаҫланса ҫӳрени ырă мар пек шутларĕ.

— Эсĕ карчăк-кĕрчĕк-и пĕччен ларса юлма! Пĕрле тухатпăр. Пуҫтарăн,— ӳкĕтлерĕ ăна Тайра.

Тек турткаланмарĕ Ҫеҫеппи. Хăпăл-хапăл кăвак шă-лавар, шурă свитер тăхăнчĕ. Вăрăм ҫивĕтне ĕнсе хыҫне чăмаккаласа майлаштарчĕ.

— Ку тум сана питĕ килĕшет. Хура сăн-питне çутатсах ячĕ. Ытарма çук хитре хĕр,— мухтаса илчĕ ăна Тайра.— Ҫам та пулни юратса пăрахатех сана. Пӳскелле выляма çамрăксем нумаййăн тухаççĕ.

— Ай-уй, эсĕ, Тайра, мана иментеретĕн,— Çеçеппи йăлт пăхса илчĕ те пуçне пĕкрĕ.

— Тупрăн вăтанмалли. Хăюллăрах пулмалла! Унсăрăн нихăçан та савни тупаймăпăр. Вара кĕрчесе юласса кĕт.

Çеçеппи тухрĕ хваттертен Тайрапа пĕрле.

Пӳскепе вылямалли çеремлĕ уçланкă çывăхрах-мĕн, пысăк стадион тулашĕнче. Куçа илĕртет кунти илемлĕх. Йĕри-тавра йывăçсем ешереççĕ. Вĕсем чул çуртсем çывхарасран çак çеремлĕ уçланкăна салтаксем пек сыхланăн туйăнать.

Халичченхи майлах хĕрупраçпа йĕкĕтсем йышлăн пухăнчĕç. Ара, çывăхра общежитисем татах пур.

Тăчĕç вăйă картине Çеçеппипе Тайра та. Мечĕк, тур çырлах, перкеленет, алăран алла куçать кăна! Йĕркеллĕ вылякансем пӳскене ывăç тупанĕпе кăлт! тивертсе тепри тытмалла параççĕ. Анчах ашкăнакансем (ушкăнра унашкаллисем пур) мĕн вăй çитнĕ таран мечĕке чышкăпа çапса çӳлелле вăркăнтараççĕ. Пĕлĕтех çитес пек туйăнать çавра чăмăр, вара вăл йĕтре евĕр аялалла вăркăнать. Ăна тытса каллех персе ярасшăн пĕри те тепри кармашать сике-сике. Пӳске каллех çав ашкăнакан путсĕрскер аллине лекет. Вăл юри пĕр-пĕр вылякан енне тĕллесе вирлĕн перет.

Акă Паша кăшкăрса ячĕ:

— Ай-ай, кире пуканĕ пырса çапăнчĕ!

Вăл пуçне икĕ аллипе ярса тытрĕ те вăйă картинчен тухса килелле чупрĕ.

— Çав хĕрлĕ çӳç ялан çапла хăтланать,— ятлаçса илчĕ Тайра. Хăраса-мĕн тăмарĕ вăл, хĕрлĕ çӳçли енне çаврăнчĕ те каларĕ: — Сана тек вăййа хутшăнтармалла мар.

— Хо-хо! — ĕрлерĕ леш.— Мĕншĕн?

— Эсĕ выляма пĕлместĕн, иртĕхетĕн кăна. Халех кай кунтан!

— Çавнашкалах усал-и эсĕ, сарă хĕр?

Асту, кайĕ сана пăрахса. Çапах та кăшт сĕвĕрĕлчĕ.

Çеçеппи вăййăра пĕр вăрттăнлăх сисрĕ. Хире-хирĕç тăракан хура çӳçне каялла тураса якатнă йĕкĕт пӳскене ялан ун патнелле меллĕн ыткăнтарать. Çав вăхăтра

хӑй йӑл кулать. Шӑлӗсем таҫтан аякран шап-шурӑ курӑнаҫҫӗ. Ҫеҫеппи те мечӗке ҫӑмӑллӑн парса тӑчӗ ӑна.

Вӑхӑт сисӗнмесӗр иртет. Тӗттӗмленме тытӑнчӗ.

— Ҫитӗ выляса, атя киле,— чӗнчӗ Тайра Ҫеҫеппие. Нумай те каяйманччӗ, вӗсене пӗри хуса ҫитрӗ. Йӑлт! пӑхса илчӗ каччӑ ҫине Ҫеҫеппи. Ку ӑна **йӗркеллӗ** пӳске тыттараканни иккен.

— Пикесем, сирӗнпе паллашма юрать-и? — сӑмах вӗҫертрӗ хайхискер.— Мана Похвир тесе чӗнеҫҫӗ.

Хӗрсен те ирӗксӗрех хӑйсен ячӗсене калама тиврӗ.

— Ҫеҫеппи, атя алӑ ҫума ҫырмари ҫӑл хӗррине,— чӗнчӗ Похвир.

Хӗр килӗшрӗ. Хӑрамарӗ вӑл: ара, ҫырми ҫывӑхрах, общежити леш енче ҫеҫ. Виҫҫӗмӗш ытлашши тенешкел, Тайра киле кӗрсе юлчӗ.

Похвир, хӑйпе юнашар утакан чиперкке пӑрахса айккинелле утасран шикленнӗн, хыпалансах хӑй пурнӑҫӗ ҫинчен сӑмахлама пуҫларӗ. Кӗске вӑхӑтрах Ҫеҫеппи ун пирки тем те пӗлчӗ. Вӑл ялхуҫалӑх институчӗн студенчӗ-мӗн, кӑҫал вӗренсе тухать. Елчӗксем иккен. Ашшӗ-амӑшлӗ. Стипенди хӗрӗх тенкӗ илет, тепӗр ҫавӑн чухлӗ килтисем ярса параҫҫӗ.

— Эсӗ, Ҫеҫеппи, общежитие тинтерех ҫеҫ куҫнӑ-и-мӗн? Халиччен курман сана,— ыйтрӗ каччӑ.

— Паян кӑна-ха.

Ҫырма хӗррине ҫитнӗ-ҫитмен шыв шарласа юхни илтӗнчӗ. Сӑмах пине ҫитрӗ ахӑртнех, пуплеме чарӑнчӗҫ.

Ҫырма тӗпне йӑрт-ярт утса анаймӑн. Ҫумра вӑйлӑ йӗкӗт пур чух шуса ӳкмӗ хӗр тени. Ав, алне пачӗ. Кунта картлашка ҫук. Ура айӗнчи хӗрлӗ тӑпра йӗлтӗр-сӗрех шутарать.

Пурпӗрех ӑнӑҫлӑ анса тӑчӗҫ ҫырма тӗпне. Шыв пӑрӑх тӑрӑх юхса тухать-мӗн. Хӗрпе каччӑ аллисене ҫурӗҫ, тутлӑ, сивӗ шыв ӗҫсе киленчӗҫ. Кайран каччӑ Ҫеҫеппие ӑсатрӗ, общежити алӑкӗ патнех ҫитерчӗ. Пӗрре те вӗҫкӗнленсе е пуҫтахланса кӑтартмарӗ йӗкӗт. Сӑпайлӑхӗпе килӗшрӗ вӑл хӗре.

Общежитире пурӑнакансем, Ҫеҫеппи йӗкӗтпе юнашар утса кайнине курсан, ку каччӑллӑ хӗр иккен тесе шутларӗҫ.

2

**Ирхине шӑнкӑрав янраса сас панӑ пекех хӗрсем пӗр харӑс вӑранчӗҫ. Пуҫланчӗ тӗпӗртетӳ! Шӑл тасатса пите-**

куҫа та ҫумалла, апатне те ăшăтса ҫимелле. Вара пĕрин хыҫҫăн тепри вĕлт те вĕлт! ĕҫе тухса чупрĕҫ. Плащ тӳмисене ҫул ҫинче те тӳмелеме пулать. Ҫеҫеппи те юлмарĕ, вăл автобус станцине вĕҫтерчĕ. Касса умĕнче черет ҫук. Билет илсе часах автобуса кĕрсе ларчĕ.

Йăрлаттарать автобус такăр ҫулпа. Хыҫаларахри кантăк умĕнче Ҫеҫеппи ларса пырать. Вăл тăван ялне кайма тухнă. Пуҫра пĕр пысăк шухăш: ҫĕркаҫ студентпа ҫăл хĕррине шыв ĕҫме анни, унăн сăмах-юмахĕ... «Похвир, Похвир!» — никам илтмелле мар, хăй ăшĕнче, пăшăлтатса чĕнчĕ йĕкĕте Ҫеҫеппи.

Тăван колхоз ҫĕрĕ ҫине кĕрсен, ялалла пăрăнакан ҫул юппине ҫитсен, Ҫеҫеппи автобусран анса юлчĕ. Халĕ ĕнтĕ ыраш пуссипе утмалла. Хĕвел тӳсме ҫук хĕртет, ҫурăма вут тĕртсе ҫунтарманни кăна.

— Мĕншĕн хура костюм тăхăнтăм-ши? — хăйпе хăй калаҫрĕ Ҫеҫеппи.— Хĕвел хура тĕсе юратмасть-тĕр, шупкалатасшăн ҫиет.

Эль кӳлли енче пĕлĕтсем хăймаланаҫҫĕ ав. Ахăртнех, ҫумăр ҫăвасшăн. Кăшт пĕрĕхтерсен чармĕччĕ. Хĕр уттине хăвăртлатрĕ. Кĕтмен ҫĕртен ҫанă ҫине уяр вĕҫсе ларчĕ. Тумĕ хăйĕн шурă-шурă пăнчăллă. Хура тĕс ҫинче ытла яр-уҫҫăн курăнать. Калăн, тĕлĕнтермĕш чечек тесе. Ҫеҫеппи тилмĕрме тытăнчĕ: «Уяр! Уяр! Уяр пулас пулсан, вĕҫсе кай; ҫумăр пулас пулсан, тачах ӳк!» Юмăҫ карчăк мар-тăр вир-уяр. Йăпăртатса ҫӳрекелерĕ те, хулпуҫҫи урлă каҫса, ҫурăм хыҫнелле вĕҫрĕ ҫуначĕсене сарса.

Укăлчаран кĕрсен, Ҫеҫеппи аслă урампа ухăнтарчĕ. Кашни ҫуртăн кантăкĕсене пăхса утма юратать вăл. Никам та курăнмасть. Ҫынсем ĕҫре ĕнтĕ, камах лартăр килте усăнса. Хăйсен урамне тăкăрлăкпа тухсан, чӳречисене хăмапа урлă-пирлĕ ҫапнă пӳрт тĕлĕнче тапах чарăнчĕ хĕр.

«Ҫынсене мĕншĕн ҫутă тĕнчерен уйрăлмалла тунă-ши? — кулянчĕ вăл.— Ҫу кунĕсенче хапха умĕнчи сак ҫинче ларатчĕ мăнтарăн старикĕ».

«Сывлăх сунатăп, Апруҫ мучи! — саламлатчĕ ăна Ҫеҫеппи.— Мĕнле пурăнан?» — «А-апат ма-майăн...» — тетчĕ, пуҫĕнчи кивĕ ҫĕлĕкне ҫĕклесе илнĕ май. Пĕркеленнĕ питҫăмарти тăрăх салху куҫĕсенчен юхса анакан куҫҫульне кĕпе ҫанни вĕҫĕпе шăлатчĕ. «Ки-киле ки-килес те-терĕн-и? А-аннӳ кĕ-кĕтетчĕ-ха...» — юмахласа юлатчĕ вара пĕччен старик. Арăмĕ хăйĕнчен чылай мал-

тан çĕре кĕнĕ. Ача-пăча пулман вĕсен. Шутсăр хĕрхенетчĕ ватăскерне Çеçеппи. Ашшĕ-амăшне кура хисеплеме хăнăхнă ăна. Вĕсем-çке Апруç мучишĕн каççах каятчĕç. Хăнана чĕнетчĕç, унсăр пĕр уяв ирттермен ĕнтĕ. Вăл ватăлса çитсен пулăшса тăнă. Кивелнĕ çуртне сиплесе пачĕç виçĕмçул. Çеçеппи вара урайне, саккисене сапсарă сăрăпа сăрларĕ. Кăмакине пурă шывĕпе, чӳрече хашакисене шурă сăр сĕрсе шуратрĕ. Чун кĕчĕ вара пӳрт ăшчиккине. «Па-патша пу-пурăнман ку-кунашкал хăт-хăтлă çуртра...» — хавасланчĕ мучи. Хăй кун хыççăн икĕ çул та пурăнаймарĕ, вилчĕ.

— Шел, ĕмĕрĕ вĕçленчĕ мĕскĕнĕн,— тесе йĕнĕччĕ Çеçеппи ун тупăкĕ умĕнче.

— Йăнăшатăн, хĕрĕм,— асăрхаттарнăччĕ çавăн чух ăна ашшĕ.— Апруç пичче нихăçан та мĕскĕн çын пулман. Сан сăмахна илтнĕ пулсан, ах, кӳренетчĕ ĕнтĕ. Вăл, пурнăçа шутсăр юратнăскер, темле йывăр самантра та пуçне усман. Чăн-чăн паттăр этем!

Иртсе кайрĕ Çеçеппи пуçне пĕксе Апруç мучи çурчĕ тĕлĕнчен. Унăн пахчипе вĕçе-вĕçĕн вĕсен килĕ.

Çитрĕ. Калинкке шашулккине шанкăртаттарса уçнă вăхăтра сăнчăрти йытă вĕрсе ячĕ.

— Эй-эй! Шăп, Йысăп! Мана паллаймарăн-и? Эх, эсĕ те çав.

Йытти айăплăн йынăшса ячĕ, хӳрипе пăлтăртаттарать, çамрăк хĕр-хуçа тăрăх сикет.

— Çитĕ, çитĕ йăпăлтатма,— çурăмĕ тăрăх аллипе сăтăркаласа ачашларĕ вăл йытта,— кала, килте кам пур?

Йытти йăлтах пĕлет. «Аçу мастерскойĕнче, анну анчах магазина кайрĕ»,—тейĕччĕ. Çук çав, анчăк тенине çын чĕлхипе калаçма пӳрмен. Ырă сунса хĕлхем сапакан куçĕсемпе хĕр-хуçана сăнать. Акă, хĕр чăматанне алкум вĕçне лартрĕ.

— Йысăп, ман чăматана сыхла,— хушрĕ.— Ют çынна çĕклеттерсе ан яр.

«Хам-хам!» вĕркелерĕ анчăк. «Çывăха ямастăп никама та» тени пулчĕ-тĕр.

Çеçеппи пахчана тухрĕ. Йăрансем çинче сухан ешерсе ӳсет. Татса тутанма илĕртет.

— Юрамасть. Çисен çăвартан йӳçек шăршă кĕрет,— пуплет хĕр.

Сирень чечекĕ типмен-ха. Пырса туратне аврĕ те пилĕк çеçкеллине шыраса тупрĕ. Ăна çăтсан телей пу-

лать имĕш. Шăп та шай çак вăхăтра калинкке шашулкки сас пачĕ. Йытă вĕрмест, эппин, килтисенчен тахăшĕ килчĕ. Чупса кĕчĕ Çеçеппи картишне.

— Э-э, эсĕ-çке,— терĕ амăшĕ.— Мĕн-ма час килмерĕн, хĕрĕм? Кĕтсе ывăнтăм.

— Экзамен тытрăм.

— Магазинта пултăм. Эх, сутуçи! Ытла кăмăллă çамрăк. Санпа иксĕмĕр валли каллех тутăрсем хăварнă.

— Мĕнле тутăрсем?

— Ытарма çук лайăххисем — пурçăн. Тĕсĕ сарă. Кĕтесĕсенче — шултра чечексем.

Çемçен юмахлакаласа, пӳрте кĕчĕç.

Çеçеппи чăматанне урлă сак çине лартрĕ. Уçрĕ те хупăлчи çумĕнчи хутаçран чи хаклă япалине кăларчĕ.

— Аннем, пăх-ха!

Амăшĕн урăх шухăш. Вăл лавккаран илсе килнĕ тутăрсене саркалать.

— Хитре. Çапла-и, хĕрĕм?

— Чим-ха эсĕ. Тыт-ха çакна. Вула. Саламла мана.

— Мĕн ара ку сан? — ирĕксĕр тенĕн хĕрĕ тытса тăракан хытă хуплашкаллă пĕчĕк кĕнекене аллине илчĕ.

— Диплом! Эпĕ ĕнтĕ чăн-чăн маляр.

Куçне хĕсе-хĕсе тинкерчĕ амăшĕ.

— Вулаймастăп,— терĕ вăл.

— Куçлăху ăçта?

— Пĕркун урайне ӳкертĕм те чĕлпĕрех ватса пăрахрăм.

— Ан кулян, çĕннине туянса парăп.

— Ме, аçуна кăтарт,— каялла пачĕ диплома.— Маляра тухрăм терĕн-и-ха?

— Маляра! — мăнаçлăн каларĕ Çеçеппи.

— Ырлап, маттур! Ялта сан валли ĕç май таран, ан ӳркен кăна.

Çеçеппи хăйне Шупашкартах, çурт-йĕрсем юсакан треста, хăварни çинчен пĕлтерчĕ.

— Тархасшăн, кирлĕ мара ан калаç-ха,— сăнĕ сивĕнрех курăнчĕ амăшĕн. Ара, вĕсем пачах урăххине тӳлесе хунă-çке. Шухăшне тӳрех персе ямарĕ, упăшкисĕр ĕçе пăсса хурасран шикленчĕ. Аякран çавăрма пикенчĕ хĕрне: — Кил-çуртăмăр шкул пек аслă. Такама та вырăн çитмелле. Апат-çимĕç ытлăн-çитлĕн. Картишĕнче — ĕне. Хур-кăвакалĕ какалать. Мĕн кирлĕ тата? Хулара çын патĕнче хĕсĕнсе пурăнасси — чĕр-тамăк.

Çапла каласа, амăшĕ хулара пурăнакан ывăлĕн арă-

мĕ ытла кушtаннине систерчĕ. Ку тĕрĕсех, кинĕ патĕнчен вăл макăрмасăр тухман пĕрре те. Чĕлхи ун çапатьхуçать, типĕтсе ямалла хăртать.

— Пиччўсем патĕнче пурăнма ан та ĕмĕтлен, инкўне юраймастăн,— хĕрне ўкĕте кĕртнĕн куçĕсем çуталса йăлтăртатрĕç амăшĕн.

— Ахалех хăратăн. Вĕсене тарăхтармăп. Мана общежитире вырăн пачĕç,— пĕлтерчĕ Çеçеппи.

Килте амăшĕ хĕрне вăрах алă устарса лартмасть.

— Уйран уçла,— хушрĕ ăна амăшĕ.— Каçкўлĕм колхоз пахчине купăста шăварма кайăн ман вырăна.

Унччен те пулмарĕ, пăлтăртан сĕт чўлмекĕсене йăттарса кĕрттерчĕ. Пĕтĕм савăтсенчи йўçнĕ сĕте уйран çўпçине хаплаттарчĕ.

— Ме,— уйран хурсине тыттарчĕ амăшĕ Çеçеппие,— уçла. Эпĕ пахчана тухатăп, лупас хыçĕнчи йăранри кишĕре сайралатмалла. Тем мурне çăра шăтнă.

Тухса кайрĕ амăшĕ.

Кăнтăр хыççăн Çеçеппи амăшĕ вырăнне колхоз пахчине ĕçе тухрĕ. Юханшыв хĕрринче пысăк пахча, таçта çити тăсăлать улăх. Меллĕ вырăн. Хăяр, купăста, помидор тухăçлă пуласса шантарать. Хăвăрт пухăнчĕç пахчаçсем. Вĕсем хушшинче ытларах çамрăк хĕрсем. Ушкăнра Çеçеппин тус-тантăшĕ Васса та пур. Пĕр-пĕрне курманни чылай вăхăт. Халĕ иккĕшĕ савăнăçлăн ыталанчĕç.

Бригадир вăрахчен пуплесе тăма ирĕк парĕ-и? Ĕçе кўлĕнтерчĕ те. Йăран хушшисене тасатмалла.

— Ах, çак çумкурăкне, шăтсах тăрать-çке,— çиллессĕн каларĕ Васса.— Ырă çимĕç çапла вăй илеймест.

Хĕвел анас умĕн пахчаçимĕçсене пĕвери ăшă шывпа шăварчĕç. Çеçеппи киле таврăннă чух ашшĕ çăвăнса тăратчĕ. Сывлăх сунчĕç пĕр-пĕрне.

Сăмах-юмах каçхи апат вăхăтĕнче пуçланчĕ.

— Пирĕн хĕр вĕренсе тухнă,— пĕлтерчĕ амăшĕ çемье пуçлăхне.

— Атте, халĕ ĕнтĕ эпĕ — маляр,— мăнаçлăн пуçне каçăртрĕ Çеçеппи, ашшĕне дипломне тыттарса.

— Аван. Тахçанах кĕтеттĕмĕр-ха,— сăмах хушрĕ ашшĕ диплома çавăркаласа пăхнăçемĕн.

— Анчах вăл киле таврăнмасть, хуланах ĕçлеме юлнă.

— Мĕнле апла? — куçне чарса пăрахрĕ ашшĕ.— Пирĕн, аннўпе иксĕмĕрĕн, шухăш-ĕмĕт пачах урăхла. Сана

эпир килтех усрасшăн. Хамăр ялта пурăнакан пĕр йĕкĕте качча парасшăн.

Шартах сикрĕ Çеçеппи.

— Мĕн эсир? Ĕлĕкхи пек, мана тытса качча парасшăн мар-и таçта? Ялта эпĕ юратакан каччă çук,— терĕ вăл ашшĕне хирĕçлесе.

— Чим-ха эсĕ, ан вĕрилен. Ку çамрăк хамăр ялсем мар. Анчах эсĕ ăна курнă. Ав, пĕрре, хулана пырсан, иксĕмĕр паркра йывăç айĕнчи сак çине ларса калаçнă чух пирĕн ума пырса тăнăччĕ. Ялти лавккаçă, Керӳш ятлă, терĕм.

— Астумастăп-çке. Маннă, тупата,—юриех пуçне сулкаларĕ Çеçеппи, лешĕ ăна нимĕн чухлĕ те килĕшмен пирки.

— Çӳçĕ епле кăтра... Сисрĕм эсĕ ăна юратнине.

— Юратнине? — шутсăрах тĕлĕнчĕ Çеçеппи ашшĕ çапла каланинчен.— Эсĕ йăнăшнă, атте.

— Мĕншĕн, эппин, Керӳш çине пăхса йăл-йăл култăн?

— Путишле пек туйăнчĕ ун сăн-сăпачĕ. Çавă çеç. Хитре мар вăл.

— Хитрине турилкке çине хумалла мар,— тутине пăркаларĕ амăшĕ.— Хитре упăшка вăл, хĕрĕм, ăшçунтармăш. Ку çамрăкăн кăмăлĕ ырă. Лавккана мĕн лайăххи килсен, ялан пире вăрттăн тыттарса ярать. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа пулăсăр пурăнман. Паçăр илсе килнĕ тутăрсене те лавкка çӳлĕкĕ çинче кураймăн. Çук, çук, ун пек йĕкĕт тек тупаймăпăр.

— Мĕн каласси пур, Керӳш алла лармалли çын. Килĕшсем, хĕрĕм,— ашшĕн куçĕ тилмĕрӳллĕн салхуланчĕ.— Эпир унпа сан пирки калаçнă. Ыран килĕ-ха вăл пирĕн пата. Туй хыççăн сире уйăрса кăларăпăр.

— Уйăрса? Ăçта? — кăсăкланчĕ Çеçеппи.

— Апруç мучи килне. Вăл вилес умĕн çуртне мана пиллесе хăварчĕ. Уйрăмах хăй килĕнче сана усрасшăн пуплерĕ. «Юратнă çын пурăнсан, Мерти,— чунне уçса пачĕ вăл ун чух,—мана та килсе çӳреме кăмăллă пулĕ». Вилнĕ çын пилне йышăнмалла ĕнтĕ. Унсăрăн тем килсе тухас пур.

«Сирĕн пек пултăр, эппин, атте-анне»,— хĕрĕ çапла каласса илтесшĕнччĕ ватăсем. Анчах шăп çак вăхăтра пӳрте Васса кĕрсе тăчĕ. Вăл Çеçеппие вăйăйа илсе тухма килнĕ-мĕн. Ашшĕпе амăшĕ хĕрачине тытса чарма хăяймарĕç. Ĕç-пуç вĕçне çитмесĕрех татăлчĕ.

Қăмăлсăр сăмах-юмаха пула нихăшĕ те апата тĕкĕнмерĕ. Çемье сĕтел хушшинчен тухрĕ.

3

Мерти, арăмĕ шуç витре илсе ĕне сума тухсан, пилĕк тăсас тесе, диван çине выртрĕ.

Тепĕр чух çавнашкал вăхăтра кăтăш та пулаканччĕ. Паян шухăшсем капланса килчĕç, тытăнчĕç иртнисем çулăхма. Хĕрне качча парса Апруç мучи килне куçарас ĕмĕт çĕклентернĕрен путех куç умне тӳрех вăл килсе тухрĕ.

«Вилчĕ çын,— мăкăртатрĕ Мерти.— Шел ăна. Қаланă пек, этем ĕмĕр пурăнмасть. Тен, асапне мăй таран тӳснĕрен хĕрхенес килет ăна? Хăшĕ-пĕри терт курма çеç çуралать тейĕн, нуша тыткăнĕнчен пачах хăтăлаймасть, анчах та вăл хăйне мĕскĕн çын вырăнне хуман. Апруç пичче те çапла ирттерчĕ пурнăçне. Ăна паянхи çамрăксем кăна мучи тесе чĕннĕ. Тӳрĕ кăмăллă çынччĕ. Пирĕн патăмăртан тухма пĕлмен вăл. Атте юратнă ăна, вăл та çавах. Икĕ çемье шăкăл-шăкăл калаçса пĕр-пĕринпе хутшăнса тăнă. Малтанах йăмăкĕпе иккĕшех пурăннă вĕсем. Тăлăх ӳснĕрен хăйсем ĕçлесе хăйсем тăраннă. Апруçăн алли ылтăн тетчĕç ун пирки. Эпĕ, пĕчĕккĕскер, ăнланман ялйыш сăмахне. Унпа тĕл пулсан, аллисене тĕмсĕлсе сăнаттăм. Анчах ытти çынсенчен уйрăммине шыраса тупаймастăм. Ылтăн тенине курнă эпĕ. Пускил папайĕ кăтартатчĕ. Вăл хĕрĕнкĕ самантсенче ача-пăчана хăй тавра пухма юрататчĕ. Вара пӳрне вĕçне хĕстернĕ сап-сарă пĕчĕк укçана çавăркаласа çапла мухтанатчĕ: «Атьсемĕр, курăр, ылтăн акă мĕнле вăл!» Укçи хĕвел шевли пек йăл-ял çутала-çутала илетчĕ.

— Эх, ăссăр чĕрĕп те иккен эсĕ,— кулчĕ манран атте, эпĕ ăна-кăна ним те чухламаншăн.—Апруç—ăстаçă. Вăл тума пĕлмен ĕç çук тĕнчере. Çавăнпа ылтăн алăллă теççĕ ăна. Пăх, пирĕн пӳрт ăшчиккинчех вăл ăсталанă япала мĕн чухлĕ!

Чăнахах, сĕтел-пукан, вăрăм саксем—йăлтах вăл туса илсе килсе лартнă. Астăватăп-ха: пĕррехинче Апруç пичче илемлĕ шкап йăтса кĕчĕ. Ăна тĕпелти стена çумне çакрĕ. Хăмисем таснă-лартнă чĕнтĕр, чечеклесе касса капăрлатнă. Анне унта кашăксем, чашăк-тирĕксем хурса тухрĕ.

Кӳршĕсем те, пирĕн килтисем пекех, Апруç пичче тунă каткасенче купăста тăварлатчĕç, панулми йӳçĕтетчĕç. Вăл нихăçан та кĕрĕк арки йăвалаca вăхăтне ирттермен. Колхозăн вити-картисене те юсаса тăнă.

Килĕнче Апруç пиччен чăлан пурччĕ. Çавăнта каскалатчĕ. Мĕнле кăна ĕç хатĕрĕ çукчĕ-ши! Çав чăлана кĕрсен куçпуç чарăлса каятчĕ ман. Савалама вĕрентнĕччĕ Апруç пичче мана. Тепле катрашкаллă хăма та çатма евĕр якалатчĕ.

— Кай, ачана ан асаплантар. Ав, епле чăм-шыва ӳкнĕ,— ятлатчĕ мăшăрĕ Апруç пиччене, мана хĕрхенсе. Вĕсен ача-пăча çукчĕ. Эпĕ пырсан Несихва инке (Апруç пичче мăшăрĕ ĕнтĕ) каçсах каятчĕ маншăн.— Мерти, атя пӳрте, çăмарта хăпартни çитерем.

Эпĕ хирĕçлĕп-и?

Хĕлле, колхозра ĕç сахал вăхăтра, Апруç пичче Канашри вакунсем юсакан завода ĕçлеме кайса килетчĕ. Канмалли кунсенче кучченеç илсе таврăнатчĕ—пĕремĕк. Мĕншĕн уйрăмах пĕремĕк? Çапса пăрахсан та ăнланмастăп. Килĕштернĕ çимĕç-тĕр. Мана сăйламасăр хăварман. Ятарласа чĕнетчĕ хăй патне. Сĕтел хушшине ларăттăмăр та тĕшĕреттĕмĕр кăна пĕремĕке.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çул. Пĕр шăрăх вырсарникун яла питĕ хăрушла хыпар çитрĕ: вăрçă тухнă. Нимĕç фашисчĕсем тапăнса кĕнĕ Совет çĕрĕ çине. Ял халăхне вут-çулăм пек хуйхă хыпса илчĕ. Апруç пичче — вăйпитти арçын (пирĕн аттерен çич-сакăр çул кĕçĕн тетчĕç) — вăрçа кайма чи малтан ăна повестка панă. Аттепе анне хăнана чĕнчĕç. Вăл эрех ĕçмен. Ун чух черкке çĕклерĕ: «Ĕçер тĕппипе, ырă тусăм, тен, юлашки хут черкке шаккатпăр. Куншăн вилмĕпĕр!» Шăнк! ĕçрĕ вăл.

Пĕтĕм ял пуçтарăнчĕ Апруç пиччене ăсатма. Ытлашши макăракансемех пулмарĕç. Арăмĕ те куçне йĕпетмерĕ. Ара, вăрçă темиçе çула тăсăлать тесе никам та шутламан. «Эй, Совет Çарĕ часах çапса хуçать нимĕçе. Вăрçи эрнене те пымĕ, чарăнать!» — тетчĕç. Пĕр эрне, ик эрне, виççĕ, унтан уйăхсем те иртрĕç, вăрçă вут-хĕмĕ аснăçем асрĕ. Ялти пĕтĕм арçынна фронта ăсатрĕç. Пирĕн аттен те ят тухрĕ.. Повестка килсе тыттарчĕç. Çак кун Несихва инке çыру илчĕ. Упăшки, Апруç, таçта аякри хулара госпитальте выртать. Вăл çав тери йывăр сусăрланнă имĕш.

Астăватăп, атте килтен тухса каяс умĕн йăмăкпа

иксӗмӗре пӗрер тенкӗ укҫа парнелерӗ. Вара йӑмӑкӑма тытса ҫӳле ҫӗклерӗ: «Ан ман аҫуна, хӗрӗм, чипер ӳс, телейлӗ пул. Эсӗ, Мерти, ҫемье пуҫлӑхӗ ӗнтӗ. Пулӑш аннӳне»,— терӗ. Кайсан икӗ эрнерен аттерен пӗрремӗш ҫыру илтӗмӗр. «Вӗренетпӗр»,—тенӗ, иккӗмӗш ҫырура фронта хӑҫан ӑсатассине пӗлтерчӗ. Канаш витӗр илсе каяҫҫӗ иккен. Анне кукӑль-хуплу пӗҫерчӗ. Кӑтартнӑ кун Канаш хулине кайрӑмӑр лавпа. Ҫуркунне. Ҫанталӑк ӑшӑ. Йывӑҫ-курӑк ешерет.

Станцӑна илӗм-тилӗмпех ҫитрӗмӗр. Ҫар эшелонӗ иртсе кайман-ши тесе, анне хыпса ҫунать. Ыйтмалли ҫук. Никам та ним те пӗлмест. Кӗтсен-кӗтсен, таварсем турттаракан вакунсем кӑкарнӑ пуйӑс хашлатса ҫитрӗ. Вакунсен алӑкӗсем уҫӑ, унта халӑх лӑк-тулли. Пӗри те салтак тумӗпе мар, апла пулин те вӗсене вӑрҫа ӑсатнине пӗлтӗмӗр.

— Мерти ывӑлӑм, витӗр пӑх, унсӑрӑн аҫу иртсе кайнине те курмӑпӑр,— пӑшӑрханать анне. Пуйӑс хӑвӑртлӑхне майӗпен чакарса пырать. Халӗ ӗнтӗ палласа илме те ҫӑмӑл. Чӑнах та, сасартӑк эпӗ аттене асӑрхарӑм. Вӑл вакунран урине ҫӗрелле уснӑ та лара парать. Хӑй килтен мӗнле тумпа кайнӑ, ҫаплипех: уринче — ҫӑпата, ҫийӗнче — тӑла пиншак.

— Атте! Атте! — кӑшкӑрса ятӑм. Тӗлкӗштертӗм вакун хыҫӗнчен. Аннене: «Ан юл манран, ав атте!» — тетӗп.

Ман сасса илтсе атте те вакунран сиксе анчӗ. Ҫынсене ҫапӑна-ҫапӑна пире хирӗҫ чупать вӑл. Ҫитсе ыталарӗ пире.

— Мӗнле пурӑнатӑр? — тет.

Анне калаҫаймасть. Ӳлесе йӗрсе ячӗ. Кукӑль-хуплу ҫыхнӑ тутӑра хам тыттартӑм аттене. Пуйӑс кӑшкӑртрӗ те. Эппин, аттен каймалла.

— Ах, мӗнле сыпӑнтарӑпӑр пурнӑҫа сансӑр?—ҫаплах ӗсӗклет анне.

— Мӗнле те пулин тӳсӗр, пурӑнма тӑрӑшӑр. Мерти ҫине таян,— сӗнет атте.— Вӑл ав епле ӳснӗ.

Ҫак вӑхӑтра эпӗ хама чӑн-чӑн ҫитӗннӗ ҫын пек туйрӑм, ара, текех пӗчӗккӗ мар, вуниккӗ тултарса вунвиҫҫе пуснӑ-ҫке. Тархасшӑн, таянтӑр анне. Таянма мар, эпӗ ӑна паянах киле ҫитиччен ҫӗклесе кайӑп.

— Тепӗр ик-виҫ ҫултан ҫын шутне кӗрӗ те,—хурлӑхлӑн мӑкӑртатать анне, мана ҫурӑмран ҫупӑрласа.

Эпӗ хирӗҫлесе тавлашасшӑнччӗ, анчах ним кӗтмен

çёртен атте пуйăсĕ карăнса, хутланса илчĕ, вакунсем хушшинчи пашалу пек çаврака тимĕрĕсем пĕр-пĕринпе перĕнсе чăнк-чăнк! туса сас пачĕç. Унтан кустăрмисем хускалчĕç, хыçалтан такам тĕртсе янăн кăлтăртатрĕç малалла. Атте тек ним калама ĕлкĕреймерĕ, алне çеç сулчĕ. Хыпаланса черетпе пире чуптурĕ те хăйĕн вакунне хуса çитесшĕн чупа пачĕ. Эпир те унпа пĕрле ларса каясла тĕлкĕштерсе пыратпăр. Çук, хуса çитеймерĕмĕр.

— Сывă пулăр! — илтрĕмĕр атте сассине.

Уйăрса кайрĕ пирĕнтен юратнă аттене нумай вакун кăкарнă пуйăс. Юлашки курнăçу пулчĕ.

Икĕ эрне иртсен çыру илтĕмĕр. Салтак тумĕ тăхăнтартни, çапăçăва кĕме хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕ. Кун хыççăн асаплă кунсем пуçланчĕç. Кунĕн-çĕрĕн çыру кĕтетпĕр. Хăш-пĕрисем хурлăхлă хыпарсем илчĕç. Анаткасри Сантăркка пичче фронтран алăсăр таврăнчĕ. Анне пуçĕпех хуйăха путрĕ, кунĕн-çĕрĕн йĕрет. Темĕн чухлĕ куççуль тăксан та, çыру та, аттене хăйне те кĕтсе илеймерĕмĕр.

Тул çутăлманччĕ-ха. Йӳçек шăршă кăларса мĕлтлетекен чĕпкуçне те сӳнтермен. Анне çĕрулми нимĕрĕ пĕçернĕ те кăмака умĕнче тем кăштăртатать. Эпĕ хыпалансах ура сыратăп. Çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Несихва инке кĕрсе тăчĕ.

— Ан ятласамăр ĕнтĕ илĕм-тилĕмпех çĕмĕрттерсе çӳренĕшĕн,— терĕ вăл пире сывлăх суннă май.

— Ай-уй, кирлĕ мара ан пупле-ха,— тĕпелелле иртме чĕнчĕ ăна анне.— Тем ĕçпеччĕ?

— Çĕркаç почтальон çыру парса хăварчĕ. Çырăвне вырăсла çырнă. Мертие вулаттарасшăнччĕ. Çавăнпа вăл ĕçе тухса кайиччен килес терĕм.

— Вырăсла тетĕн-и? Айтурах! — хыпăнса ӳкрĕ анне, ырă мара сиснĕн. Мана хăй хăвăртрах вулама хистет. Хамăн та чун кӳ-ӳ! турĕ. Сасартăк хăрушла хыпар пĕлтернĕ пулсан? Чĕпкуç çывăхне тăтăм та хут листине сартăм. Тӳрех саспа вулама шутламарăм. Куçăмсем йĕрке тăрăх чупрĕç. Турра шĕкĕр. Чипер хыпарах-мĕн. Апруç пичче фронтра йывăр аманнă хыççăн нумай хушă выртнă госпитальтен начальник çырать.

— Савăнăр! Апруç пиччене киле яраççĕ!— терĕм.

— Айтурах, чăнахах-и?

Хыпăнса ӳкрĕç ман умра тăракан Несихва инкепе анне.

Ĕçе каймалли çинчен мансах шакăлтатрĕç вара пĕр кана. Мĕнле кĕтсе илмелле-ши вăрçă салтакне? Паллах, ăна килте чăн-чăн çăтмах туса памалла. Васкасах салат тупса сăра юхтарма тивет. Тата чи ватă чăххине, çăмарта тума пăрахнине, пусас. Килнĕ кун хăнасем пухмалла. Пĕччен кулянтарса лартмалла мар çынна.

Çĕнĕ хыпар ял тăрăх питĕ хăвăрт сарăлчĕ. Апруç пирки тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлесшĕннисем Несихва патне кĕрекĕре тухрĕç. Пушă алăпа мар, кучченеçпе пычĕç. Пĕрисем пĕрер савук çăнăх е салат, теприсем ик-виç çăмарта парса хăварчĕç.

— Эх, телейлĕ эсĕ, Несихва!

— Ман упăшка та çапла килинччĕ...— ăмсанса пуплерĕç уйрăмах фронтри упăшкисенчен тахçанах çыру илмен хĕрарăмсем.

Несихва инке Канаша упăшкине илме кайнă кун эпир, ватти-вĕтти, колхоз кĕлечĕсем умĕнче акмалли вăрлăхлăх тырра сăвăраттăмăр. Бригадир пуç çĕклеме памасть —васкатать. Пурин валли те кунта ĕç май таран. Пĕчĕккисем те вăрлăх тултармалли миххе саркаласа тытса тăраççĕ.

Хĕрсе ĕçленĕ чух тахăшĕ кăшкăрса ячĕ:

— Ав, килеççĕ, килеççĕ!

Чăнах та, Хăмсар тăвайккинчен лав анать-мĕн. Тӳрех палласа илтĕмĕр хамăр колхоз лашине. Нумай та вăхăт иртмерĕ, лав колхоз кĕлечĕсем умне çитрĕ.

— Тăрр! — чарчĕ утне Несихва инке. Çынсем капăрах çавăрса илчĕç вĕсене. Урапа çинче Апруç пичче ларать. Унăн алли те, ури те тĕрĕс-тĕкелех. Вăл пилоткине хыврĕ. Тур çырлах! Апруç пичче—кукша! Пĕр çӳç пĕрчи юлман. Сăнĕ, çаралнă пуçĕ, тăртаннă пит-куçĕ — пĕртте ĕлĕкхи пек мар. Паллама çук ăна: пачах ют, сарă хăма çине кăмрăкпа чĕркелесе ӳкернĕ портрет.

Çынсем пĕри те тепри Апруç пиччене савăнăçлăн саламлаççĕ, алă тытсах. Хăйсем хĕпĕртӳллĕн пуплеççĕ:

— Ентĕ тăван тавралăх техĕмĕпе хăвăрт юсанăн.

— Ашă сĕт ĕçтерĕпĕр, услам çу çитерĕпĕр, çăмарта...

Фронтра сусăрланнă этем сас кăлараймасть. Куçĕсем ун сапаланчăк.

— Халăх, кaçарăр ăна. Пачах калаçаймасть вăл,— ӳлесе макăрса ячĕ Несихва инке. Упăшки арăмĕ енне çиллес пăхса илчĕ. Тем тесен те, Несихва куççуль юхтарни килĕшмерĕ ăна.

Акă Апруç пичче хăлаçланкаларĕ. Анлантăмăр: вăл

урапа ҫинчен анасшӑн. Хӗрарӑмсем (ушкӑнта вӑйпитти арҫын ҫук, эпир ҫеҫ, вун-вуник ҫулхи арҫын ачасем темиҫен) хул айӗнчен ярса тытрӗҫ. Эпир те пулӑшатпӑр вӗсене. Аран-аран ура ҫине тӑратрӑмӑр хайхискерне. Темле, ытла мелсӗррӗн пускалам пек турӗ. Сӑн-пичӗ хӑйӗн ӑшпиллӗ. Куҫӗсем йӑлтӑртаткаларӗҫ. Унччен те пулмарӗ, Апруҫ пичче, тытамак тытнӑн, хӑрушла чӗтреме пуҫларӗ. Сиссе те юлаймарӑмӑр, касса янӑ юман евӗр, ҫӗре тӳп! кайса ӳкрӗ. Алли-ури ҫапкаланать. Ӑна никам та пулӑшу пама пӗлмест. Хӗрарӑмсем сехӗрленсе ӳкрӗҫ. Тытӑнчӗҫ татӑлса макӑрма. Вӑрҫӑ тени ҫынна кун пек те сусӑрлантарать иккен. Халиччен вӗсем фронтран алсӑр е урасӑр таврӑннине ҫеҫ курнӑ. Ӗлӗк те ялта йывӑҫ уралла арҫынсем ҫӳретчӗҫ. Вӗсем е сылтӑм, е сулахай урине империализм вӑрҫинче ҫухатнӑ.

— Мӗнле япала ку? Кӗлетки хӑйӗн чип-чиперех. Суранӗ те, унтан юн сӑрхӑнни те курӑнмасть,— тӗлӗнеҫҫӗ хӗрарӑмсем.

— Канаш станцинче госпитальтен ӑсатакан тухтӑртан Апруҫа ӑҫтан амантнине ыйтрӑм,— сӑмах хушрӗ Несихва инке, куҫне тутӑр хӗррипе шӑлкаласа.— «Контузи ун»,—терӗ. Темле мурскер вӑл? Тепле кӑрал хумӗ ӑна сывлӑша сирпӗнтернӗ пулать, вара ҫӗр айне пӗтӗрсе чикнӗ. Чӗлхи те ҫухалнӑ. Ҫав тери ыррӑн пӑхма хушрӗ. Майӗпен юсанма пултарать имӗш.

— Ачана пӑхнӑ пек пӑхмалла ӗнтӗ.

— Эпӗ ӳркенсе тӑмӑп,— Несихва халӑх умӗнче сӑмах панӑн каларӗ.

Унтан хӗрарӑмсем вӑрҫӑ пуҫаракан ҫӗлене ылханма тытӑнчӗҫ.

— Тӗп пултӑр вӑл!

— Хӑҫанччен алхасӗ ку тамӑк хуранӗ?

— Ҫав хурана эсрелӗ хӑй кӗрсе ӳкинччӗ.

— Ӗнчен ман упӑшка та ҫапла таврӑнсан? Мӗн курас?

Эпир Апруҫ пиччене тирпейлӗн тыткаласа урапа ҫине хӑпартса вырттартӑмӑр. Вара Несихва инке утне тапратрӗ. Эпир те хамӑн чи ҫывӑх туспа, Виталипе, Апруҫ пиччене ӑсатма кайрӑмӑр. Ним чӗнмесӗр, пуҫа усса пытӑмӑр урапа хыҫҫӑн. Килне ҫитсен, пӳрте илсе кӗнӗ чух, сусӑрланнӑ салтак урине алкум картлашкинчен ҫаклатса ыраттарасран шутсӑр асӑрхантӑмӑр. Урай хӑмисем пусмассерен хуҫине киле таврӑннӑ ятпа саламланӑн чӗрик-чӗрик! чӗриклетеҫҫӗ.

Апруç пичче мана палларĕ пулĕ тетĕп, унсăрăн вăл итлемен аллине ман пуç çине хумĕччĕ. Куншăн эпĕ савăнтăм чунтан.

Çураки пуçланчĕ. Пĕрремĕш хут акана аттесĕр тухрăм. Атте çеç мар, арçынсем пачах çук, хĕрарăмсем те тата эпир — çамрăк вĕт-шакăр. Пирĕнсĕр, паллах, йывăр килĕччĕ хĕрарăмсене. Эпир вăрлăх миххисене темиçен тытса урапа çине çавăрса хуратпăр. Сухапуçне тытакансем те тупăнчĕç, сӳре сӳрелесси вара пирĕн вăй çитнĕ ĕç пулчĕ. Чылая тăсăлчĕ çурхи ака. Кал-кал чупмасть ĕç. Çĕрулми лартрăмăр. Кун хыççăн та, ĕлĕкхи пек, канлĕ вăхăт çитмерĕ. Колхоз çынсене вăрман касма ячĕ. Лаша пуçĕнче каллех эпир — çамрăк ачасем. Метр тăршшĕ татнă йывăççене разъезда турттартăмăр.

Вăрмантан киле таврăннă çĕре ĕнтĕ ыраш пиççе çитрĕ. Ĕççи пуçланчĕ. Вырма тухрăмăр. Кунне-çĕрне уямасть халăх. Никам та нăйкăшмасть. Чи çывăх çыннисем фронтра юн тăкса тăшмана хирĕç çапăçнине асра тытса, тăрăнса ӳкесле ĕçлеççĕ колхозниксем. Унтан патшалăха тырă леçмелли самант килсе çитрĕ. Лаша пуçĕнче каллех эпир — çамрăк ачасем. Çапла иккĕмĕш вăрçă çулĕ иртрĕ. Темле хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче те Апруç пичче патне е эпĕ, е анне кĕрсе тухаттăмăр. Мĕнле ĕç туни çинчен каласа параттăм ăна. Майĕпен самайланни палăрма тытăнчĕ. Халĕ малтанхи пек çине те çине чĕтретмест. Пурпĕрех чĕлхи çук-ха ун, пĕр сăмах та кала пĕлмест. Алли чип-чиперех тыткалать. Пĕррехинче вăл çырам пек туса кăтартрĕ. Хăлхи илтет хăйĕн.

— Сана, Апруç пичче, хутпа кăранташ кирлĕ-и? — терĕм. Вăл йăл кулчĕ, пуçне сĕлтрĕ. Хăйне ăнланнăшăн кăмăллă пулчĕ ĕнтĕ. Киле чупса кайса хутпа кăранташ илсе килтĕм. Вара çырма тытăнчĕ. Чылай вăхăт муталанчĕ. Шăрçа евĕр илемлĕ мар ĕнтĕ çырăннă саспаллисем. Çапах та эпĕ вуларăм. Апруç пичче ĕçе кӳлĕнесшĕн иккен. Ферма лашисем валли ут хатĕрĕсем юсасшăн. Ман е бригадира, е колхоз председательне (фронтран сылтăм алăсăр таврăннăскере) пĕлтермелле.

Эпĕ питĕ хĕпĕртесе тухрăм Апруç пичче патĕнчен. Ара, халех хам ялан колхоз ĕçĕнче çӳрекен Мерченĕн хатĕрĕсене илсе килетĕп. Ах, юрататтăм ăна, ытла ăслă лашаччĕ, тупата. Сӳсменĕ çĕтĕк, мăйне шăйăрать, ĕнерчĕкĕ çумĕнчи кĕççи çӳхелнĕ. Тӳсет мĕскĕн. Юсама пĕлекенсем çук. Уйкасри ватă асатте аппаланатчĕ, вăл та пулин çĕре кĕчĕ.

Мерчен ут хатӗрӗсене ҫӗклерӗм те таплаттартӑм Апруҫ пичче патне.

«Ку хӑш лашан?»—ҫырса пачӗ вӑл. Манӑн тус таврашне пӗлсен, кашни япалине тыткаласа тимлӗн тӗсерӗ. Хӑй ҫаплах пуҫне суллать. Сӳсмен пӑявӗ темиҫе тӗлтен те татӑлнӑччӗ, кутлӑх кантрисем те лӗнчӗркеленнӗ. «Сӳсменпе йӗнерчӗк патне ыран ирхине кӗр. Кӑнтӑрла кутлӑхне юсап, сӳсмен кантрине ҫӗнӗрен явап»,— тесе ҫырса пачӗ. Ҫак каҫ вӑл ҫӗрӗпе ҫывӑрман, сӳсменпе йӗнерчӗке юсанӑ.

Колхоз чӑннипех кӳлчӗ вара ӑна. Кунӗн-ҫӗрӗн хӑмӑт-пӑяв юсать, ҫӗнӗрен ӑсталать. Лашасем те хаваслӑн чупма-утма тытӑнчӗҫ.

Пурна киле Апруҫ пичче туяпа ҫӳрекен пулчӗ. Урама та тухать, колхоз правленине те ҫитсе килет. Лӑпкӑлӑхӗпе палӑрса тӑнӑ ҫын темшӗн шӑртланчӗ. Хӑйне килӗшмен сӑмах калакана яра парать туйипе. Ҫынсем хӑрама тытӑнчӗҫ унран. Анчах мана юрататчӗ вӑл, нихӑҫан та тивместчӗ. Атте пирки хут ҫырса ыйтса пӗлетчӗ. Нимле хыпар та ҫук, тетӗп.

Кӗркунне, тырпул пухса кӗртсен, октябрь праҫникӗ ҫитрӗ. Колхоз ӗҫкӗ турӗ. Ватӑсем колхоз правленинче, эпир, ҫамрӑксем (вунтӑват-вунпилӗк ҫула ҫитнисем), Маркка карчӑк (хӗлле хӗрсем улах та ларатчӗҫ кунта) патне пухӑнтӑмӑр. Ҫамрӑк ҫамрӑках ҫав, хаваслӑ: юрлатпӑр, ташлатпӑр. Сасартӑк ман йӑмӑк. алӑк уҫса кӗчӗ.

— Апруҫ пичче калаҫать! — кӑшкӑрса ячӗ вӑл.

— Ун чӗлхи уҫӑлнӑ-и?! — тетӗп.

— Калаҫать ара! Такама ҫилленнӗ те усал сӑмах персе ячӗ. Ҫынсем питӗ тӗлӗнеҫҫӗ.

Эпир Виталий юлташпа тухса ыткӑнтӑмӑр. Колхоз правленине, ваттисем патне, ваштах персе ҫитрӗмӗр. Пире хирӗҫ Улькка инке макӑрса тухать.

— Мӗншӗн йӗрен, Улькка инке? — ыйтатӑп.

— Ара, ухмаххи туйипе пуҫ урлӑ яра пачӗ. Нимех те каламарӑм. «Эсӗ, Апруҫ, телейлӗ-ха, киле таврӑннӑ, пирӗн таҫти уйра выртса юлнӑ»,—терӗм ҫеҫ. Килӗшмерӗ йӗксӗке.

Йӑпатса ним те калама пӗлмерӗмӗр Улькка инкене. Хыпаланса кӗтӗмӗр пӳрте, Апруҫ пичче патне утса пытӑмӑр. Вӑл ҫийӗнчех асӑрхарӗ мана.

— Ме-ммерти! — терӗ вӑл, мана ыталаса.

— Пӗр черкке эрех ӗҫрӗ те, чӗлхи уҫӑлчӗ ҫыннӑн...

— Малтан ҫăварĕнчен тем тухса ӳкрĕ ун...— каласа параҫҫĕ хĕрарăмсем.

— Апруҫ пичче, киле ăсатмалла мар-и сана? — ыйтатăп.

— А-ăс-ăсат.

Юлташпа эпир иксĕмĕр ăна хул хушшинчен тытрăмăр та ҫавăтса сăй сĕтелĕ хушшинчен илсе тухрăмăр.

Ҫапла ҫĕнĕрен ача пек пуплеме тытăнчĕ вăрҫă сусăрĕ. Анчах тытăнчăкла калаҫни яланлăхах юлчĕ. Ĕмĕрĕ вăрăма тăсăлчĕ Апруҫ пиччен. Ҫĕнтерӳ кунне пĕрле кĕтсе илтĕмĕр. Пирĕн атте таврăнаймарĕ, вăл Тăван ҫĕршыва хӳтĕлесе ҫапăҫу хирĕнче пуҫне хунă.

Эпĕ ҫитĕнтĕм. Ҫара кайрăм. Таврăнсан авлантăм, ача-пăча ҫуралчĕ. Пĕччен тăрса юлнă Апруҫ пиччене атте вырăнне хурса пăхрăмăр. Пуринчен ытла Ҫеҫеппие килĕштеретчĕ вăл. Хăйне япăх туйма тытăнсан, мана ял Советне илсе кайрĕ. «Вăйăм-тĕрекĕм тăм савăт пек типсе ҫитрĕ. Лере карчăкăм кĕтет. Эпĕ пĕтĕм пурлăха, ҫурт-йĕре Мертие парнелесе хăваратăп. Ҫакăн ҫинчен хут туса парăр»,— ăнлантарчĕ хайхискер ял Советĕнче ĕҫлекенсене. Унтан тухсан вăл ҫапла kаларĕ: «Ҫеҫеппие качча парса ман кил-ҫурта уйăрса кăлар. Юратнă ачасем патне мана та килсе ҫӳреме кăмăллă пулĕ». Месерле ялтан кам килсе ҫӳретĕр-ши? Аптрамалла ватă ҫынсемпе.

Апруҫ пиллесе хăварнине пурнăҫлама вăхăт ҫитрĕ. Ҫеҫеппи хĕр ретне тăчĕ. Професси пур—маляр. Мăшăр пулмалли каччă та тупăнчĕ. Ҫерӳш — маттур йĕкĕт. Тына пăру парăпăр. Каярахпа ҫĕнĕ ҫурт лартчăр. Вĕсем ҫамрăк — вăй ҫителĕклĕ. Хамăр пулăшатпăр.

Ҫиленĕҫлĕ ĕмĕтпе ыйăха путрĕ Мерти.

4

Ҫеҫеппи ялĕнчи ҫамрăксем ҫу кунĕнче клуба пухăнса тĕпĕртетмеҫҫĕ: мĕн-ма пăчăхмалла, тет, кĕр-хĕлĕн тусан ҫăтни те ҫитет. Халь ҫеремлĕ урамра, кăтра хурăн айĕнче уҫă сывлăш чуна лăпкать, илĕртсе кăчăк туртать.

Хĕрсем паҫăрах пухăннă. Анчах вăйă картине тăма Вассана кĕтеҫҫĕ: ара, унăн сасси уҫă, яланах вăл пуҫласа парать юрă.

Акă Васса ҫитрĕ. Пĕччен мар вăл — Ҫеҫеппипе.

— Э-э, эсĕ кĕçĕр вăййа хăнапа килнĕ-çке,— терĕç Вассана тантăшĕсем.

— Хамăр ял хĕрĕ сирĕншĕн хăна-и? Айтурах! — тĕлĕнчĕ Васса.

— Тĕрĕс, тĕрĕс! Эпĕ хăна! Манпа выльăр! Савăнтарăр мана! — ихĕлтетрĕ Çеçеппи — Юрĕ-и?

— Килĕшетпĕр!

— Эппин, пурне те сире хĕрӳллĕ салам!

Пĕр лутрарах хĕр Çеçеппи патне чупса пычĕ те ăна çурăмран çăтти-çат! çапкаласа çапла такмакларĕ:

— Салам, салам, Çеçеппи! Эрне каçчен качча кай!

— Каччă тупсан каятăп. Туя пымасăр ан юлăр!

Çак перкелешӳ пурне те ахăлтаттарчĕ.

— Атьăр, тăрар карталанса! — чĕнчĕ çав лутра хĕрех.

Пысăк чан кăшăлĕ евĕр çавракаланса ĕретленчĕç те пĕр-пĕрин аллинчен тытса майĕпен утрĕç. Çеçеппи Васса хыçĕнче ярăнса утать.

— Тытăн янăраттарма! — хушрĕç Вассана.

Ырă кăмăллă хĕр тилмĕрттермĕ ĕнтĕ. Пуçларĕ юррине:

Юрла кăна, юрла, теетĕр,
Юррăм юман сунтăх тĕпĕнче.

Унтан, вĕтĕ чулсем çийĕн кĕмĕл евĕр чăнкăртатса чупакан юханшывсем пĕр пĕтĕм пĕрлешнĕн, хĕрсен çинçе те хитре сассисем уççăн та хăватлăн ялăн тепĕр вĕçне çити ян та ян кайрĕç:

Юрлăттăм, юрлăттăм, ай, юррăм çук,
Юррăм юман сунтăх тĕпĕнче.

Турикасра балалайка пăнтăртатать. Эппин, вăййа килеççĕ каччăсем.

Хĕрсен юрри те урăхланчĕ:

Кĕмĕл çĕрĕ, ахах куç,
Çавăрăнать пӳрне майĕпе.
Ай-хай пуçăм — çамрăк пуç,
Çавăрăнать хĕвел майĕпе.
Ах, кăкăрçăм, çамрăк кăкăр,
Çавăрăнать балалайка майĕпе.

Йĕкĕтсем çитсен, вăйă картинчи хĕрсен йĕс шăнкăрав пек сассисем шăпланчĕç. Ара, вăйăç ларчĕ, ав, каска пуканĕ çине. Туртса карăнтарчĕ вăл хĕлĕхсене! Яш-кĕрĕм тытăнчĕ ташша илтерме. Пĕрерĕн е икшерĕн авкаланаççĕ вăйăç умĕнче.

— Васса, эпир санпа ташлăпăр. Юрĕ-и? — терĕ Çеçеппи.

Васса шăп та шай çак вăхăтра Керӳша курчĕ. Паçăр, пахчаран киле таврăннă чух, ун пирки Çеçеппи пупленине аса илчĕ те патлаттарса хучĕ:

— Ненай, иккĕн тан ташлайрăпăр-и? Ирĕк парĕ-и?

— Мĕн кирлĕ мара калаçан эсĕ?

— Курмастăн-и, ара, леш, сан пата çыру çырни, продавец, вăййа çитрĕ-иç,— кулкаласа илчĕ Васса.— Ав, пуçне хур аçи пек ун-кун пăркалать кăна. Тем тесен те, сана шырать.

— Вăл ĕнтĕ ялта хĕр тупнах-тăр? — ытахальтен тĕпченçи турĕ Çеçеппи.

— Пакăлтататчĕç-ха...

Васса ним те чухлаймасть-тĕр-ха Çеçеппин ашшĕпе амăшĕ хĕрĕ енне мĕн кустарнине.

Килĕшсе, алла-аллăн çавтăнса, вăйăç умне тухрĕç Вассапа Çеçеппи.

— Мĕнле кĕвĕ янраттарас?— ыйтрĕ лешĕ хĕр-тантăшсенчен.

— Хамăрăн Уйкас кĕввине.

— Юрĕ. Анчах вĕçсе ан кайăр.

Балалайка кĕпер урлă шăнкăравлă пар лаша чупса каçнăн кăлтăртатса чăнкăртатрĕ. Çеçеппи çемĕ майăн хăй тавра пăлтăр-пăлтăр çаврăнчĕ. Васса аллисене саркаларĕ, ура пуçĕпе вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа ăса пек вылянчĕ, вара çинçе сассипе такмаклама пуçларĕ:

Пилĕк тытса ташлană чух,
Икĕ каччă курĕç-ши?

Çеçеппи те хутшăнчĕ. Унăн сасси те шăнкăрав пек:

Икĕ каччă курсассăн,
Кăчăк туртса илĕç-ши?

Таçтан амакран сасартăк сикрĕ тухрĕ Керӳш. Тытăнчĕ вăл икĕ хĕр хушшинче явкаланма. Йăлттам çын. Ури-алли çĕре перĕнмест. «Хоп! Хоп!» текелет. Тĕлĕнтермĕш! Никам та чĕнмен-çке ăна виççĕн ташлама. Качака таки пек сиккелин, ара, куншăн никамах та айăпламĕ. Ак тата, вăл та сăвă сĕвемлет:

Сарă вăрăм хĕрсене
Шăрçа витĕр куç курать,
Хура лутра хĕрсене
Кăшкар витĕр куç курмасть,

Их-их, хоп-хоп!
Ылтăн юпа пулăттăм,
Вăй варринчен тухмăттăм.

Каччă хăйĕн хăюлăхĕпе, паттăрлăхĕпе, çаврăнăçулăхĕпе килĕшрĕ Çеçеппие. Çавăнтах такмак сăмахĕсем чуна сенĕк евĕр пырса тăрăнчĕç. «Чим-ха, эпĕ те, Васса та хура сăн-питлĕ,— шухăшларĕ Çеçеппи.— Пире тиркесе çапла витлемерĕ-ши ку этем?»

Унччен те пулмарĕ, Çеçеппи ыттисене сисмелле мар, пуçне айккинелле сĕлтсе, тус-таитăшне систерчĕ:

— Атя, тасалар кунтан часрах! — терĕ шăппăн.

Васса туртăнса-мĕн тăмарĕ. Ташă вĕçленичченех вăйăç умĕнчен пат! сухалчĕç.

— Мĕне пĕлтерет ку, сан хăтланăву? — ыйтрĕ Васса юлташĕнчен.

— Сисмерĕн-и, ара, вăл пире «хура хĕрсем» тесе хурласа юрларĕ.

— И-и! Мур çимен йĕксĕкĕ! Ых-х!

Вăйă картинче тек тытăнса тăмарĕç вĕсем, чупрĕç хăйсен çулĕпе.

Аякках та каяймарĕç, хыçра ура сасси илтĕнчĕ.

— Пăх-халĕ, вăл чалкăштарса килет,— татах хаярланчĕ Васса.— Сухăр пек çыпăçать ĕнтĕ.

— Хĕрсем! — кăшкăрчĕ Керӳш аякранах.— Мĕншĕн тартăр?!

Хĕрсем сас памарĕç. Каччă хашка-хашка хуса çитрĕ.

— Чăн-чăн спортсмен иккен, хăвăрт чупатăр. Енчен те хуса çитеймен пулсан, типпе юлнă пулă пек усăсăр çатăлтататтăрччĕ.

— Эпир-и? — çилленчĕ Васса.— Кама кирлĕ пулĕ? Усал çаклатса туртасшĕ.

— Васса, манере килмен япалана ма калаçас?

Керӳш кӳреннипе пăрахса каймарĕ, пачах урăхла: хушша тăрса, хĕрсене хулĕсенчен ярса тытрĕ. Теме кура шăпланчĕç виççĕш те.

— Кĕçĕр çумăр пулать,— лаплаттарса хучĕ Керӳш, сăмах тупăнманнипе аптранăскер.

— Аçтан пĕлен? Эсĕ турăпа туслă-и-мĕн? — хирĕçле каларĕ Васса.

— Мĕншĕн турăпа? Эпĕ çутçанталăк ывăлĕ. Унăн палăрăмĕсене чухлатăп. Хĕвел анас умĕн ун çийĕн пĕлĕтсем тымар ячĕç.

Çеçеппи калаçăва хутшăнмасть. Малашне-каяшне шухăшлакаларĕ те Васса, юлташĕ çак каччă умĕнче че-

чекленсе пынӑ пек туйрӗ. Ку вуҫех кӳрентерчӗ ӑна. Ҫиллине шӑнарайман енне чӑртмахланчӗ:

— Ман хӑшпӗрисемпе пачах ҫавтӑнса пырас килмест,— карт! туртса кӑларчӗ аллине каччӑн хул хушшинчен.

— Пӗлетӗн-и, Васса: виҫҫӗн утнӑ чух пӗри ялан ытлашши.

— Сисрӗм-ха кам ытлашшине.

— Мухтатӑп! Сиснӗ-тӗк, йӑртлаттар хӑв сукмакупа. Хапха айӗнче, тен, Элеҫ кӗтсе тӑрать...

Вӗсем, пахча хыҫӗсемпе утса, хӑйсен урамне тухнӑччӗ ӗнтӗ. Вассасен килӗ те ҫывӑхрах.

— Ҫеҫеппи, сывӑ пул! — ал сулчӗ те тӗрлеттерчӗ хӑйсен еннелле Васса.

— Мӗн эсӗ, тӑхта! — кӑшкӑрса юлчӗ Ҫеҫеппи.— Ан итле эс ку ҫын сӑмаххисене.

Юлташ-хӗр пурпӗрех каялла ҫавӑрӑнмарӗ.

Юнашарах Ҫеҫепписен килӗ. Вӑл та, Васса пекех, аллине каччӑн хул хушшинчен йӑкӑш! туртса кӑларма пултарать. Пӑшӑрханчӗ Керӳш хӑйпе юлнӑ хӗре ҫухатсран. Ҫавӑнпа та хӑй шут тытнине пӗлтерме васкарӗ:

— Ҫеҫеппи, ӗмӗрлӗхе пӗрле пурӑнасси пирки ҫыртарар-и шурӑ хут ҫине? Эпӗ пусӑма санпа пӗр пусӗлӗк ҫине хурасшӑн.

Хӗр аран-аран тӳсрӗ ахӑлтатса кулса ямасӑр. Анчах чӗрре кємерӗ. Тем тесен те, ашшӗ-амӑшӗ суйланӑ каччӑске. Ҫавӑнпа шӳтпе тавӑрчӗ:

— Ай, ҫырлах! Унашкал сарлака ҫитар ӑҫтан тупмалла, тет?

— Ан пӑшӑрхан. Пӗлен-ҫке эпӗ ӑҫта ӗҫленине. Ман магазинта темӗн чухлех унашкал мул. Чи пысӑккине суйласа тахҫанах айккинелле илсе хутӑм.

— Илсе хутӑн пулать, эппин.

— Ийя-ийя, тӳрех сисрӗм: эсӗ ман ҫын! Ачаран пӗрле выляса ӳсмен пулин те, санпа манӑн сӑмах пит килӗшсе пырать. Пӗлсех тӑратӑп: пирӗн пурӑнӑҫ малалла кӑлтӑрмач пек куҫӗ.

Каччӑ ытла ҫӳлти пусӑма хӑпарни сисӗнет. Вӗҫкӗн. Кӑшт пусарса лапчӑтас шухӑшпа Ҫеҫеппи ҫапла пӑрчӗ калаҫӑвне:

— Чим-ха, минтер пичӗ мӗн тӗслӗ?

— Чакӑр ҫинче ҫав тери илемлӗ хӗрлӗ чечексем,— терӗ Керӳш мухтанарах, хӑй илем мӗн иккенне ӑнланнине систерсе.

— Тӳсме пултараймастӑп чакӑр тӗс ҫинче хӗрлӗ чечексем пулнине. Илтмен-и вара: хӗрлӗ тӗсе ухмахсем ҫеҫ юратаҫҫӗ. Эпӗ ӑслӑ хӗр! — ахӑлтатса кулса ячӗ Ҫеҫеппи.

— Сипетсӗр калаҫу ку сан,— тавӑрчӗ Керӳш.—Тепӗр тесен, тӳшек-ҫитар, утиялӗпе ҫивитти—хӗр тупри. Эпӗ тиркеместӗп: минтер пичӗ кирек мӗн тӗслӗ пултӑр сан, савниҫӗм.

**— Ав, еплескер эсӗ,— тӗлӗненҫи турӗ Ҫеҫеппи.**

— Ырӑ кӑмӑллӑ ҫын. Ҫав ҫеҫ,— терӗ те Керӳш хӗре хӑй ҫумне ҫӑт пӑчӑртарӗ.— Ан тирке мана. Ан ютшӑн. Кил, ҫурхи хулӑ евӗр кӗлеткем ҫумне йӑпшӑн. Ҫулҫӑ пек ҫӳхе тутунтан пӗрре чуптӑвам,— пике тутине шыраре, анчах тупма ӗлкӗреймерӗ вӑл. Леш ытамран шыв пулли пек йӑкӑшт! шуса тухрӗ те хӑйсен кил хапхи еннелле вӗҫтерчӗ. Хӑваласан, ярса тытатчех ӗнтӗ. Хускалмарӗ йӗкӗт, хытса тӑчӗ юпа пек.

— Ҫеҫеппи! — кӑшкӑрчӗ хайхискер,— ыран хӑтана пыратпӑр. Кӗт!

«Кӗтетӗп!» темерӗ мур илесшӗ хӗрӗ. «Тарам пултӑр» тесе те шарламарӗ.

Куншӑн Керӳш нимӗн чухлӗ те кулянмарӗ.

— Ай, хитре хӗрсем качча тухиччен хӑйсене пӑхӑнтарасшӑн ялан ҫапла мӑнаҫланаҫҫӗ,— шӑппӑн ӗххӗмлеткелерӗ вӑл.— А, ахалех. Ман алӑран пурпӗрех вӗҫерӗнейместӗн. Шӑрчӗ вирелле тӑнӑ пулсан, якатса вырттарма мел пур. Амӑшне ыран магазина пырсан селедка тыттарса ярӑп. Вара ӗҫ-пуҫ, тӑвайккинчен кустӑрма кӑлтӑртатса аннӑн, пире кирлӗ пек чупӗ.

## 5

— Эпир халӗ «Сентел» урамӗнчи пиллӗкмӗш ҫурта юсама тытӑннӑ,— пуплерӗ бригадир, вӑтӑр пиллӗкелле ҫитнӗ тете, чи малтанхи хут ӗҫе тухнӑ Ҫеҫеппие. Илсе кайрӗ вара вӑл хӗре.

Ҫурт умӗнче — вакун. Унта юсавра кирлӗ ӗҫ хатӗрӗсем, япаласем упранаҫҫӗ. Картлашка вӗҫӗнче пӗр хӗрарӑм тӑрать.

— Акӑ ҫын илсе килтӗм сана валли, Наҫтук аппа,— терӗ бригадир сывлӑх суннӑ хыҫҫӑн. Паллаштарчӗ вӗсене пӗр-пӗринпе.— Пӗрле йӗркеллӗ те туслӑ ӗҫлессе шанатӑп.

Пӗрремӗш алкум. Аялти хутӗнче хваттерсенче слесарьсем шыв пӑрӑхӗсене улӑштарнӑ, платниксем урай

хӑмисене хӗстернӗ, алӑкӗсене, чӳрече хашакисене юсанӑ, электриксем электричество пралукӗсене ҫӗнӗрен карнӑ. Халӗ ӗнтӗ малярсен ӗҫе пуҫӑнма юрать.

Бригадир, Ҫеҫеппипе Наҫтук аппана ертсе, аялти хутӗнчи кашни хваттере кӗре-кӗре тухрӗ. Виҫӗ пӳлӗмли иккӗ; пӗр пӳлӗмлипе иккӗлли — пӗрер.

Пӗр пӳлӗмлӗ хваттерте чирли пур — вунӑ-вунпӗр ҫулхи хӗрача.

— Тӑлӑх пусрӗ ахӑртнех е ие чӑмларӗ. Ялан пӗччен хӑварма тиврӗ ҫав ӑна,—ӗсӗклеме тытӑнчӗ кукамӑшӗ.— Мӗскӗн, телейсӗр, нихӑҫан та ҫӳрекен пулаймӗ ҫав.

— Кукамай, тӗшмӗше ан ӗнен,— алне сулчӗ хӗрача.— Тухтӑрсем мӗн каланине мантӑн-и? Путевка кӗсъере, паян тухса каятпӑр Хура тинӗс хӗрринчи санаторие. Сыватаҫҫех мана. Таврӑнсан мӗнлерех чупӑп акӑ...

— Ах, ҫапла пултӑрччӗ,— хыпса ҫунать ватӑ хӗрарӑм.

— Эпӗ ӗненетӗп,— сӑмах хушмасӑр тӳсеймерӗ Ҫеҫеппи те.— Эсӗ сывалатӑнах.

— Мӑнукӑмпа хам та каятӑп. Санаторие ӗҫлеме кӗрӗп, чирлӗ ачасене пӑхӑп,— пуплет ачан кукамӑшӗ.— Сире хваттер уҫҫине парса хӑваратӑп. Эпир каялла ҫаврӑнса киличчен пӳлӗме ҫутатса хума ӗлкӗретӗр.

— Кӳр, мана парӑр уҫҫине. Эпӗ йӑлтах сӑрлӑп,— сӑмах пачӗ Ҫеҫеппи. Ун ҫак хваттере питӗ илемлетес шухӑш кӑмӑлне ҫӗклентерчӗ.

Мӑнукӗпе кукамӑшӗ тухса кайиччен Ҫеҫеппи кӳршӗсем патне каҫрӗ. Хуҫисем япалисене, сӗтел-пуканӗсене юнашарти пысӑк пушӑ пӳлӗме куҫарса клеенкӑпа витнӗ. Стенасем ҫара. Ҫеҫеппи, мелкине ешӗл сенкер шывлӑ витрине чике-чике кӑларса, маччана ҫума тытӑнчӗ.

Пӗччен ӗҫлет хӗр. Наҫук аппа тепӗр хваттерте айланать. Ҫеҫеппие ӗнерхи кун аса килчӗ те, чунӗ ыратсах кайрӗ унӑн.

Ӗнер вӑл Шупашкара ирех ҫитрӗ. Амӑшӗ кӗтӳ хӑвалама кайсан, вӑрттӑн тухса вӑркӑнчӗ килӗнчен. Паллах, ним сӑлтавсӑр мар. Пӗтреке ҫӳҫлӗ каччӑ хӑтана пырсан Ҫеҫеппирен татӑклӑ сӑмах ыйтаҫҫӗ-ҫке. Мӗн калӗ? Ашшӗ-амӑшне те кӳрентерес килмест, Похвир та куҫ умӗнчен каймасть. Халӗ ӗнтӗ кӗрӳшпе евчӗ пырсан та калаҫу аталанмасть; пӗр сӑмах — хӗр килте ҫук. Общежитие кӗме тесе шӑнкӑрав кнопкине пусма алӑ ҫӗкленӗччӗ кӑна, сасартӑк алӑк уҫӑлчӗ те ялт! сиксе тухрӗ

шалтан пĕр йĕкĕт. Вăл сывлăх-мĕн сунмарĕ, тĕк пек вĕçтерчĕ, тем тесен те, урисем картлашкана тĕкĕнмерĕç. Çеçеппи, общежитие кĕрсе, малалла иртрĕ. Мĕн мурĕ? Хĕрсем шавлани хăлхине хупларĕ. Пурте вĕсем Элисса пӳлĕмĕн алăкĕ умне кĕпĕрленнĕ.

— Тайра, кил-ха,— чĕнчĕ Çеçеппи.— Мĕн ирех ĕрлетĕр эсир?

— Пашăна тĕтĕрлентеретпĕр.

— Айăпа кĕчĕ-и?

— Ара, леш йĕксĕкĕ пĕрмай çывăрма юлать. Ас паратпăр айвана.

Çеçеппи хăй кравачĕ патне иртрĕ. Хĕрсен тавлашăвне хутшăнма шутламарĕ. Ара, вăл кунта çĕнĕ çын-ха, пĕрле пачах пурăнман, килĕшмĕ тӳрех сăмса каçăртни. Чăматанне вырнаçтарса майланă чух хĕрсем тавлашни илтĕнсе тăчĕ.

— Паша, ан та шан: вăл сана качча илместех, каларĕ тейĕн ак!

— Ан кĕрт эсĕ ăна тек! Усал ят пире те тивет.

— Сире таса çинчен кам варалама хăйтăр!

— Ай-яй, чее!

Хĕрсен ирех ятлаçупа пăсăлнă кăмăлĕсем кун каçа та çуталмарĕç. Халичченхилле ни юрламарĕç, ни ташламарĕç. Çеçеппие курсан, «а-а, каччăллă хĕр килнĕ-иç» текелерĕç кăна.

Каçкӳлĕм Çеçеппипе Тайра хулана кайрĕç. Вĕсене урамра, ăнсăртран тенĕн, Похвир тĕл пулчĕ. Алă тытса сывлăх сунчĕ.

— Вырсарникунсенче эсир, студентсем, учебниксене айккинелле перетĕр курăнать? — тăрăхланă майлă каласа хучĕ Тайра.

— Ах, хĕрсем. Сире эпĕ ăмсанатăп. Учебниксене питĕ ывăтасчĕ, анчах диплом тӳсме çук хăвалать. Вăхăт пур-ха тесе хамăра лăплантаратпăр,— кулкаласа илчĕ каччă.

Тайра ăна-кăна ăнланакан хĕр çав. Вăл кĕтесре чечек сутакансем еннелле пăрăнчĕ.

Иккĕшех тăрса юлсан, Похвир сăмах тапратрĕ:

— Сана курас килнипе шутсăр тунсăхласа çитрĕм. Кĕçĕр кинона кайăпăр-и?

Çеçеппи чунĕ пăлханса кайрĕ, вăл калама çук аванмарланчĕ. Похвирпа кинона кĕни такама суйни, улталани пулассăн туйăнчĕ ăна. Вара куçне айккинелле тартса каларĕ:

— Мĕн çав, пыраймастăп.

— Каçхи сменăна ĕçе тухмастăн пулĕ те? — хĕре аллинчен ярса тытрĕ Похвир.

— Çук, ĕçе ыран ирхине каятăп. Сăлтавĕ урăххинче.

— Манăн пĕлме юрать-и?

— Эпĕ пĕр харăс икĕ каччăпа çӳреме пултараймастăп çав.

— Ав мĕнле. Вăл, ман тăшман, хуларах-и?

— Ялта.

— Тахçантанпах савниллĕ-и?

— Савниех пулса çитмен...

Çеçеппи хăй пакăлтатăвĕнчен вăтаннипе аллине каччă ывăçĕнчен кăларчĕ те Тайра патнелле чупрĕ. Похвир уй варринчи тунката евĕр тăрса юлчĕ.

— Мĕншĕн пăртак чĕлхене чармарăм-ха? — хаш-ш! сывласа илчĕ хĕр...

Çак вăхăтра питçăмарти тăрăх маччаран çăра шыв шăпăр-шăпăр юхрĕ. Чăр-р пăхрĕ вăл çӳлелле пуçне каçăртса. Чухларĕ: пурă тасалнă. Халĕ ĕнтĕ стенасене çумалла.

Кил хуçи хĕрарăмĕ урайĕнче кӳлленнĕ шыва пухать.

— Стенасем типсен, ыран сăрлама юрать. Мĕнле тĕсе килĕштеретĕр? — ыйтрĕ Çеçеппи хĕрарăмран.

— Маччи шурă, стенисем кĕренрех сарă, урайĕ çутăрах хĕрлĕ пултăр.

— Юрĕ. Эсир ыйтнă пек тума тăрăшăп,— пуçне сĕлткелерĕ маляр, шăтăк-çурăксене саплама шпаклевка хатĕрленĕ май.

Пур хваттерсене те хуçисем хушнă пек сăрласа парĕ Çеçеппи. Асаннепе чирлĕ мăнукĕ пурăнакан пӳлĕме вара пачах урăхла илем кӳрĕ. Мĕнле? Халлĕхе хăй те пĕлмест-ха Çеçеппи. Шухăшласа тупатех. Тен, Тайра пулăшĕ. Вăл художник.

## 6

Пĕтĕм кăмăлтан тăрăшса тунă ĕç, уйрăмах вăл ăнăçлă пулсан, чуна савăнтарать. Çеçеппи пултарулăхне пĕлесшĕнех-тĕр, ăна икĕ пӳлĕмлĕ хваттере пĕччененех çĕнетме хушрĕç. Халĕ ĕнтĕ хваттер хатĕр. Хĕвел йăва çавăрнăн икĕ пӳлĕмĕ те çап-çутă.

Ĕçе йышăнма бригадир хăй кĕчĕ. Çав тери тĕплĕн тĕрĕслерĕ вăл: урайне ала лаппи хурса пăхрĕ, кантăк

хашакисене пӳрне вӗҫӗпе сӑтӑркаласа илчӗ. Чӳрече питӗркӗчисене пӑркаласа аялалла-ҫӳлелле шутаркаларӗ.

— Ырлатӑп,— мухтарӗ Ҫеҫеппие бригадир.— Тирпейсӗр малярсем чӳрече шпингалечӗсене белилӑпа сӗрсе хӑвараҫҫӗ. Ун пеккисен кайран хуҫисем ятланине илтме тивет. Хӑйсенех тасаттаратпӑр вара.

Ванна пӳлӗмне уҫса пӑхрӗ бригадир. Кил хуҫи хӗрарӑмӗ Ҫеҫеппие мухтать: «Мӗнле илемлӗ! Тавтапуҫах сана. Аллу-уру ялан ҫапла ҫыпӑҫуллӑ пултӑр».

Черетре мӑнукӗпе кукамӑш пурӑнакан хваттер. Ӑна илем кӳмелле. Вӗсен пачах хӑтлӑх ҫук. Хуҫисем курортран таврӑниччен Тайрапа иккӗшӗ мӗн шухӑшланине пурнӑҫламалла. Питӗ тӑрӑшса ӗҫлеме ӗмӗтленет Ҫеҫеппи.

Тӗрлӗрен сӑрӑ банкисене алӑк умне майласа лартрӗ Ҫеҫеппи. Кӗсъе тӗпӗнче уҫӑ хыпашласа тӑнӑ чух амӑшӗн сассине илтех кайрӗ.

— Эсӗ кунта-ҫке. Кай, аран шыраса тупрӑм.

— Ай-уй, эсӗ-ҫке, анне! — тӗлӗнчӗ Ҫеҫеппи.— Мӗнле килме пӗлтӗн?!

— Ятарласа юмахлама килтӗм. Хӑв хыҫҫӑнах тӗпӗртеттерсе ҫитесшӗнччӗ те, килти ӗҫсем тытса чарчӗҫ.

Крыльца умӗнчи сак ҫине тухса ларчӗҫ.

— Мӗнле пурӑнатӑр? Атте сывах-и? — тӗпченҫи пулчӗ Ҫеҫеппи.

— Кӳрентертӗн эсӗ пире, хӗрӗм. Керӳш хӑтана пычӗ евчӗ ертсе. Сана валли парне — чечеклӗ пурҫӑн кӑларса хучӗ. Ҫӗлетсе тӑхӑнсан — хӑв пукане. Пӑхатпӑр хайхискер, хӗр ҫук. Намӑса ятӑн пире. Атя киле, таркӑн.

Ҫеҫеппи кулса ячӗ те каларӗ:

— Пыраймастӑп. Куран-тӑр — ӗҫлетӗп.

— Асту, пӑр катӑкӗ ҫине ларса юлан акӑ. Капла кӗтмӗ сана каччӑ.

— Юратсан — кӗтет.

— Шанӑҫ ҫук. Кӑтра ҫӳҫлӗ илемлӗ каччӑ ҫумне хӗрсем хӑйсем ҫыпҫӑнаҫҫӗ... Сан пата хулана хӑй килсе каясшӑн-ха вӑл. Чипер кӗтсе ил, пӑтӑр-патӑр ан калаҫ. Аслӑ пул, ачам.

— Юрӗ, юрӗ. Эс каланӑ пек пулӗ,— йӑпатса ӑсатса ячӗ амӑшне Ҫеҫеппи.

Вырсарникун чӑнах та кӑмӑл пурччӗ ун яла ҫитме. Анчах Тайра театра кайма билет туяннӑ та, киле каяссине тепӗр вӑхӑта хӑварма тиврӗ.

Сисĕнмесĕр тата икĕ эрне хыҫа юлчĕ. Керӳш килмерĕ. Ҫеҫеппи те тухаймарĕ хуларан.

Пĕррехинче, ĕҫрен таврăнсан, Ҫеҫеппие хĕрсем ташлама хушрĕҫ: ҫыру килнĕ ун ячĕпе.

— Камран?— кăсăкланчĕ хайхискер.

— Паллах, каччăран!

— Эппин, ташлас,— кулкаларĕ Ҫеҫеппи.— Линькка-линькка!..

Хĕрсем алă ҫупса кĕвĕ калама тытăнчĕҫ. Ҫеҫеппи ҫакна ҫеҫ кĕтнĕ тейĕн. Их! ярăнчĕ кӳлĕри хуракăш майлă.

Ҫыру Вассаран-мĕн. Самант вуласа тухрĕ вăл кĕске ҫырăва. Хыпарĕ тĕлĕнтерекенскер. Ҫеҫеппин инкĕшĕ пулнă иккен ялта. Лавкка умĕнчи каска пуканĕ ҫине Керӳшпе иккĕшĕ ларса тем пит юмахланă. Ҫав кунран вара пĕтреке пуҫ хĕрпе ҫӳрет. Хĕрĕ шăпах Ҫеҫеппи инкĕшĕн йăмăкĕ — Плаки.

«Пирĕн Керӳшпе пăрҫа пиҫменнине пĕлен эсĕ,— ҫырать малалла Васса.— Ҫапах та пĕррехинче юриех чарăнтăм, ăна курсан.

— Ĕнсе кукли ҫитермелле-ха сана,— терĕм.

— Мĕншĕн? — ахăрать.

— Пĕр харăс темиҫе пике пуҫне пăтратнăшăн. Асту, пирĕн ял хĕрĕсем усал. Никамсăр тăрса юлăн.

Явапа питĕ ăста ҫын иккен вăл, ним каласа ҫĕнтереймĕн.

— Ан хăрат-ха аплах, Васса,— тет хайхискер,— ҫĕннисене тупăпăр. Амăшĕ пĕтмесĕр хĕр пĕтмест, теҫҫĕ.

— Ҫеҫеппие йăлтах ҫырса пĕлтеретĕп ак.

— Вăл куҫ валли ҫеҫ, ал валли мар.

Ҫырăва вуласа тухсан, шухăша путрĕ Ҫеҫеппи. «Каччăсăр тăрса юлап мар-и? Похвир та куҫ тĕлне лекмест. Футболла выляма та тухмасть вăл...» Ҫеҫеппин инкĕшне кайса тустарас ҫилĕ ҫĕкленчĕ. Пĕлет-ха пиччĕш арăмĕ тахҫанах вĕчĕхнине. Хăй кану ҫуртне каясшăнччĕ те пĕчĕк ачисене унпа хăварасшăнччĕ. Ҫеҫеппи килĕшмерĕ. Хĕрсемне ҫакăншăн каҫармасăр шăртланса ҫӳрет. Капла ҫеҫ ҫырлахман иккен, тавăрма ирсĕр ҫул ҫине тăнă. Паллах, темтепĕр каласа хурланă ĕнтĕ ăна.

Уйлакаларĕ, апла-капла виҫкелерĕ лару-тăрăва. «Тьфу! — сурчĕ вара Ҫеҫеппи.— Айвана юлас мар-ха инке умĕнче мĕскĕнле пуҫ тайса... Яла каяс акă».

Эрнекун хĕвел анас умĕн пырса кĕчĕ вăл тăван килне.

— Аранах,— хашш! сывласа илчĕ амăшĕ, хĕрне курсан. Унччен те пулмарĕ, арчине уçса чечеклĕ тутăрне кăларчĕ.— Керӳше кайса систерем-ха.

— Уруна ярса пус кăна, эсĕ мана тек нихăçан та кураймăн.

— Ахаль мар иккен паçăр сулахай хăлха йăн-ян туса кайрĕ. Мĕн усал сăмах илтĕп-ши, терĕм. Саншăн тăрăшатăп.

— Тăрăшни мар ку, çынна хамăртан култарни.

— Пенн...—текелесе чечеклĕ тутăрне каялла арчине чиксе хучĕ амăшĕ.

Kaçпулттипе Васса Çеçеппие урама чĕнсе кăларчĕ. Пуплекелерĕç те клуба уттарчĕç. Кунта халăх тĕнчери лару-тăру çинчен лекци итлеме пухăннă.

Кайран, лекци хыççăн, ваттисем клуба пушатса хăварсан, хĕрсемпе каччăсем ташлама юлчĕç. Çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн тухрĕç урай варрине. Вĕлт те вĕлт! çаврăнаççĕ çăмăллăн.

Вассана Элеç чĕнчĕ ташша.

«Кусем чăнласах çӳреççĕ тем»,— шухăшларĕ вĕсем пирки пĕчченех тăракан Çеçеппи. Паçăр каларĕ-ха Васса: «Элеç авланасшăн. Качча тухăттăм та, анчах ăçта пурăнас? Вĕсен пӳрчĕ мунча евĕр пĕчĕккĕ, тата шăллĕ те ӳссе çитнĕ. Вăл тĕпе юлмалли ывăл, паян-ыран авланĕ те»,— терĕ.

Çеçеппин куçĕ, вут тивретнĕ пек, ялтăрр çуталчĕ. Ытахальтен мар, Керӳш пырса кĕчĕ зала. Пăх-халĕ эсĕ ăна, пĕччен мар — Плакипе. Васса хăй çырăвĕнче çырни тĕрĕсех-мĕн: хайхискерсем тӳрех вальс çаврăнма пикенчĕç.

— Элеç, халех Çеçеппие илсе тух ташша,— хушрĕ Васса, ташă кăшăлĕнчи лару-тăрăва асăрханăскер. Савниййĕ хирĕçлемерĕ, самант ăнланчĕ сăлтавне.

Сумсăрлăхран хăтăлчĕ Çеçеппи. Пĕрре те ташша чĕнмерĕ ăна Керӳш. Курмарĕ теме çук, пуç тайсах сывлăх сунчĕ-çке.

## 7

Тата икĕ хваттере сăн кĕртрĕ Çеçеппи. Кукамăшĕпе мăнукĕ пурăнакан хваттере ĕç вăхăтĕнче çуса тасатрĕ, маччине пурăпа шуратрĕ, чӳрече хашакипе янаххисене, алăксене шурă сăрпа сăрларĕ. Ытти ĕçсене вара йăлтах рабочисем киле кайсан турĕ, пĕччен мар, Тайрапа.

Вăрăм стена çине кăнтăр пейзажĕ ӳкерчĕç. Тайра та, Çеçеппи те Крым, Кавказ тăрăх çӳренĕ, Хура тинĕсе те курнă, курса çеç мар, шыва кĕрсе те киленнĕ. Унти илĕртӳллĕ çутçанталăк пĕтĕмпех асра. Кăнтăр пейзажĕ хĕрачана килте пуçпех сывалса çитме пулăшасса шанать Çеçеппи.

Кукамăшĕпе мăнукĕн пӳлĕмне кĕрсенех, куçа мĕн курăнать-ха? Стена çумне ӳкернĕ хумсăр, лăпкă вырта-кан сенкер тĕслĕ тинĕс. Çывăхрах тăп-тăрă шыври çав-рака чул катрамĕсем, качи-мăчиллĕ çыран, пальма йывăççисем... Аякра симĕс калпаклă кăвак сăртсем...

Урайне Çеçеппи симĕс сăрăпа сăрларĕ. Ку стена çумĕнчи ӳкерчĕкпе ытла килĕшӳллĕ тăрать. Калăн, ти-нĕс шывĕ ниçталла та юхса каймĕ, ăна ура айĕнчи ешĕл çыран хӳтĕлет тесе.

Тайра пуçне чалăштарса пăхса тăчĕ те пĕр кана вара каларĕ:

— Тепĕр япалана чун кĕртес килет...

— Мĕнпе? — кăсăкланчĕ Çеçеппи.

— Пирĕн общежитире пальма пур-и? Çавна кунта илсе килес.

— Хĕрсем ирĕк парĕç тетĕн-и?

— Вăл пальмăна сан вырăнта пурăннă Тамара кач-ча кайнă чух мана парнелесе хăварчĕ.

— Апла пулсан татах хуть...

Каланă — тунă. Ăна ӳкерчĕкри пальмăпа юнашар лартрĕç. Халĕ лешĕ те чĕрĕ пекех.

Хуçисен сĕтел-пукан çукпа пĕрех. Мĕнпурĕ те пĕртен-пĕр çĕтĕк диван кăна, тата кухньăра тайлăк-тайлăк сĕ-тел. Çеçеппи хваттере пукансемпе пуянлатмалли мел тупрĕ. Чи çӳлти хутра пурăнакансем хваттерне юсаса çĕнетнĕ хыççăн темиçе кивĕ пукан кăларса ывăтрĕç. Виçĕ пуканне, майлăраххисене, кукамăшĕпе мăнукĕн хваттер-не илсе кĕрсе хучĕ.

— Юсаттарасчĕ, анчах кама? Кайран сăрлăттăм,— хăйпе хăй пуплерĕ Çеçеппи.

Ылтăн алăллă çын часах тупăнчĕ. Вăл — Похвир. Мирлешме ырă самант килсе тухрĕ çамрăксемшĕн. Элисса çуралнă куне паллă турĕ. Уява пĕрле футболла вылякан йĕкĕтсем те пычĕç. Вĕсен хушшинче Похвир та пур. Савăнăçлă иртрĕ менелник. Юрларĕç, ташларĕç. Ушкăнпа уçăлса çӳрерĕç. Çакăн чух Похвир Çеçеппие аллинчен тытмасăр тӳсеймерĕ.

— Мĕнле пурăнан, йăмăкăм? — терĕ Похвир.

— Йăраланатăп çĕрпе пĕлĕт хушшинче.
— Тĕрлеттерсе чупмастăн-и вара?
— Чупасчĕ те,— йăл-йăл кулчĕ Çеçеппи,— хавхалантарса тăракан сăлтав çук.
— Ман шутпа, каччăллă хĕрĕн кăмăлĕ ялан хавхалануллă.
— Ман каччă кĕл пулса тĕнче тăрăх сапаланнă.
— Анланмарăм,— ыйтуллă пăхрĕ Похвир çумри хĕр çине. Сассинче ун тĕлĕнни, хĕпĕртени палăрчĕ.— Эппин, эсĕ мĕн-и...— пуçланă сăмахне çăтрĕ.— Эппин, эсĕ ăна тек юратмастăн-и? Ах, мĕнле лайăх!» теесшĕнччĕ. Анчах та апла калама хăяймарĕ. Ун кăмăлĕ пĕлĕте çити çĕкленчĕ. Ним тума аптранă енне, хĕре çĕклерĕ те пăр-р, пăр-р çаврăнчĕ. Çеçеппи ăнланчĕ йĕкĕте, ахăлтатрĕ кăна. Иккĕшне те савăнăç тени хăй çунатти çине лартрĕ. Пĕр-пĕрне ăнланакансене шăпа ыррине халаллать.
Тепĕр кунне Çеçеппи Похвире пукансем юсаттарчĕ. Укерчĕклĕ хваттере ура ярса пуссан, пĕр кана хытса тăчĕ Похвир.
— Нихăçан та курман кунашкал тĕлĕнтермĕш!
— Килĕшет-и? — йăл-л кулчĕ Çеçеппи.
— Пĕлетĕн-и: пирĕн иксĕмĕрĕн хваттер те ӳлĕм çакнашкал хăтлă пулĕ. Çапла-и?
— Тăна кĕрейместĕп: иксĕмĕрĕн мĕнле хваттер пирки пуплен? — куçран чăр-р пăхрĕ хĕр.
— Çеçеппи, эпĕ юрататăп сана, мана качча тухма ыйтатăп.
— Мĕн-ма пит хăвăрт?
— Кĕтме май çук. Диплом хӳтĕлесенех ĕçе çитмелле. Аçта каймаллине пĕркунах палăртнă.
— Аçта?
— Хам çуралнă яла — «Малалла» совхоза. Пурна киле директора лартаççĕ, ахăртнех. Пирĕн группăри студентсене хуçалăха ертсе пыма хатĕрленĕ.
— Мĕн ĕçлесе пурăнăп-ха унта, ялта?
— Сан специальность таçта та питĕ кирлĕ. Маляр вăл — илемлĕх хуçи.
— Диплом хӳтĕлесси темиçе кун çеç юлнă сан. Çырăнма ĕлкĕрейместпĕр,— систерчĕ Çеçеппи.
— Хула загсĕнче ĕлкĕрейместпĕр. Эпир санпа ялта çырăнатпăр. Эпĕ сан умăнта акă. Йышăнатăн-и?
— Йышăнатăп! — татăклăн каларĕ Çеçеппи.
Пĕрле çӳреме çул уçăлчĕ вĕсен. Хĕрсем те тиркемесçĕ Похвире. Общежитие тек-тек кĕрсе тарăхтармасть

вăл никама та. Каçкӳлĕм чӳрече умне пырать те хăйĕн варлине чĕнтерсе тухтарать.

— Мĕнле йĕркеллĕ йĕкĕт,— пĕри те тепри ырлать Похвире.

8

Калаçса татăлнă пекех, Çеçеппипе Наçтук аппа пĕр вăхăтра тухрĕç юнашарти крыльцасенчен. Çамрăк хĕр çиййĕнче шăлавар, кофта. Вăл кăна çапла тăхăнман, Наçтук аппа та çавах. Мĕнех вара, ма ятлас, ку тум вĕсен пасара каймалли мар. Ĕç тумĕ, çав çеç. Мĕн тĕслĕ темелле-ши? Тӳрех калама хĕн. Калăн, шăлавар çумне çаран çинче ӳсекен чечек çеçкисене çыпăçтарса тухнă тесе. Тем тĕрлĕ сăрă сирпĕнсе çапла чăпарланнă.

— Çеçеппи, пĕтертĕмĕр-и?

— Тăрларăмăр пулас.

— Ах, маттурскерсем-çке эпир,— ырларĕ хăйсене хăй Наçтук аппа. Аллисенче иккĕшĕн те сăрă савăчĕ, пĕчĕк мелкĕ. Вĕсем коридор чӳречин хашакисене сăрларĕç. Юлашки ĕç пулчĕ ку.

Ĕç ăнăçсан чун хĕпĕртет. Чаранса тăчĕç те кăнн! пăхрĕç умри пысăк капашлă пилĕк хутлă çурт çине. Çук, çук, ку тин çеç хута янă çурт мар, ăна халĕ тĕплĕн юсаса çĕнĕ кĕпе тăхăнтартрĕç те, пăхса ытармалла мар капăрланчĕ. Чӳречисем — чăн-чăн пике куçĕсем. Ара, чакăр тĕслĕ хашакасем хĕрсен писевлĕ куç хупаххисене аса илтереççĕ. Хĕвел шевли ӳксен, хаваслă кулса куç хĕснĕн йăл-ял çуталса илеççĕ кантăксем. Миçе хваттер, миçе пӳлĕм çак çуртра! Хăй пĕр ял. Çеçеппипе Наçтук аппа тĕкĕнмен пĕр кĕтес юлман. Унсăр мĕнле, вĕсем малярсем-çке. Маляр вăл — художник, ырă пирĕшти, çынсене хăтлăх, канлĕх парнелекен. Таса хваттер çыншăн — тулли сывлăх. Çĕнетнĕ хваттерĕсенче хуçисем хăйсене ешĕл вăрманта е роза çеçки çинче пуранна пек туййĕç.

— Турра шĕкĕр, пурин кăмăлне те тивĕçтертĕмĕр, ятлакансем тупăнмарĕç,— пуплерĕ Наçтук аппа.

— Çапла, пирĕн ĕçпе пурте сапăр,— сăмах хушрĕ Çеçеппи. Ăна пĕр пăтăрмах асне килчĕ те, тути ейĕлчĕ.

...Кукамăшĕпе мăнукĕ, курортран таврăнсан, хваттерне чиперех кĕчĕç. Унччен те пулмасть, ватти каялла сирпĕнсе тухрĕ.

— Айтурах, эпир ют çĕре кĕтĕмĕр-няк! — хыпăнса

ӳкрӗ вăл.— Темле юмах тӗнчине лекрӗм, пуç анраманши ман?

— Хăвăр хваттерех. Кӗрӗр, кӗрӗр,— ӗнентерчӗ Çеçеппи кил хуçи хӗрарăмне.— Эпир ăна сирӗн пӗчӗк мăнукăршăн çапла эрешлерӗмӗр. Кăмăлламастăр пулсан, ӳкерчӗксене пăсса халех урăх сăрăпа сӗретӗп. Калăр кăна, мӗнле тӗс килӗшет сире?

— Эпӗ пăстарма ирӗк памастăп, кукамай! — кăшкăрса ячӗ хӗрача.— Мана капла питӗ-питӗ килӗшет. Кăнтăр твралăхӗ малтан çитсе пирӗн хваттере вырнаçнă.

Хӗрача ташласа ячӗ. Çеçеппи ал çупрӗ.

— Эпӗ тиркесе мар, тӗлӗннипе пăшăрхантăм,— тет хӗрача кукамăшӗ.— Ах, ытла хитре, тупата. Мӗнле çапла ӳкерчӗксем тума пултартăр?! Спаççипă сана, ырă чунлă хӗрӗм. Телей сунатăп. Ырă каччă тӗлне пул. Пире ан ман, килсех тăр.

Вырăнтан тапранаймарӗç-ха малярсем.

— Сывă пул, çурт-карап! — аллине сулчӗ Наçтук аппа.— Атя, Çеçеппи, каяр, пире Атăл урамӗнчи вуннăмӗш çурт кӗтет. Ӗç кунӗ пӗтнӗ те-ха, çапах та кайса курар, ыран шыраса çӳремелле ан пултăр.

— Пыраймастăп, Наçтук аппа,— куçне тартрӗ Çеçеппи. Хăй хӗп-хӗрлӗ хӗрелчӗ.— Сирӗнпе тек ӗçлейместӗп.

— Мӗнле апла?

— Эпӗ качча тухатăп. Пуçланă ӗçе вӗçне çитересшӗн ахаль те эрне çур кӗттертӗм йӗкӗте.

Сăмах çине тенӗн, Похвир çума пырса тăчӗ. Паллаштарнă хыççăн кăшт-кашт калаçсан уйăрлчӗç вӗсем, пӗр-пӗрне телей сунса.

Çамрăк мăшăр вaскать, пуçтарăнса халех çула тухасшăн. Похвирӗн килӗнче ашшӗ-амăшӗ, тăван-пӗтенӗ, туя хатӗрлениӗскерсем, тӳсейми кӗтеççӗ вӗсене.

Çеçеппи хăй пурăнакан общежитие пӗчченех кӗчӗ чăматанне илме.

— Эпӗ халех,— терӗ вăл крыльца умӗнчи сак çине ларса юлнă Похвире.

Алăкран кӗчӗ çеç Çеçеппи, Элисса кăшкăрса та ячӗ:

— Каччăллă хӗр килчӗ! Пире пăрахса каясшăнах-и вара? Хӗрхенместӗн те-и?

— Ним те тăваймăн, Элисса, ăраскалăмăр уйăрать. Ан кӳренӗр ӗнтӗ мана, усалпа ан асăнăр.

— Çeçeппи, венчет кĕпине тăхăнса кăтарт-ха, тархасшăн,— тилмĕрет Паша.

— Васкатăп-çке. Курас килсен — туя пырăр. Пурне те сире Похвир пĕркунах чĕннĕ, астутарса хунă, йыхрава пушă ан тăвăр.

— Патне çитсен куç курĕ,— терĕç хĕрсем.

— Эпĕ пымасăр юлмастăпах,—сăмах хушрĕ Тайра.— Çапах та халех курас килет.

Парăнчĕ вара Çеçеппи. Чăматанĕнчен кăларчĕ тирпейлĕн тыткаласа. Тăхăнчĕ те пач! улшăнчĕ. Ахаль те хитрескер, татах чиперленчĕ, яштакланчĕ. Шурă тĕс сăн-сăпатне çутатрĕ. Унтан пĕркенчĕкне пуç урлă уртса ячĕ.

— Ой, мĕнле килĕшет!— тĕлĕнет Элисса, венчет тумĕ тăхăннă Çеçеппие ытараймасăр пăхса.— Пÿ епле, ĕмĕр çапла килет, тет.

— Ман ĕмĕр мĕнле килет вара? — кăсăкланчĕ Çеçеппи.

— Паллах, лайăх.

— Эх, хĕрсем! — хашш! сывласа илчĕ Паша,— тăхăнса курайăп-ши çакнашкал кĕпе?

Пĕри те сас памарĕ, те илтмĕше хыврĕç. Анланаççĕ мар-и, ара: венчет кĕпи вăл хĕр çăлкуç евĕр тап-тасине пĕлтерет. Венчет кĕпи — шурă. Шурă — яланах ырă ĕмĕт пек çутă. Хĕр загсра шурă та вăрăм кĕпе тăхăнса, пуç çийĕн чĕнтĕрсемпе эрешленĕ шурă пĕркенчĕк уртса, чĕре суйласа илнĕ каччăпа юнашар тăрать. Хăй упăшкине ĕмĕр юратма, унпа çума-çумăн утма, ултавсăр, шанчăклă арăм, тус, юлташ пулма, савăнăçлă, инкеклĕ самантсенче хуйха-суйха пĕрле чăтса ирттерме сăмах парать. Ку вăл çамрăклăхри чи телейлĕ, хаваслă, нихçан асран кайми самант.

## 9

Ырашпа çурхи тырă пуссисем пушанса юлнă, вăрман тăрри сарăхнă. Чăш-чăш çумăрпа нÿрленсе чусталаннă кĕрхи çулпа такси чупать. Унта Çеçеппи (хушпу тăхăннă туй матки) тата Похвир ларса пыраççĕ. Вĕсем туя кайма тухнă. Элеç авланать, Вассана качча илет.

Çул вăрăм. Похвир çумри арăмне тек куçран пăхать, ачашласа ыталать, чуптăвать. Ним те калаймăн: чăпчăп уйăхĕ. Чăнахах та чăп-чăп уйăхĕ пĕр уйăха çеç тăсăлать-ши вара? Ку мăшăрсем урăхларах шутлаççĕ.

Вӗсем чӑп-чӑп уйӑхне ӗмӗр тӑршшӗпе упрасшӑн. Мӗнех, ку вӑл хӑйсенчен килет.

Çеçеппи кусне хупрӗ. Çук, тӗлӗрмест вӑл, шухӑшӗ ирӗке кайрӗ те, иртпине аса илсе савӑнать вӑл.

* * *

...Инкӗш çиеле тухрӗ. Ах, чее хӗрарӑм. Хӑй пехетлӗхӗшӗн теме те çавӑрса лартать. Астӑвать-ха, хӑйсен туйне чӗнме Çеçеппи яла килнӗччӗ. Пӗччен мар, Похвирпе. Анчах ӑна тӳрех килне илсе кӗме шикленчӗ (ара, амӑшӗ, сутуçпа аптракансклер, тем персе ярас пур). Ӑна Вассапа урама тӑратса хӑварчӗ.

— Çухалнӑ хӗр тупӑнчӗ аранах? — тӗлӗненçи пулчӗ амӑшӗ.

— Ăçта çухалнӑ, тет, вара эпӗ?

— Ĕçлеме пӑрахсах ӑçтиçук этемпе Шупашкартан тухса кайнӑ, терӗç. Каччи те упӑте евӗр имӗш.

— Ман упӑшка пирки апла калама ан хӑй, анне!— çилленчӗ Çеçеппи.— Вӑл чӑн-чӑн улӑп.

— Эх, ухмах! Çара çерçилле ирттересшӗн ӗнтӗ ӗмӗрна! — хӗрӗн сӑмахне хӑлхине те чикмест, шав шӑртланать амӑшӗ.— Инкӳ, ав, епле ӑслӑ, укçа патне килчӗ.

— Мӗнле укçа тата? — амӑш кусӗнчен тинкерсе пӑхрӗ Çеçеппи.

— Апруç пӳртне сутма хистет. Хӗрпултӑр пурпӗрех яла пурӑнма килмест, çурта колхоз тытса илет, тет. Çӳрен хӑв пуçу тӗллӗн, пире итлемесӗр. Киле килес çав, аçупа тупнӑ, килӗштернӗ йӗкӗте качча каяс. Керӳш нимрен те кая мар: чипер, лавккара ӗçлет. Пӗтӗм магазин япали хамӑр алӑра пулатчӗ. Пӳрт лартса асапланасси çук. Ямӑтти пур. Эх, тупата, пурнӑç — пыл та çу. Тӑсса панӑ ырлӑха йышӑнманни эсӗ ытла айваннине пӗлтерет. Ых-хх...

Амӑшӗ мӑкӑртатнӑ самантра пӳрте виççӗн кӗрсе тӑчӗç: ашшӗ, Вассапа Похвир.

— Амӑшӗ, пирӗн кӗрӳ хапха умӗнче именсе тӑрать. Мӗншӗн тухса илместӗн? Каялла пӑрахса каятчӗ. Юрать, хам тӗл пултӑм,— кулкаласа юмахларӗ Çеçеппи ашшӗ.

— Мерти, ан аташ-ха, кӗрӳ теме пирӗн хӗр качча кайман-тӑр-ха. Тата сана кам каларӗ ку йӗкӗт пирӗн кӗрӳ тесе? — ыйтрӗ Çеçеппи амӑшӗ, куç хӳрипе тута хӗррисене саппун аркипе шӑлкаласа.

— Çеçеппи тантăшĕ — Васса каларĕ.

Çеçеппи амăшĕ Похвир çине куç ывăтрĕ. Ним те чĕнмерĕ, çавăнтах пăлтăра чăмрĕ. Ун хыççăн упăшки те çухалчĕ. Çеçеппи, алăк анинче тăраканскер, вĕсен калаçăвне йăлтах илтрĕ.

— Амăшĕ, пăтăр-патăр калаçса ĕçе ан пăс,—пăшăлтатрĕ Çеçеппи ашшĕ,— хĕр хăй валли хăй суйланă. Ун пек-кун пек пулсан, эпир айăплă мар. Тата качча кайнă хĕре упăшкинчен сивĕтни е уйăрни — ирсĕр ĕç, ял кулли кăна.

— Эс мана, Мерти, чисти ухмах вырăнне ан хур. Тăн пур-ха кăшт. Курăн акă эпĕ мĕнлине.

Чăлантан тухрĕ амăшĕ. Пичĕ-куçĕ çуталать хăйĕн. Пĕтĕм хусканăвĕнче Похвире чунтан килĕштерни палăрать. Часах вăл сĕтел ури тайăличчен апат-çимĕç илсе тухса лартрĕ, Похвир те хăйĕн кучченеçне кăларчĕ. Пуçланчĕ вара шăкăл-шăкăл калаçу — килĕштерӳ. Пĕлчĕç: кĕрӳшĕ институт пĕтернĕ иккен, тăван ялĕнче ĕçлет — совхоз директорĕн заместителĕ вăл, ашшĕ-амăшĕн пĕртен-пĕр ывăлĕ...

Туя пырсан, Çеçеппин ашшĕ-амăшĕ йăлтах хăйĕн куçĕпе курчĕ. Хăтисен кил-çурчĕ çав тери селĕм. Хуралтисем урлă кайăк вĕçсе каçаймĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕ те картиш тулли. Мерти ăнланчĕ: хĕрĕ каялла пырас çук вĕсем патне.

Çеçеппин пуçĕнче шухăш тĕвĕленнĕ. Тем тусан та инкĕш хушнипе Апруç мучи çуртне сутма памалла мар.

Меллĕ самант тупса, Çеçеппи ашшĕне, хăнасем çумĕнчен пăрса, сад пахчине илсе тухрĕ. Улмуççи айĕнчи сак çине ларсан, сăмах пуçарчĕ:

— Атте, эпĕ çăтмахра пурăнатăп.

— Савăнатăп саншăн, хĕрĕм.

— Эсĕ хресна ывăлна, Элеçе, чунтан хисепленине пĕлетĕп.

— Хам ывăлтан ытла хаклатăп ăна,— чунне тĕрĕс уçса пама кирлĕ сăмах шыранăн чарăнса тăчĕ ашшĕ, хурăн тăррине тĕллерĕ, вара куç харшисене пĕрĕнтерсе çăварне уçрĕ:— Элеç мана хреснатте тесе çеç тăрать. Мана ĕçре пулăшать. Чăн-чăн механик тăватăп унран. Юрататăп ăна.

— Килти пурнăçĕ аплах мар.

— Тăлăхсем...

— Пӳрчĕ пĕчĕкрех вĕсен. Авланмалла, анчах ăçта пурăнас? Шăллĕ пур, вăл тĕпе юлмалли çын. Уйăрălса

тухмалла, анчах ăçта? Тӳрех çурт лартма ай-яй йывăр, вăй çитмест.

— Анланмастăп сана, хĕрĕм,— куçран чăрлаттарса пăхрĕ Мерти,— мĕн тума Элеç пирки юмахлан çак эсĕ?

— Юрĕ, тӳрех калам эппин: атте, эсĕ мана ыр сунатăн пулсан, Апруç мучи çуртне паçми-мĕнĕпех парнеле Элеçе.

— Ахти, мĕн иккен...—Чĕлхи çухалнăн тапах чарăнчĕ Мерти. Чылайран тин: — Мĕнех, эппин, пултăр эсĕ каланă пек,— терĕ.

Çеçеппи ашшĕне ыталаса чуптурĕ. Пӳрте кĕчĕç те туя килнĕ Элеçпе Васса ташланине курчĕç. Мерти те тӳсеймерĕ, çамрăксем умне тухрĕ, «их-их!» текелесе ал çупрĕ, урисем тăпăртатрĕç.

* * *

Такси, пусă хапхинчен кĕрсе, урам тăрăх йăрлаттарчĕ. Çеçеппин чĕри пăлханнипе хăйĕн канлĕхне çухатса кăлт-кăлт! тапать. Ара, пурте чуна çывăх-çке кунта: килçурчĕсем те, вĕсенче пурăнакан çыннисем те.

Апруç мучи тĕлĕнче такси чарăнчĕ. Тухрĕ çамрăк мăшăр машинăран. Ух, мĕн чухлĕ çын пухăннă Элеçпе Вассан туйне курма. Каллĕ-маллĕ утаççĕ хĕвĕшсе. Çеçеппи ашшĕ, Мерти, çĕр айĕнчен шăтса тухнăн, ваштах хĕрĕ çумне пырса тăчĕ.

— Çитрĕр-и? — хаваслăн сăмах хушрĕ вăл. Пĕтĕм хусканăвĕ, сасси: «Куратна, хĕрĕм, эсĕ хушнине турăм, парнелерĕм...»— теççĕ.

Çеçеппи йĕри-тавра пăхса илчĕ. Сасартăк çынсем хушшинче тăракан Керӳша курчĕ. Салхуллă вăл. Куçсем тĕлме-тĕл пулма ĕлкĕреймерĕç, Çеçеппипе Похвире пӳрте кĕме чĕнчĕç.

— Хаклă хăнасем, иртĕр, кĕрĕр! — терĕç вĕсене кĕтсе илме тухнă кил хуçисем — Элеçпе Васса.

Йăл-йăл кулкаласа, хаваслăн пуплесе утрĕç уçă хапха еннелле. Туй курма пуçтарăннă ялйыш ытараймасăр пăхать çамрăк мăшăрсене.

*1982 ç.*

## ХĔВЕЛЛĔ ПАЛАТА

Куççуль шăпăртатса юхать Аринен — ăна больницăна вырттараççĕ.

— Килте сывалаймастăн,— терĕ ăна тухтăр,—чĕрӳ ытла хавшанă.

Ку тарана ҫитсе, Арине больницăра выртса курман. Сывалас шанчăк ҫуккисем ҫеҫ унта выртаççĕ тесе шутлатчĕ вăл.

«Вилетĕпех пулĕ,— тет Арине хурланса.— Эх, мăнтарăн, пенси ҫулне те ҫитеймерĕм-ҫке».

Больницăн шурă катанпир кĕпипе халат тăхăнтартсан, сестра ăна палатăна ертсе кĕчĕ. Кунта мĕнпурĕ те икĕ кравать ҫеҫ. Пĕрине йышăннă ав. Паллашрĕҫ. Тепĕр хĕрарăмĕ Тенисса ятлă-мĕн.

— Сирĕн вырăн ҫакă пулать, Арина Степановна,— терĕ сестра, пушă кравать патне пырса. Вăл ҫӳхе утияла тирпейлĕн тытса уҫрĕ, минтерне чышкаласа кăпăшкалатрĕ.— Тухтăр киличчен лăпкăн кăна выртăр.

Ĕҫлĕ сестра часах тухса кайрĕ: ăна ытти палатăсенчи чирлисем кĕтеççĕ.

Палата кăнтăр енче. Шап-шурă стенасем хĕвел шевли ӳкнипе куҫа йăмăхтармаллах ҫуталса тăраççĕ.

Арине ĕхлеткелесе майлашса выртрĕ. Ансăртран тенĕн вăл хăйĕн аллине курах кайрĕ.

«Тур ҫырлах»,—шартах сикрĕ вăл. Темшĕн аллисем ытла иленкĕсĕр. Кăвак юн тымарĕсем пралук евĕр хăпарса тухнă. Ывăҫ тупанĕпе пӳрне вĕҫĕсем ҫуркаланнă. Ҫитменнине тата чăлт-шурă простынь ҫинче нихăҫан шыв курман пек хуп-хура курăнаççĕ вĕсем. «Ĕмĕр ҫĕрте чакаланатпăр»,— пăшăлтатрĕ вăл хăй тĕллĕн, аллисене утиял айне пытарса.

Кăшт вăхăт иртсен, Арине пуҫне ҫĕклерĕ. Пӳлĕмре иккĕн чух ма калаҫмасăр ларас.

— Чылайранпа выртатăн-и? — ыйтрĕ Арине юнашар кравать ҫинчи хĕрарăмран.

— Эрне иртрĕ ĕнтĕ — утиялпе пилĕк таран сирсе тăрса ларчĕ хĕрарăм. Арине тĕсесе пăхрĕ ăна: «Ҫамрăкскер-ха ку. Хĕрĕх урлă каҫнă-ши?»

— Юсанатăн-и? — ыйтрĕ каллех Арине.

— Юсаннине туймастăп. Ялан куляннипе те чирĕ парăнасшăн мар пулас.

— Инкек пулчĕ-им?

Тенисса пĕр хушă чĕнмерĕ, хальччен пĕлмен ҫынна хăйĕн хуйхи-суйхине тӳрех каласа парас килмерĕ ĕнтĕ.

— Ара, пӳрт тулли ача-пăча, упăшкам та пур. Эрне иртсе пĕри килсе каймарĕ. Тепле пурăнаççĕ, ним те пĕлместĕп,— терĕ вара, кăшт кăмăлĕ уҫăлсан.

Сасартăк Аринен ăшне çулăм хыпса илчĕ. Çавăнтах чуна ыраттаракан шухăшсем пуçне çĕмĕрсе кĕчĕç. Ара, хĕрарăмăн, ав, ачи-пăчи те пур. Пурпĕр больницăна пĕри те килмест. Аринен вара кама кĕтмелле? Вăл, уй варринчи тунката пек, тăр-пĕччен-çке. Качча кайман, мăшăрĕ çук, ача-пăча çуратман. Ашшĕ-амăшĕ тахçанах çĕре кĕнĕ. Аппăшĕ пурччĕ, вăл та пулин пурăнаймарĕ иçмасса. Ана вăрçă тухсан тепĕр çулхинех Çĕпĕрти хĕçпăшал туса кăларакан пĕр завода ĕçлеме ячĕç. Каялла таврăнаймарĕ, апăрша. Ĕçĕ питĕ йывăр тесе çыратчĕ. Те çав ĕçе тӳсейменнипе, те йывăр чирлесе вилнĕ вăл.

Ĕмĕр тăрпшĕпех пĕччен пурăнчĕ Арине. Халĕ больницăна лекрĕ ав. Кунта вилсен те никам килмĕ. Пырне ун темĕнле чăмакка капланчĕ тейĕн, темле çăтсан та — анмасть. Куççулĕ пăчăртанса тухрĕ. Тăнлава тем хĕсет.

Юнашар выртакан хĕрарăм тек калаçасшăн пулман пирки вăл стена енне çавăрăнса выртрĕ.

Çапла, ĕмĕр тăршшĕпех пĕр-пĕччен, хăраххăн пурăнма пӳрнĕ ăна. Çакна Арине больница койки çине выртсан калама çук таăннăн туйрĕ. Мĕн тери йывăр иккен вăл пĕчченлĕх!

Кăмăл хуçăлнă вăхăтра темшĕн-çке тахçанхи хурлăхлă самантсем аса килеççĕ. Пĕр-ик çул каялла акă мĕн пулса иртнĕччĕ:

...Арине ял лавккине кĕчĕ. Лавккаçă çап-çамрăк хĕр. Пăхса ытармалла мар чипер хăй. Пичĕ-куçĕ çавра уйăх. Сутуçă çук пирки лавкка темиçе уйăх хупăнса тăнăччĕ. Ку хĕре районтан ятарласа янă. Чечек тавра пыл хурчĕсем сĕрленĕн, çакă хитре хĕр çывăхĕнче те каччăсем явăнаççĕ. Халĕ те, ав, лавккара вĕсем туллиех. Шӳтлĕ сăмахсемпе хĕре култараççĕ.

Арине лавккана сар çу илĕп-и тесе кĕнĕччĕ. Пĕччен пыршăн халь ĕне усрамасть вăл. Ашшĕ-амăшĕнчен юлнă ĕнене вăрçă вăхăтĕнче сутрĕ. Пăхма йывăр тесе мар, сăлтавĕ пачах урăххиччĕ. Тĕлĕнмеллеччĕ çав вăрçă вăхăтĕнче. Тутлă çиесшĕн, питĕ тумланасшăн антăхмастчĕç çынсем, пĕтĕм тĕллевĕ те вĕсен тăшмана тĕп тăвассиччĕ. Çĕршывра çĕнтерӳ фончĕ йĕркелерĕç. Ырă пуçару халăх хушшине хăвăрт сарăлчĕ. Яла хыпар хыççăн хыпар çитереççĕ хаçатсем. Тӳрĕ кăмăллă çынсем çĕнтерӳ фондне хăйсем перекетленĕ укçана ним шелсĕр хываççĕ. Арине комсомолка хытса тăрĕ-и? Вăл çынсенчен кая мар. Унăн укçа пур — ашшĕ-амăшĕ çĕнĕ пӳрт лартма пухнăскер. Анчах сахалтарах пек. Арине вара

ёнине сутрѐ. Ҫапла вунӑ пине ҫитрӗ ун укҫи. Пӗр пус юлмиччен пачӗ Арине ҫак укҫана ҫӗнтерӳ фондне. Нумай калаҫрӗ ялйыш комсомолкӑна мухтаса. Хаҫатра та ҫырчӗҫ. Мускавран телеграмма килчӗ. Йывӑр самантра Тӑван ҫӗршыва пулӑшнӑшӑн Оборона комитечӗн председателӗ хӑй тав тунӑ чӑваш хӗрне.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Арине темиҫе хут та ёне туянма пиккеннӗччӗ — юр-варшӑн мар, юлташла тенӗ пек усрасшӑнччӗ ӑна. Анчах ал ҫитерейменӗ. Ҫулсем шав сисӗнмесӗр иртрӗҫ те иртрӗҫ, картишне ёне выльӑх кӗрейменӗ.

Лавккара сар ҫу пӗтнӗ иккен. Юрать-ха, услам ҫу юлнӑ.

— Ҫур кило виҫсе пар-ха,— хушрӗ Арине.

— Ҫур кило услам ҫу-и? Мӗншӗн сахал илетӗн?

— Пӗччен ҫынна ҫур кило та ҫителӗклӗ.

— Хи-хик! — ихӗлтетрӗ хӗр.— Эпӗ пӗччен тем тусан та пурӑнаяс ҫук.

Хӗре хирӗҫ нимле сӑмах тупса тавӑраймарӗ Арине. Тӑнне ҫухатнӑ пек, лавккаран пушӑ алӑпах тухрӗ.

— Услам ҫу туянмарӑн та-и, инке? — кӑшкӑрса юлчӗ чиперкке.

Ҫакӑн хыҫҫӑн, уйра е вӑрманта хӑраххӑн утнӑ чух, ҫурӑм хыҫӗнче час-часах ҫамрӑк хӗр-лавккаҫӑ сасси янраса каятчӗ: «...хи-хик! Эпӗ пӗччен тем тусан та пурӑнаяс ҫук».

Хӑй вӑхӑтӗнче Арине те ытарайми хӳхӗм хӗр пулнӑ. Икӗ вӑрӑм ҫивӗчӗ кӑна мӗне тӑратчӗ! Хӑва хулли пек яш пӗвӗ тата... Анчах ун ёлккенлӗхне пӑхса киленес ҫынсем инҫетре ҫӳренӗ. Вӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе аякри уй-хирсенче ӳке-ӳке юлнӑ.

Выртать Арине больница койки ҫинче, стена еннелле пӑхса. Пӑчӑ ӑна, кӑкӑрӗнче тӑвӑр, ҫӑварне кара-кара сывлӑш туртать, пурпӗрех кансӗр.

— Эсӗ хӑш ялсем пулатӑн ҫав? — ыйтрӗ Тенисса Аринерен.

— Инҫетрисем мар,— тавӑрчӗ Арине, хӗрарӑм еннелле ҫавӑрӑнмасӑрах. Унтан вӑл хӑй хӑш ялсем иккенне каларӗ.

— Санӑн та ача-пӑча пур пулӗ? — пуплеме чарӑнаймасть Тенисса.

— Ҫемьесӗр ҫын эпӗ.

— Эппин, часах сывалӑн.

Çапла калани Аринене тĕлĕнтерчĕ. Вăл ун еннелле çаврăнмасăр тўсеймерĕ.

— Мĕншĕн апла шухăшлатăн?

— Ара, хăв патна никам та килменшĕн пăшăрханса юнна пăсмăн, тетĕп-çке.

— Тĕрĕсех, ман пата килекен пулмĕ,— ассăн сывларĕ Арине.

Каласу татăлчĕ, мĕншĕн тесен палатăна шурă халатлисем кĕчĕç. Вĕсенчен пĕри, мăйăхли,— тухтăр, тепри — сестра.

Тухтăрĕ Арине койки çумне пукан илсе ларчĕ.

— Мĕн ыратать-ха сирĕн? — ыйтрĕ вăл, ал тымарне тытса.

— Мĕнĕ-качки, ватлăхĕ çитрĕ пулĕ,— сăмах хушрĕ Арине.

— Иртерех-ха ватăлма. Самани ырă, пурăнмалла та пурăнмалла,— вара врач Аринене кăкăртан, çурăмран итлерĕ.

Ыран кардиограмма ўкермелли çинчен астутарчĕ, мĕнле эмел ĕçмеллине каларĕ. Сестра çырса пычĕ.

Ахлатать Арине.

— Мĕншĕн çав териех кулянатăр эсир? Хăвăртрах сывалас тесен, ăша çунтаракан шухăшсене йăлтах пуçран кăларса пăрахмалла,— ăс парать тухтăр. Хăй çамрăк çын кăна, ватта йăпатма пĕлет.

Аринене çав кунах эмеллеме тытăнчĕç.

* * *

Кaç пулчĕ. Шăпланчĕ больница. Пурте çывăрма выртрĕç ĕнтĕ. Тенисса та ыйха путрĕ.

Аринен куçĕ хупăнмасть. Кăшт тĕлĕрме тытăнсанах, усал тĕлĕк шарт сиктере-сиктере вăратать. Тул çутăлас умĕн тин кăтăш пулчĕ вăл. Анчах çывăраймарĕ, палатăна такам кĕчĕ. Санитарка-мĕн. Вăл шывне шăпăртаттарсах урай çума тытăнчĕ. Сестра та палатăра. Чирлĕ çынсен хул хушшине вăл градусник лартса çўрет.

Ирхи апат хыççăн палатăна улăм шлепке тăхăннă, хулпуççи çине шурă халат уртса янă хĕр кĕчĕ. «Тинех килчĕ иккен ку хĕрарăмăн хĕрĕ»,— шухăшларĕ Арине. Амăшĕпе хĕрне сăмахлама чăрмантарас мар тесе, вăл пуç çинченех витĕнсе выртрĕ. Унччен те пулмарĕ, «Арине аппа!» тесе чĕннине илтрĕ вăл.

— Мĕн амакĕ? — мăкăртаткаласа утиялне сирчĕ Арине.

— Арина Степановна! Мана паллаймарӑн-и-мӗн? Эпӗ — Ыда.

— Эй, туршӑн та,— тинкерсе пӑхрӗ Арине.— Эсӗ-им-ха ку! Хӑçан яла килтӗн?

— Виçӗмкунах. Ӗнер сан пата темиçе хут та пырса кайрӑм. Қаçалапа тин пӗлтӗм эсӗ больницӑрине.

— Қам каларӗ?

— Анна инке. Кунта сестрара ӗçлекен Елен пырса каланӑ ӑна. Эсӗ тыттарса янӑ кӗлет уççине те парса хӑварнӑ, тет.

— Яла нумайлӑха килтӗн-и?

— Пуçӗпех таврӑнтӑм. Килӗшмерӗ хула пурнӑçӗ.

— И-и, ара, ӑçтан килӗштӗр. Қаларӑм-çке сана, ялтан ан кай тесе. Итлемерӗн.

— Ӳпке-сапкана тӳсеймерӗм,— тарӑннӑн хашлатса сывласа илчӗ Ыда. Те именсе, те куляннипе урай хӑмине тӗллерӗ вӑл. Вӑрӑм та çӑра куç хӑрпӑкӗсем аялалла усӑнчӗç, куç çине тӗкӗлтура пырса ларнӑн курӑнчӗ.

— Тек аса та ан ил эсӗ ӑна, ӑсӗ кайттӑскерне.

— Тӑрӑшатӑп. Вӗрентрӗç-ха: ун пек чух хӗре сиплекен мел вӑл — тепӗр йӗкӗте юратни, тет.

— Ан ухмахлан, Ыда. Васкӑн та каллех такӑнӑн. Пӗтӗм хуйхӑ-суйхӑран çынна ӗç çӑлать,— вӗрентет ӑна Арине.— Ыранах ман касӑсемпе ӗçлеме тытӑн. Çӗрне кӑпкалатмалла, хӑмла аврине шӑвармалла.

— Чӑнах калатӑн-и? — хӗпӗртесе ӳкрӗ Ыда.

— Эпӗ тахçанччен йӑваланса выртӑп-ха кунта. Хӑмла аври типсе хуçӑлса пӗтесрен чун шутсӑр хӑрать. Бригадира кала, Арина Степановна хушрӗ, те.

— Юрать! — хӗр савӑннипе Арина Степановнӑна чуптуса илчӗ.

— Ӑшпиллӗскер эсӗ, тупата,— терӗ ӑна Арине.

Хӗр кучченеçлӗх пыл илсе килнӗ, кукамӑшӗ парса янӑ-мӗн.

— Эпӗ кайрӑм. Сывал часрах!

— Эх, пӑрчӑкан,— йӑл кулкаласа юлчӗ Арине.

— Сан пата килчӗç те, ав. Мана манчӗç,— каллех хурланать Тенисса.— Ку кам, тӑвану-и?

— Тӑван-пӗтен çук ман. Ку хӗр — хамӑр ялсем.

— Ах, ытла çинçешке.

— Çинçе хулӑ авӑнать çеç, хуçӑлмасть. Чунӗ ытла çепӗç ун,— мухтаса илчӗ Ыдӑна Арине.

— Пачах ют çын хӗрӗ пулсан, сана мӗншӗн çав териех юратать? — тӗпчет хӗрарӑм.

— Мĕнле калас: эпĕ ăна ĕçе хăнăхтараканĕ пулнă,— ăнлантарать Арине. Ыда вăл тăлăх теес тăлăх мар, ашшĕ-амăшĕ пур, анчах вĕсем пĕрле пурăнмаççĕ. Пĕчĕкренех ватă кукамăшĕ ӳстерчĕ ăна. Амăшĕ, хулара пурăнаканскер, тепĕр çынна качча тухнă та хĕрачине хăй патне илсе кайман. Хĕрхенеттĕм, юрататтăм эпĕ ăна, çурма тăлăхскерне. Савма йӳтĕмĕ те пурччĕ çав. Шкулта вĕреннĕ чухнех, канмалли кунсенче, каникул вăхăтĕнче, ялан ман çумраччĕ. Хăмла ӳстереттĕмĕр эпир унпа. Тухăçлă хăмлашăн тăрăшасси хĕллех пуçланатчĕ пирĕн. Хамăра уйăрса панă лаптăк çинче юр тытаттăмăр, тислĕк кăлараттăмăр. Çуркунне хăмла тымарĕсене çутă кăтартмалла. Пĕлесчĕ сан, унăн алли ытла вăрвар. Пĕрре çеç кăтартса пар, малашне хăй тĕллĕнех лайăх ĕçлет. Хăмла аврисене пит çепĕç тыткалать вăл. Унăн ретĕнчи хăмла пултранкисем час ашкăрса каяççĕ. Вăйлă çумăр е çил-тăвăл аврăсене амантса хăварсан, эпир вĕсене вăхăтра юсаса тухаттăмăр. Кĕркунне вара хăмла алса пӳрнески пек шултра пулать те чунтан савăнса тататпăр. Пире, Ыдăпа иксĕмĕре, хăмла лайăх туса илнĕшĕн темиçе хут та парне панă. Вăтам шкул хыççăн института вĕренме кĕреймерĕ вăл. Каллех иккĕн ĕçлерĕмĕр,— Арине темшĕн куляннă пек хаш! сывласа илчĕ.— Инкеке, Ыдăн юратăвĕ телейсĕр пулчĕ,— терĕ вара вăл,— колхоз трактористне юратрĕ. Лешĕ, вĕçкĕнрехскер, ăнланмарĕ пулас хĕре, урăххине качча илсе ячĕ. Çакăн хыççăн Ыда ялтан тухса кайрĕ. Çĕр ĕçне юратакан çын аякра пурăнайĕ-и?

Турра шĕкĕр, хуйхи-суйхине çĕнтерсе каялла таврăннă вăл. Халь ĕнтĕ пирĕн ĕç каллех ăнса кайĕ.

— Лайăх çын тĕлне пулни аванах çав,— пусăрăнчăк сасăпа калаçрĕ Тенисса.— Ман ачасем ыр çын тĕлне пулаймарĕç ĕнтĕ, хам та вĕсене ырра вĕрентеймерĕм пуль.

— Ма унашкалах тиркетĕн ачусене? — пӳлчĕ Арине.

— Амăшне килсе пăхмаççĕ. Тен, вилнĕ эпĕ.

— Апла мар ĕнтĕ. Çу уйăхĕ çич уйăх, çич уйăхăн ăшĕнче çитмĕл тĕслĕ кун килет, теççĕ. Савăнăçĕ те çитĕ-ха. Ачусем килĕç. Ан пăшăрхан.

* * *

Аринен чĕрине тĕрĕслерĕç. Эмеллеççĕ, сиплеççĕ. Кун хыççăн кун иртет.

Палатăра сывлăш самант йывăрланать. Сестра кантăка уçса хăварчĕ. Тулта ача-пăча çуйăхать. Ял ачисем ыйхă чăптисем мар çав, ирех вăранаççĕ.

— Ман ачасем килмерĕç-ши? — чӳрече патне пырса, пуçне тулалла кăларсах пăхрĕ Тенисса.

Арине те юлмарĕ, пĕрле выртакан юлташĕн ачисене курас килчĕ унăн. Юратать вăл вĕт-шакăра. Панулми тăкăнма тытăнсанах кĕшĕлтетсе пыраççĕ вара ун патне пĕчĕк этемсем. Пахчана илсе тухать вĕсене Арине. Ҫасса кайсах сăнать, кулать вĕсен хăтланăвĕсене пăхса. Ара, вĕсем чăн камитсем. Панулми çинине пăхса тăма мĕн тери савăк! Ҫашниех кӳпшем питлĕ. Ҫу каçипе урамра çӳренĕрен ӳчĕсем хĕвелпе пиçĕхсе пăхăр тĕслĕ пулса кайнă. Тути уçăлсанах сахăр евĕр курăнаççĕ шапшур вичкĕн шăлĕсем. Ҫачăрт! Ҫачăрт! çыртса çиеççĕ панулмине. Кăвасак сĕткен нимĕн чухлĕ те çӳçентермест вĕсене, куçĕсене хупса илинччĕç, иçмасса. Ҫук çав, пиçсе çитмен панулми вĕсемшĕн шерпет пек пылак-тăр.

— Ман ачасем мар,—кăмăлсăрланчĕ Тенисса.—Юри кантăкран пăхса ашкăнакансем çеç. Аялти хутра выртма çавăнпа килĕштерместĕп эпĕ.

— Эх, çырлах, мĕнлескерсем тата? — ашкăнчăксене курма Арине те уçнă чӳречерен пуçне кăларса пăхрĕ.

— Ав, Арине аппа! Ачасем, кунта килĕр! — кăшкăрчĕ пĕри.

Хайĕн ятне асăннăран тимлĕрех пăхрĕ те Арине Хветура ывăлне палларĕ.

— Устим! — чĕнчĕ ăна Арине.— Мĕн туса çӳретĕр эсир кунта?—Ачасен ушкăнĕ кĕшĕлтетсе çывхарчĕ кантăк умне.

— Кусем пирĕн ял ачисем,— пĕлтерчĕ Арине салхуллă Тениссана.

— Арине аппа, эпир сан пата килтĕмĕр,— терĕ Устим.— Анне сана çăмарта парса ячĕ. Ме, тыт,— тăсрĕ вăл çыхă.— Пĕçерни.

— Ма чăрманать? Кунта пире çитереççĕ.— Ҫапах та хăй çыхха илчĕ.— Аннӳ мĕнле пурăнать?

— Чиперех. Ыран сан пата килесшĕн.

— Мĕнпе хăналас-ха сире?

Арине тутăр çыххине салтрĕ те кашни ачине пĕрер çăмарта парса тухрĕ. Анчах чи пĕчĕкки валли çитмерĕ. Вĕсем вунпĕрĕн иккен, çăмарта вара — вуннă çеç.

— Чим, ан хурлан,— терĕ Арине, тутине тăснă ачана шутсăр шеллесе. Паллах, вăл çăмарта çисе курман

ача мар, сăлтавĕ кунта мĕнпурĕ те хăй пайсăр юлнинче. Акă мĕншĕн кăмăлĕ хуçăлчĕ унăн.— Сан валли, чипер ача, урăх кучченеç тупăп.

Тумбочкине уçрĕ Арине, унта, пĕр банка варенисĕр пуçне, ним çуккине пĕле тăркачах. Тӳпесĕр юлнă ачана çав варение банкипех тыттарчĕ Арине. Ача йăл кулчĕ. Кăмăлĕ тулчĕ апăршан.

— Арине аппа, сирĕн пахчари пиçсе çитнĕ çĕр çырлисене татма юрать-и? — тет ачасенчен пĕри.

— Хамсăр ватса пĕтермĕр-и?

— Çук!

— Эпир йĕркеллĕ!— шавласа илчĕç хайхискерсем.

— Шанатăп.

Ачасем пĕр-пĕринпе тавлашса илчĕç:

— Эсĕ чарать терĕн!

— Эпĕ апла каламан!

— Устим, эсĕ чи пысăкки. Астăваканни пулăн.

— Юрĕ.

Вĕçтерчĕç. Ăмăртса чупаççĕ шереметсем.

— Çемьесĕр çын эпĕ тетĕн хăвна,— шалт тĕлĕннипе сăмах чĕнмесĕр тӳсеймерĕ хĕрарăм.— Эсĕ учительница пулĕ?

— Çук. Кусем — хамăр кӳршĕ ачисем. Вĕсен çырла çиес килет.

Çав кунах, каçалапа, Арине патне ачасем пĕр пĕчĕк пуракпа пиçсе хĕрелнĕ çĕр çырли илсе пычĕç.

— Çисе пăх-ха,— сĕнчĕ вара Арине палатăра пĕрле выртакан юлташне.

— Ах, ытла сĕткенлĕ-çке,— тутине чăплаттарса çырла çирĕ Тенисса.

* * *

Тухтăр ирхи кӳлĕм чĕрене тепĕр хут тĕрĕслесе пăхрĕ те çапла каларĕ:

— Пĕрмай палатăра ан ларăр. Тулта çӳреме юрать сирĕн. Уçă сывлăш эмел пекех хаклă çыншăн.

Арине шутсăрах хĕпĕртерĕ. «Сывалас енне кайрăм»,—хăй май ăнланчĕ вăл тухтăр сăмахне. Паян ун пуç та çаврăнмасть пек. Халат тăхăнса тирпейленчĕ, пуçне шурă тутăр çыхрĕ, вара сада тухрĕ. Больница пахчи — шăп парк. Йывăç-курăк нумай, сывлăшĕ техĕмлĕ. Утрĕ тĕмсем хушшипе хывнă сукмак тăрăх. Пыл хурчĕсем нăй-нăй нăйлатаççĕ. Чечеклĕ кĕпе тăхăннă лĕпĕшсем вĕлтлетеççĕ; курăк хушшинче, таçта, шăрчăк сĕрме

купӑсне туртать. Пыл хурчӗсем чечекрен чечеке вӗҫеҫҫӗ, кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ. Ҫутҫанталӑк чуна ҫӗклентерет. Тӳпенелле хӑпаракан хӗвел самаях хӗртет. Арине вӑрӑм туратлӑ лутра йӗлме айӗнчи сак ҫине ларчӗ.

— Ав вӑл ӑҫта? Сана шыраса тинке тухатчӗ.

Арине сас илтӗннӗ ҫӗрелле ҫаврӑнса пӑхрӗ те Пайӑркка Аннине палласа илчӗ. Унпа пӗрле — хӑй пекех ватӑ хӗрарӑм, хула майри евӗр тӑхӑннӑскер. Вӗсем хыҫӗнче икӗ ҫамрӑк: пӗри — хӗр, тепри — йӗкӗт.

Арине ура ҫине тӑчӗ.

— Эпӗ пахчара уҫӑлса ҫӳрерӗм те хӗвелтен пытанса тин ҫеҫ сак ҫине килсе лартӑм,— айӑплӑн каларӗ вӑл.

— Арине, сан пата хӑнасем илсе килтӗм,— терӗ Пайӑркка Анни.

Ушкӑн ҫын ун умне пырса чарӑнчӗ.

— Э-э, ара, ку сан мӑнуку — Альтиҫ ывӑлӗ — Ялампи-ҫке. Паллаймалла мар ӳссе хӳхӗмленнӗ эсӗ, Ленинградра марччӗ-и-ха? — пуплерӗ Арине.

— Эсӗ, акӑ, куна паллатӑн-и? — Пайӑркка Анни кулкаласа тӑракан майрана ҫурӑмӗнчен лӑпкарӗ. Арине сӑмах чӗнеймен пирки хӑех каларӗ вара:—Пачах маннӑ-и эсӗ Вера Ивановна Матеу юлташа?

— Эй, чӑнах та-ҫке. Кай, ытла улшӑннӑ! — кӑшкӑрса ячӗ Арине.— Халӗ йӑлтах палларӑм. Куҫӗсем ӗлӗкхи пекех вичкӗн пӑхаҫҫӗ.

— Ну, сывӑ-и, Арине! — ыталаса илчӗ ӑна Матеу.— Сан чиперлӗхне те пурнӑҫ упраман иккен.

— Мӗн тӑвӑн, ҫулсем авса хӑвараҫҫӗ,—хаш сывласа илчӗ Арине.— Ку пике кам?

— Астӑватӑн-и, ман Хосе ятлӑ ывӑлӑм пурччӗ, ку унӑн хӗрӗ — Реналь.

— Эх, ҫырлах!—тӗлӗнет Арине.—Ларӑр-ха сак ҫине. Питӗ шел хам килте пулманни... Часах кӑлараҫҫӗ пулӗ-ха та.

Хӑнасем Аринепе юнашар ларчӗҫ. Ялампипе Реналь пӗр-пӗринпе тем пӑшӑлтатрӗҫ те, ирӗк ыйтса, йӑпӑртлӑха тӑрса кайрӗҫ.

Виҫӗ хӗрарӑм сӑмах вакларӗ вара: ыйтмалли-пӗлмелли питӗ нумай-ҫке. Пӗрле питӗ сахал пурӑннӑ, анчах тепринпе ӗмӗр тӑршшӗпе юнашар утса тухсан та ҫакӑн чухлӗ сӑмах тупӑнас ҫук. Иртнине асӑнни макӑрттарчӗ те, култарчӗ те вӗсене.

Йӗлме мӗлки тепӗр еннелле сулӑнчӗ. Ҫак вӑхӑтра Тенисса пырса тӑчӗ. Ӑна Аринене чӗнме сестра янӑ

иккен: эмел ĕçме вăхăт çитнĕ, тет, апат та хатĕр. Ирĕксĕрех уйрăлмалла.

— Акă сана, Арине, Ленинград купчене çĕ,— сумкинчен канфет коробки кăларса тыттарчĕ Матеу.

— И-и, ара, эпĕ ача-пăча мар-çке, ахалех чăрманатăр.

— Больницăра эпир пурте — ача,— лăплантарчĕ ăна Вера Ивановна.

Пайăркка Анни те, ав, пĕр куршак хăйма илсе килнĕ. Йышăнмасан кӳренĕç. Арине ăнланать ĕнтĕ çакна.

Хăнасене Арине больница хапхи патне çитиччен ăсатса ячĕ.

Пĕр-пĕрне ырлăх-сывлăх сунса, чи çывăх çынсем пек сывпуллашрĕç вара.

Больницăра апат хыççăн канма выртрĕç. Ытти кунсенче часах лăпланса кăтăш та пулаканччĕ. Паян Арине те, Тенисса та çывăрса каяймарĕç, енчен енне çаврăнкаласа выртаççĕ.

— Кӳршĕ, мĕншĕн çывăрмастăн? Кам сирчĕ канлĕхе? — ыйтрĕ Арине Тениссаран.

— Сирĕн пирки шухăшлатăп. Чăнах, мĕнле майра пулчĕ вăл? Ыталашса чуптурăр.

— Ав, кам пирки. Вăл аякран, Ленинград хулинчен, килнĕ хăна.

— Тăвану-и?

— Нимле тăван та çук терĕм-çке.

— Кам эппин?

— Ман пурнăçăмри ĕмĕр манми самантпа çыхăннă çын вăл.

— Каласа пар-ха. Çын пурнăçĕ çинчен пĕлме питĕ юрататăп,— тархасланă пекех ыйтрĕ Тенисса.

Пулса иртнине час-час аса илме юратакан Арине каласа пама ӳркенмерĕ:

...Вăрçă пуçланнă çул, кĕркунне, районтан колхоза хыпар çитрĕ. Канаш станцине Ленинградран эвакуациленĕ командирсен çемйисене антарса хăварнă. Пирĕн колхозăн та пĕр çемье йышăнмалла. Çав сăлтавпа ятлă çынсене ятарласа пухса калаçрĕç. «Вĕсем валли ăçта хваттер тупмалла?» — акă мĕн шухăшлаттарчĕ кашнинех. Пайăркка Анни çавăн чух сĕнӳ пачĕ: «Пирĕн çумри пӳрт пуш-пушах ларать». Пӳрт хуçи Хветле аппа вăрçă тухнă кун вилнĕччĕ. «Вырнаçтарар çав çурта!» Пурте килĕшрĕç çакăнпа. Командир çемйине колхоза

илсе килме Канаш станцине Пайăркка Аннине хăйнех ячĕç.

— Пире, ялти виçĕ комсомолкăна — Йывраçа, Хвенюка тата мана — Хветле аппа çуртне çуса тасатма хушрĕç. Эпир, çамрăксем, турткаланса тăмарăмăр. Васкасах ĕçе тытăнтăмăр. Эпĕ шыв кайса ăсрăм. Пӳрте кĕрсе витресене кĕвентерен вĕçертсе урайне лартнăччĕ кăна, Йывраçпа Хвенюк аллинче хура хашака куртăм. Тинкерсе пăхаççĕ тем тупнăн.

— Ара, ку Хветле аппан ывăлĕ Петĕр-иç,— тет Йывраç,— эпе ăна питĕ лайăх астăватăп.

— Мана та кăтартăр-ха,— утса пытăм эпĕ хĕрсем патне.

— Чару çук, кур ара,— хашакана тыттарчĕ Йывраç мана.

Сăнӳкерчĕк иккен. Илемлĕ каччă, куçĕсем хăюллă пăхаççĕ. Чăтаймарăм, кăшкăрсах ятăм: «Мĕнле кĕрнеклĕ, илемлĕ каччă! Салтак тумĕ çав тери килĕшет хăйне».

— И-хик! — кулса ячĕ Йывраç.— Юратса та пăрахрĕ пĕрре пăхсах. Хĕр темерĕн, самантрах савни тупрĕ.

— Фронтран тăшмана çĕнтерсе таврăнсан, сана Петĕре качча паратпăр,—сăмах тĕкмесĕр юлмарĕ Хвенюк та.

— Эрнеччĕ те, эрнере эрнекун пĕрре çеç килет-çке,— терĕм. Вăтаннăран питĕм-куçăма вут хыпрĕ. Теме сиссе чунăмра ырă-ырă туйăм çуралчĕ манăн çавăн чух. Кам пĕлет хĕр шăпине, арăм ятне хăш килте илтессе.

Çара кайиччен Петĕре курасса курнă. Халĕ те асра-ха: эпир, вĕтĕр-шакăр хĕр пĕрчисем, вăйăра, пĕрене купи çинче, çитĕннĕ пикесем хыçĕнче лараттăмăр. Пĕррехинче Петĕр пирĕн çине пăхрĕ те юлташне çапла каларĕ: «Куратна, пирĕн валли мĕн чухлĕ хĕр ӳсет. Эпир çартан çаврăнса килнĕ çĕре вĕсем хурăн çырли пек пиçеç. Татса илекенĕ эпир пулăпăр». Паллах, ун сăмаххисене илтсе эпир, айвансем, ни савăнма, ни хурланма пĕлмен. Вăл çав çул çара кайрĕ.

Илтнĕччĕ эпĕ Хветле аппана пытарнă хыççăн çынсем калаçнине: ывăлĕн служба вĕçленнĕ, вăрçă пуçланман пулсан, киле килмеллеччĕ. Анчах ăна Тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕлеме çартах хăварнă. Фронтра ĕçсем ытла хĕрӳ пулнипе Петĕр амăшне юлашки çула ăсатса яма та килеймен.

Çапла, Хветле аппа пӳртне çума пырсан сăнӳкерчĕкĕнче курнă Петĕр мана пачах тыткăнларĕ. Кунĕнçĕрĕн ун çинчен шухăшлатăп. Çывăрма выртсан та, ир

тăрсан та вăл ман пуçран тухмасть. Пĕтĕм чунтан ĕненетĕп: никам та мар, манăн варли — Петĕр.

Пÿрт-çурт тасатнă кун Пайăркка Анни Канаш станцинчен Ленинградран эвакуациленĕ командир арăмне икĕ ачипе лартса килчĕ. Çав хĕрарăм шăпах ĕнтĕ ман патăмра пулчĕ, Вера Ивановна Матеу тесе чĕнеççĕ ăна. Тĕлĕнмелле ырă кăмăллă хĕрарăм. Хăй вăл вырăс, упăшки — испанец.

— Вăл Испанире пурăннă-и? — кăсăкланчĕ Тенисса.

— Çук-çке. Испани çамрăкĕпе, Матеупа, Ленинградра тĕл пулнă вăл. Испание фашизм пусмăрласан, коммунистсенчен нумайăшĕ Совет Союзĕнче хÿтлĕх тупнă. Çавсен шутĕнче çамрăк каччă Матеу та пулнă. Вĕсем кунта тăван халăхне ирĕке кăларасшăн кĕрешнĕ.

Вера Ивановна Матеу Хветле аппа пÿртĕнче пурăннăран вăл Петĕр тăванĕ пек туйăнатчĕ. Çавăншăнах эпĕ ăна питĕ килĕштернĕ. Хăй те питĕ ырă çынччĕ. Пĕрпĕрне пулăшаттăмăр.

Пирĕн ял çăви аслă çул хĕрринчеччĕ. Иртсе çÿренĕ чух вăш-ваш кĕрсе тухаттăм Петĕр амăшĕн вилтăпри çине. Тăприне юсаттăм. Пĕррехинче вăрманта пилеш йывăççи тăпăлтартăм та çăва çине утрăм. Аттепе-анне вилтăпри çинче те пилеш лартса ÿстернĕччĕ. Кĕркуннесенче пилеш хĕп-хĕрлĕ çупкамсемпе ларнăшăнах юрататăп ăна. Кайăксем хĕлле те юлнă çырлисене пуçтарма пырса лараççĕ. Хветле аппа вилтăпри çинче те пилеш ÿстересшĕн эпĕ. Кайăксем ытларах юрлаччăр, тетĕп. Пуç вĕçне пĕчĕк шăтăк чаврăм та пилеш йывăççин тĕпне майлаштарса кĕртсе лартма тытăнтăм. Темиçе кун юрпа çумăр хутăш йăсласа тăнă хыççăн çанталăк уяртнăччĕ. Хĕл ларасса ĕненес килмест. Хĕвел пăхать хаваслăн.

Кĕрмешнипе хам пата çын çывхарнине те сисмен.

«Вăй патăр!» — илтрĕм эпĕ. Пуçа çĕклесе пăхрăм та — шинеллĕ çын тăра парать. Аллинче хăйĕн туя. Çурăм хыçĕнче — кутамкка. Вăл пуш-пушах пулас.

— Йывăç лартасшăн-и?.. Эпĕ анне патне кĕтĕм. Таçтарах пытарнă ăна?

Эпĕ салтак çине тĕсесе пăхрăм. Палласа илтĕм хайхискерне. Ара, ку Хветле аппа ывăлĕ — Петĕр-иç!

— Эсĕ шăпах аннÿ вилтăпри умĕнче тăратăн,— терĕм. Хам темшĕн сиксех чĕтреме тытăнтăм.

— Çакăнта пытарнă-и ăна?

— Çакăнта пытартăмăр Хветле аппана.

— Каçар мана, аннем, тăпруна таптама килейме-рĕм,— çĕлĕкне хыврĕ Петĕр. Кĕсйинчен шурă тутăр кă-ларса, пичĕ тăрăх юхса аннă куççульне шăлчĕ.— Вăрçă пĕтсен, палăк лартса парăп. Сĕтел-пуканĕ те пулĕ. Час-часах килсе, ĕçме-çимепе асăнăпăр сана. Ачам-пăчам та пуç тайса тăрĕ ун чух. Халĕ ман салтак кутамккинче çăкăр чĕллипе сахăр катăкĕсĕр пуçне урăх нимĕн те çук.

Петĕр, кутамккине салтса, çавсене кăларчĕ. Мана та çăкăр чĕллине хуçса пачĕ, пĕчĕк катăк сахăр тыт-тарчĕ.

— Пилле ĕнтĕ, аннем,— терĕ Петĕр, **çыртса** илнĕ çăкăрне чăмласа.— Тăпру çăмăл пултăр. Мана кĕтме ан пăрах, таврăнма тăрăшăп.

Эпĕ те Хветле аппан вилтăпри çине çăкăр татăкĕпе сахăр катăкĕ хутăм.

Вара Петĕр мана йывăç лартма пулăшрĕ. Кайран эпир яла пĕрле утрăмăр. Вăл кăшт уксахлать-мĕн.

— Ураран амантăм. Халĕ аптрамасть, госпитальте юсарĕç. Фронта кайиччен яла кĕрсе тухма ирĕк илтĕм,— пуплет Петĕр.— Ялйыш еплерех сывлать?

— Пурăнатпăр, тăшмана çĕнтересшĕн питĕ тăрăшса ĕçлетпĕр,— терĕм эпĕ.— Сирĕн пÿртре Ленинградран эвакуациленĕ командир арăмĕ Вера Ивановна Матеу икĕ пĕчĕк ачипе пурăнать.

— Вĕсене чăрмантармăп ытла. Ман отпуск тени мĕн-пурĕ те ик кун çеç.

Пĕр авăк чĕнмесĕр утрăмăр. Унтан Петĕр çапла ка-ларĕ:

— Эсĕ Арине вĕт-ха.

— Çавă,— йăпăрт пăхса илтĕм эпĕ Петĕр çине.

— Арине, ман пата фронта çыру çырăн-и?

— Çырăттăм та, анчах салтак патне çыру çырма чĕлхем çепĕç мар çав ман,— тетĕп.

— Эсĕ чунупа çыр.

Яла кĕрсен уйрăлса кайрăм. Эх, ытла анра пулнă çав эпĕ. «Ман пата пырса лар»,— тесе чĕнме те ăс çи-терейменрĕм.

Тепĕр кунне Петĕр ман хапха умĕнчех пулчĕ. Кал-лех тăм чĕлхем хупларĕ.

Ĕне питĕ каскăнччĕ ман. Калинкке шашулккине майракипе çĕклесе уçса, урама тухса каятчĕ. Çул тăрăх тăкăнса юлнă утă, арпа, улăм çисе çÿретчĕ. Тăрансан таврăнать.

Çапла авăн çапнă çěртен киле килтěм апата. Ёнене шăварас тесе, витрепе ăшă шыв илсе тухрăм. Йыхăратăп ěнене. Унччен те пулмарě, урам енчен калинкке уçăлчě те ěне кěче. Кам уçса кěртрě-ха ăна? Хапха юпи çумěнче Петěр тайăнса тăра парать.

— Ятламастăн-и ěнўне уçса кěртнěшěн, Арине? — тет.

— Ах, ку çăткăна! — ěнене хăмсарма тытăнтăм. «Кěрсе тухсам»,— тесе чěнме пěлмерěм Петěре каллех. Паян кунччченех каçармастăп хама çавăншăн. Çын сăмаххи тивесрен чěтресе тăнă-çке, ара. Хěрупраçăн ятне часах сумран калараççě усал чěлхесем.

Виççěмěш кунне, ирхине, Петěр кайнă, терěç. Ăна Пайăркка Анни Канаш станцине çитиччен лавпа ăсатса янă.

Çав кунсенче пирěн ял пурнăçě улшăнчě. Фашистсем Мускав патнелле ăнтăлаççě. Окопсем чавмалла.

Пирěн ял айлăмлăрах вырăнта. Ялăн пěр енче—юханшыв, тепěр енче — çўллех мар сăрт. Тахçан ěлěк пирěн ял вырăнěнче шыв вăкăрě каннă пулать. Йěри-тавра тинěс шывě сарăлса выртнă имěш. Хěвелтухăç енчи сăрт тўпипе хўтěлев трасси иртмелле. Çав трассăна тума часах Атăл енчи чăвашсене ертсе килчěç. Йышлăн хайсем. Кашнин патěнчех сакăршарăн та вуншарăн пурăнма тытăнчěç вěсем. Пирěн ял çыннисене те ку ěçрен хăтарман. Пире, темиçе хěре, хамăртан çичě çухрăма ячěç. Пěр лав пачěç. Эпир те çывăхри яла хваттере вырнаçрăмăр. Кунта та халăх килсе тулнă. Пěр ушкăнне окоп чавтараççě. Арçынсем тупă-пăшал персе тăмалли хуралта хайлаççě. Пирěн ушкăн çав хуралта тума чул турттарать. Чул тарăн çырмара. Ăна лумпа чакаласа кăларатпăр. Пысăк чул катрамěсене мекеçленсе аран-аран йăтса лав çине хуратпăр. Çуна пулсан, тиеме çăмăлтарах, анчах юр час çумарě çав çул. Шăн çěр çийěн урапа хăлтăртатать. Тулли чух тěнěлě халь-халь хуçăлса каясла лăчăртатса чěриклетет.

Ир пуçласа каçчен тăрмашатпăр. Сўлтен кайнипе тепле ўкмесěр тўсеттěмěр. Чанк! Чанк! чанклатать лум чула перěнсе. Хăлхана йěрěнтерсе çитерně çак сасă таврана тултарса тăрать. Ал сыпписем тўсмелле мар ыратаççě, пўрнесем шăннипе татăлса ўкменни кăна.

Тěттěм пулсан тин ěç пăрахаттăмăр. Хěр-тантăшсем хваттерсене кěрсе юлатчěç, эпě вара ялăма чупаттăм кашни кун.

— Мĕн илĕртнĕ вара сана киле çав териех? — кăсăкланать палатăра пĕрле выртакан хĕрарăм.— Çăкăр ыйтан ачу-пăчу пулман.

— Ку тĕрĕсех. Ун чух хам та ача шутĕнчен тин çеç тухнă. Вунсакăр çул тултарнă. Тантăшсем те ӳкĕтлетчĕç. Пĕри те вĕсенчен эпĕ çичĕ çухрăма мĕншĕн çапла кашни кун ыткăннине чухлаймастчĕç. Киле кăчăк туртакан пысăк йӳтĕм пулнă çав ман чунра. Эпĕ Петĕртен çыру кĕтнĕ. Вăл мана çырассăнах туйăнатчĕ темшĕн. Анчах кăлăхах, почта ещĕкĕ ялан пушăччĕ. Çыру çук. Ыран пулатех,— тесе лăплантараттăм хама. Тепĕр кун каллех лĕпĕстетсе таврăнаттăм. Марье почтальон патне кĕрсе тухас килетчĕ, вăл пĕлессĕн туйăнатчĕ. Вăтанни тытса чарать. Юрĕ, паян çыру илсе вулаймарăм, ыран савăннипе ташлăп акă. Унчченхи пекех киле вĕçтеретĕп. Ял çулĕ çине тухсан ывăнни таçта кайса кĕрет. Ура тупанĕ çĕре перĕнмест.

Ентĕ Çĕнĕ çул çитсе килет.

Чавнă окопсем çухрăм-çухрăмĕпе тăсăлаççĕ. Тупăпăшал лартса пемелли хуралтсем (ăна ун чух «Огневая точка» тетчĕç) хатĕрпе пĕрехчĕ. Вĕсем мана темшĕн çĕр айĕнчи кăшт çĕкленнĕ, бинокль витĕр тинкерекен капашсăр мăнă улăп пек туйăнатчĕç. Пурте вĕсем анăçалла пăхатчĕç.

Раштав иртсен, пĕр кунĕнче, каллех ĕç хыççăн киле тĕрлеттерсе çитрĕм. Пăхрăм почта ещĕкне. Урра! Çыру пур. Тинех кĕтни — умра. Савăннипе чунăм темле тухса ӳкмест хамăн. Çыру илнĕ ятпа пӳртре пысăк лампа çутрăм. Еçре йĕпенсе те сивĕпе шăнса хытнă урари тăлана салтасси те асра çук. Тумтире те хывман. Хыпаланса кĕрсе лартăм сĕтел хушшине çыру вулас шухăшпа. Куçăмсем ваштах йĕрке тăрăх чупрĕç. Вырăсла çырнă. Мĕн япала, ара, ку? Анчах чухлатăп, Петĕр çырнăскер мар. Апла пулин те çырура Петĕре асăннă. Вăл Тăван çĕршывăмăрăн столицине, Мускава, тăшмансенчен хӳтĕлесе пуçне хунă, тенĕ. Татах тепĕр хут тимлесе вулатăп. Чим-ха, ара, ку Петĕрĕн вилнĕ хучĕ-çке!.. Кăшкăрса ятăм. Куççуль шăпăртатать. Ӳлетĕп. Мĕншĕн хăй пĕр çыру та çырмарĕ-ха? Аçта каяс, кама пĕлтерес?

Вĕсен килĕнче пурăнакан командир арăмĕ Вера Ивановна Матеу патне чупрăм. Ăна тыттартăм çырăва. Паллашрĕ хайхискер.

— Эх, шел. Пĕтнĕ йĕкĕт,— тути чĕтрерĕ, куçĕсем

шывланчĕç. Часах ывăлне Пайăркка Аннине чĕнтерме ячĕ. Туххăмрах каçрĕ вăл. Виççĕмĕр те хыпса çунатпăр.

— Мĕншĕн унăн вилнĕ хутне ман пата ярса панă-ха? — ĕсĕкле-ĕсĕкле ыйтатăп.

— Эх, Арине, ним те чухлаймастăн-и вара? — тет Пайăркка Анни.— Юратнă вăл сана. Канаш станцине леçме кайнă чух вăл мана акă мĕн каларĕ: «Анна, çав Аринене чипер пăхса усрăр-ха. Калаççах тăрăр. Вăрçăран тĕрĕс-тĕкел çавăрăнса çитсен, эпĕ ăна качча илесшĕн. Юрататăп, чун ун еннеллех туртăнать». Хăйĕнпе инкек пулас-мĕн пулсан ун пирки кама пĕлтермеллине каланă ĕнтĕ вăл.

— Çапăçăва кĕриччен кĕсйине адрес та чиктереççĕ,— сăмах хушрĕ Матеу юлташ.— Эсĕ, Арине, ĕрескеллех ĕненсе ан пăрах. Ытлашши ан ван. Тен, ку усал хыпар йăнăш килсе çапăннă.

— Ун пек çĕрте, каланă пек, пăтраштарасси пулатех,— лăплантарма пăхать Пайăркка Анни те.— Йĕрсе мĕн усси? Хуйхă çынна ыр тумасть, тăварлă куççуль куç çутине пĕтерет.

— Ах, йăнăш пултăрччĕ ку хыпар,— ниепле те ахлатма чарăнаймастăп.

Вилнĕ хучĕ килнĕ хыççăн Петĕре тата çывăхрах курма тытăнтăм. Тĕлĕкре вĕçĕ-хĕррисĕр пĕрле çӳретпĕр. «Часах çыру çыратăп. Эпĕ вилмен»,— тетчĕ вара. Эпĕ, айванскер, чул кăларнă çĕртен шав киле чупатăп тĕлĕке ĕненсе. Анчах чуптума тытăнсанах Петĕр çухалатчĕ. Нумай асаплантăм.

Часах Мускав çывăхне пырса тăваннă фашист çарĕсене аркатнă хыпар çитрĕ. Савăнтарчĕ вăл ялйыша. Совет Çарĕ малалла та тăшмана хӳтерсех пычĕ.

Хӳтĕлев трасси тăвас ĕç вĕçленчĕ. Шĕкĕр турра, вăл кирлĕ пулмарĕ пачах. Çапах та тупă-пăшал вырнаçтармалли хуралтсем пăхсан чуна çӳçентеретчĕç. Мĕн вăрçă пĕтиччченех упранчĕç. Кайран, вăрçă хыççăн, хуралтсене пăсрăмăр, чулне çул тума, йывăç юпасемпе хăмасене кĕперсем тунă çĕре турттартăмăр.

— Петĕр мĕнле, таврăнаймарĕ-и? — ыйтрĕ шухăшлăн Тенисса.

— Мĕн çамрăк ĕмĕр иртичченех кĕтрĕм ăна, кĕтсе илеймерĕм,—ассăн сывлăш çавăрать Арине.—Ĕнтĕ сăнпичĕ те куç умĕнчен çухалчĕ. Тепĕр чух аса илесшĕн тăрăшатăп, çывхарать пек çын, çавăнтах тĕтре ăшне путать.

— Сирĕн ӳсĕм вăрçă нушине тӳснĕ çав. Эпĕ хам ун чух алăри ача пулнă.

Палатăна сестра кĕчĕ. Аринен укол тутарттармалла.

* * *

Арине пăшăрханма тытăнчĕ. Çук, хăй пирки кулянмасть. Больницăра икĕ эрне выртнă хушăра ун патне çирĕм çын ытла килсе кайрĕ. Питĕ паха-мĕн ку, хăвна хисепленине туятăн. Апла пулсан, эсĕ те пурнăçра ытлашши çын мар. Ĕнер те-ха кӳршĕ хĕрарăмсем виççĕн кĕрсе тухрĕç. Пахчари сак çине ларса чун каниччченех пуплерĕç. Наçтук ятли, шӳтлеме ăстаскер, култарса пĕтерчĕ. Мĕн чухлĕ çимелли хăварчĕç вĕсем! Лавккари пĕр çимĕçе те туянмасăр хăварман курăнать. Хăймине килтен илсе килнĕ ĕнтĕ.

Тенисса патне пĕр этем килсе куринччĕ хуть. «Эх, чунсăрсем! — ятлаçса илет Арине ăшĕнче.— Больницăран маларах тухсан (тухтăр ĕнер часах юсанса çитен терĕ), ун ялне кайса килетĕп. Упăшкине тĕл пулса хăтăрмалла кăшт, ачи-пăчине те намăслантарсан чармасть». Тата нивушлĕ ăнланмаççĕ кӳршисем: пульницăна кĕрсе тухсан чирлине сывалма пулăшнине?

* * *

Ире яхăн пуçланнă çумăр çаплах чашлаттарать.

«Вăхăтра килнĕ ырлăх,— хăйпе хăй калаçрĕ Арине, тулалла кантăк витĕр пăхса.— Пĕрмай хĕвел хĕртнипе çĕр пичĕ çуркаланма тапратнăччĕ-ха. Хăмла типсе хăрасран хăраттăм. Халĕ ĕнтĕ ашкăрать».

Чирлисем пахчана тухаймаççĕ, йĕпе унта.

Палатăна кăвак халат тăхăннă хĕр хĕвĕшсе кĕчĕ. Ку вăл чирлисем патне килекенсем парса хăварнă кучченеçсене палатăсене леçекен санитарка.

— Ку сире, Арина Степановна,— тумбочка çине шоколад тата хуçлатнă хут листи хурса хăварчĕ вашават хĕр.— Эпĕ тепĕр хут çавăрăнса çитиччен çыру çырса хатĕрлĕр.

Арине йăпăр-япăр хут татăкне ярса илчĕ. Акă мĕн тесе çырнă унта:

«Арине, тăванăм, эсĕ йывăрах чирлерĕн-и вара? Тархасшăн, йăпăрт тух-ха. Калаçмалли пур. Сана манаймасăр пурăнакан Яхвар».

— Тьфу!—сурса илчĕ Арине.—Ирсĕр чун! Мĕн туса çӳрет-ши? Кам чĕннĕ ăна, путсĕре.

— Кама сурсах вӑрҫатӑн эсӗ? — кӑсӑкланать Тенисса.

— Пур ялта ҫавнашкал усал этем.

Кӑвак халатлӑ хӗр килчӗ те:

— Явапне ҫыртӑр-и? — терӗ.

— Кала ӑна: сан пата тухмасть, те. Шоколадне ме, каялла пар.

Хӗр йӑпӑштӑн кулса илчӗ:

— Ваттисем те айванланаҫҫӗ иккен.

Арине ним те чӗнеймерӗ, хӗр тухса та кайрӗ.

Тепӗртакран хӗр каллех кӑвак халатне варкӑштарса кӗчӗ. Аякранах тумбочка ҫине хут татӑкӗ ывӑтрӗ.

— Сирӗншӗн, юнтармӑшсемшӗн, чуп кунта темиҫе хут,— ҫиллессӗн мӑкӑртатрӗ вӑл.

— Килмелле марччӗ. Эпӗ хушмарӑм-ҫке,— терӗ ӑна хирӗҫ Арине.

— Старик хушать.

— Ун сӑмахне тек ан итле.

— Итлемӗн унта, премине катсан,— мӑрт-март пӑркаланса тухса кайрӗ.

«Мӗн ҫырать-ши татах?» — кӑмӑлсӑррӑн илчӗ Арине хута.

«Мӑн кӑмӑлна пулах вилетӗн ёнтӗ. Вил, вил! Ҫакна сунатӑп сана. Пытарӑпӑр».

Ҫапла ҫырнӑ Яхвар.

— Ых-х, ҫӗлен! — ятлаҫса илчӗ Арине, ҫырӑва чӑрчар чӗрсе.

— Мӗн ҫырать аплах? — ыйтрӗ каллех Тенисса.

— Вилӗм сунать мана.

— Айтурах! Кам вӑл?

— Пур пирӗн ялта ватӑлсан та ӑс кӗмен этем. Мӗн чухлӗ тарӑхтарман-ши вӑл пире, упӑшкасӑр хӗрарӑмсене. Ырӑ ҫынсем пуҫӗсене хучӗҫ, ку вара вӑрҫӑран тупрапа таврӑнчӗ.

— Тупрапа? Ним те ӑнланмастӑп.

— Ҫапла, ара,— ҫирӗплетрӗ Арине.— Атӑ-пушмак, темиҫе тӗрлӗ пустав, пурҫӑн, пӗр чӑматан ал сехечӗ, татах темтепӗр.

— Сехечӗ ун чухлех мар пулӗ,— ӗненмест Тенисса.

— Пӗр чӑматанах! Хам куҫпа хам курнӑ, тутӑрлӑх пӗр аршӑн пурҫӑн туянма кайсан.

— Мӗн тума ун чухлӗ сехет кирлӗ пулнӑ ӑна? Тата ӑҫтан тупнӑ ун чухлӗ?

— Вилнӗ фашистсен аллисенчен салта-салта илнӗ

пулĕ. Сехечĕсене сутма тытăнчĕ. Ямăт укҫа этеме алхастарать кăна. Ĕҫке ерчĕ Яхвар. Сăмакун купет те хусах хĕрарăмсем патне чупать. Миҫе хутчен ман пата пырса кĕмен-ши вăл хĕрĕнкĕ пуҫĕпе. Тӳсме ҫук вĕҫкĕн хăй: икĕ аллинче икĕ сехет. Пусмăрласшăн тĕпĕртеттеретчĕ, ниҫта кайса кĕме пĕлеймĕн. «Парăнсан алла сехет ҫыхтарса хăваратăп»,— пакăлтататчĕ ухмах. Эпĕ ăна турчăкапа ислетсе кăларса яраттăм. «Хăҫан та пулин пурпĕрех ман алла лекен!» — лĕпĕртететчĕ йĕрĕнчĕк. Кураймастăп ăна чунран. Сăн-сăпачĕ ҫав тери килĕшӳсĕр: куҫĕ хĕсĕк, шăлĕ сарă, мăйăхĕ тутине хуплать. Тăрлавсăрскер, тем те пакăлтататчĕ. Пистерсе ҫитерчĕ, ун мăшкăлне тӳсеймен енне ялтан тухса тарас вĕҫнех ҫитрĕм. Пурин те пĕр ăс мар ҫав, ун ҫеммипе ташлакан айван хĕрарăмсем тупăннăччĕ.

— Арăмĕ пулман-и-мĕн? — ыйтрĕ Тенисса.

— Пулнă та-ха. Ирĕке сулăннă упăшкана ăҫтан ҫĕнтерен? Патакларĕ арăмне пайтах. Чĕрĕ ҫын чĕри чĕн мар ҫав. Тӳсеймерĕ упăшкин мăшкăлне, ҫĕре кĕчĕ, икĕ хĕрачине тăлăха хăварчĕ.

Яхвар ҫакан хыҫҫăн хăта ярса тинкене кăларатчĕ. Тăкăрлăксенче тытса чарать. Пылне юхтарать чĕлхипе. Ашĕнче хăйĕн — пăрлă нӳхреп.

Шĕкĕр турра, сутă тунăшăн айăпларĕҫ. Унтан авланчĕ. Ҫĕнĕ арăмпа лăпланать пулĕ терĕмĕр. Кĕтсех тăр. Сысна хăй пĕкреҫне пĕлмест. Каллех арăмĕ алла лармасть имĕш. Пĕлтĕр иккĕмĕш арăмĕ вилчĕ.

Тупата, ҫĕрĕк ҫăка ҫĕр ҫул пурăнать тесе ахаль каламаҫҫĕ-мĕн. Хăйне каллех хусаха кăларнă ватсупнă. «...Сана манаймасăр пурăнакан Яхвар» тесе ҫырма хăйнă.

— Хăй вилĕм сунать сана.

— Унта шăла пăхса илмеҫҫĕ, тен, хăйĕнех кайма тивет малтан.

— Тухса курмаллаччĕ-ҫке вăл старике,— кулкаларĕ Тенисса.

— Ҫурăмĕ кĕвентеленнĕ старике мĕн курмалли пур, куҫ ҫутине сая яни шел,— тарăхнипе каларĕ Арине.

* * *

Татах ҫĕр иртнĕ хыҫҫăн кун килчĕ. Больницăри пурнăҫ хăй йĕрĕпе чупать: эмеллеҫҫĕ, ҫитереҫҫĕ, ҫывратаҫҫĕ...

Сестра кĕчĕ палатăна. Чи малтан кантăка уҫать вăл.

— Таса сывлăш вăл хăйне май хаклă эмел,— асăрхаттарать сестра.

— Çумăр лӳшкенĕ хыççăн сывлăшĕ ытла чĕрĕ-ха,— тавăрать Аринепе пĕрле выртакан хĕрарăм,— çурăма çӳçентерет.

— Часах типет,— сăмах хушать каллех сестра. Палатăна тухтăр кĕриччен вăл пурне те тума ĕлкĕрет: эмел ĕçтерет, уколсем тăвать, градусник лартса температура виçет.

— Сывлăх сунатăп! — тет тухтăр, палатăна кĕрсенех. Акă вăл Аринен чĕрине итлет.— Аван. Часах киле кайăн.

— Тавтапуç!— савăнать Арине...— сирĕн шерпетлĕ сăмахăр пире чăннипех сыватать.

Тухтăр кăмăллăн кулкалать. Вăл Тениссан чĕрине те итлет. Килĕшмест пулас тухтăра унăн чĕри мĕнле тапни, пуçне суллакаласа илет.

— Эсир паян-ыранах тухаймастăр-ха. Тепĕр тĕрлĕ эмел пама тытăнатпăр сире,— тет тухтăр. Вăл эмел ятне калать сестрана.

— Мĕнле апла? Ара, ку,—Аринене пӳрнипе тĕллерĕ Тенисса,— манран кайран килчĕ, малтан тухать-и?

— Мĕн тăвăн? Сирĕн чирĕр шала кайнă. Ан хыпаланăр, киле каятăрах,— лăплантарать ăна тухтăр.

— Çемье тепле пурăнать, нихăш те килмерĕ,— кулянать Тенисса.

— Чимĕр-ха, сирĕн упăшкăр килнĕ-иç, паçăртанпах кĕтет сире. Халĕ ĕнтĕ ун патне тухма пултаратăр. Анчах та ытлашши хыпăнса ан ӳкĕр, лăпкăрах пулма тăрăшăр.

— Юрĕ, юрĕ.

Тухтăрпа сестра палатăран тухсанах, Тенисса тирпейленме тытăнчĕ, çӳçне тураса якатрĕ. Йăл-йăл кулкалать. Калăн, савнипе курнăçма каять тесе.

— Пыр, упăшкапа паллаштарăп,— чĕнсе хăварчĕ вăл Аринене.

Пĕчченех тăрса юлчĕ палатăра Арине. Сасартăк ăна кичем пусрĕ. Юлашки вăхăтра больницăра кун пек пусăрăнчăк кăмăл тыткăнламанччĕ-ха ăна.

— Ай-уй, Тенисса упăшкипе савăнать-и? — хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Арине. Тĕрĕссипе илсен, ку ун чунне кăшлакан çĕнĕ шĕкĕ мар, киввиех. Мăшăрлисене курсан, ялан çапла тунсăх хуплать ăна. Ĕçре çеç, çĕрпе чакаланнă самантра, пурне те манать.—Мĕн тăвăн, телее хура йытă çирĕ-çке.

Уçă чÿрече патне пырса кантăк янаххи çумне таянчĕ. Çулăм хыпнăн ăшĕ çунать, тĕтĕм тухни çеç курăнмасть. «Мĕн амакĕшĕн çав таранах пăлханатăп-ха? Мана асра тытакан çук-и? Пур! Миçе çын килсе кайрĕ ав. Кÿренме çылăх. Қаланă пек, тек никам та килмĕ. Хуçăлма кирлĕ мар. Анчах хуçăлам мар тенипех ăш вăркани иртмест-мĕн...

Юлташăн упăшкине курма тухас тесе, Арине пуçне шуррă тутăр çыхрĕ.

Тĕл пулмалли пÿлĕмре хĕрарăмпа упăшки иккĕшех лараççĕ. Пĕр-пĕрин ăшне кĕрсе тухасла куçран куçа пăхса пуплеççĕ вĕсем.

— Қил, кил! — чĕнчĕ Тенисса Аринене. Упăшкин айăпне сирес шутпа пулас, вăл ăнлантарма пикенчĕ:— Қолхоз вăрман касма янă иккен вĕсене, çавăнпа килеймен вăл ман пата. Ачасем пурте сывах тет-ха.

— И-и, ара,— текелерĕ Арине, урăх нимле сăмах хушма аптраса. Унăн кăмăлĕ те çемçелчĕ: ара, больницăран тухсан вăл ятарласах Тениссан упăшкипе калаçса пăхасшăнччĕ-çке.

Çĕр ĕçченĕн сăмахĕ хăй сукмакĕпе пырать. Арине ыйтрĕ те:

— Хирте тырă-пулă еплерех, эйпетлĕ-и?

— Ыраш питĕ япшар авăрланчĕ. Пăр çапса кăна ан сăтăрлатăр, вара пÿлме тулать,— тавăрчĕ хĕрарăмăн мăшăрĕ.

Сăнарах пăхать вĕсене Арине. Ку хĕрарăмпа упăшки пĕр йышши çынсем — çÿпçипе хупăлчи. Иккĕшĕ те мăнтăркка. Куçĕсем те пĕр тĕслĕ — çырă. Қăра çилĕллĕ мар, паллах. Тăртти-мартти кутăнланса пĕр-пĕрне тарăхтармаççĕ. Пĕр-пĕрин патне туртăнасшăн çунсах та тăмаççĕ пулас.

«Арăмĕпе упăшкин тем çинчен те юмахламалла-тăр». Çапла шухăшларĕ те Арине Тенисса упăшкипе сывпуллашса пÿлĕмрен тухса кайрĕ.

Палатăна кĕрсе ларас килмерĕ ун, вăл пахчаналла çул тытрĕ. Çумăр шывĕ сăрхăнса пĕтмен-ха. Кÿлленчĕксем урлă яра-яра пусма тиврĕ Аринен. Сылтăм енчи карта кĕтесĕнче чие йывăççисем йăвă ÿсеççĕ. Çав чăтлăхра шăпчăк юрă шăрантарать. Ун кĕввине кунĕпе итлесе тăрсан та йăлăхтарас çук.

«Арина Степановна!» — янн кайрĕ пахча тăрăх сасă. «Айтурах, мана чĕнмеççĕ пулĕ те? — Арине хăй мĕлки çине пăхса илчĕ.— Қăнтăрла çитесси аякра, эмел ĕçме

ир. Мĕн-ма чĕнеççĕ-ши?» Çапах та вăл сукмак çине тухрĕ. Ăна хирĕç лешĕ, кăвак халатлă хĕр, килет.

— Ăçта çӳретĕр эсир? Шыраса шалт хăшкăлтăм,— кăмăлсăррăн кăшкăрчĕ вăл аякранах.

— Ма кирлĕ пултăм? — ыйтрĕ Арине.

— Икĕ арçын шыраççĕ. Питĕ курмалла ăна, теççĕ. Тĕл пулмалли пӳлĕмре вĕсем, унта пырасса кĕтеççĕ сире. Васкăр.

Хыпăнса ӳкрĕ Арине. Камсем килме пултарнă-ши? Курмасăр ăçтан тавçăрăн? Хĕртен те ыйтса тĕпчеймерĕ. Лешĕ самантрах сукмак юппипе пахчана шалалла кĕрсе куçран çухалчĕ те. Тепĕр тесен, килен-каян çынна вăл мĕнле паллатăр ĕнтĕ. Хĕр йăнăшма пултарнă, ăна шырамаççĕ, тен? Çапах та каланă çĕре кĕчĕ.

Пӳлĕм алăкне иккĕленсе уçрĕ Арине.

Тениссапа упăшки çумĕнче ларакан Калиспа Эрнука курчĕ те шалт тĕлĕнчĕ. Кама-кама, пачах кĕтменччĕ вăл колхоз пуçлăхĕсене. Аван та мар-ха, çакна питĕ туять Арине, анчах иккĕшне те ашшĕ ячĕпе чĕнеймест. Ара, вĕсен ачалăхĕ чĕрене нихăçан манăçми кĕрсе юлнă-çке.

— Ай-уй, мĕнле килме пĕлтĕр?! — терĕ Арине, ним калама аптраса. Лешсем, пукан çинче ларнăскерсем, яшт! ура çине сиксе тăчĕç. Вĕсен аллинче иккĕшин те чечек çыххи.

— Арина Степановна, орден илнĕ ятпа саламлатпăр! — пĕр харăс чечек çыххи тыттарчĕç вĕсем чирлĕ хĕрарăма.

— Мĕн-мĕн? — ăнланмарĕ Арине.

— Орден илнĕ ятпа саламлатпăр!

— Кай, ан кулăр-ха вата çынран,— кӳренсе тутине тăсрĕ Арине.

— Ай, ара, вăл хаçат вуламан!

— Сире Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă!

— Мĕншĕн? — пурпĕрех ĕненмерĕ вĕсен сăмахне Арине.

— Колхозра ĕмĕр тăршшĕпе лайăх ĕçленĕшĕн.

— Çуллен тухăçлă хăмла туса илнĕшĕн,— пĕр-пĕрне пӳлсех ăнлантараççĕ лешсем.

— Акă Указ,— Калис кĕсйинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат туртса кăларчĕ.— Курăр, пĕрремĕш страницăрах. Районĕпе те улттăн çеç эсир, çав хаклă наградăна тивĕçлĕ пулнисем.

Арине пăлханса ӳкрĕ, чĕлхи çухалчĕ, ним те чĕнеймест. Çавăнтах йĕрес килчĕ ун темшĕн. Куçĕ самант

шывланчĕ. Тăрă тумламсем туххăм хăрпăк пĕрчисем вĕçне шуса çитрĕç те, куç шăрçи умĕн ылтăн ункăн карăнчĕç. Указа вулаймарĕ, аллине тыттарнă хаçат чăпар тутăр евĕр кăна курăнчĕ.

— Пурнăçăр ырă пултăрах ĕнтĕ маншăн çапла тăрăшнăшăн,— тав турĕ Арине, кăшт лăпланса.

— Ку чапа илме, Степановна, эсир хăвăр ĕçĕрпе тивĕçлĕ пулнă,— çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна Калистрат.— Сывлăхăр мĕнле?

— Юсанса пыратăп.

— Сывалăр часрах. Сирĕн касăсем хушшинче Ыда пĕчченех ĕçлет. Чунтан кĕтетпĕр сире,— хушса хучĕ Эрнук.

— Хам та питĕ васкатăп. Больница пурнăçĕ йăлăхтарчĕ. Тухтăртан паян та хăвăртрах кăларма йăлăнтăм,— терĕ Арине, пуçне чиксе.

— Апла мар ĕнтĕ, Степановна, йăлт сывалса çитмесĕр тухас пирки ан та шарлăр.

Вĕсем ял ĕçченĕсен районти пухăвне килнĕ-мĕн. Аринен те пулмаллаччĕ унта, анчах чирлени чăрмантарчĕ. Эрнук алла çыхнă сехечĕ çине пăхса илчĕ те каларĕ:

— Ай-уй, вăхăт ăçталла чупнă! Тепĕр вунă минутран пуху уçăлать.

Хăнасене Арине больница хапхи патне çитиех ăсатрĕ. Каялла савăнăçлăн таврăнчĕ вăл. Чунра çăмăл. Аллинчи кĕрен чечекĕн пĕр çыххине дежурнăй сĕтелĕ çине хурса хăварчĕ, тепĕрне палатăри тумбочка çине стаканпа лартрĕ.

— Ай-ай, пӳлĕме мĕнле тутлă шăршă сарăлнă,— терĕ алăка уçнă-уçман Тенисса.

— Асатса ятăн-и варлине? Уйрăлаймастăр тесеттĕм,— йăлтăр кулса илчĕ Арине.

— Эпир мĕн... Санăн, ав, епле пысăк савăнăç! Маттур çын иккен эсĕ. Килнĕ çынсем епле йĕркеллĕскерсем тата. Сана хисеплени, юратни таçтан палăрса тăрать. Камсем пулчĕç вĕсем?

— Çамрăкки — Эрнук Тимофеевич. Вăл пирĕн хăмла туса илекен бригадăн бригадирĕ. Ман кӳршĕ хĕрарăмĕн ывăлĕ. Хамăр ӳстертĕмĕр ăна, вăрçă хыççăн çуралнăскерне, хамăрах бригадира суйларăмăр. Ырă кăмăллă çын.

Лутрараххи, кăшт çулланарах пани, Калистрат Иванович, колхоз председателĕ. Маншăн вăл тăван шăллăмран та çывăх. Вăрçă вăхăтĕнче пĕрле тӳснĕ терт пире

пĕр-пĕрин çумне куçа курăнман пиçĕ пăявпа çыхнă,— ассăн сывласа илчĕ Арине.— Калис ун чух вун-вунвиç çулхискерччĕ. Тантăшĕсенчен пĕвĕпе пĕчĕкрехчĕ, çăмха пекехчĕ вăл, кĕрсе тухман шăтăк хăварман. Хăюллă, нимрен хăрамастчĕ. Çавăнпа та ăна ĕç хушатчĕç пулас. Нихăçан та хуруллашса тăман. Конюхра ĕçленĕ пирки хĕлĕпех витере тăрмашатчĕ. Çулла лашасене уйра çитерсе çӳренĕ хăйĕн тантăшĕсемпе. Тырă акнă вăхăтра анасене сӳреленĕ. Кĕркуннесенче патшалăха памалли тырра Вăрмар станцине вĕт-шакăрпа пĕрле турттарнă. Паллах, тулли михĕсене çĕклеймен, анчах лав çинче ларса тилхепе тытса пыни мĕне тăрать. Эх, мăнтарăн ачисем, кирек хăçан та лаша пуçĕнче вĕсемччĕ.

Амăшĕ мана Калис ывăлне куçран вĕçертме хушмастчĕ. Çавăнпа та унăн лавне ялан хам ума яраттăм. Тырăллă тулли михĕсем тиенĕ хăрăк-харăк урапа миçе хут тӳнмен-ши çул япăххине пула. Тепĕр чух лачакаран йывăр урапана туртса кăларасшăн тапаçланакан лаша ӳкетчĕ. Эх, хăшкăлаттăмăр вара ăна ура çине тăратасшăн. Урапа тĕнĕлĕ е кустăрма шăлĕ хуçăлатчĕ. Тӳснĕçке. Тĕлĕнетĕп халĕ те Калис шăмми-шаккине амантса сусăрланманнинчен.

Иксĕмĕр тата машина илме кайсан мĕнле асапланнине эпĕ виличчен те манас çук.

Хĕрĕх тăваттăмĕш çул, кĕркунне, пирĕн колхоз сасартăк пуйрĕ. Колхоз председателĕ çĕнтĕрӳ фондне хăйĕн ячĕпе колхоз укçине хывнă пулнă. Чапа тухрĕ, паллах. Анчах ун чухне унăн вăрттăн ĕçне никам та пĕлмен. Икĕ çулсем иртсен тин ревизи ун ĕçне тăрă шыв çине кăларать.

— Колхоз председательне тӳлеттерчĕç-и? — тĕпчесе илчĕ питĕ тимлĕн итлекен Тенисса.

— Япалисене сутсах тӳлеттерчĕç,— терĕ Арине.— Вара çав укçапа тахăшĕ грузовик туянма сĕннĕ. Ку шухăш пурне те килĕшрĕ. Хĕпĕртерĕç вара хĕрарăмсем, çитĕнме ĕлкĕреймен çамрăксем. Мĕнле савăнмăн ĕнтĕ, ара, колхозра нимле техника та пулман-çке. Пĕтĕм ĕçе этем хăй аллипе тунă. Юрать-ха, çынпа юнашар лаша тар юхтарать. Машина туянсан, çын асапĕ чакать. Пур ĕç те кал-кал пырать. Уйрăмах патшалăха памалли тырра самант турттарса пĕтерме пулать.

«Грузовикне туянăпăр та-ха, пирĕн шоферĕ çукçке»,—терĕ тахăшĕ. Хашлатсах кулянчĕç вара. «Эпĕ çӳрĕп. Манăн права пур»,— терĕм хайхискер. Аса илчĕç

вара эпӗ районти ҫар комиссариачӗ йӗркеленӗ шоферсен курсне пӗтернине. Шакӑр хӗрсемччӗ унта пирӗн. Повесткӑпа чӗнтерсех вӗрентнӗ. Вӑрҫа яма хатӗрленӗ пире. Анчах ӑсатаймарӗҫ; фронта хӗр-шоферсем кирлӗ пулма пӑрахнӑ-тӑр ҫав вӑхӑталла.. Пире хатӗр тӑма хушса киле ӑсатрӗҫ.

Шофер пуррине шута илсе, колхоз грузовик туянчӗ. Ӑна илме манӑн каймалла.

Хӗл ларма муталанатчӗ, юр ҫӑвать, ирӗлтерет. Ҫапах та ҫуна кӳлсе тухрӑмӑр. Лаша пуҫӗнче паян ман пата килнӗ Ҫалис Иванович — ун чухне пӗчӗк Ҫалис.

Ирхи шӑн ҫулпа Ҫанаш станцине чиперех ҫитрӗмӗр. Ҫалис ҫуна ҫинче ҫутӑ ӗмӗтпе ларса пычӗ. Вӑл машина рульне хӑй тытма ӗмӗтленет. «Ҫӑтарткала та мӗнле пӑрмаллине, эпӗ самант ӑнкаратӑп»,— тет.

Ӗҫ тӑвасси ҫӑмӑл мар. Тӗрлӗ хутсемпе пӗрин патӗнчен теприн патне чупсах яра кун иртрӗ. Ҫаялла иккӗмӗш кунӗнче тин тухрӑмӑр.

Ҫӗр каҫа йӗпе юр ҫунипе ҫул ним латти ҫук: пылчӑк чӗркуҫҫи таран. Вӑрҫӑччен тӗп ҫулсене асфальтлама мар, чул сарма та ӗлкӗрейменччӗ.

Хире тухрӑмӑр. Инҫе те каяймарӗ машина, ланкашкана кӗрсе ларчӗ. Кустӑрмисем пӗр вырӑнта пӑр-пӑр ҫаврӑнса тӑраҫҫӗ пылчӑк сирпӗтсе. Лаши тата ҫунине туртаймасть. Ҫитрӗ инкек. Мӗнле ҫӑлӑнас? Грузовикне, лаши-ҫунине хулпуҫҫи ҫине хурса утмалла-и? Анчах эпир улӑпсем мар-ҫке. Машинине тапратма, тен, пӗрин хыҫалтан тӗртмелле? Ӑҫтан тупан-ха ун пек ҫынна? Калисӑн вӑйӗ ҫитмест, пӗвӗ те кӗске. Иртен-ҫӳрене тилмӗрме пулатчӗ, анчах ҫурансем тӳртен сукмакпа утаҫҫӗ. Машинӑна хам тӗртес шухӑшпа Ҫалиса руль умне лартса пӑхрӑм; пускӑчӗ патне ури ҫитмест. Ҫитменнине, сивӗ ҫумӑр лӳшкеме тытӑнчӗ. Лакӑма питӗрме тивет, урӑхла май ҫук. Кӗреҫепе тӑпра ывӑтатпӑр. Усси ҫук, тата ытларах пылчӑк ҫӑрӑнать. Эппин, хытӑ япала кирлӗ. Йывӑҫ тавраш ҫук. Тытӑнтӑмӑр уй тӑрӑх чул пухма. Ура пакӑлчак таран путать. Чул пӑрахсан-пӑрахсан, машина ишсе тухрӗ. Унтан лашине тӑвартӑмӑр. Ҫунине машина кӑшкарӗ ҫине лартасшӑн, ах, мекеҫленетпӗр. Йӗретӗп аптранипе. Аран-аран хӑпартрӑмӑр, мурилесшӗ. «Атя лашине те ухтарса тӑратар»,— тет Ҫалис. Эпӗ хирӗҫ мар. Мӗнле майпа? Лаша йытӑ мар-ҫке, темӗн чухлӗ йыхӑрсан та хӑй тӗллӗн сиксе хӑпараймасть. Эпир вара ӑна машина ҫумне кӑкартӑмӑр. Ентӗ

ĕç майлашăнмалла. Иксĕмĕр те, йĕп-йĕпескерсем, кабинăна кĕрсе лартăмăр. Қалис савăнать. Ача кăмăлĕ, ун машинăпа чупмалла-çке.

Пулса иртнипе çырлахса грузовика тапрататăп, пĕчĕк тусăма лашана астуса пыма хушрăм. Вунă хăлаç малалла кайрăмăр-ши, Қалис кăшкăрса ячĕ: «Тăрат! Лаша ӳкнĕ, йĕвенĕнчен сĕтĕрĕнсе пырать!»

Грузовика чартăм та сиксе антăм. Лаша куçне чарса пăрахнă, харлатса сывлать. Тавçăртăм: машинăран сехĕрленнĕ ĕнтĕ. Вăл хăй ĕмĕрĕнче машина таврашне аякран çеç курнă. Эх, апăрша! Мăйĕнчен çупăрла-çупăрла йăпататăп. Аранах лăпланчĕ. «Утлан!»,— тетĕп Қалиса. Турткаланчĕ, паллах. Çапах та килĕшрĕ. Тинех ĕç майлашрĕ. Машина чупать, ун хыçĕнче, чылай аякра, лаша пырать.

— Тек инкек пулмарĕ-и вара? — тет Тенисса.

— Асту. Ку пуçламăшĕ кăна-ха. Пĕлесчĕ сан тăвайккинчен хăпараймасăр нушаланнине. Çур кун иртрĕ. Машину-качку, сурса хăварас патне çитрĕм. Ним тума аптранă енне çĕре кĕреçепе чавса картлашка турăмăр, çын евĕр пусса улăхтăр тесе. Ланкашкасенче те пĕр хут çеç кĕрлемен. Юрать, вăрман витĕр тухнă чух çапă тиерĕм. Кустăрмисем юшкăнра çаталтатма тытăнсанах, çапă пăрахатăп та, ишсе тухатпăр.

Яла çитесси ик-виçĕ çухрăм юлчĕ. Унччен те пулмарĕ, тытăнчĕ тăман асма. Лавĕпех тăкăнать юр. Умри ним курăнмасть. Самант кĕрт хӳсе кайрĕ, çул çухалчĕ, машина тăлланса ларчĕ каллех. Тăван тавралăх. Кунти кашни пусăма пĕлсе тăран. Çуран пулсан, укăлча хапхине хыпашласа пулин те тупăн. Анчах машинăн ури çук, кустăрмисем юр купи урлă ашаймаççĕ.

«Арине, эпĕ юрне кĕреçепе ывăтса пыратăп, эсĕ машинине шутар»,— тет Қалис. Эх, чунĕ ытла та ырă. Пĕччен ăçтан çула хырса тасатăн. Иксĕмĕр те тăрмашрăмăр. Тул çутипе тин яла кĕтĕмĕр.

Машина чăхăмланă ăнăççăр самантсенче миçе хут каламарăм-ши: «Қалис, пăрах та киле вĕçтер. Тумтирӳ йĕпе, шăнса пăсăлăн». Тилмĕрсен те, ятласан та итлеттереймерĕм. Манран шит хăпмарĕ. Мĕн вĕçне çитиех пĕрле тăрмашрĕ. Çумăрпа шӳни ахаль иртмерĕ унăн, çăпансем тухма тытăнчĕç.

Хура тăрăха утса тухрăмăр. Çĕнтерӳ кунĕ çитрĕ. Анчах вăрçă вăхăтĕнче ашшĕсем выранĕнче ĕçленĕ нумай ача тăлăха юлчĕ. Қалисăн та ашшĕ таврăнаймарĕ,

çапăçу хирĕнче ӳксе юлчĕ. Шăтнă йывăç аталанать. Ӳсрĕ, вĕренчĕ, çара кайса килчĕ вăл. Кайран, колхозра ĕçленĕ вăхăтрах, ялхуçалăх институтне пĕтерчĕ. Аслă-пуçлă çын час курăнать. Председателе суйларĕç хайхи-скерне. Маттур, пултарать ĕçлеме. Колхоз çултан-çул пуйса пырать. Мĕн чухлĕ халĕ пирĕн машина!

— Тĕрĕсех ĕнтĕ,— тет палатăра пĕрле выртакан хĕр-арăм.— Ансат пурăнатпăр: çĕрне трактор сухалать, тыр-рине комбайн вырать.

— Тырри-пулли те тухăçлă,— хушса хурать татах Арине.— Çыннисем ĕмĕр кун пек ырă пурăнман. Чул çуртсем лартрĕç, кил-çуртĕнче тем те пур.

Икĕ хĕрарăм чылайччен ĕлĕкхине хальхипе танлаш-тарса ларчĕç.

Сăмах-юмах сестра палатăна кĕрсен тин татăлчĕ.

* * *

Каçкӳлĕм Арине патне Ыда килчĕ.

— Степановна, çумăр хыççăн ӳкнĕ хăмла аврисене юсаса пĕтертĕм,— хыпарларĕ вăл васкасах.

— Мухтатăп! — куçĕнчен ăшшăн пăхрĕ Арине.

— Пĕлетĕн-и, пире Эрнук Тимофеевич татах касăсем хушса парасшăн; паллах, эсĕ больницăран тухсан. Кай-са пăхрăм, авăрсем çав тери имшер.

— Касăсем ăçтарах?

— Йĕклĕ çырми пуçĕнче.

— Чим-ха, Уçтин ани мар-и? Ывăлĕ патне хулана пурăнма куçасшăнччĕ вăл. Тухса кайрĕ эппин. Тĕрĕс тăвать. Тăван ывăлĕ пур чух мĕншĕн пĕччен шараç-ланас?

Арине тутине чăп тытрĕ. Куçĕсем уçă хăйĕн, апла пулин те çывăхрине курмаççĕ. Вăл халĕ шухăшĕпе аяк-ра. Акă, умне хыткан Уçтин тухса тăчĕ, хăй ӳстернĕ имшер хăмла аврисем хушшинче çӳрет... Пуçа килнĕ шухăшсем ăна темшĕн ассăн-ассăн сывлаттарчĕç.

Ыда çийĕнчех сисрĕ, Арине ун сăмахне пачах йӳп-лемест. Çавăнпа та хытах чĕнчĕ:

— Степановна!

— Мĕн? — çӳçенсе илчĕ Арине шартах сикнипе.

— Эсĕ ним те татса каламарăн: йышăнатпăр-и çав касăсене, ĕçлеме тытăнас-и унта?

— Шанса параççĕ пулсан, мĕнле килĕшмесĕр тăрăн, ара. Пирĕн тĕллев — ытларах хăмла туса парасси,—

пуплерӗ Арине.— Ман алӑ ҫӑмӑл, малтан ӗҫе хам пуҫласа парӑп.

— Эсӗ хӑҫан тухан-ха больницӑран?

— Палӑртнинчен тепӗр укол тумалла ҫеҫ,— ӑнлантарать хӗре Арине.— Паҫӑр юн илчӗҫ тӗрӗслеме. Пурте йӗркеллӗ пулассӑн туйӑнать. Ним те ыратмасть халӗ ман. Кӗҫӗр ҫеҫ выртмалли юлчӗ.

— Эппин, ыран сана илме килетпӗр,— ыталаса илчӗ ӑна Ыда.

— Кампа?

— Каччӑпа. Халӗ вӑл урамра тӑрса юлчӗ.

— Мӗнле йӗкӗт? Кам ачи вӑл? — кӑсӑкланать Арине. Хӑй куҫне хӗснӗ.

— Ку лайӑххи. Учитель вӑл,— Аринен хӑлхинчен пӑшӑлтатса ятне те каларӗ.

— Илтмен,— пуҫне сулкаларӗ Арине.

— Кӑҫал ҫеҫ вӗрентет шкулта.

— Юрӗ-ске, курӑпӑр. Халӗ сывӑ пул!

— Ыранччен! — чӑп-чӑп чуптурӗ хӗр Аринене.

* * *

Ҫӑмӑл машина больница алкумӗ вӗҫнех пырса ларчӗ. Кунта уйӑха яхӑн сывалса ура ҫине тӑнӑ Аринене илме килнӗ вӑл.

Машини колхоз председателӗ Калистрат Ивановичӑн. Руль умӗнче унӑн вӑталӑх ывӑлӗ. Ҫынсене хисеплеме пӗлет вӑл, Калистрат.

Арине калама ҫук хӗпӗртерӗ. Ҫӗркаҫ вӑл, юлашки хут укол тунӑ хыҫҫӑн, канлӗн ҫывӑрчӗ. Юн тӗрӗслевӗ сывлӑх аваннине кӑтартрӗ.

Пуҫтарӑнса тухрӗ Арине. Ӑсатма пухӑннисем хушшинче — тухтӑр, сестрасем, кунти тӗрлӗ ӗҫре вӑй хуракансем, палатӑра пӗрле выртнӑ Тенисса та пур.

— Хӑвӑра упрӑр, Арина Степановна,— ӑс парать ӑна тухтӑр.— Ним маршӑнах хыпӑнса ан ӳкӗр.

Сестра вара ҫапла сӗнет:

— Хӑнана ӑсатнӑ чух: «Татах килӗр пирӗн пата»,— текенччӗ, эпӗ урӑхла каласшӑн: пирӗн пата тек нихӑҫан та килмелле ан пултӑр сирӗн.

Шӳтлӗ халап пурне те култарчӗ.

— Мана ачана пӑхнӑ пекех пӑхрӑр.— Аринен куҫӗ шывланчӗ.— Тавтапуҫ сире. Хӑвӑр нихӑҫан та ан чирлӗр.

Аринене лартнă машина тапранса кайрĕ. Алă сулса тăрса юлчĕç ăсатма тухнисем.

— Мĕнле хĕрарăм пулчĕ, ара, ку? — тет чирлисем валли кучченеç йышăнакан кăвак халат тăхăннă хĕр.— Тур çырлах, халăх йăтăнчĕ вара ун патне. Чĕнсе тухма, шыраса тупма, кĕртсе яма ĕлкĕр кăна.— Е пĕр-пĕр пуçлăхăн амăшĕ пулчĕ вăл?

— Эх, йăмăкăм,— мăйăхне якаткаларĕ тухтăр,— больницăра выртаканшăн эмелтен те сиплĕреххи вăл — тус-юлташĕ манманни, ун патне тăтăшах килсе çӳрени. Çавăн йышшисем чир-чĕре хăвăрт çĕнтереççĕ. Арина Степановнăн шăпах çапла пулса тухрĕ те.

Качча каяймасăр ватăлнă хĕрарăмсем пирки халăх хушшинче çапла калаççĕ: арсăр пурăнăç — туратсăр йывăç. Çакă кĕскен каланă пысăк шухăшлă сăмах Аринене нимĕн чухлĕ те тивмест. Ырă кăмăлне пула вăл калама çук çăра туратлă — унăн тăван пек хаклă тус-юлташсем çур ял.

*1977 ç.*

# САВĂНĂÇĔ ХУП-ХУРА

Çĕнĕрен вĕрилентерсе пăрахрĕ Люкçине. Каллех утиялне пуç тăрринченех витĕнсе выртать. Куççуль юхать ун чарăнайми...

Темиçе кун ĕнтĕ Люкçи хăйне чип-чиперех туятчĕ, температури чакнăччĕ.

— Çитет текех ачашланса выртма. Тăр, тăр, çӳрекеле, унсăрăн утма манăн,— ыр пиллĕн каласа хăварнăччĕ ăна тухтăр паян ирхине, темиçе кун кравать çинчен анманскерне.

Савăнчĕ вăл. Тăчĕ ура çине. Анчах йăпăр-япăр утасси пулмарĕ. Урасем патак евĕр хытнă, тăкки-такки пускалаççĕ. Ах, мĕн тумасть усал чир, паттăр çынна та персе антарать. Панулмисене çил-тăвăл силлесе тăкнă пек, ыратни те çынри вăй-хала тылласа кăларать. Аран-аран çитрĕ Люкçи чӳрече умне. Кантăк куçĕсем тăм илнĕн шап-шурă, пăр кĕççепе витĕннĕ. Хашака çумĕнче, ав, çил вĕрсе тăнипе пĕр пĕчĕк, вунă пус кĕмĕл укçа вырнаçмалăх, лаптăк шăнмасăр юлнă. Пăхрĕ Люкçи çав тĕлти кантăк витĕр урамалла. Ним те асăрхаймарĕ вăл. Хĕвел аванах курăнчĕ, икĕ хăлхаллă вăл паян.

«Тулта ытла та сивĕ пулас,— шухăшларĕ Люкçи. Фермăра хăй пăхакан сысна ами Арăлташ асне килчĕ.— Çăвăрламарĕ-ши? Асăрхамасăр шăнтса ан яччăрах...»

— Паторова! — илтрĕ вăл çак вăхăтра хăйне чĕннине. Çавăнса пăхрĕ. Медсестра-мĕн. Палата алăкне уçнă та тăрать пуçне каçăртса.— Паторова, сирĕн пата хăвăр ялтан пĕр мăнтăркка хĕрарăм килнĕ. Сарă кĕрĕклĕ хăй.

— Ман пата? — тĕлĕнчĕ Люкçи.

— Сирĕн пата çав. Халех кĕрет.

Пурлă-çуклă вăйĕ шалтăрах тухса ӳкрĕ чирлин. Çывăхри пукан çине лаштăрах кайса ларчĕ вăл. «Ан кĕрт ман пата ăна»,— тесе каласшăнччĕ, аҥчах ĕлкĕреймерĕ, сестра алăкне хупрĕ.

«Сарă кĕрĕклĕ мăнтăркка хĕрарăм...» Çийĕнчех тавçăрчĕ вăл кам иккенне. Ферма пуçлăхĕн арăмĕ — Çинкка. Упăшкинчен нумай çул аслăскер, ăна тимĕр аллинче тытаканскер. Сарă кĕрĕк çĕлетсе тăхăнчĕ кăçал. Çӳрерĕ вара саркаланса. Тирпейсĕрскер хăй. Уйăх та иртмерĕ, кĕрĕк çаннисем хура тĕспе йăрăмланчĕç.

«Мĕн шыраса килчĕ-ши? Ни тăван, ни тус мар. Ырра пĕлтермест ку. Фермăра ĕçлекенсем çав хĕрарăмпа тĕл пуласран пăрăнаççĕ. Усал хĕрарăм теççĕ ăна. Ах, çырлах...» — хыпăнса ӳкрĕ Люкçи. Çурăмĕ сăрăлтатрĕ. Унччен те пулмарĕ, кĕрсе те тăчĕ Çинкка.

Тăмананни пек çаврака куçĕ — тăхланах, чуна шăнтакан хĕм сапать.

Кĕрекен çын сывлăх сунма тивĕç. Çук, хăнăхман вăл çепĕçлĕх йĕркисене. Тытăнчĕ тӳрех вырăнсăр палкама:

— Хăçан сывалса çитен, Люкçи? Тух хăвăртрах пульницаран, унсăрăн упăшкасăр тăрса юлан. Кашни каç киле хĕрсем илсе пырать, тет. Хăвна хĕрхеннипе калатăп. Пĕлетĕп-çке, эсĕ тăлăх-турат пирĕн ялта.

Хирĕç çăвар уçма хал çитереймерĕ Люкçи. Кĕтмен хыпар пăрлантарсах лартрĕ ăна.

Çинкка пăшăрханнăн кантăкран кармашкаласа пăхкалать. Чеен вылять куçĕ. Калăн çав, ун хыççăн кам та пулин йĕрлесе килет тесе. Урамра çын курăнмасть-тĕр. Лăпланчĕ-ши? Вара хыçлă пукана чӳрече умне шутарса вырнаçрĕ. Инкек-синкек сиксе тухсан, ĕлкĕрĕ пытанма.

Саппун кĕсйинчен шоколад кăларчĕ те хыпса-çăтса ярасла çавăркаласа пăхрĕ.

— Ятарласа саншăн, Люкçи, лавккана кĕтĕм,— па-

кăлтатать хăй.— Чи хаклă хак парса илтĕм пылак-скерне.

Шоколада хутран тасатать. Хыпаланать. Кам турт-са илĕ-ши? Хуçса вакларĕ. Люкçине сĕнме манчĕ пулас. Йăпăр-япăр çăварне хыпрĕ чи пысăк татăкне.

— Ай-уй, тутлă,—киленет чап-чап чăмласа.— Эпĕ çынна ырă тума çеç пĕлетĕп. Акă сан патна та килтĕм, пушă алăпа мар, кучченеçпе. Пирĕн ялта кăмăллă этем тупаймăн. Пĕркун çапла Микифир арăмĕн фермăна улăм турттарнă чух лавĕ çинчен кĕрепле ӳксе юлчĕ. Илтĕм те, чупса пырса, кĕреплине аллинчен тыттартăм. Маннă çавна. Колхозниксен пухăвĕнче упăшкапа иксĕмĕре темĕн те пĕр элекленĕ, тет. Микифир арăмĕ халь урине пĕçертсе янă-ха, çуллă вĕри яшкапа. Хуранне ву-чахран антарнă чух хăлăпĕ аларан вĕçерĕннĕ, тет-и. Тĕсси, çав кирлĕ. Питĕ савăнтăм. Çитрĕ ман ылхан. Ырă тунине мансан, çапла çав...

Сăмах алласа ларнă май Çинкка шоколадне йалт çăтса ячĕ пĕчченех.

— Ытла техĕмлĕ, тупата,— кашни пӳрнине чаплат-тарса çулать Çинкка. Унтан Люкçи çине ытарлăн пăхса илчĕ те шелленĕн каларĕ:

— Упăшку канфет-шоколадпа сăйлаймасть-тĕр? Ман мăшăрăм Хĕлип питĕ маттур, мана шутсăр юратать. Шоколадсăр усрамасть. Питĕ килĕштерсе пурăнатпăр. Эсир апла мар-тăр?

Мухтанать Çинкка хăй пурнăçĕпе. Люкçи ялта çĕнĕ çын, вăл ним те пĕлмест. Кӳршĕсем итленĕ пулсан, ка-лĕччĕç: «Кăсăя чĕппине кĕсъе тĕпĕнче усраймăн. Мăръе-рен тухнă тĕтĕм сывлăша сарăлатех. Хăш чух ăна упăш-ки пылак канфет вырăнне тапкă-çупкă та çитеркелет. Хурах кăшкăрнисене иртен-çӳрен сахал илтмен».

Чăп тытрĕ тутине Люкçи. Пустуй калаçса, мĕншĕн çăвар тутине ямалла. Хирĕç ларакан хĕрарăм çатăлтат-ни халĕ ун хăлхине пачах кĕмест.

Çын итлет-и, çук-и, ăна чухлама пĕлмест элекçĕ. Шав пакăлтатать, шав кӳршĕсене кăшлать, шав ылха-нать, вĕсен инкекĕшĕн савăнать.

Хăйсенчен пĕр кил урлă пурăнакан Мĕтрисене ярса илчĕ Çинкка.

— ...Пăрăвне калча çинчен хăваласа кăлартăм. Чи-перех кӳпĕнетчĕ. Çур черкке эрех ĕçтермерĕç Мĕтрипе арăмĕ. Эх, хыткукарсем! Эй, çӳлти турпапай, шырлăх ярса пар çавсен пуçĕсем çине тесе кĕлтурăм. Ылханăм

çитрĕ. Пысăк хулара пурăнакан ывăлне машина таптаса вĕлерчĕ. Тĕсси, çав кирлĕ. Кулянниле хут пек типсе ларчĕç. Эпĕ, ав, кулач евĕр кăпăшка çӳретĕп. Пăрăвне тĕл пуласчĕ-ха, калча çине хамах сĕтĕрсе кĕртĕттĕм.

Илес акă çырма хĕрринчи Акаша. Иртнĕ çулла пулса иртрĕ-ха ку. Упăшкипе ют яла хăнана кайнине хам курса юлтăм. Иртсе пыратăп çапла вĕсен тĕлĕпе, ах, çырлах, хапха айĕнче ларакан ачи татăлса макăрать. Эпĕ, çемçе кăмăллă хĕрарăм, хĕрхентĕм ачана, киле илсе кайрăм. Çăвăнтарсан, сĕтел хушшине лартрăм. Чыхрĕ вара, ĕмĕрне те тутлă апат курманах. Ырă турĕ-и çакăншăн мана Акаш? Кĕт. Тен, пĕлмен те пулĕ тетĕн-и? Çĕр хут аса илтернĕ. «Йăлăхтартăн! Кам сана ман ачана илсе кайма хушнă?» — тесе ĕрлешрĕ. Халĕ, ав, упăшки уйрăлса кайнă, тет, хулана. Майра тупнă. Ман ылханах çитрĕ, тупата. Ах, чунăм савăнчĕ. Çав ятпа сĕтел çине кăштăрт литр эрех кăларса лартрăм. Эх, ĕçрĕм ӳсĕрĕличчен. Хĕлип ăна-кăна тĕпчемерĕ, вăл та янк! та янк! çăтрĕ эрехе.

«Ун савăнăçĕ хуп-хура: пĕрре те ыттисенни пек çутă мар,— тĕлĕнчĕ Люкçи.— Лайăххишĕн, ырришĕн савăнаççĕ çынсем. Ку вара кӳршĕсем инкек курнăшăн хĕпĕртет».

— Çеруш Ваçлейне паллатна эсĕ? Вĕсен пӳрчĕ укăлчапа юнашар. Чаплă спортсмен, ара. Урине хуçса, ĕçлемесĕр ларчĕ. Пулăшу ыйтса çавăн чух хут çырса панă вăл правление. Укçа парса пулăшăр, терĕм хамах упăшкана. Итлерĕ мана. Ваçлей укçине илсе ырă курчĕ. Вăтăр тенкĕ панă. Кĕпе илсе тăхăнтартасса кĕтрĕм. Миçе хут сăмахпа тĕртмен-ши ăна! Сисмĕш пулать. Çав кăна. Юсанчĕ йĕкĕт, авланчĕ те. Икĕ çул иртрĕ унтанпа. Арăмĕ, ав, ача тумасть. Ачасăр çемье çемье-и? Телейсĕрскерсем. Шăп ман ылхан умне пырса ларчĕ çавăнне. Каланă пек, ман хамăн та ача çук-ха. Эпĕ урăх шутра — Хĕлип ача юратмасть.

Енер почтальона хирĕç пултăм. «Чим-ха,— тет вăл,— сирĕн касри Майăна çыру пур. Кĕртсе пар, тархасшăн». Савăнсах килĕшрĕм. Çыру çарти каччинчен. Тепри пулсан, уçса вулать. Эпĕ ун йышши мар. Тĕрĕс-тĕкел илсе çитертĕм. Майя хĕпĕртерĕ. Вулать, темшĕн ахăлтатса кулать.

— Мĕн çырать, ара? — кăсăкланатăп.

— Сана, вată çынна, мĕн тума кирлĕ? Каччăсем хĕрсем патне тем те çырĕç.

Каламарĕ. Ах, тарăхрăм. Хăйне ырă тăваççĕ. Вăл пур тӳрккессĕн таварать. Ватă имĕш эпĕ. Хĕрĕх пиллĕк тултарман. Эпĕ ача çуратманнипе çап-çамрăк çӳретĕп.

Ёненместĕп йĕкĕчĕ çартан таврăнсан Майăна качча илессе. Пĕр-икĕ хут çул юппине тухса ылхансан, юратуран тĕсĕ те юлмĕ!

Майăпа эсир фермăра пĕрле ĕçлетĕр. Сыхлан... Чим, ав, лере клуб умĕнче утса пыраканни Майя мар-и? Ай! Ие чăмламан, çав, çав. Сан пата килет пулас ку хĕр. Эпĕ шăвăнам-ха. Сире чăрмантармăп.

Тухса каяс умĕн хуйхăллă сасăпа çапла каларĕ Çинкка:

— Люкçи, ах, мĕнле лайăх çын эпĕ. Кăнтăрла çурта çутса шырасан та тупаймăн. Шартлама сивĕрен хăрамасăр килтĕм. Пĕтĕмпех сана хĕрхеннипе. Пĕлетĕп-çке аçу-аннӳ инçетрине.

Çинкка хыççăн алăк хупăннă-хупăнман Люкçи кравать çине кайса ӳксе ĕсĕклеме тытăнчĕ. Вĕри куççуль питçăмартине вĕтелет. Сиксе тухасла тапать мĕскĕн чĕри. Аçтан хыпса çунмасăр тӳсĕн? Унăн упăшки Яруш кашни каç хĕр илсе пырать. Мĕнлескер-ши еркĕнĕ? Ахăртнех, çав тери чиперскер пулĕ. Пур хĕрсене палласа та çитеймен Люкçи. Вăл ку ялта ӳсмен-çке. Унăн тăван хутăрĕ аякра.

Ярушпа вĕсем Тури Печора чугун çулне тунă çĕрте паллашнă. Юратрĕç пĕр-пĕрне, уйрăлмарĕç. Çырни çырлан курăнать, теççĕ ваттисем. Туй хыççăн, çулла, упăшки ăна хăй ялне илсе таврăнчĕ. Пӳрчĕ хупăнса ларать. Тăлăх-турат. Ашшĕ-амăшĕсĕр çитĕннĕ Яруш. Никам кĕтмест, никам ăсатмасть. Каялла кайма пуçтараннăччĕ, таçтан муртан килсе тухрĕ председатель. Апла та капла калаçать. Тытăнчĕ хайхискер ӳкĕтлеме. Юлăр та юлăр тет колхоза. Вăйпитти арçынсем кирлĕ имĕш. Ĕçĕ питĕ нумай.

Колхоз председателĕн сăмахне ытараймарĕç мăшăрсем, юлчĕç. Яруш шоферта ĕçлет. Люкçи сысна фермине кайрĕ. Кунта ытларах çамрăк хĕрсем. Часах паллашрĕç вĕсем. Ĕçре хастар пулнăшăн çĕнĕ çынна кăмăлларĕç.

Иртрĕç çу кунĕсем. Хура кĕркунне хыççăн хĕл çитрĕ. Сысна пăхасси çăмăл мар. Апатне хатĕрленĕ чух çĕрулми пиçекен пысăк хурантан пăс йăсăрланать те çынна тарлаттарать, витене йăтнă самантсенче хĕл сивви тарланă çурăм тăрăх чупать. Хăйне упраймарĕ, шăнса

пăсăлчĕ Люкçи. Малтан чĕтретрĕ ăна, вара пĕçертсе пăрахрĕ. Аташса выртрĕ пĕр вăхăт. Умра тăпăртатса тăракан упăшкин ăшă сăмахĕсем те пулăшаймарĕç. Йăшрĕ те йăшрĕ çын. Тухтăра чĕнме тиврĕ. Илсе кайрĕç вара ăна пульницана вырттарма.

Пĕччĕнех Люкçи палатăра, урăх никам та чирлемест тейĕн.

Икĕ эрне вырăн çинчен тăмарĕ чирлĕскер. Юрать-ха, чун йăпатмăш упăшки тăтăшах килсе тăчĕ. Ура çине тăнă кун, паллах, чи çывăх çынна кĕтнĕччĕ вăл пĕрле савăнма. Анчах та вăл виççĕмĕш кун ĕнтĕ хăйне килсе кăтартмасть. «Эппин вăл, чăнах та, урăххипе явăçнă»,— шухăшларĕ çамрăк арăм. Утиялне пуç çинченех витĕнчĕ те çĕнĕрен ĕсĕклесе йĕме тытăнчĕ.

Кăнтăр апачĕ илсе пычĕç. Астивсе пăхма мар, пуçне те çĕклесе пăхмарĕ Люкçи. Хырăмĕ выçнине те туймасть. Йăлтах паллă: ăна хуйхă пусарса пăчлантарнă.

Тепĕртакран палатăна сестра кĕчĕ. Сĕтел çинче апат çаплипех ларнине курчĕ.

— Чирли,— чĕнчĕ вăл,— эсĕ мĕн, юри выçăхса вилме шутламарăн пулĕ те?

Лешĕ сас памарĕ. Вара сестра халачĕ кĕсйинчен градусник кăларса силлерĕ те Люкçи хул хушшине чиксе хăварчĕ.

Сехетĕн хăйĕн ĕçĕ: вăхăта виçнĕ май шаккать чарăнусăр. Каялла кĕчĕ канăçсăрланнă сестра. Градусника илсе пăхрĕ.

— Ай-ай, температура ӳссе кайнă!— кăшкăрса ячĕ вăл.— Эсĕ, Паторова, чиперехчĕ-çке! Мĕн пулчĕ? Вĕрелтĕн-и-мĕн? Халех тухтăра кайса чĕнетĕп.

Уколсем турĕç хайхискере. Мĕн пулăшрĕ: эмел-ши е юлташĕн çырăвĕ-ши?

Майăна кĕртмерĕç. Юрать-ха, çыру парса хăварма ăс çитернĕ вăл. «Люкçи, салам! Сывлăху мĕнле? Эпĕ виççĕмкунах килесшĕнччĕ, ерĕçеймерĕм. Яруша колхоз валли машина илме Горькие васкавлăн кăларса ячĕç. Вăл сана ним пăшăрханмасăр кĕтме хушрĕ. Паян-ыран килсе çитет. Фермăра ĕçсем аван. Анчах та сансăр кичем. Арăлтăш çăвăрламан-ха. Путех, сана кĕтет. Часрах тух.

Сана сывлăх сунакан çывăх юлташу Майя».

Темиçе хут вуларĕ Люкçи тус-юлташĕн сиплĕ çырăвне. Апла-капла хурса шайлаштарчĕ. Упăшки пирки кĕвĕлсе хăпарнă иккĕленӳ майĕпен сирĕлчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, сывалчĕ Люкçи. Киле таврăнчĕ. Упăшки ăна малтанхи пекех юратать. Çук, вăл пульницара Çинкка парса хăварнă кăвара вĕрсе амалантармарĕ. Фермăра юлташĕсем хавассăн кĕтсе илчĕç. Çапах та хутран-ситрен Çинкка калаçăвĕ чĕрене сулхăнлатать. Çитменнине тата вăл, упăшки патне киленçи туса, кунсеренех фермăна кĕре-кĕре тухать. «Мĕн шăршласа çӳрет? Ых, тухатмăш!» — тарăхаççĕ кунта ĕçлекенсем.

— Ан ятлăр-ха ăна, хĕрсем,— тет Люкçи.— Тен, вăл çав териех япăх та мар. Ман пата пульницăна пырса кайрĕ-çке.

— У-у! Амсанмастпăр сана!— кулать Майя.—«Ырă тунă». Халĕ сана ылханма тытăнать. Йăли çапла ун.

Ылхан çитессе ĕненмест-ха Люкçи. Анчах Çинкка ял çинче усал халап акса çӳрени кӳрентерет. Мĕнле якатмалла инкеке? Тупсăмĕ хăй тĕллĕнех тупăнчĕ. Вара вăл чуста хурса лартрĕ те тепĕр кун иçĕм çырли хупса вĕт кукăльсем пĕçерчĕ. Кучченеçпе кайрĕ çамрăк хĕрарăм Çинкка патне. Кăмăлпах йышăнчĕ хăнана хĕрарăм. Мухта-мухта çирĕ кăпăш пиçнĕ кукăльсене.

«Турра шĕкĕр,— шухăшларĕ Люкçи урама тухсан.— Кунăçрĕ пулас. Ĕнтĕ мана ылханмĕ».

Тепĕр кунне илĕм-тилĕмпех пырса кĕчĕ Çинкка çамрăк мăшăрсем патне. Тăп-тап пускаласа тĕпелелле иртрĕ. Тытăнчĕ сĕтел çине хутаçран тем силлеме. Курах кайрĕç: кукăль тĕпĕсем туха-туха ӳкеççĕ.

— Люкçи,— пуçларĕ Çинкка ĕрлеме çиллес сассипе.— Эс илсе пынă кучченеç пире упăшкапа иксĕмĕре хăрушла вăрçтарчĕ! Ылхан ӳктĕр сан çине!

Яруш ним ăнланаймасăр чăр-чăр пăхкаласа тăрать. Люкçи тарăхнипе чăннипех хăюлланчĕ. Ярса тытрĕ йĕтĕр, юнаса пырса кăшкăрса ячĕ:

— Тухса кай кунтан, хаяр тухатмăш! Йĕтĕрпе пуçна çапса çуратăп!

Çинкка, çакна кĕтменскер, каялла чакрĕ. Хăравçăскер иккен. Люкçи ăна çапас çукчĕ-ха.

— Хăйне сума сунине ăнланман этем,— терĕ вăл.— Çынна нихăçан та ырă тăваймасть. Тухса кай!

* * *

Ял çинче халĕ хыпар çӳрет: Çинккана хăй ылханĕ хăйне çитнĕ, тет. Ăна шалкăм çапнă. Алли-ури чиперех, анчах калаçаймасть, чĕлхи çыхланса ларнă имĕш.

# САЛАМ

Фермăна тухса кайиччен Альди тĕкĕр умĕнче чарăнса тăчĕ. Ăна хирĕç çутă питлĕ, йăлтăркка йăмăх хура куçлă, кăвак шаль тутăр çыхнă хĕр пăхать.

— Карчăк пекех мар-и эпĕ капла? — ыйтрĕ вăл тĕкĕрти хĕртен.— Мĕншĕн хитре калпака тăхăнмастăп-и? Шеллетĕп ăна. Çийĕмре те пальто мар ав — ваткăллă пиншак çеç. Ферма—театр мар. Ĕç капăр тумпа ĕлккенленсе çӳренине юратмасть.

Альди хăйпе хăй çапла пуплешсе тăнă чух кĕтмен çĕртен пӳрте почтальон кĕрсе тăчĕ.

— А-ха, килте-мĕн-ха. Питĕ шеп. Сан валли, Альди, телеграмма пур.

— Телеграмма? — тĕлĕннипе Альди куçне чарсах пăрахрĕ. Ара, ку тарана çитсе те вăл никамран та телеграмма илсе курман.— Карaç тете, йăнăшмастăн-и эсĕ?

Сумкинче тем шыракан почтальон кӳренчĕ пулас. Унăн хĕрлĕ мăйăхĕ йăлт-йăлт сиккелет.

— Килĕшӳсĕр сăмах,— терĕ вăл çиллессĕн,— пĕрремĕш кун ĕçлеместĕп эпĕ. Хăвăртрах йышăн. Васкатăп. Валеçмелли авă мĕн чухлĕ,— йывăр сумкине шап! çапса илчĕ ватă почтальон. Вара Альдие темле бланк çине алă пустарчĕ те телеграммине сĕтел çине хучĕ.

— Сывă пул!

Пĕччен юлсан, Альди телеграммăна йăпăр-япăр алла илчĕ. Владивостокран килнĕ. Чăнах та, ун патнех янă: Ольховой Альди тенĕ. «Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ — Мартăн саккăрмĕшĕ ячĕпе хĕрӳллĕ салам! Телей, вĕренӳре ăнăçлăх сунатăп. Карик Крохин» — вуларĕ Альди, çилĕмпе çыпăçтарнă хута уçсан.

Çав тери хĕпĕртерĕ хĕр. Вăл телеграммăна чуптусах илчĕ.

— Мĕнлерех-ши вăл? Эх, аякран та пулсан курасчĕ.

Уяв ячĕпе салам яракан çак çамрăка Альди нихăçан та курман. Тĕнчере вăл пуррине ашшĕ-амăшĕсен çырăвĕнчен кăна пĕлет.

Альдипе Карик мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те, аслашшĕ-асламăшĕсем те пĕр-пĕрне курман. Вуншар çул тăсăлакан туслă çыхăну вара вăрçă вăхăтĕнче тĕвĕленнĕ. Ăна Альди асламăшĕ пуçланă.

— Ах, лайăх çынччĕ,— тесе ырăпа асăнать Альдин

асламăшне ялйыш паян кунччен. Асламăшĕн тус-тантăшĕ пулнă Ялтăрма кинемей каласа панине итлеме вара уйрăмах пит кăмăллă.

— Сан асламуна Катиç тесе чĕнеттĕмĕр. Эпир унпа пĕр çулта, пĕр кунта çуралнă. Пĕр касмăкра çеç тĕне кĕреймен, эпĕ чирленĕ пирки. Эпир çуралнăшăн пирĕн аттесем питĕ куляннă, аннесем выртса макăрнă. Ара, вăл вăхăтра хĕрачана çĕр паман-çке. Юрать, Совет влаçĕ пулчĕ, тавах ăна. Катиçпе мĕн пĕчĕкрен пĕрле выляса ÿснĕ. Çитĕнсен те туслă çÿренĕ, качча кайсан та пăрахман пĕр-пĕрне.

Сан çулунта пăхса ытармалла мар пике пулса çитнĕччĕ вăл. Ах, маттурччĕ-çке. Чипер, ятуллă, ĕçчен. Амсаннă Катиç ашшĕ-амăшне çавнашкал хĕр ÿстернĕшĕн. Хĕр çуратакансем ун ятне хуратчĕç. Ÿснĕ ывăл пуррисем Катиçе кин тума куç хыватчĕç.

...Ашшĕ Катиçе пĕчĕккĕллех ĕçе явăçтарнă. Ывăл вырăнне усă курнă тейĕн унпа. Çичĕ çула çитсен сÿре сÿреленттернĕ, вун-вуник çулта сухапуç тыттарнă.

Пĕррехинче ăна ашшĕ вăрман пуçĕнчи анана сухалама пĕчченех хăварать. Катиç савăнать çакăншăн. Хăвăртрах сухаласа пĕтерме шутлать. Ăни те пысăк мар— çурпилĕк çеç. Анчах лаши тÿсме çук чуманскер пулнă: пĕр утăм ярса пусать те чарăнать, утнă çĕртех тĕлĕрет. Хĕрачаран кăшт та хăрамасть вăл. Йĕре-йĕре хăвалать Катиç лашана, хушăран ăшă сăмахсемпе те йăпатса пăхать, тилмĕрет. Хăй çнес çăкăр чĕллине тăвар сапса хуçа-хуçа хыптарать лаша çăварĕнчен. Вăрман çывăх пирки Катиç унтан пĕр-пĕр таркăн тухасран та хăрать. Империализм вăрçи хыççăн пирĕн тавралăхра таркăнсем курăнкалатчĕç.

Каçкÿлĕм ана шыв хумĕ пек кăтраланса юлать. Анчах пĕчĕк сухаçа киле çитнĕ çĕре вĕрилентерсе пăрахать: те ытлашши ывăннипе, те вăрман хăратнипе.

Чирлесен те нумай выртма май килмен Катиçĕн. Кĕçех арман хуçи çурхи шыв татса кайнă пĕвине юсаттарма тытăнать. Унта ĕçлесе укçа тумалла. Ашшĕ-амăшĕн хĕрне тумлантарма вăй çитмест. Пасар кĕпи, тутăрсаппун, атă-пушмак туянмалăх хĕрупраçăн хăйĕн укçа тупмалла. Катиçпе Ялтăрма яра куна тăпра йăтаççĕ. Нÿрĕ тăпра йывăр. Сыппинчен татăлса тухас пек ыраттаççĕ алăсем. Ывăç тупанĕ хăпарса хăмпăланнă. Пурпĕрех йăмшахлама юрамасть, тÿсес пулать.

Эрне хушши асапланчĕ икĕ хĕр-тантăш. Укçи вара

тытмалăх та, пăхмалăх та пулмарĕ. Хуçа, хыт кукар, юнĕçен, пĕр кун ĕçленĕшĕн сакăр пус çеç шутласа пачĕ.

Хресчен ĕçĕ — татăлнă шăрçа ярăмĕ. Пĕр ĕç хыççăн тепри алкум вĕçне юхса пырать.

Уйра тырă пулнă. Халăх хире кĕшĕлтетсе тухать.

Катиçсен ани сахал. Вырчĕç темиçе кун ярăнса. Юлашки ани аякра—кÿршĕ ялăн чиккинче, мише юпине тăрăнать. Çав ана çинчи тырра вырса пухмалла, вара́ пуянсем патне ыраш вырма кĕрĕшме те юрать.

Эрнекун каçхине Катиç ашшĕ çумне пырса тăчĕ те каларĕ:

— Атте, ыран питĕ ир тăрат мана. Мише юпи патĕнчи анана вырса пĕтеретпĕр.

— Юрĕ, хĕрĕм...— килĕшрĕ ашшĕ.— Каçхине кĕрĕшнине вырма каятăр-и?

— Каясшăн çав.

Чăнах та, çывăрса кайнă-кайман ашшĕ Катиçе хулпуççинчен пырса та лăкарĕ.

— Вăрансам, хĕрĕм.

Йăпăр-япăр сиксе тăрать Катиç. Пуçтарăнса тухаççĕ. Укăлча хапхине хăйсем хыççăн ашшĕ хупать. Аслă çулпа нумай утмалла-ха.

«Таврана тĕттĕм хуплана. Йăнăшпа ют çын анине вырас марччĕ»,— пăшăрханса утать Катиç.

Мише юпи ларать ав, ашшĕ ал палли тăрăх анине шыраса тупать. Çурлине чĕркенĕ тăлавар татăкне салтса анине пуçлать. Кăчăрт-кăчăрт вырса илет пĕр ывăç. Юсанса тăрсан, сăхсăхса кĕлĕ пуçлать: «Пехил, ывăç перекетне пар». Кун хыççăн каçалăк умне Катиç те пĕшкĕнет. Пуç çĕклемесĕр вырма тытăнать, хăш вăхăтра çăлтăр вăййи саланнине те асăрхамасть.

Тул çутăлчĕ. Сар хĕвел çутă çунатне сарчĕ.

Амăшĕ апат йăтса çитсен тин Катиç тăрса пилĕкне тÿрлетрĕ.

— Нумай вырнă-çке эсир,— тĕлĕнет амăшĕ.— Килĕр апата.

Уйранпа сыпса тинкле çиййĕр...

Кĕçех çĕнĕ вăйпа вырма тытăнать Катиç. Халĕ ĕнтĕ вĕсем виççĕн. Каçалăк хăвăртрах каять.

Хĕвел вăрман тăрринче вылять. Çак вăхăтра çемье ана вĕçне тухрĕ. Йăран çумĕнчи темиçе пĕрчĕ ыраш хăмăлне вырмасăр хăварчĕç. Ана пайĕ имĕш ку. Ăна амăшĕ пĕтĕрсе тÿлерĕ. Унтан кашниех юлашкинчен вырса çыхнă кĕлти çине ларчĕ.

— Ана, вӑй пар. Пилӗк-ҫурӑма тӳрлет,— сӑхсӑхать амӑшӗ.

— Анам, аллӑ пӑт тырна пар,— тилмӗрчӗ ашшӗ.

Қатиҫ те пехил ыйтать:

— Анам, вӑйна пар. Киле таврӑнсан хӑйма ҫитер. Пилӗкӗме питтине, ҫурламӑма шӑлне пар.

— Кама ана ҫӗклет? — тет амӑшӗ.

Ялт сиксе тӑрать Қатиҫ. Ашшӗ кая юлчӗ. Унтан ахӑлтатса кулаҫҫӗ хӗрӗпе амӑшӗ.

— Ашшӗ, сана ана мӗншӗн ҫӗклемерӗ?

— Кантарчӗ,— тӳрре тухать лешӗ.

Киле таврӑннӑ-таврӑнман Қатиҫ тӑвата тус-тантӑшӗпе ҫӗр выртмаллах кӗрӗшнӗ тырра вырма каять. Пӗр пилӗкшӗн тӑватшар кӗренке ыраш парать ана хуҫи. Мӗн калӑн, питӗ сахал. Ана сутнипе пасар кӗпи туянса тӑхӑнаймастӑн ҫав. Чӑх пӗрчӗ сӑхсах тӑранать, теҫҫӗ. Уркенменнисем пус ҫумне пус хушса тумланаҫҫӗ ҫапла.

Вунҫичче пуснӑ ҫул Қатиҫ хӑй ӗҫлесе темиҫе ҫул пухнӑ укҫапа ҫӗвӗ машини туянать. Такама та кӗпе ҫӗлесе тӑхӑнтарать вара. Ял хӗрӗсем яка ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ.

Вӑтӑрмӗш ҫулта ялта колхоз йӗркелерӗҫ. Ӗҫ хакӗ калама ҫук ӳсрӗ. Ӗҫленӗҫем ӗҫлес килет Қатиҫӗн колхозра. Кӗркунне лавӗ-лавӗпе темиҫе тӗслӗ тырӑ пырса параҫҫӗ. Пӳлме тулли ыраш, сӗлӗ, пӑрҫа, ясмӑк. Ялта чи муллӑ хӗр пулса тӑрать Қатиҫ. Ӗҫчен хӗре йӗкӗтсем куҫ хываҫҫӗ. Хӗр хӑй пекех ӗҫе юратакан качча суйласа илет. Телейлӗ пурӑнать ҫамрӑк мӑшӑр. Ялан ӗҫпе киленеҫҫӗ. Қарта тулли выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетеҫҫӗ. Уйрӑмах ӗни савӑнтарать. Сумассерен пӗр витре — сӗт.

Ывӑл ача ҫуратать Қатиҫ. Қу ӗнтӗ Альдин пулас ашшӗ.

Ывӑла ҫӗнӗ пӳртре ӳстересшӗн хайхискерсем. Вӑрманне каснӑ, пурине пураланӑ.

Ҫӗнӗ пӳрте кӗрес чух вӑрҫӑ тухать, нимӗҫ фашисчӗ ҫӗкленсе килет пирӗн Совет ҫӗрӗ ҫине. Арҫынсем, ҫав шутра Қатиҫ упӑшки те, фронта каяҫҫӗ. Ӗҫ тени йӑлтах хӗрарӑмсен аллине тӑрса юлать.

Қатиҫ—вӑйпитти ҫын. Кунне-ҫӗрне уямасӑр ӗҫлет вӑл колхозра. Пӗтӗм вӑя Тӑван ҫӗршыва пулӑшас ҫӗре хурать. Унта та кунта ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсем перекетленӗ укҫана ҫар хӑватне ӳстерес ҫӗре панӑ. Ҫав укҫапа ҫӗнӗрен самолетсем, танксем тунӑ.

Қатиҫӗн те ку таранччен пухнӑ тупра пур. Ҫӗршыв-

шăн йывăр вăхăтра укçа-пухчана арча тĕпĕнче вырттарни — киревсĕр ĕç.

— Танк туянса парнелетĕп,— сăмах парать Катиç колхозниксен пухăвĕнче.

Укçи танк туянмалăх çитмест. Вара вăл çĕнĕ çуртне, çĕвĕ машинине, пăрăвне, сыснине сутать. Кирлĕ çĕре кайса парать пĕтĕм укçине. Часах пĕлет: вăл парнеленĕ вăйлă танкпа Сидор Крохин фашистсене çĕмĕрет.

Сидор Крохин — Карикăн пулас аслашшĕ.

Çĕршывшăн хăрушă самант пулин те, вăхăт малаллах шăвать.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх тăваттăмĕш çулхи пуш уйăхăн пуçламăш кунĕсенчен пĕринче Катиç Ольхова патне фронтран телеграмма килет. Ăна Сидор Крохин танкист янă. Катиçе вăл Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ— Мартăн саккăрмĕшĕ ячĕпе саламлать. Сывлăх, телей сунать. Танкшăн тав тăвать. «Часах тăшман çурăмне çапса хуçатпăр»,— тесе пĕлтерет.

Телеграмма алран алла куçнă. Пĕтĕм ял вуланă ăна. Хĕрарăмсем вăрçă чарăнасса, упăшкисем киле таврăнасса кĕтнĕ.

Вăрçă çаплах чарăнмасть. Фронтран шав хурлăхлă хыпар: ывăлĕн е упăшкин, е хĕрĕн вилнĕ хучĕ килет. Çапах та кирек мĕнле хуйхăн та вĕçĕ пурах. Ĕнтĕ тăшмана Тăван çĕршывран тапса кăларса янă. Совет Çарĕ фашиста чикĕ леш енче тĕвет.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пиллĕкмĕш çулта, майăн тăххăрмĕшĕнче, пĕтĕм тĕнче вăрçă чарăнни çинчен илтет.

Тепĕр куннех Катиç патне телеграмма çитнĕ. Ăна Берлин хулинчен Сидор Крохин танкист янă.

«Эсир парнеленĕ танкпа фашист йăвине çитрĕм. Тăшмана тĕп турăмăр. Çак аслă çĕнтерӳре сирĕн пай калама çук пысăк. Çĕнтерӳпе саламлатăп! Часах курнăçăпăр». Çапла çырать танкист.

Сидор Крохин — Çĕпĕр çынни. Вăрçă хыççăн Катиçпе упăшки паттăр танкистпа унăн мăшăрне хăнана чĕннĕ. «Кăçал пулмарĕ, килес çул пыратпăр»,— тесе пĕлтернĕ лешсем. Çапла темиçе хут та çырнă вĕсем. Ĕçпе тулнă çулсем хăвăрт иртнĕ. Вара, туслăха ачисене пиллесе, çут тĕнчерен уйăрăлнă тăваттăшĕ те. Çук, сӳнмен юратнă Тăван çĕршыва хаяр тăшманран хӳтĕленĕ самантра çуралнă туслă çыхăну. Халĕ çав туслăх мăнукĕсене куçрĕ. Вĕсем тарăнлатĕç, çĕнетĕç ăна хăйсене кирлĕ пек.

— Эпир Карикпа тӗл пулатпӑрах,— ҫирӗплетет Альди.— Курӑпӑр та пӗр-пӗрне юратса пӑрахӑпӑр. Тен...

Шухӑшне Альди уҫӑмлах шарлама хӑяймарӗ, вӑл хӑйӗнчен хӑй вӑтанчӗ. Анланать-ха хӗр: Карикпа вӗсен хушшинчи пурнӑҫ кӗперӗ ҫав тери вӑрӑм. Йӗкӗт Тинӗсҫар училищинче вӗренет. Альди, кӑҫал вӑтам шкултан тухсан, колхозрах юлать. Вӑл фермӑра амӑшӗпе юнашар тӑрса ӗҫлесшӗн, ялхуҫалӑх институтне заочно вӗренме кӗресшӗн. Мӗнех, кӑмӑл ҫеҫ хӗрсе тӑтӑр. Пӗр-пӗрин хушшинчи туслӑ туйӑм ҫинҫелсе ан татӑлтӑр ҫеҫ. Тӗл пулӗҫ Альдипе Карик. Юратӗҫ те. Тен, уйрӑлмӗҫ пачах. Туслӑх тымарӗ ҫимӗҫ ӳстермеллех-ҫке.

Альди телеграммӑна кӗсйине чикрӗ те савӑнӑҫлӑн тухса чупрӗ фермӑна. Ӗне сума вӑхӑт. Амӑшӗ кӗтет ӑна.

— Катиҫ ҫут тӗнчене тепӗр хут Альди пулса килнӗ,— пуплешеҫҫӗ ял ваттийӗсем.— Альди асламӑшӗ пекех ырӑ чунлӑ, питӗ ӗҫчен.

Ваттисем тӗрӗс калаҫҫӗ-тӗр.

*1980 ҫ.*

# ҪӖНӖ ҪУЛ КАҪӖ

«Ачӑлташпа мӑчӑлташ» кафере капӑрлатнӑ чӑрӑш мӑнаҫлӑн каҫӑрӑлса ларать. Вӑл хаклӑ хӑнасене кӗтет. Кунта кӗҫ-вӗҫ ҫамрӑксем, Ҫӗнӗ ҫул каҫӗ вунсакӑр ҫул тултаракансем, нумайӑн килмелле. Заводри комсомолецсем пуҫарнӑ ҫак ӗҫе. Вунсакӑр ҫул тултарнине ҫаплӑ ушкӑнпа Ҫӗнӗ ҫул каҫ irттерни ӗмӗрлӗхе асра юлӗ.

Наташа куҫкӗски ҫине пӑха-пӑха пуҫтарӑнать.

— Ҫитӗ сана ҫав териех тӑпӑртатма,— терӗ усрав хӗрне амӑшӗ — Ухтепи.— Асту, хӑвна куҫӑхтаран акӑ.

— Ай-уй, ан тӗлӗнтер-ха, анне,— ихӗлтетрӗ Наташа. Хӑй ҫавӑнтах вальс ҫемми ӗнӗрлесе пӑлтӑр-пӑлтӑр ҫавӑрӑнкалама тытӑнчӗ. Ҫийӗнчи ҫӗнӗ кӗпи вӑр-вӑр туса ҫӗкленет.

Ҫак каҫа кӗтсе, Наташа амӑшӗ пулӑшнипе ҫӗлерӗ кӗпине шупка кӗрен пурҫӑнран. Арки пӗрмеллӗ, пилӗкӗ ҫӳлте, кӑкӑр айӗнче, сарлака пиҫиххийӗ ҫурӑм хыҫӗнче, ӑна лӗпӗш евӗр ҫунатлантарса ҫыхнӑ, вӗҫне аялла усӑнтарнӑ, ҫанни чавса таран. Вӑл, сывлӑш уҫласа тултарнӑ хутаҫ пек, хӑпартланса тӑрать.

Хăйне пăхса тăранаймасть Наташа. Тӳсеймест, вуннăмĕш хут пулас, каллех ыйтать:

— Анне, кала-ха тĕрĕссипе: килĕшет-и мана платье?

— Пукане пек эсĕ. Кĕçĕр ĕлкăра пĕтĕм каччă сан çинчен куç илмĕ ĕнтĕ.

— Ай-уй, калан та çав. Пĕтĕм каччă пăхни мĕн тума кирлĕ? Вăл çеç çумран ан хăптăрччĕ,— вăтаннипе пуçне пĕкрĕ Наташа.

«Вăл» текенни завод каччиех. Настройщик пулма пĕрле хăнăхаççĕ. Унăн та кĕçĕр менелник.

Аранах кĕрĕкне тăхăнчĕ Наташа. Калпак айĕнчен кĕске кастарнă сарă çӳçĕ пачах курăнмасть. Чакăр куçĕ вара ахах евĕр йăлкăшать. Васкама та пуçларĕ хайхи. Пĕлет-çке, урамра Вăл кĕтет.

— Анне, эсĕ килте вăрах тытăнса ан тăр, унсăрăн эпĕ тунсăхлăп тата çамрăксем те кĕтсе ывăнĕç,— хытарса хăварчĕ Наташа тухса каяс умĕн.

— Юрĕ-çке, часах вĕçтерсе çитĕп.

Амăшĕ хĕрĕпе пĕр заводрах ĕçлет. Хастар чĕреллĕ коммунист. Халăхшăн усăллă ĕçе хутшăнмасăр чăтаймасть. Уркенменнине кура, кĕçĕр те партбюро ĕç хушрĕ ăна: унăн ĕлкăра çамрăксене вунсакăр çул тултарнă ятпа саламламалла, халал сăмахĕ каламалла.

Ухтепи хăй те Çĕнĕ çул каçĕ çуралнă. Анчах вăл кĕçĕр вунсакăр çул тултарса вунтăххăра каймасть, аллă тăватта пусать.

— Мĕнле вата эпĕ! — хăйпе хăй калаçрĕ вăл.— Именетĕп яш-кĕрĕмрен.

Ушкăнлă менелнике каяс мар шут та пур ун, хушнă ĕçе тумасăр та пултараймасть. Ирĕксĕрех шифоньер алăкне уçрĕ. Çипуçĕ нумай. Тĕсесе тăчĕ те шурă кĕпине кăларчĕ.

— Çĕнĕ çул каçĕ Юрпикерен кая пулам мар-ха,— шӳтлесерех мăкăртатрĕ вăл. Вăрăм çӳçне якатса ĕнсе хыççнелле майлаштарса хучĕ. Ах, çав куçкĕскине! Нимĕн те пытармасть-çке. Çамка çинчи, тута хĕрринчи йĕрсем палăрмаллах тарăнланнă.

Пальтине хăмăр тĕслине тăхăнчĕ Ухтепи. Тутăр çыхма та кирлĕ мар темелле. Çухави, тилĕ тирĕнчен тунăскер, кăпăшка, кăкăра та пилĕк таранах хупласа тăрать. Çапах та Хĕл мучирен хӳтĕленме пуç çине шарф уртса ячĕ Ухтепи.

Кивĕ çул çĕннине хăратасшăн тем, тулта чылаях сивĕтсе пăрахнă. Уяртнă та. Юр пĕлĕчĕсем вăрман хыçне

кайса пытаннă. Таса тӳпере пин-пин çăлтăр куçĕсене уçнă. Вĕсем кĕçĕр çитĕнсе çитнисен ретне тăракан çамрăксем Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илнине курасшăн, ахăртнех. Мĕнех. Ав утаççĕ тротуарпа пĕрерĕн те икшерĕн. Мăшăрлисем хаваслă пуплеççĕ, тем пит ахăлтатса кулаççĕ, Кафе алăкĕ те уçăла-уçăла хупăнать.

Ухтепи те çитрĕ. Тӳрех кĕмерĕ-ха вăл. Чӳрече умĕнче тытăнса тăчĕ. Çепĕç музыка сасси сăрхăнса тухать тулалла. Сарлака кантăк витĕр шалти пĕтĕмпех курăнать. Ташлаççĕ çамрăксем, пĕр пысăк çаврака кăшăла тăнă та хуçкаланаççĕ кăна. Яш-кĕрĕме пурте килĕшет. Мĕнле хаваслă вĕсем, телей тăкăнса тăрать-çке. Чуна ним те кăшламасть: хырăм тутă, çипуç питĕ, самана лăпкă. Ыранхи пурнăç илĕртӳллĕ: вĕренме те, ĕçлеме те пулать. Нимле сехмет те чармасть.

Ухтепи, уçă сывлăшпа сывласа, кафе умĕнче чылай утса çӳрерĕ.

Ура айĕнче юр кăчăрт-кăчăрт кăчăртатать. «Эсĕ, Ухтепи, мĕнле паллă тунă вунсакăр çул тултарнă куна?»—тесе ыйтнăн туйăнать. «Çав каç эпĕ мĕн тӳснине тек никамăн та курмалла ан пултăр»,— пăшăлтатрĕ хĕрарăм.

Вăл фронтри вăрăм çулăн пĕр каçĕ.

...Ухтепи нимĕçле ăста калаçнă. Ăна пĕчĕккĕ чухнех çав чĕлхене тетĕшĕ, империализм вăрçи вăхăтĕнче нимĕçсем патĕнче тыткăнра пурăннăскер, вĕрентнĕ. Каярахпа шкулта çырма, вулама хăнăхнă.

Ухтепи вăтам шкул пĕтернĕ тĕле хаяр вăрçă тухрĕ, нимĕç фашисчĕсем Совет çĕршывне тапăнчĕç. Вара ял хĕрĕ, Ухтепи, хăй ирĕкĕпе фронта кайрĕ. Çарти кунçулĕ унăн разведчиксем хатĕрлекен çĕрте пуçланчĕ. Кĕске вăхăтра çар наукине алла илчĕ. «Чăн-чăн нимĕç хĕрачи, чĕлхере нимле шăйрăк та çук,— çапла хакларĕç Ухтепи пĕлĕвне.— Лайăх разведчик пулать».

Ухтепи фронтра. Иккĕмĕш хут вăл разведкăна тухрĕ. Виççĕн вĕсем нимĕç йышăннă хулара. Командир—Захит, пушкăрт йĕкĕчĕ. Вырăс хĕрачи — Люда. Чăваш хĕрĕ — Ухтепи.

Ăçта пухăнаççĕ нимĕç офицерĕсем Çĕнĕ çула кĕтсе илме? Çакна пĕлмелле. Ыйтса çӳреме юрамасть. Чи кирли — витĕр курасси. Хăйсен вара асамлă çĕлĕк тăхăнмалла. Юрать-ха каçĕ тĕттĕм. Тĕттĕм каç — çывăх тус. Вăл хăйĕн хура шăналăкĕпе хупласа ют куçсенчен сыхлать.

Разведчиксем икӗ офицера асӑрхарӗҫ. Пыраҫҫӗ лешсем каппайчӑклӑн шапӑлтатса. Часах Мускава ҫитесси ҫинчен ӗмӗтленеҫҫӗ.

Акӑ вӗсем пысӑк ҫурта кӗрсе кайрӗҫ. Ку шкул ҫурчӗ.

— Ҫӗнӗ ҫула ирттерме ҫакӑнта пухӑнаҫҫӗ,— терӗ Захит. Вӑл юлташӗсене шкул ҫывӑхнерех хӳтлӗх тупса пытантарчӗ.

— Сас-чӳ ан тӑвӑр,— астутарчӗ вӑл юлташӗсене.

Офицерсем хӑвӑрт пуҫтарӑнчӗҫ. Урамра никам та тытӑнса тӑмасть. Шӑнасран хӑраҫҫӗ мар-и. Шкулта шавлама та тытӑнчӗҫ. Музыка кӗрлет.

Пирӗн разведчиксем пахчана йӑпшӑнса тухрӗҫ. Юрать-ха, юр хӳсех лартман, типӗлле килчӗ хӗл. Юр вырӑнне ҫумӑр ҫунӑ та ҫӗр питне шӑкӑрт! шӑнтса лартнӑ. Ура йӗрри юласран шикленмелле мар.

Самай ҫӳллӗ йывӑҫ айӗнче Ухтепи рацие ӗҫлеттерме тытӑнчӗ. Вара хамӑрӑннисем, хыпар йышӑнакансем, мӗн кирлине пӗтӗмпех пӗлчӗҫ. Виҫӗ разведчик хуларан тухиччен шкул ҫурчӗ хӗрӗнкӗ офицерӗ-качкипех сывлӑша сирпӗнчӗ. Савӑнса киленме пухӑннӑ фашистсем леш тӗнчене питӗ меллӗн ӑсанчӗҫ.

Сасартӑк кӑшкӑрашни, йытӑсем вӗрни илтӗнсе кайрӗ.

— Пирӗн йӗр ҫине ӳкмен-ши? Мур илесшӗсем! — пӑшӑрханчӗ Люда.— Тарар! Тарар хӑвӑртрах!

— Хӗрсем, чупар! — хушрӗ Захит.— Пытанмалла пирӗн часрах.

Разведчиксем хула хӗрринелле васкарӗҫ. Сылтӑмра — хуралтӑ. Паҫӑр унта мӗн курни чуна ҫӳҫентернӗччӗ. Лупасайӗнче шӑнса хытнӑ вилесене шаршанласа хунӑ. Захит хӗр-тантӑшӗсене ҫавӑнта ертсе кайрӗ.

— Ним тӑхтаса тӑмасӑр — вилесем хушшине! — команда пачӗ.

— Чим-ха, Захит, тен, урӑх хӳтлӗх тупӑпӑр? — тилмӗрсерех калаҫрӗ Люда.

Анчах урӑхларах вырӑн тупма ҫук, чӗрӗ пуҫпах вилесемпе хӳтӗленме лекет.

Ухтепи те ыттисем пекех вилӗ ҫын кӳлеписене тӗрткелесе сиркелерӗ. Юрать, тӗттӗмре вилесен хытса ларнӑ чармак куҫӗсем курӑнмаҫҫӗ. Икӗ виле хушшине вырнаҫрӗ Ухтепи. Ӳпне выртса, виҫҫӗмӗшне ҫурӑм ҫине хучӗ. Ай, ытла та хӑрушӑ-ҫке, чӗри тухса тарас пек тапать. Ҫапах та виле чӗрӗ фашист мар.

Пӗр хускалмасӑр выртать Ухтепи. Кӗрмешнипе юл-

ташёсене асăрхамарĕ вăл, вĕсем те командир приказне пăхăнасса ĕненчĕ.

Кĕçех фашистсем çитрĕç. Хунарсемпе. Çутă пайăркисем урлă-пирлĕ кашта пек тăсăлчĕç.

— Çак хуралтă таврашĕнчех пулма кирлĕ. Шăршла! Шăршла! — хистет пĕр нимĕçĕ овчаркине, ăна кантра вĕççĕн тытса пырса.

Лупас тепĕр еннелле кайрĕç.

Совет разведчикĕсем вилесем хушшине пытанма пултарнине тавçăрса илеймерĕç пулас.

Çак вăхăтра пĕр кĕтмен япала пулчĕ. Ялт! сиксе тухрĕ Люда уçă вырăна.

— Каялла! — кăшкăрчĕ ăна Захит.

Лешĕ илтмерĕ-ши — малаллах чупать. Акă Захит хăй те курăнчĕ, Люда хыççăн хăвалать.

— Стой! Стой! — кăшкăраççĕ фашистсем. Вĕсем Людăпа Захита курма ĕлкĕрнĕ-мĕн. Кĕрс! Кĕрс! кĕрĕслетрĕ пăшал сасси. Люда месерле кайса ӳкрĕ. Захит, тарăн çырма урлă сиксе каçнăн, аллисемпе хăлаçланса илчĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Сывă пул, Ухтепи савниçĕм!

Вара вăл малалла чикĕнсе кайрĕ. Тек тăраймарĕ.

Ухтепи шăлĕсене çыртрĕ, пĕтĕм ăшчикĕ чĕтрет унăн. Ĕсĕклет, сасă кăлармасăр ĕсĕклет.

Фашистсем Людăпа Захит патне тӳплеттерсе пычĕç, урисемпе тапаççĕ вĕсене.

— Вилнĕ! — теççĕ те фашистсем разведчиксен кĕсйисене тустарма тытăнаççĕ. Ахалех тăрăнаççĕ. Нимĕнле документ таврашĕ те çук. Унтан, ик-виç хутлă сăмахсемпе янрашса, Людăпа Захит ӳчĕсене виле купи çине ывăтаççĕ.

Йытти шăпăртах: тепĕр çын пуррине систерсе вĕрмест те, йынăшмасть те. Тен, ку йытă çамрăк. Йĕр йĕрлеме те, шăршă чухлама та вĕренсе çитеймен.

Фашистсем каяççĕ.

Çакăн çинчен Ухтепи мĕнпурĕ те икĕ çынна çеç каласа панă: разведчиксен пуçлăхне тата, вăрçă хыççăн пушкăрт ялне кайса, Захит амăшне.

Тарăн шухăшран Ухтепие хирĕç килекен çамрăк мăшăр уйăрчĕ.

— Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр, Ухтепи Корниловна! — терĕç ăна упăшкипе арăмĕ. — Ăçталла çул тытрăр?

Пуçне йăлт! çĕклерĕ Ухтепи, çанçурăмĕ сăрлатса

илчĕ. Хăй ăçтине чухларĕ те çамрăк мăшăра Çĕнĕ çул ячĕпе ырлăх-сывлăх сунчĕ. Хăй вунсакăр çул тултарнă каçра «çӳресе» сисмен те каферен аякка иртсе кайнине. Каялла çаврăнса мăшăрсем хыççăн утрĕ. Чунтан ăмсанса пычĕ вăл вĕсене. Мĕнле хĕрарăмăн хăй çумĕнче упăшка пуррине курас килмĕ? Вăл, акă, хăраххăн, ĕмĕрех пĕччен. Пулнă-çке ăна та юратакан çын. Çав тери саватчĕ ăна Захит. Разведчик пулма вĕреннĕ чухне курнăччĕ вĕсем пĕр-пĕрин илемне. Каччă ĕмĕчĕ пысăкчĕ: туйне вăрçă пĕтсен ялта, амăшĕ патĕнче, хаваслăн кĕрлеттересшĕнччĕ. Ухтепие пушкăрт хĕрарăмĕсем пек шĕвĕр тăрăллă çĕлĕк, эрешлĕ атă тăхăнтарасшăнччĕ. Юланутпа çил пек вĕçтерсе çӳреме вĕрентесшĕнччĕ. Шутсăр кăнăçлă çынччĕ, мĕн каласси пур. Пĕтерчĕ вăрçă. Аркатрĕ çамрăклăха. Ĕмĕт çилпе вĕçсе саланчĕ. Çав-çавах Ухтепи манаймарĕ Захита. Çулсем чупрĕç те чупрĕç.

Пурнăç ытлă-çитлĕ чух ача çитмест хĕрарăма. Илчĕ вара Ухтепи икĕ уйăхри Наташăна ача çуртĕнчен усрава. Ӳсрĕ те ӳсрĕ пепке. Чуна йăпатса тăчĕ. Акă ĕнтĕ хĕр пулчĕ.

Наташа çуралнăранпа çĕр-аннемĕр вунсаккăрмĕш хут таса шурă юрпа витĕнчĕ. Малашне те çапла пултăрччĕ, шурă юр хĕрлĕ юнпа ан сăрлантăрччĕ.

Ухтепи аллине çыхнă сехечĕ çине пăхса илчĕ. Çурçĕр çитесси çирĕм минут çеç юлнă. Кафене кĕме вăхăт. Çамрăксемпе пĕрле Çĕнĕ çула кĕтсе илмелле.

Çиттĕр Çĕнĕ çул! Пысăк телей, ăнăçлăх, лăпкă пурнăç илсе килтĕр вăл.

*1979 ç.*

# ХĔР-ТАНТĂШ ТАТА САВНИ

Хĕрупраç тени тус-тантăшсăр пачах пурăнаймасть. Хĕр ĕмĕрĕнче мĕн чухлĕ чи çывăх юлташ çеç пĕлмелли вăрттăнлăх!

Сахье чылай хушă хăй валли тус шырарĕ. Тупрĕ. Евлаш çырлахтарчĕ ăна.

Тытăнчĕç иккĕшĕ çиçсе çӳреме! Ыттисем вĕсене сăнаççĕ те тĕлĕнеççĕ: «Мĕн çыхса тăрать-ши? Кăмăлĕсем çĕрпе пĕлĕт пек расна».

Чăнахах та юнашар ӳсекен хурăнпа ăвăсах ĕнтĕ иккĕ-

шĕ. Сахье — çатăлти. Евлаш — лăпкă та чĕмсĕр хĕр.

Вăтам шкул пĕтерсен, Сахье малалла вĕренмерĕ.

— Хĕр ĕмĕрĕ кĕске, савăнса юлмалла,— терĕ вăл Евлаша ӳкĕтленĕ май.— Вĕренекенсен ялан хут çинче ларнипе сăнĕ-пичĕ тĕссĕр, чирлĕ çын пек шуранка вĕсем. Эпир санпа юрлăпăр та ташлăпăр.

Евлаш хирĕçлеме хăнăхман, юлташĕпе килĕшрĕ.

— Сад пахчине ĕçлеме кĕретпĕр,— терĕ Сахье.

Вĕсем пурăнакан ял совхозĕн сад пахчийĕ пысăк. Пахчаç хĕрсене савăнсах ĕçе йышăнчĕ.

Уйăх иртрĕ. Малтанхи ĕç укçи илчĕç.

— Лавккара илемлĕ кĕпе сутаççĕ. Атя кайса туянар,— чĕнчĕ Сахье юлташне.

Евлашăн йăли çапла, утрĕ тусĕпе. Пырса кĕчĕç.

— Ав, эпĕ килĕштерни,— тĕллесе кăтартрĕ Сахье чечеклĕ симĕç кĕпене. Унтан сумкине шăлтăр-палтăр вĕçертрĕ те укçине кăларса икĕ кĕпешĕн тӳлерĕ.

Виçсе те пăхаймарĕ Евлаш. Тата вăл симĕс тĕсе кăмăлласах та каймасть.

— Пĕр пек тăхăнса çӳретпĕр. Ăмсанаççĕ ĕнтĕ пире!— мухтанчĕ Сахье. Унтан пĕр кĕпине Евлаша тыттарчĕ те укçине пама ыйтрĕ.

Евлаш киле таврăнсан çĕнĕ кĕпене тăхăнса тĕкĕр умне тăчĕ. Хăйне паллаймарĕ, шăп карчăк. Арки вăрăм, ура питне хуплать, хулпуççи чавса патнех анса ларать. Кĕпине хăйне виçеллĕ тăвасшăн çĕр хута тăрмашса ларчĕ: касрĕ, татрĕ, çĕлерĕ. Ирхине çĕнĕ кĕпе тăхăнса Сахьепе пĕрле ярмаркăна кайрĕ.

— Ай, пĕтĕм каччă пирĕн çинчен куç илмест,—тьхик кулчĕ Сахье.— Эпир ятуллă кĕпе тăхăннă-çке.

Ĕнтĕ пахчара панулмисем хĕрелчĕç. Çанталăк кĕркунне енне сулăнчĕ.

— Евлаш,—тытса ыталарĕ ăна Сахье пĕррехинче,— паян Павăлпа тĕл пултăмăр. Эх, ача, вăл мана вилесле юрататъ иккен. Чуптурĕ. Эх-х, ача, пĕлесчĕ сан юрату хăватне! Итле-ха, санăн та каччă пур.

— Манăн-и?—шак хытса тăчĕ Евлаш.—Кам?

— Павăлăн юлташĕ — Кирле. Шофер вăл. Хӳхĕм каччă. Санăн унпа çӳремелле.

— Эпĕ ăна вуçех юратмастăп,— пуçласа хирĕçлерĕ Евлаш.

— Чипер пупле!— хăтăрса пăрахрĕ Сахье.— Эпир санпа туслă. Пирĕн савнисем те юлташлă пулмалла.

Эпĕ сансăрах килĕшсе таталтăм ĕнтĕ: Кирле хирĕç мар. Эсĕ те ан турткалаш. Манăн савни пур — санăн та пулмалла. Тумлан,— хушрĕ тантăшне Сахье.— Клуба каятпăр савнисемпе ташлама. Вĕсем пире кĕтеççĕ.

Чăнах та, çак каç клубра ытти çамрăксем хушшинче икĕ мăшăр канмасăр ташларĕ. Ташă пĕтсен те, клубран тухсан, Сахьепа Евлаш çумĕнче савнисем утрĕç.

Татах эрне иртрĕ. Улмуççи айĕнче панулми пухнă чух Сахье Евлаша аякĕнчен чавсипе кăлт тĕкрĕ.

— Евлаш, кала-ха, качча хăçан каятпăр? Ман Павăл авланасшăн.

— Эпĕ чаратăп-им? Авлантăр-иç?

— Чаратăп-им?— витлесе илчĕ юлташне Сахье.— Ай-яй чее. Манăн пĕччен туй кĕрлеттерсе лармалла-и? Апла юрамасть. Пĕрле çӳрерĕмĕр, йĕкĕтсене пĕр вăхăтра çавăртăмăр, пĕр кунрах пирĕн качча та каймалла. Ял тĕлĕнтĕр.

— Эпĕ хăратăп,— тет татах Евлаш.

— Эсĕ ан хăра. Эпир çичĕ юта мар, хамăр савнисене качча каятпăр. Кирлипе эсĕ чипертерех калаç — часрах авлантăр. Мĕн ара... Хам та унпа сăмахлăп-ха.

Тепĕр кунне пухнă панулмине хулана леçме Кирле машини çине тиерĕç. Хула пасарĕнче совхоз пахчаçимĕç сутма ятарласа лавкка уçнă. Пушатма Евлаша яма йышăнчĕç.

Хулари пасара çитсен, Кирле машинине чарчĕ те таçта кайса çухалчĕ. Мĕнпур улмана Евлашăн пĕчченех пушатма тиврĕ. Самаях ĕшенчĕ вăл.

— Столовăйне кайăпăр-и, Евлаш?— сĕнчĕ Кирле, шăпах ĕç вĕçленнĕ тĕле çитсе тăнăскер.

Хирĕçлемерĕ хĕр. Унăн чăнах та хырăмĕ выçнăччĕ. Кăмăлланă апат суйласа илчĕ те Евлаш, тӳлеме черете тăчĕ.

Ун çумĕнче Кирле кушак пек çăвкаланать.

— Кĕрсе лар сĕтел хушшине,— пăшăлтатать ачашшăн.— Саншăн хам тӳлетĕп.

— Ман хамăнах укçа пур,—тет хĕр, вăтаннипе куçран пăхаймасăр.

— Апла мар ĕнтĕ. Савнă хĕре апат çитереймиех чухăн мар эпĕ,—укçа енчĕкне чăнкăртаттарса кăларчĕ Кирле. Вара вăл варлине хулĕнчен çавăтсах сĕтел хушшине пырса вырнаçтарчĕ. Яшки-пăттине те сĕтел çине хăех çĕклерĕ хайхискер.

Столовăйĕнчен тухсан магазина кĕчĕç. Мĕн кăна

сутмаççĕ-ши кунта! Пальто, плащ, костюм, çĕлĕк, шарф... Тапах темĕн те пĕр. Çак япаласене курсан, Кирлен куçĕ-пуçĕ чарăлчĕ. Укçа пулсан, пĕтĕмпех туян. «Илемлĕ тум çынна чиперлетет, чапа кăларать,— шухăшлать каччă, хитре хĕрсем те саваççĕ, Евлаш та, ав, хăпаймĕ... Укçа кирлĕ, укçа...»

Суса пăхрĕ, чакнă иккен. Ним те туянман. Кирлен чунĕ хĕсĕнсе килчĕ. Тар тапса тухрĕ çамкана. «Чим,— терĕ вăл хăйне хăй,— ăçта тăкакларăм-ха эпĕ укçатенкĕне? Э-э-э, аса илчĕ вăл, ара, эпĕ Евлаша хам шутран апатлантартăм-çке. Утмăл пилĕк пус тӳлерĕм. Капла тăкаклансан, малах каяймăн!»

Евлаш та магазин тăрăх курса çӳрерĕ. Чунĕнче ун ыра-ырă. Паçăр Кирле çепĕççĕн пуплени çунатлантарчĕ ĕнтĕ ăна. Йĕкĕт халь малтанхинчен хитререх пек. Унтан ытла такамах кирлĕ пуль Евлаша. Килĕшнĕçем килĕшсе пычĕ ăна каччă. Чĕлхе! Çăвар та салтăнчĕ Евлашăн: калаçас, шӳтлес килет. Акă вăл Кирле çумне йăпшăнса пырса:

— Мĕн çав тариех çутă шăрçа ярăмне тĕмсĕлсе пăхатăн? Туянса савнă хĕре парнелес теместĕн пулĕ те?

— Парнелес? Пит кирлĕ пулĕ,— терĕ хайхискер çиллес сасăпа. Евлаш шартах сикрĕ. Каччăн куçĕ те пăр пек сивĕ.

— Пысăкрах япала туянасшăн та... Евлаш, хайхи укçана тавăрса пар-ха. Апатшăн паçăр утмăл пилĕк пус тӳленĕччĕ. Манман пуль?

Мĕн илтни хĕре тимĕр сăнчăрпа тăлласа лартрĕ, шалкăм çапнăн вăл вырăнтан тапранаймасть. Тепĕр самантран аран тăна пырса кĕчĕ. Вăл васкасах сумкине уçрĕ. Утмăл пус мар, пĕр тенкĕ хут укçа кăларчĕ те Кирлене тыттарчĕ. Хăй çавăнтах магазинтан тухса сирпĕнчĕ.

— Чим, Евлаш, кăшкăрчĕ Кирле,— ан кай, шăрçа ярăмĕ туянса парăп! Вунă пуслăххине.

Çук, хĕр каялла кĕмерĕ.

— Тăртти!—терĕ каччă.— Тилмĕрттересшĕн тата. Апăрша этемĕ çакна ăнланмарĕ: иленичченех хĕр сивĕнчĕ.

Тĕрĕс, Евлаш хăй айваннине, çын хистенипе савни тупма çуккине, тантăшне пĕрмай итлесе йăнăшнине тинех туйса илчĕ вăл. Вара çăмăллăн сывласа ячĕ.

Сахье халĕ урăх тус-тантăш шырать.

# ТУПМАЛЛИ

Повеçсем

Чул çуннă кунсенче . . . . . 3
Юратнă мăшăрсăр . . . . 58
Емĕр асра . . . . . . 115

Калавсем

Икĕ чĕрен пĕр кĕвĕ . . . . 140
Чĕре сылтăмра . . . . . 161
Каччăллă хĕр . . . . . 186
Хĕвеллĕ палата . . . . . 222
Савăнăçĕ хуп-хура . . . . 251
Салам . . . . . . . 258
Çĕнĕ çул касĕ . . . . . 263
Хĕр-тантăш тата савни . . . 268

*Валентина Андреевна Эльби*

**Без любимого мужа**

Повести и рассказы

На чувашском языке

Редактор *А. А. Соколова*
Художник *Е. Е. Михайлова*
Художественный редактор *Э. М. Юрьев*
Технический редактор *Н. В. Васильева*
Корректор *Р. К. Куприянова*

ИБ 1308

Сдано в набор 01.04.83. Подписано к печати 06.09.83. НТ 18088. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 8,5. Усл. печ. л. 14,28. Усл. кр.-отт. 14,38. Учетно-изд. л. 15,02. Тираж 10000 экз. Заказ № 1455. Изд. № 51.
Цена 1 руб. 10 коп

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

1 т. 10 п.

ЧӐВАШ
КЕНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ